Никита Ларионов

# ОЛИМП КАÇАЛĂКĔ

*Роман*

Шупашкар
«Çĕнĕ Вăхăт»
2014

УДК 821.512.111
ББК 84(2Рос=Чув)6-4
Л 25

*Автор выражает благодарность*
*за оказанную финансовую помощь*
***Юрию Александровичу Харитонову*** –
*председателю Совета правления Аликовского райпо,*
***Петру Терентьевичу Терентьеву,***
*предпринимателю*

Л 25 **Ларионов Н.Л.**
**Олимп каçалăкĕ.** Роман. – Шупашкар: «Çĕнĕ Вăхăт», 2014. – 336 с.

«Олимп каçалăкĕ» роман 1979 çулта 5 000 экземплярпа Чăваш кĕнеке издатетльствинче пичетленнĕ, Мускавра «Современник» издательствăра 1976 çулта «Олмипийский балл» ятпа тухнă.

Хальхи кăларăма тӳрех автор ал çырăвĕнчен илнĕ. Кунта спортсмен Олимп вăййине епле хатĕрленнине, çавăнпа пĕрлех унăн çемьери пурнăçне те кăтартнă.

© Ларионов Н.Л., 2014

## Пролог

Ёшнери яштак ҫӑка пек йӑрӑс пӳллӗ хӗр ухса ҫунӑ кӗпесене шур кантра ҫине ҫакрӗ те пӗр йӑпӑрт тухӑҫа тинкерчӗ. Унта, ав, хӗвеле хупласа самаях хулӑм пӗлӗт карӑннӑ; ҫавна такам вӑйпах туртса таткаланӑ темелле: айккисем шӗл кӑварах, хӗмлӗ пайӑркисем ун хыҫӗнчен тарӑн тӳпенелле тирӗнеҫҫӗ.

– Ҫумӑр ҫусан манӑн япаласем тепре исленӗҫ-ши ӗнтӗ, – шӑкӑлтатрӗ хӗр пӳрте кӗрсен.

– Хӗвел хӗрелсе тухни ҫумӑр ҫӑвассах пӗлтерекен марччӗ-ха, – терӗ кил хуҫи хӗрарӑмӗ тараватлӑн. – Ирхи пӗлӗт сапаланса каякан вӑл. Япалисене, типсен, пуҫтарса кӗрӗп ара.

Тепӗр самантран кӗҫӗн алӑк кӗриклетсе уҫӑлчӗ те, тӑп кӗлеткеллӗ хӗр урама тухрӗ. Тӑрӑхла май хутламхӑтлам хутламлатса ҫӗленӗ хура юбкӑпа тӗксӗмрех кӑвак кофта ун ҫийӗнче; аллинче – пӗчӗк ҫеҫ чӑматан. Чечек картиллӗ ҫурт тӗлӗнчен иртсен хӗр тӑкӑрлакалла пӑрӑнчӗ. Кунта вӑштӑр ҫил пите сӗртӗнчӗ ҫеҫ – тутӑ кӗрсе ҫитнӗ пан улми шӑрши сӑмсана кӑтӑкларӗ, хӳме урлӑ усӑннӑ туратри шап-шурӑ ҫимӗҫ ҫине сарӑ сӑпса пырса ларни куҫа курӑнса кайрӗ. Купӑсӑн вӑрӑм пӗрмине тӑсса пӑрахнӑ евӗр туйӑнакан кашни хӑма картлашкине пушмак кӗлипе тӑкӑлтаттарса Атӑл енчен уҫ варкӑш килекен ҫырманалла анчӗ те хӗр часах леш енчи ҫырана – хӗвел питтине улӑхрӗ; унтан, асфальт тӑрӑхӗпе тӗп урама тухса пысӑк лапам урлӑ каҫнӑ хыҫҫӑн стадион еннелле пӑрӑнчӗ.

Мăшăр пушмак асфальтпа шăкăл-шăкăл калаçса пырать. Пикен ик ура туни ларма хĕр аллинчи чипер йĕке пек йăпăш, анчах мăшăр йĕкерен пĕри тем çине перĕнсе чĕрĕннĕ пулас та çĕвĕллĕ курăнать, авă, йĕппе-çиппе çĕленĕ йĕрĕсем те палăраççĕ. Тумĕпе киленсе хăй тăрăх пăхса пырасси çук ку акăшăн; вăл, ури çĕвĕллишĕн ӳкĕннипе те пуçне пĕкмесĕр, умри япалана куçран вĕçертесшĕн мар пек тӳп-тӳррĕн тинкерсе пырать. Апла пулин те малта мĕн пуррине курмастьха вăл – ăшра пысăк шухăш-ĕмĕт халь унăн. Йăпăш пӳрнисемпе тытнă пĕчĕк чăматанĕнче йĕп чĕрнеллĕ туфли, спорт костюмĕ тата ăмăртнă чух тăхăнмалли труссипе майка пур. Хăйĕн пулас кĕрешĕвĕ çинчен те ытла шухăшламасть-ха хĕр атлет. «Олимп каçалăкĕ... Олимп каçалăкĕ»... – тăрать ун пуçĕнче пĕр шухăш. Сумкăра ăмăртмалли тумпа пĕрлех хутпа кăранташ выртать – пулас олимпиец çинчен очерк çырма ĕмĕтленет хаçат редакцийĕнче ĕçлекен çак пике. Палăртса хунă герой халь шăпах стадионра хĕрсе ăмăртма кирлĕ – спорт мелĕпе утакансене ирпе саккăрпах çула кăлараççĕ. Вырсарни кун килти ĕçе те тăвас тесе журналистка çав вăхăт тĕлнех стадиона çитймерĕ, ак халĕ вăл хăй лайăх пĕлекен çынна курас ĕмĕтпе ăмăрту пыракан вырăна васкать.

Стадион умнелле çывхарсанах ăмăрту пынине хыпарласа тăракан судья сасси илтĕнчĕ. Атлетсен ячĕсене калать вăл, кам малтине, кам иккĕмĕш, кам виççĕмĕш пынине пĕлтерет. Пĕр хушă утма чарăнсах тăнлать хĕр; информатор, ав, малтанхисенех тепĕр хут асăнать, анчах чун кĕтнĕ ята темшĕн шарламасть.

Хĕр тата васкарах утать, аренăна кĕрсенех вăл çерем лаптăкĕ урлă тăват çĕр метрлă çаврăм çула тинкерчĕ: унта спорт мелĕпе утакансем пĕр-пĕрин хыççăн ăнтăлса пыраççĕ. Хăйсем вĕсем лачкам шывах пулнă, вĕçен кайăк сывлăша çунаттипе вашлаттарнă пек хаш та хаш сывлаççĕ. Ирпе тухăçа караннă тачка пĕлĕт шĕвелсе сапаланнă та, халь тӳперен хĕрӳ хĕвел кĕрешӳри ат-

летсен хул-çурăмĕсене йăлтăр çутатса ирĕклĕн пăхать – спортсмен ĕнсинчи шыв юххиллĕ тара хăвăртрах типĕтме васкас пек, часрах тӳпенелле талпăнать тейĕн ăна; хăй ĕçне эс сисичченех тăвать иккен-ха вăл: авă, шалкам тар хуллен типĕнчĕ те, атлет ĕнсине шап-шурă тăвар йăрăм-йăрăм сийленсе пусăнчĕ...

Кĕрешӳçĕсен йышĕнче асри çын çук. Тен, судьясем е куракансем хушшинче вăл? Тен, мĕнле те пулин кăлтăк сиксе тухнипе тытăçуран пăраннă? Пăхкаласан та ĕмĕтри çын ниçта курăнмарĕ. «Шикленччĕ пульха пирĕнтен вăл, – терĕ кайран ăмăртса тухнисенчен пĕри, – е суя туссен ушкăнне çакланнă».

Çаплах-ши? Шанчăк юлмарĕ-ши? Хĕр трибуна сакки çине халран кайса лăп ларчĕ. Ним тума та, ним шутлама та пĕлмерĕ вăл. Очерк мар, ăмăрту çинчен информаци çырма та алли çĕкленеймĕ унăн. Пике хăй епле ăмăртĕ, хăй ăмăртайĕ-ши тата? Урари çĕвĕк çĕнех-çке! Шăл качăртатса çыртăнчĕ ав. Ăмăрту епле иртнĕ пирки редакцие ыран кам та пулин урăххи статья пырса парĕ, çĕнĕ сотрудница ăна якатĕ çеç... Эх, шăпа! Мĕн ĕмĕтленнинине юшкăн пусрĕ-ши капла? «Олмип каçалăкĕ» тесе çырас шухăш хăçан, хăш вăхăтра пырса кĕнĕччĕ-ха хĕр пуçне?

Стадионра ытти енсемпе ăмăртма пуçларĕç. Çĕр метра чупакансене старт вырăнне пуçтарăнма чĕнеççĕ ав, çӳллĕшне сикекенсем те шăм-шакĕсене çăмăллатма тытăнчĕç. Пĕр ушкăн кăвакарчăн çавăнтах кĕр çитнине туйнă хастарлăхпа сывлăша вашлаттарса иртрĕ...

## Пĕрремĕш сыпăк

Вĕреннĕ вăхăтра пулас журналистсене спорт çинчен пысăк мар тĕрленчĕк çырма сĕнчĕç. Йывăç папкаланнă пекех, студентсен чунне те çурхи хаваслăх кĕчĕ. Майăн иккĕмĕшĕнче çуллахи спорт сезонĕ уçăлмалла, хаçат-журналсенче ĕçлеме хатĕрленекенсенчен нумайăшĕ ЦСКАпа «Торпеда» командисем футболла вылянине сăнланса парас ĕмĕтпе çĕкленчĕ, теприсем ушкăнланса черетлĕн чупмалли «Ункă эстафета» текен кĕрешӳ-уява çутатма палăртрĕç. Земфирăн мĕн çинчен çырмалла-ши?

Лужникири Ленин ячĕпе хисепленекен стадиона вăл икĕ сехет тĕлне çитрĕ. Халăх пухăнайманха. Трибунăсем пушах. Мăн алăк патĕнче кăна виç-тăват арçын тăни курăнать. Кусем ăмăрту ирттерме хатĕрленекенсем ĕнтĕ.

Студентка пушă сак çине ларчĕ. Пĕр пĕлĕт татки карăнман тӳперен хĕвел ирĕклĕнех пăхать пулин те, майăн иккĕмĕш кунĕ ăшах мар – ирĕкре вичкĕн çил кастарать. Земфира сумкинчен кăларса спорт уявĕн программине тепре тишкерчĕ. Ăмăрту виçĕ сехетре пулмалла. Халăх мĕншĕн çук-ха? Билет касси умĕнче черет пысăкччĕ-çке! Халăх футбола кĕтет. Вăйă халех пуçланмасть, виççĕччен вăхăчĕ самай. Хĕр, пĕччен ларакансker, тăчĕ те çивĕч уттипе трибунăсем айĕнчи çурта кĕчĕ. Унта, спортсменсем хывăнса тăхăнмалли пӳлĕмсем умĕнчи вăрăм коридорта, çынсем уткалаççĕ, пĕр ик-виç милиционер тăрать; ĕç шухăшлă сăн-питлĕ арçынсем – спорт судйисем пулас – хăйсем хушшинче лăпкăн калаçаççĕ. Акă, сумка йăтнă çамрăксем вĕсем патне пырса темĕн ыйтрĕç. «Утакансем – 412-мĕш пӳлĕмре, марафонецсем 39-мĕшĕнче. Заявка панă-и? Заявка парăр. Секретариат 408-мĕш номерте», – тени илтĕнчĕ. Хăш пӳлĕмре камсем хатĕрленнине вара Земфира та пĕлчĕ. Вăл, акă, секретариат пӳлĕмне шыраса тупрĕ.

Пысăк мар сĕтел хушшинче берет тăхăннă арçын хутсемпе аппаланса ларать. «Секретарь пулас», –

шухăшларĕ студентка. Çак вăхăтрах хура вăрăм арçын кĕчĕ те: «Куна кайран йĕркелĕн, çынсене тытса ан тăр, заявкисене йышăн та яр, – терĕ. – Вĕсен старта хатĕрленмелле». Секретарьтен старт протоколне ыйтса илесшĕнччĕ хĕр, анчах ытлашши экземпляр çукмĕн, судьясем валли çеç хатĕрленĕ. Студентка вара: «Вăйлăрах спортсменсен ячĕсене калаймăр-ши?» – тесе ыйтрĕ.

– Ăçтан каласа пĕтерĕн вĕсене? – пăхрĕ ун çине ăмăртăва йĕркелекен. – Çурри ытла спорт мастерĕсем кунта. Пĕр аллă-утмăл ята асăнас пулать.

Земфира çакна асăрхарĕ: хăмăр берет тăхăннă çыннăн унпа калаçма вăхăчĕ те çук: дистанцири судьясем валли темле хутсем хатĕрлемелле-мĕн. Çапах та вăл хăш хуларан кам-кам килнине пĕр вунă ят асăнчĕ.

Виçĕ сехет тĕлне Земфира стадиона тухрĕ. Халăх пухăннă. Трибунăсем лăк тулли.

Çурçĕр енчи хапхаран хĕрлĕ тум тăхăннă шкул ачисем чупса кĕчĕç, пуçĕсенче вĕсен хĕрлĕ каскăсем, аллисенче – хĕрлĕ пусмасем. Пушар сӳнтерекенсен ăмăртăвне хатĕрленекен ку çамрăксем тĕлĕнтермĕш хусканусем тума тытăнчĕç. Çак самантрах кăнтăр енчи хапха умне майкăпа трусси çеç тăхăннă спортсменсем икĕ ушкăнпа тухса тăчĕç. Темшĕн вăрах тытрĕç вĕсене, тӳрех тапратса ямарĕç, тахăш ушкăнĕнче такама кĕтрĕç, тахăшне тем çитмен. Акă, стадионри тĕп çулпа пĕр çаврăм туса пысăк йыш чупса иртрĕ: марафонецсем вăрăм çула тухса кайрĕç. Кăштахран тепĕр ушкăн, юри тĕлĕнтерес тенĕ евĕр, кĕлеткене вăрт-вăрт пăркаласа, вăрăммăн ярса пуснă майăн урана малта кĕле çине лартса, утса та мар, чупса та мар тенĕ пек шыв юххилле тикĕссĕн юртса васкавлăн иртрĕ. Кусем – спорт мелĕпе утакансем, «çӳревçĕсем» тейĕпĕр вĕсене. Утас йăли-йĕркине хăйсем «утларăш» теççĕ. Çак йышран куç темшĕн 4-мĕш номере асăрхаса юлчĕ. Çӳллĕ пӳллĕ тĕреклĕ яш. Сăн-пичĕ кăмăллă, çивĕч куçĕпе хăй шав малалла пăхать, кĕскен кастарнă çырă çӳçĕ кăшт

вӗлкӗшет. Атлет ик аллине чавса тӗлӗнчен меллӗн хуҫлатнӑ та вӑрӑм урипе чашкӑртса кӑна пырать; ик хул пуҫҫийӗ унӑн сӑвай пӗрени йӑтас пек тӗреклӗ. Йӗкӗт сӑнран ҫеҫ мар, кӗлетки-ҫурӑмӗнчен пӑхсан та хальччен курнӑн туйӑнать. Курнах-ши? Ӑҫта курма пултарнӑ вара Земфира ӑна?

... Хӗллехи каникула кайнӑччӗ Ҫула вӗсем, Мускаври аслӑ шкулсенче вӗренекенсем, виҫӗ хӗр пӗрле тухрӗҫ. Ирхине пуйӑс вӗсене хӑйсен станцине антарса хӑварчӗ. Хӗрсем вокзал патӗнче машина тупӑнасса кӗтсе тӑчӗҫ, анчах вӗсен еннелле каяканни пулмарӗ. Студенткӑсем вара ҫуранах утрӗҫ. Йӑтмалли темех ҫукчӗ-ха кусен – пысӑках мар сумкӑсем кӑначчӗ. Ҫула май пӗр-пӗр машина хӑваласа ҫитсен ларма та пулӗ терӗҫ.

Шап-шурӑ хир ытамне лексен хулара чылай хушӑ уҫӑ тавралӑхшӑн тунсӑхланӑскерсем, малтанах чупнӑ пек пычӗҫ вӗсем. Пӗр пилӗк ҫухрӑм пек кайсан виҫӗ хӗр харӑсах чарӑнса тӑчӗ: ирпе апат анманччӗ те, халӗ ак хытах ҫиес килсе кайрӗ. Кучченеҫлӗх илнӗ булкасушкӑсем шӑнма ӗлкӗрнӗ те-мӗн. Хӗрсем сивӗ булкӑна хуҫса ҫирӗҫ. Пӗр ял пуҫӗнчен пӑрӑнсан ҫил тухрӗ. Чӑннипе, ҫилӗ млтанах пулнӑ-ха та хыҫран вӗрнӗрен ҫеҫ сисӗнмен: халӗ ак ҫил ҫаврӑнчӗ те, сивӗ ачи пите самаях чӗпӗте пуҫларӗ. Пуҫа пӑрса, пит-куҫа алӑпа хупласа утаҫҫӗ ҫулри ҫынсем.

Вӗҫтерет. Хушшӑн-хушшӑн ҫула урлӑ юр хытах шӑлса лартать, ырӑнӗ-ырӑнӗпе хӗрсен самаях ашма килсе тухать. Типӗлле ҫинӗ булка ӑша йӑштарчӗ те, тепре сушка кӑларчӗҫ хӗрсем. Земфирӑн ҫакӑнтах ниҫта тапранасӑр ларас килет. Вӗсем, чӑнах та, пӗр тӗлте сумкӑсем ҫине тӗренсе кӑшт канчӗҫ, «сивӗре кун пек шӑнса хытма та пулӗ» – терӗ те Земфира ҫийӗнчех, вара вӗсем йывӑрланнӑ урисене вӑйпа хускатса каллех малалла талпӑнчӗҫ. Тӑван ялӗсене ҫитме кусен ҫирӗм ҫичӗ ҫухрӑм утмалла-ха. Пуласчӗ ҫакӑнта пӗр машина! Ҫук ҫав. Сивӗ чӗр куҫҫине шӑнтать, чӗр вӑя тамалтарать, шӑм-шака хуҫать. Ҫил юха юхтарать. Айлӑмалла

аннă чух вăл пушшех кассăн вĕре пуçларĕ. Çакăнта, ак, сисмен те, пит çăмартисем пилĕк пуслăх укçа пысăкăш шуралса хытнă; йăваласа ӳте каллех юн килтерсе тăм илнине ирттерчĕç çулри туссем.

Ывăннипе хĕрсем чĕнмесĕр утаççĕ, сăмах вакласси, калаçас-шӳтлесси нимĕн те çук. Кун пек чух пуçа темле шухăш та пырса кĕрет. Земфирăпа юнашарах пĕр яш кĕрĕм утнăн, вăл ăна хăй пекех чăтăмлă пулма чĕннĕн, Земфира хăй те маттур çынна кирлĕн туйăнать. Ăçтан тухрĕ-ха куç умне хальччен курман тесе шутланакан йĕкĕтĕн сăнарĕ? Каччăн хулĕнчен тытнă пек те хĕр, ăна унпа юнашар пыма çăмăл пекех. Хыçран никам та хуса çитмерĕ, нихăшне те сумка йăтса пулăшакан пулмарĕ, хăйсенех юра ашса утма лекрĕ хĕрсен. Йывăр вăхăтра куç умне тухнă сăнар урăх аса килмесĕр ачалăхри черчен шухăш евĕр вĕçсе çухалчĕ. Сивĕ хĕлпе ашăм юр хыççăн нумайччен асра юлмалăх амăшĕн сăнĕ ӳкерĕнчĕ. Киле çитсе алăк урати урлă каçсанах пĕрремĕш сăмахĕ «çиес килет...» тени пулчĕ-çке! Сĕтел хушшинче ачасен тетрачĕсене тĕрĕслесе ларакан амăшĕ ăна курсан вăштăрах хыпăнса ӳкрĕ, çавăнтах хĕрне хывăнмасалтăнма пулăшрĕ, ăшă тум тупса пачĕ, çăматă тăхăнтартрĕ.

Эх, тĕнче! Пурнăçра мĕн пур-ши вăл хутса ăшăтнă пӳртпе кăмакаран халь çеç кăларнă вĕри апатран ырри?! Хальччен çинĕ нимĕнле апат-çимĕç те çакăн пек тутлă пулман пуль; нимĕнле хăтлă çурт та хальччен çакăн пек ырă та канлĕхлĕ туйăнман пуль... Апат çинĕ хыççăн Земфира (кулăшла-и?) кăмака çине хăпарса ларчĕ те тумтир сарса выртрĕ, вара самантрах лăпсăр... çывăрса кайрĕ.

Юра ашса утнă чух ăша кĕнĕ «юмахри» çын сăнарĕ халĕ стадионра тепре курăнчĕ-çке! Кăкăрĕ çинче унăн – 4-мĕш номер. Çак айванла куç ултавне Земфира асран сирме тăрăшать, унăн ăмăртура кам-кам мала тухнине пĕлмелле халь, кун хыççăн вара группăри студентсем тишкермелĕх репортаж çырмалла.

Гимнастсем хăйсен пулатарулăхне кăтартса пĕтерчĕç те, стадионра футболла выля пуçларĕç. Кĕркунне шурăхса юлнă курăк çинче тăлт-тăлт сиксе вирхĕнекен хура пăнчăллă ула мечĕке пĕр йыш тăрмашсах хăваланине сăнать халăхпа лăк тулса ларнă стадион. Çав пĕртен-пĕр мечĕке бутса тăхăннă çивĕч урасам хап! тапаççĕ, ун хыççăн чупаççĕ, ăна пĕрре пĕр хапха, тепре тепĕр хапха еннелле хуптĕрлеççĕ... Шал-л! алă çупать мĕн пур трибуна.

Футбол вăййи чухне стадиона хăйне кĕрешӳçĕ улăп темелле пуль. Такампа, тепĕр патвар кĕрешӳçĕпе, вирлĕн тытăçнă пек вăл. Тăшманне аяла пĕтĕрсе чикме тăнă саматра ку хаш-ш! та ах! сывлать. Аяла пулнă паттăрĕ темле майпа каллех ура çине сиксе тăма ĕлкĕрет те, кунăн вара ăна пилĕкрен тепĕр хут çатăрласа тытмалла, пуç урлă вирлĕн ывтăнтарса çапмалла килсе тухать – пĕр самант пач сывлама чарăнать вара кĕрешӳçĕ. Персе хутлатни, ӳт-пӳ тарланине пула, çавăнтах пулă пек шăвăнса тухма ĕлкĕрет те, каллех çăвартан ха-а-а! сывлăш кăларса а-а-а! сывлăш çăтать улăп çын стадион. Ку çапла туйăнать çеç-ха, тӳррипе илсен тăп-тăваткал уйри шуранка курăк çинче футболла чип-чипер выляççĕ.

Асфальт сарнă анлă çул çине тухнă марафонецсемпе çӳревçĕсем – спорт мелĕпе утакансем – епле кĕрешеççĕши халь? Хăшĕ малта пырать-ши вĕсенчен?

Акă, стадион кĕрлесе кайрĕ. Армеецсем мечĕк тапса кĕртрĕç иккен. Унтан каллех алă çупса ячĕç. Мечĕке тепре тапса кĕртрĕç-ши? Çук. Стадионăн леш енчи алăкĕнчен спортсмен килни курăнчĕ: тĕреклĕ атлет васкавлă утăмпа финишалла вашкăртса çывхарать. Кăкăрĕ çинче çакăн – 4. Çынни сăнран кайнă, питĕнче пĕр чĕрĕ тĕс те çук. Палламалла мар улшăннă вăл. Каччăн тути-çăварĕ типсе çуннă темелле, ик куçĕ путса ларнă пек. Ĕнсепе мăй, хул-çурăм таврашне йăрăмйăрăм шурă тар пуснă: тар типнĕ хыççăн юлнă тăвар вăл. Малтан çитнĕ тăваттăмĕш номере тăвăллăн алă çупса кĕтсе илчĕ иккен стадион. Çын финиш хăйăвне

татрĕ те ахаль утăмпа канса илмелле ирĕклĕн утса кайрĕ; пĕшкĕнсе ик аллипе чĕр куççи çине тайăнчĕ, вара каллех утрĕ, каллех пĕшкĕнчĕ. Унтан аяккалла пăрăнчĕ те варне тытрĕ... Атлет асапланать – ирпе мĕн çини те ăшран тухать-çке унăн. Стадионра ĕçлекен хĕрарăм футбол хапхи хыçĕнчи çереме шлангпа шыв сирпĕтет, спортсмен çав сивĕ шыв пĕрĕхĕвĕ айне кĕчĕ те киленĕçлĕн тăрса ик аллине çӳлелле çĕклерĕ...

Ку самантра стадион тепре хĕрӳллĕн кĕрлесе кайма ĕлкĕрчĕ, утса мала тухнă çын вара çавăнтах футбол уйне пăхса мăшăр куçне йăлкăштарчĕ – армеецсем иккĕмĕш мечĕк тапса кĕртнĕшĕн савăнчĕ вăл.

Курни-илтнине çырса хумашкăн блокнатне хатĕр тытнă Змфира атлет патне пырса: «Хăвăр епле мала тухни çинчен каласа памăр-ши?» – тесе ăна куçран пăхрĕ. Пичĕ тăрăх юхакан шыва алăпа сăтăракан спортсмен нимĕн те чĕнмерĕ-ха, вăрахран çеç вăл такама тарăхнăн та ӳпкевлĕн: «Манăн старта тăмалла та марччĕ», – тесе тавăрчĕ.

Ывăннă атлет финиша çитнĕ ытти юлташĕсемпе пĕрле хывăнса тăхăнмалли пӳлĕмелле уттарчĕ, çавăнтах каялла çаврăнса хĕре тепре тĕсерех пăхрĕ, çынна палласа илес пек вăрахчен тинкернĕ хыççăн çеç ыттисем хыççăн туртăнчĕ. Земфира ăна куç илмесĕр сăнать. Спортсмен, çĕнтернĕ пулин те, мĕншĕн-ха манăн старта тăмалла та марччĕ, – терĕ-ши?

* * *

Совет çарĕн спорт клубĕ çăмăл атлетсен хĕллехи ăмăртăвне кая юлса, шыв-шур тапранас умĕн тин ирттерчĕ. Кунта спорт мелĕпе утса Виктор Ураваш рядовой мала тухрĕ, çакăншăн ăна часть командирĕ киле кайса курма отпуск пачĕ. Аслă тренерĕ, хăй те тренировкăсене пĕрле çӳрекен Клименков капитан салтака: «Отпуска кайма тăхта, ĕлкĕрĕн, халь пысăк ăмăртусене хатĕрленмелле», – тесе хучĕ. Тĕрĕс ка-

лать вăл: яланхи пекех майăн иккĕмĕшĕнче Мускавăн çуллахи спорт сезонĕ уçăлмалла, июльте вара СССР чемпиончĕ пулать – унта Олимп вăййине камсем каяссине палăртаççĕ. Çавăнпа ку тапхăрта хатĕрленӳн пĕр кунне те, пĕр сехетне те сиктерме юрамасть. Анчах салтак – салтаках, ăна отпускри ирĕклĕх илĕртет. Килте тахçантанпах пулман-ха Виктор. Çара та вăл ялтан килмен. Чĕре тăван тавралăхшăн çамрăк чух хытăрах тунсăхлать мар-и çав! Çуралнă ял хăй ывăлне час килсе курмашкăн кăчăк туртать-çке. Епле-ши халь ачалăха ирттернĕ вырăнсем? Уйра юр шĕлкĕшрĕ пуль. Тавралăх улаланнă-ши? Йăмра çинче курак янлать ĕнтĕ. Виктор туса çакнă вĕлле чиперех-ши, шăнкăрч йышăннă-ши ăна. Хĕлле хуçаланнă сала кайăка унтан хăваласа кăларнă хыççăн пӳрчĕн ăш-чиккине ытлашши çӳпçапран тасатать пуль çав ĕçчен кайăк, йăмра туратти çине ларса юрлать пуль ирсерен. Çырмара шыв шарласа юхать ĕнтĕ, вăл та кунти хула урамĕнчи мар, казарма айккипе килекен шыв та мар – темле илемлĕн, чуна хавхалантарса юхакан шыв. Малти урамра чуччу çакаканччĕ, ача-пăча кĕпĕрленсе пăр кайнине курма Сăр хĕррине утаканччĕ...

Иртнĕ çул та, спорт мастерĕ ятне илнĕ хыççăн, Ураваша дивизи командирĕ отпуска яма приказ çырнăччĕ, анчах спортри хĕрӳ лару-тăрăва пулах Виктор киле кайса килеймерĕ. Халĕ ăна пур ăмăртусемпе канăçсăр тренировкăсем шалтăрах ĕшентерчĕç. Çавăнпах ĕнтĕ Клименков капитан ӳкĕтлени ку хутĕнче салтак чунне витерейменĕ – Виктор пĕлтĕрхине те шута илсе çирĕм кунлăх отпуска тухса кайрĕ.

Салтак яла таврăнсан кам хĕпĕртемĕ! «Пит ырă вăхăтра килсе çитрĕн», – терĕç килтисем. Çын Мăн кун эрни тĕлне лекнĕ-мĕн. Ялта чылайранпа пулманскерĕн кӳршĕ-арша та çитсе курас килет, тăванĕ-пĕтенĕсемпе калаçас-юмахлас кăмăл çĕкленет. «Унăн ĕçме юрамасть, тумлам та сыпмасть вăл», – терĕç-ха спортсмен пирки малтанах. Хреснамăшĕ хăнана чĕнсе кĕртсен

виçĕ çăлтăрлинех кăларчĕ те, Виктор хăйне пĕчĕк чух чĕрçи çинче тытнă хĕрарăмăн ырă кăмăлне хуçма вăй çитереймерĕ. Унтан мучăшĕн ачи Çтуппан, иртнĕ кĕр салтакран килнĕскер, илсе кайрĕ. Ку вара четвĕртпе сăмакун кăларчĕ. «Никамăн та пырĕ тăвалла мар. Эп темиçе çăлтăрлинех хатĕрлеймерĕм. Кил, Виктор, тытса пар», – терĕ вăл. «Манăн чаçа таврăннă-таврăнманах ăмăртăва хутшăнмалла пулать, çавăнпа, каçарăр, туммам та сыпмастăп», – тесе лăпкăнах тавăрчĕ Виктор. «Ман тантăш та, ман тăван та мар апла эс, – кӳренчĕ Çтуппан. – Пĕрле ӳсмен эпир, пĕр класра та вĕренмен. Çапла-и? Хам туя чĕнеймерĕм». «Ун пек тӳрех урлă ан ил-ха эс, Çтуппан, çынпа калаçма пĕлес пулать, – чĕвĕлтетрĕ арăмĕ. – Кил, ывăлсем, шăкăл-шăкăл калаçса ларăпăр».

Хăй тăванĕсене пăшăрхантарас-кӳрентерес темерĕ вара Виктор. Черккен чикки çук-çке, пĕрре çĕкленсен вăл тепре те çĕкленет. «Вăт, спорт мастерĕ, вăт, Совет çарĕн чемпионĕ!» – салтака мухтаса калаçрĕç кĕрекере.

Ах çав, малтанхи виçĕ куна шутламасассăн урă куçпа кураймарĕ вара Виктор тăван ялне. Салтак киленсе пăхаймасăрах ула-чăла хир хуралчĕ. Виктор итлеймесĕрех çурхи шывăн шăнкăрти сасси те йăнчĕ, унсăрах чуччу вашлатрĕ, Сăр çийĕ те ун куçне курăнмасăрах пăртан тасалчĕ.

– Хăв каймалла пуличчен хăна-вĕрле пуçтарăпăр, – терĕ амăшĕ Виктора.

– Çук! Эп ыранах каятăп, – хирĕçлерĕ яш çын такама тарăхнăн çирĕп саспа.

Вара вăл, чăнах та, палăртнă вăхăтчен ултă кун малтан чаçа таврăнчĕ. Май уявĕ умĕн марафонецсемпе çӳревçĕсем хушшинче тĕрĕслев тренировки, «прикидка» текеннине ирттерчĕç. Нумай мар, пурĕ те сакăр километр çеç ăмăртса утмалла. Ураваш аран-аран тенĕ пек, нушаллăн, асапланса пĕтсе вĕçлерĕ çав дистанцие; командăна лекес шутлисенчен пĕринчен те иртеймерĕ. Çак кăтарту вăй-хал шайне тĕрĕс палăртать пулсан,

Викторӑн ҫынсем ӑмӑртнине пӑхса тӑрасси кӑна юлатьҫке. Уншӑн кунта халь кама ятлӑн?

– Ҫук, командӑра пулатӑн! – тарӑхса пӗлтерчӗ Клименков. Сивӗ куҫӗпе вӑл спортсмена ҫисе ярасла пӑхать, сӑмахне шӑл витӗр хӗстерсе кӑларать. – Кубока вӗҫертсе ярӑн кӑҫал!

Кубок каяс хӑрушлӑх армеецсен, чӑнах та, пур: динамовецсем тахҫанах вирлӗн хатӗрленеҫҫӗ. Вӗсен ҫӳревҫи Соломонов хӑйсем хушшинче лайӑх тӗслӗх кӑтартнӑ. Ҫапла, малтанхи вӑя кӗме ӗлкӗрнӗ-и, ӗлкӗрмен-и – Викторӑн хӗрӳ тытӑҫӑва тухма лекрӗ. «Ҫӗнтерме эсех ҫӗнтеретӗн», – терӗҫ ӑна юлташӗсем. Вӑл ҫапли ҫаплах пулчӗ-ха, анчах финиш хыҫҫӑн та спортсмен еплерех асапланчӗ?

* * *

Земфира стадионран таврӑннӑ ҫӗре пӗрле пурӑнакан хӗр тантӑшӗ, самаях ҫӳллӗ пӳллӗ Вера Горчакова, пӗлӗмре каччипе пӗрле ларать. Каччи, ялти учитель, паян Май уявне хулана килнӗ-мӗн. Шӑкӑлтатса калаҫакан ҫак мӑшӑра чӑваш хӗрӗ хӑй сисмесӗрех ӑмсанчӗ. Хальччен кун пек туййӑм пулманччӗ-ҫке унӑн. Иртнӗ кӗркунне Земфира Верӑран: «Мӗн калаҫатӑр вара иксӗр ҫеҫ чухне? Пӗрле илсе каяс пулсан ҫурҫӗре те кайнӑ пулӑттӑн-и?» – тесе ыйтса хупланӑччӗ. Ачалла айванлӑхӗпе Земфира каччинчен те: «Эсир юрататӑр-и пӗр-пӗрне? Аван пуль юратсан? Мӗнлерех вӑл юратаканӑн чунӗ?» – тесе те ыйтнӑччӗ. Вера та Земфирӑна хӑйне аякка пӑрса хӑвармасӑр: «Леш тӑрпалтай ҫырма пӑрахрӗ-и сан пата?» – тенӗччӗ. Сӑмах кунта Земфирӑпа пӗр шкулта вӗреннӗ Яша Иванов ҫинчен пырать. Ҫав ача вӑтам шкула ку хӗртен икӗ ҫул малтан пӗтерчӗ те Шупашкарти пединститута вӗренме кӗчӗ, ҫавӑнтанпа вара вӑл ученица патне вӗҫӗмсӗр ҫыру ҫыра пуҫларӗ. Аслӑ шкула вӗренме кӗме ӗмӗтленнӗрен-ши, Земфира Вутланова та институтран килекен саламлӑ хута кӗтетчӗ.

Хӗр вунӑ класс пӗтернӗ хыҫҫӑн Яша каникула таврӑнчӗ те питӗ вӗҫкӗнленсе, мухтанса калаҫкаларӗ. Яша сӑвӑ ҫыркалать, икӗ сӑвви хаҫатра тухнӑччӗ те, уншӑн хӑйне поэт тесех шутланӑччӗ. Ку ҫеҫ те мар-ха, «штангистсен секцине ҫӳретӗп, чемпион пулатӑп», – пакӑлтатнӑччӗ шавах. Ҫӳҫне вӑрӑм ӳстерсе янӑ вӑл, баканбарда пур. Клубран Земфирӑна ӑсатнӑ каҫхине ҫав вӗҫкӗн хӑйне питӗ ирӗклӗн тытма хӑтланчӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн вара малтанах кӑмӑл туртман лутра кӗлеткеллӗ каччӑран чун пачах сивӗнчӗ. Земфира Мускава вӗренме кӗрсессӗн лешӗ пӗр вӗҫӗм ҫыру сӑрмаларӗ-ха – хирӗҫ чӗнменрен пулас, юлашкинчен лӑпланчӗ.

Вера Горчакова кӑна асӑрхамасӑр юлмарӗ: «Ӗненмесӗтӗп эп ӑна, юратмасть вӑл сана», – тесе хучӗ.

Халь ҫак хӗр упраҫ, университетри ӑста спортсменка, пӳлӗмре хӑй калаҫакан каччипе ларать.

– Тантӑшӑм пӑрлӑ ҫурҫӗре кайма хатӗрленни ҫинчен пулать пуль ман репортаж, – шӳтлереххӗн сӑмахларӗ Земфира.

– Стадионра мӗн вӑхӑт пулсан та урӑх тема тупӑнмар-и? – ним чухлӗ те йывӑра илмесӗр тавӑрчӗ Вера, ҫӳллӗ пӳллӗ хура ҫӳҫлӗ хӗр.

– «Ҫаврӑм эстафета» мӗнле иртрӗ? – ӗҫлӗ сӑнпа лӑпкӑн ыйтрӗ чӑваш хӗрӗ унран.

– Аван. Каласа памалли те, ҫырмалли те ытлӑнҫитлӗнех пухӑнчӗ, – пӗлтерчӗ Вера Горчакова. – Кӗрешӳ ҫивӗч пычӗ, эпир ҫӗнтертӗмӗр.

– Саламлатӑп.

Вера Горчакова хӑй калаҫакан каччине ӑсатма вокзала кайсассӑн Земфира пӳлӗмре пӗччёнех юлчӗ. Ниҫта та тухас килмерӗ унӑн. 20 километра утса ҫӗнтернӗ Виктор Ураваш ҫинчен студенткӑн хитре-хитре япала ҫырасчӗ. Ҫынни кирек хӑш халӑх ачи пулсан та хушамачӗ чӑвашла вӑшт-вашт утӑма палӑртнӑ пек илтӗнет-ҫке ара! Анчах спортсменне хӗр упраҫ пит сахал пӗлет-ҫав, ҫӳревҫӗсем ҫулра епле кӗрешнине те курман...

Çак дистанцире Соломонов динамовец малта пынă. Вăрăмскер вăл, аслăк çинчи улăма çил вĕçтерсе кайнă пек, лĕпки çаралса юлнăскер; ăмăрту протоколĕсенче пĕр вунă çул ĕнтĕ ун ячĕ курăнать, анчах Мускавра та, ытти пысăкрах кĕрешӳсенче те вăл хальччен мала тухайман. Кăçал юлашки çул çӳретĕп, спорта пăрахиччен Мускав чемпионоĕ пулатăпах тесе вăл ăмăртăва вирлĕн хатĕрленнĕ. Армеецсен лидерĕ Ураваш хăйсен тĕрĕслевĕнче начар утни, ыттисем хатĕрленсех çитейменни ун хăлхине кĕнĕ ĕнтĕ. Çавăнпа стартран тапрансанах Соломонов тӳрех мала чавтарса тухрĕ. Ку хытă вирхĕннине кура Виктор ăна хыçран хăваласшăн пулчĕ, анчах пĕрлех ăмăртакан Клименков спортсмена йышран уйрăлса кайма чарчĕ. Армеецсем хăйсен лидерне ума кăлармасăр çумра ертсе пычĕç, çав хушăрах Соломоновне те ытлашши инçенех вĕçертмерĕç. Юлташĕсем хӳттинче Ураваш тĕл-тĕл туртăшкаласа, тĕл-тĕл çăмăлрах утăпа пычĕ. Финишчен тăвату çухрăм юлсан çеç самаях ывăннă тренер ăна: «Кай! Эс уçăлса илтĕн халь. Ĕçле», – терĕ. Утта хăнăхса пусăрăннă Виктор пĕрле пыракансенчен самантрах уйăрăлчĕ те динамовнца çывхарчĕ.

Хăйпе танлашсан хăвăртлăхĕ чакнă Соломонов Ураваш çине куç шуррипе пăхса илчĕ те ăна тепре хăварасшăн малалла талпăнчĕ, анчах ку ăшталану унăн кĕске хушăлăх кăна пулчĕ. Виктор хăй çеммипех, ытлашши васкамасăр, каллех ума тухрĕ. Кун хыççăн вара хăйĕнчен пĕр çынна ирттернĕ Соломонов ыттисем те çитесрен шикленсе каялла пăхкала пуçларĕ. Чăнах та, кăштахранах тепĕр икĕ спортсмен ун ури çине «пусрĕ». Динамовец вара ăмăртма пăрахса çул айккине пăрăнса тăчĕ. Ураваша мĕнле те пулсан тавăрас ĕмĕтпе кӳлешрĕ вĕчĕ чунлă çын.

Çакăн çинчен Земфира, паллах, пĕлеймерĕ.

## Иккӗмӗш сыпӑк

Тепӗр ҫыннӑн пурнӑҫра ялан телей килсе тӑнӑн тӑйӑнать, ун пеккине вара: вӑл кӗпеллӗ ҫуралнӑ, – теҫҫӗ. Ҫын пурнӑҫра ура ҫине тӑнӑ самантрах телейӗ тарса пыма тытӑнсассӑн амӑшӗ ывӑлӗ-хӗрне: «Эс ҫуралнӑ чух сӗтел ҫинче ҫӑкӑр пӗтнӗ тӗл килнӗччӗ ҫав», – тесе ӳпкелешет. Телей пирки пӑшӑрханасси ҫук Викторӑн: пӗрремӗш стартарах вӑл ырӑ ҫынна тӗл пулнӑ.

Ялти шкула вӗренсе пӗтернӗ ҫулхинех, ҫулла, утӑ ҫине тухиччен, салтак кайма ҫул ҫывхарнисене ҫар комиссариачӗ района пуҫтарчӗ. ГТО нормисене партарчӗҫ вӗсене. Турник ҫинче янах ҫаклаттарнӑ, кам мӗн тӑршшӗ сикме пултарнине тӗрӗсленӗ хыҫҫӑн чупкӑн чуптарчӗҫ. Ачасене урам тваткалне илсе тухрӗҫ те ҫеремлӗ лапама урлӑ пӗр рете тӑратрӗҫ – ҫирӗм ҫын. Ыттисен ҫаксем килсессӗн каймалла. Виктор иккӗмӗш ушкӑна та лекеймерӗ. Вӑл юлашки касӑка юлчӗ. Хӑйсен мучӑшӗн ывӑлӗ Ҫтуппан та – ун ҫывӑхӗнчех. «Атя чупмастпӑр, пытанса юлатпӑр», – систерет вӑл Виктора. Чӑнах та, пытанса юлма май пур: хӗвӗшӳре кам асӑрхать сана? Чупмасан та чупрӑм те, ушкӑнпа пӗрле килтӗм те. Малтан чупса килнисем ывӑннӑ та ҫерем ҫинче лараҫҫӗ; пысӑк йышӑн тепӗр ҫурӑмӗ ӑмӑртать-ха. Офицер, ав, вӑхӑтсене тӗрӗслесе ҫырать. Пӗр ҫамрӑк, каникула килнӗ студент, ҫар комиссариатне ӑмӑрту ирттерме пулӑшать. Ачи Герман Савельевич Савельев ятлӑ иккен. Мала тухма ӗмӗтлекенсне вӑл кайри ушкӑна юлма сӗннӗ. Чылайӑшне ҫак спортсмен пӗлетмӗн. Халӗ вӑл ӑмӑрту вӗҫне юлнисене пурне те пӗр ҫӗре пухӑнма чӗнет. Ҫтуппан Виктора каллех: «Атя картишне кӗрсе пытанатпӑр», – тесе систерчӗ. Мучӑшӗн ывӑлӗ Виктортан пӗр ҫул аслӑ, унӑн кӑҫал ят тухмалла. Виҫҫӗмӗш класран пуҫласа Ҫтуппанпа Виктор ялан пӗрле вӗреннӗ. Куҫаймасӑр юлнӑ ачана Викторпа пӗр парта хушшинех лартрӗҫ. «Ӑс ҫитерекен» Ҫтуппан урок калама доска умне тухнӑ чух истори кӗнекинчи ятсем-

пе çулсене, грамматикăри пулăмсене, арифметикăри хутлас таблицăна алă тупанĕпе пӳрнесем çине çырса тултаратчĕ. Сăвва та вăл çапла йĕркеллĕ вĕренмесĕрех çăркаласа каласа паратчĕ.

Виктор та «пиллĕксемпе» вĕренмен, ялан тенĕ пекех вăл «виççĕ» паллă илнĕ. Уроксене хатĕрленмесĕр кайни те час-часах пулкаланă унăн. Пĕрле вылянă чух Çтуппан кĕнеке тытса ларасси çинчен нихăçан та аса илмен çав. Виктора учительсем: «Тăрăшсан, эс «пиллĕксемпе» вĕренмелле», – тесе вăрçатчĕç.

Тума хушнине пурнăçламасăр пăрăнса тăман-ха Ураваш Кĕркури ачи. Пĕрре, уроксем хыççăн, Çтуппанпа ермешсех сбортан тарнăччĕ. Халĕ чупассинчен пăрăнас шухăш мар, ăна урăххи илĕртет. Викторсен ялĕ Сăр тăрăхĕнче, вăрман хĕрринчен инçе мар ларать. Кашни ĕшнен хăйне çеç тивĕç паха енĕ пур. Уравашсен ял çумĕнче шăпах – илемлĕ çăкасар. Çавра çулçăллă лăпсăр йывăçсем унта яланах сана кĕтнĕ пек, ыр тăван пек, пĕлĕш-хурăнташ пек туйăнаççĕ. Çăкалăхпа юнашар – капмар юманлăх. Унăн хуйăрлă, арман йĕкинчен чылай пысăк та çӳллĕ йывăçсем кунта шĕшкĕ тĕмĕсем хушшине ура пуснă пек мнаçлăн та патмаррăн курăнса лараççĕ. Вĕсем хăйсен айĕнчи йăвă вĕтлĕхе çеç мар, юнашар хунава та хӳтĕре упраççĕ темелле. Анчах, пĕр шухăшласассăн, çăкалăхĕ юманлăхне, юманлăхĕ çăкалăхне пăхса усранăн туйăнать. «Пирĕн енчи юман самай çирĕппи. Ытти йывăçсен хӳттинче шăтса ӳснĕрен килет вăл», – тет Виктор ашшĕ. Ураваш Кĕркурийĕ чăваш вăрманĕн капмар юманне те, лаштра çăкине те ытти йывăçран уйăрăммăнах асла хурса мухтать. Ялти ватăсемшĕн çăка хăйне евĕр хисепре. Çавăнпах пулĕ ĕнтĕ ялĕсем те ку тăрăхра Юманлăх, Пилешкасси, Çирĕклĕ тенисемпе пĕрлех темиçе ушкăн – Çăкасар. Викторсен ялĕ Çĕн Çăкасар ятлă. Амăшĕ Виктора теплерен-мĕнре кӳршĕ яла, куккăшĕсем патне ĕçпе яратчĕ те, ача çăкасар витĕр утнă чухне утса, чупнă çĕрте йăрт-йăрт чупса васкавлăн вĕçтеретчĕ. Шикленни те пулнă, унсăрах мар; ав, сан

умна çавра çулçăллă пĕр лăстăр йывăç, унтан тепри: «Ку эпĕ-ха, ан хăра», – тенĕ пек киксе тухать, ăшшăн пăхса хыçа тăрса юлать; çăкасар хыççăн шĕшкĕ тĕмĕллĕ юмансарпа иртетĕн. Вăрман хаш-ш! тунипе малтан çамка çине сив тар, унтан васкаса юртнипе ĕнсе çине вĕри тар тапса тухать. «Чуппа каякана пай пур, çывăракана пай çук», – тесе йăпататать амăшĕ ачана киле çитсессĕн. Çавăнтах мĕн те пулин тутли çитерет.

Халĕ шăпах салтак пулмаллискерсене чупăва чĕннĕ вăхăтра Виктор хăйне амăшĕ кӳршĕ яла кайса килме хушнăн туйрĕ. Çавăнпа вăл ку самантра Çтуппан сĕннине хăлхана чикмерĕ, куç умĕнче çăкалăха, çул кукринчи парка та яштак çăкасене, хулăм хуйăрлă çӳллĕ те тĕреклĕ юмана курса тăчĕ. Паян кӳршĕ яла çеç кайса килмелле мар иккен-ха – çакăнта пухăннă ачасемпе мала тухассишĕн ăмăртса чупмалла! Герман Савельев, çинçе кĕлеткеллĕ йăпăшка ача (пилешкассисем терĕç ăна) хăйсен ялĕнчи йĕкĕтсене дистанцире епле пымаллине вĕрентет. Пĕр чăнкамскер аякка пырса тăнă та спортсмена тимлĕн итлет. Аллине сăмса тутри тытнă хăй, труссипе майка вĕççĕн çеç. Викторсем çара уранах пулсан ку вара тапочкăпа. Тумĕпе спортсмен пекрен-и, пурте çавă çĕнтерет теççĕ

Аслă лейтенант юлашки ушкăнрисене пĕр рете тăратрĕ те миçе çынне шутларĕ.

– Пĕрре çитмест. Кам çук? Вун çиччĕн пулмалла кунта! – тинкерчĕ ретре тăракансене вăл.

Студент спортсмен та списока тĕрĕслеме пуçларĕ.

– Анисимов! – чĕнет вăл. – Анисимов!

«Эпĕ», – тесе калакан пулмарĕ.

– Анисимов Степан! Çăкасар ял Советĕнчен! – уççăн илтĕнет лейтенант сасси. Ку вăхăтран нарсуд картишĕнчен Çтуппанваскамасăр тухрĕ те строй еннелле ним пулман пек уттарчĕ.

– Ăçта çӳретĕн эсĕ?

– Тула кайнăччĕ, – хуллен тавăрать чееленме хăтланнă ача.

– Тăр ак кунта – хĕррине, – сĕнет ăна çар çынни.

Çтуппан вара шăлаварне хывмасăрах строя пырса тăчĕ.

Викторпа юнашар вара хайхи чăнкам ача вырнаçрĕ. Вăл çăварне сăмса тутри хыпнă, унсăрăн çăварпа сывланипе пӳлĕнетĕн имĕш. Виктор та ăна кура аякка хунă шăлавар кĕсйинчен сăмса тутри кăларма пĕшкĕнчĕ, анчах леш студент, Герман Савельев, куна: «Мĕн тума вăл сана?!» – тесе чарчĕ.

«Марш!» тени илтĕнчĕ кăна – пурте малалла вирхĕнчĕç. Урампа кăшт кайсан кусен тăкăрлăкпа уялла пăрăнмалла. Ялтан тухнă çĕре пысăк тĕрке саланса сăнчăр пек вăрăммăн тăсăлчĕ. Пуринчен малта хайхи тăсланкă илтерсе пырать. Çул айккинчи хурама тĕлне çитсен каялла çаврăнмалла. Çав ача халĕ те малтаха. Çăварĕнче унăн – сăмса тутри, сăмса витĕр кăна сывлать вăл. Виктор та çăварне уçасшăн мар: çынсем калашле пӳлĕнсе ларма пулĕ. Ак хайхи, Савельев ялĕнчисем Виктортан та юла пуçларĕç. Леш тăрнаккай малтах пулать-ши вара? Тытăнса пымалла мар-и унпа тесе Виктор, хăй те сисмесĕр, çăварне уçрĕ те пыра йӳç шыв килнине пăхмасăрах хаш-хаш сывласа хытăран та хытă чупа пуçларĕ. Танлашрĕ малтипе вăл. Иккĕшĕ юнашар пыраççĕ. Пĕрре Виктор умарах тухать, тепре – лешĕ. Юлашкинчен тăсланкă ача тамалчĕ-тамалчех. Çак самантра асра юлмалăх урăххи куçа курăнчĕ: Виктор умĕнченех пĕр хĕр ача – çăкасарти çамрăк йывăç пекех, çул урлă чупса каçать. Хурăн çырли евĕр чиперскер салтак пулас çын çине йăл куллипе ăшшăн пăхса илчĕ. Виктор та хайхи, кĕрешӳ çинчен самант манса, чечеклĕ кĕпене вичкĕн куçĕпе хыçран пăхса çерем енелле ăсатрĕ: сарă мамăк пек чĕпписене кăвакал пĕвенелле ертсе пырать, хĕр ача, çулçăллă йăмра хулли тытнăскер, хыçран утать. Вĕтĕ кăвак чечеклĕ шурă кĕпе çинчен куçа илсенех Виктора тепĕр сăнар курăнчĕ: çырма хĕрринчи çамрăк йăмра картинче Çтуппан пĕшкĕнсе ларать. Чун пĕрре ыррăн вăркануă хыççăнах çак кăмпăс пек ултав

курăннипе Çĕн Çăкасар ачи, Ураваш Кĕркури Викторĕ, урса кайнă пек илтере пуçларĕ. Финиша вăл пĕрремĕш çитрĕ. Хыçри ушкăнпа килекенсем хушшинче ак пăх та кур – Çтуппан ыткăнать. Çынсем пек йывăррăн сывламасть те вăл, тарламан та.

Савельев Ураваша Шупашкарти пĕр техникума вĕренме кĕмешкĕн сĕнчĕ, «спорт секцине çырăнмалла», – терĕ. Викторăн çулĕ çак студент каланă пек мар, кăштах урăхларах выртрĕ; çын К. хулинчи профтехучилищинче вĕренчĕ те унтах ĕçлеме пуçларĕ. Савельевпа çакăн пĕрле пулма лекрех, анчах вăл салтак ячĕ тухсан тепĕр ик çултан пулчĕ-ха. Унччен, районти призывниксен ăмăртăвĕ хыççăн, çамрăк асĕнче çул урлă каçнă леш «кăвак чечеклĕ шурă кĕпе» упранчĕ. Никамран ятарласа ыйтмасăрах вăл çав «лĕпĕш» кам иkенне пĕлме тăрăшрĕ, ăна çитес ярмăрккăра курма ĕмĕтленчĕ. Çуллахи хавяслă уява Виктор, ялти чи маттур каччă пек, купăс каласа пысăк йышпа пырса кĕчĕ. Учитель çемйинчи хĕр, кăçал çеç саккăрмĕш класран куçнăскер, Земфира Вутланова карусель ярăннине яш çын тӳрех асăрхарĕ, анчах кайран куçпа темле шырасан та Çĕн Çăкасар ачи ăна кураймарĕ. Çав хушăрах ретленсе утакан купăсçăсем йышĕнче яштак та тĕреклĕ яш кĕрĕме, призывниксен ăмăртăвĕнче çĕнтернĕскерне, хĕр пĕвне çитнĕ шкул ачи асăрханă çеç мар, сăна-сăна тинкернĕ. Ярмăрккă вĕçнелле çав ача хăй юлташĕпе пĕрле инвалида мăйран уртăнтарса йăтнăччĕ, «хромкине» хул пуççи урлă çакнăччĕ. Пĕр хавяслă та, пĕр тунсăхлă сăнлăччĕ яш çын.

Çĕн Çăкасар ачине Земфира урăх курман. Ăна маннă та. Ăшра çеç каччă сăнарĕ, чул хуплнă çăл куçĕ пек упранса юлнă. Пушкин поэминчи героиньăн ятне панă хĕре Викторăн та тек асăрхама май килеймерĕ.

Акă вĕсем Мускаври Лужникири стадионра пĕрпĕрне курчĕç, анчах калаçса тăраймарĕç, çитĕнсе çитнĕ халлĕн сăнран улшăннăскерсем хăйсем кӳршĕ ялсемех пулнине те пĕлсе çитеймерĕç.

## Виççĕмĕш сыпăк

Пĕрре палăрнă ята чун тепре те курас килет, спортра пĕрре çĕнтернине тепре те çĕнтерттерес килет. Занятие кайнă чух Земфира çула май киоск умĕнче яланхи пекех черет кĕтсе тăчĕ те икĕ пус тӳлесе спорт хаçачĕ туянчĕ. «Çăмăл атлетика. Пĕр тăван Знаменскисен мемориалĕ» тенĕ рубрикăна вăл васкавлăн пăхса тухрĕ, унта çырнине йĕркипе тишкерчĕ. Çук-ха, утакансем çинчен халлĕхе асăнман, ăмăртайман пулас-ха вĕсем. Каçхине, вун пĕрте, Вера Горчакова, урине ыраттарнипе пысăк ăмăртăва каймасăр юлнăскер, «ан шавлаттар-ха, чун тăвăнать», – тенине пăхмасăрах чăваш хĕрĕ радиопа «Спорт хыпарĕсем» кăларăма итлет. Вера чĕнмесĕр чăтаймасть. «Хăвăн ентешӳ пулнă терĕн-и-ха Лужникире çĕнтернине? Ун сăн ӳкерчĕкне мĕншĕн кроватӳ тĕлне çакмастăн? Кӳршĕ пӳлĕмри хĕрсем, ав, пĕтĕм стенана спортсменсен сăн ӳкерчĕкĕсемпе тултарнă», – тет шӳтлерех. «Стенисем çинче вĕсен – пĕтĕмпех футболистсемпе хоккеистсем, – пĕлтерет Земфира. – Çĕн Çăкасар ачи хоккеист та, футболист та мар, тĕрлĕ сăрăпа пичетленнĕ сăн ӳкерчĕкĕ журнал хуплашкинче тухман-ха унăн».

Майăн иккĕмĕшĕнче утнине спорт хаçачĕ ӳкерчĕк çапсах çырса кăларчĕ, çĕнтерӳçĕ унта Антей пек пырать. Хаçатри сăна касса илсе стена çине çыпăçтарас йăла Земфирăн çук ĕнтĕ, пулмĕ те. «Уравашăн çĕнтерӳ çулĕ ялти ăмăртуранах пуçланнă... Чăваш АССРĕнчи Çĕн Çăкасар ял ачине Совет çарĕнче спорт ăсталăхне çĕр-шыври паллă спортсмен Клименков Владимир Федорович вĕрентнĕ», – тесе çырнине касса пăсмĕ хĕр. Паллашса калаçнă пулсан Земфира хăйĕн ентешĕ çинчен Шупашкарти çамрăксен хаçатне хитре тĕрленчĕкех çырса янă пулĕччĕ те...

Пурнăç çулĕ çинче Викторшăн лайăх çынсем тупăнчĕç. Призывниксен ăмăртăвĕ хыççăн тепĕр икĕ çултан вăл çар чаçĕнче мунча кĕрсе салтак тумĕ тăхăннă

кунхинех Герман Савельева курчӗ. Урӑх хуларан пынӑ пулин те Виктор унпа пӗр чаҫа, пӗр ротӑнах лекнӗ иккен. Герман Савельев Виктортан тӑватӑ ҫул аслӑ, службӑна ӑна пединститут пӗтернӗ хыҫҫӑн илнӗ. Ҫулпа аслӑ ҫын вӗр ҫӗнӗ гимнастерка ҫине спорт разрячӗн значокне винтӑласа лартрӗ. Шултра тырӑ пучаххиллӗ ункӑра маттур атлет чупать унта. Кӑшт тӗксӗмленнӗскерне Герман порошокпа тасатрӗ те, спортри пултарулӑх символӗ куҫа йӑмӑхтаракан пулчӗ; уйрӑммӑнах тыр пучаххисем ылтӑн тӗслӗн ҫуталаҫҫӗ, аялти кӑвак хӑю ҫине «иккӗмӗш разряд», – тесе ҫырнӑ.

Районти призывниксен ӑмӑртӑвӗнче Виктор та виҫҫӗмӗш разряд вӑхӑтне кӑтартнӑччӗ-ха, анчах уншӑн значок илмелле пулнӑ-и, ҫук-и – ҫамрӑк пӗлмест. Халӗ вӑл ытти салтаксемпе пӗрлех Савельев Германа ӑмсанса пӑхать.

Салтак тумӗ тӑхӑнсан, иккӗмӗш кунхинех-ха, сержант стройра ҫавӑрӑнма, утма хӑнӑхтарнӑ хыҫҫӑн кӑшт канса тӑнӑ самантра, площаткӑпа иртсе пыракан пӗр яштак офицер, йӑм хура ҫӳҫлӗ те кӗре сӑнлӑскер, чарӑнса салтаксем патне пычӗ. Малтан сержантран хӑш ротине ыйтса пӗлчӗ вӑл, унтан тӳрех спорт значокӗ ҫакнӑ Савельевпа калаҫа пуҫларӗ. Разряд мӗнле енпе илнине, хӑш дистанцире епле вӑхӑтсем кӑтартнине пӗлесшӗн пулчӗ ку офицер. Калаҫнӑ чух шап-шурӑ шӑлӗсем пӗр тикӗс курӑнаҫҫӗ унӑн, ҫӑварне ытлашши уҫмасть те, сӑмах вара таса шӑл витӗр тимӗр каснӑ пек янӑраса тухать. Савельев разряда йӗлтӗрпе чупнисӗр пуҫне тата спорт мелӗпе утса илтӗм тесессӗн офицер пушшех хӗпӗртесе кайрӗ. Ҫара киличчен спортпа интересленекенсем татах пур-и тесе ыйтсан Савельев малтан Ураваша асӑнчӗ. Ачи районти призывниксем хушшинче ҫӗнтерни, виҫӗ километра аван вӑхӑтпа тухнине пӗлтерчӗ. Савельев кӗлеткерен ҫӳллӗ, пӗр ретлӗ стройра вӑтаммисенчен маларах тӑрать пулсан, Ураваш унтан та паркарах – тӑватӑ колонӑллӑ стройпа пынӑ чух пӗрремӗш ретре ун вырӑнӗ. Ҫаксем ҫине пӑхсан: «У, ку

йышпа утма пулать, – терӗ аслӑ лейтенант. «Эпӗ – сирӗн чаҫри физкульурӑпа спорта ертсе пыракан офицер, Клименков», – паллаштарчӗ хӑйпе вӑл. Герман Савельев офицер хушаматне илтсен тем ыйтасшӑн пулчӗ, анчах хӑймарӗ. «Сахал-и пӗр пек хушаматлӑ ҫынсем», – терӗ ӗнтӗ. Офицер сержанта занятие малалла тӑсма сӗнчӗ те КПП еннелле утса кайрӗ. Йӑрӑсскер, шыв юхнӑ пек пӗр тикӗс пырать вӑл, чӑвашсем ун пек ҫынна: «Картлампа пырсан та тӑп-тулли витререн пӗр тумлам тӑкас ҫук», – теҫҫӗ.

– Спорт мастерӗ вӑл, ют ҫӗр-шывсене кайса ҫӗренӗ, халь ҫак эрнере тин кӑна ӑмӑртуран таврӑнчӗ, – ӑнлантара пуҫларӗ сержант салтаксене.

– Аллӑ ҫухрӑма утассипе виҫӗм ҫул СССР рекордне ҫӗнетнӗскер-и? – куҫне чарӑлтарса ыйтать Савельев.

– Шӑп ҫавӑ, – хыпарлать сержант. Савельевпа пӗрле ытти салтаксем те, рекордсмен йӗркеллӗ этемех иккен тесе тӗлӗнеҫҫӗ. Спорта пуҫласа явӑҫнисемпе ахаль разрядниксемшӗн Клименков пеккисем турӑ вырӑннех туйӑнаҫҫӗ ҫав.

– Унпа ытлашши иленсех кайсан сирӗнне пыршӑпакартӑрсене кӑларать вӑл, – тет сержант кусене. – Малтан ҫӳреҫҫӗ те кайран, пӗр ик-виҫ тренировка хыҫҫӑн, тавҫӑруллисем пӑрахаҫҫӗ. Ӑмӑртусем кунта ахалех нумай пулаҫҫӗ. Пӗлтӗр пире пӗтӗм ҫар снаряженийӗпе: хӑйӑр тултарнӑ кутамкка, автоматпа кӗреҫе ҫактарса (шинеле те хул пуҫҫи урлӑ хӑмӑт пек чӗркесе уртмахланӑ) чуптарчӗҫ. Ывӑнни кайран эрне хушшинче те иртсе каймарӗ.

Сержант, ҫынни ку чӑвашах, ӑмӑрту-айхашусене юратмасӑр калатӑр-и те, паллӑ спорт мастерӗпе теренировкӑна ҫӳреме чунтан ӗмӗтленсе тӑрать Савельев. Виктор та спорт тӗнчи мӗн иккенне тавҫӑрасшӑн, ӑна пӗлме тӑрӑшнӑн шухӑшлать.

Ҫакӑн пек чипер кунах, каҫалапа, казарма коридорӗнче хайхи шӑл витӗр тухакан ҫирӗп сасӑ илтӗнчӗ. «Старшина! Старшина ӑҫта сирӗн?» – ыйтать

куç тĕлне пулнă салтакран. Лешĕ пĕлтерсен ку çын аялти хутри каптеркăна вăш-ваш кăна анчĕ те старшинапа сăмахларĕ. Çĕнĕ йышран пĕр вунă ачана тренировкăна илсе каясси çинчен пĕлтерчĕ çак офицер, кун пирки рота командирĕпе калаçса татăлнă-мĕн.

Салтаксем патне пырсан аслă лейтенант каллех чи малтан Савельева чĕнчĕ, Ураваша та асăрхаса: «Тренировка пуçлатпăр», – тесе пĕлтерчĕ. Офицер хушнипе Савельев спортпа айхашма кăмăл тунисене пĕр вунă çын пуçтарчĕ, çакăнтах иккĕмĕш ротăран тепĕр çамрăк, сарă сăнлă та чăр-чăр куçлăскер, хăй пычĕ. Вара ытлашши пысăках мар ушкăн Клименков аслă лейтенантпа пĕрле виççĕмĕш хута, часть штабĕпе юнашар пӳлĕме хăпарчĕ. Офицер ачасене йĕлтĕрпе çӳремелли кивĕ костюмсемпе кивĕ кедăсем шкапран илсе пачĕ те хывăнса тăхăнма сĕнчĕ. «Çĕнĕ тум илетпĕр-ха, çак эрнере çитме кирлĕ», – калаçрĕ вăл пĕр çемьери çывăх çын пек пурриçуккине нимĕнскер пытармасăр.

Тепĕр самантран аслă лейтенант вĕсене часть кил хушшинчен илсе тухса вăрман хĕррипе ертсе кайрĕ. Чупрĕç вĕсем. Малта Клименков пырать, Савельев унпа юнашарах пулма тăрăшать, хыçрисем юламрĕçи-ха тесе офицер каялла çаврăнса пăхкалать, хăшĕ те пулин юла пуçласан тамалать; хăй çакăн пек кросс ăçти кăна вăрманта, епле çеç паллă мастерсемпе чупни çинчен каласа пырать, çавăнтах кусем ăçта çуралса ӳснине те ыйтса пĕлет. Виктор вăл каланине те, Герман офицера епле тимлĕн тăнланине те сăнать; хăйне мăнаçлăн туять вăл: ара, малтисенчен юлмасть-çке Çĕн Çăкасар ачи! Уравашпа юнашарах пĕрре юлса, тепре çитсе иккĕмĕш ротăри хайхи шурă пуç пырать; хăюллă сăнлă илемлĕ йĕкĕт Шалимов Юрий ятлă, белорус иккен. «Эсĕ мĕнле тапраннă, çапла пыратăниç», – ăмсанать çав ача Виктора. Чăваш йĕкĕчĕ пĕр чарăнмасăр урине вăрăммăн илтерсе чупать, ума, хăй ентешĕпе офицера кăна пăхать. Чылайăшĕ ак çакăнта çитетпĕр те каялла таврăнатпăр, ак çав

тӳпене улӑхатпӑр та каялла ҫаврӑнатпӑр тесе шутлать. Кӑмӑллӑ Шалимов та ҫав ӗмӗтлӗ. «Тепӗр тӳпене улӑхатпӑр та, каялла илсе таврӑнать», – тет ӑшра. Тепӗр тӳпене те, тепӗр лапама та анса хӑпарчӗҫ вӗсем, унтан каллех каялла ҫаврӑнма шӑп меллӗ вырӑнсем черетленчӗҫ – спорт мастерӗ ҫаплах чупма тин тӑтӑннӑ пек йӑлт-йӑлт-йӑлт илтерсе пырать; хӑй калаҫма пӑрахмасть, шав калаҫнипе тута хӗррисем сурчӑклансах ларнӑ унӑн, ҫапах паллӑ спортсменсем мӗн чухлӗ кросс чупни, мӗн чухлӗ утни ҫинчен калакала парать. Пӗр суйи те ҫук юмахне вӑл ачасем ан ывӑнччӑр, хавхаланччӑр тесе ятарласа юптарать. Кайран, ӑмӑрту чух, хӗрӳ вӗренӳ вӑхӑтӗнче курӗҫ-ха ку ҫамрӑксем ҫак ҫын пӗр сӑмах чӗнмесӗр пыма пултарнине. Халь чупнӑ май сывлӑшне пӗрре пӳлӗнтермесӗр калаҫать те калаҫать ӑста атлет, хӑех сисет: кӑшт калаҫма чарӑнсанах ик ури хытӑрах кая пуҫлать, ачасем вара юлма тытӑнаҫҫӗ, хашкама ереҫҫӗ. Офицер ҫамрӑк мар-ха, ҫулӗпе тӑваттӑмӗш теҫеткере пырать, ҫапах халӗ те спортра вӑй питтиех шутланать.

– Сирӗн чӑваш ачиех Пайӑрка Ҫеркейӗ пурччӗ, вӑйлӑ йӗлтӗрҫӗччӗ, пӗрле дивизи кубокне ҫӗнсе илтӗмӗр, – каласа парать аслӑ лейтенант. – Йӗлтӗрпе 30 километра «патруль» чупнӑ чух юлашки вунӑ ҫухрӑм юлсан ывӑннӑ юлташӗн карабинне те илчӗ вӑл – ытти командӑсене пӗтӗмпех пӑрахса хӑвартӑмӑр.

– Пайӑрка Ҫеркейне лайӑх пӗлетӗп. Мана пулӑшнӑ та вӑл. Унпа пӗрле те ӑмӑртнӑ, – хыпарлать Савельев.

– Спорта пӑрахман-и?

– Пӗрремӗш разрядник. Республика командинчи йӗлтӗрҫӗ шутланать, – ӑнлантарать чӑваш ачи.

– Кунтах мастер пулмаллискерччӗ вӑл. Ҫӑва тухсан, шӑпах утас спорта явӑҫтарас тенӗ чух, ӑна инкек пулчӗ те, чаҫран кайрӗ, – пӗлтерет офицер.

– Халӗ те вӑл йӗлтӗрпе аван ҫӳрет, – тет Савельев.

– Апла маттур, – савӑнать Клименков.

Хӑйсен ентешне мухтани чӑваш ачисен кӑмӑлне

çĕклентерет, вĕсем халь малтинчен кăшт та юлас мар тесе тăрăшаççĕ.

Тренировкăран таврăнсан Виктор çав териех ывăннине туймарĕ-ха, каçхине выртнă-выртман çывăрса кайрĕ çеç вăл, ирпе вара строя тăрсан та кĕлетке-çурăм сурнипе хăйне питĕ ĕшенчĕклĕн туйрĕ. Пĕлнĕ пекех тата иккĕмĕш ротăри хайхи чипер ача: «Ну, мĕнле санăн, шăм-шак хуçăлмасть-и?» – тесе тĕпчерĕ. Савельев вĕсене ывăнни иртсе каять тесе ăнлантарать.

Иккĕмĕш кунне Клименков аслă лейтенант çав йыша каллех тренировкăна илсе тухрĕ, кăшт чупнă хыççăн хальхинче спорт мелĕпе утма хăнăхтара пуçларĕ. Тӳррипе илсен, вăл пĕр Савельев Германпа кăна тăрмашрĕ-ха. Чăваш ачи Шупашкарта чух кĕлеткене пĕрре пĕр ура, тепре тепĕр ура енне лăнк ярса тайкаланчăк утма хăнăхнă: утас меле çавăн пек пулмалла тесе вĕрентнĕ иртнĕ вăхăтра. Тренер хăй те çапла çӳренĕ. Олимп вăййисенче «тăн кĕртнĕ» хыççăн пирĕн спортсменсем те утас сăлай ахаль утта çывăх пулмаллине ăнкарса илеççĕ те урăхла хăнăха пуçлаççĕ. Кивĕ йăлана пăрахăçласа çĕннине çирĕплетесси питĕ йывăр вăл: пуçпа темле шутласан та алă-ура малтан хăнăхнинех тăвать. Кĕлетке тайкаланасран хăвна ху асăрхаса пыма майкăна умра пĕр тĕвве пуçтарса çыхнă: тӳрĕ пырсан çав тĕвĕ ниçталла та çапкаланма кирлĕ мар, тайкаланнă чух енчен енне сулланать. Тертленнĕ, çăрăлнă – çĕнĕ меле алла илнĕ-илнех çӳревçĕсем. Институтсенче преподавательсем час пĕлеймен çавна. Германа та Шупашкарта пĕрремĕш тренер кивĕ меслетпех вĕрентнĕ. Ак халь Клименков унăн хытса ларнă йăлине улăштарассишĕн тимлет. Савельев уттине ытти ачасем ӳкерсе илесрен те шикленет вăл. Герман пĕр васкамасăр утăмлать, аслă лейтенант унăн пилĕкне ик аллипе тытнă та каллĕ-маллĕ вĕлтĕр-вĕлтĕр çавăрттарать, урине ума тӳрĕ кăларса кĕле çине лартма хистет. Викторсем ахаль утăмпах вăрăммăн пусса пыраççĕ – хальлĕхе çавăн пек ĕçлеме сĕннĕ вĕсене. Чакăр куçлă Шалимов

Юрий аллине хуçлатарах тытса спорт мелĕпех утма тăрăшать, юлташне те çапла тума сĕнет, анчах чăваш ачи тренер каланинчен иртме васкамасть-ха.

Шоссе çинче çавăн пек çӳрени те самаях ĕшентернĕ иккен. Каçхине çывăрас умĕн: «Кун пек тăрмашма эп урăх тухмастăп», – текен те тупăнчĕ. Викторăн та шăмшакĕ такам пăркăчланă пекех сурать, унăн та заняти хыççăн Ленпӳлĕме ларса юлмалла мар-и? Купăс та пур кунта, ял ачи купăс калама самаях ăста, анчах Савельевпа Клименковран хăпас килмест-ха унăн.

Малтанхи тренировкăсем вĕсем – малтанхи йывăрлăхсем. Сахал-и виççĕ-тăваттă пăшăхнă хыççăнах спорта пăрахăçлани?! Пĕр-ик эрнерен спорт çине алă сулакан та темĕн чул! Анчах ывăннипе пĕрлех шăм-шак канлĕхлĕхне туякансем, тренировка хыççăн ăмăртура çĕнтерсе савăннисем те йышлă. Кунашкаллисене вара вăй-хал айхашăвĕнчен уйăрма та хĕн, кăшт пушă вăхăт тупăнсанах спорта туртăнать çав çын. Ун пекксем йышĕнче, ав, Клименков хăй шутланать, Герман Савельев пур. Тата Пайăрка ятне асăнаççĕ. Шалимов та çапласкер пулас. Нумаййăн вĕсем. Спортăн пур ырриусаллине Ураваш пĕлеймест-ха, Герман çӳрет те – вăл та çӳрет тертленӳ-хăнăхăва. Кунĕпе занятинче ларнă, плацра «Равняйсь!», «Смирно!», «Разойдись!», «Становись!», «Шагом-арш» текен командăсене пурнăçланă хыççăн тапранас та килмест те... Кросс таврашĕмĕнсĕрех вырăн çинче урана тăснă-тăсман çывăрса каймалла ĕшенет салтак кун каçа.

Спорт хăнăхăвне тухсан Викторăн киленӳ те пур. Чĕнмесĕр юртса пырасси хăех темĕнле ырă пек. Пысăк хăватах кĕнĕ пуль Виктора, ăна финиш умĕн çак ачасене – вăл шутра Савельева та, хайхи çавра питлĕ Юрий Шалимова та – пĕтĕмпех пăрахса хăварассăн туйăнать; çав самантрах пĕр хĕр, кăвак чечеклĕ кĕпеллĕскер, çулçăллă йăмра хуллипе кăвакал чĕпписене шыв хĕррине хăваласа анни куçа курăнать. Виктор çапла маттуррăн пынине тĕсет пек çав пăрчкан.

Хĕле кĕрсен Клименков утма хăнăхнă майăнах йĕлтĕр ăмăртăвне хатĕрлерĕ.

Пĕрремĕш юр ҫинче эстафетăра (тăваттăн пиллĕкшер ҫухрăм) пуҫламăш тапхăра вăрт-варт шăм-шаклă Шалимова тăратрĕҫ. Анчах вăл стартран пĕрремĕш вирхĕнсе тухнă ҫинчех хыҫрисем «ирттер, ирттер», – тенине чăтаймасăр йĕртен пăрăнать те хăй ҫиччĕмĕш-саккăрмĕш ҫын хушшине те хĕсĕнеймест, унран ҫыххи-ҫыххипех иртсе каяҫҫĕ; ача вара чĕп-чĕрĕ вăйпа вун виҫҫĕмĕш ҫеҫ ҫитет.

Иккĕмĕш тапхăрта Клименков пилĕк ҫынтан иртсе ҫиччĕмĕш килчĕ. Викторăн пĕр йĕлтĕрҫĕ хыҫҫăнах тапранса кайма лекрĕ. «Куна ҫитетĕпех, ҫакна ҫитейместĕп-и», – тесе шăла ҫыртса тапаҫланчĕ вăл. Умри ача ҫывхартма мар, тарса пыра пуҫласан вара Виктор пушшех тарăхса кайрĕ, куҫĕ хуралса киличчен, алли-ури татăлса ывтăнасла тапăҫрĕ, анчах ҫитеймерĕ. Финиш хыҫҫăн кĕҫ-вĕҫ тăрăнса анас пек туйăнчĕ ăна, ик туя ҫине уртăнса аран сывлăш ҫавăрса илчĕ вăл. Юлашки тапхăрта Савельев умрисенчен иккĕшне иртрĕ те – вĕсем вара пиллĕкмĕш вырăна йышăнчĕҫ. «Малтан сана ямаллаччĕ, – терĕ Ҫĕн Ҫăкасар ачине офицер. – Иккĕмĕш е виҫҫĕмĕш пулаттăмăрах».

Тренировкăсене Клименков пур чух та хăй ертсе ҫӳреймест: ҫар офицерĕн чаҫра ытти ĕҫе те тумалла; тренер ерҫмен чухне ушкăна туртаканни – Герман Савельев.

Ҫăва тухсан дивизире ҫăмăл атлетика ăмăртăвĕ пулчĕ. Виктора малтан пилĕк ҫухрăм чуптарчĕҫ, унтан вăл вунă ҫухрăма утрĕ. Чупассипех командăна очко илме самай пулăшрĕ те вунă ҫухрăмлă утларăшра Клименковпа Савельев хыҫҫăн виҫҫĕмĕш пулчĕ – куншăн вăл самаях савăнчĕ. «Ну, эс финишра урса кайрăн пуль, ак ҫитетĕп-и, кĕҫ ҫитетĕп-и тенĕччĕ те, тартăн ҫеҫ», – тĕлĕнет Шалимов унран.

Кĕркунне вĕсене Клименков округ команди йышĕпе Ужгорода илсе кайрĕ. Утларăш ăстисем дивизире

те, округра та йышлах марччӗ пулсан ку ӑмӑртура спорт мелӗпе утма питӗ пысӑк йыш пухӑнни Виктора тӗлӗнтерсех пӑрахрӗ.

Ӑмӑрту ыран тенӗ кун тата старт умӗн Ураваш ют ачасене сӑнать. Чипер хӗр пек йӑпӑртатса пыраканни те, хӑйне ҫӗр патши вырӑнне шутланӑ  пек лӑппӑн ҫеҫ утӑмлакансем те пур вӗсем хушшинче – тӳрех хӑшӗ вӑйлине те пӗлме ҫук. Викторсен аслӑ лейтенантчӗпе кашни офицерех, полковниксемех, алӑ тытса калаҫаҫҫӗ, ӑна сума сунӑран ҫамрӑк спортсменсем хӑйсен тренерӗпе мухтанас килет.

Утларӑшӗ шоссе ҫинче пулчӗ. Пысӑк ӑмӑрту пирки пӑлханнӑ-хӑпартланнӑ Виктор тӳрех малтисемпе пӗрле ӑнтӑлчӗ. Ун умӗнче Клименковпа тепӗр икӗ тӗреклӗ атлет, ҫав йышран кӑшт каярах Савельев пырать. Виктора пӗри, чавсапа тӗкӗнмеллех юнашарскер: «Асту, ура ҫине ан пус», – тесе хӑтӑрчӗ. Ҫӳҫӗ лӗпке ҫинче ҫаралнӑ унӑн, ҫӑра ҫупкамӗ ӗнсе ҫинче ҫеҫ юлнӑ. Ҫынни сарлака та тулли питлӗ, пӗр вӑтӑр пиллӗксенче пулас – ҫапла сивлек сӑнлӑ курӑнчӗ харкашакан ҫын. «Хӑй ман ҫумра-ха, ӑҫтан ун ури ҫине пусам?» – тесе тарӑхрӗ те Ураваш пушшех хӑвӑрт-хӑвӑрт вашлаттара пуҫларӗ. Чӑкӑрташ таваскать, унран иртмех тӑрӑшать; кӑштахран иртсех те кайрӗ, ак умрисенех ҫывхарать ҫавскер, сивӗ куҫпа пӑхса мӑшлаттарса кӑна пырать. Малтисен хӑвӑртлӑхӗ Викторшӑн та шӑл ҫемми пек туйӑнать. Вӑл та вара хула ытларах хуҫлатса кӗскерех утӑмсемпе тимле пуҫларӗ. Умрисен утти хӑйне те чух ҫеҫ тесе шутлани Виктора туйӑнчӗ ҫеҫ ҫав – пӗр ҫухрӑм ҫурӑранах унӑн ура тунисем патак пек хытса ларчӗҫ, пӑркӑчланӑ пек ыратаҫҫӗ халь уран мал енчи мышцисем, вара ҫын ирӗксӗрех тамалчӗ. Унран ак кӗҫех пӗр ушкӑн, унтан тепӗр ушкӑн камартипех иртсе кайрӗ. Хама шаннине тӳрре кӑлараймарӑм тесе хыпӑнсах ӳкрӗ Виктор. Ун хыҫӗнче урӑх никам та ҫук пек туйӑнать, вара вӑл каялла пӑхрӗ те, куҫа пуйӑс пекех вӑрӑммӑн тӑсӑлакан йыш курӑнчӗ. Инҫех те

мар Юрий Шалимов та, пӗрле кайӑпӑр, ан васка тенӗ евӗр, ҫитесшӗн утаслать. Юлташне асӑрхасан тин чун кӗчӗ Виктора. Чылайран, вун ик ҫухрӑм хыҫҫӑн ҫеҫ, ура туни ыратни ҫинчен манчӗ атлет – пӑркӑч пушанчӗ пулмалла ӗнтӗ, вара ҫын хӑйне ҫӑмӑлрах туйрӗ те хытӑран хытӑ кая пуҫларӗ. Тепӗр тӑватӑ ҫухрӑмран-и, Виктор умра инҫех те мар хӑйӗнни евӗр хӗрлӗ майкӑллӑ кӳлепене асӑрхарӗ, шалкӑм ҫапнӑ пек, халех ӳкес марччӗ тенӗн пырать ырнӑскер. Герман Савельев-ши, вӑл мар-ши тесе Виктор ӑна ҫитесшӗн пушшех васкарӗ те хал ҫухатнӑ ҫынпа туххӑмрах танлашрӗ. Ентешӗ ун ҫине, ку эсӗ пултӑн-и тенӗ пек, тӗлӗсе пӑхрӗ, «эп пӗтрӗм», – тесе сӑмах хушрӗ. «Пӗрле пырӑпӑр эппин, вӑй илӗн», – терӗ Ҫӗн Ҫӑкасар ачи Пилешкасси йӗкӗтне. «Ан кӗт. Атя, ҫит ҫавсене», – умри ик ачана тӗллеттерчӗ Герман. Лешсем хӑйсем те ҫӗнӗрен вӑй илнӗн хытӑрах кая пуҫланӑ-мӗн, хыҫрисенчен тарса-тарса пыраҫҫӗ; пӗри, чӑнах та, тарса хӑтӑлчӗ темелле, теприне вара Виктор шӑп финиш йӗрӗ тӗлӗнче иртрӗ. Умрисене ҫитесшӗн ӳкесле ывӑннӑскер, Виктор хӑй хыҫҫӑн тухнӑ ҫын ҫине ҫавӑрӑнса пӑхрӗ те хайхи чӑкӑрташа палласа: «Уру ҫине пусмарӑм-и?» – терӗ йӗплерехкӗн. Йывӑррӑн сывлакан спортсмен Ураваша: «Чупрӑн эс, шӑллӑм», – тесе касса хучӗ. «Хӑв чупрӑн пуль эс?» – парӑнмарӗ Виктор. «Ирпе Клименковпа ҫӳренине курнӑччӗ сана, ун ушкӑнӗнчен-ха эсӗ. Вӑл хӑй те рекодне кроссмен юрттипе лартрӗ», – вӗчӗрхеннипе лаплаттарса хучӗ кукша. Ку самантра Клименков, ҫӑвӑнма та ӗлкӗрнӗскер, Виктора курса ун еннелле утса пычӗ. Леш ҫилкӗн аяккалла пӑрӑнчӗ. «Финиша ҫитрӗн-и эс? Маттур», – сӑмахларӗ тренер спортсмен. Ҫавӑнтах ӑмӑрту секретарӗнчен ун вӗренекенӗ мӗн вӑхӑтра тата миҫемӗш ҫын ҫитнине ыйтса пӗлчӗ те: «Сехет те 38 минутра утса тухнӑ эс, пӗрремӗш разряда лартнӑ, Соломонова хӑварса вун саккӑрмӗш ҫитнӗ. Сан хыҫҫӑнхи динамовец вӑл, спорт мастерӗ, ҫавӑнтан виҫ секунд иртнӗ», – тесе Ураваша мухтарӗ. Хӑй вӑл

тăваттăмĕш вырăн йышăннă-мĕн, пĕрремĕшĕ Авилов текенскер иккен – Урал çар округĕнчи кĕçĕн лейтенант. Çĕнтерӳçĕ, вăрăм пӳллĕ те хура сăнлăскер, Викторсен тренерĕпе юнашарах тăрать. Аслă лейтенант ăна çамрăк салтак пирки каласа парсассăн вăл шкул ачи пек темĕнле çинçе сассипе: «Сан малтанхи старт ку, çирĕм çухрăма сехет те 38 минутра тухиччен эп çирĕм мăшăр тапочка çĕтнĕ. Çак ăмăртура иккĕмĕш теçеткери йыш шутне кĕни те сумлă, малашлăх пур санăн, утма пултаран», – тесе хакларĕ. Çирĕм çухрăма сехет те 31 минутра вĕçленĕ çын хăйĕнчен çичĕ минут юлнă атлета маттур тесе хакланине ăнлансах та пĕтерейместех-ха Виктор. Чăваш ачи умрисемпе пĕрлех çитес тенĕччĕ çав. Кайран, чаçа таврăннă чух, Соломонов мĕн каланине пĕлтерсен: «Утас сăлая кунта союзри пĕрремĕш судья сăнарĕ, унпа пĕрле тепĕр пысăк йыш темиçе машинăпа çӳрерĕ, техника тени – утас сăлай – уксакламасть пирĕн ачасен. Ăна эпир малашне те лайăхлатса пырăпăр. Соломонов вăл хăйĕнчен иртнĕшĕн кӳлешнипе калать, ачи çавăн пекскер, хăй çеç чап илесшĕн. Пĕр çулхине вăл мана çĕнтеретĕп тесе юлташĕсемпе ал тытсах тупăшнă – тупăшнă та пырне лартнă. Хам унран юлнине астумастăп та, манран иртсе курман вăл», – тесе ăнлантарчĕ аслă лейтенант. Çапла, пĕрремĕш пысăк стартрах хирĕçекен çын тĕлне лекрĕ Çĕн Çăкасар ачи. Унăн та, хăйне вĕрентекен евĕр, пĕрре те юлас марччĕ çав Соломонов пеккисенчен.

Салтак службиче çулталăк пулнă хыççăн Герман Савельев, аслă пĕлӳллĕскер, офицер ятне илчĕ те запаса тухрĕ. Утакансен секцине ертсе çӳрес тĕлĕшпе аслă лейтенанта пулăшкаканĕсем кун хыççăн Шалимовпа Ураваш пулчĕç. Тепĕр чух, хăнăхăва тухас килмен самантрах, ывăнни-ывăнманнине шута хумасăр, çав вăрт-варт Шалимов: «Атя, аслă лейтенант вăя туптама хушрĕ, – тесе Виктора та илсе тухать. «Çӳрекен çӳрме тупать тет те тупайăпăр-и?» – килĕшет чăваш ачи те

вара. Вырсарни кунсенче тренер хӑй, ҫанталӑк начарри-начар маррине пӑхмасӑр тӑватшар-пилӗкшер сехет таран ертсе ҫӳрет. Йыш пысӑк мар вӗсен: пиллӗкӗн-улттӑн ҫеҫ. Вӑрманти сукмаксем тӑрӑх е шоссепе утаслаorigin ҫӳреҫҫӗ.

Службӑн иккӗмӗш ҫулӗнче аслӑ лейтенант, хӑй ытлашши пӑшӑхмасӑр, Уравашпа Шалмова пӗр старта тӗплӗн хатӗрлентерчӗ. «Сан, Виктор, вӑй пур, ачах тӳрех хыпӑнса ӳкетӗн эс, чармасан хыт кайнипе финишченех тӑсӑлса выртма пултаратӑн. Ҫӗнтерес пулсассӑн пуҫ та кирлӗ», – асӑрхаттарать ӑста тренер. Шалимова та пӗр тикӗссӗн пыма сӗнет. Ҫак ӑмӑртура эсир мастер вӑхӑтне кӑтартсан сирӗнтен олимпиец хатӗрлеме пулать», – терӗ ҫӗр-шыв рекордсменӗ пулнӑ ҫын.

Мастер вӑхӑчӗ! Ку сӑмах Викторпа Юрие ҫӳҫентерсе ярать. Таҫти шыв тӗпӗнче ахах тупас пек ӗмӗтре усраҫҫӗ ҫав шухӑша вӗсем. Чул айӗнчи хаклӑ япалана илме Клименков аслӑ лейтенант ертсе каять-ха ӗнтӗ. Ҫав тӑванран та тӑван пиччӗшӗ чула ҫӗклӗ те, кусен вара ахах-мерчене виҫ пӳрне вӗҫӗпе кӑштӑрт! кӑна илмелле пулать-ши?

Старта Клименков хӑй те тухрӗ. Авиловран юлас марччӗ тесе ҫамрӑксем хытах тӗв турӗҫ. Клименков, чӑнах та, кусене малтан ҫав ӑста хыҫне ҫыпҫӑнса ларнӑ пек ертсе пычӗ; унтан, вун икӗ ҫухрӑмсем тӗлнелле, Авилов пушшех васкарӗ те тарма пикенчӗ. Викторпа Юрие ҫумри тренер ҫийӗнчех: «Чӑтӑр, ан юлӑр», – тесе хушрӗ. Ҫамрӑксем хӑйсене хӑйсем умри ҫын хыҫҫӑн халь-халь татӑлса ывтӑнас пек хытӑрах кайма пуҫларӗҫ. «Чӑтас пулать, ачасем!» – илтӗнет шӑл витӗр тухакан тимӗр пек сасӑ хыҫра. Ак-ак ӳкмелле-и, кӗҫ-вӗҫ ҫурӑлса арканмалла-и тенӗ пек, пӗрре тытӑннӑ вӑйпах пырать икӗ ҫамрӑк ҫума-ҫумӑн. Авиловӗ пӗр вун пилӗкҫирӗм метр чухлӗ тарма ӗлкӗрчӗ те ҫав хушша халь кӗскеттермест. Викторӑн хӑрах ура кӗли вӗри ҫатма ҫине пуснӑ пек хыпать, тепӗр урине тапочка хӗрри пӗҫертет: юн тулнӑ ӗнтӗ унта – сисет ӑна Виктор, ҫапах

умра ăнтăлакан Авиловран пит каях юлас килмест-çке-ха... Финиш та инçе мар халь. Инçе мар та... Дистанци вăл пуçламăшĕнче кăна хыр пĕрене тăрри пек çăмăл, вĕçнелле вара сухăр тулнă пĕренен тĕпĕ пек йывăрланать – кăпăр-капăр çĕклемешкĕн хăтланса пăх-ха эс! Шăпах пĕренен тĕп енне тек çĕклесе тăма хал çукла вăйран ӳкрĕ Виктор. Çĕклемне пер те çул айккине кайса тăр ара! «Чăтас пулать, ачасем!» – хăлхарах янăрать пĕрре илтĕннĕ тимĕр пек сас. Чăтмалла çав! Тинĕс тĕпне ахах илме анакан та сывлăш пĕтнине уямасть.

Умри хыççăн туртăнакан ик ачаран пĕри тамалчĕ-тамалчех, нумай мар пулин те – юлчех. Пĕри, кĕреш кĕлеткелли, чĕнмесĕртерех çӳрекенни, чăтса çитерчĕ-çитерчех.

– Мастер нормине тултарнă ятпа саламлатăп сана, – финиш хыççăн савăнса пăхрĕ Ураваш çине Клименков.

– Тавтапуç. Анчах ытларах сире саламламалла, эсир тимленипе килчĕ ку, – тавăрчĕ Виктор.

– Маттур эс, – хĕпĕртӳллĕн кулать Клименков.

– Авилова çитеймерĕм çав, иккĕмĕш çеç пултăм, – кăшт кăмăлсăррăн хушать Ураваш.

– Пĕрремĕш пулма та ĕлкĕрĕн-ха. Хушамату та сан чăвашла урана вашлаттарса утмалли çинчен калать, яту Виктор (Виктория) латинла Çĕнтерӳ тенине пĕлтерет. Çĕнтерсе те кăтартăн-ха, – мухтать Ураваша тренер спортсмен.

– Эх, мастера эп кăшт çеç лартаймарăм, – вĕткеленет Юрий Шалимов.

– Тепрехинче санпа, тепрехинче! – пӳрнине кăшт çĕклет Клименков.

Чаçа таврăнсанах гарнизонта кросс чупассипе ăмăрту пулчĕ. Ывăнни иртсе кайман тесе Шалимов старта тухма килĕшмерĕ, Ураваш вара хăйне командăна кĕртмех ыйтрĕ. Ури хăмпăланнине пăхмасăрах Виктор пилĕк çухрăмра пурне те пăрахса хăварса чи малтан çитрĕ. «Ывăнни шăп иртсе кайрĕ халь», – терĕ вăл фи-

ниш хыççăн. Шалимовĕ: «Вăт, эс – этем те этем», – тесе тĕлĕнчĕ унран.

Кĕр енне Владимир Федорович Клименкова капитан чинне пачĕç те Совет Çарĕн спортăн Тĕп клубне аслă тренера лартрĕç. Кун хыççăн вăхăт нумай та иртмерĕ – хăйсен вĕрентекенĕ тăрăшнипех ĕнтĕ – Уравашпа Шалимова та Мускава куçарчĕç, вăйлă мастер Авилов та вĕсемпе пĕр йышра пулчĕ. Нумай ăмăртусене хутшăнчĕç вĕсем, Юрий Шалимов та спорт мастерĕн нормине çапса хуçрĕ. Иртнĕ апрельте вара Ураваш, Авилова та çĕнтерсе, Совет Çарĕн чемпионĕ пулчĕ.

Çаксем çинчен хаçатра кĕскен хыпарланă. Ентешĕн шăпине Земфирăн ытларах та ытларах пĕлес килетçке. Хĕр çавăнпах майăн иккĕмĕшĕ хыççăн (миçемĕш кун ĕнтĕ) киоскран пĕр сиктермесĕр спорт хаçатне туянать, каçхине радиопа «Спорт хыпарĕсем» кăларăма итлет. Хăйсен районĕнчи ача ятне тепре те курас килет унăн. Çĕр-шыври пысăк ăмăрту, акă, иртсе кайрĕ – утакансем çинчен асăннă йĕркесенче ентешĕн ятне хĕр тĕл пулаймарĕ.

Çуллахи каникула хĕр стройкăра ирттерчĕ. Пĕр республикăра ялти шкул çуртне купаларĕç вĕсем. Земфира районти хаçата статьясем çыркаласах тăчĕ. Кашни май килнĕ самантрах редакцие статья çитсе парасшăн çеç мар, спорт хаçатне тупса илессишĕн те район центрне çӳрерĕ вăл. Çĕр-шыв чемпионачĕ иртрĕ, унта Олимп вăййине камсем каймаллине палăртрĕç – Çĕн Çăкасар ачин ячĕ курăнмарĕ.

## Тăваттăмĕш сыпăк

Мускаван уçă ăмăртăвĕнче çĕнтернĕ хыççăн Совет Çарĕн спорт клубĕ хăйĕн спортсменĕсене хула тулашĕнчи çуллахи лагере пухрĕ. Кунтах – вĕсен футболистчĕсем те. Утакансемпе марафонецĕсем – хăйсем пĕр йыш. Клмиенков капитан хĕрӳ ĕç планне туса пачĕ. Кунсерен мĕн чухлĕ утмаллине пĕлсен Юрий Шалимов пуçне пăркала-пăркала: «Уйăхне сакăр çĕр километр пухăнать капла», – терĕ. «Мĕн, сакăр çĕр пулсан сакăр çĕр пуçтаратпăр», – тавăрать Ураваш. Авилов, аллă çухрăма хатĕрленекенскер, пуринчен ытларах утас ĕмĕтпе çамрăксем çине куларах пăхса тăрать. «Ӳркенмесен километрĕ майĕпен пухăнать-ха вăл, çын пурнăçламан ĕç çук, куç хăрать те алă тăвать теççĕ; эпир вара урасене те çивĕчлетме хистĕпĕр», – тет çак атлет ачанни пек çинçе сассипе.

Акă вĕсем тренировка эрнин пĕрремĕш кунĕнче 400 метра 25 хутчен хăвăрт ăнтăлнă, иккĕмĕш кунне вăрăмрах хушăсене ăмăртури пек утнă хыççăн виççĕмĕш кунне «уçăлмалăх çула» тапранчĕç. Вăрăм çула утассине спортсменсем «уçăлса çӳрени» теççĕ. Уçăлса çӳреççĕ унта – тепри, чупсан, чупса çитеймен хăвăртлăхпа 40–60 километр таран! Уçăлса çӳреççĕ унта – тар типсе, тăварĕ ĕнсене шап-шурă хупличчен, шăм-шак çурăм шăммиваррине тăхлан чышса тултарнă пек йывăрланиччен!

Çула вĕсем улттăн тухрĕç.

– Миçемĕш юпа, астăвăр-ха, – терĕ Клименков. – Çухрăм юпин пĕр енне «223» çырнă. Эппин, паян 40 çухрăм тăвас пулсан, 243-мĕш юпа тĕлне çитсе килмелле.

Малтан Виктор ертсе кайрĕ, хулне вăл кăшт хуçлатнă та, урине кĕле çине лартса, вĕлт те вĕлт илтерсе пырать. Ун хыççăн Шалимовпа Авилов туртăнчĕç. Виктор хăвăрт-хăвăрт утăмларĕ те хыçрисене тăратса хăварчĕ. Клименков чăтаймасăр çавăнтах: «Мĕн вичкĕнен! Ну, хыçа юл-ха эс, малтан Авилов ертсе пытăр», – тесе ăна чарчĕ.

Тӳрех хытă тапрансан финиш йывăр килесе спортсменсем аван пĕлеççĕ. Анчах Виктор, çул пуçĕнче чухне, хăй сисмесĕрех васкарах кая пуçлать, чармасассăн вăл çитес çĕре çитмелĕх те вăйне хăвармĕ. Çап-çут асфальтпа туналаса улттăн харăс пыраççĕ; вунă çухрăмри юпана шăп утмăл минутра хыçа хăварчĕç вĕсем. Пĕр тарăн çырма тĕлне çитрĕç, унта аннă хыççăн тăвалла пит вăрăм хăпармалла пулать ав. «Алла лăнч ярса канарах пырăр», – анаталла анма тытăнсан хушрĕ Клименков. Тăвалла улăхма пуçласанах вăл, ыттисене хавхалантарас шутпа хăвăрт-хăвăрт утăмларĕ те, Шалимовпа иккĕшĕ хыçрисене самантрах чылай пăрахса хăварма ĕлкĕрчĕç. Хăйне систермесĕр юри тăратса хăварнине кура, Виктор вĕчĕрхенсе ӳкрĕ те умрисене çитсе таптас пек чашкăрма тытăнчĕ; ыттисем те хашхаш сывласа ĕçлеççĕ. Тӳпемре, вун пиллĕкмĕш пулмалли юпа тĕлĕнче, тамалĕç-ха умрисем, анчах унта хăшĕ малтан çитĕ? Вăрăм çулăн пуçламăш пайĕнче кам çĕнтерĕ? Пĕр-пĕрне çакăн пек тĕрĕслеççĕ, кĕрешме хăнăхаççĕ ăмăртучченхи тапхăрта çăмăл атлетсем. Виктор хула хуçлатарах тытнă та утăмне кĕскетсе хăврт-хăвăрт пусать, самантрах вăл, пĕрне, тепĕрне иртсе, малти Шалимовпа танлашрĕ. Авилов хыçра, ку тытăçу мана кирлĕ мар тенĕ пек, вăрăммăн утасласа шăп пырать.

Çирĕм çухрăм тĕлне çитсе çаврăнсассăн вĕсем пĕр çурт умĕнче чарăнчĕç, ял Совечĕ пулчĕ иккен ку. Хĕвел питтинчи картлашка çинче витре ларнине курчĕ те йыш пĕрер курка тăрă шыв ĕçрĕ.

– Хайхи шăлан çырли кăвасĕ пулсанччĕ, – тутине шăлса илнĕ май сăмахлать Шалимов. Столовăйра вĕсен шăлан çырлинчен вĕретнĕ компот пур та, çавна аса илет вăл.

– Ăна тавăрăнсан ĕçĕпĕр, кунта глюкоза пулсан пăсмастчĕ те, – сăмах хушса хурать Ураваш.

– Чăтма вĕренĕр, – тет кусене тренер.

Ĕçнĕ хыççăн тар тапса тухнипе самаях ăшăрханăскерсем кил еннелли çула тапранчĕç. Паçăрхи çырмана вĕсем вăрăм утăпа васкамасăр ирĕклĕн анчĕç, тăвайккинелле хăпарнă чух каллех пĕр-пĕрне хăварма пикенчĕç. Кун хыççăн ачасенчен хăшĕсем юла пуçларĕç – ушкăн таткаланса кайрĕ.

– Финиш умĕ халь! Атьăр, кам епле пултарать, çавăн пек ĕçлĕр, – хушрĕ Клименков.

Хăй вăл ырнă та йывăррăн сывлать, çапах Авиловпа Уравашран юлмасть-ха. Нимĕн те калаймăн, вăй чакнă пулин те ăмăрту-транировкăсенче çирĕм çул ытла айхашакан мастерăн хевти ăмсанмалла пысăк. Авилов, Совет Çарĕн аллă çухрăмри хальхи рекордсменĕ, çула тин тухнă тейĕн çав, вирлĕн илтерсе пырать. Виктор ун çумĕнче кăшт та юласшăн мар тимлет, хыçра Шалимов хаш та хаш сывалать. Клименков юлнă. Викторăн та тамаласси килет. «Эй, ăçта васкас», – тесе шутланăшутламанах вăл Авилова хăйĕнчен вĕçертсе ячĕ. Хыçри капитан ăна урмăшăннă саспа:

– Мĕн юлан! Эс чăтмалли вăйпа пырать вăл! – тесе юнарĕ.

Çакна илтсен Виктор уттине хăвăртлатрĕ те Авиловпа танлашрĕ...

Тепĕр икĕ кунтан «тĕрĕслӳ» ирттерсе пăхрĕç, 12 çухрăма кам мĕн вăхăтпа тухма пултарнине пĕлес терĕç. Вĕсемпе пĕрле кунта динамовецсем те пулчĕç. Клименков капитан Виктора каллех сакăр çухрăм тĕлне çитиччен ума кăлармасăр çумра ертсе пычĕ, малта вирхĕнекенни – Соломонов. Финишчен тăватă çухрăм юлсан тренер Ураваша: «Ну, ĕçлеме вăхăт çитрĕ. Çĕнмеллех ăна сан», – тесе хушрĕ те, Виктор, ахаль те начар мар пыраканскер, уттине татах çивĕчлетрĕ. Вăл вара Авиловпа Шалимовран самантрах уйăрăлса тара пуçларĕ, финишчен пĕр çухрăм юлсан Соломоновран çĕмрен пек вирхĕнсе иртрĕ; динамовецĕ тарăхнипе ун çине çиллессĕн пăхса илчĕ çеç.

* * *

Икĕ кун çумăр çурĕ те, çанталăк сулхăнлатрĕ, ун хыççăн вăйлă çил тухрĕ. Шоссе çинче çынна ывăтсах ярассăн туйăнать, сивĕ те. Тренировка ирттерме утакансем вăрман хӳттинче, пионерсен лагерьне пăрăнса кĕрекен çул çинче, вырăн тупрĕç. Тӳрем мар кунта – юхан шыв хĕрринелле анакан тăвайккийĕ самаях вăрăм. Вăрманĕ çӳллĕ, çавăнпа темле хăватлă çил те лекмест: çӳхе тумланса хăвăрт кайма хăнăхассишĕн кĕреш те кĕреш. Аналалла анса тăвалла хăпарнипе ура кунта аванах тĕрекленет, ӳпке те вăйлăн карăнать.

Виктор Ураваш анаталла аннă чух виçĕ минут та аллă çеккунтра е шăп тăватă минутра утса тухма ĕлкĕрет, çав хушшах тăвалла хăпарма тăваттă та вăтăр пилĕк е тăваттă та аллă çеккунт ирттерет. Вуннăмĕш ăстрăм хыççăн хал шалтăрах пĕтсе килчĕ. Кăкăр çинче ирех хĕрлĕ шĕпĕн пекки палăрнăччĕ-ха унăн, кĕçтетчĕ, хурт-кăпшанкă çыртрĕ пуль тесе шутланăччĕ салтак. Ак халь çав вырăн сарăлса кайрĕ, чĕрнепе чавсан пуçĕ татăлчĕ те, юн тухрĕ.

Ирпе хайхи шыçă чакма ĕлкĕрнĕ, анчах ĕнсе çинче тепĕр пăнчă кĕçтеттерет; кăшт ыратать – татса ывăтасчĕ ăна! Медпунктра фурункул, вĕтĕ çăпан тесе палăртрĕç те шĕвĕ маç сĕрсе ячĕç. «Ку темĕн мар, тренировкăна сиктерместĕпех», – терĕ Виктор шăлне çыртса. Анчах çула тухсан вăл юлташĕсенчен татăлса-татăлсах юлчĕ, эрне тĕлнелле вара кун та сиктерме лекрĕ: çамка айккине, юн тымарĕ çинех, тепĕр усалли сиксе тухрĕ-çке апăрша! Çавна, чĕрнепе чавса кĕсенлентернĕскерне, сестра хăйпăтнă чух каччăн куç хуралса килчĕ. Кун хыççăн вара вĕрилентерсе пăрахрĕ.

– Ытлашши сивĕ шывпа çăвăнатăн пуль? – тесе ыйтать Уравашран врач.

– Çук, ирсерен пӳртре ларнă шывпа çеç пилĕк таран çăвăнатăп, – чăнниех пĕлтерет спортсмен, хăй те мĕн пулчĕ-ши капла тесе пуçне минретнĕскер. Пăрлă шыва чăмман-ха вăл, тренировка хыççăн сив мунча

кёни те пулман; душ сивё пулсан урари хура лапрана çеç çуса тасатнă. Хăçан лекнё-ши вара тарланă çинчен тӳрех сивё? Этем çапла хăй асăрхаймасăр тунине манса каять те шутлать, шутлать вара: «Чире вăрăнтарма сăлтав ăçта пулнă-ши?» – тет. Майăн иккёмёшёнче хёрӳ кёрешӳ хыççăн тӳрех сивё шывпа пёрёхтернё çёре кёрсе тăнине асту, тăванăм! Акă хул-çурăмунта халь санăн – вун саккăрмёш вётёрмеш çăпан!

Ăмăртăва хатёрленсен те ăмăртма пултарайманнинчен йывăрри спортсменшăн урăх çук пуль. Вăй çитменрен çёнтерейменни ытлашши пăшăрхантармасть, тем чухлех кулянтармасть, старта тухайманни вара шутлаттарать, шутлаттарать. ЦСКА командинче хăçантанпа СССР чемпионатне хатёрленчё Виктор! Ак халь ăмăрту кунёсем çитеççё – çын вырăн çинче выртать. Çакна пулах Земфира ун ятне хаçатра тупаймарё.

Спортăн унăн хăйён саккунё – чăтма çук чурăс саккун: сан ёмётёвне, ыттисем те саншăн тăрăшнине, шаннине пăхмасть вăл. Пёр мышца, нервăн пёр кёлетки хавшарё пулсан та Олмип тӳпи сана йышăнмасть, ун патне çывхарнă çинчех вăл сана пёр хёрхенсе тăмасăр суласа каялла ывăтать.

Уйрăм çын шăпинче, халăхсем хушшинче мён пулса иртет – çёр чăмăрё çавна пăхмасăр, ниме уямасăр хăй тёнёлё тавра пёр тикёс çаврăнать те çаврăнать. Пурнăç хăй вăхăчёпе шăвать: хыçри хыçа юлать, пуласси хăй юххипе килет. Виктор çамрăк-ха, çёр-шыв кёмандине вăл тепёр çулхине те кёрё, çёр-шыв командинче хатёрленсен ун валли тепёр Олимп вăййи те çитё. Ураваш олимпиец пуласса Клименков шанать, çавăнпа ăна салтак служби иртсен те çартах хăварасшăн вăл.

## Пиллӗкмӗш сыпӑк

Чӳречерен кӗнӗ хӗвел шевлине кӑмака урати ҫинче ик кӳлӗм малтанласа курнӑран пуль, картишӗнче сарӑ кӑчкӑллӑ йӑмра хуллине касса е ял пусӗнчи ҫырмаран кӑвак тӑм илсе килсе шӑхличӗ тунӑран-и; куҫ тулли илемлӗ анлӑ улӑхра сарӑ, кӑвак чечексене шухӑ ҫил вылянчӑклӑн сӗртӗнсе чӳхентернипе пӗрлех хӑв ӳт-пӗвне те ачашланине туйнӑран-тӑр; тен, ыраш уйӗнче ӑрша куҫнӑ чух тусанлӑ ҫулпа ҫарран ӗрӗхтерсе чупнӑран; мухтавлӑ ҫут ҫанталӑк умра кунран кун уҫӑлса-уҫӑлсах пынӑран ҫав; сумка йӑтса шкула кайнӑран, кино-спектакаль курма клуба тантӑшемпе кӗпӗрленсе утнӑран, кӑнтӑр ӑшшинче ял пӗвинче шыва кӗнӗрен; туссемпе вылянӑшӑн, тавлашнӑшӑн, савӑннӑшӑн, куҫҫуль те кӑларнӑшӑн пит хаклӑ ҫуралса ӳснӗ вырӑн!

Алли ӗҫпе хытнӑ, пайтах тертленсе ҫирӗпленнӗ ҫынпа юнашар тӑрса пуҫласа шалу илнӗ вырӑн та ҫуралса ӳснӗ тавралӑх пекех хаклӑ. Ӗҫре тупнӑ юлташусем ача чухнехи туссем пекех ҫывӑх.

Стройтрест кантурӗнче илнӗ малтанхи ӗҫ укҫине Виктор Ураваш. Ҫара кайма ят тухсан, тӑван яла таврӑнса, авалхи йӑлапа тутӑр суламан Ҫӗн Ҫӑкасар ачи: каҫхине, ӗҫ хыҫҫӑн, общежитин Хӗрлӗ кӗтесӗнче ура хуҫса ташланӑ, хут купӑс каланӑ, юрланӑ, хӑй тантӑшӗсемпе савӑннӑ вӑл.

Уй хапхинчен ӑсатма тухса пехил курки паман тӑванӗсем ӑна, салтака каякан ҫамрӑк рабочие пӗрле ӗҫленӗ юлташӗсем ырӑ ҫул суннӑ, служба хыҫҫӑн та ҫакӑнтах тавӑрӑнма каланӑ. Ҫавӑнпа тӑванла ҫывӑх чӑваш ачишӗн К. хули. Унта вӑл ҫурт-йӗр тунӑ ҫӗрте монтажникра ӗҫленӗ.

Клименков темле ӳкӗтлет, ӑнлантарать пулин те Виктор салтак вӑхӑчӗ иртнӗ хыҫҫӑн ҫартах юлма килӗшмест. Тренировка ирттерме пӑрахмасассӑн ӑмӑртусене хутшӑнма монтажникӑн та май пулӗ тет

вӑл. Ҫӑнах та, талант тесе палартни пурах пулсан спорт мастерӗ К. хулинче те Олимп тӳпине улӑхма пултарӗ. Вӑхӑт ҫитнисене киле яма ҫар министрӗ приказ кӑларсан Виктор К. хулине таврӑнчӗ.

* * *

Общежитин корпусӗсем хулан ҫӗнӗ районӗнче вырнаҫнӑ. Кунти ҫуртсем пысӑк тӑваткӑл арчасем пек лара-лара тухнӑ. Виктора тӑваттӑмӗш корпуса ячӗҫ. Унӑн коменданчӗ – вӑтам ҫулсенчи пӗр мӑнтӑркка хӗрарӑм-мӗн. Лӑпкӑскер темелле ӑна. Анчах малтан курсан лӑпкӑлӑхӗ палӑрмарӗ. Темскере асӑнса тем пирки пӗрне айтурах вӑрҫать, тем ҫӗмӗрнӗ имӗш лешӗ, тем тирпейлӗ мар вӗсен, теме ун пек тумалла пулман...

Ҫын лӑпланасса Виктор пӗр чӗнмесӗр кӗтсе тӑчӗ. Пӗр арҫынна ятлаҫса-вӗрентсе ал шӑллипе тӳшек ҫитти улӑштарса пачӗ те лӑпланчӗ хайхи комендант.

– Направленине кӳр кунта, – пачах урӑх саспа сӑмах хушрӗ вӑл Виктора. Ку вара йӗркеллӗ ҫынна хисеплекен хӗрарӑмӑн чӗлхи пулчӗ. Унтан эсӗ кам-ши тенӗн хирӗҫ тинкерчӗ те ӑшра шухӑшланӑ май:

– 37-мӗш пӳлӗме ярас пуль сана, ывӑлӑм. Виҫӗ вырӑнлӑ вӑл. Иккӗн ҫеҫ пурӑнаҫҫӗ, – терӗ.

– Лайӑх пӳлӗме вырнаҫтарӑр салтака. Ан пӑшӑрхантарӑр.

– Ҫутӑ енче вӑл. Виҫҫӗмӗш хутра.

Сӑмах хушшине кӗни командант сӗтеллин тепӗр айккинче ларакан ҫамрӑк хӗр пулчӗ-мӗн. Виктор ӑна, хӑй умӗнчискернех, асӑрхаман та темелле. Лешӗ ҫӗнӗ ҫын ҫине куҫне ҫиҫтерсе ыр кӑмӑллӑн пӑхать.

– Мастер спорта, – сасӑпа вуларӗ вӑл каччӑ кӑкӑрӗнчи значока.

– Ҫапла, – лӑпкӑн тавӑрчӗ Виктор, салтак ҫипуҫӗпех тӑраканскер.

Ҫурт хуҫи ҫӗнӗ ҫынна вырӑн таврашӗсем илсе парать.

– Тыт çаксене, кайса хур, вара койка патне ку пуçĕнчен кайăпăр, – тет вăл хăйпе хăй калаçнă пек хуллен.

Виктор тулли ытампа виççĕмĕш хута хăпарать. Асăннă пӳлĕмре, чăнах та, икĕ кравать çеç, пĕр вырăнне те йĕркеллĕ пуçтарман, çитти витсе янă анчах. Куна ниепле те салтак казармипе танлаштараймăн. Сĕтел çинче лӳчĕркеннĕ хаçат таткисем выртаççĕ, пепельницăра пирус тĕпĕ лăк тулли. Форточка уçах та, чĕлĕм шăрши тӳрех палăрмарĕ. Минтер таврашне хурсан Виктор каялла анчĕ.

– Надька, илсе кай-ха çак качча койкăсем патне, – сĕнчĕ комендант хайхи хĕре. Пике пĕр туртăшмасăрах пукан çинчен тăчĕ те: «Атьăр», – терĕ шăппăн.

Койка илме тăваттăмĕш хута хăпармалла иккен, унта вара пиллкĕмĕш хут урлă каçмалла: кунти коридорĕпе пӳлĕмĕсем те юсавра-мĕн. Картлашки çинче шур çăнăх пек пурăпа алибастра хутшăнчăкĕ сапăнса выртать. Çын хыççăн унта ура йĕрĕ пичетленсе юлать, пушмак пичĕ шурă тусанпа витĕнет.

– Службăра ăçта пултăр? – малтан сăмах хушрĕ Надя.

– Юлашки çул – Мускавра, – пĕлтерет шăп пыракан Виктор.

– Халь пирĕн патрах ĕçлетĕр-и?

– Килтĕм ĕнтĕ, – тет те каччă кăштахран: – Эсир те стройкăра-и? – тесе ыйтать.

– Ăхă... Кунта, леш корпусра, буфетра ĕçле пуçлатăп. Тытăнман-ха, тунти кун пуçăнатăп, – çын çине пăхмасăр хуллен хыпарлать хĕр упраç.

– Общежитирех пурăнатăр-и вара? Миçемĕш корпус? – кăсăкланать яш кĕрĕм те.

– Çук, – хуллен тавăрать хĕр. – Пирĕн хамăрăн çурт. Аннепе пурăнатпăр. Буфет йышăнтăм та киле каяс умĕн Лиза аппа патне кĕтĕм. Тăван вăл пирĕн, анне йăмăкĕ.

Куна корпус командачĕ пирки каларĕ ёнтĕ вăл.

– Спорт мастерĕ ятне эсир мĕнпе илтĕр?

– Утассипе. Илтнĕ-и çăмăл атлетикăн çавăн пек енĕ пуррине?

– Тем, астумастăп. Э, марафон теççĕ. Çав мар-и?

– Çук, марафонра чупаççĕ ăна. Эпир, çӳревçĕсем, утатпăр. Ак кур, – хĕре куçран йăлт пăхса илчĕ те коридор тăрăх спорт мелĕпе утса кайрĕ Виктор. Шурă пурăллă урай çинче ун йĕрĕ çип çапнă пек тӳп-тӳрĕ выртса юлчĕ, пĕр ура пуссипе тепĕр ура пусси хушши метр ытла. Надя куншăн çеç мар, каччă пĕвĕ-сийĕ маттуррине кура тĕлĕнет – çӳллĕ те чĕрĕ шăм-шаклăскерне ытарса пĕтерме çук.

– Эпĕ те шкулта чух спорт секцине çӳренĕ. Гимнастика енĕпе. Иккĕмĕш разряд пулнă манăн, – пĕлтерчĕ хăй çинчен Надя чарăнса тăнă Виктор патне çитсессĕн.

– Мĕншĕн пулнă çеç? Халь çӳреместĕр-им? – ваштăрах ыйтрĕ Виктор, тин çеç куларах пăхса тăраканскер.

– Анне тем усси тесе каларĕ те... Вăхăчĕ те çитмест. Суту-илӳ шкулĕнче ун пек секци çукчĕ.

– Хулари спорт шкулне çӳрес темен-и?

Хĕр упраç хирĕçлесе пуçне пăркаларĕ.

Сăмаххи нумай пулин те васкавлăн калаçмасть хĕр упраç, кашни пуплев хыççăн шухăша кайнăн чарăнать. Виктор та ăна сăнарах пăхрĕ. Надя пиçĕ хулă пек тăпăлкка; çирĕп çыхнă сарлака пиçиххи ун пĕвне ик алла кĕмелле пек çинçе кăтартать; шурă кофтăн кăкăр умĕнчи тĕрри, тытса ывăтас йĕтре пек чăп-чăмăррăн мăкăрăлнă; хура юбка пилĕкрен аялалла хурталлăн сарăлнă; кĕре ӳт тĕслĕ капрон чăлха тăхăннă пике ури йăпăш; пичĕ пăнт тулли те çаврака, куçĕ чакăр; тутине хĕретнĕ те, кулнă чух сăн-пичĕ пиçнĕ чие çырли пек туйăнать.

– Буфетне хăçан уçатăр? Апата унта пыма лекет пуль, – кăсăкланчĕ Виктор.

– Паян ĕçлеместĕп, çитес тунти кун тытăнатăп, ун чух – тархасшăн, – малтанхи сассипех лăпкăн каларĕ хĕр упраç.

Койкăсене коридор леш пуçĕнчи кукăра кăларса хунă-мĕн. Çĕнни пĕрре те çук, çавăнпа майлăраххисене тупас тесе самаях тĕрмешме лекрĕ. Хăшĕсен пуçĕнчи çаклатмалли хăлхисем татăлнă, хăшĕн пружини питĕ çемçе. Пĕр йышисем кĕскерех, Виктора вăрăмраххисем те ура кăларса вырмалла çеç.

Аялти кравате кăларас шутпа Виктор ретлесе купаланă тимĕр сеткăсене пĕрерĕн иле-иле тепĕр вырăна куçарать – алăк пек сарлакаскерсенех ытампа тытать те вăл çаплах илсе хурать. Хĕр упраç качча куç сиктермесĕр пăхса тăрать.

– Сан çине тусан вĕçтеретĕп çеç капла эп, – сăмах хушать Виктор.

– Ремонт вăхăтĕнче тусанĕнчен хăтăлма çук-çке. Юсавне кунта тем вăраха ячĕç, – калаçать татса илес çырла пек илемпи.

Виктор хăйне виçеллĕ койка шыраса тупрĕ те сеткине ĕнсе çине хурса коридорпа уттарчĕ.

...Вăл вырнаçса çитнĕ тĕлелле пĕрле пурăнмалли икĕ юлташ ĕçрен таврăнчĕ. Пĕри, хурал пӳрчĕ пĕрени сăнлăраххи, Виктортан кăшт çеç тайăнрах хыткан ача, Вася ятлă; теприне, сарлака та мăнтăрккине, Олег тесе чĕнеççĕ. Ку ачисем кашниех салтакра пулнă иккен-ха, «кирза пăтти» мĕнне пĕлеççĕ. Виктор сумкинчен япаласем вырнаçтарать. Хĕлле йĕлтĕрпе ăмăртнă чухне кив маçа хĕртсе тасатма тесе Клименков типĕ спирт панăччĕ, икĕ пачка вăл, пурĕ те пĕр-ик тӳмине çеç пĕтернĕ. Чаçа пăрахса хăварас килмерĕ ăна, халĕ япаласене вырнаçтарнă чух йăпăртлăха сĕтел çине хучĕ. Вася ăна: «Мĕн ку?» – тесе тытса пăхрĕ.

– Типĕ спирт, – пĕлтерчĕ хуçи.

– Спирт?! – йĕппе чикнĕ пек ялт! тинкерчĕ Олег.

– Ĕçмелли мар, çунтармалли, брикет, – ăнлантарать çĕнĕ çын.

– А-а, – тесе хаш! сывларӗ Олег аллине лаш сулса.

– Салтак таврӑннине паллӑ тумаллаччӗ, – терӗ лӑпкӑрах сӑнлӑ Вася.

– Магазин инҫе мар-и кунта? Эрех патне кайса килем эппин, – терӗ Виктор ҫӗнӗ юлташсен кӑмӑлне хуҫас килмен шутпа.

– Паян санран ӗҫмӗпӗр. Эпир хӑналӑпӑр, – тавӑрчӗ Олег. – Эсӗ тин килнӗ ҫын ҫеҫ-ха, шалу илмен.

Ӗҫме сӑлтав тупӑннӑшӑн хӗпӗртенӗ Олег ҫавӑнтах пуҫтарӑнса тухса та кайрӗ, кӗҫех вара вӑл икӗ кӗленче эрех йӑтса та килчӗ.

... Ир. Вырсарни кун. Пуҫ ыратать. Тӑрас килмест. Ыйхӑ та ҫук. Тӑрса апат хатӗрлемелле-ши? Кӑлпасси пӗтменччӗ, ӑшаласан пӑсмасть пуль. Столовӑя кайсан та юрать. Виктор тӑчӗ. Вася, питне стена еннелле туса тӳртен выртаканскер, йӑшӑлтатса ҫаврӑнчӗ те пукан ҫинчен пирус илсе хыпрӗ. Шӑрпӑкне чӗртнӗ хыҫҫӑн выртнӑ ҫӗртех паклаттарса турта пуҫларӗ. Виктор кантӑкран пӑхать, ҫанталӑк аван пек, уҫӑлмалла тренировкӑна кайса килсен ҫав тери паха пулмалла та... Кухньӑра такам тем шаритлет пулас, ҫатма шӑрши сарӑлнӑ.

Виктор урама тухса шӑм-шакне кӑштах ҫемҫетнӗ хыҫҫӑн каялла кӗнӗ ҫӗре Олег вырӑнӗ ҫинчех, кӑшт ҫӗкленсе, аллине вылямалли карт тытрӗ те, ӑна чӑшт-чӑшт-чӑшт хутӑштарса: «Ларӑр, ачасем, тӑсӑпӑр малалла», – терӗ.

– Паян эп ку вӑййа алла тытам мар, – пуҫӗ ыратнӑран тарӑхнипе тавӑрчӗ Виктор..

– Мӗн пулчӗ тата? – ҫиллессӗн пӑхрӗ ун енне Олег. – Эсӗ вун ҫичӗ ҫулхи хӗрех марччӗ-ҫке.

– Ӗнер ӗҫнӗ, вылянӑ – ҫитет. Паянхи куна вырӑнсӑр ҫухатам мар.

– Ҫухалнӑ ӗнтӗ вӑл, пӗри хӑй ҫуртне тунӑ ҫӗре чӗннӗччӗ, унта каймарӑмӑр. Халь ним те тӑвас ҫук. Лар. – Олег ҫавӑнтах кӳршӗ ачине те стенана шаккаса

систерчӗ те, вӗсем вара тӑваттӑн кинг выля пуҫларӗҫ. Ку вӑййӑн вӗҫне тухма ҫывӑх мар. Йӗркеллӗн апат ҫиме манса ӗнер юлнӑ кӑлпассие чӑмларӗҫ вӗсем. Ҫынсем кӑнтӑр апачӗ хатӗрленӗ тӗле тин йӑлӑхнипе те пуҫ кашланипе ҫаксем карчӗсене пуҫтарчӗҫ, кам мӗн чул выляса ярса мӗн чул выляса илнине шутларӗҫ. Виктор пурӗ те 21 пус ҫухатнӑ. Васьӑн Олега икӗ тенкӗ те тӑхӑр пус памалла пулать.

Виктор кеда тӑхӑнса парка тухрӗ, утма-чупма меллӗ вырӑн пур-и тесе пӑхкаласа ҫӳрерӗ. Туссем пуш кӗленчесене шӑтӑкла хутаҫа тултарса ларека кайрӗҫ: мухмӑр чӗртме ҫеҫ мар, ҫӑкӑр илме те укҫа кирлӗ-ҫке – пухӑннӑ вун пӗр пуш кӗленчешӗн пӗр тенкӗ те 32 пус укҫа килет.

...Ҫартан таврӑннӑ ҫынна хӑй ӗҫленӗ бригадӑнах ҫирӗплетрӗҫ. Бригада Атӑла юхса тухакан юхан шыв урлӑ кӗпер хывать.

Ӗҫ вырӑнне пынӑ чух сӑрт тӳпинчен пӑхсан тикӗссӗн лартса тухнӑ капмар сӑвайсем икшерӗн умлӑ-хыҫлӑ пыракан салтаксен стройӗ пек курӑнаҫҫӗ. Ҫак строй пӗр уйӑх-уйӑх ҫурӑ каялла ҫеҫ ҫап-ҫутӑ ҫул урлӑ (шыв ҫийӗ афальт пек йӑлтӑртататъ) ирсерен леш енчи ҫырантан ку еннелле утатчӗ, халӗ вара ҫав «салтаксем» хӑйсен хул пуҫҫийӗ ҫине вӑрӑм кашта пӗренесем йӑтса пыраҫҫӗ темелле. Тӗлӗнмелле тата: эс сӑртран васкарах ансан вӗсем те васкарах утаҫҫӗ, эс вӑрахлансан – вӑрахланаҫҫӗ, эс чарӑнсан, вӗсем те тӑпах чарӑнаҫҫӗ. Пысӑк ҫӗклем йӑтнӑ яшсене чуптарса хӑшкӑлтарас мар тесе рабочи те хӑйне май пӗр тикӗссӗн лӑппӑн утса пырать. Патне ҫитсессӗн хайхи колоннӑри салтакран капмар бетон сӑвай пулса тӑрать; хул пуҫҫийӗ ҫинче те вӗсен кашта пӗрене мар, кӗрӗс-мерӗс пысӑк тимӗр бетон тӑрӑхӗ выртнине куратӑн.

Виктор – бетон блоксене пӗр-пӗринпе сыпӑнтаракан ушкӑнта. Пуҫа япала тивсе сурсӑрланассинчен сыхланмалли каскӑпа брезент пиншак тӑхӑнӑ монтажниксем

чăн-чăн улăпсем пекех туйăнаççĕ. Ӳкесрен çыхăнса лармалли сăнчăр пиçиххи те вĕсене мăнаçлантарса ярать. Салтакран таврăннă çын Васçăпа пĕрле, ав, блокпа блока сыпăнтарать.

– Çак тăрăха кăнтăрлахи апатчен çирĕплетсен лайăхчĕ, – пĕлтерет хăй шухăшне Вася. Çынни ку, Виктор пекех, нумай пакăлтатмасăр тĕрмешет, анчах час-часах ывăннăн лăпланать те кăкăр умĕнчи кĕсйинчен пирус кăларса чĕртет, ун сĕткенне çителĕклех туяс тенĕ пек, тимлĕн ĕмет; тĕтĕмне çăтса ӳпкере сарнă хыççăн мăкăрлантарса кăларать, ĕçне самант та пăрахман Виктора пуç илмесĕр сăнать, пирусĕ çунса пĕтерехпе вара каллех ĕç хатĕрне тытать. Виктор чĕнмест, вăл пĕтĕм шухăш-туйăмĕпе ĕç танатине лекнĕ. Туртманскер, юлташĕ пирус мăкăрлантарать-и, хире-хирĕç тĕкĕнтернĕ бетон каштана кирлĕ пек çыпăçтарать-и, цементпа хытарнă чух раствора ăсса илет-и – асăрхамасть, хăй енчи блока меллĕрех вырнаçтарассишĕн тăрăшать, анчах та Васçăран иртсе каяймасть, лешĕн алли хăнăхнă иккен, пит хыпаланмасăрах ĕçе кирлĕ пек ĕлкĕртет.

Кăнтăр апачĕ вăхăтĕнче Вася Виктора: «Эсĕ преса ытлашши хытă пусатăн», – тесе мелĕпе ĕçлемелли çинчен ăнлантарчĕ.

Виктор çапах та хунă тăрăха Ваçăран маларах çирĕплетсе пĕтерме шутланăччĕ, анчах ун юлташĕ, мухмăрĕ сĕвĕрĕлсе çитнĕскер, хальхинче ĕçне маларах та вĕçлерĕ. «Вăхăт ик пирус туртмалăх çеç юлчĕ, анма юрать тесе Вася ĕç хатĕрĕсене пуçтарма хатĕрленчĕ. Виктор тапранмарĕ-ха, унăн тата тепĕр çĕвĕкне те паянах сапласа хурасси килчĕ. Вăл халь юлташĕ çине пачах та пăхмасăр блок вĕçĕнче тимлет. «Пĕр тытнă япаларан час пăрăнаймастăн иккен эс. Ĕç пĕтмест вăл, ыранран та юлать», – тесе мăкăртатрĕ Вася.

* * *

Кĕрхи çанталăк лăпăр-лапăр тăрать. Çарта Клименков офицер çакăн пек йĕпе-сапа чухне те служба ĕçĕсем хыççăн, каç кӳлĕм, тренировкăна ертсе каятчĕ. Вăрăм çула утма çуллахи шăрăхринчен кĕрхи сулхăнра лайхрах. Кĕрĕн тата тепĕр енĕ пур: вăл – икĕ вăхăт хушшинчи каçалăк. Ăмăртусене çулла тăтăш хутшăннисем килес спорт сезонĕ умĕн канмалла кросс чупаççĕ. Хĕллехи старта кĕтекенсем – йĕлтĕрçĕсемпе коньки ăстисем – пысăк хăвăртлăха чăтма хатĕрленсе вăрмансемпе улăхсене, асфальт çулсемпе парксене тухаççĕ: çуран та чупаççĕ, кăстăрмаллă тăркăч йĕлтĕрсемпе ярăнаççĕ. Виктор иртнĕ кĕрсене аса илчĕ те, ăна тунсăх пусрĕ. Вăрманта кросс чупасси çеç мар, Шалимовсемпе пĕрле шоссе тăрăх утас, утас, утас килекен пулчĕ унăн. Шăмат кун ĕç хыççăн кеда тăхăнса хула тулашне тухрĕ спорт мастерĕ. Мала ярса пуснă чух ура кĕле çине ларатьха, анчах пилĕк вылянасшăн мар, чĕр куççи те темшĕн ыратасшăн. Ку-и тарăхмалли? Вăй çук! Сывлама та йывăр. Ăмăртусене хутшăннă кĕлетке-шăм-шака ие чăмланă тейĕн çав. Кам та пулин юлташ тупăнсан татах хавхаланса кайĕччĕ çын. Пĕччен пит кичем-çке. Пĕччен хăçан тренировка тунă Виктор? Çук, пулман ун пекки. Клименковпа Савельев-Шалимовсем ăна тренировкăна туртнă, хăй тĕллĕн çапла хăнăхас тĕллевпе пĕччен утăм та туман. Уравашăн, хула тулашĕнче йăлтăр шоссене курса хăй тахçан спортсмен пулнине аса илни кăна пулчĕ иçмасса. Çав вăхăт халь тек таврăнмасла иртнĕн туйăнать. Виçĕ çухрăм пек кайсан Виктор килелле çаврăнчĕ.

Пĕр кунхине хулана килнĕ çĕнĕ мастер çăмăл атлетсен манежне пычĕ. Кунта ватă тренер çамрăксене чупса пырса тăршшĕне сикме тата кĕске хушша чупма вĕрентет. Виç-тăватă хĕрпе каччă айхаша-айхаша спорт ăсталăхне алла илме хăнăхаççĕ. Виктор 250 метрлă çаврăмра уткаласа çӳрерĕ, хушшăн-хушшăн хăвăрт кай-

ма хӑтланчӗ, анчах шӑм-шак ҫӑмӑл мар-ҫке, двигатель – ӑшри чӗре, ӳпке, юн ҫаврӑнӑшӗ – темле ҫӳпӗ лекнӗ пек чӑхӑмлать; ирӗклӗн те усӑмлӑн ӗҫлеме май ҫук. «Апчӑху, ку Олегсемпе ермешсе сыпкалама тытӑнни мана спортран пачах уйӑрса ярать-иҫ, – тарӑхать Виктор умалла тӑн-н пӑхса илсе. – Тӑхта, ҫӳретӗп. Ҫавах ҫӳретӗп». Анчах хӑйне хӑй темле хистесен те спортсмен пӗр вунӑ ҫаврӑм утнӑ хыҫҫӑн моторӗ сӳнсе ларнӑ машина пек лӑпланчӗ, юлашкинчен чупкаланҫи пулчӗ, капла та нумаях пыраймарӗ, чарӑнмах лекрӗ. Тренировка мар, разминка – шӑм-шака ҫӑмӑллантарни – теҫҫӗ кунашкал ӗҫе атлетсем.

– Ыран стайерсемпе йӗлтӗрҫӗсем кроса каяҫҫӗ, – пӗлтерчӗ Виктора ҫамрӑксемпе ӗҫлекен ватӑ тренер. – Спортсоветра пухӑнма кирлӗ вӗсем, эсӗ ҫавсемпе ермешме тӑрӑш.

Ураваш ҫакна лайӑх чухлать: разминка тени хыҫҫӑн иккӗмӗш кунӗнче ҫӑмӑлланнӑ шӑм-шакпа утнӑҫемӗн утас килет. Хулари кроссменсемпе туслашас ӗмӗтпе киле таврӑнчӗ Виктор.

Каҫхи апат шутне мӗн те пулин ҫӑмӑллӑн ҫыртас тесе вӑл виҫҫӗмӗш корпусри буфете кӗчӗ. Сутуҫӑ сӗтелӗ умӗнче кунта Надя тӑрать. Шурӑ халатпа вӑл, ҫухавине хуҫлатса йӳле янӑ та, кофтин чечеклӗ тӗрри илемлӗн курӑнать; типтерлӗ туранӑ ҫӳҫне хӗр шурӑ тутӑрпа пуҫтарса ҫыхнӑ.

– Ӗҫме шерпет шыв пур-и, Надя? – ыйтрӗ Виктор.

– Пӗлеймерӗм, тин сутса пӗтертӗм, – иҫӗм ҫырли евӗрлӗ хӗретнӗ тутине уҫса-хупса тавӑрчӗ хӗр. Унтан ҫавӑнтах: – Сӑра пур, пӗр виҫӗ кӗленче хӑвартӑм, – тесе пӗлтерчӗ.

– Чей вӗретсе ӗҫсен те, ӑш канас ҫук пуль, – терӗ Виктор хӗре куҫран ыйтуллӑн пӑхса.

– Сан валлиех хӑварнӑччӗ, сӑри паянхиех, – чакӑр куҫне вутлантарса чӑрах пӑхрӗ хӗр.

– Юрӗ эппин, уҫса парсам, – темле пӑлханнӑ пек пулса кайса самантрах хирӗҫ сӑмах хушрӗ Виктор.

Утса-чупса нумаях пăшăхман пулин те çын тарланă иккен: стаканри сăра пыра лекмесĕр тенешкел чаш-ш! кăна анса кайрĕ. Виктор татах ыйтрĕ те, кăмăллă сăнлă хĕр упраç иккĕмĕш кĕленчене уçса пачĕ. Каччă хăй стаканĕсĕр пуçне тепĕр стакана тултарса сутуçи умне лартрĕ.

– Сире иртнинче те тав тăваймарăм, – терĕ вăл.

Çулăм сапакан куçĕпе Надя Виктора чĕнмесĕр, çав хушăрах тем ыйтас пек пăхать.

– Ĕçместĕп эп, – хирĕçлет вăл. Юлашкинчен хăй çапах та Виктор ним пăрăнмасăр пăхса тăнăран айăккăн çаврăнчĕ те аллипе тытнă стакана тути патне илсе пырса сăрăхтарнă пек пушатрĕ. Виктор тӳлеменччĕ-ха, çырткаласа апатлансан çеç укçине кăларчĕ.

– Кино лайăх теççĕ паян. Билетсем пур-ши? – терĕ хĕр. Сасси унăн йăваш та ыйтуллăн тухрĕ.

– Пĕлместĕп. Эрне кун та паян, курасах тесен... – каласа пĕтермесĕр чарăнчĕ каччă.

– «Орленокра» халăх йышлах пулакан марччĕ, – систерчĕ хĕр.

– Кайăпăр ара. Малтан илсе хунисем те кайран билечĕсене сутакан, – терĕ çавăнтах Виктор.

– Хам пирки каламастăп-ха эпĕ. Каяс тесен тантăшсемпе те кайма пулĕ, – тесе çырла пек тутине чăпах тытрĕ Надя.

Хĕр малтан шахвăртнинчен каччăн пăрăнас килмерĕ.

– Эп чĕнетĕп. Пĕрле кайăпăр, – сĕнчĕ халь вăл.

– Тем тумалла? Ырă мар пуль. Пĕр-пĕрне лайăх та пĕлместпĕр те, – хĕр сăпайлăхĕпе тавăрчĕ сутуçă.

– Ăçта кĕтес сире? – тесе ăшшăн пăхрĕ ăна Виктор.

– Çиччĕ те вун пилĕк минутра трамвай тăнă вырăна тухăп эппин, – хăй килĕшнине хуллен пĕлтерчĕ хĕр

Общежитире Олегпа Вася сĕтел хушшинче лараççĕ, хăйсем самях хĕрĕнкĕ.

– Ăçта пултăн эс? Калым пурччĕ. Пĕрин пӳртне ăшăтмалли радиатор ик сыпăк хушса-лартса патăмăр. Атя тыт, – терĕ Олег стаканри йăнкăр тăрă шĕвеке чӳхентерсе.

Сăра ĕçнĕ хыççăн кăшт пуçа пынă Викторăн ăша хаярринех ярас килнĕ пек пулчĕ, кăмăл та халь уяв умĕнхи пек хавас: ара, хĕрпе кинона кайма хатĕленет мар-и?! Тренировка-и? Ах, тепĕр тесен, çуллаччен вăхăт пур-ха, шăм-шак каннă хыççăн çав ĕçе тепре те хăюллăн тытăнма пулĕ.

– Кил, хамăр çын пул, – асамçă пекех йĕкĕлтет Олег.

– Ăçта каймасть эппин, – терĕ те Ураваш йăлтăр чӳхенсе тăракан «ырлăха» пĕр сывласа илмесĕр тĕппин шаплаттарса хучĕ.

– Тепринче – санран, – терĕ Олег ăна кăмăллăн.

... Кино хыççăн Виктор Надьăна трамвай чарăннă тĕле çити ăсатса ячĕ те каçхине час хупман магазина кĕчĕ. Эрех сутакан уйрăмра черет пысăк мар иккен, виçтăват арçын кăна тăрать. Тусĕсем умĕнчи «парăмне» çийĕнчех татас ĕмĕтпе Виктор çакăнта пĕр кĕленче «симĕссине» чĕркесе чикрĕ.

Тепĕр кунне мухмăр чĕртмелле пулса тухрĕ хайхи. Виктор хăйне кун хыççăн тек ĕçместĕп, спорт ăмăртăвне хатĕрленме тытăнатăп-тытăнатăпах тесе йăпатрĕ-ха.

## Улттăмĕш сыпăк

Виктор общежитие вырнаçнă кунхине амăшне Надя:

– Стройтреста салтак таврăнчĕ, Лиза аппа патне вырнаçрĕ, – тесе пĕлтерчĕ. Амăшĕ, Евдокия Еремеевна, хĕрĕн шухăшне сиснĕнех:

– Захар хуларах пуль? – тесе ыйтрĕ.

– Хуларах, – шăппăн евитлерĕ Надя.

– Халь хаççăн сире пĕрле асăрхамарăм та, – пĕлесшĕн пулчĕ амăшĕ.

– Вӗренетӗп тет. Тем ҫӗнӗ япала шухӑшласа кӑлармa ӗмӗтленет пулмалла. Ҫынна ӑҫтан пӗлен – те тӗрӗс калать, – чӗвӗлтетрӗ хӗрӗ. Унтан вӑл хӑй кӑмӑлне пӗр пытармасӑрах палӑртрӗ:

– Захарпа танлаштарсан ку ачи илемлӗрех, кӗлеткипе те ҫӳллӗ, кӑмӑллӑ та маттурскер.

– Вӗреннӗскер-и? Шалуне мӗн чул илет-ши? – кӑсӑкланчӗ Евдокия Еремеевна.

– Монтажник, – пӗр сӑмахпа пӗлтерчӗ хӗрӗ.

– Ун пеккисем укҫа вӑйлӑ ӳкереҫҫӗ-и?

Надя чӗнмест.

– Катарисем-и? Ӑҫта ҫуралса ӳснӗ? – пӗтӗмпех тӗпчет амӑшӗ.

– Кӳршӗ республикӑран. Чӑваш, – терӗ те Надя каллех шӑпланчӗ. Урӑх мӗнех пӗлтӗр ӗнтӗ кӑшт ҫеҫ паллашнӑ каччӑ ҫинчен вӑл?

– Ашшӗ-амӑшӗ мӗнлескерсем-ши? – пӗтмест иккенха Евдокия Еремеевнан ыйтасси.

– Пӗлместӗп. Ҫарта чух Мускаврa пулнӑ. Спорт мастерӗ, – хальхинче вӗчӗрхенерех тавӑрчӗ хӗрӗ.

– Шалу нумай илнӗ пуль?

– Ыйтман?

– Захар та мастера тухсан укҫа хушӑнать тетчӗ.

– Вӑл рабочи квалификацийӗ пирки каланӑ сӑмах, анне. Виктор – спорт мастерӗ. Ӑмӑртусене хутшӑнать эппин.

– Мастер тавраш салтакра та укҫа ытларах илет тетчӗ Захар.

Ӑшри шухӑшне кӑшт ҫеҫ систернӗ хыҫҫӑн, ҫапла пӗли-пӗлмине те тӗпченӗшӗн амӑшне кӳренсе Надя тутине тӑсрӗ те пӑрӑнса тӑчӗ.

– Укҫа пулсан – мул пулать, укҫа ҫук та – хур пулать; ҫынна суйласа тупма пӗлмелле ӑна, уйрӑм ҫуртлӑ хӗре Захарӗ те, такамӗ те хапсӑнӗ. Укҫа сахал ӳкерекен ҫынпа калаҫмасан та юрӗ сана, – вӗрентет хӗрне Евдокия Еремеевна.

Кӑна илтсен ҫирӗм пӗр ҫулхи хӗрӗн чунӗ тӑвӑнсах

çитрĕ. Ун куçĕ умĕнче çаплах илемлĕ яш, Виктор, тăрать: койка сеткине ик аллипе тытса тепĕр вырăна лăпкăн хурать вăл, пилĕкĕ авăннипе хул-çурăмĕ ырнине те туймасть. Калаçнă чух Надя çине епле ыррăн пăхать тата!

– Курсассăн эсĕ те килĕштерĕн-ха ăна, – терĕ те Надя, ун куçĕнчен пăрçа пысăкăш вĕри тумла юхса анчĕ.

– Юрĕ, кăтартăн тепĕр чухне тата, – шеллерĕ Евдокия Еремеевна хăйĕн хĕрне. – Ак лайăхрах паллашăр та, хамăр пата хăнана та чĕнĕн.

Çакăн хыççăн ĕнтĕ, каччă буфета кĕрсен, кино çинчен сăмах пуçарчĕ Надя. Кайран, картина пăхса ларнă чух тата хăйне киле ăсатса янă самантра, хĕр чунĕ ăш-пиллĕн савăнчĕ.

...Кĕпер хывакан бригадăна пĕр ватăрах хĕрарăм пычĕ. Рабочисем ăна Елена Петровна тесе чĕнеççĕ. Профсоюз комитечĕн членĕсене вăл пуçтарăнса калаçмалли çинчен пĕлтерчĕ, ĕç епле пынипе кăсăкланчĕ. Килнĕ çын хаваслă кăмăлĕпе:

– Ураваш текенни хăшĕ пулать сирĕн кунта? – тесе ыйтрĕ. Рабочисем ăна инçерех мар тăракан çамрăка тĕллесе кăтартрĕç.

– Эп пулатăп-ха Уравашĕ, – пĕлтерчĕ Виктор та.

– Паллашар. Елена Петровна Самойлова, – терĕ те хĕрарăм алă пачĕ. – Мĕнле пурăнатăр? Мĕнле вырнаçрăр? Ĕçре епле?

– Чиперех. Ĕçлетпĕр йышпа, – тавăрать ытлашши сăмахлама юратман çамрăк.

– Эсир спортсмен терĕç. Хулара кĕçех кросс иртмелле, пирĕн унта команда тăратмалла пулать. Ку ĕçе пуçарма сире хушасшăн, – хыпарлать Еелена Петровна.

– Кросĕ хăçан? – ыйтрĕ унран Виктор.

– Çитес вырсарни кун, – пĕлтерчĕ профком ертӳçи.

– Эп халь вăя кĕмен, – килĕшменнине палăртса пуçне пăркаларĕ Ураваш.

– Çамрăксене пуçтаратăн та, ак кăштах

хатӗрленетӗр. Спорт ӗҫне ертсе пыракан хастар ҫамрӑк пулмарӗ-ха пирӗн. Малашне ку енӗпе эсир пуҫаруллӑ пуласса шанас килет, – сӗнет профком председателӗ.

– Чупса тухаймастӑпах пуль, – иккӗленни иртмест-ха Викторӑн.

– Пире малта пулниех кирлӗ мар, пӗррелӗхе командӑпа хутшӑнни те ҫителӗклӗ. Мӗнле калаҫҫӗ, тен, разряд та кӑтартӑр.

«Разряд? Виҫҫӗмӗш разряд та – разряд. Ҫав вӑхӑтпа Виктор ялта чухне пӗр хатӗрленмесӗр чупса тухнӑ. Ҫарта хӑвӑрт утассипе мастера ҫитнӗ, кросс чупассипе те пӗрремӗш разряда лартнӑ, йӗлтӗрпе те часть командине хӳтӗленӗ. Малтан хатӗрленмесӗр пысӑккинех ӗмӗтленме ҫук ӗнтӗ; спорт мастерне, Совет Ҫарӗн тата Мускав чемпионӗн ятне илнӗскерне, ытла хыҫрах пулни лайӑх та мар, тепӗр тесен. Командӑшӑн, кирлех пулсан, чупса тухма пулӗ, тата ҫамрӑксене явӑҫтарма ыйтаҫҫӗ. Спорта кӑмӑллакансен йышне пӗр чӑмӑра пуҫтарсан хамшӑн та лайӑх-ха, пӗрле вӑй-хал туптамашкӑн меллӗ», – ҫивӗччӗн шухӑшласа илет Виктор, пӗр шӑпӑрт тӑраканскер.

– Чупса тухатӑр эсир, команда йӗркелесси те сире хӑратмӗ, – тет Елена Петровна ӑна. – Ку эрнере кунсерен тӑватӑ сехет хыҫҫӑн ӗҫрен пушатӑпӑр ара; чупмашкӑн хӑнӑхӑр.

«Ӑмӑртӑвӗччен тепӗр пилӗк кун пур-ха, – шутлать Виктор. – Виҫӗ кунне ҫӑмӑл тренировка ирттерсен вӑй илме те, кӑштах канса старт патне пыма та вӑхӑт пур. Йывӑрри йывӑр килет-ха та, ӑмӑртмаллах-ши?» Ҫак хушӑра бригадир ӑна:

– Строитель чысне хӳтӗлес пулать, килӗш, – тесе сӗнчӗ.

Виктор чӗнмест-ха. «Халӗ шӑпах ҫӗнӗ сезона хатӗрленмешкӗн тытӑнмалли самант-ҫке! Кросра хула спортсменӗсемпе паллашӑп та вӑй-хала туптама вара ҫине тӑрсах тытӑнӑп, Олегсен серепинчен те хӑтӑлӑп», – тесе шутласа илнӗ май унӑн сӑнӗ ҫуталса-ҫуталса пычӗ.

Профком председателӗ ҫамрӑк ҫине пӑхса тӑчӗ-тӑчӗ те:

– Миҫе ҫул вӗреннӗ эсир? – тесе ыйтрӗ.

– Ялти шулта ҫичӗ ҫул пӗтернӗ, кайран – профтехучилище. Вӑтам пӗлӳ ҫук, – пӗлтерчӗ рабочи.

– Каҫхине вӗренместӗр-и?

– Ҫук, – тунмарӗ Ураваш.

– Ай, ай, мӗнле вара? Каҫхи шкула ҫӳреҫҫӗ пирӗн ҫамрӑксем, – хыпӑнса ӳкрӗ Самойлова.

– Вӗренес тесе хам та шутланӑ-ха.

– Вӗренмелле. Кӗҫӗр тӳрех шкула пырӑр.

Смена улшӑнсанах Виктор киле таврӑнчӗ, васкаварлӑн кӑшт-кашт ҫырткаланӑ хыҫҫӑн хӑйпе пӗрле икӗ ҫамрӑка ертрӗ те тренировка тумӗпе парка тухрӗ. Юхан шыв хӗрринчи утма ҫулпа ертсе кайрӗ ҫамрӑксене Ураваш. Васкаса мар, хуллен чупрӗҫ вӗсем. Ку хӑвӑртлӑхпа спорт мастерӗ хӑйне йывӑр туймарӗ, тӑвалла хӑпарнӑ чух ҫамрӑксем тӑра-тӑра юлчӗҫ.

Тренировка вӗҫӗнче Виктор спорт уттипе ҫӳрерӗ. Каҫхине вӑл, вӑтам шкула ҫитсе, килте хӑй тӗллӗн вӗренме ҫырӑнчӗ.

Общежитинче Олег чирлӗ ҫын пек ҫӳрет. Ӗҫ укҫи илессе асапланса кӗтет ҫакскер. Унччен тата виҫӗ кун пурӑнмалла-ҫке-ха!

– Тренировкӑшӑн апат талонӗ памарӗҫ-и? Пӗр ҫӗр грамм тухмасть-и унта? – тет вӑл Виктора.

– Талонне ӑмӑрту кунӗ пара҆ҫҫӗ, – хуравлать старта тухма ӗмӗтленекен ҫын. Ӗҫкӗшӗн хыпӑнакана капла калани лӑплантармарӗ.

– Шӑмат кун ман хамӑн та укҫа пулать, – терӗ вӑл тӳрккессӗн.

Ҫӑкӑр ҫукки мар, пыра йӗпетейменни йӳҫӗхтерет алкоголика.

Туссен те укҫа пӗтни Викторшӑн лайӑх та пулчӗ темеле: ҫак хушӑ пӳлӗме эрех кӗмерӗ те, ӑна ӗҫ тесе сӗнсе чӑрмантаракан пулмарӗ, спортсмен вара шӑмат куна планпа палӑртнӑ пекех кӗтсе илчӗ.

Ӑмӑрту вырӑнӗ хула айккинчи вӑрманта-мӗн. Вӑйлӑ спортсменсем пурри сисӗнмерӗ кунта. Йыш та тем чул пысӑках мар. Ҫӑмӑл атлетсем вырӑнне, пӑхӑсӑн, ытларах хӗллене кӗтекен йӗлтӗрҫӗсем хӗвӗшеҫҫӗ. Вӗсене чуппинчен те, калаҫӑвӗсенчен те тӳрех уйӑрса илме пулать. К. хули спринтерсемпе пуян шутланать, вӑрӑм инҫӗшсене чупакансенчен пӗр пилӗк-ултӑ ҫул каялла ҫӗр-шывра палӑрнисемех пулнӑ-ха, халӗ вара стайерсем енчен кунта чухӑнрах, ҫав хушӑрах вӑрӑм ҫула юратакан йӗлтӗрҫӗсем питӗ йышлӑ.

Тӳрех хытӑ тапраннӑран Виктор дистанци варринче сывламалла мар тӑвӑнса ларчӗ, арман чулӗ ҫӗклесе пынӑ пек ывӑннине туйрӗ вӑл ҫак самантра. «Чупма пӑрахатӑп», – пырса кӗчӗ пуҫа шухӑш. Ӑшра ҫавӑнтах тепӗр туйӑм хирӗҫлерӗ: «Сана Елена Петровна хытӑ кайма мар, майӗпен юртса тухма хушрӗ-ҫке, команда тӑратни те ҫитет терӗ. Ҫак вӑхӑтра унран, пурин умӗнче пыраканскертен, ик ача умлӑ-хыҫлӑнах иртрӗ. Хыҫра татах ура шаплаттарнӑ сас илтӗнет. Ҫул анаталла май Виктор уҫӑлса илесшӗн ирӗклӗнрех сывларӗ. Тӑвалла хӑпараспа хайхи малта пыракансем юпа пек чарӑнса тӑнӑн туйӑнчӗҫ: часах ҫитсе хыҫа хӑварма пулать темелле вӗсене. Ҫук ҫав, ҫыннисем чупаҫҫех, сӑрт хыҫҫӑн канав пекки урлӑ каҫрӗҫ те финиш еннелле ыткӑнчӗҫ. Виктор вара ҫавсене ҫитейместӗп-и тесе тарӑхса кайрӗ те пӗтӗм ывӑннине манса вирлӗн хӑвала пуҫларӗ; пырӗ унӑн сывлӑша ҫине-ҫине ҫӑтса кӑларнипе ҫакӑнтах татӑлса тухассӑн туйӑнчӗ; тарӑхса, шӑлне ҫырнӑ пек чупать финишалла Виктор, умри ачасенчен пӗрне, унтан тепӗрне ҫитсе иртрӗ-иртрех. Ҫул вӗҫӗ хыҫҫӑн та сулӑнса каяслах хуллен утса кайрӗ вӑл. «Спорт мастерӗ Виктор Ураваш ҫӗнтерчӗ», – таврана янраттарса илтӗнчӗ мегафон тытнӑ тӳре сасси. Пысӑк ӑмӑрту мар пулин те, ҫакӑн пек сӑмаха ку хулара илтменччӗ-ха Виктор, финиш йӗрӗ тӗлне карнӑ шурӑ хӑйӑва хӑй кӑкӑрӗпе татманни те чылай пулатчӗ ӗнтӗ унӑн. Хула спортсменӗсене пилӗк ҫухрӑм чупассипе ҫӗнтерсе ята-шыва ыррӑн асӑнтарни

каллех чунри мăнаçлăха вăратрĕ. Общежитие таврăнчĕ те каччă, Хĕрлĕ кĕтесе кĕрсе, хут купăс тытса ларчĕ. Чăваш юррисене, ялта урам тăрăх утнă чух каланă çемĕсене аса илчĕ вăл. Ытлашши янăравлăнах мар, хуллен карăнтарать яш çын кĕмĕл чĕлĕхсене.

– Ак ăçта иккен вăл... – илтĕнчĕ алăк умĕнче кăмăллă сасă. Ку Лиза аппа пулчĕ-мĕн-ха. Унпа юнашарах – чипер тумлă Надя.

– Эсир мала тухнă терĕç, саламлатăп, – сăнран йăлтăр çиçсе сăмах хушрĕ хĕр. Виктор ăна куçран ăшшăн пăхрĕ çеç.

– Вăт... Ха, пĕрремĕш вырăн, э! Пурте ун пек пултараймаççĕ, – мухтать Лиза аппа та.

– Çĕр-шывра мала тухасси мар-çке ку, – купăсне калама чарăнса тунсăхлăн хуравлать Виктор. Çакăнтах вăл çарта юлмаллаччĕ пуль тесе шутласа илет. Клименков ертсе пынипе Авиловсем еплерех утса-юртаççĕ-ши?

– Çапах та малта. Пĕрремĕш! – мухтать хăйсен общежитийĕнче пурăнакана Лиза аппа.

Вăл тухса кайсан Надя каччă ларнă çĕрелле иртрĕ.

– Пирĕн пата паян хăнасем пухăнаççĕ, шкулта пĕрле вĕреннĕ тус-тантăш хăй упăшкипе отпуска килнĕ те... – ыйтмасăрах систерчĕ хĕр.

Хăйне чĕннине туйнипе каччăн чĕри вăлт! сиксе илчĕ те, Виктор хĕре ытарайми туйăмĕпе пăхрĕ. Иçĕм çырли евĕр тутине Надя хĕретнĕ, çаврарах пичĕ унăн таса та тулли, кĕскен кастарнă çӳçне илемлĕн авăклантарса пуçтарнă; пилĕке çинçе кăтартакан хăмăр платье тăхăннă вăл; Викторпа танлаштарсан хул пуççи çӳллĕш çеçскер чип-чиперкке курăнса тăрать. «Иккĕмĕш разрядри гимнастка пулнă вĕт-ха вăл; пиçĕ хулă пекскерне, ăна, бруся çинче ăмăртнине курнă пулăттăмччĕ», – хăйне хăй вăтанса шухăшларĕ яш çын.

– Юрă-кĕвĕ калакан çук пирĕн. Эс, Виктор, купăспа пырсан аванччĕ те... Эпĕ Лиза аппаран ыйтрăм, – куçран тилмĕрсе пăхса сăмахлать хĕр упраç.

– Нумай çемĕсемех пĕлместĕп-çке эпĕ, – хăйне ытлашши шанмах кирлĕ маррине пытармасть каччă.

– Начар каламастăн-ха. Темех кирлĕ мар пире – сасси пултăр, – куçне çиçтерсе тинкерет Надя.

Вĕсен килĕ тахçан хула айккинче шутланнă, халь хула варринелле кĕнĕн туйнать. Пӳрчĕ, ашшĕ пур чухне лартнăскер, ытла çĕнех мар темелле, анчах шăтăр-шăтăр та тирпейлĕ. Ашшĕ вилни вунă çул çитет. Амăшĕпе хĕрĕ çеç пурăнаççĕ халь шатрун çуртра.

Хăна-йыш нумаййăн пухăнман: Надя тантăшĕ упăшкипе те тата тепĕр икĕ хĕр пур. Надя амăшĕ, Дуся аппа е Евдокия Еремеевна, çывăхри лавккасен хуралçи, çамрăксем пухăнсан пӳрте пĕрре кăна кĕрсе тухрĕ, çапах вăл кĕске хушăрах купăсçă ачана сăнама пултарчĕ.

Çурçĕр иртсен хăнасем саланчĕç. Ушкăнпах кĕпĕрленсе тухрĕç вĕсем. Тантăшсем кашниех ытла инçех мар пурăнаççĕ. Уйăх пĕтнĕ тĕл иккен те, тулта халь пăч тĕттĕм.

– Çĕрле çӳресе ан ывăн, çырма урлă каçмалла пулать санăн, такам тĕлне çитсе тăрăнăн тата, – терĕ Надя Виктора хулĕнчен çепĕççĕн тытса. – Кăштах ĕçнĕ те халь эсĕ. Вырăн сарса паратăп. Аннепе калаçрăм эпĕ, – пăшăлтатрĕ хĕр вăраххăн.

Виктор турткалашса тăмарĕ.

Надя тулти пӳлĕмре вырăн майлаштарать. Таса çиттипе ваткăллă утиял, кăпăш минтер илсе тухрĕ вăл. Шалта пăчă чухне амăшĕ те, хĕрĕ те кунта – уçă çĕрте – çывăрма юратаççĕ. Вырăнне йĕркеленĕ хыççăн Надя койка умне пукан лартрĕ те качча ырă каç сунса пăрăнчĕ.

Çемçе тӳшек çине тӳнсенех Викторăн пуç кашлама тытăнчĕ – шав çавăрăнать, пĕтĕрĕнет çеç пуçра темскер. Ларсан е тăрса утсан ыратакан марччĕ-ха, уçăлаканччĕ. Лешсемпе пĕрле каймаллаччĕ пуль, Нина текеннине ăсатмалла марччĕ-и? Епле ыр кăмăллăн калаçрĕ вăл унпа çума-çумăн ларнă чух. Ал çемĕ хĕр пек те туйăнчĕ. Енчен Надя? Çук. Вăл, пăхсах паллă: тап-таса хĕр. Ăна, чунтан кăмăллаканскерне, черккене сĕтел çинчен ӳкернĕ пек çĕмĕрес мар...

Пуç кашлани аптратать халь, выртсан-выртсан манăçаканччĕ-ха, çывăрса каяканччĕ. Унччен-ха йывăр. Юлашки черккех ытлашши пулчĕ-ши? Мĕншĕн ĕçтерчĕ вара ăна Надя? Ак çывăрса каясчĕ, ак пуç ыратни чарăнĕччĕ тесе асапланса выртать Виктор. Çывăрса та кайнăччĕ пулмалла-ха вăл – сас вăратрĕ: алăк шăкăлт уçăлса хупăннă пек туйăнчĕ. Çын тухса кĕчĕ-ши? Çук-çке. Шăпах. Хăлхара юри сас илтĕннĕ пек туйăнчĕ мар-и? Çынах иккен: урай хăми чĕриклетрĕ. Çенĕхри пӳлĕмре пурах çын. Апла, çывăракан çын шăнса ан кайтăр тесен мĕншĕн тепĕр хут утиял витмелле мар вара сĕтел çинчи чашăк-тирĕке пуçтарса тин пушаннă кил хуçин?

Виктор йăшăлтатса илсе аяк çине çавăрăнчĕ.

– Çывăрса кайман та-и эс? Сивĕ мар-и? Шăнса ан пăсăл, – чĕвĕлтетрĕ хĕр ун çине тепĕр утиял витнĕ май.

– Пуçа сĕрĕм тивнĕ-çке, Надя.

– Чей хатĕрлесе парам-и?

– Усси пулать-ши?

– Çăрарах вĕретĕп те.

– Иртсе каяканччĕ-ха. Кун пекех ĕçменни чылай пулать, çавăнпа пуль.

– Ĕлĕкрех сыпкаланăччĕ-и?

– Унран, çав эсреметрен, пăрăнас тесен те пăрăнсах пĕтереймен пуль. Ялта пĕрин патне купăс калама вĕренесшĕн çӳреттĕм. Ăна час-часах хăна-вĕрле йышне чĕнсе каятчĕç те, вăл, ик ури те çукскер, хăйне пулăшма тесе мана та хăварасшăн марччĕ. Ĕçкинче вара, хыт сĕннине кура, пĕчĕккĕн сыпа-сыпа панă ĕнтĕ. Çавăнтан хăнăхкаланă. Салтакра чухне ăмăрту хыççăн пĕрескер, ывăнни час ирттĕр тесе «сухое вино» текеннине ĕçме ерткелерĕ. Пăрăнса юлман. Ак халь теплерен йыш умĕнче тем паттăрланас пек шалттиех хуркалатăп. Олегсемпе ав... Фу!

– Эрехĕн уссийĕ çук теççĕ-ха.

– Тĕрĕс сăмах. Ун пирки ăмăрту хыççăн та аптрани пулнă ман.

– Ай, çамку вут пек пĕçерет вĕт хăвăн, – аллине каччă пуçĕ çине хучĕ-мĕн хĕр. – Халь чирлесе ан ӳксем.

– Пуç уралтăрччĕ.

Виктор çĕкленсе ларчĕ, аллине кăшт малалла ячĕ те, хĕр кӳлепи лекрĕ.

– Эс пăр татки пулатăн капла, Надя, çарамассăн тăрса. Пĕвӳ ăшах-ха та.

– Юрĕ-çке. Чей хатĕрлем.

Ытама мĕнле сисĕнчĕксĕр кĕнĕ, çавăн пек йăпăш шăвăнса тухрĕ хĕр; кĕçех вăл çепĕç утăпа пӳрте кĕрсе те кайрĕ.

Халĕ ĕнтĕ çенĕкре, тĕттĕм пулин те, Виктор пĕр пилĕк утăм лерелле, тепĕр çавăн чухлĕ хушă койка патнелле утать – пуçне уçăлтарать. Кăштахран Надя тухрĕ те çутă çутрĕ – куç шарах алчăрчĕ.

– Суккăр тăватăн капла, – тет Виктор.

– Пĕлеймерĕм, – çăмăллăн сăмахлать Надя. Унăн аллинче – куркине лартнă чей чашки. – Ак Инди чейĕ.

Виктор вĕре-вĕре ĕçнине Надя ытараймасăр пăхса тăрать.

– Тавтапуçах, – чашкăпа куркине тыттарчĕ каччă ăна.

– Сывлăха пултăр.

Каччă чăтаймарĕ, илемлĕ пӳ-сие хăй çумнелле туртса илчĕ.

– Ырă-çке эсĕ, Надя.

– Эс хăв... Ман ăша çунтаран, – пăшăлтатрĕ хĕр вĕрин сывласа.

– Ак йăтам та илсе каям-и сана юмахри чечек çĕршывне?

– Ун пек тĕнче те пур-и?

– Пур, паллах. Телейлисемшĕн.

Хĕр чĕнмест, пуçне каччă кăкăрĕ çине пĕкнĕ те вĕрин сывлать.

– Мĕншĕн пултăн-ши эс ман тĕле? – тет вăраххăн вăл.

Ун аллинчи чей чашки тухса ӳкрӗ иккен, урай тӑрӑх кӑлтӑрмач пек кӑлтӑр-р! куса кайрӗ; курки пакӑлтах катӑлчӗ.

– Ырра пултӑр ку, – пӑшӑлтатрӗ халь Виктор. – Ҫутти куҫа ҫисех ярать.

– Сӳнтер ара... Эп кӗрем.

– Тӑхта ӗнтӗ... Капла шӑнсах тӑрар мар...

Лӑпкӑ ҫанталӑк пулмалла ирӗкре, ҫил ҫук пек, ҫапах вӑраххӑн-вӑраххӑнах туртӑнчӗ пулас тӳпене пӗлӗт: ак хӗҫ тимӗре тӑклаттарса ҫумӑр ӳккелерӗ те пӗр авӑк шӑпӑртатсах ҫурӗ... унтан чарӑнчӗ... Хирте ыраш калчи йӗпкӗнет ӗнтӗ. Кӗтнӗ телей пулчӗ-ши ку?

* * *

Шӑнтса лартнӑ панкра ҫине ҫаврӑнса-пӗтӗрӗнсе кӑпӑшка юр ӳкет. Хура ҫӗр ӑш юрпа кӑшт нӳрелет. Парк таврашӗнче, сарӑхнӑ курӑкпа пирченнӗ ҫулҫӑ ҫинче – бинт сарса хунӑ пек шурӑ-шурӑ; машина ураписем иртнӗ тӑрӑхра асфальт ҫул шыв сапнӑ пек ҫуталчӑк. Тройллейбусран анса юлнӑ Виктор парк витӗр ҫырма урлӑ общежити еннелле утрӗ. Кунӗпе кӗпер карнисӗ ҫинче пулнӑскер, ҫӗр аннемӗр кӑкӑрӗ ҫинче лӑп ҫеҫ утса пырать халь вӑл. Ялта та ҫапла юр ҫӑвать пуль, епле пурӑнкалаҫҫӗ-ши килте? Викторӑн ашшӗ, вӑрҫӑра аманнӑскер, сывсӑртарах, кӑкӑрне икӗ хут каснӑ унӑнне, ҫапах снаряд ванчӑкне кӑларса пӗтереймен, ҫавӑнпа час-часах ӑшпа аптӑрать. Виктор йӑмӑкӗ, Ульки, ҫак ҫура качча кайнӑ та, ватӑсем халь хӑйсемех пурӑнаҫҫӗ ӗнтӗ. Ывӑлӗ салтакран тӳрех хулана ӗҫлеме тапнишӗн ӳпкелешни тин илнӗ ҫырура уҫҫӑнах сисӗнмест-ха. «Ҫамрӑк чухне, вӑй пур чухне ҫӳре, ӗҫӗ колхозра та пурччӗ», – тенӗ кӑна. Хӑй сывлӑхӗ пирки ашшӗ халлӗхе чӑтатӑп тенӗ. «Хам тӑпрана ывӑлӑма таптаттарас тенӗ эп», – асӑнкалатчӗ Ураваш Кӗркурийӗ час-часах. Куна вӑй питти ҫын чи малтан Днепр урлӑ каҫнӑ чухне килти пӗчӗк ачи пирки каланӑ. Ҫав ача халь салта-

кра пулма ёлкёрсе таврӑннӑ, ӗҫ хыççӑн хула урамӗпе хӑй хуҫа пек пырать. Шалуран пӗр пайне тум туянма уйӑрса хӑвармалла пуль, ашшӗпе амӑшне кӑштах ярса парсан та пӑсмӗ. Ҫартан таврӑннӑранпа ун пурнӑҫӗн йӑли-йӗрки тӗпренех улшӑнчӗ иккен! Салтака кайиччен хи ача мар халь вӑл: арҫын шутне кӗрсе пырать яш ҫын, ӗҫлет вӑл, ӑна хӑнана чӗнеççӗ, сӑйлаççӗ те... Акӑ ар пулса тӑчӗ. Таçти Ҫӗн Ҫӑкасар ачине ҫак К. хулинче пӗтӗм таса кӑмӑлӗпе парӑннӑ хӗр тупӑнчӗ. Мӗншӗн вара арҫын тенин хӑйне савакана пӗр каç хыççӑнах пӑрахмалла? Хальхиччен урӑх мӗнле те пулин хӗрпе калаçнӑччӗ-и-ха Виктор? Яш пӗве ҫитнӗ вӑхӑтра куç тӗлне район центрӗнчи учитель хӗрӗ курӑннӑччӗ. Анчах ӑна сӑмах хушма тӳр килмен, унпа туслӑн та, юлташлӑн та сӑмахламан – таса сӑнар ӗмӗтре кӑна ҫуталса тӑнӑ. Ҫавӑн евӗр сӑн Мускавра майӑн иккӗмӗшӗнче тепре курӑннӑччӗ. Вӑлах та пулмарӗ-ши тенӗччӗ чӑваш ачи. Вӑлах пулчӗ пулсан та, тен, юратнӑ каччи пур унӑн, тен, хальччен туйне те туса ирттернӗ? Аякри аякках тарса пырӗ ӗнтӗ, ӑна хыҫран чупнипе хӑваласа ҫитеймӗн. Спорт тени кӑна ҫичӗ тинӗс леш енне кайса ан ӳктӗрччӗ ҫеҫ. Ҫитес сезона хатӗрленмешкӗн вӑхӑт ӗнтӗ. Мӗн тытса тӑрать Виктора транировкӑна кӳлӗнме? Ӗҫре ытлашши ывӑнни-и? Вӑхӑт тивӗҫмест-и? Ҫарта чух епле халтан кайсассӑн та Клименков ик сехетлӗх-виç сехетлӗх кроса илсе тухатччех. Сӑлтавӗ кунта урӑххинче! Пӗр пӳлӗмре пурӑнакансем хӑйсен урапи ҫине ларма пикенчӗҫ ӑна. Виктор хӑй те уяв кӗрекине кӑмӑллама пуҫларӗ. Ак, ҫав пӗтӗм усал йӑлана паянах пӑрахӗ те Виктор, ҫарти Клименков вӗрентнӗ пек, тренировкӑна тытӑнӗ. Ҫӗр-шыв командине лекмеллех вӗт-ха унӑн. Ҫав Соломоновсене тепре хӗсмесен-и?!

Тин ӳкнӗ чӗлтӗр юр ҫийӗн, кун тӗттӗмленнине пӑхмасӑр, метртан вӑрӑм утӑмпа пушмак йӗрӗ ӳкерсе пырать ӗҫрен таврӑнакан ҫын. Васкамасть вӑл, вӑхӑт ҫиччӗ те ҫитмен-ха, буфет халех хупмасть, хупас вӑхӑт иртсен те, Надя ӑна кӗтсе тӑма кирлӗ.

Виççĕмĕш корпус енне пăрănма тăнă çĕртех Виктор чарăнчĕ те хăйсен общежитийĕ еннелле çавăрăнчĕ: ĕç çи-пуçĕпех буфета кĕрес темерĕ ĕнтĕ вăл. Пӳлĕмре Вася пĕчченех ларать, ун тĕлĕнче ункăланса-ярăмланса пирус тĕтĕмĕ явăнать.

– Эс, Вася-василек, каллех пӳртре туртнă. Тух-ха коридора, тархасшăн, – терĕ Виктор çирĕп саспах.

– Халех сӳнтеретĕп. Асăрхаймарăм – пирус пачкине кĕсьерен кăларса хунă чух тивертсе янă çав, – терĕ те Вася пирус тĕпне пепельница çине пусрĕ; лапчăннă вырăнтан кăвак тĕтĕм çинçен явăнса тухрĕ те мăкăрланма пăрахрĕ. Виктор форточкăна уçнă чух Вася йăпăлтатнă пек:

– Яриех уç, чĕр сывлăшпа пӳлĕм тасалать, – тесе сӳпĕлтетрĕ. Ку вăхăтра Олег çитсе кĕчĕ.

– Пӳлĕмре ан туртăр-ха, сывлама уçă пултăр, пуç анкă-минкĕленсе каять капла, – терĕ Виктор лешĕ аллине пирус тытичченех.

– Вася ытларах паклаттарать пирĕн, – тавăрать Олег. – Пӳлĕмре туртмалла мар тесе тахçанах килĕшнĕччĕ.

– Айăплă, айăплă, – хăйне çилленме май çукла палкать Вася. – Тепри ĕçсен алран пирус ямасть, эпĕ вара мухмăрпа сĕнкнĕ чух хам сисмесĕрех чĕртетĕп. Ырана ку пачки юлмасть те-ха, тепре шалу иличчен пĕр хушă туртмасăр та ĕçмесĕр пурăнма лекет Васекăн.

– Кам каларĕ кăна? – пăхрĕ ун еннелле Олег. – Ыран мĕнле кунне астăватăн-и? Хăй пӳртне ванна вырнаçтарма чĕнчĕ пĕри. Калым тăватпăр!

Çак ыр япалана вĕçертмĕпĕр тенешкел, Вася кăмăллăн пăхса кулать.

– Пурăнатпăр апла, – тет вăл, чĕлĕмпе сарăхнă сăнлăскер.

– Эс те манса ан кай: виççĕн ĕç кал-кал чупать, – сĕнет Виктора Олег.

– Çук, эп тренировка пуçлатăп, – çирĕппĕн пĕлтерчĕ ку.

– Пăрах нушаланма! Пĕрер çур литр параççĕ пулсанччĕ сана кашни тринировка хыççăн! – ал сулсах сивлет спортсмена Олег.

Косюм тăхăннă çын вĕсем çине пăхмасăр ырантан тытăнатăпах тесе палăртать.

– Мĕн, эс такама çилленсе килмерĕн пуль: хыттăн калаçатăн? – асăрхаттарать ăна Олег.

– Сире эп хам шухăша пĕлтертĕм, – çирĕппĕн каларĕ те спортсмен, вара пĕр хушă нихăшĕ те сăмах чĕнмерĕ. Кăштахран çеç Васек:

– Тăхта-ха, Виктор, эс хăнара ĕçкĕ-çикĕ епле иртни çинчен каласа кăтартмарăн-çке пире? – тесе ыйтрĕ.

– А, мĕн, иртрĕ вăл, ӳсĕрĕличчен ĕçнĕ, – тунмарĕ çын.

– Ай, хĕрнĕ пыра ăш килтерме тулăх пулнă апла! – ăмсанать Вася.

– Мана пĕр-ик черккех çапса хуçрĕ пулмалла. Темшĕн ĕçтерчĕ-çке Надя?

– Сана юратса пăрахнă вăл, – пĕр шӳтсĕрех каларĕ кун пирки Вася.

– А, мĕн тата, авлан – общежитире мар, уйрăм пӳртре пурăнма тытăнатăн, – терĕ те Олег, Виктор шартах сикрĕ. Ача чух вăл амăшĕнчен: «Мĕн вăл килкин?» – тесе ыйтнăччĕ урамра илтнĕ сăмаха. «Киле кĕнĕ çынна çапла «килкĕн» тесе сивлеççĕ», – ăнлантарнăччĕ амăшĕ.

– Арçын хĕр килне кайса пурăннине пирĕн юратмаççĕ, – тавăрчĕ çакна аса илсе Виктор.

– Ну, каларăн та, – тĕлĕнчĕ Олег. – Çын мар, ху пурăнатăн вĕт. Эпир те ĕмĕрех общежитин хĕсĕк пӳлĕмĕн алăкне кăна уçса хупма ĕмĕтленместпĕр. Юратан пулсан мăшăрлан, амăшĕ патĕнче килĕштермесен, кунта хăв уйрăм пӳлĕм илетĕн. Строитель эс!

Виктор хирĕç ним те шарлаймарĕ, вăл авланас пирки халлĕхе пуçа та илменччĕ-ха. Костюм улăштарса тăхăннă яш çын каçхи апат çырткалас шутпа виççĕмĕш корпусри буфета кайрĕ.

## Çиччĕмĕш сыпăк

Университетăн спорт коллективĕ пысăк. Земфира малтанхи икĕ çул эрнере пĕрре пулакан ик сехетлĕх физкультура занятийĕсене çеç мар, çăмăл атлетсен секцине те хаваспах çӳрерĕ. Вăл 100 метра, унтан 80 метра барьерсем урлă каçса чупассипе ăмăртнă, тăршшĕне, çӳллĕшне сикнĕ. Чи кĕске дистанцие чупас енпе факультетăн эстафета командинче те пулнă. Анчах унăн ытларах барьер урлă каçасипе хăшкăлма лекнĕ. Виççĕмĕш курсра хĕр секцие çӳреме пăрахрĕ. Ăна йăлăнакан та пулмарĕ: ку вĕренӳ заведенийĕнче ăста спортсменсем унсăрах çителĕклĕ.

Кăçал Земфирăна спорт темшĕн урăхла туйăнакан пулчĕ. Малтанхи икĕ çул вăл физкультура урокĕсемпе спорт секцийĕсенче хаваслăхпа киленӳ тупнă темелле. Халĕ ăна спорт киленӳрен те ытларах хаклă япла пек туйăнать. Ара, иккĕмĕш разряд илме пултарнă спортменкăн мĕншĕн пысăккишĕн кĕрешмелле мар, тепĕр тесен?

Сентябрь хĕвелĕ сарă-хĕрлĕ тĕслĕн ытлашши хĕртмесĕр пăхать; парксенчи йывăç çулçисем тĕл-тĕл саралса тухнă ĕнтĕ; спортсменсем вĕренӳ занятийĕ хыççăн шавах тренировкăна çӳреççĕ; ав, пĕрисем Ленин тăвĕнче, теприсем Мускав шывĕ хĕррипе кросс чупаççĕ.

Кĕркунне – çупа хĕл хушшинчи тапхăр. Тӳррипе илсен, вăл çĕнĕ çулталăк пуçламашĕ. Шкулсемпе институтсем вĕренӳ çулне кĕркунне тытăнаççĕ. Вĕренсе тухса кайнисем вырăнне çĕннисем кĕреççĕ. Кĕркунне спортшăн та – çĕнĕ çулталăк пуçламăшĕ, шăпах çак тапхăрта умри стартсене хатĕрленекенсен шутне çĕнĕ йыш хутшăнать.

Общежитие кĕнĕ çĕрте, пĕлтерӳсен хăми çинче, çăмăл атлетика секцине хальччен çӳреманнисене те пыма чĕнсе çырни çакăнса тăрать. Земфирăн мĕншĕн киввине тепре çĕнетмелле мар? Вăл çирĕм пĕр çулта кăна вĕт-ха; ăмăртусене халь хутшăнмасан ӳлĕм хăçан хутшăнма пултарĕ?

Земфира заняти хыççăн буфетра кăштах çырткаларĕ те пурăнакан пӳлĕме кĕрсе тетрачĕсене хучĕ. Вера унран маларах та çитме ĕлкĕрнĕ иккен, вăл, спорт косюмĕ тăхăннăскер, секцие кайма хатĕрленет.

– Атя, пыратăн-и? Кайрăмăр, – терĕ вăл Земфирăна. Кăна вăл, тӳррипе илсен, яланхи пек ытахальтен çеç каларĕ-ха.

– Тăхта, халех пыратăп, хывăнса тăхăнам, – çийĕнчех хуравларĕ ăна пӳлĕме тин кĕнĕ хĕр. Кăна вăл ытти чухнехилле ытахальтен шарламарĕ, питĕнче унăн пысăк ĕç тума тытăннă чухнехи пек хаваслăх çуталать.

Спорт çи-пуçĕ Земфирăн çĕнех мар-ха, иккĕмĕш курсра чух занятисене çӳренĕскерех; кеда та кивелнĕ. Юрĕ ĕнтĕ, халь – ĕçлĕ самант, парад мар. Чул кăларма яка тумпа каймаççĕ. Секци занятийĕ – хура тар кăлармалли ĕç. Пăхма кăмăллă пулсан хĕвелпе шупкаланнă тумшăн пачах та именме кирĕ мар.

Çанталăк лайăх. Секцие вăтăр çын ытла пухăннă; хĕрсем те, яшсем те пур. Ку – иккĕмĕш ушкăн, çакăнта пĕрремĕшпе иккĕмĕш разрядниксем ытларах, спорт мастерĕсемпе мастер пулма хатĕрленекеннисем хăйсем тепĕр йыш, вĕсен шучĕ пĕчĕкрех.

Çăмăл атлетсене аллă çулсене çывхарнă типшĕм сăнлă Инесса Васильевна вĕрентет, хăй вăл спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕ.

– Чим, Земфира Вутланова, тем? Курмашкăн пит хавас, – терĕ вăл хĕпĕртесе. – Маттур, килнĕ!

Тренер заняти тĕллевĕсене палăртрĕ те, разминка пуçланчĕ. Земфира пĕлет-ха: тĕп ĕçе кӳлĕниччен шăм-шака ăшăрхаттарас тесе Инесса Васильевна тепĕр тренировкăринчен вăйлăрах чуптарать; пĕрре хуллен пыратăн, унтан шалтах халтан каясла тапхăр-тапхăр «тăвăл кăларатăн», мечĕк перетĕн, алă-урана вылятатăн, пилĕк-çурăма тĕрлĕ майлă авкалатăн. Çапла тертленнĕ хыççăн секцие çулталăк çӳремен Земфира хăшкăлах пулчĕ.

– Зефира, санăн çӳллĕшне сикмешкĕн ăсталанмалла, – терĕ тренер. Çакна вăл ак мĕншĕн асăнать: кăçал

вĕренме кĕнисенчен кĕске дистанцире пит ăста чупакансемех пур, Земфира вĕсене çитеймест, унăн теприн çукки – пиçĕлĕх, кĕлеткене çăмăллăн авса тӳрлетесси палăрать. Çӳллĕшне сиксе каçмалли урлашкана курсан чунĕ çӳçенчĕ-ха Земфирăн: ара, чупакан, ывăнсан, тамалма пултарать, çӳллĕшне сикес текенĕн кашта урлă каçмаллах, ăна санăн пач та перĕнме юрамасть, хăвăн та пач ӳкерес килмест çав шăрчăкскерне. Анчах ку япали те юри, те ура перĕннĕрен санпа пĕрлех çĕре шăкăлт! ӳкет-çке. Тренер сĕннипе Земфира çав «тухатнă» урлавпа шăлне çыртсах тытăçма шутларĕ. Тӳррипе илсен, çӳçенесси пур пулин те, кăмăллăн пăхать сикмелли сектор енне вăл. Ку ушкăнта вĕсем – ултă хĕр. Тренерсăр пуçне Вутлановăна хăй юлташĕ Вера Горчакова канаш паркалать. Çӳлелле ывтăннă чух Земфирăн ури такăннă чухнехи пек пулать. Вера ăна вара епле чупса пырса мĕнле тапса ямаллине ăнлантарать.

Секцие çĕнĕрен çӳреме пуçланăран хавасланнипе пулас, чăваш хĕрĕ ывăнма та пĕлмерĕ, вăл хăйĕн черечĕ çитессе кĕтмесĕрех, ыттисем тăхтанă самантпа усă курса, ик юпа çине хунă шакăлча еннелле вĕлт те вĕлт ыткăнчĕ.

Общежитие таврăнсан вăл вĕри чей ĕçрĕ те тĕлĕнмелле, хальччен нихçан пулман пек, лăштăр-р ывăннине туйрĕ; выртсассăн вилнĕ пек çывăрчĕ.

Ирпе вăл пир хуплашкаллă хулăм тетрадь илчĕ те малтанхи страницине хĕр аллипе илемлĕн шăрçаласа: «Вутланова Земфира, тренировкăсемирттернине çырса пынă кĕнеке», – тесе йĕрлесе хучĕ. Иккĕмĕш страницăра секци занятийĕнче мĕн-мĕн ĕçленине палăртрĕ.

* * *

Çултаλăк вăхăчĕ улшăнса пынине кура спорт ăмăртăвĕ-ваййисем те пĕр-перинпе черетлĕн ылмашăнаççĕ, кашни стартăн хăйĕн кунĕ е саманчĕ пур. Çăмăл атлетикăн чи хĕрӳ тапхăрĕ вăл çĕр çине çу ăшши

ансассăн килет. Шăпах улăх-çаран чечекпе ешернĕ вăхăтра тĕрлĕ инçĕше чупкăн чупаççĕ, çӳллĕшне те тăршшĕне сикеççĕ, спорт снарячĕ ывăтаççĕ – хулçурăма авкалакан çак ырă майсемпе ăçти кăна вырăнта хĕрӳ кĕрешӳсем иртмеççĕ-ши?! Спринтерсемпе вĕсене çывăх атлетсем ун чух хăйсене менелникри пек туяççĕ, çакна пĕр çыхха пуçтарнă чи капăр чечексемпе танлаштарас килет. Тата ку хитре çыхăра пăхма тӳрех чипер курăнман, çав хушăрах унсăрăн илемĕ те килеймен, нумайччен шанмасăр тĕс çухатман курăк та пурах. Паха чечексенчен çыхнă пуç кăшăлне илем килтерме пулăшакан, çепĕç çупкăмсем типсе тăкăнсан та, сарăхман çулçăпа танлаштарма пулать пуль утларăша е, ăнлантарса каласан, çăмăл атлетикăн спорт мелĕпе утас енне. Çур çитнĕ-çитмен курăк чăшăл симĕсленсе тухнă самантран пуçласа мĕн хура çĕр тепре юрпа витĕнччченех паркара е шоссепе ăмăртаççĕ-çке ырмаканма пĕлмен çӳревçĕсем – авăн уйăхĕ иртсен те, вĕсем валли ăçта та пулин пĕр-пĕр пысăк стартах тупăнать.

Европа çӳревçисемшĕн «ыттисем хыçне» юлнă хĕрӳ кĕрешӳ вăл – Лугано кубокĕ текен ăмăрту. Ăна Швейцарири Лугано хули ячĕпе Олимп вăййи хыççăн е ун умĕнхи çулсенче ирттереççĕ. Шăпах кайăк хурсем инçе çула кайма пуçтарăннă вăхăтра килет çакăн кунĕ. Атлетсене хĕрӳ кĕрешĕве хăнăхтарас тĕллевпе хамăр çĕр-шывра та çакăн евĕр ăмăрту ирттерме палăртрĕç. Ку ĕçе йĕркелеме Клименков Владимир Федоровича сĕнчĕç. «Санăн çав ăмăртура тӳссе курни пур, халĕ çамрăксен «хурçине шăварса хытар», – терĕç ăна çĕнтермешкĕн хăйне тахçан çăмăл маррине аса илтерсе. Совет спортсменĕсемшĕн кĕрешĕвĕ ун чух тертлĕ пулнăччĕ çав ĕнтĕ, малтанах вĕтĕртетнĕ çумăр дистанци варринче шалкăмах ячĕ. Çук, хур шатри пусмарĕ-ха хул-çурăма: вĕриленнĕ шăм-шака мунча лапки çинчен аннă хыççăн сивĕ шывпа пуç тăрăх сапса уçăлтарнăн кăна туйăнчĕ; шултра çумăр пĕрчисем ӳте шăтарасла тăрăнни те темех мар, Клименковăн кунта чăрмавĕ

урӑх сиксе тухрӗ. Ӑмӑрту эмблемине ҫыпӑҫтарнӑ машина – шӑпах совет спортсменӗпе, Шульц хушаматлӑ черченкӗ нимӗҫпе, пакапар кӗрешме тытӑнсан – е пӗрре юлса, е тепре иртсе кайса пычӗ; шалта пӗр господин, ҫавра питлӗскер, шывпа йӑр-йӑр ҫӑвӑнакан кантӑкран ылтӑн шӑлне кӑтартса пӑхать, ҫын тертленнинчен кулать пек туйӑнать вӑл. Клименковӑн ӑна ҫакӑншӑн тарӑхас та килет. Ҫын утти ҫеммипе пыракан ҫӑмӑл машина тем шут тытрӗ те хӑвӑрттӑн чарлаттарса кайрӗ, ҫакӑн чух вара кайри урапа пылчӑк сирпӗтсе хӑварчӗ – шӗвек лапра куҫах кӗрсе кайрӗ. Алӑпа чакаласа-чакаласа куҫа тасатма тӑнӑ хушӑра ҫумри спортсмен, ҫинҫе пӳллӗ те кӑн-кӑвак куҫлӑ Генрих Шульц нимӗҫ, ӑна хӑварма шутламасӑр юнашар пычӗ, ҫумӑр тумламӗсене ал лаппипе кӳллентерсе пите ҫумаллине кӑтартрӗ вӑл. Клименков курмасть те ҫав, ҫумри ҫын сӑмахланинчен тавҫӑрса вӑл шалкӑм анакан ҫумӑр шывне аллипе тытать те пите ҫӑвать, куҫне йӑвалать, юлашкинчен пылчӑк тасалса тухрӗ-тухрех. Ку хушӑра хыҫрисем ҫите пуҫларӗҫ. Клименковпа Шульц часах пӗр-пӗринпе килӗшӳллӗн илтерсе пыма тытӑнчӗҫ, хыҫрисене ҫывӑха ямарӗҫ вӗсем; нимӗҫ, ҫамрӑкскер, финиш тӗлӗнче кӑна унран кӑштах юлчӗ. Ӑмӑрту хыҫҫӑн пӗр репортер Шульцпа иккӗшне ыйтса хупларӗ, епле хатӗрленни ҫинчен пӗлесшӗн хыпӑннипе пӗрлех пӗр-пӗрин хушшинче вӑрттӑнлӑхсем пур-и тесе те тӗпчерӗ. Журналистпа юнашар леш ҫавра питлӗ, ылтӑн шӑллӑ господин та пур. Вӑл: «Кун пек ӑмӑрту сире чӑнласах килӗшет-и?» – тесе ыйтать. Те сӑнӗ килӗшменрен, те пылчӑк сирпӗтнӗшӗн тарӑхнӑран ҫавна хытах ҫилленес килет Владимир Федоровичӑн. Господинӗ ку ахаль ҫын мар, МОК представителӗ, Пироне хушаматлӑскер пулчӗ иккен. Совет спортсменӗ вара официаллӑ этеме тренировкӑсене хӑй чун кӑмӑлӗпе ҫӳрени ҫинчен, хамӑр ҫӗр-шыври ытти ҫамрӑксем пекех ӑмӑртусене килӗштернине нумай сӑмахламасӑр кӗскен ӑнлантарчӗ. Кайран хӗвел анӑҫ ҫӗр-шывӗсенчи хаҫатсенче: «Совет спортсменӗ МОК представительне: «Утларӑш мана терт

кăна кӳрет, уншăн мана хамăр патра ним чул та хисепе хумаççĕ, ура хăмпăланса тухиччен çӳренĕшĕн ыр ят илтейместĕн», – тесе каланă текен статья çапăна-çапăна тухнă. Пĕре лачлаттарса сурнăччĕ, тепре ал сулнăччĕ, тарăхнăччĕ атлет кун пирки. МОК представителĕ те, тепĕр тесен, çавăн пек суйса çырма ирĕк панă-ши? Е хăех хушнă?

Пироне господина Клименков кăçал Олимп вăййи вăхăтĕнче иккĕмĕш хут курчĕ. Çирĕм çухрăма утакан атлетсем стадионалла пăрăнас чух совет тренерĕ судьясен машининчен анса çул айккине пырса тăнăччĕ. Халăх йышлăран кунта шоссен ик енĕпе те тухса кĕме çул хушăксăр хӳме çапнă пек туйăнать. Пăчă урампа, çын хĕсĕнсе тăрса ансăрлатнăскерпе, совет спортсменĕ Галлин Геннадий (профсоюз обществин атлечĕ вăл, çӳллĕ те тĕреклĕскер) шăтарас пек куçĕпе умалла пăхнă та пăр çĕмĕрен крейсер пек чашкăрса пырать; çул тăршшĕпех килĕшӳллĕн ĕçленĕ тепĕр атлет, шăпах Генрих Щульц, кĕлеткерен тĕреклĕ пулин те çав-çавах çинçешкескер, хыçрине çитерсе, кĕмĕл медале алăран кăларса ӳкерес марччĕ тенĕ пек, асапланса-тăвăнса утăмлать. Клименков чăтса тăраймарĕ, сăмах хушса хавхалантарчех Шульца. Галлин ылтăн медаль çĕнсе илни, Шульц та иккĕмĕш пулни Клименков чунне чăнласах çĕклентерсе ячĕ. Вара вăл хăй пĕлекен çынпа калаçас тесе ирпе кунта пĕрле килнĕ хамăр журналиста курасшăн ун-кун пăхкаларĕ. «О, вырăс тренерĕ», – илтрĕ вăл çавăнтах пĕр господин сассине. Тулли хул-çурăмлă, сухалне тĕплĕн хырса массаж тунăран, кăпкалатса хăпартнă минтер пек, çемçен курăнакан сăн-питлĕ сарăрах этем пулчĕ ку; çавă Клименков енне чее те ултавлă куçĕпе пăхать. «Пироне, МОК членĕ», – паллаштарчĕ хăйĕнпе вăл. Сăнран кăштах улшăннă, самаях туллиленнĕ çак господин, анчах çын çине йĕрĕнерех пăхасси питĕнчен тарман-ха унăн. «Саламлатăп сире», – терĕ вăл Клменкова Галлин çĕнтернĕ пирки. Унтан куçне вылянтарса чеен çавăртарса хучĕ: «Ку юлашки шевле пулчĕ пуль...». Совет тренерĕ ăна кунти чылай хаçатсем пирĕн

команда тĕслĕхшĕн çеç медаль илет тени суя тухнине, чăннипе вара эпир чылайăшĕсемшĕн кĕтмен çĕртенех малта пулнине палăртрĕ. Сăмаххи унăн яланхи пекех шăл витĕр сăрхăнса тухса çирĕппĕн янăрарĕ. Джентельмен кăштах йăл кулать те: «Эпĕ утларăш пирки калатăп», – тесе куçне çутăлтарать.

Ырантан тепĕр кунне çӳревçĕсем 50 километра утассипе ăмăртаççĕ. Унта эпир кая юласса кĕтет иккен господин! Çав дистанцире шăпах Владимир Федорович хăй вĕрентсе хатĕрленĕ спортсмен Авилов Александр ăмăртать. Çавна, çĕр-шывра мала тухнă чухне ыттисене чылай пăрахса хăварнăскерне, пирĕннисем хытах шанаççĕ-ха. Анчах, чăннипе, леш господин калана пекех пулчĕ тухрĕ: Авиловăн, вăтăр ултă çухрăм малта пынăскерĕн, ытла шăрăх пирки ура мышцисем мамăк пек ним тытăнки çукла çемçелсе кайсассăн кĕрешме пăрахмалла килсе лекрĕ. «Ну, вăт, капла тертлениччен машинăпа ларса çӳремелле те джунглирен тухса цивилизаце кĕмелле», – терĕ Пироне хушаматлă ĕçлĕ çын, МОК членĕ. Çавăн усал суннă сăмахĕ вара Клименков пырне сурсан та тухма пĕлмен хылчăк пек кĕрсе ларчĕ. «Совет çӳревçисен шкулне сивлеме сăлтав çук, вырăнсăр савăнатăн, господин», – тарăхрĕ Владимир Федорович.

Çаксене аса илсессĕн Клименковăн пысăк ăмăртăва команда хатĕрлес кăмăлĕ пушшех çĕкленчĕ. Виктор Ураваша ку йыша ертесчĕ тесе шутлать вăл.

* * *

«Вăхăт тупса ман пата кĕрсе тухăр-ха, калаçмалли пур», – тесе шăнкăравларĕ Владимир Федоровича Олимп вăййинче пĕрле пулнă журналист, спорт хаçачĕн редакторĕ Пахомов, çапла хушматлă вăл, тулли хулçурăмлă та тĕреклĕ çын, çăмăл атлетиикăра марафонпа утларăша уйрăмах хисеплет, çавăнпа вĕсем çинчен тăтăш çырать, халĕ те пĕр-пĕр статья йĕркелес пирки Совет çарĕн аслă тренерĕпе калаçасшăн пуль ĕнтĕ. Кунашкал шутлани йăнăш пулмарĕ: Пахомов, Клименков

умне тӳрех хаҫат хурса пӳрнипе тӗллесе кӑтӑртартрӗ. Хаҫачӗ пирӗн мар, ют ҫӗр-шывра тухнӑскер-мӗн. «Эсӗ Пироне господинпа тахҫантанпах «туслӑ» вӗт-ха, сире пурсӑра та «саламлать» вӑл. Кур, «ӗҫлӗ ҫын» пӗтӗм вӑй-халӗпе утларӑшпа марафон ҫине тӑрӑннӑ», – терӗ Пахомов. Статьяпа паллашсан Клименков чӑтма ҫук тарӑхса кайрӗ. «Сӳпӗлти, – терӗ ун пирки. – Эпир ытларах медаль илесрен хӑрать». – «Вӑл ҫапли-ҫаплах, анчах ӑна пӗччен те халсӑр тесе шутлаймӑпӑр, ун майлисем татах тупӑнма пултараҫҫӗ. Ҫиййӗнчех кӗрешмесен урӑхла ҫавӑрӑнса тухма пултарать», – пӗлтерчӗ хӑй шухӑшне спорт журналистчӗсем хушшичнче асли шутланаканни. Вӑл Клименкова совет ҫӳревҫисен шкулӗ пирки пысӑк статья ҫырма сӗнет. Клименков куна умри ӑмӑрту хыҫҫӑн пӗрле ларса тӑвӑпӑр тесе шантарчӗ.

Акӑ халь ҫав вӑхӑт ҫитсе иртсен пулас журналистка Земфира Вутланова ҫӳревҫӗсем ҫинчен пысӑк статья вулать. Паллӑ хушаматсенех тепре курать вӑл. 20 тата 50 километра ӑмӑртакансен шутне те пысӑк йыш хутшӑннӑ, рекордлӑ вӑхӑтра утса тухнӑ – уншӑн савӑнмалла, анчах ҫав хушӑрах ентешӗн ячӗ курӑнманни пӑшӑрхантарать.

Виктор та хаҫатра Шалимовпа Авилов финишалла пынине кӑтартакан ӳкерчӗке курсан пӗр хӗпӗртерӗ, пӗр тунсӑхларӗ. Вӑл ҫакна йӑнӑшсӑрах ӑнланма пултарчӗ: Клименков асӑннӑ Пироне хушаматлӑ господин, нумай сӑлтав тупса, утларӑша малашнехи Олимп программинчен кӑларассишӗн тимлет-мӗн. Спорт мелӗпе утассине такӑнтарас текенсене тытса чармалли чи ӑнӑҫлӑ хӗҫ-пӑшал вӑл – ху пӗрре пуҫӑннӑ киленӗве пӑрахӑҫламанни! Апла, санӑн та, Ураваш, хӑвна мастера кӑларнӑ ҫын шухӑшӗсене ҫирӗплетсе умри кӗрешӳшӗн тӑрӑшмалла! Апла, санӑн та, Вутланова, спортпа туслӑ пулмалла!

Палӑртма палӑртать те, калама калать те-ха Виктор – хӑй те сисеймен темле ҫитменлӗхне пула мӗн шутланине тӑваймасть-ҫке.

## Саккăрмĕш сыпăк

Юр ӳккелерĕ те, хуллен-хуллен, майĕпен тенĕ пек, хĕл ларчĕ. Тренировка тума та, вăтам шкулта куçăн мар вĕренме те вăхăт ытларах пултăр тесех ĕнтĕ, Виктор çак кунсенче Елена Петровна сĕннипе стройтрестра физкультурăна ертсе пырас, çынсене гимнастика хăнăхăвĕсене тутарас ĕçе куçрĕ. Сывлăха çирĕплетес тĕлĕшпе хăй пайтах тĕрлĕ хусканусемпе авкаланнă пулин те халăхпа ĕçлесси – Викторшăн çĕнĕ. Кунта вăл хăйне ирĕклĕн туймасть, ĕçе мĕнрен тытăнса мĕнле тумаллине те пĕлеймест. Виктор пурнăçĕнче ку çеç те мар-ха çĕнни. Çак вăхăтра çумра яланах Надя пулчĕ, каччă хĕре тăтăшах киле ăсатса ярать.

– Эсĕ ăмăртура мала тухнине курас килет, – тет Надя.

– Общежитири çав эрех чурисен ушкăнĕнчен хăтăласчĕ те спортсменсен йышне тепре кĕресчĕ, – вĕриленсе калаçать Виктор.

– Лиза аппана калас-и эппин, урăх пӳлĕме куçартăр.

– Ĕçкĕпе супакансен пӳлĕмĕнчи вырăнпа камăн улшăнас килтĕр ĕнтĕ.

– Сана апла епле пулăшас-ши?

– Эп вăл çуртран пачах тухса кайăттăм, Надя. Санпа пĕрле.

– Виктор, калам-и тӳррипе? Анне килĕштерет сана, хамăр пата куçсан эп хирĕç мар.

– Апла çын патне киле кĕнĕ пек пулать-çке.

– Пурăнсассăн майĕпен хваттер илĕпĕр.

Çакăн пек калаçса хапха умĕнче пĕр-пĕрне савса тăнă хыççăн темиçе кунран Викторпа Надя ЗАГСа кайрĕç те хут уйăрттарчĕç.

Хĕрĕн амăшĕ, чăнах та, малтанлăха пит вашават пулчĕ, кĕрӳ те кĕрӳ тесе кăна тăчĕ. Килтен çыру илсессĕн Виктор Надьăпа калаçсах яла выльăх апачĕ туянма тесе укçа ярса пачĕ. Çакăн хыççăн вара Викторăн хунямăшĕ çăварне шыв сыпса лартрĕ те шур куçпа кăна пăхакан

пулчĕ. Чĕлхепе йăпăлти пулсан сăмах та сыпăнĕччĕ, вĕсем пек килĕштерсе пурăнакан кĕрӳшĕ те, хунямăшĕ те пулас çук. Анчах тĕнчере пур ырри те тӳрех ыррăн курăнмасть çав. Çынпа çын пĕр мар. Пĕри ĕçе тĕплĕн тăвать – чĕлхерен сӳрĕкрех, тепри ĕçе çиелтен тăвать те чĕлхерен якарах, кун пекки ырăрах та курăнать. Чĕлхе, çи-пуç пекех, çынна тĕс кӳрет: лайăх тум тăхăнни ыррăн курăнать, яка чĕлхелли те çавах.

Виктор, кунĕпе чул йăттарсан, чул йăтĕ; хăш чух вăл ир пуçласа каçчен карлăк çинчен анмасăр кĕпер монтажланă. Çав хушăрах, ним те калаймăн, чĕлхене нумай вылятмасть. Виктор ирпе ĕçе каякан арăмне хăй урлă каçармасăр маларах тăрса тухать те кроса юртать. Халĕ те, акă, вăл ирхи зарядкăра хуçкаланать. «Тăрăш, тăрăш», – тесе калас килет ăна.

* * *

Земфирăсен хĕллехи экзамен сесийĕ умĕн лекцисем йышланчĕç: вуламан темăсем самаях юлнă-мĕн. Апла пулин те Вера Горчакова экзаменсене маларах тытса пĕтерме ĕмĕтленет: кĕçех унăн кăнтăрти хулана тухса каймалла – пысăк ăмăрту умĕн лайăххрах хатĕренсе çитме вĕсене унта пухаççĕ. Верăн спортри пуласлăхĕ çук мар, Земфирăн вара пысăк стартсем çинчен асăнма ирха, кăçал ăна пĕрремĕш разряд кăтартсан та юрĕччĕ.

Сакăр сехет лекцире ларнă хыççăн Земфира общежитие таврăнчĕ те пĕр тăхтамасăрах пысăк чăмран вĕри шыв илсе килсе чей хатĕрлерĕ. Çăмăллăн çеç çырткаларĕ пулин те шăм-шак çемçелсе сӳлрен кайнă пек пулчĕ, ыйхă килтерсе анаслантарчĕ. Куç хупанки çине пырса ларнă «тăманана» сирсех Земфира сумкине тапочка тата спорт тумĕ хучĕ те пӳлĕмрен тухрĕ. Ăна хирĕç Вера вашкăртса килет, пĕр экзамен панă иккен те вăл халĕ тренировкăна ĕлкĕресшĕн. Ирĕкре Земфирăн та чун уçăлса кайрĕ, ывăнни иртнĕ пек те пулчĕ.

Ĕçе тытăнса шăм-шака ăшăрхаттарнă хыççăн

Инесса Васильевна тӳрех Земфира патне пычӗ. Кашта урлӑ каҫнӑ чух чӑваш хӗрӗн чӗр куҫҫийӗ тӳрленсе ҫитеймест-ҫке. Хӑнӑхас тесе Земфира гимнастика стени ҫинче те, урайне ларса та тӗрлӗ хусканусем тӑвать; ура шӑнӑрӗ туртӑна-туртӑна ыратакан пулчӗ ӗнтӗ унӑн. Тренер ҫаплах кантармасть. Кӑшт сывлӑш ҫавӑрса илнӗ хушӑра Вутланова космоса вӗҫтернӗ спутник евӗр пӗр пек хӑвӑртлӑхпа зал тавра утаслакан икӗ ҫамрӑк енне пӑхса илет. Ҫавсем хӑй тӗлне ҫавӑрӑнса ҫитсессӗн вӑл чӑтаймасӑр: «Йӑлӑхтармарӗ те-и сире»? – тесех ыйтрӗ. Лешсем хӑйсен тӗлевӗсенчен пӑрӑнас мар пек ним чӗнмесӗр иртсе кайрӗҫ. «Ураваш та Олимп тӳпине улӑхассишӗн ҫаксем пекех тӑрӑшать пуль. Вӑл юнашарти манежрах мар-ши?» – шутлать Земфира.

– Тӗлӗнмелле хитре спорт ку! Ха, епле тимлӗн пыраҫҫӗ, – тесе тепӗр хӗр сӑмахлани Земфирӑна шухӑшран вӑратрӗ.

– Ҫав спорта та Олимп программинчен кӑларас текенсем тупӑннӑ, – терӗ Инесса Васильевна. – Утасси вӑл мӗн ӗлӗкрен хисепре шутланнӑ. Пӗчӗк ача тяп-тяп тума пуҫлани камӑн чунне савӑнтарман-ши?! Ашшӗ-амӑшӗ ҫав самантра еплерех хӗпӗртет! Утасси этем ӗмӗрӗнче ялан тӗп вырӑнта пулнӑ, пулать те. Олимп программине ӑна 1908 ҫулхи Тӑваттӑмӗш вӑйӑра кӗртнӗ, унтанпа вӑл спортӑн ытти енӗсем пекех пысӑк хисепре шутланать. 20, 50 ҫухрӑмсене пӗр чарӑнмасӑр васкавлӑн утса тухма сахал мар вӑй тата чун хавалӗ, паттӑрлӑхпа ӑсталӑх кирлӗ, ҫавӑнпа ҫӳревҫӗсене чӑнласах сума сӑвас килет.

– Ман ентеш те ӑста утаканччӗ-ха. Ҫав Олимп тӳпине ҫитсен очерк ҫырӑттӑм, – терӗ Вутланова уҫҫӑнах.

Ҫӗн Ҫӑкасар ачи халь каччӑ маррине пӗлмест-ха хӗр.

– Тен, маншӑн та Олимп хапхи хупӑнман, – тет те Земфира, ӑна ҫӗнӗрен вӑй кӗрсе каять. Ак, вӑл пӗрре чӗр куҫҫине кӑкӑра лектерес пек уткӑнтарса вӗттӗн-вӗттӗн

чупса каять, тепре хуллен юртăпа зал тăршшĕне виçет. Ушкăнри ытти хĕрсем паçăрах çӳллĕшне сике пуçларĕç – çӳл каштине спорт мастерĕн норми шайне хăпартма ĕлкĕрнĕ те ĕнтĕ вĕсем.

Инесса Васильевна çав урлашкана тепĕр хут вунă сантиметр таран антарттарчĕ те кашнине уйрăммăн вĕренте пуçларĕ. Змфира çаплах-ха сикмелли вырăна пымасăр чупнă çĕртен чарăнса урана йăнк! тӳрлетсе уткăнтарать.

– Ну, кил-ха эс, – сикмелли сектора чĕнчĕ ăна тренер.

Шакăлча – Земфира пĕвĕнчен çӳлте! Хĕр тапса ямашкăн ура пусси тĕлли палăртрĕ те хăвăртлăха ӳстермелĕх шăп та лăп кирлĕ хушă виçсе илчĕ, вара йăнк тӳрленсе ик хул пуççине те лăнк усăнтарчĕ – пĕтĕм шăм-шакне çемçетрĕ вăл, унтан ухă пек карăнчĕ, пĕр пек утăмсемпе тикĕссĕн те вичкĕннĕн чупса кайрĕ; тапса ярас самантра сылтăм ура хайхи паллă тунă урай хăминчен «турат куçнех» пусăнчĕ – çӳлелле вирхĕнсе çӳл каштана перĕнмесĕр сывлăш тултарнă резина тӳшек çине ӳкрĕ пиçĕ пӳ.

– Вăт, пачах урăх япала халĕ. Çав вырăнтанах чупма пуçла, çав вырăнтанах тапса яр. Урлашка çинче – сывлăшра – аякпа çавăрăнса тăрăх ӳпĕн, – ăс парать теренер.

Земфира тата виçĕ хутчен сикрĕ – кашнинчех лайăх.

Хĕрсем каштана каллех çӳллĕрех хăпартассишĕн тилмĕреççĕ – çитес çĕре часрах çитесчĕ тени канăç памасть вĕсене.

– Хăпартăр эппин, – килĕшрĕ ку хутĕнче Инесса Васильевна. – Тĕрĕслĕпĕр: парăнать-и пире чул хӳме е çук?

Тренерăн çакăн пек йĕрке: шăл çемми çӳллĕшне сиктерсе сăлая якаттарать, çирĕплеттерет вăл, çапла майпа юлашки тара кăлармалла тертлентерет тепĕр чух. Халĕ Инесса Васильевнăн кăмăлĕ çемçелчĕ, вăл ирĕк парсан урлашка тем хушăра «чул хӳме» шайне карăнчĕ. Çӳллĕш ӳсрĕ пулсан тертленесси тата

пысăкланать, кунта вара час-час ăнăçманнипе сикессинчен шикленекен те пулатăн. Инесса Васильевна канăç памасть, «хавасларах», «хăюллăн», «тапса яр», «тăрăх ӳпĕнмерĕн», «кая юлтăн», «урана тӳрлетмерĕн», – тăтăш илтĕнет унăн сасси. Кун пек чух вăл пит кăмăлсăр. Хĕрсене ытларах «таса мар» тени килĕшмест, ал-урапа кĕлетке-çурăм кирлĕ чухлĕ çеç хускалманшăн, ытлашши кармакланнăшăн, пăркаланнăшăн çавăн пек каласа вăрçать тренер.

Каштана спорт мастерĕн кандидачĕ сиксе каçас шая хучĕç. Малтан пуçăнаканĕ Вера Горчакова пулчĕ. Епле аван сикрĕ вăл – тапса яма та тĕрĕс тапса ячĕ, каштана май шăп тăрăхла ӳпĕнчĕ, анчах хул пуççи темле майпа кăштах лекрĕ-çке – урлав ӳкрĕ. Ку çӳллĕш уншăн хăрушах мар пек, çапах ун урлă каçмашкăн та ытла ансатах мар иккен. Вера çĕнтереймерĕ пулсан Земфира мĕн тăвайĕ. Хĕр тантăш иккĕмĕш хутĕнче йăлттин сиксе çăмăллăн каçрĕ. Çăкасар пикин те çынран юлас марччĕ!

Земфира утакансем енне пĕр йăпăрт пăхнă май Ураваша аса илчĕ. Вара вăл чупса тапранас вырăна хуллен пырса тăчĕ те, пĕр самант ытти япала çинчен пĕтĕмпех манса, кĕлеткене йăнк тӳрлетрĕ, унтан вăрман пăланĕ пек çивĕччĕн малалла ыткăнчĕ... Вара... Акă икĕ ура шакăлча çийĕн вылянчĕ, çинçе пӳ клоун йĕтĕрĕ пек йăнк выртрĕ – Земфира леш енчи «тӳшек» çинче; туйăм-сисĕмпех пĕлчĕ хĕр: «хӳме» силленмест те, тапранмасть те, çапах çын çӳлелле пăхса илчĕ-илчех. Урлă кашта чăнласах лăп тăрать, ав, вăл чипер пикене ăшă кăмăлпа куç хĕснĕн туйăнать, сăмахне те калать пек: «Маттур, ăмăртура та çапла пул».

Чăкăлташ урлава юрама çăмăл мар та, ун кăмăлне çавăрсан чуна ырă иккен. Анчах çав шай вăхăт иртнĕ май кивелет мур; санăн унтан çӳлерехрипе «сăмахласа пăхас» килет, ыттисемпе калаçмасăр пĕр хăвăнпа çеç ыр чĕлхе тупакан çӳллĕшĕпе туслашас килет. Эх, спорт, çавăн пек çав вăл спорт! Спорт çеç-и? Этемĕн пĕтĕм

пурнăçĕ çавăн пек. Ӳсĕм пулсан хаваслансах пыратăн, ĕмĕт анлăшĕпе çын пултарулăхĕшĕн чикĕ çук.

– Хĕллехи ăмăртура çак çӳллĕше илетĕн, çулла тепĕр виçе палăртатпăр санпа, – терĕ Инесса Васильевна Земфирăна.

– Юрать, – пĕчĕк ача пек хĕпĕртерĕ пăхма лăпкă пек курăнакан хăюллă хĕр.

Общежитире Земфира, ырнă пулин те, час çывăрса каяймарĕ. Пĕрре каранна хĕлĕхсем – пĕтĕм нерва системи – лăпланса илеймерĕ, хĕрĕн алли-ури кăна мар, ăстăнĕ те татах тепĕр ĕç пуçăнас пек канăçсăр. Куç умĕнче – сиксе каçнă çӳллĕшех, пуçа пĕксен те кашта курăнать, çывăхранах тата утакансем вашкăнтарса иртеççĕ... Хĕрĕн такампа калаçас, сăмахпа мар, çырса калаçас кăмăл çĕкленчĕ. Кун пекки унăн ялта чух шкулти тĕрлĕ кружокран е концертран таврăннă хыççăн пулаканччĕ. Çакăн пек самантсенче вăл хаçата малтанах ăша кĕнĕ темăпа статья çырса янă, класра пуринчен те лайăх паллă илмелле сочинени шăçаланă, çакăн пек самантсенче вăл пĕр-ик кун маларах илнĕ çырусене хирĕç хуравланă.

Халĕ ун шăпах тем çырас кăмăл хăпартланчĕ. Анчах мĕн çинчен, мĕн пирки ăçта çырма хутпа калем тытса лармалла унăн? Çыру-и? Кам патне çырмалла? Ашшĕ-амăшĕ патне лекцисем хушшинчи тапхăрта çырнă.

Вера вырăн çинче урине пĕчĕк ачалла хуçлатса ларнă та конспект вулать, тепĕр экзамена маларах тытнă хыççăн кăнтăрти хулара тренировка ирттерме ĕмĕтленет вăл. Земфирăн вуласан та пуça кĕмест-ха. Акă вăл спорт дневникне тытрĕ. «Хур тĕкĕ» çавăнтах хут тăрăх (поэт аллинчен куçрĕ-ши?) çăмăл ураллă атлет пек чупса кайрĕ. «Разминка чипер иртрĕ, малтанхи çӳллĕше 8 хут сиксе каçрăм, мастер шайне пиллĕк пырсан та çĕнеймерĕм, спорт мастерĕн кандидачĕ шайне пĕрремĕш хутĕнчех каçрăм. Кун хыççăн каллех ал тайăн ĕçпе тăрмашрăмăр. Занятире планка умне пурĕ утмăл виçĕ хут пынă, хĕрĕх виççĕшĕнче ăна пĕртте перĕнмен. Паянхи çӳллĕше çитес ăмăртура илесчĕ!»

Тӗлӗнтермӗш спорт! Кураятӑп-ши эпӗ санӑн пӗтӗм илӗртӳлӗхне? Ӑнланатӑп-ши, чухлатӑп-ши ҫынна ӑмсантаракан илеме?! Хальхи саманари Олимп вӑййине чӗртсе яракаканӗ Пьер де Кубертен француз: «О спорт! Эсӗ – пӗтӗм тӗнче»» – тенӗ. Ҫыннӑн чун-чӗри хӑватне, унӑн ӑшри тӗнчине, вӑй-хал пултарулӑхне ирӗклӗ те туслӑ кӗрешӳре уҫса палартнӑран каланӑ пуль Олимп йӑли-йӗркине ҫӗнетсе ҫирӗплетекенӗ. Авалхи ҫын хӑйӗн шухӑшне-ӗмӗтне юрӑсемпе палартнине пӗлетпӗр-ха эпир: халӑх сӑмахлӑхне чи ӑслӑ ҫынсем пайтах тӗпченӗ, тӗпчеҫҫӗ те. Ҫавӑн пекех ҫут ҫанталӑкпа самант чарӑнмасӑр кӗрешекен этем пӗр-пӗр паттӑра юмах-халапра асӑннипех ҫырлахмасть ҫав, вӑл хӑйӗн кулленхи пурнӑҫӗнче Улӑп пек тӗреклӗ е никам ҫитейми ҫивӗч те йӑлттам пулма пикенетех. Сунара хатӗрленнӗ-и авал – сӑнӑ тытнӑ та инҫене пеме хӑнӑхнӑ; лаптак чул тынӑ та, вирлӗн лектерсен, тискер кайӑка лапчӑтса хутлатнӑ; апла эсӗ аллуна диск тыт та катана ывӑтма вӗрен; чӑпчӑмӑр кӑна сулӑмлӑ чул та хӑвна сыхлама кирлӗ пулӗ – йӗтре тытса тӑрмаш. Ҫав хушӑрах куҫ виҫи тӑрӑха пит хӑвӑрт вӗҫтерсе ҫитме лекет е тата курӑнми инҫӗше пӗр чарӑнмасӑр чупмашкӑн май килсе тухать; авӑ, легендӑра каланӑ трӑх, ҫапӑҫура ывӑннӑ салтак хӑйсен ҫарӗ ҫӗнтернине пӗлтерме Грецири Марафон текен ял патӗнчен Афинӑна – хӗрӗх ҫухрӑма яхӑн хушша – пӗр чарӑнмасӑр чупса ҫитнӗ... Е тата хамӑр чӑвашсемех: «Вӑл Етӗрне уездӗнчен Чӗмпӗре ҫуран кайса килнӗ, вӑл ҫуран утсах ҫав вӑхӑтра ҫитнӗ», – тесе пирӗн мӑн асаттесене чӑн-чӑн халапри пек асӑнмаҫҫӗ-и? Старта тухсан диск, йӗтре, сӑнӑ тытни хӑех истори страницине уҫса вулани пулать апла. Ку ҫеҫ-ши?

Спорт ӑсталӑхӗшӗн тӑрмашса таврӑннӑ хӗр шав шухӑшлать те ним чарӑнмасӑр ҫырать...

Ирпе Земфира хӑйӗн кун кӗнекине Верӑна вулаттарчӗ те, акамӗ ӑна: «Ку диссертацие санӑн пӗрпӗр журнала ярса памалла», – терӗ. «Статья майлӑ пулса тухнӑ-ҫке!» – тавҫӑрса илчӗ Земфира та. Вара

вăл ăна тепре куçарса çырчĕ те ят парса спорт хаçатне ăсатрĕ. Пичетленме çийĕнчех пичетленмерĕ-ха вăл, хаçат редакторĕ Пахомов, çивĕч туйăмлă çын, ăна, пĕр сăлтавсăрах мар пуль, Клименков каланисемпе пĕрле уйрăм папкăна хучĕ. Статью шăпине халлĕхе пĕлейместĕн-ха эсĕ, хаçата çыракан çын. Эсĕ ку вăхăтра ыттисен шухăшне ăнланма тăрăшатăн. Сан аллунта авă – ГДРта тухнă нимĕçле хаçат, ăна эсĕ, астуман сăмахсен пĕлтерĕшне ăнланмашкăн хушшăн-хушшăн словаре пăхса, хушшăн-хушшăн шухăша кайса вулатăн. Олимп вăйăйинче кĕмĕл медаль илнĕ Генрих Шульц пысăк ăмăртусен пĕлтерĕшĕ çинчен каласа парать-мĕн; халăх пурнăçĕпе тачă çыхăннă, халăх хăй шутласа кăларнă вăй-хал тытăçăвĕсем Олимпиадăра тĕп вырăнта пулмалла тесе палăртать çав юлташ. ГДР спортсменĕ шучĕпе те, марафонпа утларăш, сăнă, йĕтре, диск ывăтасси, çав хушăрах çӳллĕшне сикесси те – çăмăл атлетикăн хальччен илем кӳнĕ пур енĕсем – çитес Вăйăсенче нумай атлетсен ал-ура пултарулăхĕпе чун-чĕре сатурлăхне тĕрĕслеме кирлĕ. Генрих Шульц, совет спортсменĕсемпе Клименковпа, Галлинпа пĕрле ăмăртса туслашнăскер, çăмăл атлетсене хăйсен юратнă енĕсемпе кашни ял-хулара ăмртусем ирттерме, хăйсен юратнă енĕсемпе Олимп принципĕсене пăхăнса кĕрешме чĕнет. Çăкасар енче шăтса тухнисем – Земфира Вутлановăпа Виктор Ураваш! Сирĕн çинчен те сăмах пырать кунта! Эппин, хăвăрăн тĕп ĕçĕре манмасăр спорта чăнласах парăнма вăхăт пуль сире! Кăшт-кашт пырса тĕкĕннипе нимле ĕçре те ăста пулаймастăн. Çыншăн çын – юлташ та тăван тенĕ принципа тĕпе хурса Олимп шевлин сенкер çути пĕтĕм çĕр-шыв анлăшĕпе сарăлнă; авă, пăхăсăн, кăçал профсоюз атлечĕсен тĕрĕслевĕ, унтан тепĕр çулхине СССР халăхĕсен спартакиади е, урăхла каласан, хамăрăн чăн-чăн Олимп уявĕ килет. Тĕплĕн хатĕрленсе кĕтсе илмелле вĕсене! Пĕрре хыпнă çулăм чунра ан тамалтăрччĕ кăна.

## Тăххăрмĕш сыпăк

Хăй юртипе иртет вăхăт. Васкавлăн-и, васкавлăнах та мар-и – çил çунатлă урхамахла ыткăнса пырать вăл. Акă, хаçат-журнал пирĕн çĕр-шыври тĕп ăмăртусем çинчен хĕрсех çыра пуçларĕ. СССР халăхĕсен спартакиади инçере мар, çав хушăра сисеймĕн те, черетлĕ Олимп пуххи çитсе тăрĕ. Виктор стройтрестра гимнастика ертсе пырать, анчах кăмăлĕ çырлахмасть унăн: халăха йышлăн явăçтараймарĕ-çке вăл секцие, тренировкăрна пысăк мар ушкăнпа каять çеç. Ырри енне, унăн ирсерен шăм-шака çăмăллатассипе каç кӳлĕм «уçăлса çӳресси» йăлана кĕчĕ ĕнтĕ, çапла майпа хула ăмăртăвне йĕркеллех хатĕрленчĕ вăл.

Çыннине хăйне юракан тапочка тупăнманни хăшкăлтарать, пур пеккисем ăна е ытлашши пĕчĕккĕ, е пысăккă. Старта пурĕ пилĕк çӳревçĕ çырăннă. Ачисем кусем тăпкăрланайман-ха, утас сăлая тин хăнăхаççĕ. Виктор вĕсемпе мар, тиклатса чупакан çеккунт йĕппипе кĕрешĕ. Эсĕ вунă çухрăма утасласа тухнă çĕре чылай инçе каять çав йĕп. Ăна хĕрĕх çичĕ минут тĕлĕнчен каçарса ярас марччĕ – пĕрремĕш разряд вăхăтне кăтартасчĕ!

Ăмăртнă çĕре Надьăна та пыма чĕнчĕ Виктор. «Çаврăмсене епле хăвăртлăхпа иртнине каласа тăрăн, çиччĕ çитсенех пыр», – сĕнчĕ вăл ăна. Надя килĕшрĕ. Каçхине буфетра ĕç вĕçлесе тухрĕ те вăл чипертерех тумланас тесе килне таврăнчĕ. «Мĕн сĕтĕрĕнсе çӳретĕн, канас пулать, кунĕпе ура çинче тăни çитмест-им? Аçу мана эсĕ çире пур чух алă çинчи пек йăтса çӳренĕ. Санăн чупкăн упăшку умĕнче тăпăртатса тăмалла пулса тухать-и?» – хирĕçлерĕ амăшĕ хĕрĕ пуçтарăнма тытăнсанах. Надьăн чунĕ сӳлесе илчĕ, кăмăлĕ пăтранчĕ... Пуç кашланипе, ăш лĕкленнипе тертленчĕ йывăр çын – упăшки патне шантарнă çĕре пыраймарĕ.

Виктор хăйĕн урине аслăрах тапочка тупса тăхăннă та манеж тавра авăн лаши пек çаврăнать; ыттисем, тин

хӑнӑхаканисем, малтан ун хыççӑн туртӑнчӗç те кайран вӑрахланчӗç.

Викторӑн хӑрах тапочки пакӑлчак тӗлӗнче лакӑштатать, çапах та çын пӗрре çивӗчленнӗ утта тамалтарас мар тесе урине вӑльт-вӑльт илтерсе пырать. Кунта ирӗкре мар çав – пӑчӑ, сывлама йывӑр, майка саманрах йӗп-йӗпе пулчӗ; хул-çурӑм хура тарпа çапçуттӑн йӑлтӑртатать ӗнтӗ, пынӑ май çӳревçӗ алӑк енне арӑмӗ çук-и тесе пӑхать, кашни çаврӑм вӗçӗнчех унталла тинкерет. Пилӗк çухрӑм хыççӑн хулари ватӑ тренер вӑхӑт каларӗ те, начар пыратӑп-иç тесе вӗтрӗ анчах Ураваш.

Çаврӑм пӗкки – вираж – авӑкки ытла хӑвӑрт каййма чӑрмантарать – пӗр пек утӑмпа пыраймасть çӳревçӗ. Тӳрӗ çулпа вӑрӑм пусӑмпа, пӗкӗре кӗскен илтерсе таптап пырать Виктор. Ура пакӑлчакӗ çуннӑ пек пӗçерет, пыр шӑтӑкӗ, хӗрсе кайнӑскер, паçӑрах йӳçӗхет ӗнтӗ.

Вунӑ çухрӑм – çӳревçӗсемшӗн пысӑк хушах мар, таппин пытӑн та çитрӗм темелле, анчах çак вӑхӑтра тертленсе, тӑвӑнса пӗтетӗн. Викторшӑн ку ӑмӑрту çартан килнӗренпе хатӗрленсе тухнӑ пӗрремӗш старт пулчӗ. Дистанци вӗçленнӗ хыççӑн Ураваш канса илмелӗх финиш леш енчи йӗрте уткаласа çӳрерӗ те мӑнтай тапочкине хывса печӗ. Ура пакӑлчакӗнче унӑн ӳт шӑйӑрӑлса юн тухнӑ иккен; медсестра çатӑртаттаракан эмел сӗрсе янӑ вӑхӑтра çӳревçӗ шӑлне çыртса тӑчӗ. Хулари çӑмӑл атлетсен тренерӗ ун патне пычӗ те: 45 минут та 53 çеккунтра тухрӑн», – тесе пӗлтерчӗ. Викторӑн куçӗ çуталса кайрӗ: лайӑх вӑхӑт ку! Унӑн ыратни те иртрӗ темелле. Тепӗр икӗ эрнерен «Труд» обществӑн Тӗп Совечӗн ӑмӑртӑвӗ пулмалла, унччен вӑхӑт пур. Çавӑнта чипер утсан, Клименков каларӑшле, Олимп тӳпинелле пыракан çула тухӗ спортсмен, енчен Вӑйӑ программинчен утларӑша кӑларса пӑрахмасассӑн.

Арӑмӗ манежа пыманнишӗн Виктор йывӑр кӑмӑлах илмерӗ, хӑй мӗн вӑхӑтра утса тухнине тата ыттисем çинчен кӗскен каласа пачӗ çеç. Надя ӑна чӗнмесӗр

тӑнлать, хунямӑшӗ, кӗпе ҫӑваканскер, хушшӑн-хушшӑн сив куҫпа тинкрет. Кӗрӳшӗ ун ҫине пӑхмарӗ, спорт совечӗ ыйтнипе ӑмӑртӑва хатӗрленме ӗҫрен хӑтарсан, вӑл, каҫхи шкула консультацие кайнисӗр пуҫне, тренировкӑна кӑна ҫӳрерӗ. Тепӗр вунӑ кунран вара Надя хӑй упӑшкине аякри хулара пулакан ӑмӑртӑва ӑсатрӗ.

* * *

Обществӑн хӗллехи ӑмӑртӑвӗн хӑйӗн тӗллевӗ пур. Кунта палӑрнисене профсоюзсен ҫуллахи спартакиадине хатӗрленме хӑвараҫҫӗ, унти ӑмӑртура вӑйлисене куҫласан ҫӗр-шывра мала тухмашкӑн «туптама» тытӑнаҫҫӗ. «Труд» общество хӑйӗн ҫӑмӑл атлечӗсене Брянскра пуҫтарчӗ. Викторӑн малта пулмасан та финиша пӗр виҫҫӗмӗшсем ҫитмелле, вӗтӗ ала витӗр тухса «ҫын шутне» кӗмелле. Пухӑннисенчен хӑш-пӗр ҫӳревҫӗсене вӑл паллать иккен-ха, чылайӑшне пӗлмест, мӗншӗн тесен кунта армеецсем ҫук, тата ҫӗр-шывӑн иртнӗ чемпионачӗпе Знаменский пӗртӑвансен мемориалне Ураваш хутшӑнман.

Атлетсем шӑм-шака ҫемҫетеҫҫӗ, Виктор та утсачупса, тӗрлӗ хусканусем туса юна вылятрӗ, малтан ӑшӑрхарӗ те юлашкинчен самай тарларӗ. Вӑл лутра пӳллӗ монгол сӑнлӗ Жуковские сӑнать. Ураваш ҫартан таврӑнниччен малтанхи ҫул Знаменский пӗртӑвансен мемориалӗнче ҫав удмурт ачи армеецсемпе пӗр ушкӑнра пынӑччӗ, финиша Виктор хыҫҫӑн ҫитсе улттӑмӗш вырӑн йышӑннӑччӗ.

Ытти ачасем халь Жуковскипе хисеплӗн калаҫаҫҫӗ, старта ун майлӑ хатӗрленсе тухма тӑрӑшаҫҫӗ. Кӗрешӳ умӗн хӑйне епле тытмаллине Виктор аванах пӗлет. Ӑсталӑхӗсем пӗр пекрен пуль, Дмитрий Жуковскипе Виктор Уравашӑн хусканӑвӗсем ытлашши уйрӑмах мар, леш ачи пӗчӗк пӳлли ҫеҫ вӗсене расна кӑтартать. Судья Соломонов пулать тесессӗн ҫӳревҫӗсем пуҫӗсене пӑркаласа илчӗҫ. Ураваш ҫав динамовеца ҫартан

килнӗренпе курманччӗ-ха. Ку хушӑра хӑйне мӑнна хума юратнӑ, хӑйӗнчен иртсе кайнисене тем туса тӑкас пек тарӑхнӑ спортсмен ӑмӑртма пӑрахнӑ та тӳре ӗҫне кӳлӗннӗ иккен. Вӑл утакансене ырӑнлӑ-ырӑнлӑ мар ҫӗртенех ӑмӑртуран кӑларса кӗске вӑхӑтрах ҫӳревҫӗсемшӗш паллӑ ҫын пулса тӑнӑ. Халӗ те спортсменсем ун ятне илтсессӗн самаях шикленчӗҫ.

Спорт мелӗпе утасси кӑткӑс япала ҫав вӑл, хӑвӑрт пынӑ чух хӑв та сисместӗн, икӗ ура пӗр харӑс ҫӗртен уйӑрӑлса ҫӗкленме пуларать, утнӑ чух мала тухнӑ ура ҫӗре тӗрениччен хыҫа юлнин илӗнмелле мар. Ку – утассин тӗп уйрӑмлӑхӗ; тепри – урана чӗр куҫҫи кукрашки тӗлӗнче пӗр самантлӑх тӳрлетесси. Ҫаксене пурнӑҫламасассӑн ҫӳревҫӗне ӑмӑртма чараҫҫӗ. Ку вара вӑл – спортсмена пӗтӗмпех ҫапса хуҫаканни. Пулать-ха, тепри утакансем хушшинче чупсах мала тухасшӑн. Ун пекки ан пултӑр тесе ӗнтӗ утларӑша ятарласа уйӑрнӑ тӳресем сӑнаҫҫӗ. Ҫавсем хушшинче вара утта хӑйне май хаклакан та тупӑнать, пӗрисем ура хӑвӑрт илӗнсе пусӑннинех чупать теҫҫӗ. Виктор хӑйӗн утас сӑлай пирки пӑшӑрханмасть-ха, Клименков ӑна таса утма вӗрентнӗ. Ҫитменни ҫине, Соломонов Ураваша курман ҫын та мар, армеецӑн ӑсталӑхне динамовецсем те мухтанӑ.

Утассипе вӑй виҫекенсем хывӑнса тӑхӑнмалли пӳлӗмре старта тухма хатӗрленчӗҫ: шӑм-шака ӑшӑрхаттарнӑ чухнехи тума хывса труссипе майка тӑхӑнчӗҫ. Виктор уринче халь – ҫула май Мускавра туяннӑ ҫӗнӗ тапочка. Ҫемҫелтӗр тесе вӑл унпа разминкӑрах ҫӳрерӗ; аслӑ та мар, хӗсмест те – шӑп виҫеллӗ. Иртнӗ ӑмӑртури суран тӳрленнӗ те, Викторӑн халь часрах йӗртен тапранса каяс килет. «Стартчен икӗ минут ҫеҫ юлчӗ», – тесе аслӑ судья каскатать. Соломонов, ӗнси таврашӗнчи ҫӳҫне лӗпкене ҫӳхен витнӗскер, мухмӑрланӑ пек сӑнлӑ курнать; вӑл хӗрлӗпе шурӑ ялавсем тытса тапранмалли йӗр умне пычӗ.

– Ашкăннă ан пултăр! Çирĕп сăнатăп, – терĕ çакскер спортсменсене. Тахăшĕ ăмăрту правили çинчен ыйтасшăн пулчĕ те, тӳре ăна тӳрех:

– Сăлая пăсмалла мар. Епле утмаллине тренерсем вĕрентнĕ сире, – тесе пӳлчĕ.

Команда парсан ушкăн илемлĕн йăкăртатса кайрĕ. Манеж кунта пысăк мар, пĕр çаврăмĕ ик çĕр метр çеç пулать. Вун пилĕк çухрăм утаканăн çитмĕл пилĕк хут ункăламалла.

Виктор йыш варрине лекрĕ. Вăл, вăрăм утăмлăскер, умрин ури çине пусма пултарать, çавăнпа та кăштах çаврăм тулашнерех пăрăнчĕ. Утакансем пурте пĕр чăмăрта-ха. Акă Жуковский, малтан пĕрне, унтан тепĕрне иртсе мала тухрĕ те васкавлăн илтере пуçларĕ, ыттисем ун хыççăн туртăнчĕç. Виктор тăваттăмĕш пырать. Вăл çаплах-ха çаврăм шал енче мар, тулаш еннерех пусса пырать, апла пулсан ун çулĕ ыттисенчен вăрăмланать. Анчах вăл çаврашкана пĕчĕклетес тесе хыça юлма та, ума иртме те шутламарĕ-ха. Клименков ушкăнĕнче чух вăл нумай тренировкăсенче вăйлисемпе юнашар пыма хăнăхнă. Çав туйăм халĕ те упранать иккен, тан пырас килет.

Жуковский хăвăртлăха ӳстерсе-ӳстесе пычĕ те хыçрисем унран метр, виç метр юлчĕç. Çакăн пек кăшт юлсан юлсах каятăн вара; Виктор иккĕшне иртсе Жуковскипе танлашрĕ. Иккĕшĕ çаксем пĕрле ыттисенчен уйăрăлчĕç. Тарапунькăпа Штепсель пек курăнаççĕ халь вĕсем: Жуковский пĕчĕк, Ураваш унпа танлаштарсан самай çӳллĕ. Сехет механизмĕ евĕр ĕçлет удмурт ачи, кĕске урипе вĕттĕн илтерсе пырать. Виктора унпа пыма кансĕр: хыçра чух ури çине те пусăн. Хăйне начар мар туять-ха тахçанхи армеец, чăваш ачи. Малтанах сывлама йывăр пекчĕ те, халĕ чун уçăлчĕ, ура туни ыратмасть, чикен чикмест. Пĕчĕк Жуковский, çын сăмси айĕнче тенĕ пек, Виктор урине тăллантарасшăн евĕр вĕлтĕртеттерсе пырать: çивĕччĕн йăшт! йăшт! йăшт! пусать хăй. Ыттисем пĕрер, хăшĕсем икшер çаврăм

та юлчĕç ĕнтĕ. Çак вĕтĕ утăпа мар, вăрăмраххăн пусса пымалла-ха Викторăн. Вăл, акă, Жуковские иртрĕ те малалла вирхĕнчĕ. Утакансем хушшинче те, куракансем йышĕнче те Виктор çине ку мĕнлескер тенĕн пăхаççĕ. Пĕр тĕлте вăтам пӳллĕ арçын куç илмесĕр тинкерет. Олимп ваййинче медаль çĕнсе илнĕ Евгений Маскалов пулчĕ ку. Сăнĕнченех паллă: ума тухнă çынна килĕштерет вăл, кун пеккинчен спортсмен пулать тет ĕнтĕ. Хăй илсе килнĕ çамрăксем унăн юлаççĕ-ха. «Тару тухмасть!» – тесе вăрçрĕ пĕрне вăл. Виктора сăмах хушакан çук. Вăл пĕчченех ирĕклĕн ярăнса пырать.

Манеж варринче уткаласа çӳренĕ май Соломонов ăна тинкерчĕ-тинкерчĕ те вираж тĕлне пырса Виктор иртсе кайнă чух ула-чăла ялавна кăтартса:

– Утмăл пиллĕкмĕш номер! Сире асăрхаттаратăп», – терĕ.

Атлет тӳрех нимĕн те ăнланаймарĕ-ха. Вăл тӳре çине ыйтуллăн çеç пăхрĕ. Тепĕр çаврăмра Соломонов тĕлне çитсен вăл чăтаймасăр: «Мĕншĕн асăрхаттаратăр? – тесе ыйтрĕ.

– Ан тавлаш! Чупма юрамасть! – илтĕнчĕ тӳрккес сас.

Чумасть-çке Виктор, чупмасть. Утать вăл, утать. Пуçне кăшт пĕкнĕ те куçĕпе ик-виç утăм малалла пăхса урине ума кăшт çĕклерех кăларать, чавса тĕлĕнчен хуçлатнă хулне вылятать, ура кĕле çине ларса пуснă чух чĕр куççи тӳрленет, хăвăртлăх та хйне виçеллĕ кăна. Судья каланине часах микрофонпа пĕлтерчĕç: «Утмăл пиллĕкмĕш номер, Ураваш Викторĕ – К. облаçĕнчен, пĕрремĕш асрхаттару илчĕ». Ăмăртакансем малта пыракан атлет çине, унтан Соломонов судья çине пăхрĕç, хăйсен утти еплине пĕлме тăрăшрĕç. «Ку ухмах кĕрешӳрен кăларса та пăрахĕ», – шутларĕç хăшĕсем. Виктор кăштах вăрахланчĕ те, ăна çийĕнчех Жуковсий хăваласа çитрĕ.

Аякра пăхса тăракан Маскалов ăна: «Лайăх пыран, таса», – тесе сăмах хушрĕ. Хронометрист судья 10

çухрăм тĕлĕнчи вăхăта пĕлтерчĕ: 45 минут. Кун пек утса тухсан ырă теме юрать. Чăтма кирлĕ-ха тепĕр 5 çухрăмне те Ураваш. Халь вăл, хăйне юнанă хыççăн, пĕр хушă Жуковскипе тан пырĕ, кайран хытăрах кайма та юрĕ. Çапла турĕ те вăл. Кăштах канса илсен Ураваш хăвăрт-хăвăрт сывларĕ те хайхи Жуковскирен вĕçерĕнсе тарчĕ.

Миçе çаврăм утнине шутлакан судья тĕлĕнчен иртмессерен тата мĕн чухлĕ ункăламаллине уйрăммăн пĕлтерет: «Çирĕм, вун тăххăр... Вун пиллĕк...». Виктор удмурт ачине çитересшĕн мар пĕтĕм вăйран туртăшса пырать. Жуковский теваскать. Вĕсем халь иккĕшĕ пĕр кăшăлри хире-хирĕç тĕвĕсем пек туйăнаççĕ: пĕри ку енче пулсан – тепри леш енче... Ик çын хушши пĕр пек тăрать – çĕр метр.

«Вун пĕр юлчĕ, ывăлăм, чăт», – тет çаврăма шутлакан хĕрарăм. Манежваррипе виражалла Соломонов утса пычĕ те Виктор ун тĕлне çитсен хĕрлĕ ялавне кăтартрĕ:

– Сире кăларатпăр!

Чĕрене касса çурчĕ çак икĕ сăмах. Викторăн алли лăстăрах усăнчĕ, ик ури, мотор ĕçлеме чарăннă рычак пек, хуллен утăмласа лăпланчĕ.

– Таварăс терĕр-и-мĕн? – сиввĕн ыйтрĕ Ураваш Соломоновран.

– Ан кӳрентер!

– Мĕн сăлтав тупрăр?

– Чупма юрамасть! Ав, пурте сан çине пăхĕç, – терĕ те Соломонов, хăй судья пулнине туйса, манеж варринелле мăнаçлăн уттарчĕ. Виктор та унпах сӳпĕлтетсе тăмĕ. Вăл пĕр хушă утакансем епле пынине сăнарĕха, унтан, çĕнтерӳçĕсем палăрма тытăнсан, хывăнса тăхăнмалли пӳлĕме кĕчĕ те пуçне чиксе ларчĕ.

Дистанци вĕçленнĕ хыççăн Жуковскипе ытти спортсменсем тата Маскалов: «Сана ăмăртуран ним сăлтавсăрах кăларчĕ», – тесе калани çынна лăплантарма пултараймарĕ.

Викторăн тута хĕрри типсе кушăрхарĕ. Пыр темĕнле вут тивнĕ пек хыпать.

Хĕртнĕ тимĕре сив шывпа шăварнă евĕр, халь темскер ĕçсе ямаллах пуль. Столовăй буфетĕнче çынсем эрех илнине курсассăн çак туйăм пушшех вăйланчĕ, пыр ытларах йĕпхĕрте пуçларĕ. «Ман валли пĕр стакан тултарăр», – терĕ Виктор вара çăлăнăç тупнăн буфечицăна.

Каçхи апата каяс умĕн те вăл буфета кĕрсе тухрĕ. Кунта перцовка пур. Çĕр аллă грамм ăна пĕр çăвар сив шыв çăтнă пек кăна туйăнчĕ.

Киле таврăннă чух поезд çинче ресторанпа туслашрĕ çын.

* * *

Надя амăшĕ, Евдокия Еремеевна, кĕрӳшĕ спортпа аппаланнăшăн ăна ăс кĕрейменскер тесе шутлать. Виктор аякри хулана тухса кайни пирки вара: «Хĕрĕмшĕн пурнăç тĕлне пĕлмен çăмăлттай çын лекрĕ», – тесех йăсларĕ.

– Ыр çын çемьене пăрахса тухса каймĕ, – мăкăртатать вăл. – Эрне çитет вĕт – çын çук.

Амăшĕ çапла калани хĕрĕн чунне те шуйлантарса ярать. Чăнах ĕнтĕ, мăшăрĕ ăмăртура чупса çӳренĕшĕн Надя çумне мĕн çыпăçать? Хулара мала тухрĕ ĕнтĕ Виктор, уншăн ăна пыл хыптарчĕç-и? Мĕн пачĕç?

– Ача чух урамра такам та мечĕк хăвласа чупнă пуль, манмалла ĕнтĕ çавна. Ӳссен çын ĕç çинчен шутлаканччĕ, хăйĕн те унăн халь ача ашшĕ пулма вăхăт – вăл «йытă хăвалама» тухса кайнă. Арăмне хисеплекенскер пулмарĕ, авлансан уйăх пурăнман, яла укçа ярса панă вĕт хăй тӳпе ыйтас чух. Пурăнаймаççĕ унта сан укçусăр! Ĕçлеймеççĕ пуль аçупа аннӳ? Колхозра – тырри-пулли килет, килте – анкарти мĕн пысăкăш. Выльăх апачĕ илме тет. Килӳ унта мар халь, килӳ кунта... Сана хисеплекенскер пулмарĕ, Надя.

– Пилĕк кун иртет терĕ те, хăвармасассăн килетĕп терĕ, – кӳтнĕ чунĕпе кĕç-вĕç макăрасла ăнлантарать хĕрĕ амăшне.

– Тата ăçта хăварасса кĕтет вăл? Тарса çӳреме лайăх пуль. Аçу, мăшăрлансан, мана хăйĕнчен пĕр утăм хăварман, пĕр шит уйăрман. Вăрçă тухсан салтака кайнăран çеç ирĕксĕр уйăрăлма лекрĕ. Хисеплекен çын арăмне пăрахса хăвармасть.

– Мĕн тăвас-ха ман: ытлашши калаçмасть те вăл.

– Алăра тытмалла упăшкана.

Амăшĕ сăмаххисемпе Надя тăвăнса çитрĕ, унăн тути чĕтрет, йĕрсе яратчĕ пуль вăл, питне минтер çине тĕртесси кăна юлнăччĕ, çав вăхăтра алăк шалтратрĕ те, Виктор кĕчĕ. Хунямăшĕ ун çине сиввĕн пăхса «шыв сыпрĕ», Надя хавхаланса ӳксе упăшкине мăйĕнчен пырса уртăнчĕ.

Тепĕр кунне Викторăн ниçта та тухас килмерĕ, кантура та кайма шутламарĕ вăл. Куçпа курас килмест производство гимнастики текеннине. Пĕрех хут монтажник ĕçĕ лайăхрахчĕ, унта хăвна шаннине ним шавсăр тăватăн, ĕç пулнине куçпа курса тăратăн та савăнатăн. Кунта çынсене спорта вăйпа туртмалла: вĕсемпе физкультура занятийĕ ирттермелле. Ху тренировка тунинчен çак аппалану чылай кансĕртерех.

Иккĕмĕш кунне Виктор стройтреста тухса уттарчĕ. Рабочисемпе кăнтăр апачĕ умĕн гимнастика ирттерчĕ те секци занятийĕччен вăхăт пур тесе килне таврăнчĕ. Хунямăшĕ ăна алăкранах сивĕ куçпа кĕтсе илчĕ. Виктор ним сисмен пекех хывăнса сĕтел хушшине вырнаçрĕ те шкул учебникĕсене тытрĕ, анчах тĕрлĕ правилăсемпе кăсăклансах пĕтмерĕ, вара вăл «Çăмăл атлетика» журнала уçса стайерсен тренировка меслечĕ çинчен калакан статьяна вула пуçларĕ.

Евдокия Еремеевна каçхине лавка хуралĕнче тăнă хыççăн халь çывăрса тăраннă та çынна валли платье çĕлесе ларать. Машинине кăлтăрттарнă май вăл, вĕчĕхнĕскер, кĕрӳшĕ пуçĕ çине малтахи «шыв тумламне» патлаттарчех:

– Вăй питти çын килте ларать тем?! – пулчĕ унăн сăмаххи.

Виктор чĕнмерĕ. Вăл, тӳррипе каласан, илтмерĕ те. Хунямăшĕ хăй сăмахне кĕрӳшĕн хăлхине кĕртесшĕнех тăрăшрĕ.

– Пурнăç тăвас текен çын кăнтăр кунĕнче хаçат тытса лармасть вăл.

Виктор пуçне журнал çинчен илмест-ха.

– Халь пĕччен мар, çемье çинчен те шутлас пулать. Арăма ĕçлеттернипех нумай пурăнаймăн. Ырă арçын арăм пилĕкне яра куна автармасть. Çемье тĕрекĕ арçын пулмалла, – мăкăртатать талпас чунлă хĕрарăм.

Чĕнмелле-и ăна?! Чĕнсен – вăрçса каймалла... Тумла пĕр вырăнтах патлатса чула та шăтарать. Самаях алтăкланчĕ авă.

– Çынсем ĕçленĕ вăхăтрах институт пĕтерсе инженера тухаççĕ. Агриппина Сергеевна ывăлĕ, Захар, уйăхра пĕрре те 150–170 тенкĕрен кая ӳкермест. Ялта ӳснĕ çав, ĕç тĕлне вĕрентмен сире.

– Хуп çăварна!

Килти çĕвĕçĕ чĕнмерĕ. Чăнах, вăл пĕр самант çăварне хупрĕ. Унтан «шĕвĕр лум» чул çинче каллех таклата пуçларĕ:

– Пурнăç çинчен шутласчĕ. Вĕрентмен сире ялта...

– Переп çакăнпа! – ярса илчĕ сĕтел çинчи чейника Виктор.

Мăнтăркка шăп пулчĕ. Анчах самантлăх çеç-мĕн.

– Малтан ăна туянас пулать-ха хăвăн, çĕмĕриччен... – чĕрене тивертет тĕп килти çын сăмахĕ.

Çын ĕмĕрне пынă пăхăр чейнике Виктор тытса тăма та хал çук пек хуллен лартрĕ, тăвăнса çитнĕскер, вăл тумланчĕ те пĕр сăмахсăрах алăка хыттăн хупса тухса кайрĕ.

– Пӳрте йăтса антарать тем, хăй лартнă çурт пек. Вăя ăçта та пулин кăларас пулать ĕнтĕ, – мăкăртатса юлчĕ хунямăшĕ.

* * *

Стройтрестӑн спорт залне йыш нумай пухӑнмарӗ – пурӗ ҫиччӗн кӑна. Виктор вӗсене штанга ҫӗклеттерчӗ, чуптарчӗ, унтан яшсем сетка карчӗҫ те волейболла выля пуҫларӗҫ. Кунта чӑм шыва ӳкрӗ Виктор. Пӗри те тепри ҫӗнтерсе темиҫе парти вылярӗҫ вӗсем, сисмен те, вун пӗр сехет ҫитнӗ. Ывӑннӑ-ӗшеннӗ ҫамрӑксем килӗсене саланчӗҫ, Виктор та йышпах тухрӗ, кӑмӑлӗ халь ҫемҫелнӗ-ха унӑн, ҫапах та чун піснӗ пӳрте каяс килмерӗ, тройллейбус ҫине ларчӗ те вӑл хӑй малтан пурӑннӑ общежити тӗлӗнче анса юлчӗ.

Лиза аппа пӳлӗмӗнче иккӗн хыттӑнах мар калаҫса лараҫҫӗ. «Аннене темле ӳкӗте кӗртес?» – тет ҫепӗҫ сасӑ. «Ху кӑмӑллӑ пул», – илтӗнет уҫӑ алӑкран хӗрарӑм комендант сӑмахӗ. Ҫак вӑхӑтра пусма картлашки еннелле пӑрӑнакан Виктора пӗри ятран чӗнчӗ – Надя-мӗн. Чӑр-чӑр куҫӗпе вӑл упӑшкине кӑшт шикленнӗн тӗсесе пӑхать: «Ӗҫке ермерӗ-ши?» – тет пулас. Тренировкӑра ӗшеннӗ ҫын, кaҫхи апат та ҫименскер, лӑпкӑ та халран кайнӑн курӑнать.

– Пит нумай тӑтӑн-ҫке, эп ӗҫ хыҫҫӑн киле те кайса килтӗм, ку ҫухалчӗ-ши терӗм, – ҫепӗҫҫӗн калаҫать ҫумри арӑм.

Виктор чӗнмест, сӑмах ваклама юратман ҫыннӑн ывӑннӑ хыҫҫӑн пушшех ҫӑвар уҫӑлмасть. Ҫамрӑк ҫын ҫаплах-ха юлташӗсем патне кӗрсе выртмалла пуль тесе тӑрать.

– Халь вӑхӑт нумай иртрӗ, трамвай та ҫӳреме пӑрахӗ, каяр пуль киле, – ӑшшӑн пӑхса чӗвӗлтетет Надя.

Виктор общежитин ҫӳлти хутне хӑпарма хӑймарӗ, арӑмӗ ӑна хулран тытрӗ... Вӗсем кайнине Лиза аппӑшӗ лӑпкӑ чунӗпе пӑхса юлчӗ.

## Вуннăмĕш сыпăк

Тепĕр кунне стройтреста пырсан куç тĕлне тӳрех Елена Петровна пулчĕ.

– Аха, Виктор, – чĕнчĕ вашават калаçакан хĕрарăм. – Шăпах сирĕнпе сăмах пурччĕ. «Ăмăртура пĕрре ĕç ăнманшăнах эрех курки тытрăм, килте хунямапа хирĕçрĕм, акă ят тиврĕ те», – шутларĕ Виктор хĕрелсе кайса. Анчах Елена Петровна çиллес курăнмарĕ-ха.

– Спорт комитетĕнчен шăнкăравларĕç, – терĕ вăл савăннă пекрех. – Сан çинчен ыйтса пĕлчĕç, тренировка тăвать-и теççĕ.

– Ку енĕпе мухтанаймăп, волейболистсен секцине ертсе пыратăп çеç.

– Сана ăмăртăва хатĕрленекенсен йышне яма ыйтаççĕ. Йĕлтĕрçĕсемпе пĕрле тет-и?

– Эп çăмăл атлет-çке.

– Ăна пĕлеççĕ-ха. Çăва тĕплĕнрех хатĕрленмешкĕн йĕлтĕрпе çӳресе вăй пухтăр теççĕ.

«Мана шанакансем пĕтмен иккен-ха апла, спорт çине ал сулас тени çухалтăр эппин», – хавхаланса ӳкрĕ Виктор.

– Директорпа калаçса татăлнă эпир, атя, кай, тăрăш, – сĕнет Самойлова Ураваша.

Йĕлтĕрçĕсен ушкăнĕ хула тулашĕнчи вăрманта пурăнать. Виктор та пуçтарăнса унта çитрĕ.

* * *

Йĕлтĕрçĕсем вăйлине хăйсем хушшинче «кашкăр» теççĕ. Атăлçи спартакиадине хутшăнма хатĕрленекенсем йышĕнче – облаçри мĕн пур «кашкăрсем» ĕнтĕ: пур вăйлисем пуханнă унта. Хăмаран çапса тунă йывăç çуртăн пĕр пӳлĕмĕнче – сакăр вырăн. Виктор, кайран çитнĕскер, алăкран кĕнĕ çĕрех тăххăрмĕш койка хĕстерсе лартрĕ. Унпа пуç вĕçлĕ йĕлтĕрпе çӳресе тахçанах ят илнĕ Енаевпа Петушков мастерсем пулчĕç. Петушковĕ, вăрăм та хытканскер, пур-çук çĕртенех

каласма юрататъ, çынран тăрăхласси те – çумĕнчех. Енаевĕ, тайăнрахскер, юлташĕ мĕн те пулсан шӳтлĕн çăвар карнă хыççăн, вут çуннă чух кăвар пăтратнă пек, йĕкĕлтесе хушса хума юрататъ.

Тренерĕ – нумай пулмасть кăна институт пĕтерсе килнĕ çамрăк-мĕн. «Пăрçине хамăрах пайтах шӳтерсе пĕçернĕ» текен «ватăсем» ăна килĕштермеççĕ иккен. Çамрăк тренер, «сĕт шăлĕ тăкăннисене» те тренировка умĕн шкул ачисем пек строя тăратса паян мĕнмĕн тумаллине калать те йĕр çине тухсан ушкăна вирлĕн хăвалать. Кунне икĕ хутчен йĕп-йĕпе исленсе таврăнаççĕ йĕлтĕрçĕсем. Пӳлĕмре кăмака тавра кантра карса пĕтернĕ, тарпа йĕпеннĕ çи-пуçа типĕтме унта çакаççĕ; кантра çинче тум пачах та татăлмасть: типме ĕлкĕрни тепре исленнипе улшăнсах тăрать. Ачасем хăш чух нӳрĕ çи-пуçах тăхăнса тухса каяççĕ.

Черетпе дежурнăйсем, техничка пуррине пăхмасăрах, витрепе брикет илсе кĕрсе хăйсемех кăмака хутаççĕ. Çĕрле çывăрма ăшă – ывăннă шăм-шак лăстăр канать; ир енне пӳрт уçă – эсĕ вара икĕ хут утиял айĕнче чĕрĕп пек хутланса выртатăн.

Атăлçи ăмăртăвне хатĕрленекен командăн пĕр тĕллев – малти вырăн йышăнасси. Çав хушăрах кашни йĕлтĕрçĕн хăйĕн пуçра тĕвĕленнĕ «мулкачĕ» пур: пĕри пурне те çĕнтерес шухăшлă, тепри пысăк йышран вăйлăрах пулса спорт мастерĕн нормине пурнăçласси. Пурте вĕсем мал ĕмĕтлĕ, команда пĕрремĕш пулмасан та ху малти улттăмĕш вырăна йышăнсан РСФСР спартакиадин финалне лекетĕнех.

Викторăн тĕллевĕ урăхларах – унăн çăва хатĕрленмелле, ытлашши васкамасăр ярăнса километр шутне эрнере çĕр аллă – çĕр çитмĕле çитермелле.

Каç кăпăш юр çунă та ĕнерхи йĕре хупласа хунă, пырас çул йĕкĕр кункăра пек курăнать. Арçынсем 15 çухрăмлă трассăна кайма тухрĕç, юра вĕсем черетпе ума тухса ашаççĕ. Виктор йĕлтĕрçех мар-ха, вăл – çӳревçĕ, çавăнпа пуçа ӳкмесĕр йĕлтĕр йĕрне пирчелентерекен-

сем хыççăн шăп пырать. Икĕ «кашкăр», Енаевпа Петушков, час-часах кая тăрса юлаççĕ, унтан каллех талпăнса çитеççĕ; юлашкинчен трасса варринерехре вăрăм тăвайккине вирлĕн пĕрĕхтерсе хăпарчĕç те 10 çухрăм пулакан çулпа пăрăнчĕç. Ушкăн вĕсем енне çавăрăнса пăхмарĕ.

Пĕр çулхине çапла пысăк ăмăрту умĕн йĕлтĕрçĕсем питĕ тимлĕн хатĕрленнĕ-мĕн. Пĕри тепринчен вăйлă курăннă – хăшне тĕп командăна кĕртессине татса калама та йывăр пулнă. Тĕрĕслев тренировки умĕн, ăна «прикидка» терĕмĕр, Петушковпа Енаев, ăмăрту тутимасине ытларах пĕлекенсем, халь тĕп тренировкăсем вĕçленчĕç, кăштах канса илме те юрать текелесе «пикник» ирттернĕ. Çамрăксене «сĕрĕмĕ» ытларах тайăнтарнă çав, вара малтанах ĕçкелеме хăнăхнисем тĕрĕслев теринировкинче пурне те пăрахса хăварнă. «Ăмăртура çапах çĕнтеретпĕр», – вĕчĕрхеннĕ серепене лекнине туйнă çамрăксем. Стартчен кăштах вăхăт пурха ĕнтĕ, çав куна кĕтсе илме пĕлмелле çеç. Петушковпа Енаев мунчана кайса питĕ вăйлăн çапăннă та мухмăр-сухмăрăн йăланкине те хăварман. Унтан каннă та юлнă пек виçĕ кунĕнче йĕлтĕрпе хуллен уçăлаласа çӳресе шăм-шака стартчен кирлĕ пек хатĕрлеме пултарнă. Ытти çамрăксем вĕсем хыççăн кăшт каярах мунча кĕнĕ, каярах ура çине тăнă. Ăмăртăвĕнче вара пĕр дистанцийĕнче Петушков, тепринче Енаев çĕнтернĕ, вĕсемех эстафетăра та чупнă.

Çакăн çинчен халь йĕлтĕрçĕсем пĕр-пĕрне час-часах юмах пек каласа параççĕ.

Паян та çав ик «кашкăр» çур çултан иртсенех каялла пăрăнчĕ.

Ураваш малтисем хыççăн 15 çухрăм пулакан йĕрпе тапаçланать. Акă вĕсене чи аякри кукăртан кил еннелле пăрăннă тĕлте тренер хирĕç пулчĕ, вăл хĕрсене вĕрентнĕ çĕртен кунта тӳррĕн тухнă иккен. «Вăрах уçăлса çӳретĕр, ачасем, вăрах çӳретĕр, хаваслăнрах кастармалла, вун çухрăма çитиччен сехете яхăн вăхăт ирттернĕ», – вăрçать вăл сехечĕ çине пăхса илсе. Ачасем

кун хыççăн малтанхинчен уçăмлăрах кайма пуçларĕç. 15 çухрăма вĕçлесен хăшĕсем базăна кĕрсе глюкозăпа пылаклантарнă вĕри шыв ĕçрĕç, хăшĕ кĕмерĕ те – пурте тепĕр çыврăма вĕçтерчĕç.

Пĕрремĕш кун çакăнпа çитет тесе Виктор юлчĕ те столовăя апата кайрĕ. Петушковпа Енаев кунта-мĕн. Вĕсем апат илнĕ те çиме хатĕрленеççĕ. Яшка тирĕкĕпе юнашар – ак пăх та кур! – ик стакан хĕрлĕ шĕвек ларать. Алла кашăк тытиччен çав стакансене ӳпĕнтерчĕç çаксем. Викторăн çын ĕçнине курсан темĕнле хăй сисмесĕрех пыр ярăнчĕ. Кăçал йĕлтĕрпе пĕрремĕш кунах çавăн чухлĕ çӳресе шăм-шак ĕшеннĕрен-ши, мĕнрен килет-ши ку? Ывăннипе организмра кислотность теленни – йӳçек япала – чакнă иккен, çавăнпа халь ăша шыв та мар, чей те мар, йӳçĕ ярас килет. Татах «усал таврăнса килни» пулать пулас, пĕрре ĕçсе ирттерсе янă хыççăн ăшра йӳçекпе кĕрешесси пуçланать, çапла вара каллех сĕлеке парĕ йӳççине кĕтме тытăнать; ĕçке ярăнас мар тесен шăпах çав туйăма чăтса ирттерсе ямалла та...

– Талонпа илме пулать унта, – терĕ тин кĕнĕ çыннăн шухăшне сăнран пăхсах риснĕ Петушков.

– Эпĕ ĕçместĕп, – пăхасшăн пулмарĕ Виктор ун еннелле.

– Ан калаç, куçунтанах паллă. Ав, буфетра сутаççĕ унта. Кӳр талонна, хам илсе парам.

Пыр хĕртет çав, пыр йĕкĕлтенет Викторăн.

– Сипленĕпĕр-и вара? – терĕ Ураваш тулли стакана тытсассăн.

– Кам ăçта ухмаха тухать! – кулать Петушковĕ.

– Ик кунхи талон пĕрре уяв тума çитмест те, мĕн тăвас тен, çырлахăпăр, – шăлне йĕрет Енаевĕ.

* * *

Мăнтарăн çут çанталăкĕ! Пурне те пĕр пек валĕ памастăн иккен эсĕ! Çĕр çын çинче кам та пулсан вăйлăрах, пин çын çинче кам та пулсан тавçăруллăрах,

çивӗчрех... Ăсли те, хастарри те, темли те пур йышра. Çуралнă чух çынна пурне те пӗр пек тӳпе тыттармастехмӗн çут çанталăк. Шутласа тăмасăр, камне-мӗнне пăхмасăр ывăçла-ывăçла пӳрет вăл хăй ирӗкӗнчен килнине. Пӗрне ытларах, теприне сахалрах лекет вара. Пӗрне пӗр япала, тепӗрне тепӗр япала çакланать. Пурри те тан мар. Йышра çав-çавах пӗри вăйлăрах, тепри имшертерех. Имшерри вăйли шайне тапăлтатса хăпарсан вăйли тата çӳлерех кармашăнать. Никама, ниме пăхман çут çанталăк, эсӗ хушниех-и çакă? Тата акă тахăшӗ хăйне пӗр-пӗр валӗ ытларах лекнине асăрхамасть те, курмасть те, ăна хăй «миххинчен» кăлармасăрах пăчлантарать. Тахăшӗ курсан та хаклама пӗлмест, тытмасăр хунă вырăнӗнчех хăварать.

Çакăн пекки те пур: çын хăйӗнче пӗр пултарулăх ытлараххине тавçăрса илет те ниме пăхмасăр тӳрех çӳлелле талпăнать, анчах унта çуталма ӗлкӗреймесӗрех сӳнет. Пускăч çуккипе патлатса анакан та пӗрре мар. Хăй ăсталăхне кăтартни, ăна аталантараканниех тӗкӗ памалли тепӗр япала çукран ишӗлет. Пӗри теприне ытлашши иртсе каясран хăраса эсех çапла хушмастăн-и, çут çанталăк? Ыррипе пӗрле сиенлине те парса хуман-и эсӗ, никама итлесе тăманскер?!

Тавлашмăпăр, паян тайăнраххи ӗлӗк патвар пулнинчен çӳлӗрех, паян капмаррăн палăрнипе танлашӗ ӳлӗм пӗчӗрехи те. «Çут çанталăкра пурне те пӗр-пӗринпе танлаштарса пăхмалла», – тенӗ-çке ученăй. Йышсăр палăрмасть лайăххи. Халăх шайне пула çӗкленет çӳлти. Кулленхи пурнăç аталанăвӗ ырри патне илсе çитерет. Вăл та, ку та апла тейӗпӗр. Çапах та мӗншӗн-ха вара усаллине мар, хăйӗн хакне-вăйне çапса хуçать этем тепӗр чух? Çунтарсах, аркатсах ярать чи ырă палăрăмне те. Хăй курса-пӗлсе тăнă çинчех пӗтерет. Вăйли вара имшерри шайне шăп анса ларать.

Кӗлетке-ура тӗрекӗ, шăм-шак çирӗплӗхӗ, чӗре-ӳпке тасалăхӗ – пӗтӗмпех пӳрнӗ тăван тавралăхӗ Виктора. Тытăннă ӗçе вӗçне çитермесӗр пăрахас çук хал, арман

чуль çĕклеттерсен ăна, куç хуралса килнине пăхмасăр, кирлĕ вăхăтчен ĕнсе çинче тытса тăма чăтăмлăх, тухман япалана шăлпа çыртса тăпăлтарас пек тарăхма пултарасси, çĕнтерме май çук пеккине çавăрса çапма ирĕклĕ чун хăвачĕ панă хăй халăхĕ ывăлне. Мĕн хурапа мĕн шуррине ăнланса илесси те пур унăн. Пĕр çитменлĕх çакланнă çак тĕрек çумне: çын хыççăн каймасăр чăтаймасть вăл. Çын хаççăн кайнипех вăл спорт мастерĕ ятне илнĕ-ха. Ун чух ертсе çӳрекенсем Савельевпа Клименков пулнă. Халь ак пĕччен тренировка та тăваймарĕ Виктор. Çумра çавăнтах урăх çулпа пыракансем тупăнчĕç: общежитире – Олег, Вася... Авланчĕ – урлă каска çул çинче выртать. Хĕрӳ тренировка йышне ертрĕç кăна – Петушковпа Енаев таçтан килсе тухрĕç. Çаксем шăпах çын мĕн енчен çемçине сисрĕç темелле, хăйсен çулне хупларĕç çеç мар, теприне те тӳрĕ йĕртен пăрчĕç.

Викторĕ пĕчĕк ача-им тата?! Мĕн килсен мĕн пуласса пĕлмест-им? Пĕлет, пĕтĕмпех пĕлет. Анчах хăйне ыр тăвас тенĕ çын кăмăлне хирĕç пыраймасть вăл, çавна пулах алла курка тыткаларĕ. Акă ăçта этеммин кăпшаклăхĕ. Тепри пулсанччĕ те ун вырăнĕнче...

* * *

Пĕрре тĕсени нумайлăха асра юлать. Мускав университечĕнчи студенткăн Çĕн Çăкасар ачи пĕр-пĕр пысăк ăмăртура мала тухнине тепре те курас килет. «Ăсталăхне ӳстерет пуль-ха», – шухăшлать ун пирки Земфира. Хĕрĕн хăйĕн те ĕмĕтре Олимп хĕлхемĕ тĕлкĕшет.

Паян вĕсем баскетболла выляс терĕç. Çăмăл атлетсене шăм-шака вăйлатма ун пек вăйă пит кирлĕ, уйрăммăнах çӳллĕшне сикекенсемшĕн усăллă.

Секци пуçланиччен сехет малтан, вуламалли кĕнекине хул хушшине хĕстерсе, спорт залне кайрĕ Земфира. Унта халь фехтовальщиксем иккен. Вĕсем сетка карнă та волейболла çапаççĕ. Пĕр енче пилĕк

çын, тепринче – улттă. Пĕр хĕрĕ Земфирăна: «Пирĕнпе ермешĕр-ха», – тесе чĕнчĕ те, Вутланова хаваспах площадкăна тухрĕ. Малтан вăл мечĕке çапса яма ансат чух кăна тĕкĕнкелерĕ-ха, унтан, вăйă хĕрсе пынăçемĕн, йышри çын самаях чĕрĕлчĕ. «Хĕрсем, выляса ярăпăр-и çавсене, çĕнтерейместпĕр-и, хăюллăрах», – тесе икĕ енĕ те хăпартланчĕ те мечĕке çĕре ӳкермесĕр пĕрре карăнтăкăн пĕр енче, тепре тепĕр енче вĕçтерсе тăчĕ. Сиксе çапма та, пĕшкĕнсе илме те лекрĕ вăййăçăн. Çăмăл атлетсен секци занятийĕ пуçланиччен хĕр ăшăрхама çеç мар, лачкам тарах ӳкме ĕлкĕрчĕ. Çĕнĕ ушкăн пуçтарăнса тĕрлĕ хусканусемпе авкаланнă хыççăн площатка варрине баскетбол мечĕкĕ тухрĕ. Командăра пиллĕкшер çын, пурĕ виçĕ команда: выляса яни «тыла» юлать, унта вĕсем валли гимнастика стенисем пур – пыр та çан-çурăмне хăв тĕллĕн хуçкала. Шăпа телейлĕ пулчĕ: Земфирăсен вăййа малтанах кĕме лекрĕ.

Çӳлти мечĕке çивĕччĕн сиксе тытать чăваш хĕрĕ. Ăна карçынкка патнелле сиктерсе пырать те пăрахать, ах, лекмест-çке! Ача чух баскетбол мĕнне пĕлмен çав, ялти шкулта ку вăййа вĕрентмен. Çамрăк чухне хăнăхманни халĕ те палăрать: сайра лекет мечĕк карçынккана. Апла пулсан, командăна кая хăварас мар тесен, çивĕчрех çаврăнкаламалла, ума ытларах тухмалла, мечĕке карçынкка çине вуннă пăрахсан, вăл пĕринче те пулин кĕмеллех ĕнтĕ. Акă, Земфира ывăтрĕ, мечĕк ункă тăрăх куса каялла пăрăнчĕ, вăл халь «тăшман» аллине лекме пултарать. Земфира маларах сикме ĕлкĕрет, мечĕке аякка илсе тухса щит еннелле тепре пăрахать: çăмха, сĕрекене лекнĕ карас пулă пек, карçынкка шăтăклине хускантарса хӳрене чăмать.

Вылякансем чăм шывра. Земфирăн майкăна хыв та пăр. Çӳç тăрăх çурхи тумла пек тар патлатать. Çирĕм минут иртнĕ тĕле шут 26:19 пулчĕ, Земфирăсем çĕнтерчĕç. Выляса янисем вырăнне кĕтсе тăнисем тухаççĕ. Кун пек чух чĕлхерен нихăшĕ те ӳксе юлмасть.

– Мĕн чухлĕ фора памалла сире? – тет вăййа тин кĕрекен ушкăнран пĕри.

– Мечĕке тытма хăнăхрăр-и-ха эсир? – йĕплет çĕнтернисен йышĕнчен тепри.

– Хашканипе чĕлхĕрсем тухса кайнăран калатпăр. Канасшăн мар-и кăштах?

– Эпир тин хĕрсе çитрĕмĕр-ха, сире халь икĕ хут пысăкрах шутпа çĕнтеретпĕр.

– Командăра вăйлатма пĕр-ик атлетне улăштармастăр-и? Ав, Земфира халран ӳкнĕ пек курăнать.

– Хамăрăн йышран пĕрне те сирĕннипе улăштармастпăр, – хирĕçлет чăн-чăн баскетболистка пекех çӳллĕ Вера Горчакова.

– Ну, тавлашса пĕтрĕ-и? – тет судья, выляса янă командăри çамрăк. – Мечĕк – çаврака: вăл хăш карçынккана ытларах сикнине эп сăнăп. Пуçларăмăр-и?

Каллех тăлт-тăлт-тăлт, каллех тĕпĕр-тĕпĕр. Пĕрре пĕр енне, тепре тепĕр енне куçаççĕ хăма урай тăрăх урасем. «Ха! Хай!» – илтĕнет сасă. Тăпăрти пĕр мăшăр ура тăлт-тăлт турĕ те хыттăнрах пусăнчĕ: пит çӳле сиксе илчĕ иккен. Çын асăрхаса юлмалла мар кĕске шăплăха çурса шăхлич янăраса каять: мечĕк карçынкка витĕр тухнă! Каллех самант çеç шăп, каллех мечĕк вĕçет, пиçĕ те йăрăс пӳллĕ хĕр, пилĕкне илемлĕн авăнтарса çӳлелле вирлĕн сикет...

Куçпа пăхмасăр хăлхапа итлесех ăнланма пулать пуль баскетбол вăййине. Сас-чĕвĕпе хускану вăйă епле пынине каласа парать. Тĕнче çутине курман суккăр çын та вăййа тăнласа киленме пултарĕ...

Земфира хальхинче ултă мечĕк кĕртрĕ, пĕрне штрафран, пурĕ вун пĕр очко кӳчĕ командăна. Вĕсем каллех çĕнтерчĕç.

– Эй, эсир тахçантанпах палланăскерсем-иç, – терĕ Горчакова «тылран» кĕнисене. – Хăш çыранта хĕвелпе пиçсе хĕртĕнтĕр? Вăрттăнлăхсем шухăшласа кăлартăр-и?

Шăхличĕ сасси кĕскен кăна илтĕнет те, мечĕк урайĕнче тăлт-тăлт сиксе вăййа кĕрет, вăл вара часах пĕр çын аллинчен тепĕр çын аллине куçать...

## Вун пӗрмӗш сыпӑк

Пироне, ҫынна кӑштах тӑрӑхланӑ пекрех пӑхакан сӑнлӑ йӑрӑ господин, МОК ларӑвӗнче каламалли докладне ҫырса хатӗрленӗ ӗнтӗ. Вӑл мӗн сӗнесси пӗр хӑйӗнчен ҫеҫ килместь темелле: хальхи вӑхӑтра МОК йышӗ куҫ кӗретӗнех пысӑкланса кайрӗ: ҫӗр вӑтӑр ҫӗршыв ытла унӑн пӗр тан праваллӑ членӗ шутланать; эппин, ӑмӑртусене хутшӑнакансен шучӗ те пӗр вӑйӑран тепӗр вӑйӑра йышланса-йышлансах пырать; кур ӗнтӗ, миҫе пин ҫынна хваттере вырнаҫтармалла, ҫитермелле, ӑмӑрттармалла. Тапратса яр-ха стартран, калӑпӑр, пилӗк ҫӗр ҫынна пӗр харӑс – май ҫук; хайхи вара чылай енпе темиҫе ушкӑна пайласа уйрӑмшар йышпа тупӑштармалла, ҫивӗчреххисене тата тепӗр хут вӑй виҫтерме лекет. Медаль илес текенӗн хайхи пӗр дистанцирех икӗ е виҫӗ хут, чылай чух ытларах та, кӗрешмелле килсе тухать. Ку вӑл спортсменӗшӗн ҫеҫ мар, ӑмӑртӑвне йӗркелекенсемшӗн те самай чӑрмавлӑ. Ним те калаймӑн, «гигантизм» текен сӑмах Олимп хуҫисене хытах пуҫ ҫӗмӗрттерет. Ҫак йывӑрлӑхран ҫӑлӑнас тесе спорт ҫыннисем вӑйӑсен программине пӗчӗклетме, хӑшпӗр номерсене кӑларса пӑрахма шутлаҫҫӗ те ӗнтӗ. Епле енсене кӗртес ҫуккине уйрӑммӑн тӗпчесе палӑртма ятарласа комиссии йӗркеленӗ, унӑн членӗн, Пироне господинӑн, куҫӗ тӗлне королева шутланакан ҫӑмӑл атлетикӑн номерӗсенчен сӑхса пӑрахма чи малтан марафон тата утларӑш лекрӗҫ. Марафон тенинче, 42 километр та 195 метра чупас чух, спринтри пек темиҫе хут ӑмӑрттарма та ҫук; кунта тӳрех финал пулнӑран кӑшт начартарах атлетсем дистанцире тӑсӑлса каяҫҫӗ те самаях хыҫа тӑрса юлаҫҫӗ, тата вӗсенчен чылайӑшӗ ҫула вӗҫлемесӗрех чупма пӑрахать, хайхи вара вӑйӑ интересӗ те хавшать. Утларӑш пирки те ҫавнах каламалла. Иртнӗ Олимп вӑййинче, авӑ, 50 ҫухрӑма утнӑ чух, Пиронене хӗпӗртеттерме совет спортсменӗ Авилов та ҫул айккине пӑрӑнса тӑчӗ; Итали спортсменне, малтан лайӑх пынӑскернех, утас меле пӑснӑ тесе

дисквалификацилерӗҫ – утса ҫитрӗ тесе шутламарӗҫ эппин. Ҫакӑ вӑл, Пироне шучӗпе, Вӑйӑ пахалӑхне те хавшатать. Спорт мелӗпе утасси тата пур ҫӗр-шывра та аталанайман-ха. Ун пек ӑмӑрту пурри ҫинчен чылай ҫӗрте пӗлмеҫҫӗ тесен те юрать. Апла пулсан унпа Олимп программине пысӑклатма кирлӗ те мар. Пироне хӑй шухӑшне ҫирӗплетме хӑш Олимпиадӑра миҫе атлат дистанцие вӗҫлеменнине, миҫӗшне судьясем чупать тесе кӑларса пӑрахнине пӳрне хуҫсах шутланӑ. Ҫак госпдинӑн чунне уҫса палӑртас пулсассӑн тата ак мӗне асӑнмалла: СССР, ГДР, Польша, Румыни, Губа атлечӗсем ҫине-ҫинех хисеп пусми – пьедестал – ҫине улӑхни, ҫав вӑхӑтра вӗсен гимнӗсене янраттарни ӑна питӗ хытӑ йӳҫӗхтерет. Ҫавӑнпа Пироне господин хӑй калассине, Олимп программи ытларах ҫӗр-шывсенче аталаннӑ спорт енӗсенчен тӑмалла тесе ҫыпӑҫтарӗ.

Хӑна ҫурчӗн уйрӑм пӳлӗмӗнчи мартац ҫинче лӑпкӑн выртнӑскер, ҫак ҫын хуллен те васкамасӑр тӑчӗ те ҫемҫе пушмакпа шалпар пиншак тӑхӑнса ҫӑвӑнмалли уйрӑма тухрӗ; куҫ кӗски ҫине пӑхсан вӑл хӑлха таврашӗнчи вӗтӗ-вӗтӗ шурӑ ҫӳҫне хырмалла пулнӑ-ҫке тесе аллипе чӗпӗткелерӗ; унтан пӳлӗмне таврӑнсанах телефонпа парикмахерскине шӑнкӑравларӗ. Ҫӳҫ каснӑ ҫӗрте ҫын пуррипе ҫуккине ыйтса пӗлчӗ вӑл, хӑйне черете ҫырма хушрӗ, калаҫаканне йӑпӑлтиллӗн тав турӗ те васкамасӑр тумланма тытӑнчӗ. Пӳлӗм алӑкне питӗрсе коридора тухсан кӳршӗри джентльменпа кӑмӑллӑн сӑмахласа илчӗ; ҫавӑн пекех пусма картлашкипе аннӑ чух швейцара шӳтлерех сӑмах хушса сывлӑх сунчӗ; ку вӑхӑтра хӑйне хирӗҫ хӑпаракан ҫына, МОКӐн СССРтан суйланнӑ членне тӗл пулсан самантрах сивлекленчӗ, апла пулин те ӑшри кӑмӑлне палӑртмасӑр ӑна хирӗҫ йӑл кулса пӑхрӗ. Ҫӳҫ кастармалли салона вӑл чунри хаваспах кӗчӗ-ха, хура уссиллӗ арҫын парикмахерпа, хаччипе пӗрре кресло ҫинче лӑпкӑн лараканӑн ҫӳҫне тикӗслесе, тепре сывлӑшрах хач-хач тутараканскерпе, шӳтлӗн сӑмахларӗ; ҫӳҫ касакан мастер ун ҫине

пăхмасăрах пĕр минут кĕтме лекет тесен алăк патĕнчи канмалли креслăна вырнаçрĕ те умри сĕтел çинчи журнала тытрĕ. Ку «Прически» текен «Мода» евĕрлĕ кăларăм пулчĕ иккен. Çӳçĕпе мухтанма пултарайман ватă Пироне кĕнекене çийĕнчех каялла хучĕ. Парикмахер хаччине çаплах хач-хач вылятса пĕрре йăрăм-йăрăм кăвакарнă хулăм çӳçе, тепре умри трюмо енне тинкерсе хăй ĕçне тăвать. Пироне те çӳç касакан ăстапа пĕрлех пысăк куç кĕски еннелле пăхрĕ: ав, лăпкă сăнлă та чĕрĕ куçлă çын, пĕр аллăсене çывхараканскер, хыçра черет кĕтекене тĕкĕр витĕр тĕсет. «Вăт, çăва патне кайманскер, аçа çапасшĕ», – тарăхрĕ Пироне СССР журналистне, Пахомова, палласассăнах.

Пресса çыннине Пироне икĕ ушкăна пайлать: пĕрисем – ăна кирлисем, ăна пулăшакансем, теприсем – ăна хирĕçлисем, ăна путарма тăрăшакансем. Пахомов, пĕр иккĕленӳсĕрех, Пиронене хирĕçлисен йышĕнче шутланать, шăпах çав çын алă пусса кăларакан хаçатра Пиронене килĕшмен материалсем пичетленеççĕ. Пахомовпа леш Клименковах Олимп программи пирки хăйсем майлă калаççĕ. Вĕсен сăмаххипе, çăмăл атлетикăра мар, спортăн ытти енĕсенче программăна ӳстерсе янă иккен, шăп та шай Пироне кăмăлланă çĕр-шыв атлечĕсем ытларах медаль илекен енсене пăрахăçлаттарасшăн çавсем! Халь каллех темле статья çырса Пироне позицине хавшатаслăн ĕнтĕ Пахомов. МОКăн СССРтан суйланнă членĕпе пĕрле паллă спорт журналисчĕ те сессие килни ĕçлĕ господина самаях канçăрлантарчĕ. Пахомов, ăна паллаканскер, çӳç касакана укçа тӳленĕ хыççăн пĕр сăмахсăрах тухса уттарчĕ. Кайтăрах-ха вăл, таси паха, анчах чун пăлханни иртмест-ха. «МОК членĕсенчен чылайăшĕпе калаçнă, вĕсен шухăшĕсене пĕлетĕп тесе хăйне йăпатать Пироне, çав хушăрах халь вăл ăна хирĕçлекенсем те пуррине чухлать.

...Ларăвăн кун йĕркинче пĕрремĕш ыйтупах самай тытăнса тăма лекрĕ. Хăйсен ирĕклĕхне тупнă виç çĕр-шыва МОК йышне пĕр сăмахсăрах илчĕç-ха, тепĕр

икӗ патшалăха вара, Пироне шучӗпе, тахçанах МОК çемйинче пулмаллискерсене – Кăнтăр Родезипе Кăнтăр Африка Республикисене – апартеид хуçаланнине палăртса члена илмерӗç. Çав çӗр-шывсенчи вырăнти хура ӳтлӗ халăха пусмăрласа тăракан шурă ӳтлӗ çынсем ăмăртусене хутшăнма мар, стадионсене те кӗртменнине ӗнентерсе паракансем тупăнчӗç-ха каллех. Çынна ӳчӗ мӗн тӗслине кура хӗсӗрленине тăрă шыв çине кăларни Пироне господина та асăрхануллăрах пулмалли çинчен аса илтерет. Çавăнпа вăл хăйӗн докладне Олимп принципăсене çирӗплетекен тезиссемпе шăп çеç меллӗн çыхăнтарса каларӗ. Ун сăмахне пӗр сассăр та тимлӗн итлерӗç, хыççăн шавласа та каймарӗçха, анчах сасăлаттарса çирӗплетме те васкамарӗç. Кăштахран пӗри, унтан тепри калаçа пуçларӗ те, СССР представителӗ, МОКăна вице-президенчӗ сăмах илсе докладра сӗннисенчен хăш-пӗр енсем шăпах Олимп принципӗсемпе килӗшсе тăманнине палăртрӗ. Вице-президент Олимп программине халăх пурнăçӗпе таччăн çыхăннă, халăх хăй тахçантанпах ăмăртнă енсене чи малтан кӗртмеллине асăнчӗ. Тӗслӗхшӗн вăл совет спортсменӗсем мӗн шутланине – Клименков статйипе Вутланова çырнисене те – илсе кăтартрӗ. ГДР представителӗ, унтан Итали çынни те халăхсем хушшинче сарăлса çитмен, анчах уйрăм çӗр-шывсене юри мала кăларассишӗн кӗртнӗ номерсене хуратмалли çинчен каларӗç, çăмăл атлетикăра утларăшпа марафона та çитес вăйăсенче кун памаллах терӗç. Пысăк йыш шăпах çак шухăш майлă алă çӗклерӗ те ӗнтӗ. «Ăçталла каять хальхи тӗнче? Тинтерех ирӗке тухнă халăхсем Совет çӗр-шывӗн ура пуссине пусаççӗ-çке!» – тесе тарăхать Пироне.

СССР журналисчӗ Пахомов вара лару пӗтнӗ хыççăнах Клименков патне 20 тата 50 километра утасси те программăра юлни çинчен пӗлтерсе телеграмма çаптарчӗ.

Чуна канăç паман ыйту пирки ырă хыпар илсенех Совет çарӗн Тӗп спорт клубӗн аслă тренерӗ хавхалан-

са ӳкрӗ. Утларӑша Олимп программинче хӑварнине палӑртса: «Ачасем, ку вырсарни кун уҫӑлма тухса каятпӑр», – терӗ вӑл. «Каяс ҫул тӑршшӗ ҫирӗм ҫине аллӑ хушнӑ пек, ҫитмӗле ҫиттӗр», – сӑмахларӗ чӑрсӑрланнӑ Шалимов та. Нихӑшӗ те хирӗҫлекен пулмарӗ. Марафонецсем те хӑйсен ҫул инҫӗшне ытлашшипех юртса тухма килӗшрӗҫ.

Хӗллехи шоссе ҫуллахинчен пачах та кая мар тикӗс туйӑнать: машинӑсем вашлаттарса иртеҫҫӗ, вӗсем хыҫҫӑн халь-халь ҫил-тӑман тапранас пек вӗтӗ юр пӗтӗрӗнсе-ҫавӑрӑнса юлать. Ҫав вӗтӗ юр, ҫӑнӑх пек, ҫул урлӑ йӑрӑм-йӑрӑм выртать. Ҫуллахилле шӑрӑх мар, сывлама уҫӑ, тусан ҫук – чашлаттарса кӑна пыр васкавлӑ утӑпа. Питӗрех брюкипе куртка, ҫӑмран ҫыхнӑ чечек ҫупкӑмӗ тӗслӗ калпак тӑхӑннӑ атлетсем ҫул пуҫламӑшӗнче тарланӑ пек те пулчӗҫ; кайран, утӑм хӑвӑртлӑхӗ лӑплансан ӗнтӗ, тарлани те туйӑнмарӗ; йыш пӗр ушкӑна пӗтӗҫсе камартипех вашлаттарса пырать. Умра, пӗр кӑкӑр чухлӗ малта, е Шалимов, е Авилов вичкӗнтерет. Шалимовӗ чакӑр куҫӗпе малалла ҫивӗччӗн тинкернӗ; Авиловӗ, ҫинҫе те вӑрӑм пӳллӗ, сӑнран ача пек туйӑнаканскер, таҫта ҫитсе тӑрӑнас пек ыткӑнать. Клименков хӑй те «уҫӑлма тухнӑ». Вӑл, хыҫрискер, ҫамрӑкскcенчен юласшӑн мар чавтарать. Вӑрӑм ҫул шӳтпе, пӗр-пӗрне хӗтӗртсе илнипе кӗскелет – пурин те ура ҫӑмӑллӑн илӗнсе пусӑнать. Халь ҫине ытларах манежра хӑнӑхнӑ та кун пек инҫе ҫула тухманни нумай пулать, ҫавӑнпа ирӗкри утӑ пушшех кӑмӑла уҫӑлтарать. Пӗр майлӑ вӑтӑр пилӗк ҫухрӑма вӗсем выляса кӑна тенӗ пек килчӗҫ, ку тӗлте столовӑя кӗрсе кӑшт ҫырткаларӗҫ, шӑпах кӗтмел ҫырли кӗселӗпе хура кофе пулчӗ, тепрер ҫӑвар – аш татӑкӗ.

Апат вӑхӑтӗнче ал-ура йывӑрланнӑ пек туйӑнчӗ, шӑм-шак та ӑша вӗри янипе кӑштах ӑшӑрхарӗ. «Киле май темле ӳркев лаша та хытӑрах каять теҫҫӗ. Малтан хыҫра пынисем, эсир халь пире тархасшӑн пӑрахса ан хӑварӑр», – терӗ шӳтлерехӗн ҫамрӑкрах атлетсене Юрий Шалимов. Анчах каялли ҫул шӳте часах

путлантарчĕ: хирĕç вĕрекен çил тылласа тăкасла кастарать. Килнĕ чух майлă пулнипе ун пирки шутласа пăхман çав вĕсем, тата халь çине çакнашкал инçе çулра пулманни те финиш епле килессине мантарнă. Олимп ĕмĕчĕпе хавхаланса ӳкнĕскерсене паян вăл-ку пачах шухăшлаттарман. Каскăн çил çăмăл тум витĕр кĕрсе тӳрех кăкăра ярса илчĕ, чĕр куççипе пĕççе чĕпĕте пуçларĕ. Çил вăрман тĕллисенче кăшт лăпланать пек, уçă вырăнсенче вара, уйрăммăнах тӳпмре е анлă çырма тăрăхĕнче, чарса тăмаллах вĕрет. Хĕрĕх çухрăм утнипех çитмест-ши çула тухнисене? Ара, иртен-çӳрен автобуса кĕрсе лар та, сана ăшă та канлĕ пулĕ! Тренировкăра палăртнисене пурнăçламанни ăмăртуран тухса ӳкнĕ пекех шутланать вăл, çавăнпа кун пек çăлăнăç тупас тенĕ шухăш нихăшĕн ăшне те пырса кĕмест. Чим, Клименков, ав, шофера тем каласа алă тăратать, автобусĕ ку чарăнмарĕ, пĕр тăхтамасăрах иртсе кайрĕ. Клименков каллех каялла пăхать. «Хаçат кирлĕ, ачасем, кăкăр тĕлне хаçат хурас пулать», – тет вăл çӳревçĕсене. Пĕр автобус вĕсене лартас шутпа чарăнчĕ, анчах çӳревçĕсенчен нихăшĕ те ларас текен пулмарĕ; телее, кунта пассаржирсене сутма илсе тухнă çĕнĕ хаçат пулчех. Клименков кашнин валли пĕрер хаçат туянчĕ те, ачасем çавна питлĕх пек сарса куртка айне, кăкăр тĕлне чикрĕç. Акă, атлетсем халь каллех васкавлăн та вирлĕн илтерсе пыраççĕ, вичкĕн çиле пĕçĕ хăнăхрĕ пулмалла, вăл мунчара вĕри милĕкпе ăшăланă пек кăна чăшăлтатать, кăкăр – панцирьпе витнĕ пек хӳтлĕхӳре.

Автобуспа та машинăпа пыракан пассажирсем çулри «мыскараçăсене» çитмĕл çухрăм хушши утта вылямалла кăна тухнине тавçăрмаççĕ пулин те е çăвар карса, е çумри юлташне «ха, кур», – тесе тинкереççĕ; сехетне тăхăр çухрăм утăмлакан çӳревçĕсем машина хыçне çул айккинчи тӳр ларакан йывăççем пекех вĕлтлетсе юлаççĕ. Хирĕç вĕрекен çил утăма та кĕскетрех çав, халĕ атлетсем велосипед спортĕнчи пек е тахçан çар пурнăçĕнче те усă курнă мелпе – черетлĕн ума тухса – пĕр пĕрне ертсе пыраççĕ.

Утăмлаççĕ атлетсем, машина чуппишĕн вĕсем вырăнтан тапранман йывăçсем пек кăна туйăнаççĕ-ха, пĕр ялтан тепĕр яла кайма тухнă çуран çынна вара хăйсем юпа пек тăратса хăвараççĕ. Вĕсемшĕн çак çул тăрăхĕн вĕçĕнче, умра, Олимп каçалăкĕн чикки пулнăн туйăнать. Олимп хĕлхемĕн кăварĕ çак ачасен чунне пырса ӳкнĕ çав. «Виктор Ураваш, хыçа тăрса юлмарăн-и эс? Хăвăн сарлака кăкăрупа çиле кастарма черет çитнĕ май ума тух-ха», – тесе аса илтерекен те пур çакăнта. «Ураваш ăçта пирĕн, мĕншĕн çыру та çырмасть?» – тесе ыйтрех тренертан Шалимов. «Пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçсан çĕнĕ çĕрти пурнăç йăлийĕркине çын тӳрех ăнланса пĕтеймест, çавăнпа Виктор та çартан таврăннă хыççăн урăх йышра «çĕтсе кайма» пултарнă», – тесе ăнлантарчĕ тавçăруллă тренер. «Вăл ăçта пурăннине пĕлсе ун патне çыру ямалла», – тет сарă çӳçлĕ Шалимов. «Тренировкăн çĕнĕ меслечĕсем çинчен те пĕлтермелле ăна», – хушать чи çӳллĕ Авилов та ачанни пек çинçерех сассипе.

Малтан çăмăллăн илĕнсе пусăннă ура майĕпенмайĕпен йывăрланчĕ те, утă ват çыннăнни пек кĕскелсе ларчĕ, юлашкинчен чĕрĕ вăй-хал та çухалчĕ. Çапах утăмлаççĕ, сăлая улăштармасăрах – урана умра кĕле çине лартса, кĕлетке тĕлĕнче чĕр куççине тӳрлетсех пыраççĕ атлетсем.

Çитмĕл çухрăма çитмешкĕн ытла инçе юлмарĕ ĕнтĕ, апла мĕншĕн-ха чарăнса тăмалла çулри çынсен?

* * *

Инесса Васильевна та хăйсен секцийĕнчи Земфира Вутланована вырсарни кун йĕлтĕр сыртарса вăрмана илсе кайрĕ. Çири тум йĕп-йĕпе пуличченех уçăлса çӳрерĕç атлетсем.

Виктор Ураваш, Олимп тӳпишĕн кĕрешекенсен йышĕнче эсĕ аманнипе хутланса пĕршĕннĕ хур акăш пекех курăнмастăн-ши?

## Вун иккĕмĕш сыпăк

Этем ĕмĕтленет. Ĕмĕтпе вăл çунатлă, ĕмĕтпе хавхаланать. Студентшăн Олимп вăййинчен ытлашши каях та мар пысăк уяв вăл – тĕнчери универсиада. Мĕн тери лавçйăх пулĕччĕ, енчен Земфира çĕр-шыври студенткăсене çĕнтерсе пĕтĕм тĕнчери универсиадăна кайма пултарсассăн! Унта вăл журналист шучĕпе халех çитеймĕ: пысăк ăмăрту çинчен çырса пĕлтерме çĕр-шыври тĕп хаçатсемпе ТАСС корреспонденчĕсем çула тухаççĕ. Земфира журналист дипломне алла илет çеç-ха, ĕçлеме вăл тăван республикăна яма ыйтнă. Спорт ăмăртăвĕ пирки хитре-хитре тĕрленчĕк ăсталаса кăларасчĕ те унăн. Ăмăртмашкăн хăйĕн командăна лекесчĕ. Çӳллĕшне сикессипе вăл хĕлле манежра пулнă ăмăртура аван палăрчĕ, мастер кандидечĕн шайне кăшт çеç илеймерĕ. Универсиадăна хутшăнакан командăна лекес пулсан спорт мастерĕн шайне çитмелле. Экзаменсем пирки тренировкăна сиктерес марччĕ. Акă, унăн кунсерен мĕн-мĕн ĕç тунине палăртакан хулăм тетрадь çырăнса тулчĕ... Кĕлеткерен хĕр татах йăпăшланчĕ, хытрĕ.

Студенткăсем пĕр-ик кун хушшинче каникула саланса пĕтрĕç. Земфирăпа Вера, сисмен те, хăйсен пӳлĕмĕнче иккĕшех юлнă: вĕсен Пĕтĕм Союзри универсиадăра хăйсен командин чысне хӳтĕлемелле. Икĕ хĕр те ыррине ĕмĕтленет-ха: Вера чăрмавсем урлă чупса тухассипе те универитет рекордне çĕнетесшĕн, Земфирăн тĕллевĕ те начар мар темелле.

Общежитире яланхи йыш пулманнипе чуна кăштах тунсăх пусрĕ. Ăмăртуччен малтанхи кун хĕрсем нимех те тумарĕç-ха. Тем çырас килнĕ пекчĕ Земфирăн – çырмарĕ, вулама тесе кĕнеке тытса ларчĕ. Унтан каçхи апат умĕн разминкăна тухса уттарчĕ. Ĕнер ним туманран-и, шăм-шак вăранса çитеймен евĕр йывăр. Çапах та пĕрремĕш разряд шайĕнчи çӳллĕше пикесем çăмăллăнах сиксе каçрĕç, унтан урăх сикес темерĕç. Икĕ

хĕр тĕрлĕ хусканусемпе айхашса шăм-шакĕ-çурăмне ыйхăран вăратнă пек çăмăллантарчĕ.

Каçхине çывăрас умĕн Земфирăн шухăш сĕмĕ пĕтес çукла тăсăлăать. Шухăшпа миçе хут тапранса миçе хутчен çӳл кашта урлă виксе каçрĕ ĕнтĕ вăл, хăйăр çине миçе хутчен ӳксе миçе хутчен ним пулман пек тăчĕ... Вера та ыранхи ăмăртушăн пăлханнипе пĕр енчен тепĕр енне çавăрăнкалать, унтан иккĕшĕ те сисмен хушăрах ним туйми çывăрса кайрĕ.

* * *

Ку вăл Земфира пурнăçĕнчи чи пысăк ăмăрту, апла пулсан чи пысăк уяв. Палăртнă вăхăта кĕтетĕн-кĕтетĕн – вăл инçере пек, пачах çитмессĕн туйăнать, анчах шутлă кун çитетех. Университета вĕренсе пĕтернĕ кун та çитсе иртрĕ. Ак, вăл кунсеренех тек тытса чарас çукла пĕрер утăмăн хыçа юлса пырать – Земфира кун-çулĕшĕн аваллăха куçса çĕнипе хупланать. Тухса кайман-ха университетран чăваш хĕрĕ, акă, вăл хăй вĕреннĕ аслă шкулшăн юлашки хут ăмăртать те, вара пĕтĕмпех хыçа юлĕ: çак общежити те, спорт залĕ те, кафедера та, Верăпа пĕрле секцие çӳрени те, çак ăмăртăва хатĕрленни те...

Нумай та пулмасть тенĕ пек çеç-ха студентка стадиона уяв курма пынăччĕ. Ун чухне 20 çухрăма утса вĕсен район ачи çĕнтернĕччĕ. Çав ача татах çĕнтерессе кĕтрĕ чăваш пики. Çакăн ыççăн Земфира хăй те спорт пирки урăхларах шухăшлакан пулчĕ, халь çак хĕр спортсмен хăй – пысăк ăмăртура!

...Пуçламăшĕ ăнăçлах пычĕ темелле. Малтанхи çӳллĕше вăл çăмăллăнах виксе каçрĕ. Планкăна пилĕк сантиметр хăпартсан пĕрремĕш хутĕнче ура перĕнчĕ. çакă вăл тапса ямашкăн çывăхарах пырайманнипе пулчĕ-ха. Тепĕр çӳллĕшне Земфира малтанхи хутĕнчех илчĕ. Юлашкинчен 23 хĕртен пиллĕкĕн çеç тăрса юлчĕç. Ку ĕнтĕ чи хĕрӳ тапхăр, татса паракан: алла

медаль, ҫавӑнпа пӗрлех тӗнчери универсиадӑна каяс путевка кӗрсе выртма е сисмен хушӑрах тухса ӳкме те пултарать. Урлӑ кашта – шакӑлча – ҫӳле-ҫӳле хӑпарса пырать ав; вӑл, эпех вӑйлӑ тенӗ пек, хӑйне парӑнтарнӑ хыҫҫӑн татах улӑхать. Ҫӗнтерейменнисем тумӗсене тӑхӑнса аяккалла кайса лараҫҫӗ е ку вырӑнтан пачах пӑрӑнса уттараҫҫӗ. Ҫӳллӗшӗ халлӗхе пилӗк хӗре пӑхӑнтараймарӗ, ку виҫе пилӗк хӗрпе пӗр чӗлхе тупнӑ-мӗн-ха. Вӗсенчен пӗри – Земфира. Ун аллине те медаль кӗрсе выртас шанчӑк пур, ҫав хушӑрах... Ав, хайхи урлав чӗтренсе тӑрать, вӑл ӳксен медаль те аллунтан тухса ӳкет. Сиксе каҫнӑ хӗр, Вера Горчакова, леш енчи хулӑм хӑйӑр ҫинче ҫурӑмпа выртать, куҫӗ кашта ҫинчех: ӳкмест-и? Шакӑлча чӗтренчӗ – ӳкмерӗ. Тепӗр хӗр те каҫрӗ ун урлӑ. Иккӗшӗ ҫӗнтереймерӗҫ. Пӗри кашнинчех ура кӗлине перӗнтерчӗ, тепри ҫурӑмӗ сӗртӗннипе ҫав планкӑпа пӗрлех ӳкрӗ... Хӑть куҫҫуль кӑларса йӗр унта! Ҫак хӗр ку ҫӳллӗшӗсӗр пуҫне пӗрре ӳкерменччӗ, кашнинчех пӗрремӗш хутӗнчех сиксе каҫнӑ. Земфирӑн иккӗ ӳкнӗччӗ-ха. Халь каҫсассӑн чӑваш хӗрне виҫҫӗмӗш вырӑн тивӗҫет. Чунсӑр ан пул эс, шакӑлча!

Пуҫра епле сикмелли картина йӗрленет: айӑккӑн, кӑштах юпа ҫумминерех чупса пырӗ вӑл, малтан тапнӑ вырӑнтан кӑшт шаларах (иккӗмӗш хут сикнӗ чухнехи пек) тапса ярӗ. Урана тӑсать те кӗлеткепе карӑнса кашта тӑрӑх ӳпӗнет – перӗнмесӗр леш енне каҫать. Илет ӑна Земфира. Илме кирлӗ!

Хӗр пуҫне чикнӗ. Ӑҫтан тапса ямалли пӑнча, кашта ӑҫтине, мӗн ҫӳллӗшӗнчине вӑл пӑхмасӑрах тӗп-тӗрӗс пӗлет. Хӗр тепӗр хут малалла пӗшкӗнчӗ те аллине ума ирӗклӗн лӑнк ярса ҫемҫетрӗ, унтан каҫӑрӑлса илсе тарӑннӑн сывларӗ, ниҫта та мар, пӗр планка ҫине ҫеҫ пӑхса пит хӑвӑрттӑн чупса кайрӗ.

Спортсменкӑн мӑшӑр ури пӑланӑнни пек илемлӗн хуҫланса малалла илӗнсе пырать, лентӑпа пуҫтарса ҫыхнӑ ҫӳҫӗ тӑлт-тӑлт силленет, яштак пӳ пӑхма киленӳллӗн ыткӑнать.

Хӗр урипе вирлӗн тапса ячӗ те... Хӑйӑр ҫине каҫса ӳксен спортсменка хӑнӑхнӑ йӑлипе ҫӳлелле пӑхрӗ: кашта пур-и? Кашта ӳксе хӑй айне пулнине пӗлсех, тапса янӑ ура шакӑлча хумалли тимӗре перӗннине куҫпа курнӑ ҫинчех ҫӳлелле йӑпӑртлӑх пӑхрӗ. Малалли кӗрешӳрен тухса ӳкнине туйрӗ вӑл. Пӗр самантлӑх шухӑша пуҫтарнӑ вӑхӑтра ӳте тем пӗҫертсе кайрӗ. Хӗр урине пӑхрӗ те, тӳрех тавҫӑрса илмелле мар япала курӑнчӗ. Хӑрама та пӗлмерӗ вӑл, касӑлса ҫурӑлнӑ ура хырӑмне, хӑйӑрпа витӗннӗскерне, хӑйӑрне шӑлса ӳт ҫумне хуплаштарчӗ. Шурӑ халатлӑ хӗрарӑм чупса ҫитнӗ ҫӗре мӗн пулса иртнине Земфира пӗтӗмпех чухларӗ ӗнтӗ: ура хырӑмне планка хумалла тимӗр касса ҫурнӑ!

Ӑмӑртупа хӗрнӗ нерва хӗлӗхӗсем пушанса ҫемҫелчӗҫ, наҫилккапа йӑтса васкавлӑ пулӑшу машини ҫине хунӑ чух спортсменкӑна ҫӗр ҫинчи нимле япала та кӑсӑклантармарӗ: ӑмӑрту та, кӗрешӳ те, ытти те... Унӑн куҫ хуралса килчӗ.

* * *

Йӗлтӗрҫӗсен ушкӑнне лекни Виктора нумаях усӑ параймарӗ. Ҫуркунне те, ҫу та ӑна тӗрек параймарӗ. Килте, ак, хунямӑшӗ ҫеҫ мар, Надя та кӑмӑлсӑр калаҫа пуҫларӗ. «Иртерех килетӗп тесе каларӑн-ҫке, мӗншӗн вӑхӑтра таврӑнмарӑн?» – терӗ вӑл малтанлӑха. Унтан: «Мӑшӑрланнӑранпа халь пирӗн мӗн вӑхӑт иртрӗ ӗнтӗ, анчах санпа ниҫта та тухса ҫӳреймерӗмӗр. Эс килте пулманнине пулах хӗр тантӑш менелникне те каяймарӑмӑр», – тесе ӳпкелешрӗ. Ытларах хунямӑшӗн сӑмаххи чӗрене касать. «Кӗпе ҫунӑ чухне мӑшӑрне пулӑшмасть те вӑл... Хӑть, илнӗ пек укҫине арӑмне пӗтӗмпех парсанччӗ, хӑварать вӗт хӑй ҫумне», – тет карчӑк шӑл витӗр, ҫӗвӗ машинипе кӑлтӑртаттарса лараканскер.

Ҫаксене итлесе пӗтмеллех-ши ӗнтӗ Викторӑн? Кусене ҫеҫ мар, хӑйсен мучӑшӗн ывӑлӗ Ҫтуппанӑн кӑмӑлне

те юрасаччӗ-ха, унтан Олегпа Ваççăн, Кайран Енаевпа Петушковăн тусĕсем пулса тăрсаччĕ Виктор. Халь каллех анаталла май сулăнмалла-и? Ав, хулари спорт комитетне Шалимовсем ун патне çыру çырса янă: çартан таврăннă юлташăн тренировки епле пынипе интересленеççĕ, хăйсем мĕн-мĕн ĕç тунине пĕлтереççĕ. Виктора та Олимп «çĕр-шывне» ертсе каякан çула тухма чĕнеççĕ. Ялтан Ульки çырать: «Киле килсе те курмастăн-çке, атте сывлăхне ытла мухтамаллах тесе ан шутла эс», – тет йăмăкĕ. Мĕн тумалла Викторăн. Вăл, ăмăрт кайăк – хăлат вырăнĕнче пулас çын, халь пĕр-пĕр читлĕхе кĕрсе ӳкнĕ имшер çеç кайăк шутĕнчех мар-ши? Читлĕх...

Çакăн пек шухăшласа пынă хушăрах пасар патĕнчи урампа иртнĕ чух куçа чип-чиперех читлĕх курăнчĕ кайрĕ. Алăпа йăтмалли карçынккаран ытлашши пысăках мар тимĕр решеткере икĕ кайăк, шăпчăк евĕрлĕ, анчах унтан пĕчĕкскер, урлă хунă пĕр каштаран тепĕр каштана вĕлт те вĕлт сиксе ларать; шил-тик, шил-тик юрлать çынна ыр пуласшăн пек. Кайăкăн мăйĕнчи мамăк тĕкĕ кĕрен, хырăм ай сарă, çунаттисенче хăмăр, кăвак, симĕс йăрăмсем те пур. Илĕртӳллĕ. Виктор утма чарăнсах пăхса тăчĕ.

– Туян, – илтĕнчĕ читлĕх патĕнче тăракан арçыннăн сасси.

– Мĕн? – пуçне çĕклесе пăхрĕ Виктор. – А, сутма илсе тухнă пулĕ-çке.

– Хаклах ыйтмастăп. Пĕр мăшăрне утмăлпах паратăп.

Хакне асăнни Виктор хăлхине кĕмерĕ-ха. Вăл çын сăмах хушнине илтмен пекех:

– Вĕçсе каяççĕ-и вĕсем? – тесе ыйтрĕ.

– Читлĕхри кайăк ĕнтĕ вăл. Вĕçтерсе яма юрамасть.

– А-а, –тесе кайăк çине кулса пăхать Ураваш. – Шел, вĕçсе çӳреймеççĕ. Хăлат мар çав, ăмăрт кайăк мар. Ку решеткене çĕмĕрсе те тухаяс çук.

Виктор урăх сăмах чĕнмесĕр малалла уттарчĕ. Пĕр

аллă-утмăл чалăш кайсан вăл чарăнчĕ те хайхи арçын патне каялла таврăнчĕ.

– Мĕн хак терĕн? – ыйтрĕ вăл мăшăр кайăк çине пăхса илсе.

– Хаклах ыйтмастăп – аллăпах паратăп.

Паян çеç шалу илнĕ Виктор ыйтнă хака тӳлерĕ те читлĕхе йăтса килнелле çул тытрĕ. «Хуняма валли парне пултăр-ха. Вăл хĕрĕпе кĕрӳшне шăпах çак кайăксем пек курасшăн, пăхса чунне йăпаттăр, анчах эп читлĕхри кайăках пулас çук», – шутлать ăшра Ураваш. Кайăка пăхса йăпанса пынă май ăна тăван Çăкасарпах иртнĕн туйăнчĕ. Ку юрă ăстисене çав ращаранах тытса килмен-ши? Кăларса ямалла мар-ши чиперскерсене? Пахчара вĕçсе çӳреччĕр! Анчах апла тума юрамасть терĕ çав сутаканĕ. Ан тив, хунямăшнех парне пултăр.

– Парне сана!

– Тĕнче! – терĕ хунямăшĕ чылай хушă чĕнмесĕр тăнă хыççăн. – Çăкăр илес укçапа пӳрте кайăк пасарĕ тăвать! Пурăнмалли çурт кайăк вити мар вăл!

– Хуняма, ан ятлаç-ха, сан валли ятарласа илтĕм, – лăпкăнах тавăрчĕ Виктор. – Ак, ку – эпĕ, ку – Надя, – кăтартрĕ вăл кайăка тĕллесе. – Малашне çакнашкал шăккăл-шăкăл та тату пурăнăпăр.

– Тăрпалтай! Ялта ăса вĕрентменех сире! Арăмна тумлантарасчĕ, урайне сарма кавир илесчĕ...

– Илĕпĕр-ха майĕпен, илĕпĕр.

– Кай! Кай! Пире юрăхлă çын пулмарех.

Хунямăшĕ темле тулласшан та, тарăхмах пĕлмерĕ-ха Виктор, малтан кӳлешнĕ чунĕ унăн уçăлса пынă пек кăна туйăнчĕ. Надя кĕрсессĕн, Евдокия Еремеевна:

– Хĕрĕм, кур: хăйĕн пур пек-çук пек шалăвĕпе Виктор мĕн илсе килсе лартрĕ! – тесе сăмах чĕртрĕ.

Надя çийĕнчех нимĕн те ăнланаймарĕ-ха, унтан:

– Виктор, туяниччен малтан хамăрпа калаçса пăхмаллаччĕ, – терĕ. – Магазина хĕллехи атă килнĕччĕ, çавна илсе хурас-и тенĕччĕ эп.

– Вăл çитес уйăхра та пулĕ-çке.

– Виктор, яланах эс çавăн пек. Мĕнле пурăнасси çинчен шутламастăн. Нихăшĕ те ытлашши нумай ĕçлесе илместпĕр вĕт-ха.

– Сире çитмест. Чĕлхӳ аннӳн пекех кăтăклă, – тарăхса кайсах тавăрчĕ халь Виктор.

– Ха, шарлама та юрамасть ăна. Укçине ăмăртăва кайса тăкса килет те кайăк юррине итлессишĕн пăрахать, – урать карчăк.

– Вĕрентĕр, вĕрентĕр – пĕчĕк ача эп.

– Мăн çын пулнинех курман. Килшĕн тăрăшнине сисмен. Йыт хăваласа çӳре те кайăкпа выля.

– Эсир çеç ăслă. Эсир çеç ӳссе çитĕннĕ. Эп çеç читлĕхри кайăк пек пĕчĕк те имшер, анчах мана пĕр картарах хупса тăраятăр-ши?

Виктор пӳлĕмре каллĕ-маллĕ утрĕ-утрĕ те ирĕке тухрĕ. Вăл ниçта та мар, тӳрех стройтрест кантурне çитрĕ, кунта вара ĕçрен кăларма ыйтса хут çырчĕ. Елена Петровна Самойлова курчĕ те:

– Мĕн пулчĕ, Виктор? – тесе ыйтрĕ.

– Килте хирĕçсе кайрăмăр, – пĕлтерчĕ рабочи.

– Килти кашăк-тирĕк шăкăлтатĕ вăл. Мирлешес пулать.

– Мирлешсе çитнĕ ĕнтĕ.

– Итле-ха, Виктор, сирĕн ăмăртура «мертвая точка» текенни пулать теççĕ-и? Стартран тапрансан кăштахран сывлăш пӳлĕнет, ăш-чик хытса ларать... Çавна çĕнтерме хушаççĕ вĕт. Çĕнĕ çемье чăмăртансан та, кăштах пурăнсассăн, çавнашкал самант килсе тухма пултарать. Ăна çĕнтерсе ирттерсен çемье те çирĕпленет. Эсир халь пĕр-пĕрин кăмăлне тĕрĕслетĕр. Пурнăça кашни хăйне май ăнланать-ха, анчах та мирлешсе пурăнмалла. Хăш чухне пĕрин е теприн кăшт чакмалла та пулать.

– Чакнă ĕнтĕ эпĕ, чакса ансах лартăм, – шăлне шатăртаттарчĕ Виктор.

Кăштах уçăлса çӳренĕ хыççăн вăл киле лăпкăнах таврăнчĕ. Надя та, хунямăшĕ те хирĕçсе сăмах чĕнмерĕ,

карчăк лавкка хуралне пĕр шăпăртах тухса кайрĕ.

Тепĕр ик кунран, ĕçрен таврăнсассăн, Виктор кайăксене шыв пама пынă чух читлĕх тăрринче кушак ларнине курах кайрĕ – тяппине решетке хушшине хуллен яра-яра илет çавскер.

– Эс, Киска, мĕн хăтланатăн? – юнарĕ кушака Виктор. – Тивме юрамасть. Кур: эп вĕсене пăхатăп вĕт-ха, çитеретĕп, шыв паратăп. Чим, эс пур, чĕрнӳпе кайăкăн çемçе тĕкне татса илнĕ тем? Тăхта, куншăн «янах шăмми» сана – пĕр кунлăх гауптвахта.

Çапла калаçса Виктор кушака тытрĕ те тĕп сак ай алăкне уçса унта сиктерчĕ.

– Шăши тыт.

Çакăн хыççăн тепĕр кунне вара чăн-чăн аçа-çиçĕм килсе тухрĕ.

– Надя, – терĕ Евдокия Еремеевна кӳтсе çитнĕ чунĕпе, – кур, мĕн хăтланать Виктор? Кушака тĕп сак айне хупса лартса хăйма савăтне ӳпĕнтерттерсе янă. Кай, çынсем холодильник туянма пуçларĕç. Пирĕн кĕрӳ кирлĕ япала илме мар, пурнăçра сиен кăна тăвать.

– Пĕр савăт хăймашăнах вилмĕпĕр-çке, – лăпкăн сăмах хушрĕ Виктор.

– Эс вилмĕн! Эс ăмăртусене йăрккаса çӳреме пултаратăн.

– Çӳреймерĕм çав.

– Тата ăçта кайма ĕмĕтленетĕн? Надя, кала-ха: ăçта кайма ĕмĕтленет вăл?

– Анне, пур-çукшăнах ятлаçас марччĕ.

– Халь эп кирлĕ пулмарăм-и сана? Кайăк юррине итлесе ларăр эппин, – терĕ те Евдокия Еремеевна Виктор еннелле çиллессĕн пăхрĕ, вара: «Мещен, чăн-чăн мещен», – тесе хучĕ.

– Ку сăмаха çав çыннинчен илтетĕп, – терĕ те Виктор урайĕнче каллĕ-маллĕ утма пуçларĕ.

– Пӳрте çĕмĕрсе каять вĕт. Хăй лартнă çурт пек.

Виктор хунямăшĕ çине чăр-р пăхрĕ те тем калас çинчех чĕлхи çыхланнипе ним сăмах чĕнеймерĕ, сăнран

хуралса ларнăскер, вăл тап-тап утса пӳртрен тухса кайрĕ. Ури ăна сăра-эрех магазинĕ еннелле пăрчĕ.

– Çук, ĕçместĕп. Тумлам та сыпмастăп, – терĕ Ураваш урампа пынă чух. – Кун пек усалсене ĕçсе лартнипе таврăраймăн. Эп каллех такăнсан леш Соломонов та хĕпĕртĕ. Ăна, çилкĕне, хăйне тарăхтармалла. Çĕр-шывра малта пулăп та, кĕвĕçĕн ĕнси çинчи пур пек-çук пек çӳçĕ те юхса тухĕ. Тăшмансене мар, туссене хĕпĕртеттермелле.

«Ах, ялта мĕнле пурăнаççĕ-ши?» – шутлать Виктор çавăнтах.

Тепĕр самантран Ураваш стройтрестран ĕç кĕнекине илсе тухрĕ. Килĕнче вара ним калаçса тăмасăрах хăй салтакран таврăннă чухнехи чăматанне пуçтарма тытăнчĕ.

– Виктор, хĕне мана, аннене эп ӳкĕте кĕртеймерĕм. Эп айăплă. Çап, хĕне мана, – тесе йăлăнчĕ Надя.

– Çынна эп хальччен алăпа тĕкĕнмен, хĕрарăма патак çитереймĕп, – терĕ чĕтрекен сассипе арçын. – Кĕтсен кĕт мана, кĕтмесен ан кĕт, – терĕ те чун ăшши паман çуртран тухса кайрĕ.

Ку сăмахсене Надя пĕтĕмпех ăнланса та пĕтеймерĕ-ха, кăштахран тин вăл, йывăр çын, вырăн çине выртса йĕчĕ. Чĕрере нимĕн те çухăлман пек, шанчăк пĕтĕмпех упраннă пек туйăнчĕ-ха ăна. Арăмĕ çинчен Виктор ыт-ларах та шутлама пуçлĕ, ак, пĕрле мăшăрлăн хăнана та, театра та çӳрĕпĕр тесе шанчĕ Надя. Виктор общежи-тие кайрĕ пулсан Олегпа Вася таврашĕнче каллех эрех кĕленчи ăшне кĕрсе ӳкĕ. Тем тесен те, Виктор Надьăн упăшки вĕт-ха, пулас ачан ашшĕ! Мĕншĕн ăна уйăрса ямалла? Çамрăк хĕрарăм шуйхану кăмăлĕпе туххăмрах общежитие персе çитрĕ, анчах Лиза аппăшĕ ăна Виктор килни çинчен пĕлтерме пултараймарĕ.

## Вун виççĕмĕш сыпăк

Çын пăрахут çине ларса Шупашкара çул тытрĕ. Вăл тӳрех киле кайма, пĕр хушă тăван ялĕнче пурăнма, унтан хулара ĕç тупма ĕмĕтленчĕ. Пристаньте ансан автовокзала пыма тăнăскер, чун чăтаймарĕ, спорт комитетне кĕрсе курма шутларĕ.

Спорт комитечĕпе спорт обществисене пырсан унта ĕçлекенсене çеç мар, кĕрешӳçисене те куратăн: кунта кам та пулин – тренер-и, спортсмен-и кĕрсе тухатех: ăмăртăва хатĕрленекенсен чикки çакăнта ĕнтĕ. Çыннисем вара республикăри паллă атлетсене пурне те пĕлеççĕ.

Пăчăр çунатти тĕслĕ сăрă костюм тăхăннă, пысăк мар чăматан йăтнă тĕреклĕ пӳллĕ çамрăк коридора кĕрсенех ун кăкăрĕнче спорт мастерĕн значокне курсан фойере пукан çинче хăйсен ĕçĕ пирки калаçса ларакан ик-виç çын пĕр-пĕринчен: «Ку мĕнлле спорт мастерĕ?» – тесе ыйтрĕ, анчах ăна çак йышра пĕлекен-тăвакан пулмарĕ.

Килнĕ çын нихăш пӳлĕме те кĕме пĕлмесĕр коридор тăрăх хăюсăррăн уткаларĕ. Ку вăхăтра председатель пӳлĕмĕнчен спорт тумĕ çийĕн костюм пиншак тăхăннă хыткан арçын тухрĕ. Сăнĕнчен çакскер пит кăмăлсăрри сисĕнет – пуçлăх патне тем ыйтупа кĕнĕ те тем пирки калаçса татăлайман пулмалла. Коридорти çĕнĕ çынна çак та асăрхарĕ. Вăл ун çине куçлăхĕ витĕр тинкererех пăхрĕ те çывăхарах пычĕ.

– Ураваш! Виктор! Эсĕ вĕт-ха ку?! Мĕнле шăпапа? – терĕ вăл тӳрех.

– Савельев-çке, Герман, – лăпкăн чĕнсе алă тытрĕ ăна ыттисем пĕлмен çын.

– К. хулинче терĕç сана. Епле çӳретĕн? Утатăн пуль? – пĕлме васкать Савельев.

Герман çар службинчен таврăннă хыççăн спорт мастерне çитнĕ, халĕ пĕр техникумра математика вĕрентет, пушă вăхăтра çамрăксене тренировкăна илсе

çӳрет, çав хушăрах республикăри çăмăл атлетсен федерацине те ертсе пырать. Вăл шăпах пулас ăмăртусем пирки калаçма кĕнĕччĕ. Виктор çинчен Герман хаçатсенче вуланă, анчах салтакра пулнăранпа ăна курман та, унпа пĕрле ăмăртайман та. Ак халь Викторшăн Герман хĕпĕртесе ӳкрĕ.

Туссем йăсласа калаçнă хушăра комитет председателĕ, çӳллех мар пӳллĕ платна арçын – Дмитрий Николаевич Сыромятин, – хăй пӳлĕмĕнчен тухни курăнчĕ. Пĕр вырăнта çĕрсе ларма пĕлменскер, вăл час-часах ытти пӳлĕмсене çитет, нихăçан та сăмах илме кивçене каймасть, мĕн те пулин калаçмалли тупатех; Савельев халь ăна килнĕ юлташпа паллаштарчĕ.

– Кĕрĕр-ха хам пата, кĕрĕр, – чĕнчĕ Дмитрий Николаевич хăй пӳлĕмне.

– Пирĕн чăвашсем ытти облаçсемшĕн мĕн чухлĕн ăмăртаççĕ, вĕсене хамăр республикăна ĕçе вырнаçтармалла тесе мĕн каланă эпĕ, – савăннине пытараймасть Герман Савельч Савельев.

– Çапла, чăвашсем ытти область ятне-шывне сахал мар çĕклеççĕ. Куншăн савăнатпăр, – йăл куллипе пăхать Сыромятин.

– Ăçта вырăн тупса парăпăр? – ыйтать унран Герман Савельев çĕнĕ çынна ĕçе вырнаçтарас пирки.

– Спорт шкулне яма пулать. Çĕрпӳре те, Çĕмĕрлере те çын кирлĕ.

– Çу-ук, Шупашкарах, – хирĕçлет Савельев: ăна хăйне те тренировкăсене çӳреме йыш кирлĕ-çке.

– Комитетра инструктор вырăнĕ пушă. Мĕн вĕренсе пĕтернĕ эсир? – ыйтать Сыромятин Уравашран.

– Эп – монтажник, – тавăрчĕ Виктор. – Çурт-йĕр тунă çĕрте ĕçленĕ. Каçхи шкулта вуннăмĕш класа куçрăм.

– Спорт шкулĕнче занятисем ирттерме пултаратьха, – хута кĕчĕ Савельев.

– Эп стройкăна вырнаçасшăн, – хăй кăмăлне пĕлтерет Виктор. Ăна производство гимнастикине ертсе пырас ĕç йăлăхтарчĕ темелле. Герман тавçăрать:

завод е комбинат спортсменӗсем тренировкӑна ҫӳреме ытларах май тупаҫҫӗ. Вӗсене ӑмӑртусене чӗнсе илме те ҫӑмӑлрах. Нумай ҫын ҫинче пӗр ҫынна ӗҫрен хӑтарса тухма часрах; хуҫи те, тарҫи те хӑвах чухне вара вырӑнтан кӑпӑр-капӑр хӑпма май ҫук: тӑвас ӗҫе никам ӗнси ҫине те йӑвантарса хӑвараймастӑн.

– Стройтреста сӗнӗпӗр. Общежити пур вӗсен, вырнаҫтараҫҫӗ, – асӑнчӗ председатель. Вӑл ҫурт-йӗр преприятийӗн директорӗпе телефонпа калаҫрӗ те, Уравашшӑн часах кунта ӗҫе кӗме алӑк уҫӑлчӗ.

Пӗрре ал хӑнӑхнине пурнӑҫлама ҫӑмӑлрах. Ӗҫ тупаймассинчен Виктор хӑраманччӗ-ха, монтажник валли татӑк ҫӑкӑр таҫта та тупӑнать. Спортра та ӳсӗм тӑвас килет унӑн. К. хулинче, такамах айӑплама май ҫук пулин те, ку енпе унӑн май килмерӗ.

Тӑван республикӑра хӑйне ыррӑн кӗтсе илнӗшӗн Ураваш хавхаланса ӳкрӗ, анчах лайӑхмарланчӗ те: паян старта тӑрас пулсан вӑл ӑмӑртаймасть-ҫке – хатӗр мар. «Хатӗрленетпӗр, хатӗрленесси ӗмӗтрех тӑрать», – тӗв турӗ ӑшӗнче вӑл.

Профсоюз обществисем хушшинче республикӑн хӑйӗн спартакиади пырать. Ҫӑмӑл атлетсен старчӗччен ик эрне вӑхӑт юлнӑ-мӗн.

Спорткомитет председателӗн пӳлмӗнчен тухсан Савельев Ураваша «Труд» обществӑна ертсе кӗчӗ. «Ак сире зачетник, – терӗ вӑл кунти хуҫана. Ӑмӑртура сире пысӑк очко кӳме пултарать».

Чӑваш республикинче спорт мелӗпе утассине сарса яраканни – Герман Савельевич Савельев. Ҫав енпе ӑмӑртма шутлакансене, командир хӑй ҫарӗшӗн тӑрӑшнӑ пекех, вӑл хӳтӗлет. Хӑш-пӗр спорт обществисенче ҫӳревҫӗсене командӑна кӑпӑр-капӑрах кӗртесшӗн мар темелле: кусенчен усси пулмӗ тесе шанмаҫҫӗ; ҫӑмӑл атлетикӑра утасси чи йывӑр та кӑткӑс спорт, ҫавӑнпа тӗплӗн хатӗрленмесен эс ху та дистанцие вӗҫлейместӗн, судьясем те сана часах «такӑнарма» пултараҫҫӗ. «Труд» бществӑра утавҫӗ ҫук, ун председателӗ Василий Фи-

липпович Хохлачев ҫămăл атлетсен командинче спорт мелĕпе утакан спортсмен кирли ҫинчен шутламасть теха. Ун умĕнче халĕ чылай пысăк ăмăртусенчех палăрнă спорт мастерĕ иккен. Василий Филипч, пулăç пек часчасах умалла ӳпĕнсе пăхакан, тип хăмăш пек ҫăмăл кĕлеткеллĕ (акробатикăпа спорт мастерĕ) çын, Савельев ăнлантарнине кăмăллăн тăнларĕ те çӳревçĕ уссине те курасса чухласа илчĕ.

– Сбор ирттеретĕр вĕт-ха эсир? – çыпçăнчĕ ăна Савельев.

– Тата ик кунтан, – тунмасть Хохлачев. – Çыннисене ĕçрен хăтаратпăр ĕнтĕ

– Кĕртес пулать командăна.

– Кĕртетпĕр, – терĕ те Хохлачев Ураваш ятне сĕтел ҫинчи числинника çырса хучĕ.

* * *

Йăлтăр-ялтăр, хĕреслĕн-мĕреслĕн çиçет çиçĕм, чӳрече куçне кăларса сирпĕтесле хатлаттарать аслати; такам, ывăнма пĕлменскер, витререн сапса тăкнă пек, шал-шал! тăкать çумăр. Тренировкăна пуçтарăнса тухнă атлетсем, пĕлĕт хупланса килнине курсанах çывăхри столовăя кĕрсе тарнă. Виктор, ĕç хыççăн общежитие каймасăрах Савельев пыма чĕннĕ вырăна çитнĕскер, кун ахалех çухалчĕ-и-ха тесе пăшăрханать. Çавăнпа вăл ку çумăр иртет-и, итмест-и тенĕ пек, фойе чӳречи витĕр çурт ҫинчен анакан шыв сикки пек шалкăма канăçсăррăн тинкерет. Герман ушкăнĕнчи атлетсем – унăн икĕ шăллĕ, Генăпа Веня, тата Ваня Красновпа тепĕр икĕ çамрăк, пĕри тепринчен аслăрах мар пулин те: «Эй, шĕвĕр, сана-и, тĕксен кайса ӳкен, ак хутлатса лартам-и?» – тесе тĕрткелешеççĕ. Çумăр тăкнипе тренировка пăчланасси шухăшлаттармасть те темелле вĕсене; е кусемшĕн тренерĕ шухăшлать-и, е çаксем тытăнас ĕç нихçан та пуçланичченех чарăнса ларман-и? Пĕр тесен, ним шухăшсăр çынна ăмсанас та темелле; ун

пеккисем нервăна перекетлĕн упраççĕ те кĕрешĕве тухсан вирлĕн çапăçма пултараççĕ. Виктор та çамрăкрах чух çавăн пек пулнă-ши? Çук çав, нихăçан та ним мар çĕртен ытлашши пакăлтатман, калаçас вырăнне ытларах шутланă, ĕçе кӳлĕнсен вара тăрăнса каясла ĕçленĕ.

Веня, Германăн чи кĕçĕн шăллĕ, пиччĕшне е хăйĕнчен аслисене хисепе хурать, Уравашпа та, авă, сума суса калаçса илет, анчах хăйĕн тепĕр пиччĕшĕпе, Генăпа, тата Ваня Красновпа, лешсем те ахăрашка пулнăран, ним енчен те аяла пуласшăн мар çатăлтатать. «Çитĕ сире. Çынсенчен вăтанăр кăштах. Эсир çеç мар кунта!» – чарать çаксене Герман Савельч. Веня ăна итлесе пĕр хушă шăпланать-ха, анчах чĕлхи каллех кăтăкланнăран, алли-урине те тӳр тăмалла мар тем хĕтĕртнĕрен мĕн те пулсан сăмах хушатех е хăшин çумне те пулсан пырса çыпçăнатех. «Аça çапассинчен те хăрамастăр-çке эсир. Хăть асфальт çинчи çумăр ташшине пăхса тăрăр», – каллех хăтăрать Герман. Аça çапассипе çапас марри мĕнрен килнине пĕлекен çамрăксем хирĕç сăмах хушаççĕ те кулса яраççĕ, унтан самант лăпланса шыв сирпĕннипе çăвăнакан чӳрече стена витĕр куç илес çукла урамалла пăхаççĕ. Ачисене кусене республикăри профсоюзсен спартакиадиччен малтан СССРти çамрăксен ăмăртăвĕ кĕтет-ха. Паян вĕсен – çула тухса каяс умĕнхи тренировка, çавăнпа ĕнтĕ ку йыш пушшех хавхалануллă. Çийĕнче те çаксен халь ăмăртăва кайма туяннă вĕр çĕнĕ спорт костюмĕ.

Çиçĕм йăлтăртатма пăрахса аслати сасси таçта аякка тарса йăннипе пĕрлех шалкăм çумăр та епле килнĕ, çапла иртсе кайрĕ. Урама Герман Савельчран малтан Веньăпа ытти çамрăксем сиксе тухрĕç. «Пылчăк сирпĕннипе капла лапăртанса пĕтетпĕр пуль?» – тет пĕчĕк ача сăнĕ кайман чи кĕçĕн Савельев. Çул çинче, чăнах та, шыв пĕр кӳлленчĕкрен тепĕр кӳлленчĕке йăрлаттарса юхать. Çанталăкĕ сивĕ мар-ха, лĕп кăна ăшă. «Ах», – тесе озон шăршине кăкăр туллин çăтать хĕпĕртенĕ Герман Савельев. «Трусси вĕççĕн çеç утатпăр

паян, э? Кĕпе-тума ГАИ постне хурса хăварар та», – терĕ вăл киленӳллĕн. Малтанлăха брюки вĕçĕсене тавăрса çăкапа акаци аллейинчи асфальт сарнă тротуарпа уттарчĕç вĕсем. Асăрханса пырсан та урана шыв витрĕ ёнтĕ – ку ним те мар! Пĕр-пĕринпе шӳтлесе калаçма е тăрăхласа илме юратакан ачасенчен халь çав умра пыраканнине, кăшт пĕкĕрĕлнĕн пыракан çинçешке Краснова, е хыçра чĕпĕ пек вичкĕнсе утаслакан Веня Савельева йывăç тураттине йăпăрт тĕкĕнсе шăпăр! кăна тумлапа ислентермелле çеç. Анчах ĕçлĕ шухăшлă спортсменсем мĕн вăл вăййăпа мĕн вăйă маррине чухлаççĕ те унашкал иртĕхессине аса илмеççĕ.

Шупашкарăн Етĕрнене тухса каяс çул çинчи хула чикки юлашки тапхăрта хура вăрман хĕрринелле куçрĕ; тахçан уй пулнă вырăнта халь унта-кунта çурт кармашăнса ларать; унта-кунта экскаваторсем каллех тепĕр керман никĕсне хывма шăтăк чаваççĕ. Спортсменсем пыракан шоссе айккинчи сукмак шăпах тарăн шăтăк умне çитсе тухрĕ. Çул ертӳçи Савельев Герман ним шутласа тăмасăрах ун урлă вирлĕн ыткăнса каçрĕ; Гена та, Ураваш та йăлттăмах каçрĕç. Умри çын хыççăн сирпĕнсе пыракан пылчăк ан лектĕр тесе таса спорт тумĕ тăхăннă Веня каярах юлнăччĕ. Умри çырма мĕн сарлакăшне вăл тавçăрса çитереймерĕ пулас çав, ытлашши вăй хумасăрах каçатăп терĕ пулĕ-и, е хăй хавшакрах пулчĕ – ыттисем пекех малалла вирхĕнеймерĕ, леш çыран тайлăкне кăна, çумăрпа исленнĕ тăмлă вырăна, чĕрне вĕççĕн çитсе тăрăнчĕ, анчах ни малалла ӳпĕнеймерĕ, ни çырантан аллипе тытаймасăр каялла шуçса кайрĕ те çумăр хыççăнхи лĕкĕрпе тулнă лакăма лармаллипех кĕрсе ларчĕ; тӳрех тăма та, хускалма та май çук евĕрлĕн вырнаçрĕ. Шăшие вилĕм, кушака кулă теççĕ-и? Пĕрле килнĕ юлташĕсем çеç мар, ГАИ будки патĕнчи милиционерсемпе çывăхри ытти çынсем те вар хытса ларасла ахăлтатаççĕ. Краснов çывăхри çерем çинчен часрах карлăк пек туя тупса килчĕ, вара пĕр вĕçне шăтăкри çынна тыттарса ачана тухма пулăшрĕ.

«Тĕне кĕнĕ» яш каччă те вăтаннипе, те тарăхнипе нихăшĕнпе калаçса тăмасăр спорт уттипе çул тăрăх вашлаттарчĕ, ыттисем ăна хыçран пăхса юлчĕç кăна.

Уравашсем пĕр трусси вĕççĕн çеç юличчен хывăнса çири кĕпе-тума ГАИ посчĕ будкине хăварчĕç те «уçăлмалăх» çула тапранчĕç.

Çу кунĕнчи хĕвел çумăр пĕлĕтĕнчен тасалнă тӳпере вăрман çӳллĕшне аннă; озон шăршипе тулнă сывлăш сипетлĕ те лĕп ăшă; шоссе айккинчи çерем çинче чечек-курăк пысăк тумламсене çăвар туллин сыпса ларать; вăрманти шăпчăк каçса кайса юрлать; атлетсен çак ырлăхра утас та утас килет.

– Эй, кам мĕкĕлтетет унта? – терĕ умра ертсе пыракан Герман куçлăхĕ витĕр чăр-чăр пăхса. – Веня тем çав. Веня!

Чи кĕçĕн Савельев юшкăнпа сăрланнă ырă тумне хывнă та çаран çинче сăтăрать, çăмăр хыççăнхи курăк брюкипе курткăна шыва чиксе кăларнă пек лачкам ислетет. Туссем ун патне вăштăрах кĕпĕрленсе пычĕç. Ваня Краснов, çинçе пӳллĕ яштак ача, куртăкăна «çуса пама» пулăшрĕ, Генăпа Веня иккĕшĕ брюкие пĕтĕрсе пăраççĕ. Типĕтсе çакса хăвармалла çеç ĕнтĕ çунă япалана халь, вăрман хĕрринче карта е кашта вырăнне йывăç туратти те пур кунта.

– Çу-ук, – хирĕçлерĕ çапла шухăшлă ачана аслă пиччĕшĕ. – Тепри илсе кайсан, хулана, мĕн, трусси вĕççĕн çеç таврăнатăн-и? ГАИ будки патне кайса çакатăн! Инçе мар, сакăр çĕр метр çеç. Пăркаланса ан тăр, хăть чуп, хăть ут, тăршшĕне сикессипе хур куртăн пулсан утасси-чупассипе çивĕчлен! Ав, эпир Икĕпӳрт тĕлĕнчен иртнĕ çĕре пире хăваласа çитетĕн, сикессипе ГТО нормине тултарайманскер!

Ах, чунах пырса тивет-çке юлашки сăмахĕ!

Вăрман хуçалăхĕн шоссе айккипе вырнаçнă çурчĕсем кунта спортсменшăн яланах çул инçĕшне кăтартакан паллă вырăнне шутланаççĕ; малтан икĕ пӳрт, тата кăштахран виçĕ пӳрт тĕл пулать. Спортсменсем вĕсене

ял ячĕ пекех, Икĕпӳрт, Виçĕпӳрт теççĕ. Çав Виçĕпӳртрен те чылай инçе кастарса пыраççĕ паян уçăлма тухнă çӳревçĕсем. Виктор çамрăк йышран юлмасть – унăн та ури çăмăллăн илĕнсе пырать. Пуринчен ытла ăна çак пĕр-пĕрне кӳренме пĕлмен туслă ушкăн килĕшет, вĕсемпе çăмăллăн вашлаттарса утас та утас килет.

* * *

Пурнăçра инкек те, телей те хăраххăн çӳремест теççĕ. Пĕрре ăнсан тепре те ăнать; пĕр япала тупăнсан тепĕр япала та тупăнать. Çăмăл атлетика ăмăртăвĕ тĕлне Чăваш республикине тепĕр спортсмен килсе çитрĕ – хăвăрт утассипе палăрнă сорт мастерĕ Николай Шертанов. «Пучах» обществăн Тĕп Совечĕн кăçалхи чемпионĕ, Россия командишĕн ăмăртăва хатĕрленсе пыраканскер, Шертанов кунти старт ыран тенĕ чух çитсе ĕлкĕрчĕ. «Пучах» обществăн председателĕ Максимов, ытти общество пуçлăхĕсемпе танлаштарсан, чи çӳллĕ пӳллĕ те платна арçын, çынна хăй майлă çавăрма пĕлекенскер, урăх облаçшăн ăмăртакан чăваш ачине Тĕп Совет ăмăртăвĕнче курнăччĕ. Ун чух ăна тăван республикăна пыма чĕннĕччĕ. Халь, хăй пӳлĕмĕн алăкĕ уçăлса çав лутра пӳллĕ ача курăнсан, Максимов хавхаланса ӳкрĕ.

– Коля, мĕн тăран, кĕр! – терĕ вăл тахçантанпа пĕлекен çынна чĕннĕ пекех. Леш кĕрсен вăл, сĕтелĕ хушшинчен тăрса ăна алă пачĕ.

Шертанов кăмăлĕпе мăнаçлăн курăнать, куçĕпе вăл, мана епле кĕтсе илеççĕ-ха тенĕ пек, общество председателĕ çине сăнаса пăхать, питĕнче пĕр чĕптĕм кулă та, хаваслăх та çук унăн. Ăçта ĕçлес пирки сăмах хускатсан, вăл хăйĕн вăйне туйнă пек ыйтуллăн:

– Эсир мĕн сĕнме пултаратăр? – тесе ыйтрĕ.

– Çĕрпĕве, техникума, – вашаватлăн пĕлтерчĕ Максимов, – преподаватель кирлĕ.

Шертанов Ульяновскри пединститутăн физкуль-

тура факультетĕнче икĕ çул вĕреннĕ, унтан куçăн мар вĕренмелли уйрăма куçнă та шкулта учительте ĕçленĕ. Ăна халь техникум преподавателĕ пулма сĕнни тивĕçтерет. Вăл хăйне йӳнетесшĕн пулмасăр:

– Мана пĕр кравать лартмалăх пӳлĕм пултăр, шоссе çывăхри пăсмасть, – тесе хучĕ.

Максимов сĕннĕ вырăн шăпах çапласкер ĕнтĕ. Председатель çавăнтах Çĕрпӳпе калаçма почтăна шăнкăравларĕ. Вăхăт кăнтăр апачĕ тĕлли пулнăран хула тулашĕнчи телефон линийĕ часах пушанчĕ те, Максимов техникумпа çыхăнма та йĕлкĕрчĕ. Директорĕ ĕçе илес çынна: «Килсе пăхтăр», – терĕ.

– «Труд» обществăна çĕнĕ мастер Ураваш килнĕ, Мускавăн уçă ăртăвĕнче çĕнтернĕскер, – пĕлтерчĕ Шертанова Максимов.

– Мана халь никам та хăратмасть, – мăнаçлăн каларĕ Николай.

Каç пулттипе Шертанов автобус çине ларса Çĕрпĕве кайрĕ. Тепĕр кунне вăл çав район командипе пĕрле унти çын пулса ăмăртăва килчĕ.

* * *

Чăваш республикинчи çăмăл атлетика ăмăртăвĕ, ытти хăш-пĕр облаçсенчипе танлаштарсан, пĕр лайăх енĕпе уйăрăлса тăрать: спорт мелĕпе утасси икĕ кунĕнче те пур: малтанхи кун 10 километра, иккĕмĕш кунĕнче 20 километра старт параççĕ. Куна Савельев çине тăнипе йăлана кĕртнĕ. К. хулинче утакансенчен Ураваш кăначчĕ темелле; Чăваш республикинче вара çӳревçĕсем «çын шутĕнчех» тăраççĕ.

Шертанова Ураваш ăмăрту умĕнхи кунах палласа хăйне мухтанчăклăн та вĕçкĕн тытнине асăрхарĕ. Шертановне те çĕнĕ юлташĕсем:

– Ураваш пур-ха унта. Çĕнтерме çăмăл пулмасть, – тесе систереççĕ. Герман Савельч ачисем те СССРти çамрăксен ăмăртăвĕнчен вунă çухрăма аван утса тухнă,

паян вёсем те таврӑнмалла, – ҫакна аса илтерекенӗ те тупӑнать ҫавӑнтах.

– Хӑть кам пултӑр – мана кунта никам та хӑратмасть. Эп халь нихҫанхинчен ҫирӗп. Кӗҫех ялти спорт обществисен Пӗтӗм Союзри спартакиади пулать. Унта пур. Пӗрре, Юлдымаа ятлӑскер, латыш, – куҫне ҫутӑлтарса калаҫать Николай.

Сӑмаххипе Шертанов спорт комитетри йыш ҫинче палкать. Ҫавна ушкӑн айккинче тӑракан Ураваш та хӑй хӑлхипе хӑй илтрӗ. Шертанов пек ҫеҫ мар, унран ҫивӗчрех те ҫӳренӗ ҫынна ку сӑмахсем вӗчӗрхентереҫҫӗ. Ун пеккисемпе калаҫманччӗ-ха Виктор!

Чим-ха, Шертановӑн уттине курмасӑрах мӗншӗн ӑна сивлес? Тен, вӑл пӗчӗк Жуковский пек талантлӑ ача? Ҫапах та ҫын пӗрре пӑхсах кӑмӑла каймарӗ.

Общество советӗнче Шертанов хӑйсемпе пӗрле пынӑ команда ачисемпе вашаватлӑн та сумлӑн калаҫать.

– Тӑхта-ха, Аля, тӑхта, – чарать вӑл хулана кайма тухнӑ хӗр-спортсменкӑна хӑй тепӗр ачапа тем сӑмахланӑ хушӑрах.

Виктор хулара ик эрне пурӑнать-ха ӗнтӗ, анчах унӑн тусӗсем – Савельев та унпа пӗрле ҫӳрекен ачасем ҫеҫ. Шертанов, ав, ӗнер ҫеҫ килнӗ, ҫапах та мӗн чухлӗ тус унӑн. Кӑна ӑмсанмасть-ха Виктор, унӑн чунӗ ҫын вӗҫкӗнленнине чӑтаймасӑр кӳлешет. Ах, лӑплантарӗччӗ те ҫавна Ураваш, анчах тренировка тенине хӑй тин пуҫӑннӑ-ҫке-ха вӑл. Веньӑпа Ваня Краснов мастерпах тытӑҫаймӗҫ. Герман Савельев хӑй те тренировка ҫителӗксӗр тесе старта тухма шутламасть – вӑл судьясен йышӗнче пулать. Ураваша ҫак тренер: «Санӑн утмаллах», – тет.

Ҫӳревҫӗсен кӗрешӳ пуҫламӑшӗ каҫхине ултӑ сехете лекрӗ. Ку вӑхӑтра ытти енпе ӑмӑртусем вӗҫленӗ ӗнтӗ. Стартра 12 ҫын, вӑл шутра спорт мастерӗсем иккӗн тесессӗн куракансемпе ытти енпе ӑмӑртнисем, килӗсене кайма васкамасӑр, трибунӑсем ҫине вырнаҫрӗҫ.

10 километр утавҫӑсемшӗн классикӑлла дистанци

мар, вăл 20 километра хатĕрленес çулри тĕрĕслев çеç. Çапах кӳрешӳ кунта нихçан та çăмăл килмест: стадионри 400 метрлă çавра çула санăн пысăк хăвăртлăхпа 25 хут ункăламалла-çке!

Шертатов стартран тапраннă-тапранман ыткăнчĕ кăна. Вăл никам çине пăхмасăр вĕлт те те вĕлт илтерсе пырать. Утас сăлая тĕсеме пулнă тӳре Герман Савельев ун уттине тимлĕн сăнать: чĕр куççине тӳрлетет-ха Шертанов, пăхма хир чăххи пекех йăпăртатса пырать, анчах пит хăвăрт утăмланипе тĕллĕн-тĕллĕн икĕ ури те çĕртен уйăрăлнă самант пулать унăн. Куна вара утăран чуппа куçни теççĕ. Республикăна тин килнĕ çынна Савельев шуйхантарасшăн мар-ха, тепĕр икĕ судйипе калаçса чупни уççăнах курăнмасть тесе палăртрĕç çеç. Шертанов сăлайĕнче лайăх енĕ те пур: пилĕке епле çавăрать вăл! Хăвăртлăхĕ тата! Мĕнле çавнашкал ĕçлеме пултарать çын!

Ураваш Шертановран виç çаврăмранах юлчĕ. Малтан ура туни хуппала туртса çыхнă пекех хытса ларчĕ унăн, ыратни ниепле те иртмерĕ. Часах ăна тепĕр спортсмен, хĕрлĕ чикан пек сăнлăскер, хăварма пикенчĕ. Унпа вăрçса пынă хушăра Виктора чикен илчĕ. Ĕçлеме çапах чарăнмарĕ-ха вăл, хăвăртлăхĕ, паллах, хăй тахçан çӳренĕ чухнехи мар ĕнтĕ. Шертанов, Пĕтĕм Союзри çамрăксен ăмăртăвĕнче пулса кунта çитме ĕлкĕрнĕ Веньăпа Ваня Красновсене çеç-и, ăна та пĕр çаврăм иртсе кайрĕ. Унпа çыхланса-и, хĕрлĕ çӳçлĕ спортсмен, районтан килнĕ Мартын Капарков текенскер, Уравашран иртрĕ-иртрех.

Ăстаçă кăшт пăхнипех япала мĕнлине тĕрĕс хаклать. Хĕрлĕ çӳçĕн ури тӳрленсе çитеймест, çурри чупать вăл. «Куна пысăкрах ăмăртусенче тӳрех хĕрлĕ ялав – стоп! – кăтартаççĕ», – шутласа илчĕ Ураваш. Ачине Савельев та асăрхаттарнă, леш çаплах илтерет-ха, спорт мастерне иртрĕм тесе хĕпĕртенĕ ĕнтĕ, апăрша. Иккĕмĕш пырать-çке-ха тата вăл! Дистанци вĕçлениччен инçе те мар ав. Йывăр. Вăхăт каç енне сулăннă ĕнтĕ, тӳпе шĕвек

пӗлӗтпе туртӑннӑ, курса ларакансемшӗн, пӗвне-ҫине куртка-пиншак уртнӑ пулин те, ҫӳҫентермеллех сулхӑн темелле, анчах ӑмӑртакасене пит тӑрӑх шапӑртаттрса тар юхтарать, майкӑпа трусси лачкамах шыв пулнӑ. Виктор вӑйне пухса хӗрлӗ ҫӳҫе хуса ҫитрӗ-ҫитрех. Лешӗ ирттересшӗн мар тепӗр хушӑ хытӑрх кайма пикенчӗ, анчах ним те тӑваймасӑр юлчӗ. Уравашӑн та ури «тӑлланчӗ». Шертанов ҫаплах малта, ҫаврӑм ҫурӑ малта! Шӑлне ҫыртать, тарӑхать Виктор.

Шертанов та кӳлешет. Ӑна пӗр йӗкӗлти чӗлхе: «Сана Герман Савельч ӑмӑртма пӑрахтарасшӑн каварлашать. Хӑйӗн рекордне ҫапасран шикленет вӑл. Чупать теҫҫӗ», – теме ӗлкӗрнӗ. Куншӑн вӗчӗхнипе Шертановӗ пушшех хытӑ каясшӑн, анчах унӑн та вӑйӗ хавшанӑ.

Финишчен тӑватӑ ҫаврӑм юлчӗ. Виктор хыҫӗнче акӑ хашканӑ сасӑ илтӗнет. Хӗрлӗ ҫӳҫ Капарков тепре ҫывхарчӗ-ши? Вӑта трибуна тӗлӗнче хыҫри ҫын унпа танлашрӗ. Пӑхакансем ҫавӑнтах алӑ ҫупса ячӗҫ, кӑшкӑрса хавхалантараҫҫӗ:

– Ҫер-кей! Пайӑрка!!!

Викторпа танлашнӑ спортсмен пӗр вӑшталанмасӑрах ума тухрӗ те хӑй уттипеваскавлӑн тарса кая пуҫларӗ. Трибуна ҫаплах:

– Па-йӑр-ка! Ҫе-е-ркей! – тесе кӑшкӑрать.

Ӑҫта илтнӗ ҫак ята Виктор? Ара, ҫарта чухне Клименков асӑнатчӗ-ҫке! Дивизире йӗлтӗрпе чупса кубок ҫӗнсе илтӗмӗр тетчӗ. Ҫамрӑк мар пулин те Пайӑрка Ҫеркейӗ спорта пӑрахман иккен-ха. Шупашкарта аслӑ шкул пӗтернӗскерӗн халӗ те туссем институтра та, ытти районсенче те туллиех. Вӗсем йӗлтӗрпе ӑста ҫӳренӗ спортсмен паянтан утассипе ӑмӑртма тытӑннине кураҫҫӗ, ҫавӑнпа Пайӑрка Уравашран иртсен трибуна хавасланса алӑ ҫупрӗ те ӗнтӗ.

Виктор хӑй умне тухнӑ ҫын ҫине пӑхать: вӑтам кӗлеткеллӗскер вӑл, пынӑ май енчен енне ытлашши тайкаланать – тахҫанхи кивӗ сӑлай унӑн. Савельевӑн ӗлӗкхи уттине ӳкерсе илнӗ-ши? Е кӗнеке ҫинчен ву-

ласа вӗреннӗ? Урине те чӗр куҫҫи тӗлӗнче тӳрлетме тӑрӑшса авӑнтарсах ярать. Килте хӑй тӗллӗн аппаланса ытлашшипех вӑй хунӑ ҫакскер. Сӑлайне тиркесен те, ҫынни ҫивӗч пырать – Виктора вӑл тем хушӑра ҫӗр метр пӑрахса хӑварчӗ.

Финиша Ураваш виҫҫӗмӗш ҫитрӗ, ҫавӑнтах вӑл аякках пӑрӑнса кайман Шертанова, унтан Пайӑркана алӑ тытса саламларӗ. Ҫӗнтерӳҫӗ лӑпкӑн тав тӑвать. Шертанова ыттисем те саламлаҫҫӗ.

– Рекорчӗ мӗн чухлине каламан мана. Вӑхӑт пӗлтермерӗҫ. Хытӑрах каяттӑм, – тесе мӑн кӑмӑллӑн тавӑрать Николай.

Ку дистанцие икӗ ҫул каялла Савельев ӑмсанмалли хӑвӑртлӑхпа утса тухнӑ пулнӑ-мӗн, ҫав вӑхӑта Шертанов 32 ҫеккунт ҫывхарайман-ҫке. Савельев та Шертановне мухтать:

– Ман рекорда ҫапса пӑрахать-и тесе тӑраттӑм эп. Кайран пилӗк ҫухрӑм хыҫҫӑн вӑхӑта пӑхрӑм та пулаймасть терӗм.

– Каламарӗҫ мана. Виҫ ҫухрӑм хыҫҫӑн вӑхӑт каламалла пулнӑ, – куҫне ҫутӑлтарать Шертановӗ. Савельев Пайӑркана та:

– Маттур. Саламлатӑп сана – пӗрремӗш разряд вӑхӑтне кӑтартрӑн! Тахҫанах утма тытӑнмалла пулнӑ сан, – тесе хавхалантарать.

Пӗрремӗш разряд тенине илтсен:

– Чӑнах-и?! – савӑнса ӳкрӗ утассипе пуҫласа ӑмӑртнӑ ҫын.

– Ак, кур, – йӗппине чарнӑ секундомера кӑтартать судья. Циферблат ҫинчи йӗп 46 минут та 59 ҫеккунт чухлӗ хисеп палӑртать. Пӗрремӗш разряд вӑхӑчӗнчен пӗр ҫеккунт лайӑхрах тухнӑ! Вунӑ ҫухрӑмра пӗрремӗш разряд кӑтартсан ҫирӗмре мастер вӑхӑчӗпе ҫӳреме шанчӑк пур тесе шутланӑ Пайӑрка Ҫеркейӗ вара пӗчӗк ача пекех хӗпӗртесе ӳкрӗ.

* * *

Стадионран тухнӑ чухне пӗр йӗкӗлтийӗ Шертанова: «Савельев сана ҫапах рекорт ларттармастчӗ, кӑларса пӑрахатчӗ, – тесе хучӗ. – Ыран, ак, Ураваша пӗрремӗш пултараҫҫӗ – ниссех тӑр». Шӳте ӑнланаканни куна шӳт тейӗччӗ те, Шертанов вара ун пек-кун пеккине тавҫӑрсах пӗтеймест иккен. Ҫавӑнпа вӑл Савельевпа Ураваша хӑйӗн тӑшманӗсем вырӑнне картса хучӗ.

...Виктор чунӗ канӑҫсӑр та пӑлхануллӑ. Иккӗмӗш кунхине 20 километра ӑмӑртмалла-ши унӑн, ҫук-ши? Чӑтайӗ-ши инҫе ҫула вӑл? Общежитире выртсан ӗшеннӗ ҫын хуҫӑлнӑ кӑмӑлпа ҫывӑрса кайрӗ. Тепӗр кунне стадиона та пырас теменччӗ вӑл. Вырсарни кун ӗҫе те каяс ҫуккине пула кӑна унта тухса уттарчӗ. Савельева курсанах: «Старта тӑрас мар пуль ман», – тесе хӑй иккӗленнине пӗлтерчӗ. «Мӗн эс! Ӑмӑртас пулать. Каллех виҫҫӗмӗш пулатӑн, республика командине кӗретӗн. 10 километр ним те каламасть-ха вӑл. 20 километртине пӑхса комада йӗркелеҫҫӗ», – ӑнлантарать спортшӑн чунне паракан ҫын.

Старт 12 сехет ҫурӑра пулчӗ. Ӗнер ӑмӑртни талӑк та ҫитменрен канса ӗлкӗреймен шӑм-шак самаях йывӑр. Пилӗк ҫын стартран тапранчӗ: Шертанов, Ураваш, Пайӑрка, Капарков, тепри, паянхи кӗрешӗве кӗтсе ӗнер ӑмӑртман Артюшкин – ял хуҫалӑх институчӗн студенчӗ, хура та вӑрӑмскер. Герман Савельевич вӗрентекен ҫамрӑксем, икӗ ӑмӑртура умлӑ-хыҫлах пулнӑран ывӑнтӑмӑр тесе курмашкӑн кӑна пырса ларчӗҫ.

Шертанов каллех стартранах вирхӗнчӗ. Виктор ун хыҫҫӑн ултӑ ҫаврӑм таран тытӑнса пыма пултарчӗ ҫеҫ, ӗнерхи ӳсӗмпе хавхаланнӑ Пайӑрка вара умрине ҫаплах вӗҫертмест-ха. Шертанов ура ҫӗре перӗнниперӗнменнине пӑхмасӑр вӗҫет ҫеҫ. Пайӑрка енчен енне тайӑнса утӑмлать, чӗр куҫҫи кукрашкине авӑнтарсах ярать, Виктор урана ҫурма хуҫлатса утмалла чипчипер кӑларать те кӗле ҫине лартать, кӗлетке тӗлӗнче тӳрлетет, ахаль утта ҫывӑх майлӑн пырать. Юрать,

сăлай пăсăлман, уншăн кăмăллă-ха Виктор. Халь Шертановран юлсан та 20 çухрăма пĕр сехет те 38–39 минутсенче тухасчĕ унăн. Шертанов уйăрăлса кайрĕ ав, Пайăрка та умринчен татăлса юлчĕ. 25 çаврăм тĕлнелле Шертанов Ураваша икĕ çаврăм, Пайăркана çаврăм чухлĕ хăварчĕ. Уравашăн ăмăртма пăрахасси килет – мĕн асапланса пымалли пур?!

– Тухатăп эп, – терĕ вăл Герман Савельча.

– Мĕн, эс! – тилмĕрсе пăхрĕ ун çине слая сăнакан судья. – Епле пулсан та утса çитмелле.

Вăл тĕрĕс калать: кунта чарăнса тăрсассăн Викторăн спорт комитетне пырса курăнма та намăс, кайран вара пĕтĕмпех ал сулăн – ак Олимп тӳпинелле пырас çул çухалчĕ те хальхи... Эй, иçмасса, йӳçĕ ĕçес килсе кайрĕ! Тута-çăвар çилĕмленсе ларчĕ ав. Шыв мар, йӳçек япала кирлĕ чуна уçăлтарма! Тăр шыв пулсан та пырĕччĕ! 20 çухрăмра ăмăртнă чух ĕçме юрамасть çав. Çанталăк уяртнă халь. Ĕнер сулхăнра лачкам шыва ӳкнĕччĕ спортсменсем, халĕ ав – тип-типĕ – хĕвел тухнă тара типĕтсе ӳт çумне шап-шурă тарне кăна хăварнă. Виктор кам ăçта пынине пĕлес тесе каялла çаврăнса пăхрĕ: дистанцире вĕсем виççĕн çеç тинкеленеççĕ иккен – хĕрлĕ çӳçпе институт студенчĕ ал сулса çулран пăрăннă.

Эх, йывăр-çке вăл стадионра 400 метра 50 хут çавăрăнасси! Малта пĕрремĕш пыраканнине те, хыçра юлашкинчен утаслаканнине те çăмăл мар.

– Санăн 10 çаврăм, санăн 13 çаврăм юлчĕ, – пĕлтерет инçĕше шутлакан судья. Шертанов халь финиша çитес пулсан та Викторăн тата виççĕ ункăламалла. Хĕрарăм Пайăркана та пĕлтерет:

– Вун икĕ çаврăм.

Каплах пырсан Николай Çеркейран та тепре иртме кирлĕ, Виктора татах хăварĕ. Халь çитет-и, кĕç çитет-и тенĕ вăхăтра хыçра çын пурри сисĕнмерĕ. Виктор стадион урлă пăхрĕ те умра тарака Шертанова Пайăрка çывхарнине курчĕ. Анчах çитсессĕн те тепĕр çаврăм пур-çке малтин перекетре! Хăйне каллех çитсе иртнĕ

чух Виктор Çеркее: «Тимле! Тепĕр çаврăмне те тавăрма пултаран», – тесе хушрĕ.

Шертановăн утти кĕскелнĕ. Малтан чарăна пĕлми пыракан çыннăн та урараН ура иртми пулать-мĕн. Ёненмелле мар: пĕр вунă минут каялла çеç ура çиçĕм выляннăн вĕлтлететчĕ, халь тăхлан янăн сĕтĕрĕнет. Викторăн та çавăн пек вăл. Çеркейăн та малтанхи çăмăллăх çук, вăл та пур пек вăйне пухса йывăррăн туналать, ăна чăтăмлă пулма Шертанова çывхарни хавхалантарать.

– Санăн – иккĕ, санăн виççĕ юлчĕ, – пĕлтерет çаврăма шутлаканни. Ку тĕлтен виçĕ спортсмен умлăхыçлах иртрĕç çав. Репродукторпа судья-информатор та: «Шертановăн иккĕ, Пайăркан виçĕ çаврăм юлчĕ», – тесе хыпарлать. Ураваша асăнмаççĕ, унăн пиллĕк çаврăнмалла. Тен, судья-информатор, эсĕ те ăна тухса ӳкме сĕнетĕн? Виктор халь никама та çĕнтереймест. Вăл – юлашки çын, виççĕмĕш пырать. Намăс пек-и? Çук, эс ху утса пăх-ха тесе калас килет сивлерех пăхакана. Тахçан чемпион пулнă çынна халь юлашки çаврăмсене тухма та йывăр. Кама йывăр мар, Шертановăн та, ав, ури тăлланнă, пĕри халь унран малтан çухатнине туртса илесшĕн тапăçать. Шертановăн финишчен пĕр çаврăм юлчĕ-çке, Пайăркан юлашки çаврăма кайиччен тепĕр ик çĕр метрсем пур çав. Шертанов хăйне çитесрен хăраса стадион урлă пăхать. Викторăн вара, малтисем çула вĕçлесен те, тата виççĕ Ункăламалла. Епле пулсан та чăтмаллах! Дистанцие парăнтарни те халĕ уншăн çĕнтернĕ пекех.

Халăх алă çупнипе Шертанов вăрăм çула вĕçлерĕ, Пайăрка ăна пурĕ пĕр утмăл-çитмĕл утăм кăна çитеймерĕ. Кăштахран Викторăн та çаврăм чăрхи сӳтĕлсе пĕтрĕ.

Герман Саввельевичпа хронометрист судья Пайăрка патне пычĕç те ăна каллех йĕппине чарнă секундомера кăтартĕç: кăçал çеç утма пуçланă çын 20 çухрăма 1 сехет те 36 минут та 59,6 çеккунтра вĕçленĕ – ку вăл

спорт мастерĕн кандидачĕн вăхăчĕ. «Эх, эпир çавăн пек тухаяттăмăрччĕ-ши?» – тесе ăмсанаççĕ Пайăрка Çеркейне Веньăпа Ваня. Вĕсен ĕнер пуйăс çинчен аннă-анман тенĕ пек ăмăртма лекрĕ те, малта пулаймарĕç. Тен, çирĕм çухрăмне аван утса тухатчĕç пуль?.. Финиш хыççăн Виктор та Çеркейпа: «Сăлай перекетлĕ мар сан, вырăнсăр тайкаланатăн, урана хытă аватăн», – тесе калаçрĕ. Вăтăрсенчен иртнĕ спортсмен вăл каланине ăша хывса тăнлать.

Шертанов – хронометристсен пусми çинче. Информатор судйи ăна микрофонпа пĕтĕм стадион илтмелле калаçтарать.

– Ăçта çуралнă эсĕ? Спорта епле иленнĕ? – ыйтать арçын-информатор.

– Пирĕн ял – районта чи тĕттĕм кĕтес тесен те юрать, – мăнаçлăн хуравлать Николай. – Спорт мĕнне унта илтмен, пĕлмеççĕ те. Тренировка тăвакана курсан ухмаха ернĕ çын тесе хăраса тарĕç. Шкул пĕтериччен ăмăртусене эпĕ те хутшăнман. 10 класс вĕренсе тухнă хыççăн кĕрĕшсе ĕçлеме кайрăм, Казахстанри профтехучилищине кĕтĕм, унтан çарта пултăм. Çавăнта спорта иленнĕ. Манăн çитĕнӳсем-и? Хам ĕçленĕ облаçра рекордсмен шутланатăп, «Пучах» обществăн Тĕп Совечĕн чемпионĕ ятне çĕнсе илтĕм. Малалли ĕмĕтсем-и? Малалли ĕмĕтсем пысăк-ха.

Малашне ăçта-ăçта çĕнтерме шутлани çинчен калать спортсмен. Никама та мар, хăй сисмесĕрех вăл Виктор чунне вĕчĕрхентерет, ун сăмахĕсем кĕрешӳре кая юлнă çыннăн пырне шăрпăк килтерсе лартаççĕ. Атăлçи ăмăртăвĕччен мĕншĕн пĕр уйăх-ик уйăх вăхăт çук-ши? Унччен виçĕ эрне çеç çав. Хатĕрленме ĕлкĕрĕши Виктор?

## Вун тăваттăмĕш сыпăк

Тахçантанпах кĕтнĕ ăмăртура ура хырăмне хĕçпе каснă пек çурса пăрахни Земфирăна тĕрлĕ майлă та шухăшлаттарчĕ. Хăй шăпишĕн ӳкĕнчĕ вăл. Спорт тӳпи ăна халь хăй çитсе улăхайман пысăк ту пек туйăнать. Юрать-ха, шăмма тивмен, суран шала каймарĕ, вăраха тăсăлмасăр сипленчĕ. «Уру тӳрленĕ те, рекорд та тăвăнха», – йăпатрĕ ăна врач. Куна вăл суйса каламасть, Земфира кăçалах тепĕр старта хатĕрленме тытăнĕ. Анчах тĕнчери универсиадăна нихçан та ăмăртма каяймасть вăл, çĕр-шыври универсиадăна та тек хутшăнаймасть. Пит хăвăрт иртсе хыçа юлчĕ-çке студент вăхăчĕ! Халĕ хĕрĕн, сывалса тухсан, ĕçлеме тытăнмалла. Чун кĕтнĕ ĕçе хăвăртрах çитесчĕ... Епле кĕтсе илĕç-ши ăна редакцире? Çĕнĕ çынна пуç тӳпинчен пуçласа ура тупанне çити тĕсес йăла пур. Хăй çине пăхнишĕн хальччен ырăмарланнă-и Земфира? Пӳ-си нимрен те катăк мар, чĕлхерен ӳксе юлман, харсăрлăх çитет. Ку палăрăмсем халĕ те çухалман, анчах...

Хăш хĕр хăй илемĕ çинчен шутламĕ? Ура хырăмĕ Земфирăн ĕмĕр çĕвĕллĕ пулса юлать-çке, çĕленĕ çип йĕрĕсем тӳрех палăраççĕ...

Шупашкарта Вутланова хаçат редакцийĕнче ĕçлеме пуçларĕ. Хваттере вăл тĕп урамран инçе мар хăйсем уйрăм çурт лартнăскерсем патне вырнаçрĕ. Кунта тирпейлĕ тăкăрлăк, инçех мар çерем лаптăкĕ пур. Хĕр çак вырăнсемпе ирхи зарядкăра паллашрĕ. Каçсерен ĕçрен таврăннă чух стадиона кĕрсе тухкалать, унта çын е пачах çук, е пĕр-иккĕн кăна чупмашкăн хăнăхаççĕ... Пĕр секторта диск ывăтнине асăрхарĕ, тăршшĕпе çӳллĕшне сикмелли вырăн пушах. Сикессипе хатĕрленмешкĕн нимех те çук, хăйăрĕ çӳхе. Хулара стадион начарри, ăна тивĕçлĕн пăхманни çинчен çамрăксен хаçатĕнче вуланăччĕ Земфира. Лару-тăру çаплах улшăнмасть иккен-ха.

Пĕрремĕш вырсарни кун Земфира спорт тумĕ

тăхăнса стадиона пычĕ те шăм-шака çемçетнĕ хыççăн шул ачисемшĕн «шăл çемми» çӳллĕшĕнчен сиксе каçа пуçларĕ. Вăй пур пек-ха.

Стадион пушах темелле, тӳррипе каласан пачах пушă мар вăл. Икĕ хĕр, авă, çĕр метра вирхĕнет, тепри çавăнтах чăрмавсем урлă чупассипе айхашать. Кунăн барьер урлă йăлтти сикес чух чĕр куççи кăнтаммăн хуçланать те, ăнăçу пулаймасть. Çакна Земфира куçĕ тӳрех асăрхарĕ; хĕр вара ун патне пырса еплерех каçмаллине кăтартрĕ.

Кăштахран стадионра çын татах курăнкаларĕ. Виççĕн хуллен чупкаларĕç те юнашар тăрса утма пуçларĕç. Пĕри вĕсенчен çӳллĕ те тĕреклĕскер. Урава-ша Вутланова çийĕнчех палласа илчĕ, Шертановпа Пайăркана вара пуçласа курать-ха.

Виçĕ çӳревçĕ 400 метрлă çаврăма кашни кайса кил-мессерен канмашкăн чарăнаççĕ те мĕн вăхăт пулнине пăхаççĕ. Секундомера Виктор хăюпа çыхса мăйран çакнă, Шертанов хăй хронометрне алла тытнă. Земфира вĕсем çине хушшăн-хушшăн сăнаса пăхать. Акă, çӳллĕшне сикнĕ чух унăн кашта ӳкрĕ. Çаврăма тин тухнă çӳревçĕсенчен пĕри, чи лутри, канмалла утса пычĕ те урлава карчĕ çине илсе хучĕ.

– Хĕре пулăшас; тен, хăй те пире пулăшĕ, – куçне вылятса пăхать вăл.

– Тавапуç. Сире темпе пулăшмалла ĕнтĕ? – сăмахлать Земфира.

– Ак, секундомер. Пусмалла çеç. Пĕр çаврăма мĕн вăхăтра кайса килетпĕр?

Земфира кулкаласа хронометра илчĕ.

– Эп урлă каштана тепре ӳкернĕ çĕре çитме ĕлкĕрĕр-и-ха эсир? Манăн кашни каçмассеренех ӳкет вăл.

– Капла пирĕн мĕншĕн васкамалли паллă, – кулать лутра çӳревçĕ. Тапранас çула Николай урипе чĕрсе палăртрĕ те:

– Эпир çак вырăна çавăрăнса çитсен чарăр, – тесе хушрĕ.

Виççĕн тăчĕç те, Земфира: «Марш!» – тесен ыткăнчĕç. Малта Шертанов урине вăльт-вăльт-вăльт илтерсе пырать. Виктор юлмасть. Вăтам пӳллĕ çынни, Пайăрка Çеркейĕ, кăшт каярахра чавтарать. Хаш-хаш сывласа ăнтăлаканскерсем тапраннă вырăна çавăрăнса çитрĕç те малалла хуллен утса кайрĕç. Шертанов çийĕнчех каялла таврăнса Земфира аллинчи секундомера илсе пăхрĕ.

– Минут та 43 çеккунт, – сывлăш çавăрнă май каларĕ вăл. Виктор хăй майĕнчен çакнă секундомера пăхать. Чăнах та, çапла иккенне пуçне кăшт сĕлтсе палăртать те сывлăша тарăннăн çăтса кăларать. Шертанов майкăпа трусси вĕççĕн çеç, Виктор трикопа футболка тăхăннă. Футболки шыва чиксе кăларнă пек исленнĕ.

– Тепре кайрăмăр, – терĕ те Николай, виççĕн каллех пĕр йĕре тăчĕç. Земфира вĕсене тапранма команда пачĕ, унтан хăй сиксе каçас урлашка çине пăхрĕ. «Эпĕ те сана ӳкерĕп-и вара?» – тесе ыткăнма хатĕрленчĕ. Хăй ĕçĕпе тăрмашăннă хушăрах вăл çӳревçĕсене те сăнать. Шертанов – ялан малта, Виктор унран юлмасть, Çеркей – хыçалтарахра. Минут та 44 çеккунтра çитрĕç хальхинче вĕсем. «Пĕр пек вăхăтра тухатăр-çке», – тĕлĕнет Земфира. Шертанов чĕнмесĕр ыттисем çине кăмăллăн пăхать. Çеркей вĕсем хыççăн ултă çеккунт каярах çитнĕ.

– Планкăна малтанхинчен пилĕк сантиметр çӳллерех хăпартнă тем, – асăрхарĕ Виктор. Унтан хĕр енне тимлĕн пăхрĕ те: – Курар-ха сире, каçаятăр-и? – терĕ.

– Эп эсир çулра чух тертленĕп. Çын пăхса тăнипе урлашка куçăхĕ тата, – йăл кулчĕ хĕр ун енне кăмăллăн тинкерсе.

– Арăмĕн больницăна кайма вăхăт çитсен те, куçĕ хĕрсенех курать тем, – лаплаттарса хучĕ Николай. Вăл хăйĕн ачи ялта амăшĕн аллинче йĕнине асăнмасть. Земфира çак вăхăтра вăрт çаврăнчĕ те шăлне çыртрĕ, унтан вĕттĕн те вирлĕн чупса планка еннелле ыткăнчĕ, анчах тапса ярас урана кирлĕ вырăна лартайманни-

пе чаранасшăн пулчĕ – ак, хайхи малтанхи сулăмпа хăйăрлă вырăна кĕрсе кайрĕ. Хĕре пулăшма хатĕр Николай, лăп утса пырса, ӳкнĕ шакăлчана çĕртен илчĕ те: «Авланнисем куçăхтарчĕç пулмалла», – терĕ кăнттаммăн. Хăйне хусах пек, ача ашшĕ пулман пек кăтартса, вăл тепри арлă-арăмлă пулнине пĕлтерме васкать. Ураваша ку ырăмарлантарать. Çĕн Çăкасар ачи вара Çеркейпа пĕрле юнашар тăчĕ те «кайрăмăр», – тесе тапранчĕ, кăкăрĕ çинче ун секундомер сулкаланать. Николай вĕсем хыççăн кăшт каярах утма пуçăнчĕ, вĕтĕлти ураллăскер малтисене çитесшĕн хăваларĕ...

Ытти çаврăмсене Ураваш, Шертанова пăхмасăр, Пайăркапа пĕрле тапрана-тапрана кайрĕ. Вĕсем çак унка вун икĕ ăстрăм тухнă тĕле стадиона тепĕр хĕр упраç кĕчĕ те кусем патне çывхарма хăяймасăр Кольăна тем сăмах хушрĕ. «Час, пыратăп», – тавăрчĕ спортсменĕ. Сывлăш çавăрса илмелĕх каннă саматра Шертанов юлташĕсене: «Альăн ашшĕпе калаçрăм: мотоцикл халалласан хĕрне илетĕп терĕм», – пĕлтерчĕ мухтануллăн.

Николай тумланчĕ те хăй Çĕрпӳне ура пуснăпусманах паллашнă хĕрпе тухса кайрĕ.

Уравашпа Пайăрка тата çӳллĕшне сикекен Земфира Вутланова стадионрах юлчĕç. Çӳревçĕсем халь, Шертанов пур чухнехилле мар, черетпе пĕр çаврăм пĕри, тепĕр çаврăм тепри малта ертсе пыраççĕ, кашнинчех минут та 50 – минут та 48 çеккунтсенче тухса 400 метрлă хушша пурĕ çирĕм улттă çаврăнчĕç.

Земфира Вутланова спортăн иккĕмĕш разрячĕн çӳллĕшне сике-сике каçрĕ. Тĕлĕнмелле: тренировкăна çĕнĕрен пуçлани нумай пулмасть пулин те, алли-ури унăн çăмăл-ха, вăйĕ пур пек.

Хваттере тарăнсан хĕрĕн чунра тем ырă марри сисĕнчĕ. Тренировка дневникне çырманран-ши тенĕрен, хĕр ăна çырса хучĕ. Чун çаплах-ха вăркать. Пĕр хушă, шухăша путса, шăп ларчĕ Земфира. Ун хăлхи патĕнче «сăпса явăнать» иккен, вăн-н текен «сăпса» – çав авланнисем тенĕ тӳрккес сăмах – канăçсăрлантарать-мĕн.

Эрне майлă вăхăт иртсен редакцире Вутлановăна: «К. хулине сана яратпăр, унта Атăл çи спортсменĕсен пысăк ăмăртăвĕ пулать, материал хатĕрлесе килмелле», – тесе сĕнчĕç.

Спортсменсем командăна кĕнĕ хыççăн ăмăртăва хăçан, епле тухса каймаллине пĕлме, умри тĕллев пирки канашланма спорт комитетне пухăнаççĕ. Атлетсемпе малтанах паллашас ĕмĕтпе журналистка та унта пычĕ. Çĕн Çăкасар ачи ăна астăвать иккен.

– Мускавра эсирех пултăрччĕ пулас. Утса тухни çинчен каласа пама ыйтнăччĕ. Сире унччен маларах хамăр районта курнăччĕ, – терĕ Виктор хĕр упраça.

– Хамăр енчи çынна ялта чухне тĕл пулнах ĕнтĕ, – тунмарĕ Земфира, вара çавăнтах хăй те сисмесĕрех кăштах хĕрелсе кайрĕ. Унтан хăюлланса: – Ку ăмăртура миçемĕш пулма ĕмĕтленетĕр? – тесе ыйтрĕ.

– Хатĕр мар çав эп. Хăшне-пĕрне шăл çырттармаллаччĕ те, – тавăрчĕ спортсмен тарăхнă туйăмпа.

– Ют хулара ăмăртасси килти мар теççĕ-и-ха ăна? – терĕ сăмах май журналистка.

– К. хули маншăн тăван та, ют та... – пăшăрханнăн пĕлтерчĕ Ураваш. Вара вăл хăйпе калаçакан йăлтăр куçлă, таса сăн-питлĕ хĕр енне мар, аяккалла пăхрĕ; арçын сăнĕнче халь ăшри ӳкĕнӳпе кӳлешӳ тăрать. Çĕн Çăкасар ачин К. хулинче мăшăрланнă çын пуррине, шăпи телейлех те килменнине Вутланова тавçăрчĕ ĕнтĕ.

Председатель пӳлĕмĕнчен коридора хĕвел пек çиçсе пăхакан, нăртă-нăртă кĕлеткеллĕ çын – Сыромятин тухрĕ. «Час пуçтарăнатпăр, ачасем», – сăмах чĕнчĕ вăл унта-кунта кĕпĕрленсе тăнă атлетсене. Ун çумне çакăнта тем хушăра Шертанов çыпăçрĕ. Е пӳлĕмрен пĕрлех тухрĕç-ши вĕсем? Спортсмен хуçапа йăпăлтатса калаçать. «Юрать, юрать, Коля», – çурăмĕнчен лăпкать ăна Дмитрий Николаевич. Ытти атлетсем те пĕрпĕринпе шӳтлесе сăмах ывăтаççĕ, Ураваш шăлне çыртнă та чĕнмест.

Спортра вăйлисене сума сăваççĕ, хавшакраххисемпе вара калаççах каймаççĕ, пач начаррисем кирлĕ те мар. Хальхи атлетсем хушшинче Ураваш ытлашши çын пек кăна туйăнать. Земфирăшăн спорт инçĕшĕнче тахçан асăрханă çакă «çăлтăр» çутах пулмарĕ-ши вара? Е хăй тĕлне пулнă пĕлĕт таткине сирсе тин йăлтăра пуçлĕ-ши вăл?

## Вун пиллĕкмĕш сыпăк

Спартакиада пыракан К. хулине Земфира атлетсем унта килсе вырнаççан тепĕр кунне журналист мандачĕпе пырса çитрĕ. Ирхи стартсене курма ĕлкĕреймерĕ вăл. 100 метра хĕрсем ăмăртса чупнине, 80 метра каçăсем урлă вирхĕнсе ăнтăлнине пăхас килетчĕ унăн. Ирхи стартра чăваш студентки республика рекордне çĕнетнĕ-мĕн, çурма финала тухнă. Çав кăтартăва журналистка ăмăрту экранĕнчи протоколран хăй блокне çырса хучĕ.

Каçхи сулхăн тĕлĕнче стайерсем 10 километра чупса ăмăртрĕç те, пирĕн чăваш ачи медаль çĕнсе илчĕ.

– Çӳревçĕсем епле туяççĕ? Вĕсем пире савăнтарĕç-и? – ыйтрĕ Земфира Герман Савельча курсассăн.

– Ан та калăр-ха. Утларăшпа нимсĕр таврăнсан пире Шупашкарта çын куçĕ умне курăнма та намăс, – терĕ çӳревçĕсен тренерĕ.

Утларăшĕпе ăмăртăвăн виççĕмĕш кунне ирхине сакăр сехетре старта тухмалла-мĕн.

– Сире ман мĕнле уттарса кăларас-ши? – тет хăйĕн атлечĕсене Герман Савельч. – Пилĕк çӳревĕçрен пĕри те медаль илеймесен çынна мĕнле питпе пăхăпăр?

– Мастерсен тăрăшмалла. Пире очко кӳрсен те çитет, – сăмах хушать Веня Савельев.

– Эс шăлна çырт-ха, – чарать ăна пиччĕшĕ.

Шăрăхран шикленсе çуллахи вăхăтра шăтăкран тухман пурăшсем пек, кăнтăр тĕлĕнче пӳртрех кам

мĕнле пĕлнĕ çавнашкал ĕç тупнă атлетсем самантрах шăпланаççĕ.

– Кĕрешӳ çăмăл пулмасть, ачасем. Пурĕ вăтăр çӳревĕç старта тухать. Аслă судья пулма мана çирĕплетрĕç, – пĕлтерет Савельев.

Хăйсен тренерĕ Утларăшра тӳре пулассине пĕлеççĕ-ха ачисем, анчах асли пулĕ тесе шутламанччĕ.

– Ыран апла çĕрелле мар, умалла пăхса пырăпăр, – терĕ Çеркей кăларса пăрахасран ытлашши шикленме кирлĕ маррине туйнăн, вулама тытнă кĕнекине койка çине хурса.

– Утас пулать, ачасем. Таса утмалла, – вĕрентет Герман Савельчĕ. – Шертанов таçта çӳрет çав? Ир валли апат пĕрле хатĕрлемеллеччĕ – пиллĕкре тăрса çиме лекет, – вĕчĕрхенчĕ вăл çавăнтах. – Сирĕтен пĕри медаль илмесен-и ыран?

* * *

Вĕçен кайăк ыйхилле вăранчĕ Ураваш, анчах куçĕ уçăлмарĕ-ха. Тул çутăлнине сиссе вăл халь-халь тăратăп тесе выртать. Çак вăхăра такам алăка пӳрт ум енчен пырса тĕкрĕ. Герман Савельч-мĕн. Вăхăт тăваттă çурă. Каçах хатĕрлесе лартнă тулли кастрюльсене йăтса иккĕшĕ горничнăй пӳлĕмне кайрĕç. Кунта электроплитка çинче вĕсем чăх яшкипе рис шӳрпи тата кофе ăшăтрĕç те, çӳревçĕсем пĕр-пĕринпе ытлашши сăмах та калаçмасăр шăппăн апатланчĕç, вара ирхи çӳçенчĕк хыççăн ăшăрхаса тепре çывăрма выртрĕç. Ытти енпе ăмăртакансем ку вăхăтра йăшаланса тепĕр аяк çине çаврăнчĕç. Пĕри вĕсенчен: «Тĕреклентĕр-и, ачасем? – терĕ те, унăн та сасси ыйхă айне путса çухалчĕ.

Чăнах та çав, утакансен йăли-йĕрки ытти енпе ăмăртакансенчен урăхларах. Вĕсен 20 çухрăма (хăш чух аллă таран) утса тухмалла-çке. Çав вăрăм çул хăйне уйрăммăнах хисеплеме ыйтать. Эс ăна уямастăн пулсан вăл сана хĕрхенсе тăмасть: е кая хăварать, е дистан-

цирен кăларса пăрахать. Ытти енпе ăмăртасси, кашни хăйне майлă чăкăрташ пулин те, сисĕм-туйăм çук пек, чурăсах мар темелле. Спринтер, калăпăр, йăпăрт чупса тухнă хыççăн хăйĕн йĕплĕ пушмакне хывса сумкăна чикме пултарать. Çиçĕм пек самант çиçме пултаратăн та – çитрĕ сана. Стайер та утакан шăпинчех мар. Чупма çапах çăмăл пек. Çын чупать, чупать вăл. Утма вара? Çынна çавнашкал утма каламан пуль? Кам шухăшласа кăларнă-ши ăна? Урана малта кĕле çине лартса, чĕр куççине тӳлетсе чупас хăвăртлăхпа пымалла-çке. Асап кăна вăл. Хăйне асаплантарма шутласа кăларать-мĕн канăçсăр этем. Пурне те пырса тивмест-ха вăл, кăпăр-капăр çын тытаймасть ку «мулкача», чăтăмлисем кăна алпа ярса илеççĕ ăна.

Этем йывăрлăха çĕнтерме çуралнă. Йывăрлăха çĕнтернисенчен ытла чуна хăпартлантармалли япала урăх мĕн пур? Çав мала тухнăшăн панă значок-и? Пĕрремĕш вырăншăн тыттарнă темиçе тенкĕлĕх парне-и? Çавсене илессишĕн кĕрешет-им этем? Грамота-диплом савăнтарать-и ăна? Татăк çăкăр çукран çеç-и океана пĕр кимĕ е сулă вĕççĕн тухса каять тĕлĕнтермĕш тинĕс çул çӳревçи? Пур вĕт-ха ун пеккисем. Ик-виç çын çеç-и çырана çитейменнисем, хаяр океан сахалăшне-и хыпса çăтнă? Чап, ырă ят илĕртсе каять-и çынна çавăнта? Çын чапшăнах вилĕме пуç чикмĕ. Çын пурăнма çуралнă. Çын кĕрешме, çĕнтерме, хăй этем пулнине кăтартма çуралнă. Çĕнтерӳ туйăмĕ, çĕнтерĕвĕн аслă туйăмĕ çынна умалла туртса пырать те ĕнтĕ. Çак япала спортра уççăн палăрать.

Пурте чăтаймаççĕ, пурте çĕнтереймеççĕ спортри йывăрлăха. Этем тенин хăйĕн вăй-халне кăтртмалла. Урампа пыракана хыçран пырса çапса ывтăнтарни мар, ĕç хыççăн киле васкакан çынна усал шухăшпа тĕттĕм кĕтесре сыхласа тăни мар çын вăй-халĕ пурри çинчен калать. Услап та халсăр, сĕмсĕр те имшерри çеç ун пеккисем. Этем вăл, этемех пулсан, хăйĕн вăйĕ иксĕлменнине пурнăçри кĕрешӳре кăтартать. Усал-

тěселпе, йывăрлăхпа кĕрешсе илнĕ таса чăнлăх – этем тунă çутă хăват. Ăна ахахпа та, мерченпе те, ылтăнпа та танлаштарма çук.

Этем халь океан тĕпне анать, космосра çул хыççăн çул уçать. Уйăх çинче этемĕн ура йĕрри пур, ытти планетăсем çине те этем аллипе тунă япаласем çитернĕ.

Çĕр çинчи кĕрешĕ самант лăпланнă-и тата? Çут çанталăк хирмест-и хăйĕн çурăмĕпе этеме, яланах ырă-и вăл пирĕнпе? Çыннисем хăйсем тата пĕр урапа çинче-и? Пĕр тĕнчере-и-ха хальхи этемлĕхĕн чун-чĕри? Этемех пусăмăрлакан мул хуçисем çук мар-и?

Этемлĕх эволюцийĕнче, тĕнче революцийĕнче ăçта-ши спортăн вырăнĕ? Спорт ăмăртăвĕсене хутшăнсасси этемшĕн татăк çăкăр илмелли çăл куç марри çинчен Олимп хартийĕнче те каланă. Спортра вăя тупта-ни – хирте тыр-пул пуянлăхне ӳстермелли вăй, этем чун-чĕрине илемлетекен тĕс. Çакăнта ĕнтĕ шăпах этем эволюцйĕнчи спортăн вырăнĕ. Спорт – пурлăхлă пурнăçри киленӳ.

Этем чи вăйлисене çӳл тӳпере курасшăн. Кам-сем çут çăлтăрлăн палăрĕç-ха унта? Атăл тăрăхĕнчи халăхсен паянхи ăмăртăвĕ Олимп тӳпи патне пырас çулри пысăках мар çут шутланать те ĕнтĕ.

Çĕн Çăкасар ачи малти ретре пулайĕ-ши çак тĕрĕслӳре?

## Вун улттăмĕш сыпăк

Земфира çиччĕ иртсен столовăйра апатланчĕ те саккăр тĕлне стадиона пычĕ. Каçах вăл судья-сен пӳлĕмĕнче кам-кам утассине çырнă протокола илнĕччĕ. Хăш облаçран епле атлетсем çула тухассипе вĕсен номерĕсене пĕлет ĕнтĕ журналистка. Стадионăн ир кӳлĕмĕ çитнĕ. Йыш сахалрах-ха, виç-тăват тӳре те çӳревçĕсем кăна-ха кунта халь. Ăмăртас çыннисем ал-ли-урине хуçкаласа хăйсене чĕрĕ шăм-шаклă та çăмăл

кĕлеткеллĕ туякан пулнă; ав, вĕсем утмашкăн меллĕн хывăнса тăхăннă та кăмăлĕ енчен çула кайма хатĕр утсем евĕр курăнаççĕ. Труссипе майка вĕççĕн ĕнтĕ кашни; урара – камăн мĕн пур, çавăн пек çăмăл тапочка; тата чылайăшĕ хĕвел хĕртнинчен сыхланма пуçа саттин карттус тăхăннă. Стадиона шерпет шыв сутма пынă буфечица турист кепки илсе пынă иккен те, çӳревçĕсем пĕри тепринчен юлмасăр çĕнĕ пуç витти туяннă.

Сакăр сехетчен ик-виç минут кăна халь. Сакăр сехетре сулхăн тетĕр-и? Ку вăл Мускав вăхăчĕпе саккăр. Вырăнти хĕвел вăхăчĕ – тăххăр. Ку самантра ялти кĕтӳ çисе тăранса сулхăнаваскать, пăван çыртнă пăрăва хĕвел çинче самант тăратаймастăн. Шăрăхра ăмăртма мар, пӳлĕмрен тухас килмест.

Çӳревçĕсем – старт йĕрĕнче. Савельев – утас сăлая сăнакан аслă судья – ăмăртăвăн çĕнĕ правилисене аса илтерет, чĕр куççине пĕр самант тӳрлетмеллине те, çĕртен кăшт та хăпас çуккине те калать вăл. Кăçал йышăннă йĕрке тăрăх çӳревçе халь дистанцирен пĕр судья мар, вĕсен ушкăнĕ çеç кăларма пултарать. «Стартранах ан васкăр, чуппа куçасран асăрханăр; шăрăх пулать, çанталăка пăхăр», – вĕрентсе калать хăй те пĕрре мар утнă çын.

Пистолет сасси шаплатнă-шаплатман утакансем урисене умра тӳррĕн лартса вĕтĕлтин та пăркаланчăклăнрах тапранса кайрĕç. Пăхакансене, уйрăммăнах пуçласа куракансене, ку – самаях кулăшла пек; унта-кунта çавăнтах ихиклетсе илекен те тупăнать, тепри хăй тĕлĕннине кӳршине те пĕлтересшĕн вичкĕн сăмах çавăрттарса хурать. Çӳревçĕсем вĕсене пăхмасăр пысăк хăвăртлăхпа пыраççĕ. Кусен асаплă кĕрешĕвĕ каярах «ихиксене» те кулăш çинчен мантарать.

Хĕвел йăнк тăрă тӳперен улăхри çулнă курăка кăвăрч пек ăшаламалла хĕртет, лĕм çил те çук. Çак ыр çанталăк утакансемшĕн хăрушă та ултавлă. Чи йыварри – хĕвелĕн «хĕрлĕ алси» ĕнсерен пуснине тӳсесси. Сана сывлама ку вăхăтра уçă çил те юртса килмест: вăл

хӑй ҫурт хыҫне пытанса ларнӑ, ҫавӑнпа сывлӑш пӑчӑ та вӗри. Ку вӑхӑтра хӑйӑр ҫине тӑсӑлса выртмалла та Атӑла чӑммалла ҫеҫ, ҫӳревҫӗ, ав, такам туя тыттарнӑ евӗр, стадионри ҫулпа авӑн лашилле ҫавӑрӑнать: 400 метрлӑ ункӑра 50 хут явӑнса 20 километр шутне ҫитермелле унӑн. Тискер кайӑкран та нумайӑшӗ вӑл хушша тӳсес ҫук. Этем чӑтать, этем вӑл чӑтӑмлӑ пулма ҫуралнӑ.

Пысӑк йышран пурте пӗр тан вӑйлӑ мар. Пӗрин тӗплӗнрех хатӗрленме май килмен пуль, тепри ытларах тертленнипе стартччен ывӑнма пултарнӑ, виҫҫӗмӗшӗ вӑхӑчӗсӗрех «ҫунса кайнӑ».

Ҫӑкӑр кӑмакаран тачка тухсан ҫиме кӑмӑллӑ мар, икӗ питлӗ пулсан та унӑн перекечӗ ҫук, ҫавӑн пекех шӑмшак канса илмесӗр ытлашши хуҫӑлни те сортсменшӑн тренировка тӑвайман майлах сиенлӗ. Викторӑн старт умӗн хӑнӑхни ытлашши пулас ҫук-ха, ӑмӑртӑва епле хатӗрленсе тухмаллин майне-йӗрне пӗлет вӑл. Шел, кӑҫал утни-юртни ҫителӗксӗр унӑн, тепӗртаках вӑй пухнӑ пулсанччӗ те...

Малта кам тетӗр? Малта – Шертанов! Иртнӗ стартсенче пӗрремӗш пулса киленнӗскер, вӑл халӗ те вӗтет ҫеҫ. Пан е пропал – ун тӗв туни. Енчен хӑйне чупать тесе дистанцирен кӑларас тӑк, вӑл, республикӑна таврӑнсан: «Мана Герман Савельч кураймасть, хӑйӗн рекордне ҫӗнетессинчен хӑрать те ҫавӑнпа уттармарӗ», – тесе калама пултарать. Ӗнентерет вӑл комитет председательне. Ыттсене те ӗнентерме пултарать. Чӗрӗ сӑмаха кам ан ӗнентӗр ара? Шертанов суеҫтерме, пакӑлтатма ӑста, епле каласан епле ӗнентере май пуррине чухлатех пуль.

Ан тив, сивлӗпӗр-и те хӑйне вӗҫкӗнрех тытакан ачана, ҫав хушӑрах унӑн паха енне те палӑртмаллах: епле хастар кӗрешет вӑл! Тактика тени ҫакӑн хӑйне евӗр. Тактика арсеналӗ унӑн чухӑн-ха, ҫапах та ачине кӑпӑр-капӑр мӑкӑлтаймастӑн. Хӑй юрттипе ҫӗнтерӳ патне пыма пултарать спортсмен. Николай халь хӑйне аван туять. Ҫӗнтерес тӗллевре ҫакӑ уншӑн ҫителӗклӗ.

Уравашӑн ҫарта чух ҫирӗпленнӗ тактика. Тепӗр спортсмен – Пайӑрка – утма тытӑниччен йӗлтӗрҫӗ пулнӑ, ҫавӑнпа тренировка тӑвас мелӗ те, кӗрешес сӑлайӗ те унӑн йӗлтӗрҫӗрен куҫнӑ. Вӑя вӑл хӑйӑр ҫинчи шыв сӑрхӑннӑ пек перекетлесе кӑларать. Ҫамрӑксен «кикирикне» каҫӑртаслӑхӗ пур ӗнтӗ, теприсем шикленеҫҫӗ теха.

Ытти командӑсенчи ачасем вара? Хӑшӗн мӗн пуррине тытӑҫса пӑхмасӑрах пӗлме ҫук.

Шертанов пырать, пырать, пырать ҫеҫ илтерсе. Ӑслӑ тееймӗн тӳрех ҫапла ума ӳкнине. Анчах ӑнӑҫлӑх тепӗр чух ӑслӑ ҫын туманнине пурнӑҫланипе килет. Халь тытӑннӑ пек кайма пултарать Николай. Хӑй вӑйне шанать вӑл. Тата ҫаксекер ак мӗне шанать: ҫанталӑка, хӗртсе пӑхакан вӗри хӗвеле. Ачи ку тахҫан Казахстанра пурӑннӑ, хӗрӳ хӗвеле сахал мар чӑтнӑ, шӑрӑха хӑнӑхнӑ. Халӗ Николай карттус та тӑхӑнман. Карттус хӗвел пайӑркисене тытать пулин те унпа пуҫа пӑчӑ, хӗрӳ кӗрешӳре ӳте-пӗве шӑпах уҫӑ кирлӗ. Шӑрӑха чӑтма пултарать Николай шӑм-шакӗ.

Ҫапла, ушкӑнран уйӑрӑлса умра «вӗҫрӗ, вӗҫрӗ хур кайӑк». Вӗҫрӗ Николай. Хӑшӗсем вӑл «татӑлса» анасса кӗтрӗҫ – ҫын «татӑлса» анмарӗ. Теприсем ӑна тӳресем тытса чарасса шанчӗҫ. Чимӗр-ха, мӗншӗн ҫав териех ирӗклӗн «вӗҫтереҫҫӗ» ӑна?! Ҫӗр-аннерен уйӑрӑлмасть-и вӑл? Икӗ ури те харӑс сывлӑша ҫӗкленмест-и унӑн? Мӗншӗн чармаҫҫӗ, утларӑш шутӗнчен кӑлармаҫҫӗ ҫапла пыракана?

Малтине судья ҫеҫ мар, такам та куҫ хывать. Николайӑн утти «таса маррине» пӗр судйи тӳрех асӑрхарӗ-ха, малтан ним шарламасӑр тӗплӗнрех сӑнарӗ, юлашкичен Савельев патне пычӗ те: «Виражра вӗтӗлтетсех чупать ҫав ача», – терӗ. Герман Савельев хӑй те Шертанов ҫинчен шутлать. Ӑна кӑларса пӑрахсан чӑвашран кам медаль ҫӗнсе илӗ-ши? Виҫҫӗмӗш вырӑна йышӑнакан та пулмӗ. Утакансен вара республикӑна епле питпе таврӑнмалла? Шертенова мӗнле пулсан та

тӳрех кăларса пăрахма юрамасть. Çавăнпа Савельев иккĕмĕш судьяна:

– Манăн-ха вăл... Асăрхаттарăпăр, – тесе пĕлтерчĕ. Виççĕмĕш судья, вырăнти çын, старик:

– Утать-ха çын. Уттăр, – тесе хирĕçлерĕ.

Чăн та, пурин куçĕ те Шертанов уттин кăлтăкне кураймасть. Урине тӳрлетет Николай, кроссмен пек чупмасть. Шаплаттарса чупнине çеç чупать теççĕ теприсем. Çав хушăрах утакана та чупать текенсем тупăнаççĕ.

Хăйне ирĕклĕн туйнă çын ыттисенчен çĕр-çĕр аллă метр ытла тарчĕ. Утакансенчен, Ивановапа Калинин облаçĕсен ачисем, Савельева çилленсех:

– Хăçан чупма чаратăр эсир Шертанова?! – тесе иртрĕç.

Савельев вара Шертанова асăрхаттармашкăн иккĕмĕш судьяна хушрĕ. Çырнă хут информатор аллине те çитрĕ. Ку вара темле ырă ĕç тунăн хаваслă саспа (çĕнĕ рекорд çинчен ун пек каламĕ çав): «125-мĕш номер, Николай Шертанов, Чăваш АССРĕ, пĕрремĕш асăрхаттару илчĕ, – тесе пĕлтерчĕ.

Пĕрремĕш сăмах кирлĕ мар кунта, иккĕмĕш хут асăрхаттармаççĕ – çулран кăлараççĕ.

Шертанов кăпăр-капăрах хăраса ӳкекенниех мар, çаплах вирхĕнет.

Хĕвел вирлĕн пусса ӳтрен шыв пăчăртаса кăларать те çийĕнчех типĕтет, хыткан ӳте вара кусарпа хырмалăх тăвар хĕвĕнет. Çулри лаша кăпăкланнине курнă пуль, çавăн пекех утавçă спортсменăн та – ĕнсепе кăкăр тавраш ĕ шап-шурă кăпăк, шап-шурă тăвар ӳт çине йăрăммăн-йăрăммăн ларнă. Тута-çăвар, пит, куç хупаххи шурă тарпа витĕннĕ. Çын çăварне карнă та хашлаттарса сывлать, çапах аллине енчен енне сулласа урине çивĕччĕн илтерсе пусать. Ĕçлет çын. Кĕрешет. Пĕр шухăш унăн – финиша çитесси. Ыттисенчен е камран та пулсан маларах çитесси. «Пан е пропал» – Шертанов пуçĕнче. Мухтамалла мар-и ăна çакăншăн? Çын кĕрешет! Вăл кĕрешме тухнă!

Тĕп ушкăн, унта пурĕ çичĕ çын, Шертанова куç илмесĕр хыçран хăвалать. Пĕтĕм ассем, пур мала тухма ĕмĕтлисем, вăй-халран пĕр пеккисем кунта. Вĕсем Шертанова çаплах мала тарса каймĕ тесе шанчĕç. Анчах йăнăшрĕç. Мĕн шанманни! Хăвăртлăхĕ ытла пысăк-и? Кашни километра пилĕк минута яхăн вăхăтпа иртеççĕ. Пĕрремĕш разряд вăхăчĕ çеç вăл. Хĕвелсĕр пуçне çивĕчлĕхе тамалтараканни – хĕрсе кайнă резина битум. Çаврăм çула сарнă çав хутăш çемçелчĕ те ура пуснипе лапчăнса путакан пулчĕ, çакă урана хăвăрт таптаратса ямасть. Ку вăл Шертановшăн шăпах майлă килсе тухрĕ. «Резина çинчи пек çулпа пынă чух ик ура часах çĕртен харăс уйăрăлмасть», – шутларĕ вăл. Тĕрĕс шутларĕ. Ик çĕр метр ытла малта пырать хайхискер. Ачи шӳтлеменнине чи малтан Калинин облаçĕн атлечĕ туйрĕ. Анчах вăл, çинçе пӳллĕ те хытканрахскер, пысăк ушкăнран хăй мала тухасшăн пулмарĕ, çын хыççăн пыма ĕмĕтленчĕ. Кускер пĕчĕккĕ чух вăрçă инкекне лекнĕ, çавăнпа кăштах хытă кайсанах уксакла пуçлать. Ахаль куça асăрханмасть çакă, врачсем те палăртаймаççĕ. Спорт утăмĕпе пит хăвăрт пынă чухне вара хăрах ури тӳрленсе çитеймест, çавăнпа судьясенчен шикленет вăл, ушкăн врринче хӳтĕре пыма тăрăшать. Ăна халь Шертанов тарни кăсăклантарать. Хыпăнса пыраканскер пĕр-ик хутчен те:

– Ачасем, ĕçлес пулать. Хаваслăрах, – тесе каларĕ.

Виктор ку ушкăнри атлетсене лайăххăн пĕлмест. Хăшĕн вăйĕ епле шайрине, хăшĕ епле кĕрешме пултарнине çын каланă тăрăх çеç чухлать. Ушкăна вăл хыçалта сăнаса пырать. Анчах умрисен ури çине пусас мар, каях та тăрса юлас мар тесе виражăн тул еннерех пăрăннă.

Çинçешке çамрăк каллех хăй умĕнчисене вăрçать:

– Ачасем, ĕçлемелле пуль...

Куна вăл Иваново облаçĕнчи хĕрлĕ майкăллă атлета мала кăларас тĕллевпе калать-ха. Лешĕ, кăшт лутра та çăмарта евĕр чăмăрскер, çакна сиссех тавăрать:

– Тух-ха мала ху!

Çакӑн пек чух кам та пулсан чӑтаймасӑр вирхӗнсе тухма кирлех. Ушкӑн тӑршшӗпех пӗр улшӑнусӑр пыраймасть, çитменни çине тата малта тараканни пур – Шертанов. Кунашкалах пырсан вӑл çаксене пӗр çаврӑм хӑваласа çитме пултарать. Çапла чӑтаймасӑр вирхӗнсе тухаканни никам кӗтмен-туман çӗртен Виктор Ураваш пулчӗ. Вӑл васкавлӑн вӑрӑм утӑпа виражран иккӗмӗш çулпа мала ӳкрӗ, вара тӳрех карӑнтарнӑ ухӑран тухса кайнӑ çӗмрен пек вирхӗнчӗ. Самантрах татса хӑварчӗ ушкӑна, самантрах хӗстерчӗ Шертанова. Лешӗ каялла пӑхма пуçларӗ.

Ураваш уйӑрӑлса кайсан Иваново облаçӗн ачи, хитре утаканскер, тапранчӗ, унтан – хайхи хыткан та çинçереххи; вӗсем те пӗтӗм вӑйран ӑнтӑлаççӗ – тытӑçура халь кам-кама тени пуç пулчӗ. Кусем хыççӑн Пайӑрка туртӑнчӗ. Ушкӑн татӑлса, вӗçе-вӗçленсе кайрӗ.

«Пулчӗ. Ураваш Шертанова тытсан Шертанова кӑларма та пулать, паян малти виçӗ çынран пӗри чӑвашран пулмаллах», – шутларӗ ку самантра Савельев. Земфира, çаврӑм çул айккинче тӑраканскер, ентешӗ çине пӑхса савӑнать: епле хитре пырать Виктор, Мускавра çапла ыткӑннӑччӗ вӑл, финиша пуринчен малтан çӗмрен пек çитнӗччӗ. Халӗ те çавӑн чухнехи пек ӑнтӑлать Çӗн Çӑкасар ачи.

– Виктор, Николая çывхар, – хавхануллӑн сӑмах хушать ентешӗ хӑй тӗлӗнчен иртнӗ чух Земфира. Ытти куракансем те Ураваша: «Атя, çит малтине», – теççӗ. çаврӑм шутне палӑртакан судья та чӑтаймасӑр:

– Инçе мар, умрине çывхар! – тесе кӑшкӑрать.

Виктор хӑюлӑхӗшӗн нумайӑшӗ хӗпӗртенӗ темелле, анчах пӗр çын çеç урӑхла шутларӗ: «Ӑçта сирпӗнтӗн? Мӗншӗн кӑштах тӑхтамарӑн? Епле асӑрхаймарӑм эс тапранса кайнине? Еппе калаймарӑм сана?» Çапла шутлаканни кӗрешӳ çулӗ çинчи Пайӑрка Çеркейӗ пулчӗ. Вӑл ӑна кӑшкӑрсах чарасшӑнччӗ, анчах ӗлкӗреймерӗ: ытла кӗтмен-туман çӗртен вирхӗнчӗ-çке лешӗ.

«Юрать-и çавăн пек ăнтăлма?! Юрать-и кĕске вăхăтрах чылай малти çынна тӳрех хĕстерме? Йĕлтĕр спортĕнче кун пеккишĕн час ларса макăрăн. Çирĕм çухрăма утасси те çаплах пулмалла», – тесе шулать Çеркей. Чăнах та, атлет хăйĕн хăвăртлăхне чăтаймарĕ, вĕçекен ухă йĕппин траекторийĕ çĕрелле усăннă пек, çын тамалчĕ. Вара ăна кĕçех чăмăр кĕлеткеллĕ çамрăк, унтан хыткан пӳлли хуса çитсе иртрĕç, Пайăрка çитрĕ. Çеркей кăшт ӳпкевлĕн: «Ăçта тапрăн? Тухса ан ӳк!» – тесе шеллерĕ.

Виктор халь Çеркей хыççăн та тытăнса пыраймарĕ. Тепĕр хушăран Иваново ачи Шертанова çитрĕ. Ирттерчĕ Николай ăна. Нумайăшĕ Шертанов пĕтрĕ тесе шутларĕ, анчах кăлăхах иккен. Вăл умри хыçĕнче кăштах канса пычĕ те каллех мала ӳкрĕ. Ăна çитесшĕн вăйне панă хĕрлĕ майкăллă çӳревçĕ халне çухатса юлчĕ, унтан пĕрремĕшне сенкер майка тăхăннă леш çинçешке те хыткан атлет хăвала пуçларĕ.

Виктор тăвăнса çитрĕ. Хĕвел пусать, пăчă, сывлама йывăр. Стадионăн пĕр кĕтессинче Атăл енчен халь вăш çил килет, çав тĕле çавăвăрăнса çитсен шăмшака уçă пек: кунта йывăç мĕлки те ӳкнĕччĕ, хĕвел хăпарнă май мĕлке те кĕскелсе пăрăнчĕ. Юлашкинчен çавăнти вăштăр çил те йывăç çулçи çине вырнаçса ларчĕ. Çӳревçĕсем сехет çурă ытла стадионри çулпа çавăрăнаççĕ. Çак вăхăтра пĕр-иккĕшĕ кĕрешӳ çулĕнчен аякка пăрăнчĕ. Тата кăштахран тепри тухса ӳкрĕ. Викторăн та (ăмăрту-качку!) алă сулса пăрăнас килет. Çак вăхăтра çул айккинче вăл «çынсем çĕнтерӳшĕн чунне параççĕ, эсĕ командăна очко кӳрейместĕн!» текен хаяр сасса илтрĕ. Евгений Маскалов хăй вĕрентнĕ ачана ятлать иккен. Ун сăмаххи Виктора та тивнĕн туйăнать. Ураваш вара, чарăнас тенĕ çинчех чарăнмасăр, спортсменсем калашле, «тухса ӳкмесĕр», асаплăн малалла утрĕ.

Ăмăрту – ăмăрту вăл, çыннине килĕштерсен-килĕштермесен те, паянхи паттăр Николай Шертанов пулчĕ, финиша вăл пĕрремĕш çитрĕ.

Кĕрешӳ пĕтсен çулра вĕчĕрхеннĕ леш çӳревçĕсем Шертанов пирки: «Чупма чармарĕç ăна», – тесе ӳпкелешрĕç. Иваново область тренерĕ те Савельева: «Хăв ĕçне тĕрĕс тумарăн», – терĕ тӳррĕнех. «Эп пĕччен пулман. Асăрхаттарассине те эп сĕннипе асăрхаттартăмăр», – тӳрре тухать Герман Савельев. Кунта тепĕр япалана асăнмалла: Савельев хăйĕн тăван шăллĕне, лешĕ командăна нимĕнле усă та парайманнине курсан, «уксаклать» тенĕ сăлтавпа дистанцирен кăларчĕ. Кала халь тӳрене ĕçе тĕрĕс мар тунă тесе! «Ăна (Шертанова ĕнтĕ) кăларас тесен кăларма та пултарнă, кăлармасан та хирĕçлеме çук. Татăклă сăмах кунта – тӳресенче», – терĕ мăкшă тренерĕ Маскалов, пухăннă ушкăн патне тин çитсе тăнăскер. Ятлă-сумлă çын калани вĕчĕрхенӳ чунсене самантрах лăплантарчĕ.

Утса тухнисем халь тăвар çинче йăвалантарса типĕтнĕ пулă пек курăнаççĕ. Буфетри шерпет шыва вĕсем кашниех пĕрре мар, иккĕ те мар, виçшер кĕленче туянса ĕçрĕç. Пĕр кĕленче, ик кĕленче шыв мĕн вăл – çăвара йĕпетмесĕр анса каять; кăшт тăхтатăн та каллех ĕçес килет.

Земфира Вутланова Шертановпа пĕрлех Виктора та саламалать.

– Маттур, командăна очко патăн, – тет вăл ăна мухтаса.

Ураваш патне Маскалов пычĕ те:

– Мĕн, эс хальччен утса курман пек вирхĕнтĕн?! – тесе вăрçрĕ. – Сан вырăн малти виçĕ çын шутĕнчеччĕ. Ĕçлемелле сан, олимпиец пулмалла.

Виктор хăйне ыр сунса каланине ним чĕнмесĕр тăнлать. Чĕрĕ куçĕпе пĕр вырăна тинкерсе тарăн шухăша путнă ентешне Земфира каллех, пуçласа курнă пек, ытарайми тинкерет.

...Мунчара çăвăнса тухса столовăйра апатланнă хыççăн Виктор Çеркейран: «Кивçен укçа параймăн-ши, пĕр улт-çичĕ тенкĕ?» – тесе ыйтрĕ. Вакки пулманран Пайăрка ăна вун тенкĕлĕх хут укçа кăларса тыттарчĕ.

Виктор вара юлташне хӑй ӑмӑртнӑ тумне чикнӗ сумкӑна пачӗ те пӗчченех, хӑна ҫуртне таврӑнмасӑр, хулан тӗп урамӗ еннелле уттарчӗ. Апат-ҫимӗҫ магазинне кӗрсе тем илчӗ те вӑл ҫийӗнчех тухрӗ, унтан универмагӑн «теттесем» уйрӑмне пычӗ. Кунта тӗрлӗ ҫулхи ачасем валли темӗн тӗрлӗ шӑкӑр-макӑр куҫа шартарать, кашни япала хӑйне тыттарса пӑхтарасшӑн пек туйӑнать. Хальччен лавкка теттипе ытла нумаях айхашман Виктор. Куккӑшӗ пӗртен-пӗр япала – лӗпӗш урапа – илсе панӑччӗ. «Тепре таврӑннӑ чух машина илсе килетӗп», – тесе астарнӑччӗ вӑл пӗчӗк ачана. Лӗпӗш урапа кивелсе тӗссӗрленчӗ – куккӑшӗ вӑрҫӑ хирӗнчен таврӑнаймарӗ. Вутӑ сыппине машина вырӑнне шутласа урай тӑрӑх тӗксе ҫӳренине астӑвать Виктор. Шакӑртаттарса вылямалли тӗрлӗ ҫаврашкасемпе чӗр чун кӳлеписем хушшинче шӑпах лӗпӗш урапа куҫа курӑнса кайрӗ: Виктор ача чухне вылянӑскер евӗрлех хӗрлӗ тӗслӗ, ун ҫинче пӑч-пӑч хура пӑнчӑсем пур. Кустӑрми те Виктор вылӑнӑскерӗнни пекех, ҫунатти те ҫапать. Сарӑрах шурӑ авӑрлӑ. Анчах ӗлӗкхинчен тем енпе палӑрмаллах уйӑрӑлса тӑмасть-и? Ара, Виктор ӗрӗхтерсе кустарса ҫӳрени пысӑкрах пекчӗ-ҫке, ку самях пӗчӗккӗ туйӑнать.

– Пысӑкраххи ҫук-и? – тесе те ыйтрӗ япала суйлакан ҫын.

– Ҫук. Миҫе ҫулхи ача валли кирлӗ сире? – терӗ сутуҫӑ хӗр.

Виктор тинех хӑй пысӑк пирки тетте пӗчӗккӗ туйӑннине тавҫӑрчӗ. Тепӗр сентре ҫинче – тӗрлӗ машинӑсем: «Москвич» та, «Волга» та пур кунта. Самосвалсемпе кранпа ӗҫлемеллисем те лараҫҫӗ. Виктор шӑпах кран кармашнӑ машинӑна килӗштерчӗ. «Ашшӗ строитель пулнине пӗлтӗр», – терӗ вӑл ӑшӗнче. Туяннӑ япаласене сутуҫӑ хут курупкӑпа ҫыхса пачӗ.

Урама тухсан кӑшт пырсанах вӑл тӑпах чарӑнчӗ: «Ара, Надя ывӑл мар, хӗр ҫуратнӑ пулсан хайхи?» – пырса кӗчӗ пуҫа шухӑш. Анчах ҫын каялла таврӑнмарӗ – малалла уттарчӗ.

Йăпăрт кĕретĕп те йăпăрт тухатăп тенĕ шухăшпа Виктор хăй пурăннă çурт тĕлне çитсе тăчĕ. Хапха умĕнче вара унăн ик ури тăпах чарăнчĕ. Пĕр хушă ним тăва пĕлмерĕ çын. Каялла таврăнасси те килчĕ çакăн. Анчах алă хапха шашулккине уçрĕ-уçрех, арçын вара кил хушшине, унтан пӳрте кĕрсе тăчĕ. Надя сĕтел хушшинче йĕппе-çиппе тем çĕлесе ларать. Виктора вăл, йĕппине аллинче тытнипех, пĕр хушă чĕнмесĕр тинкерчĕ. Пичĕ шуранкаланă унăн, кăштах туртăннă – çăмăллани паллă. Виктор сывлăх сунса кăштах малалла иртсен Надя тăчĕ те кăшт ютшăнарах хирĕç пычĕ. Упăшкине алă парсассăн вăл пуçне ун кăкăрĕ çине хурса ĕсĕклесе макăрса ячĕ. Арçыннăн кăмăлĕ çемçелмерĕ-ха, вăл çаплах хăрах аллипе хуп курупкăна тытса тăрать. «Ăçта-ши ачи?» – куçлать вăл пӳрт ăш-чиккине. Пепкене Надя чăпăл кĕртнĕ хыççăн типтерлĕн чĕркесе вырăн çине хунă-мĕн. Пичĕ çаврака, тутине чăп тытнă калăп пекскер. «Гриша ятлă», – пĕлтерчĕ Надя. Викторăн чунĕ лăштах пулчĕ. Хăй вăл – Виктор Григорьевич, ку Григорий Викторч пулать апла. Виç эрнери ачана урăхларах теттесем кирлĕччĕ пуль-ха та, анчах ашшĕ ывăлне куриччен ăна-кăна тĕшмĕртеймен çав.

«Шил-тик, шил-тик, шир-р-р», – илтĕнчĕ сас пӳртре.

– Кайăксем пурăнаççĕ-çке, – терĕ Виктор.

– Ăçта кайччăр ĕнтĕ вĕсем? Анне хăех апат парать, пăхса киленет, – терĕ Надя тунсăхлăн.

– Сутса яр вĕсене.

– Мĕншĕнех вара? Пурăнччăр-иç.

Хунямăшĕ килте çук. Халĕ вăл магазинра тавар йышăннă, ăна чĕркесе çыхнă çĕре куçнă-мĕн.

Виктор кучченеçсене сĕтел çине кăларса хучĕ те, мăшăр пĕр хушă çума-çумăн калаçса ларчĕ.

– Ăмăртăва килтĕм. Шупашкарта пурăнатăп, – пĕлтерчĕ арçын.

– Елена Петровнăна куртăм. «Ĕçлеме кунтах килтĕр», – терĕ, – упăшки таврăнасса шанса калать Надя.

– Шупашкарта, тен, хваттер парӗҫ. Ун чух Гришӑпа иксӗре те илсе кайӑп, – хӑй шухӑшне пӗлтерет Виктор.

– Пурӑнма хамӑр патрах тӑвӑр мар, – сӑпайлӑнах сӑмахлать Надя.

– Маншӑн тӑвӑр, – тавӑрать Виктор арӑмӗ кӳренессе пӑхмасӑрах.

Васкамаллиех ҫук-ха арҫыннӑн. Васкамарӗ вӑл. Пӗртте васкамарӗ. Ачи вӑрансан ӑна тытса ларчӗ. Юлашкинчен хунямӑшӗ халь-халь ҫитсе кӗрессӗн, ятлаҫу пуҫӑнассӑн туйӑна пуҫларӗ. Курас марччӗ ҫавна, паян ку таранччен куҫпа курӑнмарӗ пулсан! Кил хуҫи пулма пӳрмен ҫын сыв пуллашса пӳртрен тухрӗ-тухрех. Кӑмӑлӗ пусӑрӑннӑ Надя хыҫран мӗскӗннӗн пӑхса юлчӗ. Тӑкӑрлӑкран тӗп урама пӑрӑннӑ чух тин Викторӑн чунӗ кӳтсе килчӗ. Ӑмӑртура малта пулайманни мар, хӑй ҫемйи ҫакӑнта юлни, ӗнсерен такам чулпа ҫапнӑ пек, вӑйран тайӑнтарчӗ; шӑрӑхра ҫирӗм ҫухрӑм туртӑшса утнӑсерӗн шӑм-шак халь типӗ хӑмӑш пек ленчешкеленчӗ. Вара ҫын хура вӑрман пек йывӑҫлӑ парка кӗрсе сак ҫинче чылайччен ним хускалмасӑр ларчӗ.

## Вун ҫиччӗмӗш сыпӑк

«Метеор» Атӑл шывне ҫурса Шупашкаралла вирхӗнет. Ҫыранта сип-симӗс вӑрман, шурӑ е сарӑ тӑрӑллӑ ҫуртсем, лапама е тӳпеме вырнаҫнӑ ялсем юлаҫҫӗ. Ку ҫулпа пӗрремӗш хут ҫӳретӗн пулсассӑн чӗрӗ ӳкерчӗк ҫинчен кӑшт та куҫ илеймӗн, ялан ҫул ҫӳрекен те вӑхӑт-вӑхӑт ку е тепӗр ҫырана ытараймасӑр сӑнать-сӑнатех. Суднӑри ҫынсен пурин те пӗр ӗҫ – каясси. Анчах кунта кашни хӑй тепӗр ӗҫ тупать: пӗри пуҫ илмесӗр ҫыранпа киленет, тепри хаҫат вулать, виҫҫӗмӗшӗ кресло ҫинче канлӗн анаслать. Пӗчӗк ачине теттепе вылятакан та, кӳршине хӗрсех тем ӑнлантаракан та пур. Палуба ҫине тухаҫҫӗ хӑшӗсем, кӗреҫҫӗ, пач чӗнменнисем

хушшинчех иртен-тăвакана, кашни хускалнă çынна, мĕнлескер-ши ку тенĕ пек, пĕлесшĕн куçĕпе тинкерекен те пур.

Паянхи йышра – çурри ытла Атăл çи ăмăртăвĕнче пулнă яшсемпе хĕрсем. Вĕсенчен пĕрисем çырана пăхса йăпанаççĕ, теприсем тăватшарăн е ултшарăн пĕрлешнĕ те домиолла е картла çапаççĕ. Шертанов, çирĕм çухрăма утса çĕнтернĕскер, çамрăксем хушшинче хăйне пĕртен-пĕр паттăр пек туйса ларать. «Халь манăн финалта çĕнтересси кăна юлчĕ. Унтан вара Олимп вăййи те инçе мар», – тет вăл алла домино тытнă вăхăтра. «Финалта сана ун пекех чуптармĕç-ха», – тесшĕнччĕ Виктор, аякра лараканскер, анчах чĕнмерĕ, тăчĕ те пăрăнса уттарчĕ. Шăм-шакĕ унăн тем муталаса тăкнă пек сăрлатать, чунĕ таçта хĕсĕнсе ларнă евĕр тăвăннă, пырта тем мурĕ йĕпхĕртет. Вĕри мунча чулне сивĕ шывпа сапса чашлаттарсан ăшши тапса тухать, çавăн пекех халь, Олегсемпе е Петушковсемпе ĕçнĕ чухнехине пĕр стакан çавăрса хурсан пыр хĕрни те сивĕнессĕн, çан-çурăм та милĕкпе çапăннă евĕр калнĕхленессĕн туйăнать. «Талăк укçи тенине пачĕç-ха», – терĕ те Виктор буфет вырнаçнă салона тухрĕ. Черет вĕçĕнче шăпах хăйĕн ентешĕ Земфира тăрать-мĕн.

– Кăштах çырткалас тетĕр-и? – сăмах хушрĕ Вутланова.

– Ăш хыпать. Кунта «перцовка» пур ав, – палланă хĕр умĕнче тунса тăмарĕ Виктор.

– Спортсменсем ĕçеççĕ-и вара? – чеен кулса ыйтрĕ Земфира.

– Теплерен пулкалаканччĕ çав. Пачах сыпмастăп тенĕччĕ-ха, анчах, ав, кăшт кулянмалли пулсанах çăвар типсе каять те... – тӳрре туханçи пулчĕ Виктор.

– Ĕçке ярăнма çăмăл теççĕ, ĕçессинчен тытăнса тăма вара пысăк хăват кирлине калаççĕ, – сăмахларĕ Земфира вашаватлăн. – Мала тухайманнишĕн унашкалах кулянма кирлĕ мар.

– Вăл çеç-и? Хулара манăн ывăл юлчĕ вĕт-ха. Çемьене

хăвартăм, – хыпăнчăклăн пĕлтерчĕ Çĕн Çăкасар ачи.

– Вăхăчĕпе мирлешĕр те ак, каллех пĕрле пулăр. Кашни кулянмассерен алла стакан тытсан мĕн пулса тухĕ вара? Ĕçни усă кӳрĕ-и?

Хăйне ыр суннă сăмаха хăлха çумĕнчен irттерсе ярас темесĕр Виктор та Земфирăпа пĕрле шерпет шыв кăна туянчĕ.

– Лайăх ăмăртрĕç пирĕн чăваш ачисем. Шертанов, ха, илтерчĕ çеç вĕт, çĕнтерчĕ, – терĕ Земфира калаçăва çăмăллатас тĕллевпе.

Çакна илтсен Виктор хăйне вĕри шывпа чашлаттарнă пекех туйрĕ.

– Тепĕр ăмăртура çурăма та кураймасть манăнне вăл! – тесе хучĕ Çĕн Çăкасар ачи шăлне шатăртаттарса.

– Кĕтетпĕр. Хамăр енчисем çĕнтернине манăн та курас килет, – сăмахларĕ Земфира çепĕççĕн.

– Хăвăр та ăмăртăва тухма хатĕрленетĕр пуль-ха? – хĕре куçран чăрах пăхса кăмăллă саспа ыйтрĕ Виктор.

– Унччен нумай тертленмелле-ха, – йăлтăр куçне тартмасăр хуравларĕ Земфира.

– Кĕрешӳ-терт хăратма кирлĕ мар, вăхăт пултăр çеç, – калаçаканпа пĕр чĕлхе тупнă пек килĕшсе пĕлтерет хăй шухăшне Виктор. – Тата чуна хавхалантарса тăракан çын та кирлĕ, – хушса хучĕ вăл ăшă саспа палуба çине тухсассăн.

Викторăн сарлака хул-çурăмĕпе таса сăн-пичĕ авланман каччăнни пек курăнать, кĕскен кастарнă çӳçне çил варкăштарать, вичкĕн куçĕнче Атăл хумĕ чӳхенет. Викторпа юнашарах хăва хулли пек йăрăс пӳллĕ хĕр упраç тăрать, кĕрен тĕслĕрех чечеклĕ майра кĕпипе вăл, çӳç тăррине хăю хурса çивĕтленĕ, сăн-пичĕ хĕвел çинче çыранти хăйăр пекех кĕренленнĕ.

«Метеор» шыва çурса пынăçемĕн симĕс шыв хӳрере шурă кăпăк пулса пĕтĕрĕнет. Çыранта тĕрлĕ, анчах пĕтĕмĕшле илсен, яланах пĕр евĕр ӳкерчĕк: хăш кукăрта хурарах, тепринче çутăрах симĕс вăрман; чăнкă вырăн, сĕвеклĕх; çӳллĕ те шĕвĕр тăраллă е лутра çуртсем; ял,

ун çумӗнчи улӑхра ӗне кӗтӗвӗ, шуранка сарӑ хӑйӗр лаптӑкӗ, унта мӗкӗлтетекен пӗр-ик çын, пулӑçсен киммисем; каллех хурарах е шуранкарах симӗс вӑрман, ял, çуртсем килсе тӑраççӗ, вӗлтлетсе юлаççӗ...

Шертановсем хӗрсех доминолла çапаççӗ. Виктор çыранпа киленет, ун çумӗнче – Земфира, хӑй ача чух ӗмӗтре тытнӑ хӗр.

– Ялта пулнӑ-и эсир халь çине? – ыйтать Виктор хӗртен.

– Иртнӗ эрнере кайса килтӗм. Тыр вырма тухрӗç. Çуртри питӗ ӑнса пулнӑ, – уççӑн калаçать Земфира. – Килтисем пирӗн иккӗшӗ те колхоза ӗçе çӳреççӗ. Аттене ферма çуртне тӑвакансен ушкӑнне ертнӗ, анне утӑ-улӑм купаланӑ çӗре каять, отпуск вӑхӑтӗнче халӑх хушшинче пулас килет теççӗ. Киле пӗр йӑмӑк çеç юлать. Пичче Свердловскра пурӑнать те, вӑл курма килессе кӗтеççӗ чунтанах.

– Сирӗн кил урам тӑваткалӗнчен пӑрӑнсан иккӗмӗшчӗ-и-ха?

– Иккӗмӗш мар, виççӗмӗш. Пирӗн тӗлтех йӑмра карти пур, çырмара – кӳлӗ пек сарлака пӗве.

– Астӑватӑп. Райцентрта эп чылайранпа пулман ӗнтӗ. Хамӑр ялтан инçех те мар машина çулӗ иртет те, киле кайнӑ-килнӗ чух тӳрех автобусран ял тӗлне анса юлнӑ, таврӑнасшӑн та çавӑнтанах тухнӑ, – тет Виктор. – Унти уя колхоз час-часах пӑрçа акатчӗ те, тӑван тавралӑх ытамне курнипе пӗрлех пӑрçа çисе киленсе пыраттӑмччӗ. Тен, халӗ те пӑрçа ани пуль унта. Ачана йӑтса арӑмпа пӗрле çитсе кӗмеллеччӗ пуль манӑн яла. Çук, – хӑйпе хӑй калаçнӑ пек сӑмахлать Виктор, – эп Шупашкартах ӗçлетӗп. Çӳревçӗсен йышӗнче пулса ӑмӑртма хатӗрленмелле.

– Çемйӳне ан пӑрах, – тет те Земфира Виторӑн çилпе вӗлкӗшекен кӗске çӳçне, унӑн таса сӑн-пичӗпе тӗреклӗ хул-çурӑмне кӑмӑллӑн тинкрет.

Çыннӑн сасси, калаçӑвӗ тӗрлӗ çыннӑн тӗрлӗрен вӑл. Надьӑн чуна ӑшӑтакан темле çепӗç сасӑ, калаçакана

хӑй еннелле туртакан илӗртӳллӗ сас. Земфирӑн, ак,– шӑнкӑрав пек, йӗс шӑнкӑрав пек. Илтес те илтес килет ӑна.

* * *

Ӑмӑртуран тавӑрӑнсан тепӗр кунне Виктор ӗҫе тухрӗ. Рабочисене сывлӑх суннӑ чух лупас пек туйӑнакан ҫӑра куҫ харши айне пытаннӑ пӗр мӑшӑр куҫ Виктора чарса тӑратрӗ: строительсен бригадирӗ Флор Флорович канӑҫсӑррӑн пӑхать иккен ун ҫине.

– Хӑвӑн вырӑнна куккук лартса хӑвармаллаччӗ сан. – Малтанхи сӑмаххи пулчӗ бригадирӑн. – Йышӑннӑ план куккук сассипех вӗҫсе каять.

Юнашар тӑракан хӗрарӑм Виктортан:

– Миҫемӗш вырӑн йышӑнтӑн? – тесе ыйтрӗ.

– Улттӑмӗш, – пӗлтерчӗ Ураваш.

– Команда миҫемӗш тата?

– Улттӑмӗш.

– Начар, – хакларӗ ҫавӑнтах пӗри.

– Команда урӑх вырӑншӑн кӗрешмен, – вӑшталанса тавӑрчӗ спортсмен. – Иртнӗ спартакиадӑринчен икӗ вырӑн маларах йышӑннӑ. Тутар АССРӗпе Саратов командисене кая хӑварнӑ.

Ӑнлантармалла-и ҫакна пӗтӗмпех Викторӑн? Хӑй начар ӑмӑртрӗ-ха вӑл. Хӑйне хӳтӗлеме кирлӗ мар. Ытти ачасем медальсем илчӗҫ-ҫке! Ҫавна тӗксӗмлетмелле-и? Горький, Волгоград, Ульяновск облаҫӗсемпе танлаштарсан ку вӑхӑтра рабочи класс йышӗ те пӗчӗкрех-ха, ҫамрӑк-ха Чӑваш республикинче. Атӑл тӑрӑхӗнчи 14 облаҫпа республика командисем хушшинчи улттӑмӗш вырӑн вӑл чӑвашсемшӗн сумлӑ вырӑн. Хӑйсен вырӑнӗнче чӑвашсем.

Флор Флорович Виктор ҫине тӳрккессӗн пӑхать. Унтан тепӗр икӗ ачана куҫ хӗссе илчӗ те: – Эсӗ пырса тӗкӗнicчченех ик карнис хӑпартрӑмӑр. Ҫӗнӗрен буфет та уҫӑлчӗ. Ӗҫ тӑвас текенсем кӗрсе тухаҫҫӗ унта, – терӗ

сӑмаххине тӑсарах. Тем вӑлтса сӳпӗлтетнине Виктор хӑлхана чикесшӗн пулмарӗ.

Шӑм-шак сӳсленчӗк. Кӗлеткене икӗ ура аран йӑтса ҫӳрет. Ӑмӑртӑвне хутшӑннӑ хыҫҫӑн ҫул ҫинче силленсе килни тата пуҫа тӗрлӗ шухӑшпа минретни такам ҫапса хуҫнӑ пек шӑм-шака йывӑрлантарать. Чӗрӗлсе ҫӑмӑлланас тесен хӑвӑртрах тӗрлӗ хӑнӑхусем тума тытӑнмалла. Виктор кӑнтӑр апачӗ тӗлӗнче пӗрле ӗҫлекенсемпе гимнастика ирттерчӗ.

Иккӗмӗш кунне хайхи калаҫма юратакан хӗрарӑм, Укҫен, каллех ӑмӑрту ҫинчен сӑмах пуҫарчӗ. Аллинче хаҫат унӑн.

– Сан ятна асӑннӑ, Виктор, – терӗ те вӑл саспах вула пуҫларӗ: – «Командӑна очко ытларах кӳрес, медальсем илес тесе пирӗн спортсменсем 20 ҫухрӑма хӑвӑрт утассипе те хӑюллӑн кӗрешрӗҫ. Стартранах Шертанов малта пычӗ, ҫурма ҫул тӗлӗнче пирӗн тепӗр мастер В. Ураваш тӗп ушкӑнран уйӑрӑлса командӑри юлташне ҫитме васкарӗ. Анчах финиш тӗлнелле унран Калинин, Иваново облаҫсен командинчисем иртрӗҫ...». Ӑмӑртусене тӗплӗ сӑнласа паракан статья айӗнче З. Вутланова хушамат тӑрать.

– Ирттермелле пулман, – тет Укҫен. – Халь пире медаль кӑтартаттӑн.

Ӑмӑртура яланах ҫӗнтерме май килменине Викторӑн мӗнле ӑнлантармалла-ши? «Хатӗрленсе ҫитеймерӗм» тенине ӑнланӗҫ-ши ҫӗнтерӳ кӑна кӗтекенсем?

Ҫук, тӳрре тухассишӗн сӑлтав шырама ан пикен, спортсмен! Ӑмӑртма вӑй пухасси чи малтан хӑвӑнтан килет!

Флор Флорыч каллех:

– Ҫӗнӗ буфета сӑра илсе килчӗҫ унта, – тесе систерет. Виктор куна та хӑлха ҫумӗпе ирттерсе ячӗ. Бригадир ҫак ҫӗнӗрен килнӗ ачана мӑн кӑмӑллӑ тесе шутлать, юратмасть ӑна, килӗштермест, ӑмӑртӑва кайса ӗҫлемесӗрех шалу илет тесе йӳҫӗхет.

– Тӑрӑш-ха, Виктор, тепринче ҫӗнтерӗн, – тет Укҫен. – Эпир ӗҫлетпӗр, плана пурнӑҫлатпӑр.

Смена вĕçленнĕ хыççăн каç сĕмлĕхĕ киличченхи тапхăрта Виктор стадиона пычĕ. 400 метра, канса илӳçĕн, пĕр вун сакăр-çирĕм хутлайĕ-ши çиçкĕнтерсе? Пĕччен-и? Пĕччен тренировка irттерме хăнăхаймастех пуль вăл. Стройтрест общежитийĕнче утма кăмăллакансем çук. Ăмăртăва пĕрле кайса килнĕ ачасенчен ытларахăшĕ – студентсем. Халь вĕсем каникулта. Çеркей Пайăрка – ял çынни. Герман та курăнмасть. Шертанов тесен Шертанов çук. Вăл – Çĕрпӳре.

Стадионра ачасен ушкăнĕ футболла выляма хăнăхать. Мечĕк çул айккине тухса кайнăччĕ те, Виктор, иртсе пыраканскер, ăна çывăхри ачана тапса пачĕ.

– Пичче, выльăр пирĕнпе! – чĕнчĕ лешĕ. – Пирĕн пĕр çын çитмест.

Виктор çӳхе пиншаке хыврĕ те «Сăран мечĕк» парнине илме хатĕрленекен ачасемпе футболла выля пуçларĕ. Ытларах вăл аякка янă çăмха патне малтан чупса çитсе хапха патнерех пынă ачана тапса пама тăрăшрĕ. Ачасем çивĕч чупаççĕ, вĕсенчен маларах мечĕк патне ĕлкĕрмешкĕн самаях вăй хума лекет Викторăн. Кăштахран ун кĕлетки тăрăх шыв шăпăртатса анчĕ. Акă, вăл стадионăн пĕр секторĕнче разминка тăвакан икĕ хĕре асăрхарĕ: пĕри ытлашши çӳллех мар, йăшт кĕлеткеллĕ, çӳçне хыçра пуçтарса лентăпа çыхнă. Ку вăл – Земфира Вутланова.

Ачасемпе ермешсе футбол мечĕкне хăвалани Виктор Уравашшăн юна вылянтарса утма хатĕрленес умĕнхи шута килчĕ. Çамрăксем ывăнчĕç пулас та, Виктор пăрăнсанах вĕсен вăйййи сӳрĕкленчĕ. Çӳревçĕ стадионри çаврăма спорт уттипе ăнтăлса кайрĕ те çӳллĕшне сикекен хĕрсен тĕлĕнче чарăнчĕ.

– Çапла, эпир те тренировка пуçлатпăр, – сăмах хушрĕ Земфира шӳтлереххĕн. – Эсир çаврăма миçе хут тухма палăртатăр-ха?

– Нумай мар. Ал-урана çивĕчлетмелĕх, – куларах пăхать Виктор.

– Сирĕн чăтăмлăх пире те лектĕр-ха эппин, – тет те Земфира шăм-шакне çемçетме тытăнать.

Виктор çавра çулпа йăрлаттарса утнă чух ăна çакăнта хăй ывăлĕпе Надя пăхса тăрассăнах туйăнать, анчах стадионра вĕсем мар-çке, урăххисем халь. Авă, икĕ хĕр урлашкана ӳкере-ӳкере çӳллĕшне сикессипе тĕрмешет.

– Эсир миçе хутларăр çак? Шутпала та пулин сирĕнтен юлас марччĕ, – кăмăллăн сăмахласа илет каннă самантсенче вĕсенчен пĕри шăнкăрав пек сассипе. Виктор ăна:

– Урлашка умĕнче тем чарăнса тăратăн эс, Земфира. Шикленме кирлĕ мар, – тесе пĕр ял çынни пек ыр суннăн калать.

Кайран, стадионран тухас чух:

– Эсĕ тренировка умĕн шăнкăравла ман пата, йышпа кĕрешме хаваслăрах, – сĕнчĕ Земфира. Çавăнтах вăл хăйĕн ĕçри телефон номерне те каларĕ.

– Ыран стадионра пулмастăп эп, шоссе тăрăх каятăп, – пĕлтерет хăй мĕн тума палăртине Виктор.

## Вун саккăрмĕш сыпăк

Шоссе çинче вăрăм çула утса тухнă хыççăнхи кун Викторшăн шăм-шака кантармалли, çав хушăрах хулçурăма та тĕреклетмелли вăйă-кĕрешӳ тупăнсанччĕ. Анчах çу варринче йыш сапăнса кайнă-çке, çавăнпа кампа ермешсе утларăш çинчен кăштах манасла мĕнле хăнăху ирттерес? Пур-ха ун пек май, шăпах кăкăр-çурăмпа алăсене, ӳпкене тĕреклетекенни. «Пĕччен кичем пуласран ентеше чĕнсе пăхас-ши? Килĕшĕ-ши вăл?». Виктор хула урамĕпе пынă чух автомат телефон ӳплине кĕчĕ те икĕ пус сиктерсе астуса юлнă номере çавăрчĕ. Трубкăра çийĕнчех паллано сасă, йĕс шăнкăрав пек сасă илтĕнчĕ.

– А-а, Виктор... Ну, салам пултăр, – шăнкăртатрĕ хĕр лăпкăн та уçăмлăн. Çĕн Çăкасар ачин пĕр самант чĕлхи çĕтрĕ. Вара вăй пухса:

– Итле-ха, Земфира, паян ĕç хыççăн мĕн тума палăртатăр эсир? – терĕ.

– Пĕр кун кансассăн та пăсмасть тетĕп.

– Кимĕпе ярăнма каяс теместĕр-и? Канмалли шутри тренировка вырăнне?

– Каç кӳлĕм-и?

– Хĕвел аниччен вăхăт чылай-ха.

– Юрĕ тейĕпĕр-ши вара? – сĕнӳрен пăрăнмарĕ Земфира. – Шăм-шака хĕвелпе пиçĕхтерсе шывпа çирĕплетни ытлашши пулмĕ-çке эппин.

Тепĕр çур сехет ытларахран вĕсем стройтрестăн шыв станцийĕнчен кимĕ илчĕç. Земфира пушмакне хывса йăтса кĕпине шыв сирпĕнесрен асăрханарах малтан ларчĕ. Виктор кимме çырантан вирлĕн тапса ярса çара урипе мулкач пек çăмăллăн улăхрĕ; ялик шыв варринелле тухрĕ те юхăма май аналлалла куçа пуçларĕ; Виктор ларкăч çине вырнаçса кĕсмен тытрĕ, вара юхăма хирĕç леш çыран еннелле авăса пуçларĕ.

Хăвăртах анма шутламан хĕвел хăйĕн ырă çутине Атăл тăрăх сапалать, вăл халь, хытах пĕçертмест пулин те, ӳте ăшăтать. Атăлăн леш çыранĕнчи хăйăр çинче хĕртĕнсе выртакансем курăнаççĕ. Викторпа Земфира кимĕ çинче хĕртĕнмелле хывăнчĕç.

Хĕрĕн йĕке пек тӳрĕ те йăпăш уринчен пĕри çĕвĕклĕ. Ку вăл тӳрех спортсменка инкек тӳснине аса илтерчĕ.

– Çитес ăмăртăва хутшăнатăр-и? – ыйтрĕ вара Виктор кĕсменпе авăснă май.

– Хатĕрленетĕп, – пĕлтерчĕ хĕр, кимĕ хӳринче хĕвел ăшшине туйса лараканскер.

– Вăхăт нумай юлмарĕ, вун тăватă кун çеç. Тренировкăсенче халь ытлашши ывăнма кирлĕ мар, – вĕрентет спорт мастерĕ. – Шăм-шак çăмăллăхне упрама тăрăшмалла.

– Тепĕр икĕ кун самях тар кăларма шутлатăпха, – тет пĕрремĕш разрядри спортсменка. – Эпир ăмăртуччен вунă кун малтан çеç тренировкăсен калăпăшне пĕчĕклететтĕмĕр.

– Мастер шайне çывхармалла сирĕн, – лăпкăн сĕнет Ураваш.

– Ун çинчен хам та шутлатăп, – ырă кăмăлĕпе пĕлтерет Земфира. – Асăрха унта: хирĕç килеççĕ.

Виктор, кимĕ кайнă май тӳртĕн лараканскер, çавăрăнса пăхрĕ те хирĕç килекен моторлă кимме курса хăрах кĕсменĕпе авăсрĕ; часах вĕсем хум çинче сăпкари пек ярăнса илчĕç.

– Утассипе сирĕнтен хăшĕ çĕнтерет пуль? – ыйтать хĕр.

– Шăлпа кăшлатăп та Шертанова тартмастăп, чуптармастăп эп ăна. Чармаççĕ пулсан хам кроссмен пулма пултаратăп, – çиллессĕн пĕлтерет хăй шухăшне Виктор. – Российăн финалти ăмăртвне кайичченех капайлăхĕ тамалĕ унăн, – тесе те хурать ачине килĕштерменскер.

– Хамăр район атлечĕ çĕнтерессе чунтанах кĕтетĕп, – тет журналистка çепĕç те ырă куллипе. Виктор тек чĕнмесĕр кĕсменпе вирлĕн авăсать. Земфира çак йĕкĕте тахçан уявра курнине аса илчĕ те:

– Купăс начар мар калаттăнччĕ эсĕ. Ăçта вĕреннĕ? – тесе ыйтать.

Ăçта вĕреннĕ пуль Виктор? Ялта, паллах. Вĕсенчен инçе те мар вăрçăран ик урасăр таврăннă Аввакум пурăнать. Авланнăччĕ-ха вăл. Ача-пăчаллă пулнăччĕ, çапах çамрăксемпе çывăхчĕ, хăйсем патне çын пырсан калама çук хĕпĕртетчĕ. Купăс пурччĕ унăн – хаяр кăна янăратаракан хромка. Хĕпĕртесе те хăпартланса купăс калать Аввакум, ача-пăчана та тытса пăхма ирĕк парать. Виктор пĕр ĕнкертрĕ те вĕсем патне, унтан тухма пĕлмесĕр купăс нăйкăлтаттарать çеç.

– Эпĕ астăватăп, районти ярмăрккăра эсир, икĕ çамрăк, пĕр инвалида мăйран ыталаттарса йăтнăччĕ, – аса илет Земфира.

– Шăпах çавă ĕнтĕ мана купăс калама вĕрентни. «Уявсене çитсе курас килет», – тетчĕ те вăл, ăна хамăртан хăвармасттăмăр, – иртни куç умне тухать Викторăн.

Ачи ку, ытларах чух чӗнмесӗр ҫӳрекенскер, пӗр чӗлхи уҫӑлсан аванах шӑкӑлтататать иккен, самай ӑста халапҫа тӑнланӑ пек, итлес те итлес килет ӑна. Ҫынна ёҫне кура юратма пулать, чӗлхе енчен ырри вара ытларах хӑй енне ҫавӑрать. Хӗре ҫавӑрас тесе нимех те вӑлтмасть-ха Ураваш, анчах вӑл лӑпкӑн та таса чӗререн каланиех, авӑ, хӗр чунне тыткӑнлать – кур, епле кӑмӑллӑн тинкерсе итлет Земфира Виктора. «Мӗншӗн иртерех авланнӑ-ха вӑл? Пулинех тата! Авланнӑ ҫын арӑмӗпех килӗштерсе пурӑнтӑр», – шутлать хӗр. Земфирӑна хӑйӗн ентешӗ ӑста спортсмен пулнине пӗлсе ун ҫинчен очерк ҫырсан та ҫитӗ.

– Эсӗ Олимп вӑййине лекетӗнех пуль тетӗп, – сӑмахласа илет Вутланова иккӗшӗ те пӗр самант шӑп пулнӑ хыҫҫӑн.

– Олимп ту хырҫи патне утса тухас ҫул – манӑн каҫалӑк, – ҫирӗппӗн хушса хурать Виктор. Ҫитес ӑмӑрту та маншӑн ҫав анлӑ каҫалӑкӑн пӗр хӑлаҫӗ шутӗнче пулӗ.

Тупа тунӑ пек каланӑ сӑмахпа килӗшсе пӗр мӑшӑр аврӑҫ кӗсмен тулӑх шыва ҫине-ҫине хумлать.

– Ҫемӗӳ ҫинчен мӗн шутлатӑн эсӗ? – пурне те пӗлесшӗн лӑпкӑ сасӑпах ыйтать Земфира.

– Халь ҫаплах пурӑнатӑп-ха. Вӑхӑт ҫитсен, тен, ывӑлӑмпа Надьӑна илсе килӗп, – хуравлать Виктор ик кӗсменпе вирлӗн авӑснӑ май. Хӗр ӑна пӗрре ют ҫын пек, тепре ҫывӑх юлташ пек шутласа куҫ илмесӗр тӗсет.

Анӑҫ енчи хӗвел мӑн ҫаврашкан пӑхать, Атӑл ҫине вӑл ылтӑн ҫип пӑрахса чӳхет, кӗпе-майка хывнӑ ӳтпӗве шӑнма памасӑр лӗп сывлӑш варкӑшать. Кимӗ, сӑмсипе хӑйӑра чӗрсе, леш ҫыранта чарӑнчӗ. Мӑшӑр кӑвакарчӑн пек икӗ ҫын, ал-урана вылянтарса, шӑмшака кӑштах ҫемҫетрӗ те пӗри маларах, тепри каярах шыва кӗчӗ. Хӑйӑрлӑ ҫыран хӗрринче шыв ӑшӑх, ҫавӑнпа вӑл лӗпех, санӑн вара ишес те ишес килет. Ирӗке тухсан ҫӳҫентерет. Пӗри шаларах, тепри хӗрӗнчерех ишсе те чӑмса, ҫатӑлтатса киленнӗ хыҫҫӑн Земфира йӗпе тума

уләштарма кăшт аяккарахри ятарласа лартнă хӳшше кайрĕ. Кăштахран ҫыр хĕрринчи шыв ҫине пускаласах таврăнчĕ те вăл:

– Эх, шывĕ кăвас хумалла ăшă-ҫке, – хавасланчĕ тулли кăмăлĕпе. – Ырлăх иккен Атăл ҫинче ĕҫ хыҫҫăн канмашкăн!

Ларкăчсем ҫине иккĕн ларнă кимĕ шыв юххине тухрĕ те халĕ капăр хула вырнаҫнă ҫыраналла ҫул тытрĕ. Тепĕр самантран ӳт-пĕве сулхăн туйăнса кайрĕ.

– Эпĕ тăхăнатăп, – тесе Виктор кĕпине илчĕ.

– Эпĕ те хĕртĕнсе ҫитĕ тесшĕнччĕ. Хур шатри пусĕ тата, – кăшт куларах сăмах хушрĕ Земфира. Тум тăхăннă чух хĕр ан вăтанăр тесе Виктор каялла ҫаврăнчĕ те, Земфира ҫавра чечеклĕ хĕрлĕ платйине пуҫпа тăхăнса кĕлетке ҫинелле антарчĕ. Унтан таҫтан ҫил тухрĕ те, ҫумăр пĕрчи пăт! пат! ӳккелерĕ. Виктор кĕсменпе васкавлăн авăсать. Ним ҫук тенĕ пек ҫĕртенех тӳпене пĕлĕт хупланă. Кимме парса паспорт илнĕ ҫĕре ҫумăр чашлаттарах пуҫларĕ. Земфирăпа Виктор шыва кĕме килнĕ ытти ҫынсемпе пĕрле хула еннелле чупаҫҫĕ, шалкăм ҫумăртан аран кинотеатр фойине кĕрсе тарма пултарчĕҫ вĕсем.

Урамра шыв шарлаттарса юхать ĕнтĕ, унтан ҫӳлтен ҫăвасси кăштах лăпланчĕ. Земфирăн ҫӳҫĕ йĕпеннĕ, пичĕ те унăн ирпе ҫăвăннă хыҫҫăн ал шăлли тытичченхи пек. Капла та чипер курăнать вăл. Ҫумăр иртсенех вĕсем ирĕке тухрĕҫ. Хĕр босоножкине хывнă та ҫарран утать, Виктор – ăшне шыв кĕнĕ туфлипе.

Йĕпе-сапара автобус-троллейбусра халăх нумайран вĕсем ҫуранах пыраҫҫĕ. Тĕп урамра ҫын сайра-ха, ҫапах тротуар пушă мар, авă, Мăшăрлану керменĕнчен чăлт шурă тăхăннă пикепе йăм хура костюмлă каччă тухаҫҫĕ. Вĕсене пĕр арҫын «Волга» машина патне ҫавăтса пырать. Хĕрĕн аллинче – пысăк чечек ҫыххи. Виктор авланнă чухне Надьăн та аллинче ҫапла чечекчĕ-ши? Астумасть куна ҫын, ҫакна хитре астăвать: паспорт страницине штамп пусрĕҫ те Надьăпа мăшăрланни ҫинчен ҫырса хучĕҫ.

Мăшăрлану керменĕнчен тухнă шукăль мăшăр çине кунта пухăннисем (халăхĕ пасар пекех: ара, туй-шилĕк мар-и?) тинкерсе пăхаççĕ.

Хăй ĕмĕрĕче çакăн пек чаплă самант пуласса мĕнле хĕр ĕмĕтленмест-ши? Чĕрере камăн телейлĕ пулас туйăм вăрттăн-вăрттăн вăрнмасть-ши? Земфира чĕри те, авă, кăрт-кăрт тăвать. Çак хĕрĕн те çын шутлĕн ташă каçĕсене çӳрекелесе-и е Атăл хĕррине уçăлма тухкаласа, е пĕрле ĕçлекенсемпе тăтăш хутшăнса хăйĕн телейне тупмашкăн шутламалла мар-ши? Çук çав, каччă пăхтарас тĕллев тытман Земфира, пурнăçра вăл хăй телейĕнчен пысăкраххине шырать – Олимп хĕлхемĕпе çулăмланать çав ĕмĕт.

– Тепĕр эрнере йыш пухăнĕ-ши? Ушкăнпа вăя туптама лайăхрах, – терĕ Земфира Викторпа сăмахласа.

– Çитес эрнере манăн стадионра пĕр-иккĕ пулмалла та шоссе çинче ăмртнă пек утса тухмалла, – пĕлтерчĕ Ураваш хăй мĕн тума палăртнине.

* * *

Çакăн хыççăн Земфира хăй ентешне стадионра асăрхаймарĕ. Тен, вăл мăн çул çинче е вăрманта тренировка ирттерет пуль, ăмăртура çĕнтерме хĕрӳллĕнех хатĕрленет пуль Çĕн Çăкасар ачи? Анчах темшĕн-çке, ĕçри телефон ялан шăнкăравласан та палланă сасă пĕрре илтĕнмерĕ. Ерипен ăмăрту кунĕ те çитрĕ.

Ирпе, эрне хушшинче пухăннă килти ĕçсене пуçтарсан, Земфира тумланса кăштах юсанчĕ те ăмăртмалли çи-пуçне сумкăна чиксе ытлашши васкамасăрах хваттертен тухрĕ. Пахча çумĕпе иртекен тăкăрлăкпа тĕп урам еннелле пăрăнчĕ те вăл картлашкапа тăп-тăп пусса тарăн çырмана анса хăпарчĕ, анлă лапам урлă каçса стадионалла çул тытрĕ. Хăйĕн унăн халех ăмăртмалла мар-ха, чи малтан çӳревçĕсем тупăшма кирлĕ. Кĕрешеççĕ пулĕ ĕнтĕ вĕсем хĕрсех. Хăшĕ малта-ши? Виктор пултăрччĕ. Хăйĕн етешнех

ҫӗнерттерес килет Вутланован. Пике, ӑмӑртмалли тумне чикнӗ сумкине йӑтнӑскер, ытлашши вичкӗнмесӗр ҫирӗппӗн пусса утать. Репродуктортан информатор судйи кӗтнӗ ята асӑнмасть-ҫке. Ӑҫта вара Ураваш?! Хӑй сӑмахне тытаймарӗ-ши вӑл? «Олимп каҫалӑкӗ» тенине шыва пӑрахрӗ-и?

Каҫалӑк... Анлӑ хирте вӑл чуна ӗмӗт парса савӑнтарать. Анлӑ хирте вырас пусу каҫалӑкӗ алла ҫурла тыттарса хул-ҫурӑма ӑш пиллӗн ыртарать. Сар ҫу шӑратмалла пӑхакан хӗвел шӑпӑр-шӑпӑр тар кӑларать кӗлеткерен – вӗри мунчара кун пек тарлаймӑн, вӗри мунчара сывлама кунтинчен ҫӑмӑлрах пуль...

Яланах уяр килмест тата кунӗ. Ир пуҫласа каҫчен ҫумӑр йӑскать тепӗр чух. Лачкам шыв пулать каҫалӑк умӗнчи ҫын. Ҫапах хумасть вӑл ҫурлине, пӑрахса каймасть хиртен, каҫ киле кӗрет те, ир каллех – ҫурла алӑра. Кунта, ҫак каҫалӑк умӗнче, – пӳлме пуянлӑхӗ; кунта, ҫак каҫалӑк умӗнче, – чун-чӗре сатурлӑхӗ.

Касса уҫайми йӑвӑ ӳснӗ, ҫилпе пӑтрашӑннӑ каҫалӑк умне тӑнӑ ҫынпа танлаштарӑпӑр эппин спортра пысӑк кӑтартушӑн хӗмленекене. Спортӑн пысӑк хирне тухнӑ спортсмен умӗнче пӗр тӑрӑх выртать – Олимп каҫалӑкӗ. Тӑватӑ ҫуллӑх хушша тӑсӑлать вӑл. Ҫав тӑватӑ ҫулта пайтах ӑмӑрту пулса иртет, стартран старта туптанса пырать ҫӳл тӳпене олимпиец. Пурнӑҫ ҫулӗ те пуриншӗн пӗр тикӗс килмест ав, кашни ҫын хӑйне евӗр пӑрать ҫулри карапне. Чун палӑртнӑ атлет ҫӳл тӳпене ҫитсен спортпа иленнӗ журналистка та хӑй ҫырас тенӗ очеркне «Олимп каҫалӑкӗ» ят парӗ. Ҫавӑнпа вӑл стадиона пысӑк уява кайнӑ пек ҫӗкленӳллӗ кӑмӑлпа утать.

Анчах мӗн сӑлтава пула ухха тӗрӗслекен йышра Одиссея ҫук?

Журналистка кӗрешӳҫӗсене сӑнаса трибуна ҫинче ларать ӗнтӗ. Кусем те паллануӑ ҫынсемех – хӑшӗ ҫӗнтерӗ эппин паян? 400 метрлӑ ункӑра, орбитӑна кӑларнӑ спутниксем пек, пилӗк ҫын ҫаврӑнать. Пӑхсан хӑшӗ малтине те пӗлейместӗн. Кӑштах сӑнаса тӑрсан ҫеҫ ҫакна

чухлатӑн: малта иккӗн пыраҫҫӗ, ытти виҫҫӗшне вӗсем шута хумаҫҫӗ те-мӗн, вӗсенчен икшер-виҫшер ҫаврӑм иртме ӗлкӗрнӗ те халӗ тепрер хӗстереҫҫӗ – пур-и ыттисем, ҫук-и – икӗ атлетшӑн ҫав-ҫавах. Хӗрлӗ сӑнли, Капарков текени, Шертановпа Пайӑркаран темиҫе ҫаврӑм юлнӑ пулин те тепӗр ик ачинчен умарах пулса виҫҫӗмӗш вырӑна тухассишӗн шӑлне ҫыртса тапӑҫать.

Пайӑркашӑн ӑмӑрту ҫулӗ ҫинче пилӗк ҫын мар, пӗр ҫын пур – Шертанов. Шертановшӑн пӗр ҫын пур – Пайӑрка Ҫеркейӗ. Куракансен ушкӑнӗнче хавхалантарса кӑшкӑраҫҫӗ:

– Атя, Ҫеркей, иртсе кай Кольӑран!

Шертанов Пайӑрка майлӑ пулнисем еннелле пӑхса чышкӑ кӑтартать, хӑй кӑшт кулать. Ҫеркейӑн та кулас килет. Унтан Николай ик урине вӗттӗн-вӗттӗн илтерет те тулхӑрса кайнӑ лаша пек ыткӑнать, лешӗ ун хыҫне тӗвӗленсе, ҫыхӑнса ларнӑ евӗр ытлашши кая юлмасӑр пырать. Карт-карт туртсан ҫип татӑлмаллах – Шертанов Пайӑркана хӑварас тесех тапхӑр-тапхӑрваскать. Анчах хыҫран «ҫыхланса ларни» чее-мӗн: умрине курман пекех кӑрт та тумасть, туртаканнин хӑйӗн «ҫиппи» ҫеҫ ҫӳхелет. Николай тепле ӑнтӑлсан та Ҫеркей хӑй хӑвӑртлӑхне пӗртте улӑштармарӗ. Ӑмӑртусенче сахал мар пулнӑ спортсмен кун пек чух куҫне хупать: курас мар, ачалла выляса пыма юрамасть халь, унашкал хӑтлансан вӑрӑм ҫулра пӗтме пулаттаратӑн! Шертановӗ карт-карт туртӑнать, анчах инҫех тараймасӑр ҫийӗнчех тамалать. Пайӑрка вара ӑна хӑй уттипех вашкӑртса ҫитет. Хӑвӑртлӑх пысӑк – ҫаврӑмсене минут та аллӑ ҫеккунтсенче иртсе пыраҫҫӗ. Информатор судйи ҫынна хавхалантармах Шертановӑн титулӗсене асӑнать. «Профсоюзсен Атӑлҫи чемпионӗ малта пырать. Финалти ӑмӑртӑва каяс ҫыншӑн ҫак паянхи старт пысӑк кӗрешӳччен хатӗрленни пулӗ, «Пучах» спорт обществин РСФСР чемпионӗ вӑй-хал ӑсталӑхне тепӗр хут кӑтартать» – тӑтӑш илтӗнет репродуктортан сасӑ. Хӑйне мухтанине юратакан «ачампие» ҫапла калани

пушшех çĕклентерсе ярать. Кунта, Шупашкарта, палла тăран куçĕ умĕнче никамăн та мар, унăнах çĕнтермелле тесе шутлать Николай.

Çаврăм айккинче пупăнни пек вăрăм çӳçлĕ те сухаллă старик, лутраскер, мăнаçлăн уткаласа çӳрет. Кунăн уттипе хăтланкаларăшĕ Земфирăшăн палланăскер пек, унăн яшлăх чĕрĕлĕхĕ те пур пек туйăнать. Чим ара, çынни ку вăтăра та çитменскер-çке! Зефира пĕлекенскер – Яша Иванов! Çав каччă techинститут пĕтернĕ хыççăн ĕçлеме шкула кайман, хуларах пĕр кантура вырнаçнă. Тытăçса кĕрешессипе, штанга çĕклессипе ăмăртусене хутшăнкаланă вăл, спортăн иккĕмĕш разрядне илнĕ, унтан ытла хăпарайман. Час-часах тĕрлĕ ăмăртусенче тӳре пулкаланă, çӳревçĕсен уттине те сăнанă. Халĕ те, ак, Герман Савельев çукран ăна, хăй ыйтнине пула, стиль судйи туса хунă. Хĕрлĕ ялав тытнă та вăл çӳревçĕсен уттине пĕлнĕ пекех сăнаса пăхать, стадионăн çерем лаптăкĕнче мăнаçлăн уткаласа çӳрет. Хăй спорт мелĕпе нихçан пĕр чĕптĕм тар кăларманскер, ăçтан чухласа пĕтертĕр вара çав ялта Якку хулара Яша текен çын çӳревçĕ ăсталăхне? Шертановăн утти еплине хакламасть те вăл, уншăн пулсан кроссмен пек ура тупанне купарчана перĕнтерсе ан чупнă пултăр çеç, çав хушăрах теприне, тĕрĕс пыраканскернех, чăкăрташса калĕ тата. Çакна туйнă Шертанов паян пушшех ирĕклĕн пырать. Хушшăн-хушшăн вăл урине кĕле çине лартмасăр кантарса илет. Пайăркан вара хул пуççи енчен енне тайкаланать те виражра пуç пăркаланать. Ун пирки чăнах чăкăлташланчĕ сăнакан çын. Ялтан килнĕ ача çапах та ăна хирĕç чĕнмест, таса та витĕмлĕн утма тăрăшать. Шертанов пулсан, вăл ун пек, кун пек асăрхаттарушăн ялта Якку, хулара Яша пеккисене сăмахпа ляплантармалла çеç çĕр тĕпне анса каймалла... Куншăн Шертанова мухтама та тăрать темелле: пул-ха кĕрешӳре яланах сăпайлă, пысăк кĕрешӳсенче сăпайлисене сăвай юпи çинчех лартса хăвараççĕ. Кăштах пуçтахлани те кирлĕ çĕнтерес тесен. Анчах

халĕ Шертанов темле пуçтахлансан та Пайăркаран аякках тараймасть-ха. Çеркее хавхалантарма та информатр судйи ун титулĕсене аса илет: республиăри йĕлтĕрçĕсем хушшинче сумлă çын вăл, темиçе хутчен «Пучах» обществăра йĕлтĕрпе чупса çĕнтернĕ, спорт мелĕпе утма тытăнсан пĕрремĕш ăмăртурах аван вăхăт кăтартнă. Пайăркан республика рекорчĕ пур (пĕр сехет хушшинче мĕн инçĕш утассипе). Рекорд тени Шертанова самаях вĕчĕхтерет: унăн Чăваш республикинче нихăш дистанцире те ыттисенчен чи хăвăрт вăхăтпа тухнă кăтарту çук-çке!

Ик çыннăн хăвăртлăхĕ пысăк. Вĕсем халь кашни тăваттă çаврăнмассерен ыттисен пĕр çаврăм хăвараççĕ. Ав, хĕрлĕ çӳç Капарков шăлне çыртса тапăçланать, хăйĕнчен иртекене темле куç айĕн вĕчĕрхенсе пăхать.

Тапхăр-тапхăр хăвăрт кайнă çын – Шертанов – «ларчĕ», хăй уттине улăштармасăр пынă Пайăрка вара юлашки çаврăмсенче ăна çăмăллăнах кая хăварма пултарчĕ. Куншăн Земфира хĕпĕртерĕ: ара, Виктор ĕмĕтне ун юлташĕ пурнăçларĕ-çке, Шертанов каппайлăхне çапса хуçрĕ.

– Ураваш ăçта вара? – ыйтать журналистка Пайăркаран.

– Хам та ăнланаймастăп: мĕншĕн çук вăл, – тĕлĕнет ывăннă Çеркей.

– Шикленчĕ пуль-ха пирĕнтен вăл е суя туссен ушкăнне çакланнă, – хăвăрттăн лаплаттарса хучĕ Шертанов.

Арăмĕ патне кайрĕ-ши, спорт çине алă сулчĕ-ши Виктор, самантрах тем сăлтавпа Олимп каçалăкĕнчен пăрăнас терĕ-шим?

Арăмĕ патне кайрĕ пулсан – кайтăр, Олегпа Петушков йышши суя туссемпе ан явăçтăрччĕ çеç. Чун туртнă çын çинчен очерк çырасси пулмасть пуль Земфира Вутланован. Мĕншĕн ăшра тăрать-ши, тепĕр тесен, çав ача?!

## Вун тăххăрмĕш сыпăк

Пурнăçри лару-тăру шутласа хунă пек килсе тухмасть çав. Ĕç епле çавăрăнассине тавçăраймастăн та. Шăпа Виктора тăван килне илсе çитерчĕ. Инкек куçа курăнса килмест теççĕ – снаряд ванчăкне ăшран кăларма операци тунă хыççăн ашшĕ куç умĕнчех вилсе кайрĕ. Республика стадионĕнче спорт кĕрешĕвĕ пынă вăхăтра Виктор ашшĕне пытарчĕ.

Масар çинчен таврăнсан хурăнташĕсемпе кӳршĕсем сĕтел хушшине вырнаçрĕç. Викторăн йăмăкĕпе йыснăшĕ çынсене эрех ĕçтереççĕ, сăра тултарса параççĕ. Тути-çăварĕ типсе кушăрханă Виктор сĕтел умĕнчи пукан çинче сăмах та чĕнеймесĕр ларать. Çынсене унăн сăйламалла, анчах алă сӳрĕк, ăна халь ку ĕçре йыснăшĕ пулăшать.

Музыкантсемпе пытаракансем кайнă хыççăн пӳрт пушанчĕ те никам çук пек туйăнмалла шăпланчĕ, Викторăн алли вара пушшех лăстăр усăнчĕ.

– Ĕç, хунчăкам, ăш пусăрăнтăр, – сĕнет ăна йыснăшĕ.

Викторăн пуç ахалех хурт çăвăрĕ хупнă кунтăк пек кашлать. Калаçакан çын калаçать те, хурт-хăмăр кунтăкран вĕçсе тухнă пек, пуç çăмăлланать. Виктор шухăшĕсем – хăй пуçĕнчех, çавăнпа ĕнтĕ пуç тем чыхса тултарнăн йывăр. Çынсем салансан та кил хуçалăхне тĕпе хурса туртас ывăл сĕтел хушшинчен час тапранмарĕ. Ăшра – ашшĕн сăмахĕсем. «Витя, кил хуçалăхĕ – сана халал. Тĕтĕм ан сӳнтер», – тесе хăварчĕ ашшĕ куç хупас умĕн.

– Киле сан пăхас пулать, таçта ан çӳре, яла таврăн; кинне те илсе кил, вăй питти çын валли колхозра та ĕç çителĕклĕ, – ăнлантараççĕ халь ăна тăванĕсем.

Виктор – монтажник. Сахал-и колхозра кун пек ăста алăллă çын валли ĕç? Хуçалăх çулсерен тĕрекленсе пырать, унта та кунта тĕрлĕ çурт-йĕр лартаççĕ. Вăтам пĕлӳ илесшĕн-и Виктор? Ялта та каçхи шкул ĕçлет, паян ял çынни те институтсенче куçăн мар мелпе вĕренет.

Вĕренес тесен эсĕ те ялта пурăнсах ăслăлăха алла илĕн. Физкультурăна кăмăллатăн-и? Вĕренĕн – шкулта ĕçле пуçлăн. Надьăна та илсе килсен килĕштерсе пурăнса кайăр.

Калама лайăх. Чĕлхи уçăлнă йыснăшĕ шавах пакăлтатать:

– Витя, хунчкам, яла таврăнма лекет сан. Кам кил пăхтăр? Аннӳ ватă. Хуçалăха кам тытать? Эпир уй урлă каçса час-час килсе çӳрейместпĕр, сан кил тытмалла.

Виктор хăлхине çын мĕн калани кĕмест – ачи чĕмсĕр.

Мучăш ывăлĕ Çтуппан та, ӳсĕрскер, тултан кĕчĕ те урай варринче тайкаланса аллипе хăлаçлансах вĕренте пуçларĕ:

– Витя, Ульки, йысни, инке, хуйхăрнипе ним те тăваймăпăр. Витьăн киле таврăнмаллах, ирĕкри ирĕкех юлать вăл. Майрине илсе килмелле те пурăнмалла çеç. Пăхмасан кил-çурт вăл ак кунтан юха пуçлать, ак кунтан çĕре пуçлать.

Мучăш ывăлĕ Çтуппан иртнĕ çул çур аки вăхăтĕнче уйран вăрлăх тырра килне турттарса килнĕшĕн çулталăк ларса тухнă. Çамрăк сăнĕ çухалнă халь унăн, чылай ватăлнă вăл, сасси те ĕлĕкхинчен самай пусăрăннă. Çав сас вăрттăн ĕç тума чĕннĕ пек илтĕнет. Виктор чунне тарăхтарать çеç вăл.

– Тăхта-ха, Çтуппан, пире хамăра çеç ирĕклĕн хăварха, – терĕ Виктор çиллессĕн. Унăн йăмăкăпе йыснăшне калас сăмах пур: «Тепĕр икĕ çулччен аннене килкелесе пăхса тăрăр, кайран унта куç курĕ», – темелле-çке хулара пурăнаканăн.

* * *

Земфира ирпе хаçат редакцийĕн пӳлĕмĕнче хут хуратса шăпăрттăн ларать. Ăна хирĕç сĕтел хушшине вырнаçнă тепĕр сотрудница вара, Агафья Антиповна, статйисем айне Акап Антипова е Энтип хĕрĕ Акап тесе алă пусаканскер, хĕрĕхсене çывхаракан хĕрарăм,

паян питӗ хаваслӑ сӑнлӑ та шав калаҫать, ҫав хушӑрах йӑрлаттарса ҫырать. Командировкӑна кайсан пӗр тӗлӗнмелле хӗрарӑмпа паллашни ҫинчен хыпарлать вӑл. Фронтра пулнӑ лешӗ. Зенитчица-мӗн, икӗ медаль илнӗ, халӗ колхозра – хӑмлаҫӑсен бригадирӗ. Вӑрҫӑ вут-ҫулӑмӗ витӗр тухнисемпе ӗҫре палӑртнӑ паттӑрсем ҫинчен Акап тӑтӑшах очерксем ҫырса кӑларчӗ. Ку хутӗнче те ҫул ҫӳревӗ ӑнӑҫлӑ иртнӗшӗн, ҫӗнӗ геройпа паллашнӑшӑн вӑл самай хӗпӗртенӗ. Земфирӑн ун пек хавхаланмалли ҫук, республикӑри ӑмӑрту ҫинчен малтан палӑртнӑ пек мар, кӗскен кӑна информаци тухрӗ.

Телефон шӑнкӑр турӗ те, трубкӑна Агафья Антиповна тытрӗ. Телефонпа калаҫнӑ чух унӑн сӑнӗ улшӑнать, мӗн каланине ӑнланма тӑрӑшса кӗскен те ӗҫлӗн хуравлать ҫын.

– Пур, калаҫӑр, – терӗ те Акап акка Земфира еннелле пӑхрӗ. – Сан пата, спортсменсем пулас, – пӗлтерчӗ ҫавӑнтах.

Земфира хӑй сӗтелӗ ҫинчи трубкӑна илчӗ.

– Алло, Земфира-и? – илтӗнчӗ тӳрех паллӑ сасӑ.

– Сывлӑх сунатӑп, Виктор, – терӗ хӗр пӗр пӑлханмасӑр лӑпкӑн. Унтан ҫухалнӑ тесе шутланӑ ҫын мӗн каласса кӗтрӗ.

– Епле ӑмӑртрӑр? Кӗрешӗве хутшӑнтӑр-и? – Земфира ҫинчен пӗлесшӗн Ҫӗнӗ Ҫӑкасар ачи.

– Ӑмӑртрӑм-ха та, мухтанмаллиех ҫук, – тавӑрчӗ Вутланова.

– Ытти хӗрсем мӗн ҫӳллӗшне сиксе каҫрӗҫ?

– Манран юлчӗҫ та-ха вӗсем... Мастер кандидачӗн ҫӳллӗшне эпӗ ҫеҫ илтӗм.

– Маттур апла эсир. Саламлатӑп. Хаҫатра вара хӑвӑр ҫинчен мӗншӗн ҫырман?

– Палӑртмалӑх ӗҫӗ ҫук. Чупакансем, ав, лайӑх вӑхӑтсем кӑтартрӗҫ. 20 ҫухрӑма утассипе Пайӑрка ҫӗнерчӗ.

– Вуларӑм-ха. Маттур вӑл. Сире те мухтамалла.

– Эсир епле пулаймарӑр? – ыйтрӗ Земфира.

Виктор хӑй ӑҫта пулнине пӗлтерсен хӗр, шухӑша путнӑн, пӗр хушӑ чӗнмерӗ. Унтан куляннӑ саспа:

– Шел. Мӗншӗн вара хӑвӑрӑн пысӑк хуйхӑ пулни ҫинчен юлташусене те вӑхӑтра шарламастӑр? – тесе ӳпкелерӗ журналистка.

– Телеграмма илсенех тӳрех васкавлӑн тухса кайрӑм, – илтӗнет кӑштах улшӑннӑ сас.

– Шӑнкӑравламаллаччӗ. Хам пулмасан Акап акка пурччӗ, – тет хуйха-суйха пӗрле пайлама хатӗр Земфира.

## Ҫирӗммӗш сыпӑк

Земфира та, Виктор та пӗр-пӗринпе калаҫса татӑлмасӑрах «Родина» кинотеатра ҫӗнӗ фильм курма пынӑ вӑхӑталла Шертановпа Пайӑрка хӑна ҫуртӗнчен тухрӗҫ. Анчах Ҫеркей кинора ытла катарине кураймастӑп тесе куҫлӑх илме каялла кӗчӗ. Вӑхӑт пурччӗ-ха. Николай юлташне кӑштах кӗтрӗ те Атӑл хӗррипе, тен, пӗр-пӗр палланӑ хӗре курӑп тесе-и, пӗччененех тӑвалла уттарчӗ. Васкамасӑр лӑп пырать лутакаскер. Тирек тӗлне ҫитнӗччӗ кӑна вӑл, та-ан-ан! янӑраса кайрӗ хӑлха. Мӗн ҫурӑлчӗ-ши? Атӑл ҫине бомба ӳкрӗ-и? Тӑп чарӑнчӗ Шертанов. Ҫумран пӗр ҫын, унтан тепӗр ҫын иртет. Ӳсӗр сӑнлӑ хӑйсем, тайкаланаҫҫӗ. Ҫаксем янлаттарса ячӗҫ иккен ӑна хӑлхаран! Хӑйне кураймannисем хушнипех мар-ши? Кам тара тытнӑ-ши? Краснодарта пулакан ӑмӑртӑва ӑна ярас мар тесе ҫапла хӑтланчӗҫ-ши? Пурте ӑна вӗчӗхеҫҫӗ! Ура хурасшӑн та тавӑрасшӑн ҫеҫ.

Николай хальхи уславсем хыҫҫӑн уттарчӗ. Лешсем хӑйсем пек тепӗр виҫӗ усӑка тӗл пулчӗҫ те чарӑнчӗҫ. Николай вӗсем патне пырса тӳрех:

– Мӗншӗн ҫапрӑр эсир мана? – тесе ыйтрӗ.

Шур кӗпе тӑхӑннӑ пӗр «ҫӑвӑр автанӗ» ҫаврӑнчӗ те:

– Кам çапрĕ? – терĕ хирĕç.

– Кам çапрĕ? – терĕ иккĕмĕш ачи те.

– Кам çапрĕ? – çаврăнчĕ хăмăр кĕпелли. Ку лешсенчен ытларах та ӳсĕр, çавăнпа ĕне пек мăшлать. Николай çумĕнчен шăп çавă иртнĕччĕ.

– Эсĕ! – терĕ кăна Николай.

– Эпĕ-и?! – терĕ те услап ăна сулахай янах шăмминчен шаплаттарса ячĕ, вара вăрт çаврăнчĕ те аяккалла лаплаттарса уттарчĕ. Малтан сăмах хушнă ачасенчен шурă кĕпеллĕ «çăвăр автанĕ» Николайпа паллашса алă тытасшăн, анчах Николай аллине памасть.

– Мĕншĕн çапрăр? – ыйтать вăл.

– Хуллен, хуллен эсĕ. Каях, вăл ӳсĕр, – терĕ виççĕмĕш ачи те.

– Шавласа ан тăр, каях. Ӳсĕр вăл, – сырăнчĕç ăна.

Николай çавăрăнса анаталла уттарчĕ. «Ну, хĕнеттерчĕç. Альăн каччисем хулара çук-ха. Урăх пĕр хĕрпе те курăнмалла çӳремен. Пайăрка е Ураваш Кольăна пысăк ăмăртăва ярасшăн мар кураймасăр хĕнеттерчĕç-ши?» Çакăн пек вĕçе-вĕçе иртет Николай пуçĕнче шухăш. Хăна çуртнелле пынă чух ун умне шăп Пайăрка тухрĕ. Ăна курсанах хайхин пуçра апла-капла тĕшмĕртме хăтланни çухалчĕ.

– Хĕнерĕç мана, – пĕлтерчĕ Николай тӳрех.

– Ăçта? Мĕнле? – тĕлĕнчĕ сасартăках Çеркей.

– Ак, Атăл хĕрринче.

– Атя тытатпăр. Тăхта, милици тавраш' çук-и? – хыпăнса ӳкрĕ Çеркей.

Парк айккинче шăпах çӳллĕ кĕлеткеллĕ кăвак тум тăхăннă çынна, пĕрне тимлесех тем ăнлантаракан милици майорне, асăрхарĕç вĕсем.

– Паллан̆ă çынсем урăх çук-ши? – терĕ Çеркей милици майорĕпе калаçнă хыççăн. – Ушкăнĕ пысăк пулсан тытма йыш кирлĕ.

Çеркей кинотеатр еннелле пăхрĕ те çавăнтах пĕрремĕш шăнкăрав пулнă хыççăн зала кĕме хатĕрленнĕ Земфирăна, унтан Виктора асăрхарĕ.

– Шертанова хĕненĕ. Ак, тин кăна, Атăл хĕрринче. Тытмалла, – пăт-пат та васкавлăн ăнлантарчĕ Çеркей,

– Ăçта? Кайрăмăр, – терĕ те Виктор çурта кĕмесĕр каялла çаврăнчĕ.

Земфира та арçынсенчен юлмарĕ. Вĕсем парк витĕр тухса бульвара пычĕç – нимĕнле ушкăн та курăнмарĕха. Атăл хĕрринче халăх сайралнă, уçăлса çӳрекенсем те çук пекех. Самантрах пушаннă Атăл хĕрри. Нумайăшĕ кинона кĕнĕ ĕнтĕ, нумайăшĕ пысăках мар шав пулнă хыççăн килĕсене утнă.

– Автобуспа ларса кайрĕç пуль, – иккĕленет Çеркей лешсем пирки.

– Часах каяс çук-ха унашкаллисем. Кунтах çапăнса çӳремелле, – тет милици майорĕ. – Эсир иксĕр маларах кайăр, – хушрĕ вăл Çеркейпа Николая. – Эпир каярах пыратпăр.

Çапла вĕсем тăвалла хăпарчĕç. Ураваш та васкараххăн уттарчĕ. Милици майорĕпе Земфира – пĕр çирĕм утăм хыçра. Акă пĕр пилĕк-улт çамрăк пысăк хӳме тытнă çурт енчен Атăл хĕрринелле тухаççĕ.

– Çаксем, – пĕлтерчĕ Николай. Лешсем хирĕç килнĕ çĕртех пĕр-пĕринпе тем калаçса чарăнчĕç.

– Килĕр-ха кунта, – чĕнчĕ кусене хыçран çитнĕ Виктор.

– Мĕн сана? – ăна хирĕç хаяррăн пăхрĕ хăмăр кĕпеллĕ ача. Вара вăл çавăнтах çапма хатĕрленсе аллине каялла сулчĕ – ĕлкĕреймерĕ, Виктор ун аллине хĕскĕч пек тытса лартрĕ. Ытти услапсем Виктор еннелле ярса пуснăччĕ çеç, хыçра милици майорĕпе ытти çынсем килнине курса чăл-пар саланчĕç. Пайăрка шур кĕпеллĕ çамрăкăн çулне пӳлчĕ те милици майорĕ çитнĕ çĕре аллине каялла пăрса лартрĕ.

Ĕç хăвăрт вĕçленчĕ пулин те, кирлĕ çурта çитсе протокол çырнă хушăра вăхăт самаях иртрĕ; çамрăксен кино курма илнĕ билечĕсем «çунса каймарĕç»: кĕтмен çĕртен пăлханнă шухăш-кăмăла лăплантармашкăн вĕсене юлашки сеанса кĕртрĕç.

Пĕр шикленни час иртмест çав, акă, Земфира кино хыççăн хăй пăрăнас çул тĕлне çитсессĕн: «Вăрăм пусма картлашкипе пĕччен анса хăпарма темшĕн чун хăрать», – терĕ. Виктор вара унпа çумăн та мар, ытла кая та юлмасăр пĕр утăм пек хыçран уттарчĕ.

Электричество çути пулмасан уйăх пĕтмĕшĕнчи каç лăпах тĕттĕм пулмалла. Земфира пурăнакан пĕр тăкăрлăк пек урамра çынна асăрхама пулать пулин те тĕттĕмех. Çеремлĕ лаптăкри электрохунар çути кунта çитмест, тата чиепе чечек сачĕ ăна хупласа хапха тĕлне мĕлке ӳкерет. Пĕр пĕлĕт таткисĕр анлă тӳпе ку тĕлте чăнласах ялти пек йĕпкĕн хура кăваккăн курăнать. Çăлтăрсем унта ушкăнĕпех каçхи вăййăра савăшаççĕ. Нихăшĕ те шуйханса е ерçмесĕр киле ларса юлман вĕсенчен: тӳррĕмĕнех йăлтăр палăраканнисем те, е çемйи-çемйипе, е ушкăнпа пĕрлешсе, е пĕчченшерĕн пĕр ютшăнмасăр, тархаслаттармасăр, юнавсăр хавас кăмăлĕсемпе хăйсен вырăнĕсенчен сике-сике тухнă. Кăнтăрла çĕр çинчи ĕçе-хĕле хĕвел сăнанă пулсан халхăн каçхи канăвне, вĕсен йăли-йĕркине, хутшăнăвне çăлăрсем пин-пин куçпа тĕсеççĕ. Шăлне çыртма пĕлеççĕ тата çав куçсем. «Эп çавна куртăм», – тесе пĕр-пĕрне шарламаççĕ, пули-пулми сăмах вĕçтерсе элек сармаççĕ.

– Арăму мĕн ятлă терĕн-ха эсĕ? – хапха умĕнче Виктора хирĕç çавăрăнса тăрсан шăппăн ыйтать Земфира.

– Надя, – лăпкăн пĕлтерет Виктор.

– Илсе килмелле ăна ачипе пĕрле Шупашкара. Мĕншĕн уйăрăлмалла вара сирĕн? – тет хĕр ĕçлĕ саспа.

– Пĕр чĕлхе тупаймарăмăр пуль. Пĕрре хирĕçни тепре те хирĕçет теççĕ. Мирлешсех пурăнайăпăр-ши? – шухăшлăн пăхать хĕре хирĕç Виктор.

– Тĕрĕс те калатăн-ха та, анчах эсĕ ӳкĕте кĕме пĕлмен çын мар. Надьăпа ачине илсе килетĕн те, ак, пурăнатăр, – тет ăна уçă чунлă хĕр.

– Земфира, эп каччă пулнă пулсан Çăкасара пурăнма пырăттăн-и? Районти хаçатра ĕçленĕ пулăттăн, сăмахран, – хăюланса каласа хурать Виктор.

Хĕр ăна чăрах пăхать те:

– Кун çинчен калаçма кирлӗ мар, – тет пăлхануллӑн.

Мӗнле çын-ши çак Çӗн Çăкасар ачи Ураваш?! Вăл ырă кăмăллине Земфира курать-ха. Çын хыççăн кайма юратнине, хăш-пӗр ӗçсене тӗплӗн шутламасăр тунине те туять вăл. Пӗр ӗнкертнӗ çӗртен час уйрăлаймасть-çке ачи, кӗлетки-пӗвӗ ӳссе çитерехпех вăл кӳрше çӳресе купăс калама вӗреннӗ... Анчах этемми çынна кура ун хыççăн каять пулин те пурнăçри татăклă утăма хăй пуçӗпе хăй шутласа никампа калаçса сӳтсе явмасăр туса пынă. Акă пăхăпăр: ача чух мучăш ывăлӗ Çтуппанпа нумай ермешсе çӳренӗ, ăна итленӗ пулин те, пур чух та вăл сӗннине хăлхана чикмен-çке Виктор, районти ăмăртăва илӗпӗр ав. К. хулинчи профтехучилищӗне те унсăрах кайнă; çарта юнашар краватьри ача йывăрлăхран шикленсе секци занятине çӳреме пăрахрӗ – Виктор спортри мал ӗмӗтлӗ ушкăнран юлмарӗ. Пӗр иленнӗ çӗртен час уйрăлайманни-ха ку. Иккӗмӗш хут отпуск илсен никам ӳкӗтленине пăхмасăр яла курма килчӗ. Кунта каллех Çтуппан кăмăлне хирӗç пулаймасăр курка тытрӗ те мухмăрпа супрӗ. Служба вăхăчӗ хыççăн ăна çартах хăварасшăн ӳкӗтлерӗç – вăл юлмарӗ. Авланнă чух та çынтан ыйтсах тăмарӗ, Шупашкара та хăй пуççăнах тухса килчӗ.

Тӗрӗсси те, тӗрӗс марри те пулчӗ ку тарана çитнӗ пурнăçӗнче Ураваш Кӗркури Викторӗн. Хăв пуçупа хăвах шухăшла, тăвас тенине килӗшӳллӗн тăвах эсӗ, çуралнă этем! Анчах (хирӗçлеме ан тăр, тăванăм) пурнăç тути-масине маларах пӗлнӗ çын вӗрентсе пыни те кирлӗ-çке пире! Ăс илмешкӗн пур чух та ырă туссем пулмарӗç çав ку ачашăн.

Хӗрарăма, çăка йывăç пек çепӗç çынна, çумри юлташ юман пек тӗреклӗ пулни кирлӗ, мӗншӗн тесен ним хӳтлӗхсӗр яштак вулă та чечекленичченех вăхăтсăр хуçăлӗ. Юмансара çăкасар упранă пекех, арçынна та шӗкӗ ерсе хавшатасран асăрхама тата ялан хавхалантарса тăма çепӗç чунлă мăшăр кирлӗ. Çумра чӗкеç чӗлхиллӗ çын пултăр тесех пуль ӗнтӗ, васкавлăн авланса ячӗ Çӗн Çăкасар ачи. Çавăнтах ăшри ӗмӗте пурнăçлама

чăрмантаракан никрес чун – хунямăшĕ – тупăнчĕ те, тухрĕ вара кĕнĕ килтен вăл. Ак халĕ пĕчченех Шупашкарта хусахлă пурнăçпа пурăнать. Ялта ашшĕ çĕре кĕчĕ унăн, халь йăх пуçне вăл хăй юлчĕ. Пурнăç утăмĕнче юнашар пымашкăн черченке мăшăр кирлех иккен çак патвар арçынна – унсăрăн вăл хăй ĕмĕтне пурнăçлаймĕ. Нимшĕн пулмасан та, çакăншăн хĕпĕртемелле: Атăл хĕрринче паян тĕл пулнă усăксен йышĕнчен мар вăл! Этем вăл, кĕрешекен этем!

– Ытлашши нумай калаçса тăтăмăр, ыран çывăрса юлăпăр тата, – тет Земфира ăна хирĕç пăхса тăруçăн.

– Ыр каç пултăр эппин. Чипер юл, – тесе тавăрать те Виктор, хĕр ăна уйрăлма алă парать.

– Ыйй, вут пек пĕçерет сан аллу, чукмар пек çирĕп тата, – тет çавăнтах Земфира аллине каялла илме васкамасăр.

Кĕрхи сулхăн кунсенче тăхăнмалли çӳхе пальтопа вăл. Пилĕк тĕлĕнчен хак касса çĕленĕ çи-пуç ытлашши çӳллех те мар йăрăс пĕве пушшех илемлĕн кăтартать. Пуçри чечеклĕ хура тутăрне умра пĕр хут тĕвĕлесе çыхнă та, кăшт çеç тăрхаларах çинçе пичĕ каçхи тĕттĕмре юмахри вутăшăнни пек чипер курăнать. Викторăн çак илеме хăй çумнерех туртса илесси килет, анчах хăй каччă маррине туять те унашкал пуçтахланма хăймасть. Ун пек чух хĕр те ăна тĕртсе ярса: «Мĕн эс, кун пек юрать-и?» – тенĕ пулĕччĕ. Земфира, чăнах та, «чипер кай», – терĕ те каялла чакрĕ, вара çирĕп алă çемçе алла вĕçертрĕ. Хĕр çапла каялла чакса-чаксах хапхаран кĕчĕ. Шашулкка шаплатса хупăнсан Виктор çавăрăнчĕ те вăраммăн пусса çулпала уттарчĕ.

## Çирĕм пĕрремĕш сыпăк

Герман Савельч Савельев техникум командипе Раççейри ăмăртăва кайса килнĕ хыççăн тепĕр куннех,

кубок ҫӗнсе илнине пӗлтерес тата яланхи йӑлапа ун-кун ҫинчен калаҫас тесе ӗнтӗ, спорт комитетне пычӗ. Кунта шӑпах Атӑл ҫи ӑмӑртӑвӗнче мала тухнӑ атлетсем финала кайма пуҫтарӑннӑ. «Шертанов ӑҫта тата?» – ыйтрӗ вӑл кун пек чух сӑмсине каҫӑртса ҫӳрес ачана курас ҫинчех курман енне. Леш ӳсӗр сӗрккесем Атӑл хӗррине тухсан ӑнсӑртран Шертанова инкек кӳнине каласа панине Савельев тутине тӑсарах та сӑнне-пуҫне пӗр хускатмасӑр тӗлӗнсе итлет халь.

Шертановӑн хӑлха параппанӗ шӑтнӑ иккен, ҫавӑнпа врач ӑна ӑмӑртӑва хутшӑнма та, тӳрленсе ҫитиччен тренировкӑсене ҫӳреме те хушман. Пушӑ вӑхӑтне ниҫта чикме пӗлеймен услапсем ҫын ҫулне картласа хураҫҫӗ ав. Пӗр «ҫӑвӑр автанӗ» хӑйсен йышӗнче ҫынна ҫапнипех йӑвантарса яратӑп тесе каппайнӑ, анчах ҫав сӗтӗрӗнчӗк ӑҫтан чухлатӑр-ха ӗнтӗ вӗсем умӗнче пыракан лутра ача спорт мастерӗ пуласса? Ури тӗреклӗ ҫын тайӑнмарӗ теҫке! Сӳсленчӗксем хӑйсен «тӑрри шӑтӑккине» питӗрӗҫ-ши, питӗрмӗҫ-ши – анчах Шертанов, пысӑк ӑмӑртӑва хутшӑнмалли тивӗҫе ҫӗнсе илнӗ ҫын, килтен тухаймасть. Халӗ ун вырӑнне теприне яраймастӑн. «Шел», – терӗ Савальев Шертанов пирки.

Ӗҫлӗ пӳлӗмсене кӗричченех фойере спортсменсемпе калаҫса тӑракан тренера комитет инструкторӗ: «Сан ятпа, Герман, телеграмма пур», – тесе систерчӗ те, ҫын инкекӗ пирки тӗлӗннипе сӑнӗ улшӑннӑ Савельев хӑпӑл-хапӑл Сыромятин патне кӗрсе кайрӗ. «Ну, спартакиада финалне вӗҫтер, сана судья пулма чӗннӗ унта, – терӗ председатель кӑмӑллӑн та ыррӑн. – Йыхрав пур чухне каяссинчен чарса тӑмастпӑр».

Спорт мелӗпе утассине уйрӑммӑн ятарласа хатӗрленӗ судьясем сӑнаҫҫӗ, ун пеккисем пӗтӗм союзра комиссире тӑраҫҫӗ. Савельев Атӑл ҫи ӑмӑртӑвӗнче утларӑшӑн аслӑ судйи пулчӗ-ха, халӗ финалти ӑмӑртусене хутшӑнсан ӑна та пӗтӗм союзри комиссие кӗртме пултараҫ-и тен. Ҫавӑнпа ӗнтӗ вӑл хӗпӗртесе те савӑнса кайрӗ. Шел, Чӑвашран пӗр ҫӳревҫе те илсе

каяймасть халь вăл. Апла Савельевăн ăмăртура пулса утларăша сăнмалла çеç мар, малашлăха хатĕрленешкĕн çынсем епле çӳренине те, вĕсен тренировка мелĕсене те, умри ĕмĕчĕсене те курса пĕлмелле! Чăваш çӳревçисен пуласлăхĕшĕн Свельевăн çав ăмăртăва пĕр кая юлмасăр çитмелле.

Техникум директорĕ, спортри ӳсĕмсемшĕн каççах каякан тепĕр çын, Ананий Яковлевич Вазанов, кубокшăн хĕпĕртенипе пĕр сăмахсăрах:

– Юрать, атя, кайса кил, терĕ. – Пайăрка Çеркейĕ те пырать-и? – кăсăкланчĕ çавăнтах.

– Çӳревçĕсенчен никам та пулмасть çав, – ăнлантарать физкультура учителĕ.

– Апла пуриншĕн те сан тăрăшма лекет. Пĕр тухнăскер ан тамалăр, – тет Ананий Яковлевич, кунта директор пуличчен Асамат районĕнче пысăк вырăнтах ĕçленĕскер.

Поезд çине Герман Канашра ларчĕ. Купене вырнаçнă хыççăн вăл яланхи йăли-йĕркипе палланă çын çук-и тесе вакун тăрăх пăхкаласа утса тухрĕ. Кунта пурте аякри тăванĕсем патне е канма кăнтăра каякансем, ытларах ватăсемпе хĕрарăмсем иккен; спорт йышĕнчен пулни палăрмарĕ. Апатланма ресторана пырсассăн вара вăл пушă сĕтел хушшинче меню вуласа ларнă хушăра унран пĕри: «Ку вырăна никам та йышăнман-и? – тесе ыйтрĕ. Сасси унăн селĕп тес, селĕп мар, тулли çăвартан çатăрккан тухать, çакă Германа çынни енне пăхичченех палланă сас пек туйăнчĕ. Çавăнпа чăваш ачи пуçне çĕкленĕ-çĕклеменех хулăм туталлă, лутра пӳллĕ çамрăка, спорт тумĕ çийĕн чăпар тĕслĕ çуллахи шалпар пиншак уртнăскерне, тӳрех палласа илчĕ: ара, утмурт ачи Дмитрий Жуковский пулчĕçке ку! Çӳревçĕсем ăна, çивĕч утăллăскерне, тухăç енчи халăхсен сăнарлĕ пулнăран тата пĕчĕк кĕлеткеллĕрен «Яппун генералĕ» теççĕ.

– Митек-çке! – куçлăхне тӳрлетсе пăхать Герман. – Спартакиада финалне каятăр-и?

– Çавăнта ĕнтĕ. Ăçта пултăр?

Жуковский Савельева хирĕç ларсан вĕсем хаваслanса калаçа пуçларĕç. Утмурт ачи Урал тăрăхĕнчи халăхсен спартакиадинче 20 çухрăма сехет те 28 минутра тухнине Герман хаçатра вуланипе пĕлет-ха.

– Аван тĕслĕх кăтартнă эсир. Халĕ еплерех хатĕрлентĕр? – ыйтать ăста çӳревçĕрен Герман.

– Хуллен, майĕпен, – тавăрать Дмитрий ку вăл темех мар тенĕ пек.

Çапла сăпайлăн та лăпкăн çеç çăвар уçни шăпах ĕнтĕ çын тĕреклине пĕлтерет: вăйлă спортсмен, уйрăммăнах вăрăм çула тухаканни, нихăçан та «эп вирлĕ хатĕрлентĕм, çĕнтермех шутлатăп», – тесе каламасть – утларăш вăл малтанах мухтанса лармалли, çынна пăспа хăратмалли спортах мар, çула епле утса тухассине ху та тӳрех пĕлейместĕн-ха. Дмитрий, кĕрешӳсенче пайтах тӳссе курнăскер (сăлая пăснăшăн ăмăртуран кăларни те пулнă унăн), хăйĕн сăпайлăхĕпе шăп та шай вăйлă çын пек палăрать.

– Атăл çи кĕрешĕвĕнче Шертанов хушматлăскер çĕнтернĕччĕ пулас. Сирĕн Чăвашран тенĕ. Кам вара вăл? Ураваш хушаматне пăтраштарса çырман-и? – ыйтать Жуковский. Герман ăна леш ачи малтан Казахстанра пулнине каласа пачĕ, «кĕлеткерен сан çӳллĕшскер», – терĕ. Жуковский пĕлет те иккен, пĕр ăмăртура курнă та-мĕн Николая вăл.

– Ытла шăрăх пулчĕ-им ун чух? Утакансен вăхăчĕ начарччĕ, – ыйтать Дмитрий Атăл çи ăмăртăвĕ çинчен.

– Хĕвелте типĕтнĕ пулă пекех типсе кайрĕç, – пĕлтерчĕ Савельев.

Жуковский Ураваш çинчен те Ивановăпа Калинин облаçĕсенчи çӳревçĕсем çинчен те пĕлесшĕн тĕпчет. Дмитрий хăй ку çура уйăхсерен сакăр çĕр километр таран утнă-чупнă, çапах та вăл ăна нумай темест. ГДР спортсменĕ Генрих Шульц сакăр вунă километрлă вăрăм çула уçăлма тухсан та кашни вунă километрне утмăл минутра ӳкерсе пынине каласа парать; хамăрăн

атлет та, Олимп чемпионӗ Геннадий Галлин, кашни тренировкӑрах пысӑк хӑвӑртлӑхшӑн тӑрӑшать-мӗн. Олимп ҫул-йӗрӗ вӑл – хӗрӳ ӗҫ ҫире тар нумай кӑларасси тесе шутлать Жуковский. Савельева ҫак калаҫу пушшех хавхалантарса ярать. «Эх, ку ӑмӑртура чӑвашсен нихӑш ҫӳревҫи те пулмасть-ҫке», – ӳкӗнет вӑл.

* * *

Ӑмӑрту вырӑнне ҫитсе чарӑнсассӑн Герман Савельев тӳрех судьясемпе команда ертӳҫисен канашлӑвне кайрӗ. Калаҫӑва ертсе пымашкӑн президиумри вырӑна виҫҫӗн ларчӗҫ: пӗри профсоюзсен Тӗп комитетӗнчен килнӗ ҫын пулчӗ ӗнтӗ, тепри – ӑмӑртӑвӑн аслӑ судйи. Виҫҫӗмӗшне, йӑрӑмланса кӑвакарнӑ ҫӳҫлӗ, туллирех питлӗ вӑтам ҫулсенчи арҫын кам иккенне Герман чухлаймарӗ. Савельев ӑна ӑмӑртусенче курнине те астумасть, калаҫу вӑхӑтӗнче питӗ ӗҫлӗ сӑн-питлӗ курӑннӑран пӗр-пӗр организацие ертсе пыракан, ку канашлӑва йӑлишӗн ҫеҫ килсе ларнӑскер теме те ҫук ӑна, пӑхсанах вӑл спорт ӗҫне-хӗлне хитре пӗлекен ҫын пек туйӑнать. Малтанхи иккӗшӗ ыранхи ӑмӑртӑва епле йӗркелесси ҫинчен тӗплӗн ӑнлантарсан тата хӑш-пӗр ыйтусене татса парсан профсоюз организацине ертсе пыраканни, ҫак кӑвак ҫӳҫлӗ ҫынпа паллаштарса ӑна сӑмах пачӗ. СССР Спорт комитечӗн членӗ, спорт хаҫачӗн тӗп редакторӗ Пахомов пулчӗ иккен ку. Хӑйӗн сӑмахӗнче вӑл МОКӑн черетлӗ ларӑвӗнче пулни ҫинчен, спорт юхӑмӗ ҫӗр чӑмӑрӗн пур кӗтессинче те, уйрӑммӑнах социализмлӑ ҫӗр-шывсенче ирӗклӗн аталаннине, пирӗн ӳсӗмсем хальччен малта пулнӑ капитализмла патшалӑхсене вӗчӗрхентернине каласа пачӗ. Олимп программине йышӑннӑ чухне ҫивӗч калаҫу пулнине те асӑнчӗ. Утларӑш пирки сӑмах пуҫарсан Грман Савельевӑн ӳт тӑрӑх сивӗ чупса иртрӗ, «ҫак енпе те ӑмӑртусене нумайрах йыш явӑҫтармалла», – тесен, вӑл хӑйне ӑс парса каланӑнах туйрӗ.

– Эп сире, паянхи стартсенче ыранхи ӳсӗме кура-

кансене, Спорт комитечӗ ирӗк панипе пӗр вӑрттӑн хыпар пӗлтересшӗн, – терӗ Пахомов. Зал, ахаль те тимлӗн итлекенскер, нимӗнле пукан-сӗтел чӗриклетмесӗр шӑп пулчӗ. Чӑн та, ҫак самантра кӗтменнинех пӗлтерчӗ вӑл: пӗрӗн Тӑван ҫӗр-шывӑн тӗп хули Мускав Олимп вӑййине хӑй патӗнче ирттермешкӗн йыхравлама хатӗрленет иккен. Халь ҫине МОКа чӗнӳ хутне ямантха, шутлаҫҫӗ ҫеҫ. Зал, ку хыпара илтсен карах хускалса илчӗ. Ҫак таранччен Совет Союзӗнче нимле хула та ҫав чаплӑ вӑййа ирттермшкӗн чӗнме хӑйман-ха, халь чӗнеҫҫӗ пулсан чӗнеҫҫех-ха ӗнтӗ. Анчах Олимп вӑййине пур чӗннӗ хуласенче те ирттермн-ҫке, хӑш-пӗр хуласем ҫур ӗмӗр хушшинче пилӗк-ултшар хут йыхрав тунӑ, ҫапах Олимп хули пулайман. Мускавра Олимп вӑййи пулӗ-ха, анчах миҫемӗш йыхрав хыҫҫӑн миҫемӗш вӑййӑ ирттерме йышӑнӗҫ-ши МОКра ларакан господинсем? Ҫапла ырӑ хыпар самантрах шухӑша ячӗ.

Пахомов спорт юхӑмӗнчи кӗрешӳ ҫинчен малалла калать.

– Мускав Олимп вӑййине ирттерме евитлесен пирӗн ӗҫсем татах пысӑкланаҫҫӗ, – тет вӑл. – Спорт ӑмӑртӑвӗсен пахалӑхне чылай ӳстермелле, спорт ҫурт-йӗрӗсене лайӑхлатмалла. Ку тапхӑрта Олимп комтитечӗн членӗсем пирӗн пата курма килме пултараҫҫӗ. Пирӗн вӗсене хамӑрӑн ӑмӑртусемпе, халӑхӑн ӗҫӗ-хӗлӗпе паллаштармалла; апла пулсан спорт юхӑмӗ пирӗн сӳрӗкленме мар, вӑйлӑрах аталанмалла. Ыранхи ӑмӑрту хамӑр ҫӗр-шыври пӗчӗк Олимп вӑййи пек ирттӗр, – тесе вӗҫлерӗ Пахомов хӑйӗн сӑмахне.

Герман Савельев чунӗ пушшех хӑпартланса кайрӗ. Халӗ ҫын пӗртен-пӗр япалашӑн пӑшӑрханать: пур вӑйлӑ ҫӳревҫӗсенчен чӑвашран никам та ҫук, Шертанов тесен унпа инкек пулчӗ-ҫке; ҫав ача кунта ӑмӑртнӑ пулсан ун уттине кура киле юлнисенпе танлаштарса пӑхма пулатчӗ. Мӗн «пулатчӗ?» Халӗ те палӑртать ӑна Герман! Хӑш атлет епле вӑйлине, ун сӑлайне, тактикине куҫ илмесӗр сӑнамалла ҫеҫ унӑн. Кунтах тата

ăмăрту вĕçленнĕ хыççăн çӳревçĕсен тренерĕсемпе судйисен семинарне ирттерме палăртнă. Тепре унта ăнлантараççĕ, унта ăс пухĕ Савельев. Кайран Шупашкара таврăнсан-и?.. Хăй те тренировкăна тепре тытăнĕ, ыттисене те хавхалантарса ертсе тухĕ вăл.

Герман Савельев почтăна пычĕ те телефонпа килне шăнкăравларĕ.

– Тоня! – чĕнет вăл арăмне. – Хутпа кăранташ ил. Çыр. Генăн, Веньăн, Уравашăн, ытти çӳревçĕсен ку эрнере мĕн-мĕн тумаллине калатăп. Пĕри те ахаль ан ларччăр. Пысăк ăмăртусем кĕтеççĕ кашнине.

## Çирĕм иккĕмĕш сыпăк

Çут çанталăкăн вăхăчĕ кĕр енне çывхарнă. Земфира, ĕç хыççăн уçăлма тухнăскер, сарă çăка çулçисене куçла-куçла киленсе утатчĕ. Хыçран ăна такам ятран чĕнчĕ – Шертанов-мĕн.

– Санăн детективлă романна вуларăм, – терĕ вăл питне-куçне йăлкăштарса. Земфира леш усăксем çинчен хаçатра çырса кăларнăччĕ те, çавăн пирки пырать сăмахĕ. Фельетонне пĕрле ĕçлекен сотрудница Агафья Антиповна та мухтанăччĕ çав.

– Тренировкăна тытăнтăн-и? – ыйтать спортсменран Вутланова.

– Эп пăрахма шутламан та, ăмăртăвне каяймарăм çеç, – хуравлать Николай ним пулман пекех.

– Çăмăл атлетсем паян пиллĕк çурăра Етĕрне çулĕ çинче пухăнаççĕ, – пĕлтерет журналистка спортсмена. – Вăхăт тупса пырăр.

– Эп хам планпа ĕçлетĕп, – мăнаçлăн кулать Шертанов. – Çӳревçĕсене пĕлтер: Николай Алексейч Çĕрпӳ çулĕ çинче тусан кăларать те.

Ачи хулана техникум валли спорт тумĕ илме килнĕ иккен. Тренировки йĕркеллех пырать тесе вăл кăштах

тыттарчĕ-ха, физкультура вĕрентнĕ чухне çеç ачасемпе пĕрле çӳрекеленĕ кăна.

Герман Савельевич хушнине пурнăçламашкăн Виктор ĕçрен иртерех тухасшăнччĕ, анчах Флор Флорыч çĕмĕрĕлнине пула пиллĕк иртсе кайсан та пăрахса утаймарĕ. Палăртнă вырăна çитнĕ çĕре ăна Веня Савельев кĕтсе тăрать ĕнтĕ – пединститут студенчĕ лекцисем хыççăн ГТО нормине паракан ăмăртура судья пулнă иккен те халь кунта тӳрех персе çитнĕ. Веньăпа Виктор, пĕри пит çамрăк, тепри иртнĕ çулсенчех хаяр çӳренĕ, халĕ тепре вăй илекен атлет, кун каçа ĕçре пиçĕхнĕ хыççăн хула тулашĕнчи таса сывлăшра шăм-шак уçăлса кайнăн кăна туйрĕç. Кăмăлĕ те вĕсен çĕкленӳллĕ – вăрăм çула хăвăртрах вирхĕнес килет.

Земфира Вутлановапа тепĕр икĕ хĕр çакăнтах кроса тухнă.

– Эпир сире çула май кăштах ăсатса ярăпăр, – тет Земфира шӳтлерех.

Веньăпа Виктор шăм-шака алхапăллăн çемçетрĕç те:

– Инçе çул пулсан – инçе çул, хăвăрт тухмалла пулсан хăвăтрах каяс, – тесе труссипе майка вĕççĕн юличчен хывăнчĕç. Кĕпе-тума хурса хăвармашкăн çакăнта, юрать, ГАИ будки пур. Пĕрре çеç кĕмен спортсменсем унта, татах та кĕрсе йăл илесси пулĕ-ха хăйсене тĕртсе яман вырăна. Чун-чĕре хастар пулин те вăрăм çул умĕн çӳçенетĕнех: ара, тем килсе тухса тем пуласси пур. Халĕ кунта кросс чупакан хĕрсемпе калаçни шиклĕхпе асăрханулăха кăштах манăçтарчĕ, тавçăрмаллинех тавçăрттарса çитермерĕ. Юрĕ, атлетсем çула тухрĕç авă. Вĕсем иккĕн хăйсене самаях çăмăллăн туйса шоссен пĕр хĕррипе йăрлаттарса утаççĕ. Туссенчен кĕçĕнни те тайăнраххи хыçран пăхсан такана çурăмĕ пек сутаналлă курăнать, пилĕкне вăл ытлашши вылатмасть, урине тӳррĕмĕнех ярса пусать, çапах та утăмĕ метра çывхарать; юман вулли пекех тĕрекли сутанана

умалла çавăрттарса кăларса метртан та вăрăмраххăн пусать. Вĕсемпе пĕрле юнашар виçĕ хĕр юртăпа пыраççĕ. Икĕпӳрт тĕлне çитерехпе кусем çӳревçĕсенчен юлчĕç те тек хыçран хăваламасăр каялла таврăнчĕç.

Кунти ула юпа тĕлĕнче пилĕк çухрăм пулмалла та, Виктор утнă майăнах кăштах хулленленсе сехетне пăхать – вырăнтан тапраннăранпа 31 минут иртнĕ. «Тепĕр пилĕк çухрăмне 29 минутра тухас, – тет атлет татах хавхануллăн. Хĕвел, анăçа сулăннă пулин те, йăлтăртатсах пăхать-ха, ни сулхăн мар, ни пĕçертмест – утма самай лайăх темелле. Виктор кашни çухрăмсерен вăхăт тĕрĕслет – ултă минут çитиччен çич-сакăр çеккунт маларах хыça юлать пĕр юпа хыççăн тепĕр ула юпа. Лента пек тăсăлакан шоссен сулахай енĕпе Веньăпа Виктор çума-çумăн пыраççĕ. Машинăсем хирĕç вашлаттарса килеççĕ те вăн-н! тесе хыçра йăмаççĕ, е çулăн сылтăм енĕпе майлăн иртекеннисем тусан çавăрттарса хăвараççĕ.

Хыркассине çитсе таврăннă çĕре малтанхи чĕрĕлĕх çухални сисĕнчĕ, çапах Виктор кашни километрне ултă минутран кая мар хăвăртлăхпа пыма тăрăшать, Веня та унтан юласшăн мар вичкĕнет.

Вăрман çӳллĕшне аннă хĕвел çурăмран ачашшăн ăшăтса пăхать ĕнтĕ халь, вĕри те мар, сулхăнах та мар – самай ĕçлеме меллĕ самант; хĕрӳ ĕç çире çурлапа тырă вырнă чух çак каçхи кахал апачĕ тĕлĕнче ĕç ытларах ăнать, вырас та вырас килет санăн, анчах вăхăчĕ сахал-çке, часах каç пулать, тĕмсене йăтса çĕмел тума та тытăнмалла. Каç пуласси хăратмасть-ха Олимп каçалăкĕнче тар кăларакансене – хĕвел аниччен вĕсем тавăрăнма ĕлкĕрĕç, анчах çанталăк ырă пулин те шăмшак сӳслене пуçларĕ; çавăнпа атлетсем халь калаçмаççĕ; суласа пынипе алă тем йăтнă пек йывăрланчĕ, такам урана тăлласшăн пакăлчакран ярса тытнăн туйăнать, çан-çурăм шултăрканă; самантрах хырăм выçса кайрĕ – çиес килет. Хыркасси столовăйне кĕрсе пĕр стакан чей те пулин ĕçме шутламалла пулнă – тавçăрайман.

Тепӗр тесен, столовӑйӗ ку вӑхӑтра те ӗҫлетчӗ-ха, те хупса лартнӑччӗ? Хӑвӑртлӑх, ним те калаймӑн, хӑйне хӑех чакрӗ ӗнтӗ. Виҫӗпӳрт патӗнчен иртсе Икӗпӳрт еннелле таврӑнас кукӑрта Веня юла пуҫларӗ, ҫапах та вӑл хушшӑн-хушшӑн чупнӑ пекех пырса Викторпа танлашать. Лешӗн те вӑйӗ пӗтнӗ, анчах ку: «Палӑртнӑ вырӑна утсах ҫитетӗп», – тет. Икӗпӳрт умӗнчи кукӑрта Веньӑн, ним тума та ҫук, вӑй шалтӑрах тухса ӳкрӗ, халӗ ҫын урана аран сӗтӗрсе пырать. Виктор тамаласшӑн мар-ха: лере, тӗреклӗ вулӑллӑ лаштра юман тӗлнелле, Земфирӑсем юлнӑччӗ, вӗсем ҫавӑнтах пек туйӑнать халь ӑна, ҫав тӗлтрен спорт утӑмӗпех чашлаттарса иртесчӗ Викторӑн.

Веньӑн сӑнӗ-пуҫӗ ҫын тӗсӗ ҫукла улшӑннӑ, вӑрман та ӑна хушшӑн-хушшӑн тӗтреллӗ туйӑнать; Викторӑн та хырӑм – хыр тӑрринче. Хыр тӑрринче мар ҫав, унтан татӑлса аннӑ, ҫапах та ҫынни палӑртнӑ хушша пӗр тамалмасӑр ҫитетӗп тесе илтерет. Ҫын, пӗр тамалсан хӑвӑрт чакса ларать ҫав, акӑ Веня Викторӑн ҫурӑмне кӑна курса юлчӗ. Тӑвалла улӑхсан вӑл Ураваш ӑҫта ҫитнине пӗлес тесе, тем шанчӑк кӗтнӗ пек, хура куҫӗпе умалла вичкӗннӗн пӑхрӗ – Ураваш курӑнмиех пулнӑ иккен. Мӗн хушӑра ҫапла хӑвӑрт кайма пултарчӗ ҫын? Кайтӑрах эппин, будкӑна маларах ҫитсе мӗн те пулин ҫимелли хатӗрлеймӗ-ши тесе те ӑнкартать халь ҫамрӑк спортсмен. Тата ҫӑкӑрне ӑҫтан тупассине шутламасть-ха вӑл, хывса хӑварнӑ тум кӗсйисенче пуссем пур-ха та, анчах ҫӑкӑр е булка магазинӗ ку енче ҫук, суту-илӳ ҫуртне тин купалаҫҫӗ. Веня урана сӗтӗрсе тенӗ пек пынӑ хушӑра ҫул айккинчи ҫерем ҫинче, вӑрмантан уйрӑм ларакан юман тӗлӗнче, пӗр ҫын йӑваланса выртнине асӑрхарӗ: ӳсӗрскер пулас, кӗлетки кӑшт ҫеҫ курӑнать, аллине тӑсса пуҫне ҫерем ҫине хунӑ ҫавскер, унтан ҫавӑрӑнса месерле выртрӗ. Нимӗнле ӳсӗр те мар, Виктор Ураваш пулчӗ ку. Веня Савельев ҫитсен вӑл тӑрса ларчӗ. «Пӗтрӗм эпӗ, тӑрӑнсах антӑм» – тенӗн тӗлкӗшет унӑн куҫӗ.

Темĕнчченех йăваланмалла-и вăрман сулхăнĕнче? Хĕвел кĕçех анса ларĕ те, ак, нӳрĕк пуснипе шăнтсах пăрахĕ; вĕриленнĕ хул-çурăм сивĕне пуçланă ĕнтĕ, ГАИ будкине мĕнле те пулсан çитесех пулать... Çул вĕçне çитме пурĕ те виçĕ çухрăм çеç-ха, анчах виçĕ çухрăм çеç те, питĕ инçе пек çав хушă. Акă, вĕсене хирĕç пĕр карчăк, çывăхри ял çынни пулас, çуранах килет. Хул пуççи урлă ума та, хыçа та карçынкка çакнă вăл – хулана сĕт тата çăмарта сутма кайнăскерĕн карçынккисенче пушă чертверт кĕленчисемпе пĕрле – туллиех çăкăр-булка. Хăйса тата йăлăнса ыйтнине кура, карчăк ачасене батон сăмси хуçса пачĕ – уншăн та тав! Çурмалла пайласан икшер çăвар пулчĕ паха çимĕç. Ăна ăша ярсан пĕр-пĕринпе ним калаçмасăр хуллен утрĕç атлетсем – хывăннă вырăна çапла сĕтĕрĕнсе çитрĕç-çитрĕçех.

ГАИ хуралĕнче тăракан милиционерсем! Спортсменсен ячĕпе мĕнле ыр сăмах калам-ши сире эп? Эсир, çула тухнă машинăсене чарса, шоферсене: «Асăрханăр – унта спортсменсем», – тесе калаттăрах. Ку вăл сирĕн служба ĕçне туни кăна тейĕпĕр. Служба ĕçне те тем тĕрлĕ тума пулать – спортсменсене те сиввĕн кăна: «Çул çӳрев правилисене ан пăсăр», – çавăн пек е ун пек çӳрĕр тесе хыттăн «ăс пама» май çук-и ара? Кунта паллă поэт калашле, «манăн милици мана хӳтĕлет» тенисем спортсменсене ăшă куçпа пăхаççĕ. Авă, пирĕн атлетсем çири тумне те вĕсен будкине хывса хăварнă-çке.

– Мĕн, пĕр чĕрĕ тĕс çук сирĕн? – ыйтрĕ халтан ӳкнĕ çӳревçĕсенчен хăйĕн ĕмĕрне сыхлăх ĕçĕнче ирттерекен ватă милиционер.

– Выçса кайрăмăр.

Хывса хăварнă тумне те тăхăнма вăй çук ачасене вăл хăйне валли каçхи апатлăх илсе килнĕ хутпа чĕркенĕ çимĕçе – икĕ татăк хура çăкăра пыл сĕрсе хирехирĕç хуплаштарăскере – тумбăчкăран кăларса пачĕ; унтан электроплитка çинче ларакан чейника, сивĕнсе кайман-и-ха тесе, тытса пăхрĕ те лĕп шыва стакана тултарчĕ. Выççа чăтма çăмăл мар теççĕ çав – кунта ирч-

чен пуранас çыннан каçхи апатне çимешкен пачах та ыра мар-çке те, пуррипе апатланса вай илчеç кунепе ёçре пулна хыççан ана-кана хатерленмесер инçе çула тухна атлетсем. Пуранас кун-çулу телейле те варам пултар санан, постри милиционер!

* * *

Мал ёметле çынна пер-икке нушаланни харатайме. Спортсменан нушаланасси вал кашни тренировкарахха. Ака, çуревçесем стадионра пысак хавартлаха чатма ханахаççе. Çулра паян весем виççен: Виктор, Веня, Çеркей. Пайарка Çеркейе, ялти учитель, ачасене экскурсие илсе килне-мен те вахат сиплештерсе кунти спортсменсемпе тренировкана тухна. Тренер вырание катартава çырса пыракане – Земфира Вутланова. Малтанхи çаврама ун уменче тытанса çав вырантах веçлереç çуревçесем. Хер вахат каларе те çийенчех блокнот çине палла туре, çуревçесем сывлаш çаварса илне хыççан тепре тапранса кайреç. Иккемеш çаврама Çеркей ертсе пырать. Минут та 55 çеккунтра илсе çитерче ку ункана вал. Пер пилек çаврамне 1.55 – 1.53 вахатпа тухма палартна весем. Хале пуçра Виктор ертсе пырать. çеркейпа Веня ун хыççан утаслаççе. Çаврама веçлеме çер алла метр пек юлсассан, умри пит хаварт вирхенче те, Çеркей та Веньана улт-çиче метр хаварса Земфира теленчен иртре – вахаче пер минут та 48 çеккунт пулче. Çуревçесем канса илмелех пер херех-алла утам лапкан пускаласа кайна хыççан вахат çыракана ала çеклереç те каллех вашканчеç. Веня ертсе пына вахат минут та 57 çеккунт пулче. Пуçра ак хале каллех – Виктор. Хай тапранна вырана çитсен вал аллине çеклере, Земфира вара секундомера чарса унти вахата блокнотне çырче: 1.44 (пер минут та 44 çеккунт).

Виктор хайне уçа туять. Вахата хер çырса пынаран-и, вал аш пиллен самах каланаран-и, утавçасен камале пурин те ыра, амартури пекех хавхалануллa. Çеркей,

ялта ытларах тренировка тăваканскер, çак йышпа пĕрле ĕçлеме май пулнăран пĕчĕк ача пек хĕпĕртет. Вăл хăй ертсе пынă чух минут та 50, минут та 52 çеккунтра илсе çитерет. Викторăн ертсе пырас хăвăртлăхĕ пĕрешкел мар: пĕр минут та 40 çеккунт таран е пĕр минут та 52 çеккунта çити; Веня та минут та 49 – минут та 57 çеккунтсенче «ташлать». Хăвăртлăхĕ пур ачасен, çирĕпленсе çитеймен çеç. Çеркей, ав, вĕçнелли тăвать çаврăма пурне те, штамп çапнă пек, минут та 44 çеккунтра утса çаврăнчĕ.

24 ункă турĕç вĕсем. Тепĕр юлашки икĕ çаврăмне кам мĕнле хăвăртлăхпа кайма пултарать, çапла кайма шутларĕç.

Çеркей утта пит хăвăрт пуçларĕ. Сывлама та йывăр ăна, чăтаять-и, чăтаймасть-и 400 метр хушша тухиччен – пырать вăл; Виктор – Çеркей хыçĕнче. Веня татăлсах юлнă. Çапла пĕр çĕр аллă метр пычĕç, унтан Виктор Çеркейпа танлашрĕ, тепĕртакран иртрĕ, юлашкинчен «туртса ячĕ!» – çын ухă йĕппи пек вирхĕнет, хыçра тапочка кĕли çĕкленнĕрен çĕрпе ура хушши йалт! уçăлать... Çеркей тикĕссĕнех, сывлама йывăррине пăхмасăр, малалла талпăнать. Темле хытă кайрĕ пулин те, вăхăчĕ пĕр минут та 38 çеккунт çеç пулчĕ унăн, Виктор пĕрре те 32 çеккунтрах тухрĕ, Веня – минут та хĕрĕх çиччĕре. Сывлăш çавăрса илнĕ хыççăн Виктор Çеркейран:

– Ну, мĕнле? – тесе ыйтрĕ.

– Çĕртен уйăрăлтăн, – палăтрĕ юлташĕ сăлай пирки.

– Туйрăм. Пултарнă таран кайса пăхам-ха тесе ĕçлерĕм, – пĕлтерет хăй шухăшне Ураваш. Веня Савельев «манăн та çавăн пек çивĕч пуласчĕ», – тесе ăмсанса пăхать.

– Вĕлеретĕр эсир мана, – кулать хăй.

Тренировкăна вĕсем хĕвел завод тăрпи çӳллĕшĕнче чух пуçланăччĕ, тополь мĕлкисем утмалли çул çине ӳкменччĕ-ха, халĕ хĕвел хӳме хыçне пытаннă; çанталăкĕ уçă. Утакансем йĕп-йĕпе пулнă: пит, ĕнсе, хул-çурăм –

шап-шур тăвар, вăл сийлĕн-сийлĕн хуйăрланса ларнă. Каç пулас умĕнхи сулхăн. Тренировкăна вĕçлемесĕр утас та утас килет. Ку вăл – ĕçпе киленин ырă палли. Чун писичченех ытлашши хавшама кирлĕ те мар пуль.

Земфира çырнă кăтартусене пăхнă хыççăн Çеркей тата тăваттă тухма сĕнчĕ. Виктор пуçне пăркалать:

– Ну, мĕн эсĕ? Ăçта ун чухлĕ! Ку та сахал мар, – тет.

– Эсир вĕлеретĕрех капла, – урăх утас мар тесе йăлăннă пек сăмах хушать Веня та.

Ывăнма ывăннă ĕнтĕ вĕсем. Хытах ывăннă. Земфира та сехет çурă хушăра трибуна çинче хăй ларас мелне икĕ хут улăштарчĕ, çапах Çеркей сĕнни çӳревçĕсене кăсăклантарать. Виктор хывăнса тăхăнма васкамасăр кăштах канчĕ те:

– Атя эппин, анчах малтанхи иккĕшне эсĕ ертсе пыратăн, вăхăчĕ пĕрре те 48 – пĕрре те 50 пултăр, – терĕ.

Тĕлĕнмелле, Çеркей аллинче штамп пур темелле, вăл ертсе пынипе çаксем икĕ çаврăмне те пĕр пек – минут та 48 çеккунтра утса тухрĕç.

– Шертанова ахальтен çĕнтермен иккен эсĕ, – ырлать Виктор. – Вăя кĕнĕ, тепĕр ăмăртура такама çапса аркатăн.

Юлашки икĕ çаврăмне Виктор ертсе кайрĕ, сехет йĕппине вăл пĕр минут та 46 çеккунтра чартарчĕ, Веня хыçра кăна пычĕ.

Атлетсем душра çăвăннă вăхăтра Земфира хăй ларнă вырăнтан тапранмарĕ. Шурă хут çинчи хисепсем ăна кĕр аки пĕрчисем пек курăнаççĕ – ыраш калчи пекех чăшăл шăтса чăшăл ӳсĕç-ши вĕсем?

Çук çав, ыраша хӳме пекех ӳстерес тесен малтан çĕре сухалас-сӳрелес пулать; суртлă вăрлăх акмалла, шăтса тухнă калчине выльăх кĕрсе таптасран асăрхамалла, сив хĕлле юр тытмалла, çурхи шăнра пăрне катса уçмала, апат сапмалла...

Иккĕн-виççĕн... Мĕншĕн иккĕн-виççĕн? Земфирăн хăйне мĕншĕн шутламалла мар? Вăл тренировка ирттерме пăрахман-çке, ĕнер самаях хăшкăлнă, паян ка-

нать ак, ыран кроса тухĕ, унтан ҫӳллĕшне сикнĕ чух тренер шутне, тен, Виктор пулĕ.

Палланӑ спортсменсем... Олимп тӳпине улӑхĕҫши хӑшĕ те пулин вĕсенчен? Тыррине вырса пĕр кĕлте тӑвасчĕ – хитре очерк ҫырасчĕ Земфирӑн Олимп паттӑрĕ ҫинчен. Усӑксем пирки хаҫатра ҫивĕч шӑллӑ фельетон кӑларчĕ пулин те, журналистка чунĕ лӑпкӑ мар. Паттӑр! Паттӑр ҫинчен ҫырасчĕ унӑн! Анчах ун пеккине малтан ҫуратмалла!

Стадион халь пушах. Ҫĕр-шывра стадионсем пайтах пур-ха, кĕрешӳ арени тĕнчере татах нумай... Спортӑн кашни енĕпе Олимп медалĕ пĕрре: ылтӑн, кĕмĕл, бронза. Урӑх ҫук.

Викторпа ун юлташĕсем душра нумай тӑмарĕҫ, ӑшӑ шыв ҫук пирки вĕсем сивĕ шыва алӑпа ывӑҫлакаласа илсе кӑна тара-тӑвара тасатрĕҫ.

– Стартчен урӑх кун пек хытӑ ҫӳреме юрамасть, – тет Виктор Ҫеркее. – Эсĕ тепĕр ӑмӑртура аван вӑхӑт кӑтартма пултаран. Манӑн та тĕнче класĕнчи спорт мастерĕ пуласчĕ. Яла каймасан ҫӳретĕп-ха. Ялта пулсан сан пек ҫӳреес ҫук. Пӑрахатӑп.

– Мĕн эс? Олимп командине кĕрес пулать! – тет Ҫеркей.

## Ҫирĕм виҫҫĕмĕш сыпӑк

Ятламалла Виктора: К. хулине ҫитсе килмеллехчĕ унӑн.

– Захар сана час-час асӑнать тет. Амӑшĕ каларĕ. «Тиркеместĕп ӑна, халĕ те чечек пек шутлатӑп», – тесе калать тет, – канӑҫсӑрлантарать хĕрĕн чунне Евдокия Еремеевна унта.

– Килĕштермен вĕт-ха эп ӑна, – тавӑрать Надя.

– Килĕштересси ҫинчен асӑнма иртнĕ ĕнтĕ. Манса пĕт леш чупкӑн ҫынна.

– Ун  пек ан кала, анне, Виктор пирки. Лăпкă вăл.

– Çавăнпа ĕнтĕ хуласем тăрăх йăрккаса çӳрет.

Амăшĕ калани Надьăна ĕненмелле пек те туйăнать, ачине ĕмĕртекенскер, вăл хăй амăшĕ çине пăхуçăн:

– Захарĕ ĕçе те пырса çӳре пуçларĕ, – тет йăвашшăн.

– Ăна тиркеймĕн-ха, шалуне пысăк ӳкерет вăл, – ăнлантарать хĕрĕ хăй майлă çавăраннине туйнă Евдокия Еремеевна.

Çакăн хыççăн, хĕле кĕрсен çав, Надя ĕçлекен буфета вăтăртан иртнĕ лутака арçын час-часах пыра пуçларĕ – тавар ещĕкĕсене йăтса парса та пулăшать вăл.

Киле таврăннă чух Захар Надьăна хулран тытасшăн.

– Кай-ха, пĕччен утма ирĕк пар, – хирĕçлет Надя çыпçăнчăка.

– Цеха паян çĕнĕ фасон лартрăмăр, ĕç ăнăçлă кайрĕ, – итлес темесен те пакăлтатать çумри çын. Çамрăк хĕрарăм ăшра: «Анне калани тĕрĕс те-и, Захарпах телейлĕ пурнăç пулĕ», – тесе шухăшлать.

– Хăвăр саккунлах уйăрăласси çинчен пĕлтер ăна, – сĕнет çумра пыракан çын Виктор пирки.

– Ача çулталăк тултариччен суд çавах уйăрмасть, – çилĕллĕн тавăрать Надя. – Ман пата халлĕхе килсе çӳреме те кирлĕ мар сан. Ачана пĕччен те ӳстерĕп.

* * *

Çуркунне, тӳррипе илсен çу пуçламăшĕнче-ха, Виктор Раççейри спорт журналĕн парнине илессишĕн пыракан ăмăртăва хутшăнчĕ. Старт умĕн шăм-шака çăмăллатас тесе хуллен юртнă чух Соломонов ăна асăрхарĕ те:

– Эс çӳреме пăрахман-и çак? – тесе ыйтрĕ.

– Утасшăн-ха,– сăмах май тенĕ пек çăвар уçрĕ Виктор.

– Атя, атя, тăрмаш, – тесе иртрĕ шурă костюм тăхăннă ку судья. Динамовец Виктортан тăрăхланăн туйăнать. «Малта пуласчĕ паян», – тĕв тăвать ăшра

чăваш ачи. Спорт ăмăртăвĕсен çĕнĕ правилипе утакан çынна аслă судья та халь пĕччен кăптăла кăлараймасть, çул çинче инкек-синкек тени сиксе ан тухтăрччĕ çеç. Виктор тапочка шнурокне ытлашши хытăран пушатарах çыхрĕ, сĕртĕнипе юн кăларасран хул айне тата куç харшине тар лекесрен вазелин сĕрчĕ, тӳрех хытă тапранса каяс тесе ура тунине «Випрактос» текен маçпа сăтăрса вĕрилентерчĕ.

Ăмăрту шоссе çинче иртет. Стартранах Виктор çивĕччисен йышне ермешрĕ. Пуçри çак ушкăн ыттисенчен уйăрăлса чылай мала ӳкрĕ – таплаттарса кăна пыраççĕ ăмăртăва лайăх хатĕрленнĕ çӳревçĕсем асфальт тăрăх. Йывăррăн хаш-хаш сывлать кашниех. Виктор та хăйне халь-халь пӳлĕнсе ларас пек туять, çавăнпа вăл ку йышран юлас тесе те шутласа пăхать, утма пачах пăрахасси те килет, анчах çул айккинче пыракан судьясен çăмăл машининчен пĕринче шурă костюмлă çынна курать те ун умĕнче юри хăйне кăтартасшăн илтере пуçлать. Тамалсан савăнĕ Соломонов – ăна савăнтарас мар, хăйне ыр сунакана савăнтарас. Туртăшса, хăйне хăй ĕшĕртсе талпăнать Ураваш. Пĕр командăри Пайăркапа Веня Савельев хыçри йышра пулас – туссем курăнмаççĕ. Шертанова Атăл хĕрринче инкек тӳснĕ хыççăн начар хатĕрленнĕ тесе командăна кĕртмен – Шупашкара тăрса юлчĕ вăл. Килте, Чăваш республикинче, паян обществăсен ăмăртăвĕ пырать, Шертанов унта ăнăçлă утсан Уравашсем умĕнче тепре мухтанса çӳреме тытăнĕ хайхи. Тата кунти ăмăртури вăхăтсене республикăри кубокшăн пыракан кĕрешĕве хаклăнă чух шута хураççĕ, çавăнпа Викторăн тем парсан та япăх пулма юрамаасть.

Çул пуçĕнче йыш пĕчĕклене пуçларĕ; акă, атлетсем пĕрерĕн е икшерĕн татăла-татăла юлаççĕ. Виктор çаплах-ха пыр карланкине татса кăларас пек сывласа умрмнчен вĕçерĕнмесĕр пырать. Çаксенчен пĕри, кăштах шатра питлĕскер – Виктортан пĕр вершук çӳллĕрех ача – пит çирĕп те хитре утать. Тренерсем ун

çӳревне ним кăлтăксăр тесе шутлаççĕ. Вăл – Галлин тусĕ, Жаров хушаматлăскер – Олимп вăййинче медаль те çĕнсе илнĕ атлет. Пыма ăна та çăмăл мар, вăл та йывăррăн сывлать. Виктор çав Жаровран юлас марччĕ тет çеç-и, финиш патнерехре ăна хăварас та ĕмĕтлĕ, куртăр Соломонов: çĕр-шыв чемпионне çĕнтерме пултарать Ураваш! Тăвăнса та йывăррăн туртăшса Жаров уттинех тăвать чăваш ачи. Жаровĕ килте çеç тăхăнмалли кăвак майкăна хул калакĕ тĕлĕнчен касса çинçетнĕ, хула вылятма ан чăрмантартăр тенĕ ĕнтĕ – çӳревçĕсем ăмăртура ытла шукăль тумланма юратмаççĕ, вĕсен çулĕ ытлашшипех хура тарлă-çке – паян вăтăр çухрăм утмалла. Урине çеккунт йĕппи пек тикĕс те хăвăрт пусать, чавса тĕлĕнчен хуçлатнă хулне-аллине каллĕ-маллĕ илтерет вичкĕн Жаров; унпа юнашар Ураваш талпăнать.

Спортсменсем çул тăршшĕпех тăсăлса кайнă пирки судьясен машинисем те пĕр-пĕринчен уйăрăлса пĕтрĕç – вĕсем пĕрре малрах, тепре каярах юлса пыраççĕ, пурин уттине те куç илмесĕр тĕсеççĕ. Герман Савельев ларнă машина хӳрере пулас, чăваш судйи курăнмасть.

Çул пуçĕнчисене çăмăл машинăран хура сăнлă та çивĕч куçлă çын – союзри чи çирĕп арбитр асăрхаса пырать. Утта çак çын тĕрĕс хаклаине туйса Жаров пекех тикĕс утакан Ураваш пĕр хушă çăмăлраххăн пычĕ. Унтан Жаров та кăштах тамалчĕ пулмалла çав – чăваш çӳревçи ун çумĕнче тикĕссĕн сывла пуçларĕ. Çакăнтах кăштахран Соломонов ларнă машина курăнчĕ. Пĕччен мар вăл – виççĕн вĕсем. Хăйне вăй кĕнĕ пек туйнă çӳревĕç: «Ак кур, Соломонов, ĕлĕк те эп санран çакăн евĕр иртнĕ», – тесех ĕнтĕ çумри Жаровран уйрăлса çивĕччĕн-çивĕччĕн илтере пуçларĕ. Мала тухас килчĕ унăн. Фнишчен инçе мар – тăват çухрăм çеç. Анчах пит вирлĕ пынă çĕртенех хырăм выçнă пек пулса кайрĕ те, хал шалтăрах пĕтсе килчĕ. Ним те тăваймастăн – уран ура иртмелле мар пуличчен вăй тухса ӳкрĕ. Уравашран хайхи Жаров, унтан тепĕр икĕ çӳревçĕ чаш-

латтарса иртрӗҫ. Ҫул айккине чаръннӑ машинӑран Герман Савельев тухнӑ та хӑй вӗрентекен утавҫӑ ҫине тӗксӗмленнӗ сӑнпа пӑхса тӑрать. «Ҫак тӑвайккине улӑхсан финишчен ҫур ҫухрӑм юлать, тата кӑштах чӑт, Виктор», – хӗрхенсе те ӳкӗнсе калать вӑл спортсмена. Хыҫрисем чылай юлнӑ иккен те, Ураваша урӑх иртекен пулмарӗ – чӑваш ачи финиша тӑваттӑмӗш ҫитрӗ. Юлашки кукӑртан пӑрӑннӑ чух Соломонов чӗнмесӗр кӑшт куларах пӑхса юлчӗ. «Кун пек пысӑк ӑмӑртура виҫҫӗмӗшех пулаймастӑн ҫав», – терӗ ӗнтӗ. Ураваш хӑйне: «Халлӗхе мана тӑваттӑмӗш вырӑн йышӑнни те ҫитӗ», – тесе лӑплантарать.

Герман Савельч ӳкӗнет: пӗрремӗш вырӑнтан ик очко юлчӗ чӑваш команди! Вӗсем ҫӗнтернӗ пулсан ҫак ӑмӑртӑва ҫитес ҫул Шупашкарта ирттеретчӗҫ.

Ҫитес ҫул – Олимп ҫулталӑкӗ. Ӑнӑҫлӑн хатӗрленесчӗ Викторӑн ку тӗле. Тытӑҫса пӑхмиех хӑрушӑ мар Жаровсем! Тӗплӗн хатӗрленсен ҫӗр-шывра малти виҫӗ ҫын шутӗнче пулма пултарӗ чӑваш ҫӳревҫи те – ҫӗр-шыв чемпионатӗнче виҫҫӗмӗш вырӑн йышӑнсан вӑл олимпиец пулӗ...

Олимпиец... Хӑш спортсмен ӑшӗнче хӗмленместши ҫав ята илес ӗмӗт? Миҫе ҫын ӑшӗнчех путланманши вӑл?! Миҫе ҫын ирӗксӗрех телейсӗррӗн ал сулнӑ? Ал сулнисене асӑнмаҫҫӗ: мала тухнисене – чыс та хисеп! Сахал мар умра пулас ӗмӗтлисем. Пурте ҫӳл пусма ҫине хӑпарса тӑраймӗҫ. Ҫапах та ӗмӗтленни паха. «Ӗмӗтлисем телейлӗ», – тенӗ чӑваш юрӑҫи.

* * *

– Акӑ, сан аҫу ҫинчен ҫырнӑ кунта. Пӗр хушӑ малта пынӑ, финиша тӑваттӑмӗш ҫитнӗ вӑл, – калаҫать ачипе Надя общежитирен Лиза аппӑшӗ илсе килнӗ хаҫата вуланӑ май.

– Ӑҫта ятӑн аҫуна, э? Тытса чарас темерӗн-и ӑна? Ну, кил кунта, кил. Вӑт-вӑт, кулатӑн-и? Атя, атя, ать-

тя-тя! – сăмахлать пĕчĕк хурăнташĕпе Лиза аппăшĕ те.

Амăшĕ аллинчи ача кăвак куçне çутăлтарса кулать, ик аллипе каркаланать.

– Аннӳ ятлать-и сана, ятлать-и, э?

Лиза аппăшĕ ачана амăшĕн аллинчен илет те урайĕнче уттара пуçлать, ку вăхăтра Надя çуса типĕтнĕ кипкесене утюгпа якатма тытăнать.

– Ашшĕ пирки мĕн шутлатăн эс? – çавăнтах ĕçлĕ саспа ыйтать Надьăран Лиза аппăшĕ.

– Кăштах укçа ярса пачĕ-ха, манмасть пулмалла-ха, – терĕ хĕрĕ вырăнне Евдокия Еремеевна. – Надя тытса чармарĕ ăна, малтанах ăмăртусене кайма чармарĕ.

Амăшĕ калани хĕрне ĕненмелле пек те туйăнать, пĕчченрех çӳретрĕ çав упăшкине Надя.

– Те килет, пĕлместĕп, – тет халь вăл.

– Сан ун патне çыру ярса пăхмалла: мĕн калать вăл? Уйрăлсан саккунлă уйрăлăр. Захар тиркемест тесе калатăр вĕт-ха?

– Захарĕ ĕнтĕ Надьăшăн пĕтсех каять.

– Судпа уйрăлма тархаслать вăл, – пытармасть Надя.

– Викторпах пурăнас тен пулсан тавăрмалла ăна. Ăçта та пулсан çырса пăхмалла. Пирĕн çуртра, ав, виç çул пурăннă хыççăн уйрăлчĕç. Пухура сӳтсе яврĕç те ятларĕç пĕрре упăшкине – мирлештерчĕç. Пурăнаççĕ халь. Ак, хăйсен хаçатне çырса ямалла, – ăс парать Лиза аппăшĕ.

Упăшки çинчен ниçта та чупса çӳрес çук-ха Надя, анчах вĕрентсе калани асра юлчĕ: тепре ӳкĕтлесен ручка тытса çырма та ларĕ çамрăк арăм.

* * *

Малтанхи тăм ӳксен хурăн тăрри саралчĕ. Ĕçрен пушă вăхăтра хĕрӳ тренировкăсенче, ăмăртусенче çу ирттерчĕ Виктор, çавăнпа К. хулине кайса килмелле тенĕ çинчех унталла-кунталла пăрăнаймарĕ вăл. Ĕç эрни вар-

ринче пушшех вăхăт çук, шăмат кунсемпе вырсарни кунсенче ăмăрту пулать, е вăрăм çула «уçăлма» тухмалла. Спортра пысăк ӳсĕм тăвас тесен пур çĕре те ĕлкĕрме май килмест çав. Спортсменсем хăйсем хушшинче ахальтен мар: «Çухатусăр çĕнтерӳ пулмасть», – теççĕ.

Акă, кĕрхи сивлекрех кун ĕçрен таврăннă чух Виктор буфета кĕрсе çыртмалли илчĕ. Вăл çавра сĕтел умĕнче кантăк еннелле пăхса тепĕр рабочипе çумăн тăрать.

– Мĕн, спортсмен, сипленес теместĕн-и? Кил, ярса паратпăр, – терĕ пĕри. Виктор чĕнмерĕ те, çавăрăнса та пăхмарĕ.

– Кун пек эсĕ çын шутĕнче пулаймастăн, спортсмен, – тет эрех сĕнекенниех. – Фрол Фролыч та сана хăйпе пĕрле ларса ĕçменшĕн  кураймасть.

– Спортсмен пуличчен «спиртсмен» пулни лайăхрах. Хи-хи! – ихĕрчĕ тепри.

– Кайăр эсир ман патăмран, сирĕн пеккисемпе çыхланса курнă эпĕ, – терĕ те Виктор çуртран пĕчченех тухса уттарчĕ.

Общежитире вăл пĕр çур сехет выртса канчĕ, унтан спорт костюмĕ тăхăнчĕ те техникумăн спорт залне васкарĕ.

Кунта Герман Савельч Савельев волейболистсен секцине ирттерме пухăннă-мĕн-ха. Анчах хăйĕн директор пухакан канашлăва каймалла иккен те, пĕрне асли пулма хушса хăварасшăн. Ураваш курăнсассăн вăл тӳрех: «Ак, Виктор çитрĕ, ăна итлĕр» – тесе пăрăнчĕ.

Техникум ачисем çамрăк, кĕлеткисемпе те тайăн, чылайăшĕсем Виктор хул пуççийĕ çӳллĕш çеç. Вăйă пуçланас умĕн алăкран илемлĕ сăн курăнса кайрĕ: Земфира Вутланова кĕрсе тăчĕ иккен. Хĕр тĕксĕм кăвак тĕслĕ спорт костюмĕпе.

– Эсир вылятăр-и? – ыйтать Виктор унран.

– Ушкăна ертсен тем пекехчĕ, –  кăмăллăн сăмах хушрĕ хĕр.

Земфирăпа Виктор пĕр командăра пулчĕç. Виççĕмĕш команда халлĕхе брусья çинче ал-урана

тёреклетмелли хăнăхусем тăвать, пĕр иккĕшĕ штанга çĕклет. Кăштахран çак ушкăнăн выляса янă командăпа улшăнмалла.

Вăйă-тренировка пуçланчĕ. Хирĕç тăнă йышра икĕ ача тёреклĕ, вĕсем мечĕке пӳрне вĕçĕсемпе меллĕн лектерсе тĕрĕс çапаççĕ. Викторсем мечĕке икĕ хут умлă-хыçлă ӳкерчĕç. Унтан шут лешсен майлă тăххăр – икке çитрĕ. Акă, Земфира мечĕке çăмăллăн кăна Виктор еннелле вĕçтерчĕ те, лешĕ çӳлелле сиксе вăйлăн çапрĕ – хирĕçлисем вара аллисемпе тĕлсĕр каркаланма пултарчĕç çеç. Тепĕр хутĕнче лешсем пăхса тăрса тенĕ пек шăтарчĕç. Унтан каллех Земфира пӳскене сетка тăрринелле сиктерчĕ... Кĕске хушăрах шут танлашрĕ. Кăшт вăхăтран хирĕç вылянă команда брусья çинче хăнăхусем тума пăрăнчĕ, вĕсем вырăнне кĕтсе ывăннисем кĕчĕç.

Ку команда мечĕке тирпейлĕрех тытса выля пуçларĕ, асăрханулăрах пулма тăрăшрĕ. Виктор кĕпине мар, майкине те хывса пенĕ ĕнтĕ, çӳçĕ тăрăх унăн шăпăртатса тар юхать. Çӳллĕ, тĕреклĕ атлет мечĕке, ӳкмелли лаптăкăн пур вырăнне çитсе тенĕ пек, йывăр çĕртенех илет, карăнтăк умĕнче сиксе хӳп! çапать. Ӳчĕ тарпа çап-çутă курăнать унăн. Земфира та, йăрăс пӳллĕскер, мелсĕр самантсенче те çăмхана сетка урлă каçарать, унăн та кăкăрне пăнт тытса тăракан футболки тăр шывах.

Пĕр çавра çăмха тĕреклĕ атлетсене пин хут çӳле сиктерет, куклентерет, ӳпне вырттарать, тĕрлĕ майлă авăнтарать – çын кĕлеткинчен шыв кăларать; спортзал тăн-тăн-тăн! янăраса тăрать.

Расписанипе палăртнă заняти пĕтсен волейболла вылякансем тумĕсене улăштарса тăхăнчĕç те саланчĕç, зала халь çăмăл атлетсен секцийĕ йышăнать. Ку йышра Веня Савельевпа ытти палланă çӳревçĕсем те пур.

Герман Савельев алăкран кĕнĕ те волейболла выляса хаш пулнисене ăмсанса пăхать. Куçлăхне ик-виç хут тӳрлетрĕ ĕнтĕ вăл, тата çавăн пек чух тренер тута хĕррине çулла-çулла илет.

– Ну, патăр эсир! Ну, ĕçлерĕр те! Директор пӳлĕмне çити илтĕнсе тăчĕ тӳплеттерни, – куçне çутăлтарса пăхать хăй. – Атя, сире тĕрĕслĕпĕр: мĕн чухлĕ вăй юлнă – футболла выльăпăр.

Çамрăксем хывăнмарĕç – ăшăрах тумланни ирĕкре пăсмасть. Футбол мечĕкĕсене иккĕ илчĕç вĕсем. Камерисем пушаннă иккен, ăна çавăнтах уçласа хытарчĕç, пĕри, ак, урайне талт-талт сиктерсе те ячĕ. Ку ушкăнра хĕр ачасем те пур.

– Эсир чупатăр, кросс чупатăр, – юнарĕ вĕсене Герман Савельч.

– Пирĕн футболла выляс çук-им вара? – йăлăнаççĕ хĕр ачисем.

– Вылятăр, анчах, тĕпрен илсен, кросс ытларах чупатăр. Герман Савельч арçын ачасене те кросс чуптарнă пулĕччĕ те – унăн хăйĕн те футбол мечĕкне ытларах хăвалас килет-çке. Секцие çырăннисем пурте пухăннăран тренер питĕ кăмăллă. Вăл каллех аялти тута хĕррине çыртса чĕлхипе йĕпетсе илет, куçлăхне,чипер лараканскернех, тӳрлетет.

– Паян Веньăсене аяла тăватпăр-ха, – тет хăй кулса.

– Э-э, эс тата, пичче! – килĕшмест шăллĕ, институтран кунти секцие çӳрекенскер. – Веçех вăйлисене хăй енне илет!

– Иртнинче мĕнле пулнă – çав командах, – çирĕплетет Герман Савельч.

– Ну, ытла эс! Калаçса уйăрăлатпăр паян. Викторпа Ваня пĕрле калаçчăр.

– Апла мар, Викторпа эпир пĕрле пулатпăр, – ваттисем çамрăксене хирĕç ăмăртар.

– Ну, тата! Веç хăйсен енне вăйлисене илесшĕн.

Уйри çерем çинче, футболла вылямалли меллĕ вырăна, çитсен командăна пĕр пекшер ушкăнсене уйăрчĕç; хĕр ачасем те алăпа персе хапхана кĕртмелле вылямашкăн вырăн тупрĕç, ручной мяч теççĕ ăна.

– Малтан вун пилĕк минут кросс чупатăр, ун хыççăн çеç мечĕк тытатăр, – хытарать хĕр ачасене Герман Савельч.

Земфирăшăн ку вăйă çĕнĕ, анчах шикленме кирлĕ мар – баскетболла вылянăскер, алă мечĕкне вăл часах хăнăхĕ.

Арçын ачасем командăсене уйăрăлсан Герман Савельч татах йĕкĕлтерĕ:

– Викторпа пĕр командăрах пулатпăр терĕм мар-иха эп? Калаçса кĕрсен те çаплах пулса тухрĕ.

– Ай-ай, эс, пичче, пире хавшатсах хăварасшăн пултăн.

– Сире, çамрксене, стариксем аяла тăвар-ха.

– Ну, юрĕ, мечĕк – çаврака теççĕ, вăл ăçтала кусса кайнине курăпăр унта.

Икĕ пысăк ушкăн пĕр мăнттай пӳскене хăвала пуçларĕ. Савельев, асли, çавна кустарса илсе пыма, хирĕç тапăнакана улталаса иртсе  кайма пултаратьмĕн. Виктор мечĕк патне чи малтан вирхĕнсе çитет. çăмăл атлетсем кунта – Эсебио пек, пур кĕтесе те çитме ĕлкĕрекен вăйăçăсем, вĕсен тĕп тĕллевĕ ытларах чупасси-çке, тарласси. Анчах вăйă-вăях – аяла пулас килмест, пӳскене тăшман хапхине тапса кĕртес килетех. Шут пĕрре – ноль чухне Викторпа Герман тарăхса кайсах чупрĕç; Веня пĕчĕк ача пек хĕпĕртет.

– Ваня, – асăрхаттарать вăл хăйсен командинчи юлташне, – Виктора тытса чар эсĕ, унтан ан уйăрăл. Пиччене эп хам мечĕк памастăп, тепре тапса кĕртетпĕр.

– Ай, шăл йĕрен! Ăнсăртран май килчĕ те... Мечĕке хăв умăнта кураймастăн-ха эс. Курасах тесен хапху умне тăр – тапа-тапа паратăп, хăшне-пĕрне, тен, тыткалăн.

Герман Савельч çавăнтах пӳскене хапха умнелле хӳтерсе кайрĕ, Ваня Краснов хирĕç тухса кусса килекен çав çăмхана Веня еннелле тапрĕ. Аута тухнине, алла кăшт лекнине шута илмеççĕ кунта, вăйă хăвăртлăхне тамалтармаççĕ – мĕнле те пулсан нумайрах чупма тăрăшаççĕ.

Çăмăл атлетсем футбол мечĕкне сехет ытла тапрĕç, çав хушăра пĕр чарăнмасăр тенĕ пек чупрĕç. Вăйă 2 : 2 шутпа вĕçленсен техникум еннелле утнă чухне футбол

çинчен урăх асăнмарĕç, вăйă мĕнле иртнĕ çавăн пекех тӳремлĕхре юлчĕ, спортсменсен кĕпи-тумĕ çеç йĕп-йĕпе.

– Тăмалла мар, ачасем, тăмалла мар, шăнма пулать, – васкатать Савельев. Вĕсем техникум еннелле чуптарчĕç, унтан çӳревçĕсем алла чавса тĕлĕнчен хуçлатарах тытса спорт мелĕпе утма тытăнчĕç, финиша кайнă пек кам кама хыçа хăварать, кам мĕнле хăвăртлăха чăтать – ăмăртмалла вирхĕнчĕç.

Хĕрсем те çăмăл юртăпа пыраççĕ. Чупчăр çав! Хура кĕр сулхăнĕ каç кӳлĕм ан çӳçентертĕр вăйăра тарланăскерсене!

Хӳтте кĕрсен Земфира кăштах канма шутларĕ. Вăл коридорти стенд умне пычĕ. Аллинче хутпа кăранташ ун халь. Журналисткăшăн спорт стенчĕ хăех темиçе статья çырмалăх материал кӳрет. Кунта – спортсменсен сăн ӳкерчĕкĕсем, тĕрлĕ кубоксемпе вымпелсем, грамотăсемпе дипломсем. «РСФСРти спартакиадăра техникумсем хушшинче пĕрремĕш вырăн йышăннăшăн илнĕ диплом», – çырчĕ жураналистка хут çине.

Ку вăхăтра ирĕкрен кĕнисем зала пухăнчĕç. Брусьăпа гимнастика стени çинче те, япаласăр-мĕнсĕр те тĕрлĕ хусканусем тутарчĕ Герман Савельч вĕсене, йывăрах мар штангăна çине-çине темиçе хут çĕклеттерчĕ. Унтан вăл хĕрсене тата çамрăкрах ачасене: «Кайма пултаратăр», – терĕ. Çăмăл атлетсен тĕп ушкăнĕ залах юлчĕ, вĕсем баскетболла выляма шутларĕç. Пĕр икĕ хĕр ывăнман-ха тесе яшсен ушкăннех ермешрĕ. Йыша, коридорта каннă хыççăн, Земфира та хутшăнчĕ. Акă халь икĕ ушкăн баскетболла выля пуçларĕ...

Çапла ĕç хыççăн пилĕк сехет хушши спорт вăййисемпе хал кăларчĕ Виктор Ураваш.

Каç ывăнни каçах иртсе каймасть çав, ир çинче шăмшак хытах сурать. Йывăр. Виктор общежитире çапах та ыттисенчен иртерех вăранчĕ те зарядка тума тесе кил картине тухрĕ. Чупас килмен çинчех хăйне хистесе вăл хуллен чупрĕ, юлашкинчен ал-ура вăранчĕ пулас, шăмшак кăштах çăмăлланчĕ.

Фу, утакансен спорчĕ çав вăл! Йĕлтĕр, велосипед, штанга, марафон чупасси – спортăн йывăр енĕсем. Спортра çăмăлли çук-ха. Çапах та утларăш пачах уйрăм шайра тăрать пуль. Велосипедпа нумай кун хушши пыракан ăмăрту ирттереççĕ, вăрăм дистанци хыççăн тепĕр кунне каллех старта тухать велосипедист. Йĕлтĕрпе пĕр Олимп вăййинчех вунă кун хушшинче командăри чи вăйлă спортсмен 30, 15, 50, 10 (эстафетăра) километрсенче ăмăртать. Уйрăм «çăлтăрсем» пĕр Олимп вăййинчех 3-4 медаль илеççĕ. Утассипе ил-ха икĕ медаль! Хальхи вăйăсенче ку тапхăрта пулмасть пуль ун пекки. Паян 20 километра ăмăртсан ик кун сиктерсен те 50 километра утса тухма пит йывăр килет. Ăна пурнăçлама этем шутĕнчен иртес пулать.

Чушкăлла выляссине пăхăпăр. Каçхине хăнана кай та тепĕр кунне чиперех ăмăртăва хутшăнма пултаратăн: тĕлле те пер, тĕлле те пер битăна. Çĕнтермех май килеймĕ-ха та, çапах ăмăртăва хутшăнаятăн, начарах мар вырăн та йышăнăн. Утассипе вара...

Çут çанталăк пĕлет кампа мĕнле калаçмаллине: эс ăна мĕн чул вăй-хал кăларса паратăн, унран çавăн чул сип илетĕн. Сахал парсах ытлашши илесси пулмасть вăл нихçан та. Кун пек хăйне улталанине çут çанталăк чăтма пултараймасть, мĕн чул тренировка ирттеретĕн, мĕн чул тар тăкатăн, çавăн чул вăй таварса парать сана çут çанталăк. Танлаштăр-ха утакан вăй-халĕпе, унăн сывлăхĕпе, чăтăмлăхĕпе тепĕр çын!!! Танлашаймасть. Утакансене марафонецсем çывăх. 42 километр та 195 метра чупнă хыççăн вĕсем те, 50 километра утнă пекех, уйăх канаççĕ.

Утасси пархатарлишĕн ĕнтĕ эпир Пироне господина ăнлантарса утларăша Олимп программинче хăварттарасшăн; пирĕн тĕп хула Мускав, ав, ку чухнехи чи паллă спорт форумне хăй патĕнче ирттерме чĕнет, çав черетлĕ Вăйăра та утларăш хисепрех пулĕ.

## Çирĕм тăваттăмĕш сыпăк

Хулан çĕнĕ кварталĕнче пилĕкшер хутлă çуртсем мăнаçлăн кармашăннă çĕрте халĕ – тăмлă тăпра, хăйăр, тĕл-тĕл цемент та сарăлса выртать. Çуртне туса пĕтерсен ун таврашне те тикĕслеççĕ-ха, çак тăм-тăпра пăтранчăклĕ ланкашка тĕлĕнче сип-симĕс çерем ешере пуçлĕ; капăр çăкасемпе ытти йывăçсем илем кӳрсе кашлĕç. Халĕ ытла кăмăллах мар кунта, çумăр е йĕпе юр çунă чухне иртсе çӳреме те кансĕр, ĕç патне пыма вăрăм хăмасем – трапсем пăрахнă. Çĕрле шăнтнă та ирпе ирĕлтереймен-ха.

Кран пысăк панельсене çĕклесе хăпартать, Виктор ăна тепĕр юлташпа уйăрăлмалла мар çыпăçтарать. Ĕç аван пынă чухне чуна кăмăллă. Фрол Фролыч мастер ытлашшипех шӳтлесе калаçать, паян ĕç укçи илмелли кун иккенне, бригадăна преми те уйăрса панине тектекех аса илтерет. Уравашпа çеç сăмахламасть вăл, шӳтлемест унпа. Ку ачи йăпăлтатма, сăмах пуçарса чĕлхе вылятма пĕлмест çав. Мастер юлашкинчен çапах та Виктор патне пырса:

– Ну, спортсмен, май килет-и? – тесе йĕкĕлтенĕ саспа ыйтрĕ. Виктор ăна, ăçтан килсе çаклантăн эс тенĕ пек, куçран хирĕç шăтарса пăхать. «Спортсмен» сăмах тăрăхланăн тухать бригадирăн; Виктор хăй ăшĕнче «санпа пакăлтатиччен» терĕ пулмалла та пĕр чĕнмесĕр пуçне чиксе ĕçе пуçăнчĕ.

Каçалапа бригада кантура пухăнчĕ те, трест управляющийĕ умри ĕçсем çинчен каларĕ. План тултарса пыракансене мухтарĕ вăл, хăшне-пĕрне преми пама йышăннине те пĕлтерчĕ. Канашлу хыççăн строительсем касса умне пычĕç. Чылайăшĕ икĕ ведомость çине алă пусать. Преми илекенсен списокĕнче хăй ячĕ пулманшăн Ураваш ним чухлĕ те ӳпкелешмерĕ.

– Фролыча ĕçтермелле пĕрре сан, – терĕ юлташĕ ăна. – Унсăрăн преми таврашĕ лекмест.

– Хам мĕн ĕçлесе илни çитет мана, – лăпкăнах тавăрать Виктор.

– Пăрах, сур хăвăн спорту çине! Кам ырласах пĕтерет сана уншăн? Халăх йышне ер, – тет ĕçри юлташĕ тарăхтармаллах.

Пурнăç мухтанмаллах мар çав Уравашăн. Акă, Гришука аса илет вăл, кайса килмеллех пуль тепĕр эрнере ун патне. Çемйине илсе килес пуласан хваттер парĕç-ши ăна кунта? Фролыч хута кĕрессе шанма çукха. Яла та халех каяс килмест: ара, тренировка чипер йĕркеленччĕ-çке унăн; тепĕр çулталăк такăнмалла мар çеç, спортри ăсталăхшăн самай çине тăрса кĕрешес тапхăр халь. Герман Савельч ушкăнне шăпах Олимп хирĕнчи ĕçченсем темелле. Тренер паян та телефонпа шăнкăравларĕ: «Ĕнерхинчен кăшт иртерех çитсен аванччĕ, çул тăрăх уçăлса çӳретпĕр», – терĕ Виктора. Секцие васкас чух преми тесе такамсемпе, Фролычсемпе, ĕçсе супмалла-и?

Ураваш кăпăрт-капăрт çырткаларĕ те урăх никампа калаçмасăр тухса кайрĕ. Общежитире те тытăнса тăмарĕ вăл, ĕç тумне спорт тумĕпе улăштарчĕ те Герман Савельч йышне пычĕ. Çӳревçĕсем Етĕрне çулĕ тăрăх вашкăнтарчĕç. Герман Савельч Виктора: «Сана Земфира шăнкăравлама ыйтрĕ, калаçмалли пур имĕш», – тесе пĕлтерчĕ.

* * *

Кам çинчен те пулин усалпа çырнă хут – жалоба текенни – хăть ăçта пулсан та никама савăнтармасть. Нушапа çырнă-и ăна, чун хистенипе-и, çын çинчен тĕрĕс-и, тĕрĕс мар-и каланă – асăннă ят пирки ырă ят хăвармасть, çавăн таçта хура пăнчĕ пур пекех туйăнать вара. Тĕрлĕ çитменлĕхсем пирки килекен çырусене тĕл пулкаларĕ-ха Земфира. Вĕсене вырăна кайса тĕрĕслесе килнĕ, хуравланă.

Халь ун умĕнче спорт хаçатне хыпарланă çăхав выртать. Арăмĕ хăй упăшки ăмăртусене çӳрессишĕн пăрахса тухса кайрĕ тесе çырнăскерне хаçат редакцийĕ

вырӑнти корреспондентне, Вутланована, ярса панӑ. Ҫапла, Виктор Ураваш пирки шурӑ хута хуратса ҫырнӑ ку ҫырӑва хӗрарӑм алли.

Ҫӗн Ҫӑкасар ачи... Епле ырӑ туйӑмпа ӑшра упратчӗ ӑна Земфира. Ак халь айӑпласа калакан ҫыру килет ун пирки. Пулмарӑн ҫав эсӗ, Виктор, иртнӗ ҫултанпа К. хулинче, ачуна та пулӑшасси ҫинчен маннӑ ав. Ҫӗн Ҫӑкасар ачи... Епле кӑмӑллӑччӗ унпа Атӑл ҫинче кимӗпе ярӑннӑ чух, ҫумӑр хыҫҫӑн ҫара уранах хула урамне ҫитсе кӗнӗ чух; епле кӑмӑллӑччӗ унпа стадионра чух... Ҫӑкасар ачипе хут уйӑрса пӗрлешнӗ, уншӑн чунтанах тунсӑхлакан ҫын пур ав. Пӗлмест марччӗ-ха ун ҫинчен Земфира. Хӑй куҫӗпе курман ҫын ытлашши нумаях шухӑшлаттарманччӗ ҫеҫ, ак халӗ Надя ҫырӑвӗ – умра; ҫыру урлӑ калаҫать унпа Земфира. Кампа шуралнӑ, ҫавӑнпа хуралмалла пуль этемӗн. Мӗншӗн арӑмне пӑрахтармалла Виктора? Ентеш хӗрӗн ӑна кун пирки аса илтермеллех...

Такам ҫапнӑ пекех хал ҫухалчӗ Земфирӑн, унӑн тренировкӑна каясси пулмарӗ ӗнтӗ, Герман Савельча ҫеҫ шӑнкӑравласа Викторпа сӑмах пурри ҫинчен пӗлтерчӗ вӑл.

Тепӗр кунне, шӑмат кун, ӗҫрен каннӑ кунхине, шоссе ҫинче вӑрӑм ҫула утса тухнӑ хыҫҫӑн Земфирӑпа Виктор театр ҫумӗнчи кафере тӗл пулчӗҫ. Палӑртнӑ ӗҫе пурнӑҫланӑран кӑмӑллӑччӗ спортсмен.

– Эсӗ Надя патне кайса килмерӗн-и ҫак? – сӑмах пуҫарчӗ Земфира апат хушшинче.

– Ҫук, – терӗ Виктор шӑппӑн.

– Сан пирки Надя редакцие ҫырнӑ, – тӳррӗмӗнех пӗлтерчӗ журналистка. Виктор, чӑнах-и тенӗ пек, хӗре куҫран шӑтарса пӑхать. Земфира сӑнӗнче пӗр кулӑ та, шӳт те палӑрмасть.

– Амӑшӗ ӗшӗртнӗ-ши? – вӗчӗрхенчӗ Виктор. – Хунямана курас килмест ман, ҫавӑншӑнах тухса килтӗм.

– Хуняму ҫеҫ мар, сан ачу та пур унта. Ҫуралнӑскер, хӑй тӗллӗн нимсӗр-мӗнсӗр ӳсмест вӑл. Уйӑхсерен

пулăшсах тăмаллаччĕ, эс пĕрре çеç укçа ярса панă, – ăнлантарать Земфира.

– Хальхи ĕç укçинчен çурине яратăп, – пăлханнă кăмăлпа персе ячĕ Виктор.

– Вĕчĕрхенме кирлĕ мар, лăпкăнрах калаç: çынсем «ятлаçаççĕ кусем» тесе пăхĕç тата, – сĕнет Земфира. – Надьăпа хăйĕнпе килĕшмелле сирĕн. Халь, тепĕр спорт сезоне хатĕрленме тытăннă вăхăтра, пĕр-ик тренировка сиктерни темех мар. К. хулине кайса килни канмалăх çеç пулать. Тен, арăмупа ачуна та кунта кӳрĕн – пурăнатăр вара.

– Амăшĕ пĕртен-пĕр хĕрне хăйĕнчен уйăрса ярас çукха. Вăл хунямапа эп хам тек çур кун та пурăнаймастăп, – çилĕпех тавăрать Виктор.

– Ăнлантармалла Надьăна, шанать те пуль-ха вăл сана. Хаçата çырма ахальтен алли çĕкленмен пуль, – арçынна куçран пăхса шухăшлăн та çепĕççĕн  калать Земфира.

– Вăл киле эп тек пурăнма кĕместĕп. Каясах тесен манăн хамăн та кил пур. Хамăн та анне пĕчченех, – вĕчĕрхенни иртмест Викторăн.

– Çемье пирки çынна ирĕксĕрлеме çук, арçын хăй ăнланулла пуласса кĕтес килет.

– Пĕлетĕн-и, Земфира: Надьăран ытла мана эсĕ çывăх, – терĕ куçран чăрах пăхса Виктор.

– Ăна ан кала, эсĕ те маншăн пĕрле çӳренĕ тантăш пек çывăх. Пĕр-пĕрне пĕлекен юлташсем эпир. Çапла пултăр. Кăмăла амантмлли пулман пирĕн хушăмăрта. Мана çын куççульне пухма ыр сунакан та, усал сунакан та ан хуштăр. Ĕнсе çинчи тартан чылай тăварлăрах теççĕ ăна, хĕрарăм куççульне.

– Надьăпа пирĕн чунсем уйрăм, халь пушшех пĕр-пĕринчен аякра тăратпăр, – хăйпе хăй сăмахланă пек шухăшлăн калать Виктор.

– Çапах та К. хулине çитсе кил эс, ачуна кур, – сĕнетех Земфира.

– Çак эрнере ĕçрен ирĕк ыйтсах каятăп, – шантарчĕ юлашкинчен Виктор.

Икĕ çын пĕр тăвансем пек калаçса каферен тухрĕç. Урампа хăпарнă чух Ураваш тепĕр йывăр тренировка ирттернĕ хыççăнхи пек ырнăн туйрĕ.

Общежитие çитсенех вăл салтăнса выртрĕ. Те ырлăха, те инкеке выртнă-выртман çывăрса кайнă çынна юлташĕсем вăратмарĕç. Виктор кайран аса илчĕ: пĕр пӳлĕмрисем килĕсене кайнă-мĕн, вĕсем вырсарни кун çеç каç енне таврăнаççĕ. Мĕншĕн кайнă-ши пĕрех хут? Çынпа сăмахласа чунне уçĕччĕ те лăпланĕччĕ Виктор, вара, тен, тепĕр инкек те пулмĕччĕ-и?

Ним сас та çук пӳлĕмре ирхине ĕçе каймалли вăхăтра куçне уçрĕ Виктор. Çывăрса юлнă пек шикленсе утияла хăвăрт сирчĕ те ытти кравatьсем пушшине кура паян ĕçе каяс çуккине ăнланчĕ. Вырăнĕ çинче ӳркевлĕн йăваланса вырмарĕ Ураваш, сехетне пăхрĕ те зарядка тума ирĕке тухрĕ; анчах нумаях хуçкаланмасĕр каялла кĕчĕ: тăххăрта кроса кайма килшнĕ-çке вĕсем, пĕр вун пилĕк-вун ултă çухрăм чупмалла, ĕнер шоссепе утнă хыççăн ывăнни ирттĕр тесен каç пулттипе тата мунча кĕмелле, çапăнмалла... К. хулине паянах тухса кайсассăн ĕнтĕ? Çук-ха, вăхăтра таврăнма ĕлкĕрейместĕн, ĕçрен ыйтмасăр çӳресессĕн ят тивĕ.

Укçине шутлать Виктор, кунта мĕн пурринчен çурри Гриша тӳпи тесе вăл çĕркаç çынна сăмах панă, тăван амăшне те пулăшмалла; алла пит сахал юлать-çке капла... Шывпа çăкăрпа пурăнмалла-и вара унăн? Шывпа çăкăр мар, йĕркеллĕ апата ик çын чухлĕ çиес килет хура тар кăларнă хыççăн. Тĕп ĕçрен пăрăнмасăр туртăш-ха çавăн пек эс! Юрĕ, малашнехи уйăхсенче çителĕклĕрех пурăнма тытăнĕ Виктор, халь Гришăпа Надьăна памаллах. Ыранах ĕçрен тухсан пăрахут çине ларĕ те вăл К. хулине чашкăртĕ.

Столовăйра апатланнă хыççăн Виктор пӳлĕме таврăнса кăштах выртса канчĕ, ăшра вăл паян мĕнмĕн тумаллине йĕркипе палăртрĕ. Тăххăрпа Лакрей вăрманне çитме килĕшнĕ спортсменсем. Виктор çак вăхăтчен кăшт маларах тренировка ирттермелли

курткăпа триконе тăхăнчĕ те пусма картлашкипе анчĕ, пӳлĕм уççине швейцара панă хыççăн кил хушшинчех вĕттĕн чупма пуçларĕ.

«Надя, илсе килес пулсан килĕн-ши эсĕ? Аннӳ ирĕкĕнчен тухăн-ши? Тепре пĕрлешсен пурăнса пĕтĕпĕр-ши санпа? Ăнсăртран паллашса васкавлăн çыраннишĕн хăшĕ айăплă-ши пирĕнтен? Кама, çамрăклăха кăна айăпламалла-и кунта? Ăмăртусене хатĕрленме май килĕ тенĕччĕ пĕрлешсен. Çăмăлли пулĕ-ши уйăрăлсах пĕтсен? Земфира... Чи çывăх юлташ пек хĕр. Мĕншĕн унпа малтанах çул-йĕр юнашар килмен пирĕн? «Надя патне кай», – тесе сĕнетĕн эсĕ, çилленсе мар, çавăн пек пулма кирлĕрен вĕрентсе калатăн. Пулма кирли пĕрре те вăл, пурнăç урапи хăй йĕрĕнчен пĕр тухмасăрах пыма пултарать-ши? Пĕлсех çитерме çук çав умри çул мĕнлине. Надьăран уйăрăлсах пĕтсе урăххипе пĕрлешсен епле пурнăç пулĕ? Надя мĕншĕн айăплă тата унран уйрăлсах кайма? Пĕчĕк Гриша... Аçу пекех çӳревçĕ пуласси-ха эсĕ».

– Ай! Мур илесшĕ! Çын çинех пырса кĕрет тем?! Суккăр-ши? – шухăшран картах вăратрĕ ыткăнса пыракан çынна пĕр хĕрарăм сасси.

Виктор аяккалла сикрĕ – унта канав пулчĕ, тепĕр еннерех пăрăнчĕ. Кунта кранпа чавнă тарăн шăтăкмĕн, сикмешкĕн вирлĕн талпăнчĕ – урлă каçасси çук, шăтăк тĕпне чăмма пулать! Кĕлетке сулăмне чарас тесе çын ик ал çине ӳкрĕ. Темскер шарт турĕ-ха. Мĕнне пĕлмесĕрех тăчĕ Виктор. Чиперех хăпарчĕ те вăл шăтăкран Лакрей вăрманĕ еннелле чупрĕ. Кăштахран сылтăм алă чавса тĕлĕнчен пĕçертсе кайрĕ, мĕн пулнине пĕлме çаннине тавăрса пăхасшăнччĕ Виктор, тепĕр алă çавăнтах куççуль кăлармалла чиксе ыратрĕ. Виктор çаплах нимĕн те пĕлмерĕ-ха, пĕр аллипе тепĕр аллине тытса пăхасшăн пулчĕ – ал сыпписем чаках чикрĕç. Вут хунă пек пĕçертсе ыратать. Мĕн пулнине ăнлансан çынна сив тар тапса тухрĕ, вара Ураваш самантрах каялла çавăрăнчĕ те тĕп урам еннелле чупрĕ. Халь вăл

çăварне кăшт карнă та халран кайнă пек пырать. Автомат телефон патĕнче калаçма хатĕрленсе икĕ хĕр тăрать.

– Васкавлă пулăшу чĕнсе парăр-ха мана, – ыйтрĕ вĕсенчен Виктор. Тĕреклĕ çамрăк çын çапла йăлăннине ăнланмасăр икĕ пике тилмĕрсе пăхать.

– Хĕрсем, ыйтатăп сирĕнтен: калаçтарăр-ха телефонпа, манăн икĕ ал та хуçăлнă; васкавлă пулăшу тытса парăр-ха тархасшăн?

Пĕр хĕрĕ номере çавăрчĕ те трубкăна Виктора калаçмалла тытса тăчĕ – çын хăйне инкек пулни çинчен пĕлтерчĕ.

Çапла кĕтмен-туман çĕртен больница койки çине пырса выртрĕ Ураваш.

## Çирĕм пиллĕкмĕш сыпăк

Викторпа икек пулнине Герман Савельч ушкăнĕнчи ачасем çав кунах пĕлчĕç те больницăна вашкăртса çитрĕç. Ураваш палатăра выртать. Унăн икĕ аллине те хăма патакпа хуплаштарса шурă бинтпа çыхнă.

– Ыран гипс хураççĕ, паян рентген ӳкерчĕç, – пĕлтерчĕ юлташĕсене Виктор.

– Епле пулсан та шăмма тĕрĕс ларттарма тăрăш, гипса епле хунинчен нумай килет. Ыратсан та чăт, тĕрĕс лартчăр, – вĕрентет ăна Савельев.

– Ыратнинех чăтăп-ха, тренировка вăхăчĕ нумай çухалать, – йыша тĕсесе пăхать спортсмен.

– Ним те тăваймăн, тăхтас пулать. Эпĕ те аппендицит кастарса выртрăм, ун хыççăн икĕ уйăхран ăмăртăва хутшăнтăм, – лăплантарать ăна Герман Савельч. – Земфирăна ил тата...

Чирлĕ çын патне килнисене нумай тăратмарĕç, сестра вăхăт чылай иртрĕ тесе хăнасене кайма васкатрĕ.

Каç пулттипе Земфира çитрĕ. Çилпе-хĕвелпе пиçнĕ

кĕре сăнĕ çепĕççĕн курăнать унăн, темшĕн вăл çав тери çывăх пек туйăнать, хальччен пулманччĕ кун пекки – ăна ик алă та суранланнине пăхмасăрах ыталаса хыттăн чуп тăвасси килчĕ. Çав хушăрах Виктор çĕркаç калаçнине аса илсе ырăмарланчĕ: ара, каллех пурнăçлаймарĕ-çке хĕр сĕннине Çĕн Çăкасар ачи. К. хулине пĕрех хут тренировкăччен тухса каймаллаччĕ унăн, инкек те пулас çукчĕ вара. Хытах ятлаçать-и-ха тесе Виктор хăй ентешне куçран пăхать. Хĕр сăн-пичĕ ырă та килĕшӳллĕ, хулăнах мар тутине чăп тытнă вăл. Çамрăк арçын каллех çак илеме пуçласа курнă пек çӳçенсе каять.

– Тем вăхăт выртма лекет ĕнтĕ, тренировкăсенче самай нумай çӳремелли тапхăрччĕ халь, – ӳкĕнсе пĕлтерет Виктор. – К. хулине те çитеймерĕм.

– Начар пулса тухрĕ, мĕн тăвăпăр ĕнтĕ? Аллусем тӳрленсен тренировки тепре тытăнĕ, К. хулине те çитсе килĕн, – йĕс шăнкăрав пекех-ха сассийĕ Земфирăн.

Çук çав, чун кĕтнĕ кайăк çеç мар, хăйĕн тăван аппăшĕ вырăнĕнчех-çке çулпа кĕçĕнрех çак хĕр.

– Итле-ха, Земфира, ачасене те хушма пĕлеймерĕм, – терĕ Çĕн Çăкасар ачи çав-çавах яланхи ăс-тăнпа. – Кĕрсе тух-ха, тархасшăн, общежитие. Укçа-тенкĕ пиншак кĕсйинчех унта манăн. Надьăна ярса пар-ха, чăрмав пулсан та ыйтатăп, тархасшăн.

Çĕн Çăкасар ачи ентеш хĕре куçран пăхать, Надя адресне пĕлтерсе миçе тенкĕ ямаллине калать.

Тăван ял çынни патне килнĕ пек лăпкăн çеç ларакан хĕр чунĕ хăйне шаннăшăн пĕр хĕпĕртерĕ, пĕр пăчăртаса ыратрĕ.

Журналистка шăпи-и ку? Кам, мĕн шăпи? Çын укçине кĕсйинчен илсе ятран кăна пĕлнĕ хĕрарăм патне ярса памалла! Телейĕ çавăн пек-и вара Земфира Вутланован? Каччă авланиччен çывăххăн паллашма тӳр килеймерĕ çав вĕсен... Ак халĕ ун укçине хăй аллипе илсе арăмĕ патне ярса памалла...

Вун сехетпе Ураваша операци пӳлӗмне ертсе кайрӗҫ.

– Кăштах ыратма пултарать. Чăтатăн пуль? Спортсмен вӗт, – калаҫать Викторпа врач.

– Чăтмалла ӗнтӗ, – тет те Виктор хаш сывлать.

Ик алла та гипспа хытарса лартрӗҫ, хурăн сыпписем пек халь мăшăр алă.

Эй, пурнăҫ! Апата ҫын ҫăвара хыптарнипе ҫимелле пулчӗ. Вӗсен ялӗнчи Христун Ванькки вăрҫăра ик алăсăр тăрса юлнăччӗ. Пӗр аллине, туни таран танăскерне, икке ҫурнăччӗ, ҫав ик юппе хӗстерсе кашăк тытма пултарнăшăн епле хӗпӗртенӗччӗ яш ҫын. Унăн куннех курмӗ-ха Виктор. Шăмă сыпăнса ҫитсен гипса салтса илӗҫ.

Ҫын койка ҫине ларнă, умра – тумбочка, унта, фарфор чашăкра, яшка пăсланать, пӗчӗк турилккере – ҫăкăр чӗлли. Шурă халатлă аппа, нянька, Викторпа юнашар ларса ăна ҫăкăр хыптарать, кашăкпа яшка сыптарать. Мелсӗр пулин те ҫын сыпса илет, чăмлать. Хăй чипер чухне Виктор пӗр чашăк яшкана туххăм ҫисе яратчӗ, халӗ, ав, апат вăхăчӗ чылай тăсăлать. Нанька рис пăттипе котлет илсе килчӗ. Ку ҫимӗҫе те ҫапла хыптарать ют ҫын алли. Унтан компот ӗҫтерчӗ. Тӳррипе илсен хырăм тăранмарӗ Викторăн. Ҫапах вăл хăнăхман япаларан хăтăлнăшăн апат пӗтсенех ҫăмăллăн сывласа ячӗ.

Пӳлӗмри тепӗр ҫын, Никандр ятлăскер, хăйне пăхмалли ӗҫсене хăех тăвать. Акă, вăл кӗнеке тытрӗ. Юмах кӗнеки. Виктор ăна саспа вулама ыйтрӗ. Пӗр шарламасăр итлесе выртать ик аллине те гипспа хуплаштарнă ҫын. Ҫапла вăл сисмесӗрех пăшт ҫывăрса кайрӗ. Ыратнипе, ҫӳҫенни-пăлханнипе ирхине ҫамка ҫине пăтăр-пăтăр тар тухнăччӗ, халӗ каранннă нерва хӗлӗхӗсем пушанаҫҫӗ-мӗн, ҫын лăпланать.

Кӗнеке вуланине итлесе ҫывăрса кайнăран-и, апат хыҫҫăнран-и, ыйха путсанах тӗлӗк кура пуҫларӗ вăл. Виктор хăйсен анкартинче пек; улмуҫҫи айӗнчен ҫӗлен шуса тухрӗ те ун патнелле чашкăрсах килет; туяпа

çапса пуçне татасшăн унăнне Виктор, анчах çывăхра туя патне алă çĕкленмест: çĕлен куç пăвса алла хускалми туса лартнă! Каялла çавăрăнса тарма та пултараймасть Виктор. Çĕлен çывăхах çитрĕ. Çĕлен мар, йытă иккен. Шăлне йĕрсе сассăр килет хура çăмламас йытă. Виктор çара уран та, урараан çыртасшăн йĕксĕк. Виктор ăна вирлĕн тапса йăвантарса яратăп тенĕччĕ – хайхи япала çавăнтах йытă мар, чарусăр арçури пулчĕ тăчĕ. Шăл йĕрет, алхасать, Викортан тăрăхлать çапса антармаллискер. Анкартинче мар, Çăкасар ĕшнинчи çырма хĕрринче иккен. Пуçтах арçури – çырма леш енче. Вăл пысăк çĕпре амăшĕ тытнă та ăна хăрах аллипе çӳлелле ывăтса мечĕкпе вылянă пек айхашать. Виктор хăй хыçĕнчи шур туя патне çавăрăнчĕ кăна, çĕпре амăшĕ – çырма чулĕ – ура хырăмне шап! пырса лекрĕ, ыраттарса каçăхтарса ячĕ. Этем кăшкăрасшăн – сас çĕтнĕ. Çавăнтах сулахай ура хуçланса ларчĕ.

Вăрансан та тĕлĕк сĕвĕрĕлесшĕн мар, арçури персе лектернĕ çĕпре амăш ура хырăмне çыпçăнса ларнă пек туйăнать. Виктор куçне уçрĕ, урана шăнăр туртнĕ-мĕн, чĕр куççи хуçланнă та тăсăлмасть. Ура хырăмĕ шăпах çĕпре амăш тĕслĕ хăмăртарах симĕс лаптак чул пек хытса ларнă. Виктор урине тăсма хăтланчĕ – тăсма çук, ӳт ыратни чуна каçăхтарса ярать.

– Мĕн пулчĕ? – ыйтать Никандр.

– Урана турт-ха, урана турт, – сывлăшне аран çавăрса йăлăнать Виктор.

Никандр тăчĕ те Виктор патне пычĕ, сывă аллипе унăн хуçланнă урине тӳрлетме пуçларĕ.

– Мĕн  пулчĕ? – пĕлесшĕн çын.

– Ура хырăмне тыт-ха, мĕн унта? – чăнласах çĕпре амăш мар-и тесе шутлать тĕлĕкрен хăтăлсах çитеймен çамрăк.

– Ай, кăн-кăвак кăвакарнă! Чул пуль ку?! – тĕлĕнет Никандр.

Тринировка тума тӳрех чарăннăран, пысăк ĕç хыççăн виççĕмĕш кун ним туманран ӳт туртăнса ларчĕ.

Ку ахалех иртмест – пĕр тĕлтен çемçелсен тепĕр çĕртен туртса лартать, хускалсанах йĕппе чикнĕ пек ыратать. Вăрăм çула утса тухнă хыççăн кросс чупаймарĕ çав Виктор, ӳт-пĕве çемçетеймерĕ.

Каç кӳлĕм Земфира килчĕ.

– Итле-ха, – терĕ ăна Виктор. – Пĕр ĕç хушатăп, тархасшăн пурнăçла.

Хĕр мĕн-ши-ха тесе тĕлĕнерех пăхать.

– Эрех илсе килсемччĕ, иçĕм çырлинчен тунине, – терĕ  Виктор çын ан илттĕр тенĕ пек шăппăн.

Мăнтарăн эрехĕ... Аманнă чĕр чун кайса ӳкессе кĕтекен шакал пек, çынна хыçранах йĕрлесе çӳретĕнши эсĕ? Викторне халь шăм-шака çемçелтерсе ямалли им-çам кирлĕ-ха. Çав мурсăр пуçне ĕçмели урăх япала çук-ши?

– Кунта эрехпе кĕртеççĕ-и вара? – ыйтрĕ журналистка тӳрех хирĕçлеме хăймасăр.

– Пĕр кĕленчене сумка тĕпне хурсан асăрхамĕç, – пĕчĕк ача пек куçран чăр-чăр пăхса йăлăнать Виктор.

Земфирăна хăйĕн инкекĕ – пысăк тертлĕ ал-ура ĕçĕнчен тӳрех больницăна выртни – аса килчĕ. Ура мышцисем туртса лартмарĕç-ха унăн, анчах тренировка тăвас туртăма сирме, çав хушăрах хусканма та май килменипе епле нушаланчĕ вăл. Виктор çак уйăхра çич çĕр километр ытла утнă, чупнă, вылянă. Çакăн пек хăнăхнине тӳрех чарса койка çине нумайлăха выртни вĕçсе пыракан ракета çулĕ çине чул хӳме тухса тăнипе танах мар-и? Кун пек чух мĕн пулать вĕçекен япалапа?

– Врача чĕнĕпĕр, – терĕ Земфира шухăша путнă хыççăн татăклăн: – Ӳте йăвалĕç, ĕçме таблетка парĕç.

## Çирĕм улттăмĕш сыпăк

Виç эрнерен Виктор больницăран тухрĕ. «Ик аллу та нимле кăлтăксăр тӳрĕ ларчĕ, – терĕ врач. – Анчах пĕр хушă  килте бюллетеньпе пурăнма лекет».

Пуçра пĕр шухăш канăçсăрлантрать: спорт комитетĕнче инструктор кирлĕ те, Герман Савельч Виктора унта ĕçлеме сĕнет. Утакансемшĕн чунне паракан тренер шучĕпе, Виктора алли çирпĕлениччен кантурти ĕç чух çеç, тата унта вăл ялан куç умĕнче пулать, пĕрле тринировăна кайма та меллĕ. Хут ĕçне хăнăхманран Викторăн чун унта туртмасть, пĕлмен япала шиклентерет те. Çав хушăрах ку вăл мал ĕмĕтлĕ ачана илĕртет: каçхи шкулта вĕренме, тренировка ирттерме, тен, чăн та, ытларах май килĕ? Çак шухăш çĕнтерчĕ курăнать. Виктор кĕçех спорт комитечĕн инструкторĕ пулса тăчĕ. Малтанхи эрнере ĕç мĕнлине тавçăраймарĕ те вăл, унтан ăна-кăна пурнăçласси ĕнсе çинче сирсе пăрахмалла мар купаланчĕ.

– Ак, çак хутсене куçарса çырмалла пулать. Кăранташпа тӳрлетнисене асăрха, йăнăш ан яр, – спорт ӳсĕмне кăтартакан плансен папкине пырса хучĕ ун умне председатель заместителĕ Борис Абрамович Абрамов. Çак çын, вăтам çулсенчискер, пур спортсменсемпе те майлă каласма пĕлет, нихăшĕнпе хирĕçмест темелле.

Виктор та бланк çине хăй аллипе асăрхануллăн çырма пуçларĕ; районсемпе спорт шкулĕсенче разрядпа ГТО номисене миçе çын пурнăçланă, спорт шкулĕсем мĕн чул, тренерĕсем миçе – пĕтĕмпех уйрăм гафасенче палăртмалла. Тепĕр инструктор, Шура аппа – Александра Васильевна теççĕ ăна, илемлĕ те тăн-тăн хĕрарăм, – кирлĕ хута машинкăпа пичетлет.

Виктор хăйне мĕн хушнине пурнăçлас тесе пĕр тапранмасăр ларать, хушшăн-хушшăн çеç коридора тухать, апла пулин те вăл йăпăрт çырмалли япаланах хăнăхман-пĕлмен енне виçĕ куна тăсрĕ.

– Унăн акă тата пĕр спорт шкулĕн ĕçне комитет ларăвĕнче пăхса тухма тĕпчесе пĕлмелле те мĕн йышăнмаллине малтанах çырса хумалла. Хăнăхманран хут ĕçĕ пуça минретет; тепĕр тесен мĕн тума кирлĕ-ши шурă хута хуратни? Патшалăха мĕнле усă кӳрет Виктор кунта?

Пилĕк сехет çитет ĕнтĕ, тухса утăччĕ халь Виктор тренировкăна, анчах ĕç вăхăчĕ иртмен-çке; мĕн йышăнассине çырса хунă пулсан татахчĕ – çынни хăйне мĕн хушнине те пурнăçлайман. Килне кайса вырттăччĕ вăл, канĕччĕ. Кайран, канса илсен, инçе çула та утма пулать. Унăн ЦС ăмăртăвне хутшăнма хатĕрленмелле, чунтанах хатĕрленмелле, çав хушăрах хушнă ĕçе те пурнăçласах пулать. Киле илсе кайса çырмалла-ши ку хутне? Кăштах каннă хыççăн, тен, çырăнĕ те.

Телефон шăнкăртатрĕ.

– Эс унтах ларатăн-и? Сывлăху мĕнле? Ĕçлетĕн-и? – уççăн илтĕнет янкăр сас. Земфира иккен. Пӳлĕмре путланса ларакан çыннăн чунĕ вăштăр çил килнĕ чухнехи пекех чĕрĕлсе çĕкленчĕ.

– Виктор, сан патăнта спорт шкулĕсен хăш-пĕр кăтартăвĕсем пур-и? – ĕçлĕн ыйтать ентеш хĕр.

– Хăшĕсем? – тавăрать Виктор ăнланса илесшĕн.

– Разрядниксен йышĕ.

– Калама пултаратăп, – тет те Виктор сĕтел çинчи йышлă хутран мĕн кирлине шырама тытăнать.

– Кунта статья выртать-ха, хăш-пĕр хисепе танлаштарса пăхмалла, – хыпарлать çавăнтах хăй мĕншĕн кăсăкланнине журналистка.

– Йĕркипех калас-и? – тет те инструктор редакци çыннине спорт шкулĕсенчи спортсменсен хисепне пĕлтерме пуçлать. Çак самантра вара вăл, тин кăна минресе ларнăскер, самаях уçăлса каять.

Кайран, пуç ĕçлемесĕр çырса ларнă хушăра, Виктор пӳлĕме çын кĕнине те сисмерĕ, сĕтел çинче йăпăш пӳрнесем курăнсан çеç вăл пуçне çĕклесе пăхрĕ: Земфира иккен. Вăрăмах мар сарăрах хăмăр пальтоне хура хăнтăр тыттарнăран тата кăпăш çăмран çыхнă кĕрен калпак тăхăннăран чăн-чăн чипер кайăк пек – хамăр енче сайра тĕл пулакан кĕпшĕл кайăк пек туйăнать вăл; сăн-питĕнчен те турат çине вĕçсе ларнă кайăк тейĕн ăна. Хăйне евĕр лăпкă та кăмăллă вăл, мăшăр хура куç шăрçийĕ хирĕç пăхнă чух тĕкĕр çине вут çути ӳкнĕ пек хĕм тĕлкĕшнĕн йăлтăртатать.

– Тертленен? – кулать çак «кайăк» хăюллăн. – Спорта аталантаратăн чунтанах?!

– Хут ĕçĕ нуша çеç маншăн, – тӳррине пыратмасть Виктор ăна пăхса киленеймесĕр.

– Темех мар, кирлĕ çеç сана вăл. Вăтам шкул пĕтерсен института кĕретĕн-ха эсĕ. Институт хыççăн та хут çырма хăхăнхни чăрмантармасть.

– Шалу илнĕ чух хамшăн çынна ал пустарманччĕ те-ха, – шӳтлеме сăмах тупăнать Викторăн та.

– Алă пусма çеç пĕлекен çын вăйлă спортсмен та пулаймасть хальхи вăхăтра, – аппăшĕ пекех вĕрентет Земфира. Калатăрах çав, кăшт йĕплет пулсан та, ун сăмахне итлес килет. Надьăн шăкălти чĕлхи те йăлăхтарманччĕ ăна, хунямăшĕ хура çăхан пек кранклатнине çеç чăтаймарĕ Виктор. Йăнăшрĕ те пуль вăл, ятлатăрах ăна тăван Çăкасар ен хĕрĕ.

– Ак канашлура мĕн йышăнассине хатĕрлемелле – киввинчен пăхса çыратăп, – тет Виктор шухăшне каллех ĕç çине тавăрса.

– Ăçта-ха? – терĕ те Земфира пальтоне хывса пукан хыçĕ çине хучĕ, вара сĕтел хушшине Викторпа çумăн вырнаçрĕ.

– Атя, мĕн пуррине çырар. Тренировкăна кйăпăр тата. Халь çине утас енпе кун сиктермерĕн-и-ха эсĕ? – ыйтать Земфира, кунта ахаль пакăлтатса ларма мар, ĕçпе килнĕскер.

– Çӳретĕп, Герман Савельч ушкăнĕнчех, – пĕлтерет Виктор.

Иккĕн сĕтел хушшинче пĕр хушă чĕнмесĕр çыру ĕçĕпе лараççĕ. Хĕрĕ çинçе те вăрăм пӳрнисемпе ручкăна меллĕн тытнă та перине шурă хут тăрăх чăрлаттарать çеç – перо хыççăн «хура вăрлăх» акăнса пырать. Ним хĕретмесĕрех пĕчĕк ачанни пек йăм хĕрлĕ тутине хĕр чăп тытнă, анчах тута хĕрри такампа калаçнăн теккекех выляна-выляна илет. Йăлтăр хура куçĕ хут çине тинкернĕ унăн, çамки çутă; пит çăмарти йăпăш çинçе – пĕтĕм сăн-пичĕ, тулли марскер, яка та çутă курăнать.

Виктор хёрён такампа калаçнăн вылянса тăракан тута хёррине куçлать. Çырнă чух шухăшланипе тута хёрри çавнашкал хускалать иккен унăн, çынни хăй çакна туймасть те, сисмет те.

– Миçе ăмăртуирттернё терён-ха? – кăштах уçăлса хупăнать хёрён тутти.

– Акă, хут тăрăх пурё 21 ăмăрту, – кăтартать Виктор ăна.

– Вăл шутран çăмăл атлетикăпа миçе? Йёлтёрпе миçе? Вёсенче миçе çын хутшăннă? Кăтартăвёсем епле? – нумай ыйту капланнă иккен çыраканăн. Хăй пуçне çёклемест – ыйтать, ыйтать те çырать, алă, поэт каларăш, хут çийён юпах тиха пек юртать. Ёçе хакласа йышăнмалли проект тем хушăра çырăнчё те, мён йёрленине хёр Виктора вуласа пачё, çав хушăрах ручкипе çийёнчех тӳрлете-тӳртет пычё.

– Ыран тепре пăхса тухатăн, юсакалатăн, вара куçарса çыратăн çеç, – терё хёр.

Викторшăн пулсан кун пек çырни те хăех ылтăн, мёнех тӳрлеттёр вăл?! Машинисткăна çапратмалла кăна. Хăйне çырас енпе ăста хёр пулăшнăшăн Ураваш çав тери савăнчё.

## Çирём çиччёмёш сыпăк

Стадионран тухнă ик хёр ача, хăмăр пиншакăн çухавине çӳлелле шарфпа çыхнăскерсем, пёрер мечёк тытнă та ывăта-ывăта айхашать. Ёçрен таврăнакан Земфира çак ик «упа çурине» ытараймасăр вёсем патне пычё те мечёке епле ывăтмаллине, çёрте еплерех сиктерсе илмеллине кăтартах пуçларё. Хёр ачасем хăйсен ёçё ăннăран ахăлтата-ахăлтатах выляма тытăнчёç. Кёлетки-пёвёпе çеç мар, сăн-пуçёпе те пёр тумлам шыв пек иккен кусем: иккёшин те йăпăш пит, çутă хăмăр куç, кулнă чух çӳхелсе каякан тута; тимленё саман-

тра çӳл тута хĕррине çыртасси те, сассипе кулли те пĕр евĕрлĕрех.

Ку йĕкĕрешсене ашшĕпе амăшĕ пĕр-пĕринчен епле уйăрса илет-ши? Чим, Таня текенни ытларах чăр пăхать иккен, Люся тута хĕррине юн кăларас пекрех çыртать.

– Ман ачасене кам ку териех иртĕхтерет тетĕп, – илтĕнчĕ хыçра арçын сасси. Герман Савельч пулчĕ иккен.

– Земфира аппăшне Таньăпа Люся мечĕкле çĕнтерме пуçларĕç ĕнтĕ, – кулать Вутланова.

– Итла-ха, – терĕ ăна çăмăл атлетсен тренерĕ, – спортсменсемпе паян кану шутлĕн театра çитсе курас терĕмĕр. Эп ик билет ытлашши илсе пăрахнă. Ачасенчен пĕри, Виктор, К. хулине тухса кайнă ав. Хĕр тантăшăрпа пырса курăр, спектаклĕ аван теççĕ.

– Мускаври курнăччĕ-ха ăна, чăваш артисчĕсем епле вылянине пăхас-ши эппин, – килĕшнĕн сăмахларĕ Земфира.

Анчах киле çитнĕ çĕре хĕрĕн хавхаланнă кăмăлĕ темшĕн хăй сисмесĕрех салхулланчĕ, унăн ниçта та тухса кĕресси килмерĕ. Кил хуçи арăмĕпе старикки спектакль кайса курма килĕшрĕç те, лешсем кайсан Земфира сĕтел хушшинче пĕчченех ларса юлчĕ. Çамрăксен хаçачĕ валли нимĕçлерен статья куçарма шутланăччĕ вăл, хăй умне нимĕç журналĕпе свловарьсем хучĕ те ручка тытрĕ, анчах çырма пултараймарĕ, хăйне питĕ ывăннă пек, ĕнтĕркенĕ пек туйрĕ. Хĕр вара ура çине тăчĕ те ним тăва пĕлмен енне кантăкран урамри тĕттĕмелле тинкере пуçларĕ. Çав хура чатăр хыçĕнче ырă сăнпитлĕ арçын курăнать пек, тем сăмах калать пек вăл, сасси илтĕнмест. Çĕтсе кайнă çул çӳревçĕ-ши, ют çынах-ши? Çенĕк алăкне шаккаса çавскер пӳрте кĕрессĕнех туйăнать... Тулта шăпах иккен-ха, пӳртри хуллен янă радио çеç тунсăх кĕвви ĕнерет. Кантăкран чылай тинкерсе пăхса тăнă хыççăн хĕр упраç ларчĕ те пуçне сĕтел çине хурса тĕлĕрсе кайрĕ; кил хуçисем таврăниччен те пĕр йăшăлт тумарĕ вăл.

* * *

Виктор хăй çемьеллĕ пулнă киле тĕттĕмле çитрĕ.

– Кĕрӳ иккен, пĕлнĕ пек, сăмах çинех килтĕн, паян çеç Гришăпа яслинчен таврăннă чух асăннăччĕ, – сăмах хушрĕ хунямăшĕ тӳрех. – Алăк патĕнче ан тăр, хывăн.

Пӳртре Надя çук, решетке карталлă кравтьре ача выляса ларать, пăф-пăф! тесе вĕрет те тутине çыртать, пикенсех тем тăрмашать: машина кранĕ çĕмĕрĕлнĕ-мĕн те, ăна юсасшăн иккен. Шалти пӳртĕн кантăк енчи читлĕхре шил-тик, шил-тик, шир-р! сас илтĕнет.

– Гриша, аçу килчĕ, тăр ура çине, аллуна пар аçуна, – сĕнет ачана кукамăшĕ. Виктор хăюсăррăн малалла иртет.

– Амăшĕ таврăнмарĕ-ха; тем, пуху пулать тет-и кантурĕнче, – пĕлтерет Евдокия Еремеевна.

– Гришук, мĕнле пурнан? Тыт, – хутлă конфет парать ачине Виктор. Гриша аллине тăсать те кучченеçе хуллен илет, тутине чăп тытнă вăл, таса та çутă куçĕпе хăй хальччен курман çынна тинкерет.

– Калаç аçупа, пальто илсе пачĕç те. Эс укçа ярса парсан магазина кайрăмăр те, – сăмахлать Евдокия Еремеевна.

Виктор ытлашши калаçмасăрах ачи çине пăхса киленет. Надя тепре качча каяс пулсан çак ачан ашшĕ тăван мар пулать-çке, э? Виктор тепре авлансан ачине хăй патне илсессĕн те, Гришăн амăшĕ ама çури пулать. Надьăпа, Гришăпа пĕрле чăнласах яла кайса пурăнмалла мар-и унăн? Амăшĕ пĕчченех вĕт-ха ялта. Умри спорт сезонĕпе Олимп вăййин çулталăкĕ иртĕ те, Çĕн Çăкасара пурăнма куçмалла Викторăн.

Надя алăк урлă каçсанах пысăк туфли ларине курса кам килнине тавçăрчĕ.

– Иккĕмĕш арăму мĕнле ярас терĕ-ха? – чĕлхе çине килчĕ унăн пĕрремĕш сăмах. Надя мĕншĕн çапла ыйтнине Виктор тавçăрса илеймерĕ-ха.

– Ачу валли тенĕ укçана хăв аллупа ярайман та-ха эс, – пăлханнипе чĕтренерех тухать Надя сасси. Виктор

ку ĕçĕ епле пулнине ăнлантарма пикенчĕ.

– Манран, айванран, тăрăхла ĕнтĕ çапла, – ĕненесшĕн мар Надя.

Виктор та вĕчĕрхенчĕ, вăл тем каласа ярас мар тесе кăштахран уçăлмашкăн ирĕке тухрĕ.

– Эсĕ кăмăллăрах калаç-ха, арçын вăл тепĕр чух ачашланипе çавăрăнать, – вĕрентет амăшĕ хĕрне.

– Эпĕ çырăннине хуратсан мăшăрланăпăр тесе Захара сăмах патăм, – пĕлтерет хĕрĕ.

– Захар вăл ытла йăпăлти. Пулăшма ыйтман чухне те, пырса тĕрткелешет, хылчăк пек, куçа тăрăнать, – терĕ çынна хăй виçипе картакан Евдокия Еремеевна. – Виктор пĕрре пăхма мĕне тăрать! Ĕçлемест те мар вăл, пĕр тăруках мĕн чухлĕ укçа ярса пачĕ. Арçынна малтан çавăрма пĕлмелле, унтан алăра тытмалла. Ăна çумран вĕçертнĕшĕн ху айăплă пултăн-ха, халь кăмăллăрах калаç.

Çапла вĕрентнĕ хыççăн Евдокия Еремеевна магазина тухса кайрĕ.

– Ăмăртăвĕ хăçан пулать-ха? Ăçта, гостиницăна вырнаçтарчĕç-и? – ыйтрĕ Надя Виктор кĕрсессĕн.

– Эпĕ ятарласа килтĕм, – пĕлтерет упăшки.

Унтан сăмаха пĕр хушă «пине çитерчĕç».

– Анне ман ялта пĕчченех, – сăмах хушать Виктор тепĕртакран. – Çава тухсан вăл пире яла пыртарасшăн.

– Хăвăн еркĕнӳсемпе тĕл пулма меллĕрех ĕнтĕ сана унта, – шанмасăр калать Надя. Ун сăмаххи Виктора тарăхтарать, анчах тӳрех хирĕçлесе пӳлмест. Пурнăçра хăш-пĕр айăплă çын тӳрре тухас тесе ытларах юмах юптарма пикенет тепĕр чух, пулманнине шухăшласа кăларать, суять. Хăйĕн айăпĕ çук çын вара ытлашши калаçма васкамасть, ăшĕнче эп ахалех таса тесе шутлать те шыв сыпать. Çавăн пекех Виктор та халь тӳрре тухма тăрăшмасть. Пĕрре кĕвĕçсе лартнă хĕрарăм чунĕ те тепĕр хут час çавăрăнмасть, пĕлет-çке-ха: укçа куçармалли бланк çине хĕрарăм алли çырнă, хăть епле кала халь – урăхла ĕненме йывăр.

Евдокия Еремеевна магазина кайса килсен сĕтел хушшине ларчĕç вĕсем, пĕр-пĕринпе хирĕçмесĕр лăпкăнран калаçрĕç. Яла каймалла пуласси пирки амăшĕ те, хĕрĕ те татса каламаççĕ. Евдокия Еремеевна капла мĕнле пулать-ха тесе шутлать, çавăнтах вăл: «Арçын çавăрсан – çаврăнать, кĕрӳшĕ ниçта та каймĕ, кунтах пурăнма килĕ, ăмăртăва усăсăр çӳреме пăрахĕ», – тесе ăнкартрĕ. Викторпа Надя та шăкăл-шăкăлах ав.

Умри ăмăртусемпе тренировка çинчен пĕтĕмпех манса таврăнчĕ Шупашкара Виктор. Ним çинчен шутламасан пурăнма та çăмăл-çке, чуна канлĕ, анчах çакна та асра тытмалла: шухăш-ĕмĕт çынна вăй парса тăрать, çунат хушать, çĕрĕшсе кивелтермест.

Виктор кантурта ĕçе пуçăнсанах Герман Савельч ăна: «Паян тренировкăна тухатăн», – тесе шăнкăравларĕ. Касса уçма йывăр каçалăк умĕнчен пăрăнса кайтăр-и вара Ураваш? Ăна вăй-хал пама, ĕмĕтлентерме юнашарах тус-юлташсем те пур-çке. Хăвшăн тăрăшакана хакламалла мар-и сан, ял сĕмĕпе ӳснĕ ача? Ак, Земфира çинчен те шухăшласан çутă туйăмпах кăртлатать Виктор чĕри.

## Çирĕм саккăрмĕш сыпăк

Кашни çыннăн хăйне тивĕç ыр енĕ пур, çавăн пекех кăлтăкĕ те çук мар. Пуçлăх таврашĕн ку е вăл çитменлĕхĕ тӳрех куçа курăнать. Уравашпа Савельев пӳлĕме кĕнине «Труд» обществăн председателĕ, диван çинче пĕр арçынпа калаçса ларакanскер, сисмерĕ те. Мĕн çинчен сăмахĕ – спортсменпа тренерĕ кĕнине асăрхама вăхăт çук? «Йĕклтет те йĕкĕлтет, йĕкĕлтет те йĕкĕлтет – нимле те çакланмасть, юлашкинчен яртах туртрĕ; хăлаç тăршшĕ пулчĕ ĕнтĕ терĕм. Хăлаç тăршшĕ сана! – ак, çакăн пек кăртăш», – кача пӳрине кăтартать

тумтирне хывман çынни. «Ман хамăн та пулчĕ ун пекки», – калаçма пуçлать савăнсах итлекен Хохлачев.

– Василий Филипч, мĕнле пулса тухать-ха капла? Эсир çӳревçĕсен çулне картлатăр, – вĕсен ырă калаçăвне татма хăять Герман Савельев.

– Малтан алăк шаккаса кĕреççĕ, ун хыççăн калаçма ирĕк ыйтаççĕ. Куран – пушă мар.

– Пулла кайни çинчен кайран юмахлăр. Эпир кунта ĕç пирки кĕнĕ, – тет те çирĕппĕн Герман Савельч çынна çвăнтах хĕстерсе лартас пек, тутине тăсса пăхать.

– Ну, мĕн сирĕн? Ямарăмăр ăмăртăва! Спринтерсем виççĕн кайса килчĕç, вĕсенчен те усси пулмарĕ, – хыттăн тавăрать Хохлачев.

– Çӳревçĕсен çулне юри картлатăр эсир, ăмăрту календарьне улăштарни çинчен те пире пĕлтемен.

– Темех тăваттăрччĕ ĕнтĕ.

– Сире гимнастика ăмăртăвĕпе чушкăлла вылясси тата пулла çӳресси кăна кирлĕ, – пĕтĕм сăн-пичĕпе талпăнса калать тренер.

– Кĕрешекенсем те, боксерсем те лайăх вырăн йышăнса килчĕç пирĕн, – тӳрре тухать общество председателĕ.

– Ураваша «Пучаха» куçаратпăр – ним те калаймастăр: вăл, инструктор пулнă май, районсене те çитсе çӳрет, ялти спортсменсен йышĕнче пулма пултарать.

– Мана хăратас терĕр-и халь капла каласа? Эпир çӳревçĕсемсĕрех ытла кайра пулман, – тет хăй сĕтелĕ хушшине пырса ларнă Василий Филиппович çынна хирĕç тилмĕрсе.

Чĕрре кĕнĕ вăхăтра пулин те Хохлачев хăй мĕн шутланинех калать. Тĕп Совет ăмăртăвĕ çак эрнере пулнине пĕлмесĕр юлнăшăн – Уравашпа Савельев хытах кӳренеççĕ.

– Командăпа мала тухсан та ыррине илтес çук сирĕнтен, – пăшăрханать Савельев.

– Пире тĕнче класĕнчи мастерсем кирлĕ, – хăйĕннех перет Василий Филиппович.

Çакăн пек калаçнă хыççăн Ураваш, чăнах та, «Пучах» обществăна куçрĕ. Ку обществăн Российăри Тĕп Совечĕ хăйĕн хĕллехи ăмăртăвне мартăн иккĕмĕш эрнинче Нальчикра ирттерет. Виктор халь унта кайма шутлать.

Тренировка тумĕ ĕç пӳлĕмĕнчи шкафрах унăн. Виктор çири костюмĕпе кĕпине хыва çакрĕ те кросс чумашкăн меллĕ çи-пуç тăхăнчĕ, вара ĕç пĕтнĕ-пĕтмен кантуртан тухса сирпĕнчĕ. Пуш уйăхĕн пуçламăш кунĕсем сивĕрех, шăнас мар тесе васкавлăн чупмалла. Спортсмен интситута туххăм çитрĕ. Кунта коридора ытти ачасем пухăннă, хĕрсем те пур, Земфира та çакăнтах. Тренировкăна çӳрекенсен çирĕп йĕрке: шăп палăртнă вăхăтра пухăнмалла, çынна кĕтсен кĕтеççĕ чи нумай пилĕк минут, хăпăл-хапăл тухса каяççĕ: тăхтама вăхăт çук – пушă самантпа туллин усă курмалла; çула май унта-кунта кĕрсе тăма ан шутла: юлташусенчен юлăн та кайран вĕсене шыраса тупаймăн.

Спортсмесен вун-вун ик çынтан тăракан ушкăнĕ тротуарпа пырса Лакрей вăрманнелле пăрăнчĕ. Юртнă май Герман Савельч Виктортан ыйтса пĕлет:

– Команда ăмăртăва хăçан тухса каять?

– Ыран-и, тепĕр кун-и, тахçан? Манăн каяс пулсан Сыромятин та, Абрамыч та çук – командировкăра. Вĕсемсĕр çула тухма кам ирĕк патăр?

– Мĕскер эс? Ай, ай! Мĕнле каймалла мар?! Ку ăмăртуран юлсан хĕлĕпе çӳренине пĕтĕмпех çухататăн. Тем пулсан та каймаллах.

Вăл çаплах-ха, çурхи кун çултатăк тăрантарать теççĕ. Çур аки пирки каланă ăна. Спортра та çур аки вăхăчĕ пур. Çуркунне тренировка тăваймарăн пулсан çулла «тыррание тулăх вырса илейместĕн». Халĕ Уравашăн ЦС ăмăртăвне хутшăнмалла, унтан тепĕр старта кĕтсе çавăнтах юлма тăрăшмалла.

– Чĕнӳ хутĕнче ман ят пур-ха, каймашкăн ирĕк пама кирлĕ, – тет Виктор.

– Каяс пулать, – çирĕплетет Герман Савельч халь.

Çăмăл атлетсем Виктор пурăнакан çуртран инçетренех те мар чупса иртрĕç, тренировкăран таврăннă чух çынни тӳрех унта кĕрĕ, ирпе ĕçе çаплах çăмăл юртăпа çитĕ.

Герман Савельчпа Виктор малта çиçтерсе пыраççĕ. Савельев, кĕçĕнни, пĕр икĕ хутчен те:

– Ай, илтеретĕр, хашкаттаратăр капла, ĕлкĕрме çук, – тесе калаçкаларĕ. Хĕрсем кăштах каярах юлнă.

Сасартăк çывăхрах бомба çурăлнă пек сасă хаплатрĕ.

– Атом мар пулĕ те?! – куçне-пуçне пăркаларĕ кĕçĕн Савельев.

Хăлха хуплансах ларчĕ. Ачасем чарăнчĕç те ун-кун пăхкаларĕç.

– Газ вăл, таçта газ шаплатрĕ, – терĕ хыçран çитнĕ Земфира.

Таврара нимĕн те, нимĕнле улшăну та сисĕнмерĕ, çав-çавах троллейбуссем, автобуссем иртеççĕ, çынсем утаççĕ. Ниçта тĕтĕм-çулăм тухни те, пушар машини шăхăра иртни те курăнмасть. Спортсменсем инкек пулман пуль тесе чупма чарăнмарĕç, кĕçех вĕсем хура вăрмана кĕрсе кайрĕç.

Палăртнă чухлĕ чупсан тĕрлĕ хусканусем турĕç те спортсменсем йывăççем хушшинчи такăр сукмакпа иртсе каялла тухрĕç. Хула тĕп урамĕнче кашни хăй çулĕпе пăрăнчĕ: студентсем проспект тăрăх общежитийĕ еннелле юртрĕç, Земфира – хăй урамĕ еннелле, Герман Савельев çул урлă каçрĕ те тепĕр тăкрлăкпа кайрĕ. Йыш саланчĕ, Виктор та хăйсен общежитийĕ патне çавăрăнса çитрĕ. Ăна хирĕç кил хушшинчен хĕрлĕ ГАЗик тухать, кабинине пушар енĕпе ĕçлекен офицер ларнă. Çав вăхăтрах вăрманти таса сывлăш хыççăн сăмсана кӳ! кăна çунăк-кăмрăк шăрши кĕчĕ. Общежити кил картиче – çунăк пукан-сĕтел, шыв сапнă хыççăн пăрланма ĕлкĕрнĕ, тĕл-тĕл çунса шăтнă тӳшексем... Пĕр-ик çын уткалать, кулянса калаçни илтĕнет.

Çунăклă, шывлă-пăрлă пусма картлашкипе Виктор иккĕмĕш хута хăпарчĕ. Пӳлĕмсен алăкĕсем çук,

Викторсен пӳлӗмӗнче кравать сетки хăяккăн выртать. Урай çунса шăтнă. Тепӗр арча пекскер çунса пӗтеймен – ку вăл кӗпе-тум çакмалли шкафăн аялти ещӗкӗ пулчӗ... Тӗтӗмпе «чыхăннă» кӗпесем мунчала пек выртаççӗ. Урайӗнче, кӗтесре, йӗп-йӗпе исленнӗ чăматан йăваланать. Пӗртен-пӗр чăматан юлнă иккен Викторăн. Пуш чăматан! Пушă темесӗр: унта ăмăртăва хутшăнмалли шурă труссипе майки тата йӗпписене хăйпăтса илсе утма меллӗ тунă тапочка çеç. Костюм, икӗ брюки, виçӗ кӗпе (вӗсем пурте çӗнӗ пекехчӗ) шкафра çакăнса тăнă – акă халӗ çав пӗтӗм тупра урайӗнче татăкăн-кӗсӗкӗн кăна выртать.

Общежитинчи çичӗ çынна больнцăна илсе кайнă. «Вилӗмрен çăлăнса юлтăм-и капла, – терӗ хăй ăшӗнче Виктор. – Ӗç хыççăн канма килсе выртнă пулсан тем пулас пурччӗ унта?»

Кӗтменнине курнипе шалтах халтан кайнă спортсмен хăй ӗçлекен кантурти пӳлӗме таврăнчӗ. Ăш хыпнипе халь вăл пӗр алтăр йӳçек шыва сывламасăр тенӗ пек ӗçсе ярӗччӗ. Ресторана кайса лармалла-ши? Анчах мӗнпе? Ӗç укçи иличчен пурăнмалли çирӗм тенкӗ укçа костюмпа пӗрле кӗсьерех çунса кайнă. Виктор ним ăша ямасăрах каçхи кичем пӳлӗмре хыт сӗтел çине выртрӗ.

Çывăрса каяс саманра унăн чăтма çук çиесси килчӗ. Виктор кран патне тухса графина шыв тултарчӗ те çăвар тулли шыв ӗçрӗ...

Ирпе ачасем ăмăртăва кайма пуçтарăнчӗç. Викторăн ӗçри хуçисем командировкăран таврăнман та, вăл çула тухма тăхтаса тăрать. Общество председателӗ Макисимов ăна: «Дмитрий Николаевич килсен унпа хам калаçса татăлатăп, сан пирки хам явап тытатăп; тепӗр сехетран пуйăс пулать, ачасенчен ан юл, кай», – тесе сӗнет.

Общество Тӗп Совечӗн хӗл иртнӗ хыççăнхи ăмăртăвне Чăваш республикинчен пурӗ те ултă çынна кăна чӗннӗ. Виктор çав ултă çын шутӗнче пулсан мӗншӗн каймалла мар вара?

Савельев телефонпа шăнкăравлать.

– Япалусем çунса кайнă пирки кулянса ан ӳк, ăмăртăва кай! Кунта эс кулянмасăр чăтаймастăн. Атя, кай, – сĕнет вăл.

Виктор ăна та хуçасем çукки çинчен пĕлтерет.

– Ăмăртăва кайнипе мĕн ӳкерсе çухататăн вара эс? – хыттăн калать Герман Савельч. – Каймасан çухататăн!

Пур çав спорта парăннă çынсем. Герман Савельч мĕн пур япалана спортпа виçет: эсĕ ăмăртура мала тухрăн пулсан, унта тепĕр пысăк ăмăртăва хутшăнакан командăна лекрĕн пулсан вара эс çын, унсăрăн çын мар. Олимп командинче пулсан-и? У! у! Ун чух эс пысăк сас паллипе çырмалли çын! Викторăн халь ăмăртăва каймаллах пирки Савельев тĕрĕс ĕнентерет. Тренировкăсене, ара, пĕр чун йăпанăвĕшĕн çеç çӳремен-çке: пысăк ăмăртусене хутшăнас ĕмĕтпе, вăхăта перекетлесех, халран кайиччен километрсен шутне çуран виçнĕ.

Анчах спорт – спорт та, çăкăр илемлĕх ăçта та пулсан ĕçлес пулать. Виктор спорт комитетĕнче ĕçлет. Ку вăл – учраждени. Унта та ĕç йĕрки пур. Унта та ăмăртăва кайма учреждени пуçлăхĕнчен ирĕк илмелле. Вĕсем халь – прадседателĕ те, заместителĕ те – вырăнта мар.

Герман Свельч трубкăна хуман-ха, çаплах Виктора ӳктлет:

– Паян тапранса тухмасан Мускавран Нальчика каякан пуйăс çине ĕлкĕрейместĕн: пуйăс мăшăрлă числара çеç пулать. Смолета ан шан: паян та Шупашкарта аэропорт хупнă. Халь, çуркунне те, çанталăк тĕтреллĕ тăрать. Лере аэропорт те йышăнать – пĕлес çук. Пĕр çулхине пирĕн самолет Миниралла Шывсем ятлă станцие анса лармарĕ, Адлера çитме лекрĕ. Унта та ку вăхăра çантлăк час-чсах пĕтлĕ тăрать. Общество ярать пулсан шутласа ан тăр, кай.

Пĕр çамрăкпа виçĕ хĕр санцире пуйăс çинче ĕнтĕ. Виктор юлташĕсем хыççăн Канаша автобуспа васкарĕ.

Шупашкар пуйăсĕпе Мускава пыма лайăх.

Тăван çĕр-шывăн тĕп хулине «Чăвашстан» ирпе илсе çитерет. Çул çинче вăл каç пулать, каçхине эс ним те тумастăн – çывăратăн. Мĕнле выртнă çапла ирччен пĕр тапранмасăр ыйха туртрĕ Виктор. Тĕлĕнмелле, çывăрса тăранмасла пуç усăнать унăн.

Мускавран Нальчикалла пынă чух Ураваш юлташĕсемпе те нумай калаçмарĕ, пĕри шахматла выляма сĕнчĕ – шахматла та, картла та выляс кăмăл çук унăн.

## Çирĕм тăххăрмĕш сыпăк

«Пучах» çăмăл атлечĕсен çуркуннехи ăмăртăва каймалли хыпар Шертанов хăлхине темле çитсе кĕнĕ. Республика Советне вăл Ураваш тухса кайсан тепĕр сехетрен шăнкăравларĕ:

– Мĕншĕн мана ямастăр?

– Пурĕ ултă çынна çеç чĕннĕ, ятран, уйрăммăн, – илтет вăл хурав.

– Ман пирки мĕншĕн Тĕп Советпа калаçмарăр?

– Эсĕ тренировка тунă-и вара?

– Эсир мана Мускавпа çыхăнтарăр, эп обществăн виçĕм çулхи чемпионĕ шутланатăп. Çыхăнтарăр мана унти аслисемпе – вĕсем мана пĕлеççĕ.

Шертанов телефонпа шатăртаттарса калаçрĕ те, капла ĕç тухманнине шута илсе, Шупашкара персе çитрĕ. Спорт обществинче чи малтан вăл председатель пӳлĕмĕн алăкне пырса тĕкрĕ – алăк уçăлмарĕ: хăй пӳлĕмĕнчех лармасть çав Максимов. Унтан Николай инструкторсен пӳлĕмне пычĕ, кунта пурте хăйсен вырăнĕнчех, бухгалтерĕпе кассирĕ те пур. Инструкторпа пай заведующийĕ Шертанова чăрах пăхрĕç. Спортсмен сумкине лартрĕ те арçынсене алă парса тухиччен хăй ӳпкевне пĕлтерчĕ:

– Так, Шертанов кирлĕ мар апла сире?

– Сывлăх сунатпăр. Иртĕр, – терĕ пĕри лăпкăн.

– Шертанова хуратса хутăр пулать? – сывлăх сунма та тавçăрмасть Николай. Куна хирĕç нихăшĕ те пуçласа сăмах чĕнме хăяймасть-ха.

– Уравашпа Пайăрка пуçа тухрĕç-и? – хыттăнах калать Николай, пӳлĕм урайĕ варринче карусель тĕнĕлĕ пек тăраканскер.

– Маларах пĕлтермеллеччĕ, эпир сире тренировка тумасть пуль тесеччĕ, – терĕ пай заведующийĕ Миронов тинех. – Сакăр вырăн ыйтнăччĕ, Мускав ултта кăна пачĕ. Пайăркана аллă çухрăма хатĕрленме ятран чĕннĕ, Ураваш та списокра тăрать.

– Ăçтан пĕлччĕр вăл пурине? «Пучахра» ăмăртман та вăл!

– Чĕннĕ ăна, – ăнлантарать Миронов, вăтăртан иртнĕ арçын, иккĕмĕш разрядри спортсмен пулнăскер. – Пĕр-ик сехет маларах çитмеллеччĕ, Ураваш каясшăн та марччĕ. Сан пирки тренировка тума пăрахнă терĕç.

– Кам каланă? Кашни кун ачасемпе урок иртеретĕп, секци ертсе пыратăп. Çынсем аллине хуçса больницăра выртнă та – тренировка ирттернĕ пулать вара! – çаврăнать Миронов еннелле спортсмен.

Шертанова сăмахпа çĕнтерме çук, тата хăть мĕнле пулсан та вăл – профсоюзсен Атăл çи чемпионĕ, «Пучах» обществăн виçĕм çулхи чемпионĕ. Николай çакна та шанать: Нальчика çитсен Тĕп Советăн аслă инструкторĕ ăна киле каялла ямастех-ха, ăмăрттарать. Çын бухгалтер сĕтелли патне шаплаттарса утса пычĕ те:

– Татьяна Яковлевна, ярăр мана, каятăп эп, – терĕ.

– Манран килмест, – хуравларĕ бухгалтер. – Максимовран ыйтăр. Анчах Мускав хытах каланă: ултă çынран ытлашши пулмалла мар.

– Ултă çын шутне кĕреймест-ши вара Шертанов?! – Куçне вĕçен кайăк пек йăлт-йăлт вылятса пăхать вăл. – Çав хĕрсем сирĕн иккĕмĕш разряд кăтартаймаççĕ, çапах ăмăртусем тăрăх сĕтĕрсе çӳретĕр вĕсене.

– Хĕрарăм спринтерсем те кирлĕ-çке, вĕсем çук пиркиех иртнĕ çул эстафета команди те пулаймарĕ пирĕн,

очко илеймесӗр ҫынсенчен юлтӑмӑр, – тӳрре тухасшӑн Миронов.

– Пулмсть те вӑл сирӗн эстафета команди! Хӑть ӑҫта илсе ҫӳрӗр, ҫав самӑрскерсенчен иккӗмӗш разрядран ытла каясси пулмасть.

– Мӗншӗн? Пӗрремӗш разряд кӑтартнӑ вӗсем, – ӑнлантарать Миронов.

– Хӑйсен ӗмӗрӗнче пӗрремӗш разряд вӑхӑтне аран-аран пӗрре пурнӑҫланӑ та вӗсем, ҫавсене алӑпа ҫӗклесе ҫӳретӗр, – урай варринчен пай заведующийӗн сӗтелли еннелле утать спортсмен.

– Ӳссех пыраҫҫӗ вӗсем, – тет те Миронов, хӑй ҫине тапӑнса кӗрекене хирӗҫ тӗртес пек, ик аллине те кӑкӑрӗ умне тытать.

– Мастерсем кирлӗ мар апла? – лешӗн еннеллех утса пырать Шертанов. – Ҫӳревҫӗсенчен сирӗн ҫын шутӗнче Уравашпа Пайрка ҫеҫ юлчӗҫ-и? Вӗсене эп хампа тупӑшас ҫын вырӑнне шутламан.

– Кунта хатӗрлен, Апашран Шупашкара утса ҫитмелли ӑмӑртура пурне те тӑн кӗрт-ха, – хушша кӗрет тепӗр сӗтел хушшинче ларакан инструктор, ҫирӗм ҫиччӗри вӑйлӑ ҫӑмӑл атлет.

– Мана пӗчӗк ача пек ан шутлӑр. Хӑҫан ӑҫта кама тӑн кӗртмеллине хамах пӗлетӗп, – тесе сӗтел умӗнче чарӑнать Шертанов.

Ку вӑхӑтра общество председателӗ Максимов ҫитсе кӗчӗ.

– У, Шертанов, – терӗ те вӑл Николая алӑ пачӗ. – Сана Нальчика яраймарӑмӑр курӑнать, – тесе пӑхать вӑл ҫынна шелленӗн.

– Мана яма шутламан та эсир, – тилмӗрет спортсмен.

– Атя хам пата, – чӗнчӗ хӑй пӳлӗмне Максимов ӑна. – Сакӑр ҫын ыйтрӑмӑр. Телефонпа хам калаҫрӑм. Загоруйко татсах款ларӗ:ултӑ ҫын! Сан ятна асӑнтӑм, Ураваша асӑнтӑм. Пайӑркана аллӑ ҫухрӑма хатӗрленме хӑйсем ыйтрӗҫ. Нумайрах ҫын яни пирӗншӗн лайӑх, – йӑпатать спортсмена председатель хӑй пӳлӗмӗнче.

Шертанов чĕнмест, пĕр хушă шăпăрттăн итлеме те пултарать вăл, пуçлăхсемпе йăпăл-йăпăл пулмаллине те хитре чухлать.

– Ураваша ярасах терĕмĕр, Герман Савельч та ăна хытах сĕнчĕ.

– Вăт, çав Герман Савельч мана кураймасть те. Эпĕ хăйĕн рекордне çапассинчен хăрать вăл.

– Мĕнле халь унта сан ĕçсем? – йăлана кĕнĕ мелĕпе калаçăва пăрчĕ прадседатель.– Секци ĕçлет-и? Взнос пухассипе Петрова пулăш-ха эс унта. Мĕн тăвать вăл? Колхозсенчен юридически взнос та пухмасть. Индивидуальнăй взнос хăвăр техникумра пухса пар.

Хушнине Шертанов хирĕçлемесĕр итлет, ĕçне пурнăçласан-пурнăçламасан та тавлашмасть.

Шертанов, тӳрипе илсен, ку çине тренировка ăнăçлăн туса та пыман-ха. Уроксем ирттернĕ те секцие кăшт-кашт ертсе пынă çеç. Анчах Николай çынни çавăн пек вăл: ик эрне-виç эрне хушши шăм-шакне чĕрĕлтерет те 10 çухрăма 45-46 минутсенче ним мар утса тухать, 20 çухрăма ăнăçлăн вĕçлеймĕ-ха, кĕске дистанцире çапăçатех. «Моторĕ вăйлă», – теççĕ юлташĕсем ун пирки. Ачи те хăйне шанать. Çапах пысăк çитĕнӳ тума йĕркеллĕ хатĕрленни кирлĕ. Шертановăн пĕвĕ пĕчĕккĕ, çавă çĕр-шыв командине лекес ĕмĕтне хавшатать.

Советăн тĕп пӳлĕмне тепре кĕрсен Шертанов тарăхни иртсе пынă май мăнăçлăн:

– Çапатăп вĕсене эп. Ураваш та, Пайăрка та манпа кĕрешмелĕх çынсем пулман, – терĕ хăй шухăшне пыратмасăр. Миронов ăна татах йăпатас шутпа:

– Республика ăмăртăвĕнче кăçал тытăçу вăйлă пулать сирĕн, – тет куларах. – «Буревестник» обществăра мĕн чухлĕ çамрăк хатĕрленет! Герман Савельч кун сиктермесĕр тренировкăна илсе çӳрет хăй ушкăнне.

– Вĕсем чĕпĕсем çеç-ха. Вĕсемпе калаçмастăп.

– Асаматра Капарков та хатĕрленет пулмалла. Пурин сăмсине те шăлса ярсан, ак, вăл, – куçне çутăлтарсах пăхать халь Миронов, ытлашши çӳллех мар сарăрах арçын.

– Эй, каларӗ – виççӗмӗш разрядник! Çулла мана Ивановăна каяссинчен хăварчӗç командăна кӗртмесӗр, паянхи пек тухса тарчӗç. Кунта, хамăр патри ăмăртура, Капарков пулчӗ те, Артюшкин. Ну, тыллярăм вара вӗсене. Шутласа пыратăп: эп тăватă çаврăм тăватăп та вӗсене пӗр çаврăм хăваласа çитетӗп, тăватă çаврăм тăватăп та – пӗр çаврăм пăрахса хăваратăп. Лапша вӗсем, тупăннă мана кампа танлаштарма.

Çын мухтанать пулин те кунта пулманнине ӳстерсе калани çук: ӗçӗ, чăнах та, çапла пулнă.

– Ун чухне сана кӗрешӳрен кăларасшăн та пулчӗç-ха, – ачан кăмăлне татах хăпартлантарать Миронов, чееске р.

– Улливанов нăйкаса тăчӗ унта. Минутра ик çӗр утăм тăватăн та чупатăн теççӗ. Минутра ик çӗр утăм тусан чупăнать пулать, ăна тӗпчесе пӗлнӗ теççӗ. Кăларса пăрахассипе хăратса тăчӗç мана. Капарковпа Артюшкина вунă çаврăм хăвартăм, Улливановсем нăйкăшман пулсан тепӗр иккӗ хăвараттăм.

Шертанов пархатарсăр мар. Çав хушăрах мухтанасси те çителӗклех унăн, чап тениех илентерет пуль ăна спорта. Ăмăрттăр çав, каçалăкра унашкал çын та кирлӗ. Халӗ çынни ав: «Çав Уравашпа Пайăркана тепре хам çурăма кăтартмастăп-и? Тăхта, хатӗрленем çеç», – тесе хурать.

## Вăтăрмӗш сыпăк

Чăваш ачисем Нальчика çитсе вырнаçнă тӗле ялта пурнакан Пайăрка Çеркейӗ урăх поезд çинчен Пятигорскра анса ăмăрту пулакан хулана автобуспа пычӗ. Раççей Совечӗн аслă инструкторӗ ăна тӳрех: «Сана ку ăмăртура пиллӗкмӗш вырăн йышăнсан та хатӗрленӗве хăваратăп, çулла 50 çухрăма утмалла пулать», – терӗ.

Ураваша Раççейăн ялти çамрăкĕсем пĕлмеççĕ-ха, мĕншĕн тесен ку йышра вăл хальччен ăмăртман. Раççей тренерĕ асăрхатăр тесен унăн пĕрремĕш е сахалран та иккĕмĕш вырăн йышăнмалла, виççĕмĕш вырăн нимĕн те памасть – тренировкăна хăвармаççĕ. Пайăркашăн урăхла ав: иртнĕ çул 50 çухрăмра спорт мастерĕ пулнăскерне çав дистанцире кăçал та ăста пулма малтанах шак хураççĕ. Çеркейпа Виктор хальхи ăмăртăва камсем килнипе интересленеççĕ, ытларах çĕнĕ ятсем – çамрăксем курăнаççĕ иккен протоколта. Вĕсем темех тăваймĕç, утас спорт тӳрех авăнакан хулă мар, вăл хăй хăвна авать.

– Ха, Кемерово ачи пур-ха кунта, – асăрхарĕ Пайăрка. – Мастер кандидачĕ. Вăйлă хатĕрленнĕ терĕç.

– Курăпăр-ха унта, – шикленмерĕ Ураваш.

Чăваш çĕр-шывĕнчен ура айĕнчи юр чĕриклетнĕ вăхăтра тухнă пулсан кунта урăх çанталăк – хура кĕр тĕслĕ çуркунне. Юр çук, анчах йывăç-курăк папкаланайман; вĕтĕ çумăр çăвать, чарăнмасăр пĕр вĕçĕм йăсйăс пĕрĕхет. Каç шур мамăк пек юр ӳкнĕ те, халь вăл ирĕлет, урамра, асфальт çинче, лаптăкăн-лаптăкăн шыв кӳлленсе тăрать. Юр пур çĕрте те харăс ирĕлмест, унта-кунта тĕм айĕнче тахăшĕ каç манса хăварнă çемçе çăм аслсиш пек выртать шурă юр. Вырăнти халăх кăçал ку хĕле вăрăма тăсăлчĕ тет, çуркунне çитмерĕ тесе ӳпкелешет. Юбилей çулĕнче ку вăхăтра садсем сипсимĕс ешернĕ-мĕн.

Спортсменсем сивлек çанталăка пăхмасăр стадионра ăмăртаççĕ. Ку стадионра сахал мар олимпиец çуркунне тĕрекленсе çуллана хатĕрленнĕ. Стадионсăр пуçне кунта тринировка irттерме парк пур – çĕр-шыври кану хулисенчен чи пысăк парк, тăрăх чупса тухма кăна виçĕ çухрăм пулать вăл.

Ăмăртăвăн пĕрремĕш кунĕнче стайерсем вăй виçрĕç. Спортсменсем шăнса каясран майка айĕн çанăллă кĕпе – футболка е куртка – тăхăннă, ура мышцине сивĕ лексрен маçпа сĕрнĕ. 10 километра чупакансен çурăмĕ

ура сирпĕтнипе хуп-хура пылчăк пулнă. Хĕлле пит хăвăрт чупман пирки тата сывлăш нӳрĕккипе кунти ту çинчи хулара сывлама пушшех йывăр.

Çеркейпа Виктор стайерсем сывлăш çитменнипе йывăррăн туртăшнине сăнаса тăраççĕ, ыран вĕсен те çакăн пек тертленме лекет. Пĕрле килнĕ чăваш ачи, виçĕм çул Атăл çи ăмăртăвĕнче медаль çĕнсе илнĕскер, 10 çухрăма чупса çиччĕмĕш вырăн çеç йышăнчĕ. Ирхи ăмăрту вĕçленсен стадион пушанчĕ те, Çеркейпа Виктор вĕтĕ çумăр айĕнех разминка ирттерчĕç.

Ăнăçлă ăмăртассин çур шанчăкĕ вăл – каç лайăх çывăрнинче. Нумай спортсмен ыран старт тенĕ чух ыйхă вĕçнипе асапланать. Кун пекки Викторăн пулман-ха. Çарти юлташĕсемех мĕнле те пулин час çывăрса каясчĕ тесе пĕр аякран тепĕр аяк пĕрчи çине çавăрăнкаласа çиттие вĕрен пек пĕтĕрнĕ вăхăтра Виктор яланах тарăн ыйха путнă.

Пурăнма вырнаçнă турбазăра, уйрăммăнах фоере, питĕ шавлă. Кунта туристсем килеççĕ, каяççĕ. Çул çӳревпе канакансен хăйсен йăли-йĕрки пур. Кайма хатĕрленкенсем фойене пуçтарăнаççĕ – чăматанĕ-сумкисемпех. Художество ертӳçи вăйăсем йĕркелет; купăсçă, яштак каччă, купăс туртса ярать – каять вара юрă шăранса... Кĕçех ташă пуçланать...

Акă тултан сумка-чăматанĕсене йăтнă çĕнĕ ушкăн кĕрет... Хавасланса пĕр-пĕрне саламлани... Сăвăтакмак...

Кăнтăрла та, каçхине те кунта пĕрре те шăп мар.

Виктор аялти хутра пурăнать, пӳлĕмĕ коридорпа пырсан виççĕмĕшех. Тăваттăн пурăнмалли пӳлĕмре виççĕшĕ – туристсем. Ку юлташсенчен пĕри тусем хушшине пилĕк кунлăх похода кайнă, тепри паян каясса пĕлтерчĕ те: «Радикулитран хăтăлтăм, сиплĕ лĕкĕр чире пач пулман пекех юсарĕ», – тесе киле пуçтарăнчĕ. Виççĕмĕш турисчĕ, пĕр çамрăкскер, ним тума аптранă сăнлăн курăнать. Виктора вăл ăмăртăва килтĕм тенине илтсессĕн: «Тапăнса выляканни-и, вратарь мар-и? – тесе

куçран пăхрĕ, анчах килнĕ çын футболист та, хаккеист та пулмарĕ те, калаçма сăмах тупаймарĕ.

Кăнтăрла шăм-шака çемçетсе таврăннă тĕле çак ача пӳлĕмре икĕ хĕр упраçпа калаçса ларать. Тем пирки пырать сăмахĕ – кĕнĕ çын ăна-кăна тăнламарĕ – пĕр хĕрĕ чăх сăхса çитермелле мар сăмахлать, çав вăхăтрах тепри хăй пурнăçĕ çинчен пĕлтерме васкать. Яш кĕрĕмĕ те хăй мĕн курни çинчен хыпарлама тăрăшнинчен тата хăйсем пĕлекен çынсене аса илнинчен кусем пĕр шкулта вĕреннĕ йыш иккенне тавçăрма пулчĕ. «Анне ниçта кайса пĕлеймесĕр хыпкаланать, апат-çимĕç хатĕрлет, Люлька пирĕн почта килмерĕ-и тесе кашни çур сехетре хапха умне туха-туха пăхать – телеграмма кĕтетпĕр. Эпĕ те Валькăпа мăшăрне мĕнле чечек парас-ши тетĕп», – сăмахне тăкать анчах хытă калаçаканни. «Упăшкине алăран çавăтсах çӳрет пуль, шкулта чухнех куршанак пек çыпçăннăскерччĕ», – тĕлĕнерех кулать тепри. Унтан каллех тем çинчен, пули-пулмине, тăкăлтатса калаçаççĕ. «Шыв шарлакĕ витĕр сике-сике тухатпăр çав, ак, эсир те çитсе куратăр унта, сăн ӳкерттеретĕр», – тет хăнисене кĕтсе илнĕ çамрăк йĕкĕт те.

Пӳлĕмре хĕрсем пуррине кура Виктор хывăнас-и, хывăнас мар-и тенĕ пек тăхтарĕ, унтан капла шăнса пăсăлма пулать тесе шал енчен тарпа, тул енчен çумăрпа исленнĕ кĕпи-майкине пĕтĕмпех хыврĕ. Калаçакансем ун енне çавăрăнса пăхмарĕç. Апата кайиччен шăм-шака кăштах кантарас тесе старта хатĕрленекен çын утиял айне кĕрсе выртрĕ. Шакăлтисен сăмах хутаççи пушанас вырăнне тулса пырать пулмалла: лăпланас тĕллипалли те çук халь çине пĕр-пĕрне курман çамрăксен. Виктор чăтаймасăр: «Шăпрах-ха эсир!» – тенине хăлхана та чикмерĕç. Кăштах канас тенĕ çын, ним тăвайман енне, тумланса коридора тухрĕ. «Çуран уттарса, кросс чуптарса хал кăларасчĕ кусене, – вăрçать ăшĕнче. – Ун чух ним тĕлсĕр сăмах çапма вăхăт та, шухăш та пуçра пулмĕ».

Каçхине çакăнти пысăк зала кайса тĕнчери ларутăру çинчен лекци итлерĕ Виктор. Лекторĕ халăх

умӗнче нумай калаҫнӑскер пулас, тахӑшӗ-пӗри кӑштах хускалсан тӑхтама пӗлет. «Куҫлӑхлӑ ҫын, сана калатӑп, калаҫса ан ларӑр, – терӗ вӑл пӗр-икӗ хутчен те. Хальхи ҫамрӑксемех-и тесе Виктор та чӑтаймасӑр халапҫӑсем енелле тинкерчӗ. Кусем урӑххисем иккен, пӗр куҫлӑхлӑ хура арҫын икӗ хӗрарӑмпа лӑпланма пӗлеймесӗр палкать. Тухса кайма лекрӗ ҫавсен. Вӑт, ҫыннӑн чун-чӗри, итлес килмест пулсан малтанах лекци залне кӗрес ҫукчӗ, леш ҫамрӑксем курӑнмаҫҫӗ ав. Пухӑннӑ йыш лектор ҫӑварӗнчен мӗн тухнине пӗр вӗҫтермесӗр тимлӗн итлет. Ӗҫ халӑхӗн туслӑхӗ пирки пырать сӑмах. «Тӗнчери халӑхсен туслӑхне ҫирӗплетес ҫӗрте спорт вӑйӑисем те пулӑшаҫҫӗ», – шутлать Виктор лекци итленӗ май. Унӑн ытти халӑх атлечӗсемпе тӗл пула пӗрле ӑмӑртас килет. Ҫывӑрас умӗн Виктор ирӗкре самаях уҫӑлса ҫӳрерӗ. Пайӑрка Ҫеркейӗ урӑх хӑна ҫуртӗнче пурӑнать, ыранхи ӑмӑрту пирки калаҫма ун патне каясшӑнччӗ, анчах инҫе тесе тӑхтарӗ Ураваш. Ыран ӑмӑртмашкӑн лайӑх канас тӗлевпе ҫын вунӑ сехетре кӗрсе выртрӗ. Пӳлӗмре никам та ҫукчӗ, лӑпкӑ ҫӗрте часах ҫывӑрса та кайрӗ.

Ула такка хӑрӑк турата такканӑ евӗр такам лахлах-лах! кулнипе вӑранса кайрӗ Ураваш. Стена еннелле пӑхмалла выртнӑскер, вӑл тепӗр май ҫавӑрӑнчӗ, куҫа ҫавӑнтах лампа ҫути шартарса ячӗ. Сӗтел хушшинче икӗ хӗрпе леш ӗҫсӗр аптранӑ каччӑ лараҫҫӗ.

– Лӑпланӑр-ха эсир – ҫын ҫывӑрать вӗт! – терӗ кусене Виктор. Хайхисем ун енне, ку ӑслах-и тенӗ пек, тинкерсе пӑхрӗҫ ҫеҫ, лӑпкӑрах пулма кирлине ӑнланмарӗҫ те.

– Ак халь хӑвӑр пӗлекен артист ячӗсене ҫырса тухӑр, эп сирӗн мӑшӑру мӗн ятлӑ пулассине каласа паратӑп, – тет леш хыт калаҫаканни ҫурӑк чан пек саспа.

– Мана тахҫанах темиҫе ят каланӑ – ҫиччех качча каятӑп пулмалла, – ихӗрет хирӗҫ лараканӗ.

– Ахӑрма урӑх вырӑн ҫук-и сирӗн валли?! Ҫыннӑн ыран – старт! – лӑплантарасшӑн ҫаксене Виктор.

Хайсен вӑйӑипе киленекен ҫамрӑксемшӗн пул-

сан тем-ха вăл «старт», темех ĕнтĕ ку япала? Вĕсем те шкулта чух ГТО нормине панă, вăйпа хистесех чуптарнă вĕсене, норма тулаймасран шикленмен те, пăшăрханман та. Ĕçе çӳреме автобус-троллейбус тулăх хальхи вăхăтра. Ку отпуска вĕсем вун пĕр уйăх кĕтнĕ, халь, путевкăпа килнĕ чух, канмалла вĕсен – калаçмахĕпĕртеме кам чарма пултарать ара? «Лăпланăр!» – тесе тепĕр хут ыйтсан та хăлхана чикмерç çаксем. Виктор чăтаймасăр коридора тухрĕ те хăйне çывăрма паманни çинчен дежурнăя пĕлтерчĕ.

– Вăхăт вун иккĕ çитнĕ – хăвăр пӳлĕмĕрсене кайăр, – сĕнет вĕсене дежурнăй. Хĕрсем тутисене тăсрĕç, анчах нимех те хирĕç чĕнеймерĕç.

– Час каяççĕ вĕсем, шкулта пĕрле вĕреннĕ эпир, паян канма килчĕç, – ăнлантарать хăй канăвне урăхла майлă йĕркелеме пĕлеймен яш çын.

Тарăхса вĕчĕрхеннĕ Виктор вĕсем кайнă хыççăн та хăвăртах лăпланса çитеймерĕ. Куç хупса çывăрса кайнăччĕ кăна вăл, темле трактор кĕрленĕ саспа вăранчĕ. Паçăрхи сиплĕ пылчăкпа юсаннă çын вырăнне çĕнĕ юлташ, пĕр аллă çулсенчен иртнĕ арçын, килсе выртнă та хар! та хар! харлаттарать. Вăрманта пĕрене купалакан трактор та кĕрлесен-кĕрлесен аяккарахри йывăç патне каймалла. Ку вара пĕр вырăнтах, лачакана кĕрсе ларнăн, хар! та хар! тутарать. Этемми салтăнмасăрах ӳпне выртнă. Виктор тăрса ун патне пырать те аяк çине çавăрăнма хушать. Çын самантлăх лăпланать, анчах кăштахранах малтанхи пек сăмсапа харлаттарса сывлама тытăнать. «Ну, ку турбазăпа! Лекрĕм те çав!» – тарăхать Виктор. Леш тăрпалтай кĕрсе выртрĕ те çийĕнчех ним шухăшсăр çывăрса кайрĕ.

Иккĕмĕш хут вăраннă çыннăн ыйхă килмест халь. Виктор, ним тăвайман енне, куçне уçсах выртать. Пысăк чӳречерен ăна тулли уйăх тĕсесе пăхать, пӳлĕмре тĕрĕ тĕрлес пек çутă. Тулта çанталăк уяртнă иккен. Çакăн пек чух инçе çĕрте хăвăн тăван ен аса килет. Ырри сахал Викторăн. Пурăнакан общежитири пӳлĕмсем çунăк-

кăмрăк юлчĕç Шупашкарта. Ăçта вырнаçтарĕç ăна таврăнсан? Вăл хваттер пирки никампа калаçмасăрах тухрĕ те килчĕ-çке! Пурнăç сакки мĕншĕн ытла та тикĕс сикмест-ши Çĕн Çăкасар ачишĕн? Ураваш шухăшпа хăйĕн пурнăç йĕрне йĕрлеме тытăнать те çавăнтах Шертанова инкек кăтартнă услапсене, халĕ уссăр пакăлтатса ларнă çамрăксене аса илет, çакăн чух вара хăйĕн пурнăçĕ Кĕрешӳ иккенне палăртать. Кĕрешӳ çынна тĕреклĕрех тăвать, пурнăç хакне туйтарать.

Пӳлĕмре çаплах хар-р! хар-р! сас тăрать, тата леш çилхăван ача сăмсапа ши... ши... шăхăрса сывлать; тулли уйăх халь чӳречен тепĕр кусĕнчен сăнавлăн пăхать.

Ир енне тин кăтăш пулчĕ ыйхă вĕçнĕ çын. Улттă çурăпа, Пайăрка Çеркейĕ кĕрсессĕн, вăранчĕ Ураваш. Сахал çывăрнă çыннăн пуç вĕри, тăнлав тем пулнă пек кашлать. Саккăрпа вĕсен физкультура диспансерĕнче сывлăх тĕрĕслеттермелле. Начар çывăрнă енне врач ăмăртăва кĕртмесрен шикленет спортсмен, юрать, сывлăх кăтартăвĕ чипрех пулчĕ: юн пусăмĕ те, ал тымарĕ те йĕркеллех тапать. «Çанталăк начар, çитменнине сирĕн ку пĕрремĕш старт, çавăнпа çирĕм мар, вунă çухрăм уттаратпăр», – терĕ ЦС представителĕ.

Вунă çухрăм вăл çӳревçĕсемшĕн кĕске дистанци шутланать. Çĕнтерес пулсан ăна пит хăвăрт тухмалла. Виктор малтанхи икĕ çаврăма пысăк йышпа пычĕ те тӳрех ума ӳкрĕ, хытăран хытă кая пусларĕ. Часах хыçра пыракансен йывăр сывлани илтĕнми пулчĕ. Чылаях хăварчĕ-ши – ăна пĕлмест-ха ăнтăлаканĕ. Вăйлисем унран ытлашши каярах мар пыраççĕ иккен, вăл шутра Пайăрка та курăнать. Виктор сывлама йывăррине пăхмасăр пусăннă хăвăртлăха чăтма кирлĕ тесе ывтăнса каяс пек ăнтăлать. Аякран пăхсан ăна çăмăл пырать тейĕн, анчах çыннăн пыр чĕлĕхĕ те, урари ӳт те карăнтарса лартнăн кĕç-вĕç татăлса каяс пек туртăнаççĕ. Илтерсе пырать-ха çаплах кун пеккине тренировкăсенче пайтах пурнăçланă çын. Çаврăмсене пĕр чарăнмасăр тӳрех çирĕм пиллĕк хутламалла.

Çавра çулăн стартпа финиш йĕрĕнче судьясен йышĕ кĕпĕрленнĕ. Çаврăм шутлаканни те, вăхăт пăхаканни те, ыттисем те – пурте пĕрлех. Хăшĕ-ши вĕсенчен утта хаклаканĕ? Çак йышран çӳревçĕсем пĕрне те утларăш ăмăртăвĕсенче хальччен курман. Вун виçĕ çаврăм юлсан «92-мĕн номер, асăрхаттаратпăр сире», – терĕç Ураваша. Мĕншĕнне атлет ăнланаймарĕ: ик ура та çĕртен çĕкленет-ши? Апли туйăнмасть-çке. Чĕр куççи те хитрех тӳрленсе пырать. Тем килсе тухĕ тесе Виктор ирĕксĕрех вăрахланчĕ. Çавăнтах каялла пăхрĕ те ытти çӳревçĕсем инçерех те маррине курчĕ. Çеркей хăй хыççăн çыпçăнса ларса пыракан Кемеровăпа Ижевск ачисенчен уйăрăлнă та Виктора кĕç-вĕç çитес пек чашкăртать. Çитермелле-ши куна, çук-ши? Иккĕн пĕрле пыма лайăх-ха, анчах çав хушăра ыттисем те ура кĕли çине пуссан? Виктор кĕтсе тăма шутламарĕ – унăн пĕрремĕшех пулмалла. Пĕр хушă хулленрех пынă хыççăн вăл каллех шăнăрсене ухă çиппи пек «карăнтарчĕ».

Виктора асăрхаттарасси мыскарараn пуçланнă. Судьясенчен утас сăлая чухласах кайманнине диск перессипе ăмăртма килнĕ Краснодар ачи, Пайăрка Çеркейне лайăх пĕлекенскер, сиссе илнĕ те, Çеркее мала кăларас ĕмĕтпе: «Малти чупать, ăна эп асрхаттаратăп», – тенĕ. Судьясем ун-кун пăхкаласа илеççĕ, чăнах та хайхи пĕрремĕш пыраканĕ пусăма шутласа çитермелле мар хăвăрт утаслать, вара ăна чупать пуль тесе тĕшмĕртнипе часах асăрхаттараççĕ. Пĕрин шӳчĕ атлета инкек патне илсе çитерме пултарнă çав. Ăна-кăна туйман спортсмен кăштах вăрахрах пынă хыççăн тепре ăнтăлчĕ ав.

Вунă çухрăма чăваш ачисем иккĕшĕ те 45 минут иртсен вĕçлерĕç.

Малти выранăшăн парне параççĕ те, Виктор хăйех кĕпе суйласа илчĕ.

– Пĕр кĕпе вĕçне юлнăччĕ-ха, – терĕ спортсмен кăмăллăн. Пайăрка Çеркейĕ, урăх пуйăспа хăй тĕллĕн килнĕскер, юлташĕн инкекне пĕлмен те-мĕн, кунта ăмăрту çичен кăна калаçнă.

– Апла ҫёнтерӳпе тепӗр хут саламлатӑп, хам малта пулайманшӑн ӳкӗнместӗп, – терӗ Ҫеркей юлташне ыррӑн пӑхса.

## Вӑтӑр пӗрремӗш сыпӑк

Ӑмӑрту вӗҫленсенех чӑваш ачисем почтӑна пычӗҫ: бухгалтер каялла таврӑнмалли ҫул укҫи телеграммӑпа ярса пама палӑртнӑччӗ. Тӗрӗслеттерчӗҫ – укҫа ҫитмен.

Тӗп Совет ҫыннине Виктор: «Эп ӗҫрен те ыйтса тухман, кунта хатӗрленме тытӑниччен малтан Шупашкара кайса килем», – тенӗччӗ, общежити тупасси пирки те шухӑшламалла унӑн, пушар пирки унран та ыйтса пӗлеҫҫӗ пуль. Халь, ак, чӑрмав – таврӑнма билет укҫи ҫук. Пурӑнма та сывлӑшпа ҫеҫ пурӑнаймастӑн. Виктор вара киле кайса килес шухӑша пӑрахса Пӗтӗм Союзри ӑмӑртӑва хатӗрлекенсен йышне кусрӗ.

«Сире турбазӑра усрамастӑп», – терӗ кусене асли. Вара вӑл кунта юлнисене пурне те «Россия» ятлӑ хӑна ҫуртне вырнаҫтарчӗ. Викторпа Ҫеркей иккӗшӗ пӗр пӳлӗмре пурӑнма пуҫларӗҫ.

Пӗрре хӑнӑхни ҫумран ӳксе юлмасть, вӑл таҫта та хӑвӑнпа пӗрлех пырать. Ял ҫынни таҫта та ял ҫынниех, вӑл – ирех ура ҫинче. Сменӑпа ӗҫлесси, канмалли кунсенче вырӑн ҫинче ытларах выртасси ял ҫынни йӑлийӗркине кӗреймен. Пайӑрка Ҫеркейӗ – ялти учитель. Вӑхӑта вӑл хула ҫыннинчен ытларах перекетлеме хӑнӑхнӑ, ирпе шкула кайиччен ялан ҫӑмӑл тренировка ирттернӗ, ҫавӑнпа унӑн ирпе ултӑ сехетре ура ҫине тӑрасси улшӑнас ҫукла ҫыпҫӑннӑ.

Виктор ӗҫе кайман е тренировкӑна васкаман чухне ирпе вырӑн ҫинче йӑваланса выртма пултаратьха. Хатӗрленӗве пухӑннисем те, ав, пурте ир тӑмаҫҫӗ, Виктор та улттӑрах тӑмӗ. Кунта икӗ вырӑнлӑ пӳлӗмре пурнакан юлташӗ халь унӑн – кун йӗркине ҫирӗп тыт-

са пыракан Пайăрка, ыттисем хăть тем тусан та, хăйĕн кун йĕркине пăсмать çакскер: выртса юлтăрах юлташĕ пӳлĕмре; вăл çанталăка-мĕне уямасăр ирхи зарядкăна тухатех. Пĕчченех. Ялта çынна кĕтсе тăман вăл. Çав хушăрах пĕрле пырас текене чĕнмесĕр хăвармасть.

Виктор Ураваш канмалли кунсенче вырăн çинче ытларах йăваланса выртма пултарать терĕмĕр. Унăн тата тепĕр енĕ пур: халăхран юлма юратмасть. Ушкăна хăнăхнă çын вăл! Тренировка тăвакан ĕçчен йышра – тренировкăри çирĕп тус, сыпма юратакан ушкăнра – хăйне алла илеймесен никама хур туман лайăх юлташ. Кунти хатĕрленĕве Çеркейпа пĕрле юлни Викторшăн пит усăллă пулчĕ.

ЦС çынни, спортсменсем ăна «шеф» теççĕ, тренировкăна юлнисене ирпе сакăр сехетре хăна çурчĕн аялти хутне пухăнма каланă. Ăна хут çинчи сăмахпа «линейка», – ят тĕрĕслени теççĕ. Тӳррипе илсен кунта пухăннă йыша ертсе пыраканĕ ĕç тăвать: кун йĕркипе паллаштарать, харпăр хăй ĕçлекен çĕртен хут кирлине аса илтерет, бассейна шыва кĕме хăш кун валли калаçса татăлнине, ытти союзла республикăсен командисем хăçан килсе çитмеллине пĕлтерет... Вăхăтран кая юлса тухнишĕн çирĕп ят тивет хăшне-пĕрне. Шеф тӳрех çапла калать: «Мана халь кураймарăр пулсан кунĕпе те кураймастăр!». Ку тĕрĕсех: кун каçа тĕрлĕ кантура çитме лекет унăн: чукун çул станцине пымалла шефăн, унта спортсменсем валли Мускавран контейнерпа ярса панă çи-пуçа йышăнмалла, бухгалтеринче те ĕç нумай, столовăйĕнче те аслă шеф-поварпа калаçмалла. Ушкăна ертсе пыраканне ирпе тĕл пулни спортсменĕсшĕн те кирлĕ: ведомость çине ал пусса талонсем илмелле, ик кунлăх-виç кунлăх парса пыраççĕ апат çимелли хута.

Ирпе ирех пухăнма калани чылай спортсмен кăмăлне каймасть. «Çакăнта сакăр сехетре пухнассишĕн пĕтĕм кун пăсăлса каять», – хытах пăшăрханать, ак, Мускав облаçĕнчи спринтер. Чăнах та ĕнтĕ, чылайăшĕ

саккăр тĕлнелле кăна тăма хăнăхнă, вăран та – тӳрех линейкăна ут, çур сехет çухатнă хыççăн çăвăн та – апата кайма вăхăт çитет, ирхи зарядка пулмарĕ те хайхи! Апатланассине каярах хăварас – тĕп тренировка каяраха тăрса юлать... Пĕтĕм кун пăсăлса каять вара.

Ир мĕнле пуçланнинчен кун епле иртесси килет, ĕç пулăвĕ ун пуçламăшĕнчен килет. Яра кун та çавăн пекех. Ăна йĕркеллĕ тытăнтăн – усăллă иртет. Вырăн çинчен аннă чухне малтан сулахай ура çине пусрăм пулмалла теççĕ чăвашсем кун ăнăçсăр пулсан. Тин асăннинчен пуль çав  сăмахăн пĕлтерĕшĕ. Сылтăм ура çине пусас пулсан вăхăтра тăрса куна ăнăçлă пурăнма тытăнмалла.

Викторпа Çеркейшăн пулсан линейкăна сакăр сехетре ирттерни шăп вырнаçуллă. Ултă иртсен вĕсем çăмăл тумланса çуртран юртăпа тухаççĕ, урамра асфальтпа çăмăллăн чупса парка çитсе кĕреççĕ. Нальчик паркĕ – çĕр-шыври кану вырăнĕсенчен чи илемли, чи пысăкки терĕмĕр. Халĕ вăл ешермен-ха, хура вăрман çеç. Спортсменсемшĕн ку пит лайăх тата, çулçă сарăлман пирки чăтлăх мар – кросс чупма меллĕ.

Викторпа Çеркей паркри сукмаксемпе çаврăнса çулла ĕçлекен «Эльбрус» ресторан патне тухаççĕ, унтан Нальчик юхан шывĕ хĕррине пырса пысăках мар илемлĕ кӳлĕ тавра çавăрăнаççĕ те каялла турбаза еннелле таврăнаççĕ. Ку вăхăтра унта-кунта пĕр-ик çын – канакансем-и е хулара пурăнакансенченех-и – тухнă та хăйсен сывлăхне лайăхлатассишĕн вăраххăн юртаççĕ, çакăн пеккисенчен ытларахăшĕ самай ватă. Сывлăхшăн тăрăшакансем хушшинче тĕреклĕ çамрăка сахал куратăн: ара, яшсен пурăнма-сывлама ахалех хал пур-çке, мĕншĕн чăрманас вĕсен? Паркара чупакан çамрăк çын сывлăха упрас тĕлĕшпе кăна тăрса тухман, унăн урăх тĕллев – ăмăртăва хатĕрленесси!

Спортсменсем те ирхи зарядкăра васкамаççĕ, анчах вĕсен юртти сывлăхшăн кăна лĕпĕстекенсенчен чылай ӳсĕмлĕ, çавăнпа кусене тӳрех уйăрса илетĕн.

Ăшăрхамалăх чупнă хыççăн çуллахи калаçса лармалли, доминолла, шахматлы вылямалли çурт çывăхěнче икě спортсмен тěрлě хусканусем тăвать. Алăпа тытма е тайăнма карлăк, сак, йывăç вулли пур кунта. Ларса е выртса хуçкаланмашкăн сěтел те ирěклě. Турник вырăнне йывăç туратти тупăнать. Тěрлě хусканупа тертленнě хыççăн икě спортсмен хушшинче тупăшасси пуçланать – чул ывăтассипе. Пуç пысăкăш чăмăрккана вунă майлă ывăтаççě вěсем. Акă, Виктор чула малтан икě алăпа тытса, умалла сулласа пăрахрě, ăнăçлах пулмарě: йěтре пěр ултă метр çеç кайрě. Çеркей калать: «Кун пек пулсан паян эп çěнтеретěп, ку хăнăхупа ěнер эс малтаччě, халь юлсан уншăн хăш енěпе тавăрма пултарăн-ши?»

Виктор чěнмест – шӳте ăнланаççě спортсменсем. Чул тытни инçене ывăтма тăрăшать. Чěлхе вылятни юри йěкěлтени кăна вăл; çиеле тухасси – хăв вăйна ěçпе кăтартнинче. Пěр ултавсăр тěп-тěрěс çěнтертěн – сана никам та çур сăмах хирěçлесе каламасть, сан çине хисеплěн пăхаççě çеç.

Кашни мелпех пурě виçшер пемелле-ха. Вкторăн инçерех ывăтма шанăç пур. Иккěмěш хутěнче атлет пысăк кěмěрккене малтанхинчен пěр икě метр ирттерчě. Çеркей туять: вăйлă ывăтрě, çапах шăлне çыртмасть, чул ӳкнě вырăна пěчěк патак кайса лартсанах: «Кун пек виç çулхи ача та перет», – тесе йěплесе илет.

Виктор пăшăрханмасть, унăн кулă та килмест – пěлет-çке-ха: Çеркей хăй унта çитереймест, анчах унăн тата хытăрах ывăтас ěмěт пур. Енчен Çеркей çав вырăна çитерсен пěр пӳрне илли маларах иртсен... Виктор чула виççěмěш хут ик аллăпа тытать те палăртнă чикěрен каярах тăрать, пеме хатěрленет. Çеркей юлташне сăмахпа «тěп тăвать» çеç мар, мухтать те: «Вăт сан алăсем, кěркунне кăна хуçăлнă тесе шутла!» – «Врач каланă мана: малтанхинчен çирěпрех пулать тенě». Виктор çак «кире пуканне» вилěн-вирлěн сулласа малалла сулăмлăн ярать, кăкăр тулли çăтнă сывлăшне

ахлатса хăвăрт кăларать те урине малалла пусать. Çеркей ун çине чĕнмесĕр тинкерет. Виктор сулăма чăтаймасăр тепĕр урипе паллă тунă йĕртен каçса каять. Çеркей вăраххăн: «Шутланмасть», – тесе татса хурать. Унтан вăл «çăварне шыв сыпса» пысăк ĕçе кӳлĕннĕн чула илет те пемелли йĕр хыçне тăрать. Малтанхи хутĕнче Çеркей чула ним сулласа тăмасăр çын сисиччен тенĕ пек вăркăнтарать. Йĕтре аванах каять, анчах юлташĕ пенĕ инçĕше кăтартакан патак патне пĕр ал лаппи чухлĕ çитеймест. Виктор чул ӳкнĕ вырăна патак пырса лартать.

– Юлатпăр, тăванăм, юлатпăр, – тет вăл.

Икĕмĕш хутĕнче Çеркей сулкаланса сулăма ӳстерчĕ, анчах перес умĕн чул аларан вĕçерĕнсе тухса кайрĕ.

– Ĕç татăлнă, виççĕмĕшне ыватмастăн та пуль, – тет Виктор.

Çеркей чĕнмест, вăл нӳрĕпе йĕпеннĕ чула хыр лăсси çинче йăвантарса-сăтăрса типĕтет. Унтан сывлăш çавăрса илет те хĕремесленсе вирлĕн ывăтать – чул малтанхи вырăнах пырса ӳкет. Виктор чăрăш йĕкелĕ илсе çывăхри йывăç айне хурать: тухăç енĕ – унăн вырăнĕ, вăл çĕнтерчĕ те, ун енне пĕр йĕкел выртать халь.

Пуç урлă каялла ывăтассипе паян кĕтмен-туман çĕртен (ытти чухне ку хăнăхура йĕтрене мина пек çӳлелле яратчĕ те инçене çитерейместчĕ) Çеркей мала тухрĕ – халь ун енне йĕкел пырса выртать.

Вунă тĕрлĕ тупăшрĕç вĕсем: кашнин пиллĕкшер йĕкел – никам та çĕнтереймен, пĕр пек. Çапла, никам çĕнтереймен, тӳррипе илсен иккĕшĕ те çĕнтернĕ.

Садри пĕчĕк пăрăхран юхса тухакан шывпа алла çăвать те асфальт çулпа ирĕклĕн те вырăммăн пусса «Россия» гостиница еннелле утать икĕ тус. Вĕсене хирĕç стайерсем çăмăл юртăпа иккĕн-виççĕн килеççĕ.

– Эсир пĕтертĕр те-и? – сăмах хушаççĕ вĕсем. Çак ачасем тăватă-пилĕк километра юртса ирхи линейкăна çитме ĕлкĕреççĕ, пурте пухăннă тĕлелле ăшша пиçсе тултан фойене кĕреççĕ. Çеркейпа Виктор кăштах канма

та ёлкёрнё ку тёле. Зарядкăна кайма тин тухакансем те пур, ун пеккисем ытларах спринтерсем. «Кун вакланса каять», – тесе мăкăртатаççĕ кусем.

Викторпа Çеркей шеф каланине тăнланă хыççăн талон илсе тӳрех столовăя уттараççĕ. Унтан таврăннă чух çула май киоскра хаçатсем туянаççĕ – тĕрлĕ йышши кăларăм. Пӳлĕмре харпăр хăй койки çине хывăнса выртаççĕ. Пĕр хушă пĕр-пĕрне сăмах та чĕнмеççĕ, канлĕ лăпкăлăхра хушăн-хушшăн хаçат чăштăртатни кăна илтĕнет. Теплерен пĕри уйрăмах кирлĕ хыпара пĕлтерет: «Нимĕç 20 километра сехет те 28 минутра утса тухнă ав». – «Англи рекордне çĕнетнĕ». Ак тата Англи атлетне, банкра ĕçлекенскерне, ăмăртуран таврăннă çĕре ĕçрен кăларса ун вырăнне урăх çынна илнĕ. «Пире те хамăр таврăннă çĕре ĕçрен сирпĕтмĕç-ши?» – тет Ураваш. «Чипер калаç-ха, капитализм тĕнчипе хамăр çĕршыва ан танлаштар», – пӳлет ăна Пайăрка.

Уборщица вĕсен хăтлăхне васкаса кĕмест, малтан ытти пӳлĕмсене шăлса тасатать. Тирпей кӳрекен çын кӳршĕ номерсене çитнĕ тĕле туссем тумланса тренировккăна тухса каяççĕ. Хĕрарăм кăмăллă: ку пӳлĕмре туртса тултарман, сывлăш таса, пирус тĕпĕсемпе пушă кĕленчесене пушатасси çук. Кинеми умывальника çуса тасатать те сĕтеле нӳрĕ тутăрпа сăтăрса илет çеç.

Пĕр кун çумăрлă, тепĕр кун тĕтреллĕ тăнă хыççăн çаналăк хĕвеллĕ кунпа ылмашăнчĕ. Çурçĕр енчен пысăк тусем хупласа тăнăран хулара çил кастармасть. Шĕшкĕ айĕнчи лаптăксенче ăшша туйса кивĕ типĕ çулçă витĕр малтанхи симĕс курăк – чĕлтĕр çĕлен калчи, çавăнтах лютик миксе тухрĕç. Сăрт-ту хăй çине улăхма илĕртет. Канма е сипленме килнĕ йыша Кизиловка тăвĕ енне кресло çине лартса канат çулĕ илсе каçарать. Сывлăшра хуллен куçса пыраканскерсем юхан шыв тăрăхĕнчи инçетпе ту хăяккине пăхса йăпанаççĕ. Вĕсен айĕнчех, шупка хăю пек шоссепе, ав, иккĕн йăрлаттарса утаççĕ, ула юпа тĕлне çитсен чарăнаççĕ майкăпа трусси

вĕççĕнскерсем. Кăшт сывлăш çавăрса илеççĕ те çаксем юпа тĕлне тăрса каялла ăнтăлаççĕ, аллисене хăвăрттăн вылятса урисене тимлĕн илсе пусаççĕ. Çӳлте креслопа ярăнакансенчен хăшĕ вĕсем çине тĕлĕнсе пăхать, хăшĕ: «Хытăрах!» – тесе кăшкăрать.

Ту айккинчи пысăк мар пахчасенче хĕрарăмсем йăран пусаççĕ, кивĕ хыт хурана тураса типĕтеççĕ. «Ăçта чупатăр? Мĕн пулнă сире?» – ыйтать пĕри, унтан тепри сăмах хушать. Ачисем чупмаççĕ-ха, километр тăрăхне хăвăрт утса тухма хăнăхаççĕ.

– Кунта пин метр ытла пуль, – иккĕленет Çекрей икĕ юпа хушши пирки.

– Çул тӳрем пулманран вăхăт нумай иртет те, çапла туйăнать сана, – ăнлантарать ăна Виктор. Тепĕр икĕ хутчен те ĕмĕтленнĕ пек вăхăт кăтартаймаран вăл та килĕшет: «Çухрăм ытла ку тăрăхра. Пултăрин тата! Тренировка пахалăхĕ уншăн чакмасть». Анчах чун çаплах лăпкă мар-ха, лайăх вăхăт кăтартас килет вĕсен. Хальхинче çулăн тепĕр еннелле чавтараççĕ, кунта пĕр майлă тăваллăрах хăпармалла – вăхăт пилĕк минут та сакăр çеккунт иртрĕ. Анаталла анчĕç те, çеккунт йĕппи тăватă минут та тепĕр чĕрĕке кăтартрĕ.

Çурхи сар хĕвеллĕ кун ытлашши шăрăхах мар, утма чух çеç темелле. Çапах та майка вĕççĕн атлетсем самай хĕрелсе пиçрĕç, хăвăртлăхшăн кĕрешсе хусканас килми пуличчен ырчĕç. Километр хушшине канса илӳçĕн вун пиллĕк хутларĕç вĕсем.

«Ыран çак çулпах «уçăлса çӳреме кайăпăр», – сĕнет Çеркей тĕм айне пытарса хунă спорт тумне илсе тăхăннă чух. Паянхи плана пурнăçлани чуна çăмăллатать, ыран та ăнăçлăн ĕçлеме хавхалантарать.

Пĕтĕм Союзри ялти атлетсен ăмăртăвĕнче епле çӳревçĕсем пулаççĕ-ши? Хăшĕ вĕсенчен вăйлăрах? Пайăрка кăштах чухлать: иртнĕ çул Украинăран Колодочка текенскер лайăх ăмăртрĕ. Латвирен Юлтымаа хушаматлăскер пур. Хăй эстонец пулмалла вăл, Рига çывăхĕнче пурăнать ялти ветеринари врачĕ. Çав яштак

ача иртнӗ ҫул ҫӗр-шыв командине лекме пултарнӑ. Ку ҫӳревҫӗсем кӑҫал епле хатӗрленнине Викторпа Ҫеркей пӗлмеҫҫӗ-ха.

– Куртӑн-и? – терӗ Ҫеркей ҫак ӑмӑрту ыран тенӗ кунхине Виктора. – Афиша ҫакрӗҫ: утссипе кунта пирӗнпе пӗр вӑхӑтра армеецсем те ӑмӑртаҫҫӗ!

– Стартне пӗрлех параҫҫӗ-ши? – яштах хавхаланса ӳкрӗ Виктор.

– Куна калаймастӑп, – тет Ҫеркей пӳлӗме кӗрсе хывӑннӑ май.

Армеецсем тени Виктор чунне ҫуйхантарчӗ, спортсмен вара апата каймалли вӑхӑта кӗтмесӗрех хӑпӑлхапӑл тумланса урама тухрӗ. Ялти спортсменсен ӑмӑртӑвӗ пулассине хыпарлакан афишӑпа юнашарах, чӑнах та, тепӗр пӗлтерӳ ҫыпӑҫтарнӑ. «Кӗрешкенсен йышӗнче ҫӗр-шыври паллӑ атлетсем: Авилов, Шалимов... пулаҫҫӗ», – тенӗ унта. Викторӑн хӑйӗн ҫарти юлташӗсемпе ӑмӑртасси килсе кайрӗ.

Тепӗр кунне Ураваш Клименковпа Шалимова курса калаҫрӗ. «Ӑҫта ҫухалтӑн эс? Умра хӗрӳ кӗрешӳсем кӗтеҫҫӗ! – терӗ ҫарти тренер чӑваш ачине. – Санпа калаҫатӑп, кайран ятарласа калаҫатӑп», – сӑмахне хушрӗ вӑл ҫавӑнтах. Хӑй ҫапах Пироне господин утларӑша хӗсме шутланине те, ГДР спорсменӗсенчен вӗренмелли нумаййине те асӑнчӗ. Сасси унӑн ӗлӗкхи пекех, тимӗр хушшине хӗстернӗ евӗр тухать, хӗрсе калаҫнӑ чух тута хӗрри сурчӑкланать, хӑй халь тесен халь ӑмӑртас пек йӑрӑс та тӳрӗ пӳ-сийлӗ. Ҫарти ӑста тренерӑн званийӗ – майор. Армеецсенчен Авиловӗ Болгарире ӑмӑртать иккен, вӑл курӑнмасть кунта, ытти вӑйлӑ ҫӳревҫӗсем пӗтӗмпех пур.

– Олимп вӑййинче ҫӑмӑл пулмасть, унта ҫирӗппӗн кӗрешес тесен паянах тӗнче класӗнчи шайпа утса тухмалла, – тет Юрий Шалимов старт пирки асӑнсанах. «Олимп вӑййи» сӑмах ҫаврӑнӑшӗ ун ҫӑварӗнчен татӑлмасть, «ҫитес вӑхӑтсенче Мускав Олимп хули пулатех, пирӗн хамӑрӑн ҫӗр-шывра спорт вӑйлӑ аталанни-

не унччenex яр уççăн кăтартмалла, утларăш пархатарне Пиронесене ёнентермелле», – тет вăл çĕнтерессе шаннă çирĕп чунлă салтакла. Ыттине те хыпарлать Шалимов. Жаров, Юлдымаа тата Ленинградри тепĕр спортсмен Румыние юлташла ăмăртăва кайнă, Авиловпа Галлин Болгарире ăмăртнă та таврăнман-ха. «Спартак», «Труд» атлечĕсем, вăл шутра Дмитрий Жуковский те, Пржевальскра тренировкăна пуханнă. Ăмăртусенче ăнăçлăн утса тухмашкăн пурте хăйсен ăсталăхне туптаççĕ вĕсем. Пирĕн çĕр-шывра Уравашпа Пайăрка çеç мар, самаях пысăк йыш хатĕрленет иккен Олимп вăййине! Пурте вăй хураççĕ вĕсем, пурте çине тăраççĕ; çакна туйнипе Виктор çарти юлташĕсемпе тупăшма пултарасси пирки кăштах шикленет те, анчах хăйне хăй: «Хăшĕ вăйлине ăмăрту кăтартĕ-ха», – тесе хавхалантарать.

Çӳревçĕсене старта ытти спортсменем пек халăх вăхăтĕнче кăлармаççĕ çав – ку ăмăртура тăхăр сехетпе тапранмалла. Куншăн мĕн хирĕçмелли пур? Инçе çула каяс чух та лашана ирпе кӳлсе тухаççĕ-çке ара. Юратьха, шăрăх мар, çанталăк янкăр уяр пулин те апрель пуçламăшĕнчи хĕвел çунтарса ярасла хĕртмест – утма меллĕ кун пек чухне.

Стартра – çирĕм ытла атлет. Вĕсенчен пурте тенĕ пекех мастерсем. Пистолет шаплатсанах Виктор малтисенчен вĕçерĕнсе юлас мар тесе ума вирхĕнчĕ. Стадионăн пĕр çаврăмĕ тĕлĕнче Клименков тăрать. Аллинче кинокамера унăн, хăй ачисемпе пĕрлех Ураваш уттине те темиçе хутчен ӳкере-ӳкере илчĕ: сăлайри ырă енсемпе кăлтăксене тишкерме кирлĕ çак кадрсем. Тренер пуррине кура Ураваш чĕрине çулăм хыпать. Ушкăн пуçĕнче пĕр çичĕ çын пулĕ пысăк хăвăртлăхпа чавтарать. Ураваш Клименков çине вăл мĕн калать-ха тенĕ пек пăхрĕ: малта пынăшăн мухтать-ши, хурлатьши? Лешĕ чĕнмест. Совет Çарĕн тренерĕ аллинче мар çав халь Виктор. Тренировкине куçпа курман çын спортсмен епле хăвăртлăхпа утса тухма пултарассине те чухлаймĕ. Пĕрремĕш вырăншăн кĕрешмелле пул-

сан Клименков Ураваша малтанах умрипе юнашар пыма, унтан, дистанци вӗҫнелле, мала талпӑнса тухма систернӗ пулӗччӗ. Ураваш чунӗ ҫумра ытлашши пысӑк йыш пулнинех килӗштермест: урана вӑраммӑн пусма кансӗрлекен те тупӑнать кӗпӗрленсе пынӑ чухне, ҫаврӑм тулашнерехе тухса ҫула вӑрӑмлатас та килмест унӑн. Чылайӑшӗсем татӑлса юлнӑ хыҫҫӑн ума Шалимов тухасса кӗтет вӑл. Пиллӗкӗн-улттӑн пӗр чӑмӑртах талпӑнать-ха, вӗсенче пӗри пуҫа вирхӗнсе тухсанах Виктор иккӗмӗш е виҫҫӗмӗш позицие чакма хатӗр. Юлашкинчен Ураваш каплах хытӑ пыма ҫуккине туйса тамалчӗ те пӗр-иккӗшне ирттерме аяккараха пӑрӑнчӗ. ҫакна кӗтнӗ пекех, Украинӑри «Пучах» общество ачи, хура шӑрт пек мӑйӑх ӳстернӗ, ҫӳллех мар ҫамрӑк, Колодочка хушаматлӑскер, чашлаттарса та тухрӗ, ун ҫумӗнчех – Шалимов. Сарӑ ҫӳҫлӗ Юрий чакӑр куҫӗпе умалла вичкӗн пӑхса ӗлӗкхи евӗрлех харсӑррӑн илтерет. Ун хыҫне юлнӑ Ураваш халь аран ӗлкӗрсе пырать.

Чылайӑшне ҫаврӑм чухлӗ ытла хӑварчӗ ҫак ушкӑнри виҫӗ-тӑватӑ спортсмен. Пӗр ҫаврӑм юлнисем шутӗнче Пайӑрка Ҫерккийӗ те пур. Виктор иртнӗ чух Ҫеркей ӑна: «Ан вӗҫерт!» – терӗ чӑвашла, вара ку хӑй те ушкӑн ҫумне ҫыпҫӑнчӗ. Ҫапла темиҫе ҫаврӑм турӗҫ утавҫӑсем. Малтисем вашлаттараҫҫӗ ҫеҫ, чылайӑшне тата тепрер ҫаврӑм хӑварчӗҫ. Утас ҫулӑн ҫурри – 25 ҫаврӑм юлчӗ. Ҫак вӑхӑтра чи вӑйлисем ҫумне ҫыпҫӑннӑ Ҫеркей хӑйне хӗрсе кайнӑн, вӑй илнӗн туйрӗ: ара, уншӑн ҫак 20 километр 50 километра хатӗрленмелли старт ҫеҫ-ҫке, вӑрӑм ҫулра ялан пӗр ҫемӗпе мар, хушӑран хӑвӑртрах кайма та лекӗ, сӑмахран, юлашки вунӑ ҫухрӑмне тин тапраннӑ пек хӑваламалла. Ҫапла шутласа Ҫеркей малтисен умне вирхӗнсе тухрӗ. «Кусенчен тарса-тарса пырсан 400 метрлӑ унка каялла тавӑрма пултаратӑп, малта пулӑп», – шутлать вӑл ӑшӗнче. Ун хыҫҫӑн карт та карт туртӑнса армеецпа Украина ачи халран кайрӗҫ те юлчӗҫ. Пӗр ҫаврӑмне хуса ҫитсен, танлашсан, кайран мӗн тумаллине куҫ курӗ! Финишчен, акӑ, 20, 19, 18 ҫаврӑм

юлать. Çеркей пăрахса хăварма пултаракан ачасем, тӳррипе илсен, малтисем, пĕчченшерĕн тăсăлса кайрĕç. Ураваш хăй юлташĕн хастарлăхне курса тĕлĕнет: çулпа çамрăк мар Пайăрка, пĕвĕпе 165 сантиметр çеçскер, ав епле хĕмленет, тепĕр çамрăк ăмсанса тăтăр çав! Малти выранăшăн кĕрешме вăл та тытăннăран Виктор пушшех хавхаланчĕ, армеецсене пĕтĕмпех хăварас килет унăн.

Клименков Пайăрка уттине те киноаппаратпа ӳкере-ӳкере илет, йĕлтĕрпе хаяр çӳренĕ ача халь стадионра епле пынине тимлĕн сăнать. Пайăркана хăйне сăлайĕ епле иккенне шарлакан çук. Пусăма хаклакан аслă судья стартпа финиш тĕлĕнче уткаласа çӳрет, ăмăртакансем çине пăхмасть те темелле ăна. Çĕркаç киноран таврăннă чухне гостиница умĕнче судьясем тăратчĕç, ресторантан тухнă пулмалла-и, хаваслă хăйсем. «Мана Мускавра судья пулма кăпăр-капăрах чĕнмеççĕ, дистанцирен кăларатăн теççĕ», – мухтанать пĕри. Çӳреве сăнакансер ĕнтĕ ку. Пӳлĕме кĕрсен Çеркей хăй мĕн илтнине Виктора пĕлтерчĕ те: «Пĕлетĕп. Мороз хушаматлăскер вăл. Пĕр ăмăртура çӳревçĕсенчен çуррине хĕрлĕ ялав кăтартнăччĕ», – терĕ Ураваш. Ак халь çав çын стадионри çавра çул айккинче каллĕ-маллĕ уткалать. Çулри атлетсене курмасть те темелле ăна, унтан çĕр метра старт илмелли тĕле пырать те спринтерсен ăмăртвне йĕркелеме пулăшать. Пĕр вăхăтрах икĕ ĕç тăвакан çынран Ураваш кăшт шикленет-ха, Пайăрка, пĕр хĕрсе кайнăскер, йĕлтĕрçĕ йăлипе пушшех иркĕлĕн чавртарать çеç.

– 15 çаврăм юлчĕ, – пĕлтерет ăна çаврăма шутлакан тӳре. Хăйне пĕр ушкăн хăварнăскерсенчен тарса-тарса пырса танлашмаллах чи малтан Çеркейăн! Уравашăн та Шалимова çĕнтермелле, анчах Совет Çарĕн спортсменĕ кăпăр-капăрах юласшăн мар иккен. Виктора хăйне сывлама йывăр, ик ури ун халь чун хистенипе кăна илĕнсе пусăнать. Тепĕр çаврăмра Шалимов хыççăн пыракан Ураваш стадионăн çерем лаптăкĕнче Çеркей тăнине курчĕ. Хĕрӳлленсе калаçать

Мороз судьяпа ун юлташӗ; лешӗ хӗрлӗ ялавпа сулса ун сӑмаххине путлантарать, каланине те итлемест. «Мӗншӗн малтан асӑрхаттармарӑр?» – тет пулас атлет. «Хӑвӑрт вирхӗнсе тухнӑшӑн кӑларса пӑрахрӗҫ куна», – шутласа илчӗ Виктор. Ӑна та ҫулран пӑрасшӑн марши кусем? Тен, Шалимовах малта пултарас тейӗҫ. Тасарах утма тӑрӑшмалла апла. Шалимовсенчен юлас марччӗ-ха, юлма кирлӗ мар... Ҫаврӑм хыҫҫӑн ҫаврӑм, вӗҫекен ҫӗмрен пек ӑнтӑлать ҫар спортсменӗ: сехет те ҫирӗм тӑхӑр минутра утса тухас ӗмӗтлӗ вӑл – Авилов Болгарире кӑтартнӑ вӑхӑтран ирттересшӗн ҫак сарӑ ҫӳҫлӗ ача. Вӑй ҫинчен калама ҫук, вӑй тени тахҫанах пӗтнӗ ӗнтӗ. Таҫта, чун-чӗре тӗпӗнче, упракнакан хӑват туртса пырать ҫынна. Халь-халь тӑсӑлса ӳкес чухне те чӑтать этем. Анчах утас ӗҫре «шӑл ҫыртнипех» ним те тӑваймастӑн – вӑрӑм ҫул вӑя кура ҫынна хӑй вырӑнне лартатех. Акӑ, чун хӑвачӗпе туртӑшса-тӑвӑнса пыракан Ураваш умрин ура кӗли ҫине кӑшт кӑна пусаймарӗ – Шалимовӑн хӗрӳлӗхӗ чакнӑ иккен, аллисем унӑн хулленрех вылянаҫҫӗ, ури кӗскелнӗ. Ураваш та ырнӑ, ӑна та йывӑр. Вӑйӗ чакнӑ ҫынран тӳрех иртмесӗр пӗр хушӑ канарах пычӗ те Виктор юлашкинчен ҫарти тусӗпе танлашрӗ. Иккӗшӗ ҫума-ҫумӑн пыраҫҫӗ халь вӗсем; Юрий шӑлне ҫыртса тенӗ пек чӑтать, Ураваш та ахлатать. Клименков куҫ илмесӗр тӗсет вӗсене, леш судья, хыткан сӑнлӑскер, ҫӗр метра ӑмӑртакансене старт парать. Ура та, шӑм-шак та йывӑрланнӑ хыҫҫӑн чупас тесен те чупаймӑн эсӗ, анчах шиклентерет: тем шут тытӗҫ сана хирӗҫ тӑрас тесессӗн. Ултӑ ҫаврӑм юлсан ҫумри Шалимов Ураваша вӗҫертсе ячӗ. Викторӑн та урасем кӗскелчӗҫ тейӗн, ура тунине тӑхлан шӑратса янӑн туйӑнать. Хура мӑйӑхлӑ украинец, ҫак вӑхӑтра чылай кайра пыраканскер (вӑл чикен чикнипе дистанци варринче умрисенчен юлнӑ), тепӗр хут вӑй пухса тин кӑна стартран тухнӑ пек вашкӑнтарать. Ҫул айккинче тӑракан Ҫеркей (халь вӑл тумланнӑ, пальто тӑхӑннӑ ӗнтӗ) Ураваша:

– Чăт! Колодочка хăвала пуçларĕ! Шалимов та утăма вăрăмлатрĕ! – тесе кăшкăрать. Виктор чĕнмест, хăй кĕлеткине сулланса кайма памасăр хаяррăн чавтарать. «Чăт!» – тет каллех Çеркей. «Чăт» сăмах вырăнлă кунта. «Хытăрах кай! Васка!» – тесе хăй ăмăртса курман çын калать. Спортсмен çăварĕнчен тухакан чăт, тăванăм тени çын чĕрине ытларах витерет: спортра чи йывăрри – йывăрлăха чăтасси, чăтсан çĕнтерĕвĕ пулатех.

Финиш йĕрĕнче Ураваша Клименков кĕтсе илчĕ. Çĕнтерӳçе вăл шап-шăрă тăвар пуснă хул калакки тĕлĕнчен аллипе лăпкаса: «Санпа калаçма пулать – ĕçлерĕн», – тет хĕпĕртӳллĕн. Çынна хаклама урăх нимле сăмах та кирлĕ мар, Виктор Ураваш олимпиец пулассах кĕтет Совет Çарĕн тренерĕ, çын пултарулăхне курма пĕлекенскер.

* * *

Атăлçи ăмăртăвĕ хыççăн тӳрех тенĕ пекех пĕр тăкăрлăкри кил-çурт еннелле утнăччĕ Виктор. Халь, çĕнтерӳ хыççăн, Гришук валли мĕн туянмалла-ши?

К. хулинчи пурнăçăн унта – хăйĕн юртти.

– Пĕр вĕçерĕннĕ кайăк тепре алла лекĕ-ши ĕнтĕ? Вăл хăйĕн тăван еннех туртăнать-çке, – сăмах еккине ярать Евдокия Еремеевна кĕрӳшĕ пирки. – Захар качча илмех шутлать пулсан килĕшмелле мар-и, Надя?

– Уйăрăлсан судпа уйăрăлăр, – вĕрентет Лиза аппăшĕ.

– Виктор ăмăртура пуль халь, çавăнпа сас-хура çук, – тĕшмĕртет Надя.

– Вĕçсĕр-хĕрсĕр ăмăрту унăн! – тулхăрса каять Евдокия Еремеевна. – Ватăлса типсе хăрса ларас тетĕн-и пĕччен? Кайран кама кирлĕ эс?!

– Анне, мĕн калаçан? Çитес Олимп вăййине хăйĕн тесе шутлать те-ха Виктор. Ун хыççăн пăрахĕ-çке ăмăртăвне.

– Пĕр вĕреннине, ĕçке ернĕ çын эрехрен уйăрăлайман пек, час пăрахас çук-ха, – иккĕленет Лиза аппăшĕ. – Тен, Захарпах телейлĕ пулăр, э?

– Ах ĕнтĕ... – алли лăшах усăнать Надьăн. – Викторпа хут уйăрттарнине хураттармах ыйтать те Захарĕ.

– Атя, суда çырса парăпăр. Тен, Виктор та каллĕмаллĕ шутласа пăхĕ вара.

Çакăн хыççăн ĕнтĕ кăштахранах, спортсменсем Нальчикра старта хатĕрленнĕ чух, Виктор ĕçлекен кантура К. хулинчен ăна суда пыма чĕнекен хут пырса выртрĕ.

– Ак мĕншĕн васкавлăн тухса кайнă! Пĕлнĕ вăл хăйĕнчен судпа алимент илмелле тăвассине, çавăнпа тарса çӳрет, – вăрçать спорт комитетĕнче Борис Абрамыч.

– Укçине ачи хăех ярса парать-çке, хĕлле кайса та килчĕ, – хирĕçлет ăна Александра Васильевна.

– «Ачи» сана! Хăй ача ашшĕ пулнă. Халь эпир мĕн тăвăпăр-ха: пирĕнтен «мĕншĕн чарса тăтăр», – тесе ыйтаççĕ.

– Командировкăра тесе пĕлтерĕпĕр, – сĕнет Александра Васильевна.

Абрамыч ку шухăшпа килĕшсех пĕтмесĕр суда чĕнекен хута Ураваш ячĕпе Нальчиках ярса пачĕ.

Акă, çав хут Виктор аллинче.

– Тепĕр сбора юлмасăр манăн та киле таврăнма лекет, – терĕ Виктор киле тапранма пуçтараннă Çеркее.

Пĕтĕм Союзри ăмăртăва хатĕрленес Ураваша Клименков тин кăна тренировкăна епле планламаллине ăнлантарнăччĕ. Çавăнпа хаваслă та пысăк ĕмĕтлĕччĕ Виктор, акă халь самантрах кăмăл хуçăлчĕ, юлташĕшĕн Пайăрка та хыпăнса ӳкрĕ.

– Эс – командировкăра, çавăнпа суда вăхăтра çитменшĕн сана ним те тумаççĕ, – калать вăл ăна.

– Надьăна та, ачана та хур кăтартатăп, – тет Виктор шухăшлăн. – Ăмăртăвне те хатĕрленмеллех тесеттĕм.

– Çăва тухиччен кĕтет. Спортра пĕтĕм ассем тимле-

сех Олимп ваййи умӗн вӑй пухнӑ чух ҫул ҫинче каллӗ-маллӗ ҫӳресе вӑхӑта ан ирттер – ҫак самантра пӗр кун ҫухатма та шел, – ӑнлантарать Ҫеркей. Ӑна хӑйне дистанцирен кӑларса пӑрахнӑран тепӗр стартра пуласси-сен шутне кӗртмен; унӑн килех таврӑнмалла. Виктора умри тӗллев патне пыма ниме пӑхмасӑр талпӑнма сунать вӑл. Ҫурхи кун ҫулталӑк тӑрантарать терӗмӗр-ҫке, ҫурхи кунра анлӑ пусӑва кӑп-кӑпӑшкан «сухаламашкӑн» кӑнӑрти хуласене пухӑнаҫҫӗ те ӗнтӗ спортсменсем. Викторӑн ҫав майран пӑрӑнма лекет-и?

## Вӑтӑр иккӗмӗш сыпӑк

Земфира Вутланова спорт комитетне шӑнкӑравларӗ те:

– Мӗн ҫӗнни пур? – тесе ыйтрӗ.

– Ҫӗнни? Ҫӗнни, мухтанмалли, нимех те ҫук, – тавӑрчӗ Борис Абрамыч.

– Ҫӳревҫӗсем епле ӑмӑртнӑ-ши? – пӗлесшӗн журналистка.

– Тепӗр хатӗрленӗве юлнӑ, – пӗлтерчӗ Абрамыч сӳрӗккӗн.

– Иккӗшӗ те-и?

– Ураваш пирки калатӑп. Ҫыннин К. хулине суда ҫитмелле – ун ҫинчен шутламасть те пулас, чунсӑр этем пуль вӑл, – тет председатель заместителӗ.

Земфира урӑх калаҫмасӑр трубкӑна хучӗ. Спорт хаҫачӗ унран «Олимп ҫулӗ – олимпиецсемшӗн ҫеҫ мар» темӑпа статья ҫырса ямашкӑн ыйтнӑччӗ, ҫавӑнпа журналисткӑн заводри физкультура коллективне ҫитсен лайӑхчӗ. Виктор таврӑннӑ пулсан ку тӗлӗшпе вӑл та пулӑшма пултаратчӗ, халӗ Абрамыч тӳркессӗн калаҫрӗ те, урӑх нимӗн ҫинчен те ыйтасси килмерӗ. Юрӗ ӗнтӗ, хӑйне кирлине Вутланова пӗчченех пӗлме тӑрӑшӗ.

Ака уйăхĕн малтанхи эрнинчи çанталăк Атăлăн вăта тăрăхĕнче тĕнче пĕтнĕ пек тăрать, иккĕмĕш кун ĕнтĕ пĕр чарăнмасăр çумăр çăвать. Асфальт тăрăх анаталла йăрлаттарса шыв юхать, тӳремре çап-çутă кӳлленчĕк таçтан-таçтан сарăлать. Пушмакпа çӳреме ан та шутла! Çынсем – резина атăсемпе, ботăсемпе, сунчăксемпе. Хуллен утакан та çук; çын пĕр çуртран тухса теприне хăвăртрах çитме васкать, автобус-троллейбус еннелле чупать. Машинăсем шыва сирпĕтсе иртеççĕ, троллейбуссем чарăнсан урапипе кӳлепи тăрăх, витререн сапса çунă пек, шыв юхать. Троллейбусĕсенче шалта йĕп-йĕпе те çап-çурă плащлă пассажирсем, «фу», ку çанталăкра» – тесе, пĕр-пĕрне тĕртĕнме-сĕртĕнме хăраса малалла иртеççĕ, йĕпе аллисемпе билет илме вак укçа кăлараççĕ. Кондуктор хура спецовка айĕн фуфайка тăхăннă, уринче – калушлă çăматă: хĕллехи сивĕ чухнехилле тумланнă вăл.

Çын васкать, çын ĕçе кать, çын ĕçпе çӳрет. Çумăр чарăнмасăр шарлаттарса тăни хула çыннине, тĕпрен илсен, ĕç тума чăрмантармасть. Земфира асфальт тăрăх йăлт-йăлт чупса троллейбус тăракан вырăна çитрĕ те машина алăкĕ уçăлсанах унта васкавлăн кĕчĕ. Станци енчен килекен троллейбус ытлашши туллиех мар. Ларчăксем çумĕпе хĕр малалла иртрĕ. Акă, пĕр çын йĕпеннĕ çĕлĕкпе, пальтопа ларать, аллинче – симĕс кутамкка. Палланă пек туйăнать Земфирăна çак çын. Хĕр ăна умарах иртсе пăхрĕ те:

– Çеркей тем, – терĕ лăпкăн.

– Земфира-çке! – хавасланчĕ Пайăрка та кăнтăрти хуларан тин çитнĕскер.

Кăмăлĕ кунăн мухтанмаллах мар-ха. Киле вăл шкул ачисен çурхи каникулĕ вăхăтĕнче çитетĕп тесе ĕмĕтленнĕччĕ, сарă хĕвеллĕ кун пуласса шаннăччĕ, ялта та тренировка ирттерме май килĕ тесе шутланăччĕ. Кур халь ав – çумăр епле тăкать. Çӳревçĕшĕн хăçан çул пулĕ?! Хулара татах-ха, унта спорт залĕсем пур, асфальчĕ те çăрăлмасть. Ялта халь пылчăк – ăçта

унта спорт мелӗпе утма! Шупашкарӗнчен киле мӗнле ҫитмелле-ши? Самолет вӗҫмест, машинӑсене ҫӳреме ҫул чарнӑ. Ҫак йывӑр шухӑшсемпе пыракан ҫынна Земфирӑна курсан чун кӗчӗ.

– Виктортан салам, – терӗ вӑл ӑна кӑмӑллӑн.

– Епле ӑмӑртрӑр? – пӗлесшӗн Вутланова, шыв яман ҫутӑ плащ тӑхӑнӑскер.

– Виктор пӗрремӗш пулчӗ, мана ӑмӑртуран кӑларчӗҫ, – кӗскен те кирлине пӗлтерчӗ Ҫеркей.

– Кӑтартӑвӗ епле?

– Ҫирӗм ҫухрӑма сехет те вӑтӑр минутра тухрӗ.

– Лайӑх.

Сисмен те, спорткомитет тӗлне ҫитнӗ – анмалла.

– Эсир ӑҫта? Комитета пымастӑр-и?

– Унта кайрантарах кӗретӗп, – терӗ хӑй мӗн пӗлес тенине пӗлнӗ корреспондентка. – Халь завода ҫитесшӗнха, каҫхине спортзалта пулатӑп.

Комитетра Борис Абрамыч Ҫеркей умӗнче хӑй юрринех юрларӗ.

– Ыйтмасӑрах кайнӑ вӗт-ха вӑл. Пӑрахнӑ та кайнӑ, – сӑмахлать ҫак Виктор пирки. – Эсӗ ун пекех ыйтмасӑр тухнӑ-и?

– Эпӗ ҫула тапраниччен роно управляющи пӳлӗмӗнче иккӗ пулнӑ, директорпа шучӗ ҫук калаҫнӑ. «Кайса кил», – терӗҫ вара юлашкинчен», – лӑпкӑн та ҫирӗппӗн ӑнланарчӗ Ҫеркей.

– Вӑт-вӑт... А, пирӗн Ураваш нимле яваплӑха та туйман, – тет Абрамыч хӑй тӗрӗс каланӑ пек палӑртса.

Александра Васильевна ӑмӑрту епле иртни ҫинчен ыйтать.

– Кулянать-ха вӑл; таврӑнсан ӑҫта пурӑнассине те пӗлмест, – тет Ҫеркей хӑй килӗштернӗ юлташӗ пирки.

– Ӑна койка кӗтет. Урӑх общежитире вырӑн уйӑртӑмӑр ун валли, – пӗлтерет Александра Васильевна. – Профсоюз енчен кӑштах пулӑшу та парӑпӑр. Арӑмӗ суда чӗнсен командировкӑра тесе хыпарларӑмӑр. Ҫыру яр эс ун патне, кулянма кирлӗ мар, Пӗтӗм Союзри ӑмӑртура та ӳсӗм тума тӑрӑштӑр.

Александра Васильевна пек йĕркеллĕ те вашават çынсем сахал çав вĕсем. Унăн çынна сума суса калаçнă чух сассиех чуна вăй парса шанчăк кӳрет. Ан тив, профсоюзăн вырăнти комитечĕн пулăшăвĕ çирĕм е вăтăр тенкĕ кăна пултăр, пĕтнĕ япаласен хисепĕ вăл хакран темиçе хут ытларах пултăр – çав пулăшу – пулăшăвах, укçи те, çынна ыр тунă кăмăлĕ те! Сив сăмахпа тĕртсен тытнă япла та аларан ӳкĕ, ырă сунсан сахалли те нумая тăсăлать.

* * *

Нальчикри хăна çурчĕ умĕнчи хыçлă сак çинче Виктор, ăмăрту хыççăн ывăнса халран кайнăскер, аллисене карлăк тăрăх саркаланă та ним çинчен шухăшламасăр ирĕклĕн сывласа ларать. Çеркей та, армеецсем те кунтан канйнă хыççăн кичем ăна. Çӳревçĕсенчен тăр пĕчченех халь вăл. Леш украинец та, командăна кĕртнĕскер, килте лайăхрах хатĕрленетĕп тесе пуçтарăнса кайрĕ.

– Дяденька, позолоти руку, скажу пара слов, – тенине илтрĕ Ураваш. Ун умĕнче чикан хĕрĕ тăрать иккен.

– Хăвна хам калама пултаратăп, – типпĕн çăвар уçрĕ Виктор хăйне чăрмантараканпа калаçас килменрен.

– Инкеклĕ эсĕ: сан çулу çинче йывăрлăхсем пур, – пĕрре вĕреннĕ сăмахсене сапрĕ чикан майри. – Пилĕк пус ан хĕрхен, пĕтĕмпех калатăп.

– Хам шăпашăн эп – хам юмăç, – пăхасшăн пулмарĕ ун çине Виктор.

– Ывăлăма пар, эппин, пилĕк пус, ташласа кăтартать вăл сана.

Хуп-хура сăнлă чикан ачи, пилĕк-ултă çулхискер, куçĕпе чăлтăр-чăлтăр пăхса амăшĕ умĕнче тăрать. Амăшĕ те çамрăкскер-ха, сăнран хăйне ача çулĕсенче темелле, çирĕм-çирĕм иккĕсенче пулĕ ĕнтĕ.

– Ну, малыш, давай спляши! – илтĕнчĕ çак вăхăтрах çумра арçын сасси. Кунта пĕр çамрăк пырса тăнă-мĕн.

Хураскер хăй, африканец сăнлăскер, анчах калаҫнинчен вăл Украина енче ҫуралса ӳснĕ вырăс ҫынни иккенне пĕлетĕн.

– Ташла, – терĕ вăл ачана; хăй кулать, куҫĕ хаваслăн вылять. – ӳссен кам пулатăн-ха?

– Шохер.

– Ашшĕ пек пулать вăл, ашшĕ шофер унăн, – сăмах хушать амăшĕ те. Ҫак вăхăтрах ку майра арҫын ҫумне ларчĕ, хĕвĕнчен-и, таҫтан, кивелсе тĕссĕрленнĕ карт туртса кăларчĕ те карт пăрахать.

– Юмăç пăхатăп, малашне мĕн пулассине калатăп, – тăкăлтатать шавах карта пĕрерĕн уҫа-уҫа саркаланă май.

– Эп хамах ҫурма чикан, – кулать ҫамрăк ҫын. Вăл ҫак хĕрарăм епле ăшталаннине килен̆ӳллĕн пăхса савăнать, ачана тепре ташлаттарса кĕсйинче вакки пулманнипе пĕр тенкĕлĕх хут тыттарать.

Чикан ачипе амăшĕ пăрăнса кайсан хайхи хаваслă яш Виктор ҫумнерех siksse ларчĕ те:

– Атя ресторана, пĕр ҫĕршер грамм ĕҫетпĕр, юрăкĕвĕ итлетпĕр, – терĕ ыр кăмăлĕпе. – Ну, каларăн – укҫа ҫук! Ман пур. Ҫĕршер грамм илетпĕр.

– Ҫук, – ал сулать Виктор, – манăн пысăк старта хатĕрленмелле.

– Пĕлетĕп. Куртăм эп сана. Чемпиона ыр кăмăлпа хăна тăвам.

Ку вăхăтра гостиница алăкĕ умне ăмăртура пĕрле пулнă ҫамрăк тухрĕ те Виктора фойене кĕме чĕнчĕ.

– Пирĕн халь пуху пулать, – тесе тăрса утрĕ Ураваш.

Вунă сехетре Виктор тренировкăна тухса кайрĕ. Кросс чупма шутларĕ вăл. Сехет ҫурă-икĕ сехет чупнă хыççăн мунча кĕрсе вирлĕн ҫапăнмалла. Вара, тепĕр кун канса илсен, тренировкăн ҫĕнĕ ярăмĕ пуҫланать.

Пĕрле пурăнакан юлташ халь – тапчам кĕлеткеллĕ дискобол, Латви ҫынни.

– Э-э, Юлдымаа! – тет вăл Ураваша, хăй ентешĕпе

танлаштарса. – Çухрăм шутне ӳстерес тетĕн-и? Атя, карлаттар. Манăн çак «çӳхĕве» вăркăнтармалла.

Йĕтре ывăтаканăн йăли-йĕрки хăйĕн çав. Вăл, ав, вырăн çинче выртнă çĕртех хĕвел пичĕ пек диска алăра вылянтарса айхашать. Унтан ăна хучĕ те кравать айĕнчен пĕр мăшăр йывăр кантель илчĕ – çавна çĕкле-çĕкле хул «шăшине» каллĕ-маллĕ чуптарать.

– Асту, çамку çине ӳкеретĕн ак.

– Ӳкернĕ тет. Стадиона кайиччен шăм-шак вăрантăр.

Чуппи чупакансемпе ермешесшĕнччĕ Виктор, çавсене кĕтсех ĕнер кун çухалчĕ – вĕсем ирхине чупатпăр терĕç, унтан каçа хăварчĕç, каç кӳлĕм каллех унта-кунта саланнă, кайран лешсем тренировкăна мĕн вăхăра тухса кайнине Виктор сиссе те юлаймарĕ. Пĕчченех çӳреме лекет Уравашăн.

Вăл хула тулашне тухрĕ. Кăнтăр-çурçĕр хăш енчи ăша çаплах тĕрĕс кĕрсе вырнаçаймасть-ха, çурçĕр ен кăнтăр пек, кăнтăр ен çурçĕр пек туйăнать ăна. Çĕнĕ вырăна хăнăхсах çитейменрен килет ку.

Хула çумĕпе Нальчик шывĕ юхса выртать. Шывĕ сахал, ытларах типпе юлнă çырма сарăлать, унта тем тĕрлĕ пысăкăш чул та йăваланса выртать. Юхан шыв урлă тĕл-тĕл пысăк чул çине пусса урана пĕр йĕпетмесĕрех каçма пулать. Ик-виç çĕрте пусма пек кĕпер хывнă. Виктор хальхинче «Эльбрус» ресторан патĕнчи каçăпа тухрĕ те асфальт çулпа юртрĕ. Унтан лесник çурчĕн анкартийĕ хĕррипе иртсе пысăк сад çумĕпе пăрăнчĕ, кресмоллă канат çулне аякка хăварса ту еннелле вăшкăртрĕ.

Çанталăк тĕтреллĕ, хушшăн-хушшăн виç утăмри йывăçа та кураймастăн. Ку çулпа çӳремен мар-ха Ураваш, Пайăркапа пĕрле тăваттă килнĕ.

Урапа çулĕ ту хырçи тăрăх çӳлтен çӳле хăпарать. Иртĕ кĕр тăкăннă çулçă, пирченнĕскер, çула кавир пек хупланă. Нӳрĕ халь вăл, такам шывпах çуса кайнă темелле. Ун çийĕн, тин иртнĕ пек, куса тăран йĕрĕ палăрать. Ку çулпа йывăç та, утă та турттарса аннă

пуль вăрманпа хупланнă ту тăрринчен çулла, кĕркунне е халь çинерех те-и?

Вăрманĕ – çирĕклĕх. Унтах шĕшкĕ, уй улмуççи, палан йывăççи хутшăнса кайнă; вĕренепе каврăç, хурăнпа çăка сайра кăна тĕл пулать. Çирĕкĕ чăваш ăвăсĕ пек çӳллĕ те шултра.

Лап-лап, лап-лап, хуллен васкамасăр чупать Виктор ту çинелле, çӳлтен çӳле хăпарчĕ вăл. Çул сывлăш çавăрса илмелĕх кăштах тайлăкланать те, тăвалла хăпарас ен каллех чăнкăланать. Тĕтре тĕл-тĕл питĕ çăра, тĕл-тĕл уçăрах. Виктор сехетне пăхса илчĕ. Тăвалла пĕр сехет чуупса хăпарсан анаталла вăтăр- вăтăр пилĕк минутсенче анса çитнĕччĕ вĕсем Пайăркапа килессĕн. Акă, Виктор халь Сарай-ту хырçине улăхрĕ. Кунта çеремлĕ уçă вырăнта утă куписем лараççĕ, конус евĕрлĕ тăвăн леш енче сурăх кĕтĕвĕ çӳрет. Хулăн çăмлă шултра сурăхсене хăратас мар тесе Виктор аяккарахран çавăрăнчĕ. Унтан вăл хăй сисмесĕрех анаталла хăвăрт анчĕ – ту тĕпнелле сулăнчĕ ĕнтĕ. Пăхать – умри йывăç хушшинче пĕр хĕрарăм ларать. Шăп, хускалмасть те. Тунката-и? Çынах-и? Çынах! Карчăк куна асăрхаса аллипе юнарĕ: шăп пул! Виктор çывăхах çитсен вăл çырманалла кăтартса:

– Курăр-ха, курăр... – терĕ хуллен.

Çырмана, йăлтăртатса ыртакан шыв кӳлленчĕкĕ патне, кивĕ çулçăпа хупланнă айлăма, сайра йывăççсем хушшипе пĕр чĕр чун анать иккен. Хураскер, шăртлăшăртлĕ, тутти патĕче шурă асав шăл курăнать.

– Хир сысни, – терĕ кинеми савăнăçлăн. Унтан, пĕчĕк ача пек, шăл витĕр шик! шăхăрчĕ те, хир сысни тăп тăчĕ – итлет; карчăк ăна йăл кулса сăнать; çавăнтах вăл тепре шăхăрчĕ те, тискер кайăк ту çинелле васкавлăн чавтарчĕ çеç. «Э-эх, ха!» – хыçран кăшкăрать кинеми. Вăрманта хăй хуçа çӳрекен чĕр чун тĕмсем хушшинче çухалчĕ.

Карчăк кунта ыхрути пухма килнĕ-мĕн.

Виктор тăвалла чуптарчĕ те кĕçех хăй малтан

хăпарнă çул çине тухрĕ. Утă куписем ларакан уçлăхпа иртрĕ çеç вăл, умран  çул урлă талт! талт! сиксе икĕ чĕр чун каçрĕ. Хăйсем пысăккă, урисем чăнккам, мăйракисем çӳлелле мăнаçлăн авăнса тăраççĕ. Ту качакисем пулчĕç çаксем. Пĕри, кăшт пысăкраххи, – малта, тепри, лутрараххи, малтипе çумăн кăшт хыçарах пырать – амипе таки пĕр мăшăр ĕнтĕ. Викторăн вĕсене лайăхрах курасси килчĕ, çавăнпа çулран пăрăнчĕ те вăл ирĕкри чĕр чунсем хыççăн чупрĕ, чăнкă сăртран аялалла-аялалла анса пычĕ, анчах качакасене кураймарĕ, çанталăк тĕтреллĕрен çывăхри япала та часах куçран вĕçерĕнет. Виктор хăй аннă çĕртен аяккалла пăрăнчĕ те чĕрне йĕрĕсем курăнмаççĕ-и тесе çĕре куçлать; çĕнĕ йĕр тĕлне лекеймерĕ вăл. Çырмана чылай аннă çыннăн ту хырçинелле каялла хăпарасси килмерĕ, вăл вара кил еннелле тӳртен тухма шутларĕ. Акă, Ураваш пĕр пĕчĕк çырмапа çурхи çăра шыв шăнкăртатса-йăрласа юхакан ту çурăкĕпе ăçта май килнĕ çавăнта пусса чупать. Шыв юххи айăккипе пыма тĕмсемпе йывăç тымарĕ-мĕнĕ кансĕрлет, шывĕ тăрăх та чупма çук, кунта та тĕмсем, шыв сиккипе алтăкланнă вырăнсем чăрмантараççĕ. Тӳпемех хăпармалла пуль. Авă, тӳпе, унтан канат çулĕ те, тен, хула та курăнĕç; унта, тен, тĕтре сирĕлнĕ. Чăнкă вырăнсенче йывăç тымарĕсенчен тытса, хушшăн-хушшăн чĕввĕн тăрса хăпара-хăпара пычĕ Виктор. Хăпарать те – каллех паçăрхи урапа çулĕ çук, каллех тӳпем пĕтет, аялалла анмалла пулать, унтан тепĕр сопка пекки черетленет – çапла ту хумĕн вĕçĕ-хĕрри те çук. Кил еннеллех тесе чупать-ха Виктор. Ту çурçĕрте пулсан ун кăнтăралла, туран аналла анмалла. Чупма тухнă çын чупать. Юлашкинчен ту çине улăхса çул тупас шанчăк çухалчĕ те, шыв юххипе çырма тăрăх анма шутларĕ вăл: тен, çырма Хасанья ялне илсе тухать; унтан вара Нальчик инçе мар.

Улмуççисем айĕнче – шап-шурă е сап-сарă уй улми выртать. Çĕрни те, çĕрменни те пур нӳрĕ çулçă çинче. çын, самаях выçнăскер, улмана суйла-суйла çиет.

Çырма вăрман хĕрне илсе кăларчĕ те, кунта сад пуçланчĕ. Кăштахран нумай çул ӳсекен курăк акнă уй, унтан кĕрхи калча тăрăхĕ выртрĕ. Уй урлах чупать Виктор. Умра пар лаша кӳлнĕ лав куранчĕ. Лавçăран çул ыйтнă чух вăхăт кăнтăр иртни виçĕ сехетчĕ. Вольный Аултан та чылай аякка çитсе тухнă иккен çул çухатнă çын. «Нальчикский» совхозăн çĕрĕсем кусем. Хула самай инçене пăрăнса юлнă.

Шоссепе ачасен ушкăнĕ пырать, аслăрах классенче вĕренекен шкул ачисем вăрмана килнĕ пулмалла та халĕ таврăнаççĕ. Ик-виç хĕр ача аллинче – сапакан пуçтарса тытнă хĕп-хĕрлĕ палан. Çĕтсе çӳресе халран кайнă Виктор пĕринчен çак йӳçĕ çимĕçе ыйтса илчĕ; чĕре сыпăнчĕ те, ăна каллех вăй кĕнĕ пек пулчĕ.

Гостиницăна пилĕк сехетпе таврăнчĕ вăл, çи-пуçа аран улăштарса тăхăнчĕ те, сулăнса каяс пек хал пĕтнĕскер, апата уттарчĕ.

Çичĕ сехет ытла кросс чупнă хыççăн тепĕр кунне Виктор, мунчара пулнисĕр пуçне, пӳртрен тухмарĕ. Пуçа тĕрлĕ шухăш пырса кĕрет: хир сыснисемпе ту качакисем, ав, куç умĕнчех пек, сухан çеçки евĕр чăшăл тухнă симĕс ыхрути... Юр айĕнчи çулçă çинче хĕл каçнă вăрман улми, хĕмлĕ палан... Хăй мĕн-мĕн курни çинчен такама каласа парас килет Викторăн.

Чикан ачи, сăмала пек хура куçлăскер, чăл-чăл пăхатчĕ. Хăна çурчĕ умĕнчех мар-ши вăл? Ăна каласа парасчĕ. Путлĕн калаçмарĕ çав, хăйне сивлек тытрĕ вĕсемпе Ураваш. Пĕри, ав, çавсемпе айхашса савăнчĕ. Итлеме пĕлекен, калаçма юратакан ача пултăрччĕ. Ача-и? Хăйĕн Гриши К. хулинче çав унăн.

Чăнкăр! тăр-тăр!.. чăнкăртатрĕ телефон. Кунта часчасах йăнăшпа чăрмантарни пулкалать.

– Алло, Таньăчкăна чĕнĕр-ха? – илтĕнчĕ трубкăна тытсассăнах. Такамăн çынпа паллашмалли паролĕ пулчĕ ĕнтĕ ку.

– Эсир пултăр-и каллех? – терĕ Виктор ĕнер илтнĕ сасса палласа.

– Сирĕн пата лекрĕм-и татах? Ну, епле ăмăртрăр?

Ак халĕ кайрĕ ĕнтĕ калаçу, кăшт çепĕççĕн сăмах чĕн çеç.

– Кам пирки эсир? Такам кирлĕччĕ пулмалла сире? – тет Виктор сивлеккĕн.

Хĕр хăйпе ăшшăн калаçманнине туйрĕ те çийĕнчех лăпланчĕ, вара трубкăра гудок çеç вăрăммăн илтĕне пуçларĕ.

– Темле палламан хĕрсемпе телефонпа пакăлтат, – терĕ те Виктор, темрен хăтăлнă пек, лăштах сывласа ячĕ. Пит ĕçес килнипе ăш хыпать хăйĕн.

Каçхи вăхăт саккăр çитнĕ: Виктор апат талонĕ илсе ресторана уттарчĕ.

## Вăтăр виççĕмĕш сыпăк

Çак уйăхăн вĕçĕнче, тĕплĕнрех каласан апрелĕн вăтăрмĕшĕнче, Сочире пулакан Пĕтĕм Союзри ăмăртăва Герман Савельев хăй вĕрентекен ытти ачасене те хутшăнтарма шутлать. Ку ыйтупа вăл спорт комитечĕн председателĕпе ик-виçĕ хут калаçрĕ. Анчах ăçта унта! Яма шутламаççĕ те. Акă халĕ те вăл спорт пуçлăхĕсене тапăнать.

– Ку ăмăртăва хутшăнассине эпир плана кĕртмен, çавăнпа укçа тăккаламастпăр, – тет Борис Абрамыч. – Сире валли хамăр патрах ăмăрту çителĕклĕ – майăн тăххăрмĕшĕнче Апашран Шупашкара çити утса тухма хатĕрленĕр.

– Унта таврăнма ĕлкĕретпĕр, – тет Савельев кăшт та чакма шутламасăр.

– Чĕнмен çĕре кайма кирлĕ мар, – чĕрре кĕмесĕрех лăплантарасшăн Абрамыч.

– Кирлĕ! Пысăк судьясен куçĕ умĕнче ăмăртни кирлĕ, – хăй шухăшĕ çинче тăрать Герман Савельч.

Çынни ку часах парăнакан йышши мар-ха, Сыромятин пӳлĕмне те вăл иккĕ кĕрсе тухрĕ.

– Йыхрав пулсан шухăшласа пăхăпăр, унсăрăн ямастпăр, – татăклăн каларĕ комтет председателĕ.

– Йыхравĕ пулать, – ĕнентерет Савельев. – Клименкова пĕлтерем çеç.

Çӳревçĕсен ушкăнĕ ăмăртăва каяс ĕмĕтпе хытах çунатланать. Ак халĕ те вĕсем спорт çурчĕн залĕнче черетлĕ тренировкăна пухăнчĕç. Зал пушанайман-ха. Кунта техникумсемпе училищĕсем хушшинче баскетбол турнирĕ пырать, пуçăннă тĕл пулу вĕçленеймен-ха. Канаш спортсменĕсемпе Шупашкарти пĕр техникум команди тин иккĕмĕш тайма тухрĕç. Куракансен йышĕнче семинара килнĕ районти спорт активĕ те пур. План тăрăх вĕсене çак турнира та кăтартаççĕ. Çав йышра Шертанов король пек çӳрет. Вăл залра пĕрре Канаш командин тренерĕ патне, тепре судья секретарĕ патне пырать те вĕсемпе тем калаçса илет. Пĕр çĕрте тĕпленмест хăй, вырăнтан вырăна çитет. Канаш командинче пĕр çӳллĕ илемлĕ хĕр пур, хитре вылять вăл. Ыттисем тайăнрах, ăсталăхĕсем те ытлах мар, çавăнпа мечĕке карçынкка́на пăрахас самантсенче щит айне çав хĕре пыртараççĕ; лешĕ, команда капитанĕ, мĕнле пулмаллине хăй те час-часах вĕрентсе калать. Судья сисмен-туман хушăра Шертанов çав хĕре: «Каялла ывăт, маларах тух, кунта...» – тесе кăтартса тăрать. Мечĕк карçынкка́на лексен Николай ăна: «Лайăх! Сакăр очко малта халь эсир», – тесе пĕлтерет. Мечĕк очко кӳрсе чĕнтĕр витĕр тухнă чух баскетболистка та куçне çутăлтарса никам çине те мар, Шертанов çине пăхать. «Маттур, Галя!» – аллине çĕклет Николай ăна хирĕç.

– Ку санăн миçемĕш Галя-ха?» – ыйтать унран «Пучах» обществăра ĕçлекен Миронов, Шертановран кăшт çӳллĕрехскер, сарă çын. Николай ăна тин асăрханă пек пăхать те пуç пӳрнине кăтартса:

– Ку хĕр ачи – во! – тет кăмăллăн та мăнаçлăн.

– Ну-и ну, Шертанов! Хĕрсем сан – ура айĕнчи мечĕк

пекех, – шӳтлерӗ Герман Савельч та ҫавӑнтах. – Футболист мечӗк хӑваланӑ пек, кирек хӑш вӑхӑтра та хӗрпе юнашар эсӗ. Асту: Уравашпа Пайӑрка сана ӑмӑртура куҫ курми пӑрахса хӑвараççӗ-ха.

Ҫав ҫӳревҫӗсен ятне асӑнни Шертанов чӗрине йӗппе тирнӗ пек йӑштах сиктечӗ.

– Эп тытӑннӑ халь, ик уйӑхра формӑна кӗретӗп! – пӳлчӗ вӑл ҫирӗппӗн.

– Сана кӑҫал Веня та ҫӗнтеретӗп тет-ха, – ӑна юри вӗчӗрхентересшӗн сӑмаха ҫивӗчлетет Герман Савельч.

– Малтан ҫӗнтертӗр – кайран калатӑр, – тарӑхса кайрӗ Николай. – Сӑмаха персе яма пулать ӑна – малтан ҫынна ӑс кӗртсе пӑхчӑр, кайран калаҫчӑр. Ак, ҫав Мироновсем мана Нальчика ямарӗҫ. Мускавпа калаҫаймарӑм – тренер чӗнентчӗ мана!

Тӗрлӗ хусканусемпе тӗрмешнӗ хыҫҫӑн атлетсем тар кӑлара пуҫларӑҫ.

Герман Савельча час-часах Викторпа Ҫеркей аса килет. Пайӑрка пӗркун яла почта машинипе ларса кайрӗ, халӗ пылчӑк ӑшӗнче тренеровка тӑваймасӑр тертленет пуль. Ӑна ҫак семинара та пулин хутшӑнтармалла пулнӑ; ялти спорт инструкторӗсене пухнӑ-ҫке-ха. Ярӗҫ сана кӑпӑр-капӑрах! Шертанов техникумран килнӗ ав. Викторӑн Нальчикри ҫӗнӗ йышӗ еплерех-ши?

Кӗҫӗн Савельев ывӑнтӑм тесе утма пӑрахрӗ.

– Викторпа Ҫеркей эрнесерен 160–180-шар километр утнӑ. Эсӗ лайӑххӑн тар тухичченех нӑйкӑшма пуҫларӑн! – хӑтӑрать ӑна пиччӗшӗ.

– Тарламан унта – акӑ майка та йӗп-йӗпе, эсӗ чӗрӗллех вӗлересшӗн.

– Вилсе ан кай! Йывӑрлӑха чӑтас пулать. Тренировкӑсӑр нимӗн те килмест, ачасем, хӑнӑхӑр.

Залра, ирӗкри пек, ҫил ҫук, ҫавӑнпа кунта тарланӑ хыҫҫӑн часах типейместӗн. Ачасем, ав, майкисене хывнӑ та тарланипе шывран тин чӑмса тухнӑ пек курӑнаççӗ.

Кӑштах канса илнӗ самантра Савельев каллех Виктора асӑнать:

– Пĕр хушă унăн юлташĕсм эрех енне туртăннăскерсем пулнă. Ун çулне çав картласа тăнă, атту вăл тахçанах çĕр-шыв комадинче пулмаллискерччĕ.

– Çутти енне тепре ярăнсан апат талонĕсене ĕçсе ярать, ак, вăл, – шаплаттарса хурать Шертанов.

– Пурте Çĕрпӳ ачи мар çав, Николай, ав, хăйне тытма пĕлет, – йĕкĕлтесе сăмах вылятать Веня Савельев.

Хăйне мухтанине Шертанов юрататъ те тăрăхланине кăпăр-капăрах тавçăрса илеймест.

– Мастер пуличчен эп çур литр эрех мĕн хак тăнине пĕлмен, – тет вăл мăнаçлăн.

– Илтрĕр-и? – асăрхаттарать çамрăксене тренер.

Кăштах калаçса сывлăш çавăрнă хыççăн утавçăсем каллех йăшт-йăшт утăпа зал тавра çавăрăнма пуçларĕç.

Залăн леш пуçĕнче, хулăм мат çинче, икĕ хĕр сикесике тӳплетет, кашта урлашка пĕр ӳкет те çĕкленет. Çӳревçĕсен уттине асăрхаса Земфира та Виктор çинчен шутлать: Çеркейран юлнă хыççăн ун ентешĕ тренировка йĕркине тытса пырайĕ-ши?

* * *

«Нальчик» ресторан, дачăри пек, йывăç ăшĕнче ларать, урампа пынă чух ăна асăрхамасăр иртсе кайма та пулать. Залра виçĕ салон, кашнинче темиçе рет сĕтел. Хывăнса алăкран кĕрсенех куçа тĕпел енче оркестр курăнчĕ.

Пĕр хĕр, тăп-тăпăлкка кĕлеткеллĕ те илемлĕскер, аллине микрофон тытнă та юрă юрлать. Ун кĕвви майăн залра пĕр-ик мăшăр ташлать. Килнĕ çыннăн юрра итленĕçемĕн итлес килет. Çапла ним хускалмасăр ларнă май Виктор куçĕ умне пĕрре Надя, тепре Земфира сăнарĕ туха-туха тăрать. Иккĕшĕнчен пĕрин патне пырса юнашар ларас килет унăн. Музыкантсем вырнаçнă авансценăпа зал хушши пăхма çывăх та патне пымашкăн инçе пек-и, çавăн евĕр хушă уйăрса тăнăн туйăнать Виктора хăй ăшĕнчи сăнартан пĕрин патне çитмешкĕн.

Юрăçă тепĕр кĕвĕ шăрантарчĕ те, музăкçăсем пурте хăйсен вырăнĕсенчен анчĕç. Унта халь тулли пӳсийлĕ ватăрах хĕрарăм купăспа тухса ларчĕ. Вара часах пин-пин шăнкăрав пек, йыхравлăн, чĕнӳллĕн янăраса кайрĕ хромка сасси. Викторăн купăса хăй аллине илсе, ялти пек, уяв чухнехилле тăсас кăмăл çĕкленчĕ. Салтака кайиччен ярмăрккăра епле çӳренĕччĕ вĕсем – ял ачисем; епле мăнаç пыратчĕ Виктор, куçĕпе вăл такама шыратчĕ, шыратчĕ çав...

Ыйтса илсе туртса ярасчĕ хут купăса. Анчах ăçта унта! Епле хаяр калать хĕрарăм! Унпа ăмăртас тесе намăс курма-и?

Хромкăн чĕнӳ-йыхравĕ пĕр-ик çаврăм янрасан апат сĕтелĕсем хушшинчен кабарда çамрăкĕсем хускалчĕç... Тем хушăра, ял урамĕнчи пек, ташă карти пулчĕ тăчĕ. Викторăн та пĕр çĕр грамм хурса ура хуçса илтермшкĕн сиксе тухмалла мар-и? Ăста ташлакан çынна ун пек чух мухтаканĕ-ырлаканĕ те тупăнать. Анчах Викторăн халь ку енпе маттур пулмалла мар-ха, çак хулана вăл ĕçсе савăнас ĕмĕтпе килмен.

Виктора официантка апат хыççăн чей илсе килсе пачĕ те:

– Çи, ывăлăм, – терĕ кăмăллăн, вара çавăнтах ку та ик хул пуççине ташланă чухнехилле хускатса илчĕ.

Кăштахран вăл Виктор патне тепре пычĕ те:

– Шутлар-и? – терĕ. Унтан шут шăрçине шăкăртаттарса мĕн чухлĕ тӳлемеллине пĕлтерчĕ: – Пĕр тенкĕ те çирĕм пус!

Шăпах кăнтăр апачĕ чухлĕ. Виктор ик кунхи талонран пĕрне чĕрсе пачĕ.

Ту çинчи вăрманта çĕтсе кайса кун каçа чупкăн чупнă çын ресторантан тухсан урампа пынă чух хăйне çăмăл туйрĕ – юрă итлесе те ташă курса пĕтĕм ывăнни иртнĕ.

Атлет таврăннă тĕле хăна çурчĕн иккĕмĕш хутĕнче спортсменсене пĕр çĕре пуçтарнă. «Пучах» спорт обществин Союзри инструкторĕ сăмах калать. «Ялти спор-

тсменсем те çĕр-шыв командине кĕрсе Олимп медальне çĕнсе илессе шанатпăр. Сирĕн çак çитес ăмăртура хăвăр вăйăра кăтартмалла», – тет вăл умри тĕллеве палăртса.

Ураваш хăй пӳлĕмне кĕрсен тренировка планне тытса ларчĕ. Клименков мĕн-мĕн тума хушнине тепре тишкерет вăл. Ун пуçĕнче икĕ ыйту кĕреше пуçларĕ: умри ăмăртăва тĕп старт пекех хатĕрленмелле-и е тĕп стартченхи тĕрĕслев çеç тесе шутламалла?

Ку ăмăрту, тӳррипе илсен, темле хак парсан та, Олимп вăййине каймалли путевкăна валеçмест-ха, пысăк тивĕçе СССР чемпионатĕнче, сентябрь пуçламăшĕнче, Олимп вăййинчен уйăх маларахри кĕрешӳре, çĕнсе илеççĕ. Кашни дистанцире виçшер çынна çеç телей пӳрет, тăваттăмĕш вырăна йышăнни хапха тулашне тăрса юлать. Çавăнпа Сочири старт умĕн ытлашши вичкĕнсех çӳреме кирлĕ те мар, тренировкăн калăпăшĕ пысăк пулни, ытларах инçе çула утни кирлĕ; çуртне кăштах купаланипех тăррине тăрласан çурчĕ катаранах курăнмĕ, çинçетсе шĕвĕртсен те палăрса тăмĕ. Çурта васкамасăр купаламалла, тăррине тăрлама пулĕ ăна.

Урваш плана улăштармарĕ. «30 хут 400 метр» тесе çырнине çеç урăхларах тӳрлетрĕ: (200-400-800-200) х 8. Ку вăл асăннă инçĕшсене кана-кана сакăр хут тухмаллине пĕлтерет: стадионри 400 метрлă çаврăма пыршă татăлас пек сывласа вăтăр иккĕ ункăламалла эппин.

Кая юлса çитнĕ çуркунне майĕпен вăй илсе пырать, парксенче те малтанхи чечексем ешерчĕç, йывăççсем папкаланчĕç. Хĕвел ирĕклĕн пăхать пулин те кун ытлашши шăрăхах мар-ха. Виктор ирпе вун пĕр сехетре стадиона çитрĕ. Ытти атлетсемпе пĕрле чупса та хусканусем туса шăм-шака çăмăллатрĕ те стадионăн 400 метрлă çаврăмне çеккунт стрелкипе виçе пуçларĕ. Малтанхи тăрăхсене вăтам хăвăртлăхпа тухса пычĕ вăл, унтан пĕтĕм вăйран илтере пуçларĕ. 400 метрти кăтарту минут та 40 çеккунт пулса пырать, 800 метрне 3 минут та 28 çеккунтра тухать. Виççĕмĕш-тăваттăмĕш

ăстрăмсенче кунтан кăшт хулленрех иртет. Юлашкинчен çын ырчĕ, йĕрĕнсе çитрĕ. Алă суласси килчĕ унăн. «Ну, мĕн? Мĕн тăватăн-ха эс кунта, Виктор? Кам пыл хыптарать сана çак тертшĕн? Ĕç укçине кун пек нушапа мар, вăрах лару-тăрурах илме пулать!» – чĕлхе çинех килесшĕн çакăн пек сăмахсем.

Ăшра тарăхрĕ пулин те çын тытнă ĕçе пăрахмарĕ. Вăл футболкине хывса печĕ, пĕртен-пĕр трусси вĕççĕн çеç юлса стадионри çаврăма çĕр çĕмĕрессĕн ыткăна пуçларĕ, тута хĕрри пиçсе çуннă халь унăн, пит тăрăх тар вĕри мунча лапки çинче ларнă чухнехилле шăпăртатса анать. Урана çӳле çĕклемесĕр вăрăм пусăмпа хăвăрт-хăвăрт илтерет çын, тапраннă вырăна çаврăнса çитсен мăйран çакнă секундомерне пусса чарать, унтан малтанхи сулăмпа ирклĕн утса каять те ик аллипе пĕçĕ çине тайăнса çурăмне кантарать; тӳрленсенех секундомер йĕппи ăçта чарăннине пĕлесшĕн вичкĕн куçĕпе циферблата пăхать. Минут çурăран вăй илсе çын каллех вирлĕн тапранса каять. Хальхинче вăл çав çаврăма иккĕ ункăлать, пичĕ тăрăх йăр-йăрласа тар юхать хăйĕн. Тарĕ часах çилпе-хĕвелпе типет иккен те – тăварĕ юлать, ĕнсепе хул-çурăм, ав, тăвар сулачи пек, кăштăрка та шуррăн курăнать. Спринтерсем вăтăр метр хушша чупса стартран тапранса кайма хăнăхаççĕ. Вĕсем Виктор çумĕнчен урисене вĕлт-вĕлт илтерсе ыткăнаççĕ, пĕрре сывласа илнĕ самантрах çиçĕмле хăвăртлăхпа вирхĕнеççĕ, палăртнă хушша тухсан лăпланаççĕ те çапла тепре вăркăнмашкăн пĕр пуçăннă вырăна каялла таврăнаççĕ. Йĕтре тĕртекенсем хăйсен секторĕнче тимĕр чăмăрккине хул калакки тĕлне хураççĕ те пĕр енне тайăнса хăрах ура çинче сикеççĕ, унтан тӳрленекен пружина пек пит хăвăрт карăнса илнипе аларан йывăр чăмăр сулăмлăн вирхĕнсе тухса каять. Çĕр хут, пин хут туса пăхаççĕ пĕр хăнăхăва вĕсем. Диск ывăтакан, ав, лачкам шыв пулнă, пĕр сивĕнсе, пĕр хĕрсе илет унăн шăм-шакĕ. Нихăшне те çăмăл мар спортри ăсталăха хăнăхасси. Хăйсене хăйсем хавхаланса, мĕне те пулин

ёмётленсе тертленет кашни, чи пысăк ёмĕчĕ пĕрре – Олимп тӳпине улăхасси! Пурте унта улăхса çитеймĕç те, ун пеккисем валли киленмелĕх ытти ăмăртусем пур. Çапах та мала Олимп тӳпиех чĕнет. Спортсменшăн чи пысăк хак вăл – Олимп вăййинче лартнă хак.

Тренировка хыççăн душра çăвăнчĕ те Виктор канма выртрĕ. Ăш хыптарать, анчах шыв мар, йӳçĕ япала, йӳçĕ шĕвек ĕçес килет унăн. Сăра пултăрччĕ! Алла эрех лексен тӳрех çавăрса хурĕччĕ те вăл, пыр усăлса кайнă пулĕччĕ. Столовăйра Виктор черешня сĕткенне виçĕ стакан илсе ĕçрĕ те, ăш хыпни лăпланчĕ.

Шутлă кун çитет. Ăмăртăва хатĕрленекенсене Сочие куçарчĕç. Кунта Ураваш Совет Çарĕн спортсменĕсемпе тĕл пулчĕ те тренировкăна вĕсемпе пĕрле çӳрерĕ. Çĕршывăн чи вăйлă атлечĕсем: Жаров, Авилов, Юлдымаа Европăри спортсменсен юлташла ăмăртăвне ГДРа кайнă-мĕн. Кунта вара ГДРтан Генрих Шульцпа тепĕр икĕ атлет килнĕ. Тренировкăра курчĕ нимĕç çӳревçине Виктор, вăрăм та чанкамскер урине йĕп çине пуссан та йĕп ан кĕтĕр тенĕ пек хăвăрттăн илтерсе пырать. «Тупăшма пулĕ-ши унпа?» – тет Шалимов та Викторпа калаçнă май.

* * *

Çарта вăй илнĕ туслăх спортсменсем хушшинче çаплах çирĕп-ха. Виктор çав-çавах ытлашши калаçма юратмасть. Чĕлхипе мар, хăйĕн чунĕпе, ăш-чккипе вăл армеецсемпе пĕлĕхлĕ йышра. Çавсемпе столовăйра апатланнă чухне унăн хул пуççийĕ çине такам аллине хучĕ те шӳтлĕ саспа: «Апачĕ тутлă пултăр», – терĕ. Спортсмен пуçне çĕклесе каялла пăхмасăрах Герман Савельев сассине уйăрса илчĕ.

– Эсир килтĕр-и? – хĕпĕртесе ӳкрĕ Виктор. Ăшра вăл Савельев судья шучĕпе килнĕ тесе шутларĕ, унтан алăк патĕнче хăй патнелле Шертанов утса пынине курчĕ те, шухăш улшăнчĕ.

– Миçен çитрĕр? Çеркей та пур-и? – куçне çиçтерсе ыйтрĕ Виктор.

– Ăна ĕçрен ямарĕç. Шертанов тата виçĕ çамрăк ăмăртаççĕ, – пĕлтерчĕ тренер.

Шертанов Уравашпа армеецсене чыслăн алă тытса саламлать.

– Тăхта, кĕт пире, – сĕнет вăл Ураваша ыр кăмăллăн.

Сочие куçсан армеецсен ушкăнĕнче Виктор хăйне палла пĕтен йышри пек тыткаларĕ пулсан, чăваш спортсменĕсем çитни ăна килти çынсем хушшинчи пек туйăнтарчĕ.

Сочи стадионĕ, юлашки виç çул хушшинче пайтах спортсмена курнă пулин те, пĕр харăсах кун чухлĕ çӳревçе пуçтарман – Генрих Шульц нимĕçе шутламасассăн та, кунта утларăшри чи пысăк ăстасем пухăнчĕç.

Стадион пĕр пĕчĕк шыв юхса тухакан лапамра тинĕс хĕррине çывăхрах вырнаçнă. Çӳллĕ тӳпемре «Ылтăн пучах», «Хĕрлĕ çăлтăр» санаторисем лараççĕ те, тинĕс хĕрринче халăх хĕвĕшет, шыва кĕрет. Канма тин килнисем шурă ӳтлĕ, маларах килнисем, хурах мар пулин те, кĕреленме ĕлкĕрнĕ. Спортсменсем хушшинче те тĕрлĕ тĕсли пур. Акă, лутра пӳллĕ яш çын шăм-шакне çемçетме вĕтĕл-вĕтĕл, хăвăрт-хăвăрт утать, сăлайĕ лайăх, пысăк хăвăртлăха чăтма пултарасси сисĕнет – Жуковский кăнтăрти хулара уйăх ытла тренировкăра пурăннă иккен, алли-хулĕ унăн хĕвелпе пиçсе ларнă; юнашарах Калинин облаçĕн ачи, çинçе пӳллĕ те хыт-канскер, пырать, вăл шурă ӳтлĕ: Атăл çи ăмăртăвĕнче медаль илнĕскер кăнтăрта пулман-мĕн-ха. Виктор хуралмах ĕлкĕрмен пулин те хывăнсан ӳчĕ тĕкне татнă чăх тирĕ пек шуррăн курăнмĕ.

Николай Шертанов май килнĕ чухне хĕртĕнес тесе ăмăрту умĕнхи кун, хĕвел пуснипе хал пĕтессине уямасăр, разминка вăхăтĕнче те, хыççăн та стадионра трусси вĕççĕн кăна çӳрет.

Сочири стадион юлашки виçĕ çул хушшинче пĕр харăсах çакăн чухлĕ судьясемпе тренерĕсене те пухман.

Кăнтăр хĕвелĕ енне туртăнас, ăшă тинĕсре шыва кĕрес ĕмĕт те пулнă пуль кусен – хăйсене чĕнсен пырас мар тесе сăлтав шыраман. Ĕлккен хулари шак чул çыранлă тинĕс шывĕ хăй патне илĕртетех çав çурçĕртерех пурăнакансене! Кунта килнĕ спортсменсенчен Олимп вăййине пĕр иккĕн çитейĕç-и, тренерсемпе судьясен йышĕнчен вара Олимп вăййине виççĕн-тăватăн çитеççех. Çĕр чăмăрĕнчи атлетсен пысăк форумне кайма сумлă судья-тренерсем малтанах виза илеççĕ; атлечĕсем вара – Гомер поэминчи герой пек вăй-хал ăсалăхĕпе кăна!

Çанталăк вĕри. Хĕртсе хĕвел пăхать. Канакансем тинĕс хĕрринче хĕртĕнеççĕ. Утакансем, уйрăммăнах хĕвел çинче пулма ĕлкĕрейменнисем, стадионăн 400 метр çаврăмне аллă хут ункăланă тĕле, майкăпа трусси вырăнĕсĕр пуçне, пĕтĕм ӳтне-пĕвне горчичник лартнă пек хĕп-хĕрлĕ пиçсе кайĕç.

Судьясемпе тренерсем умĕнче пысăк тĕллев тăрать: тĕнче шайĕпе пăхсан пирĕн çĕр-шывра хăвăрт утас спорт епле аталанать, ачасен сăлайĕ еплерех, тренировка йĕрки хăшĕн лайăхрах та хăшĕн ăнăçлăрах – çавна уçса палăртмалла. Ăмăртăвĕ те ку опыта пĕтĕçтерсе саракан шкул вырăнне шутланать. Çав хушăрах хальхи Олимп вăййине каяс текенсемпе паллашмалла, тата тăватă çултан, сакăр çултан килекен вăйăсене каяссисене те курмалла.

Викторăн пĕр ĕмĕт – малти виçĕ çын шутĕнчен кайра пулмалла мар тата Шульцпа кĕрешсе пăхмалла. Шертановăн телейĕ иккĕллĕрех. Вăл тренировкăна каярах тытăннă та çĕнтерессех шанмĕ, çапах та чун тăвăлĕ унăн та малах туртăнать-ха. Герман Савельч ăна: «Малти çирĕммĕш вырăншăн кĕрешме пултарсан – кĕреш...», – тесе лăплантарать. Ытти çамрăксен тĕллевĕ – тикĕс утса тухасси те нимĕç çамрăкĕсемпе кĕрешесси. Ютпа тупăшнипе пĕрлех, малти çирĕм вырăн кунта чылай спортсмена кăсăклантарать. Малтисене, çирĕм вырăн таран, СССР чемпионатне кĕртеççĕ. Çав йышра пулай-

масан малашнехи пĕр-пĕр ăмăртура çирĕм километра сехет те 30 минутра утса тухмалла. Унсăрăн Олимп вăййи çеç мар, СССР чемпионачĕн хапхи те хупăнать – сана палламаççĕ те, санпа калаçмаççĕ те ăмăртăва хутшăнас тесе пырсан та! Çакна кунта пухăннă кашни спортсмен ăнланать.

Ăмăрту ирхине вунă сехетре пуçăнчĕ. Стадионăн çавра çулĕ йĕри-тавра судьясем тăрса тухнă. Вăл шутра Герман Савельев та пур; авă, Соломонов çӳрет. Утавçăсем, сапса янă шариксем пек, çаврăм тавра куçаççĕ. Хашкаса йывăрăн сывлама пуçларĕç ĕнтĕ вĕсем, такама утăран чуппа куçма пуçларăн тесе асăрхатарчĕç, такам хăй тӳрех пит хăвăрт кайнипе чикен илнĕрен çултан тухса ӳкрĕ – трибуна çине мĕскĕннĕн кайса ларчĕ. Стадионра кĕрешӳ, çивĕч кĕрешӳ пырать.

Виктор – малтисен ушкăнĕнче. Кунта сакăр çын. Вĕсем хушшинче ятлă-шывлисемех пур. Çак йыш – чи вăйли; судьясен куçĕсем ытларах вĕсене сăнаççĕ. Виктор Ураваш чăнкам пӳллĕ Шульц çумне çыхса лартнă пек çыпçăнчĕ. Нимĕç спортсменĕ пирĕн икĕ атлет хыççăн пырать, ун çумĕнче кăкăрпа кăкăр пĕр тан Виктор ĕçлет.

– Аван! Çапла пыр. Çур утăм та ан тарт, – ытти çын илтмелле мар хуллен те чăвашла калать Герман Савельч Виктор иртнĕ чух. Тепĕр çаврăмра тренер каллех пĕлтерет:

– Вăтăр улттăмĕш номере асăрхаттарма пултараççĕ. Вăл лăплансан тӳрех мала сиксе ан тух!

36-мĕш номерĕ пĕрремĕш ертсе пырать-ха, ку вăл – литовец, Шульц пекех çӳллĕ пӳллĕскер, хыçрине хăварасшăн уттине ытла вăрăм пусма тăрăшать те хăвăрт кайнă самантра икĕ урипе те харăс çĕртен уйăрăлнă хушă пулать; вăшт-вăшт кăна тикĕс утăмлă Шульц çумĕнче çын кăлтăкĕ тӳрех куçа курăнать. Судьясем, хамăр спортсмена çĕнтерттерес шутлă пулин те, ăна асăрхаттарас терĕç; чи асли, хура та хаяр сăнлă арбитр ялавне кăтарма хатĕрччĕ, анчах пĕри тăхтама ыйтрĕ. «Умри хыççăн виççĕн çыхăннă, чăтаяççĕ-и çав

хӑвӑртлӑха хыҫрисем, кӑштахран асӑрхаттарӑпӑр, тата асӑрхаттарнине епле йышӑнать-ха литовец? Кун хыҫҫӑн Генрих Шульц тӳрех пӑрахса тарать-ши?» – терӗ ҫак ӑслӑ судья. Шульц ытла тулхӑрса кайма шутламасть-ха, вӑл пӗр тытӑннӑ хӑвӑртлӑхпа тикӗссӗн утӑмлать, ӗлкӗхи пек ытти атлетсем ҫине йӑлт та йӑлт пӑхасси те ҫук халь унӑн, шӑрӑхра хӑвна асӑрхамасӑртарах вирхӗнсен чакса ларма та пулӗ тенӗн, вӑйне перкетлӗрех ӑнтӑлать. Ҫын хӑй хыҫне юлнине туйнӑ литовец хытӑран хытӑ кая пуҫларӗ, ури вӗлтлетет ҫеҫ халь унӑн. Хыҫрисем, вӑл шутра Шульцпа Ураваш та, вӗҫерӗнсе юлчӗҫ ӗнтӗ. Ӑслӑ судья хальхинче йӗр хӗррине хӑвӑрт утса тухса пычӗ те ула-чӑла ялавне кӑтартса: «36-мӗш номер, сире асӑрхаттару!» – терӗ. Спортсмен ӑна мӗн пулчӗ тенӗ пек пӑхса илсенех хӑйне юнанине туйрӗ, вара самантрах сӳрӗкленчӗ, хыҫрисене, ак, малтан пӗрне, унтан теприне ирттерсе ячӗ, кӗтмен-туман хушӑрах саккӑрмӗш пулчӗ. Финишчен инҫе-ха, халь ҫур ҫаврӑм юлни те мала тухма пултарӗ. Анчах судьясем-тренерсем вӑтӑр улттӑмӗш номере хӑйсем хушшинче сивлерӗҫ. «Тӗнчери ӑмӑртусенче «пирӗн тӑвансене» юри асӑрхаттараҫҫӗ – вара ҫӳревҫӗн шикленнипе кая юл!»

Атлетсем пӗр туртӑшса, пӗр тӑвӑнса ҫаврӑмсерен инҫе ҫула кӗскетеҫҫӗ: «Ҫирӗм улттӑ... ҫирӗм... пиллӗк... ҫирӗм тӑваттӑ...» пӗчӗкленсе пырать ункӑлас шутӑн хисепӗ. «Иккӗшне ирттермеллеччӗ те малтанхи хӑвӑртлӑхӗпех пымаллаччӗ литовецӑн», – теҫҫӗ куҫлакансем. Хурарах сӑнлӑ хыткан Шульц судьясем пуррипе ҫуккине курман пек хӑй майӗпе тикӗссӗн те уҫӑмлӑн пырать; Виктор йывӑррӑн сывлвть пулин те унран юлмасть-ха. Шӑрӑхланса-шӑшӑрханса пыракан ҫанталӑк та ҫӳревҫӗсене сан вырӑн ҫакӑнтарах пулмалла тенӗн вӗҫе-вӗҫлентерчӗ. Икшерӗн-виҫшерӗн чӑмӑртаннисем уйӑрӑлчӗҫ, кашни харпӑр хӑй вӑйӗпе утӑмлать халь. Ҫав хушӑрах тин уҫӑлса кайнӑн илтерекен те пур пысӑк йышра. Ума, ав, Жуковский чавтарса тухрӗ, тин старт пачӗҫ тейӗн ҫак ачана. Шуль-

ца вăхăтсăр иртес теменнипе каярах юлнă Ураваш çав çын-и паян пĕрремĕш пулаканĕ тенĕн хыçран пăхать. Чылайăшне пĕр çаврăм-ик çаврăм иртсе чашкăртать халь удмурт ачи. Вăл çаплах хăвăрт кайса Ураваша та çаврăм хăвармĕ-и?! Унран ытлашши кая юлас мар тесе туртăшать чăваш спортсменĕ. Судьясем çине пăхмастьха вăл, хыçран урăххине ирттерс марччĕ тесе чавтарать. Судьясен ушкăнĕнче Клименков курăнмасть – вăл финиш тĕлĕнчи трибуна сакки çине ларнă та икĕ секундомера черетлĕн ĕçлеттерсе никамăнне те мар, Олимп вăййинче медаль илме пултаракан Шульцăн вăхăтне çаврăмсерен шутласа çырать, тепĕр ачана вăл Шалимов кăтартăвне палăртса пыма хушнă. Юрийĕ халь малта мар, çиччмĕш-саккăрмĕш пырать. Вăхăт-вăхăт кинокамерăпа ӳкерет Клименков утавçăсене.

– Çирĕм иккĕмĕш номер, асăрханарах пыр – ура çĕкленет сан, – илтрĕ вираж тĕлĕнче Виктор. Соломонов судья тăрăнчĕ кунта, çаплах шăртланать иккен-ха кĕвĕç чун. Виктора самантрах çилĕ килчĕ, ăшра унăн тарăху кӳлленчĕ. «Эс çаплах ура хума пăрахмастăн-и?!» – терĕ те хăй ăшĕнче чăваш ачи Шульца хыçа хăварса вирлĕрен вирлĕ кая пуçларĕ, çаврăм юлнисенчен пĕрне, тепĕрне иртет халь вăл, урана çӳле çĕклемесĕр тăптăп иле-иле пусать, сывлама йывăррине пăхмасть – ăнтăлать çеç.

Жуковские хуса çитрĕ вăл, ăна ним тăхтамасăрах иртрĕ те тара пуçларĕ. Кăштахран вăл: «Çав ачапа çумăн пымалла марччĕ-ши, иккĕн пĕрле ĕçлеме лайăх», – тесе шутласа илчĕ те каялла пăхрĕ. «Мĕн пăхкаласа пыран? Пĕччен ĕçле! Тарас пулать хăв çеммӳпе», – илтĕнчĕ çак вăхăтра Герман Савельч чăвашла калани. Виктор вара пĕччненех тапрĕ. Çапла пыма ăна, тӳррипе илсен, тренер калани мар, урăххи – юлашки вăхăтра пĕччен çӳрени пулăшрĕ. Чылайăшне икшер-виçшер ирте-ирте пĕр тытăннă хăвăртлăхпа ĕçлет Ураваш. Вăйлăраххисем хыçра инçере те мар-ха, Шалимов та халь-халь çитес пек хушăра çеç, Клименков ăна: «Ĕçлемелле!» – тесе юнать.

Çӳревçĕсем куç илмесĕр умрине хăвалаççĕ. Юлашки виç çаврăм юлсан паçăрхи литовец хуса çитрех Виктора, ĕнсе хыçĕнчех Жуковский хашлатса сывлани те илтĕнет, ку хушăрах, сисмен те, унпа Шульц танлашрĕ. Тăвар катки йăтса пынă пек ырса çитнĕ Ураваш темĕнле куçа курăнмалла мар хăватпа кĕлетке-çурăм мышцисене карăнтарарах çĕклерĕ те сывлама йывăррине çĕнтерсе, пытанса упраннă вăй тухнăн вирлĕрех кая пуçларĕ. Нимĕç атлечĕ тин пичеврен тĕпе куçас пек тилмĕрет, хашлатать хăй, йывăррăн сывлать, Виктортан ытларах тăвăнса çитнĕн илтĕнет ун сасси. Çапах пĕрремĕш эпех пулмалла тенĕ пек илтерет нимĕç. Викторăн мĕншĕн чун-чĕре техĕмне хĕрхенмелле? Тахçан Клименков çĕнтернĕ-çке Шульца, Галлин та унран Олимп вăййинче иртнĕ. Мĕншĕн Викторăн кая юлмалла? Чăтман-и вара Ураваш çакăн пек хăвăртлăха? Чăтман-и вара чăваш арĕ йывăрлăха? Курать-çке, пĕлет-çке çын: çак хăвăртлăха чăтса çитерсен хыçри çур утăм та мала тухаймасть! Тахçан Мускав стадионĕнче финиша пынă пек йывăрлăхпа кĕрешсе, чунтан асапланса чашкăрать Çĕн Çăкасар ачи. Финишра ăна халĕ те пĕр чипер хĕр, журналистка, кĕтсе тăнăнах туйăнать. Ыйттăр вăл хальхинче епле çĕнтерни çинчен! Калать ăна Виктор! Калать, пĕтĕмпех калать! Ăна курас килни çинчен те калать!

Шульцпа вĕсем финиш йĕрне юнашарх татрĕç, анчах Викторăн ури урлăлла палăртнă шур йĕре маларах пусса иртрĕ.

Халран кайнă çын çине палланӑ-палламан судьясем, куракансем тĕлĕннĕн тинкереççĕ. Земфира çук иккен ку йышра: Ураваш Шупашкартан аякри стадионра, Сочире-мĕн-ха! Клименков, Шульцăн кашни çаврăмри вăхăтне çырса пынăскер, ăна: «Эсĕ тата хăвăртрах тухма пултараттăн, Шульцран хăрарах пытăн, хăрама кирлĕ мар, хăюллă пулмалла, – терĕ.

## Вăтăр тăваттăмĕш сыпăк

Земфира Вутланова ирпе ĕçе ялан пĕр вăхăтра, тăххăрччен кăшт маларах çитет; вăл пӳлĕме кĕриччен кам та пулсан ĕç вырăнне йышăннă, кам та пулсан килсе ĕлкĕреймен-ха, пуринчен ир е пуринчен кайран çитни, командировкăри кунсене шутламасассăн, çамрăк журналисткăн пулман. Паян, ак, вăл хăй вăхăтĕнчен пурĕ те вунă минут маларах кăна алăк урати урлă каçрĕ – ыттисен куçне çакă тӳрех курăнчĕ. Акап аппа ăна тĕсерех пăхать: «Мĕн эсĕ, Земфира, пит хавас пек паян?» – тесе ыйтать. «Нимех те мар», – тет те Вутланова пуçа чиксе çырма ларать. «Сочири ăмăртура чăваш ачи çĕнтерни хаçат вулаканĕсене те савăнтармалла. Викторăн сăн ӳкерчĕкне ăçтан тупас-ши?» – сăмахлать вăл кăштахран сăпайлăн. Статьяна çырса пĕтерсен хĕр сехечĕ çине пăхса илчĕ те телефонпа шăнкăравларĕ. Техникумра трубкăна Герман Савельч хăех тытрĕ.

– Чылай спортсменсен уттине кинокамерăпа ӳкере-ӳкере илчĕç терĕр эсир. Викторăн сăнне тупса параймăр-ши? – ыйтать Вутланова.

– Клименков та, Мускаври физкультура институтĕнчен те нумай ӳкерчĕç; пĕр-пĕрин сăлайне вĕренме кирлĕ вăл пире. Чылай атлетсене эпир хамăр республика ăмăртăвне чĕнетпĕр, ун чух илсе килме пултараççĕ, – хыпарлать Савельев.

Земфирăна паян кирлĕччĕ. Чим-ха, Викторĕ те таврăннă вĕт халь. Вăл çĕнĕ тренировкăна кӳлĕннине фотограф ярса стадионра ӳкерсе илмелле. Вара журналистка тепĕр самантранах спорт комитетне шăнкăравларĕ. Унта халăх йышлăн пухăннă-мĕн, футболистсем ăмăртăва тухса каяс умĕн пуçтарăннă иккен те пит шавлăн сăмахлаççĕ. Кирлĕ çын ятне асăнсан Борис Абрамыч: «Хăйпе калаçăр», – терĕ те трубкăна хучĕ пулас – сас çухалчĕ. Тепре шăнкăравласан Çĕн Çăкасар ачин сасси илтĕнчĕ. Çав сасă хĕре тăван пиччĕшĕн, çывăх хурăнташĕн пек туйăнчĕ; çав сасса тăнласшăн

Земфира пĕр самант калаçма тăхтаса тăчĕ, пӳлĕннĕ пек пулса сывлăш çавăрса илнĕ хыççăн тин хĕр спортсмена çĕнтерӳпе саламларĕ, епле килни, ĕçе тытăнни, общежитие вырнаçни çинчен ыйтса пĕлчĕ; чиперех-ха Викторăн пурнăçĕ: ĕçре ятлаçмаççĕ, шалу илнĕ, профсоюз та пулăшнă. Земфира ентешĕ патне мĕн çăмăлпа шăнкăравланине пĕлтерчĕ те, «Сире сăн ӳкерчĕк кăтартса мухтанма пултаратăп», – терĕ Виктор.

Уравашăн чăнласах Сочире ӳкерĕннĕ хаклă сăн ӳкерчĕк пур, анчах ăна çынна парса алăран вĕçертес килмест. Ăмăрту хыççăн тепĕр кунне ирхине кунта ывăннине кунтах хăварс тесе Виктор ирпе кросс чупрĕ те тепĕртакран мунчана кайрĕ; пĕрле Краснов та, Веня Савельев та пулчĕç. Мунчи, икĕ хутлă пысăк мар çурт, пасар çывăхĕнче спорт комитетĕнчен инçех те мар хĕвеле хирĕç ларать. Билет сутакан кассăра Уравашпа кĕçĕн Савельев пĕрер юман милĕкĕ туянчĕç. Кун пеккипе Виктор чылайранпа çапăнманччĕ-ха; Шупашкарти мунчасенче те, Нальчикра та хурăн милĕк сутатчĕç пулсан кунта, ялта ашшĕ хатĕрленĕ пек, сарлака çулçăллă та тăп-тăпăлкка юман милĕк иккен. Чăваш ачисемпе пĕр вăхăталлах иккĕмĕш хутри арçынсен уйрăмнне тепĕр виçĕ спортсмен хăпарса кайрĕ, кусем билет илнĕ хыççăн пасара çитсе килнĕ-мĕн. Салтăннă чух Виктор çаксем нимĕç атлечĕсем иккенне палласа илчĕ. Шульц, хыткан та хурарах сăнлăскер, çамрăк юлташĕсене ăçта хывăнмаллине хăйсен чĕлхипе ăнлантарать; йăмранни пек çинçе те вăрăм çулçăллă лăпăс милĕке вăл, кунпа пĕрре ыр куратăп тенĕн, таз çине мунчалапа пĕрле хучĕ. Веня Савельев: «Ха, нимĕçсен йăмра милĕк тем. Ăçтан тупнă-ши йăмрине? Хăнасем валли ятарласа хатĕрленĕ пуль çав», – тесе шухăшлать. Йăмри те урăх сурт пулас: çулçи вăрăмрах та шĕвĕртерех. Çыннин нимĕнле йăмра милĕкĕ те мар, эвкалипт йывăççин лăсăллă туратти! Ăна пасарта сиплĕ йывăç-курăк шучĕпе кĕлтен-кĕлтен сутаççĕ. Мунчара çапăнма питĕ сиплĕ вăл. Шульц, шăпах юман милĕкпе çапăнсах кайманскер,

эвкалипт лăссине пасара кайса ятарласа туяннă иккен. Çакăн пек милĕкпе Виктор çарта чух Ужгородри ăмăрту хыççăн çапăннăччĕ. Çемçе те шурă кăпăк тухать шывĕ çине ăна пĕçернĕ чух; халĕ Ураваш Красновпа Веня Савельева «йăмра милки» çинчен кĕскен ăнлантарса парать. Ку вăхăтра нимĕç атлечĕ вĕсене асăрхарĕ те: «О, эсир те çапăнма-и?» – терĕ вырăсла. Вĕсем пурте пĕрлех çăвăниччен-тăвиччен хĕртĕнмелли-çапăнмалли пӳлĕме кĕчĕç. Пысăках мар пӳлĕм пăс янипе кашласа анчах ларать, лапки çине пусма картлашиккипе хăпармалла, аялти пусми çинчех тар шапăр тухмалла вĕри. Виктор-па Веня юман милĕкĕсене таза вĕри шыв ярса пĕçерме лартрĕç те лапка çине улăхрĕç. Шульц милĕке ислетнĕ хыççăнах иккĕмĕш картлашка çинче урине хуллен лăс-лăс çапа пуçларĕ. «Тăхтăр, малтан тарлар», – сĕнчĕ ăна Ураваш. «Эсир, вырăссем, вирлĕ çапăнатăр çав, ку енĕпе сирĕнпе Скандинави çыннисем çеç танлашма пултарĕç», – тет Шульц çӳлте ларакан ачасене ăмсанса. Вара хăй те Виктор çумне сак çине улăхса ларчĕ, вĕрие пула тутине вăл шăлĕ курăнмалла сарса сывлать.

Çулĕпе Шульц Викincome тан виçĕ çул аслă, çапах та вăл вăрçа астăвать. Фашистсен эшкерĕ вĕсен хулине хăварса чакса кайсассăн та, вăл, пĕчĕкскер, кукамăшĕпе, амăшĕпе пĕрле путвал пек вăрттăн нӳхрепрехчĕ, питĕ выçса çитнĕччĕ вĕсем. Çимелли те çук. Пăшал-тупă сасси йăннă хыççăн путвалра тепĕр икĕ кун ларсассăн асламăшĕ хăра-хăра ирĕке тухнăччĕ. Унтан Генрих та тухрĕ. «Киндер, кил кунта», – илтрĕ вăл аяккал-ла кайсассăн. Малтанах ача хăраса ӳкрĕ. Унтан совет салтакĕ окопран кăшт çĕкленсе тепре чĕнсен шиклене-шикленех ун патнелле тĕнкĕлтетрĕ. Салтакăн котелок-ра сивĕнсех кайман пăтă иккен. Салтак ачана кашăк пачĕ. Пăтта çиех пуçларĕ Генрих. Халĕ те тута çинчех вырăссен тулă пăттийĕ. «Мĕнле чĕнеççĕ сана?» – «Генрих». – «Эпĕ – Григорий. Гриша пичче», – терĕ салтак.

– Çынни мĕнлерехчĕ? – ыйтать Ураваш.

– Çӳллĕ. Патвар. Кĕререх сăнлă.

Виктора ашшӗ нимӗç ачине пӑтӑ çитерни çинчен каласа панӑччӗ.

– Хушаматне каламарӗ-и?

– Каламан.

Ӳссе çитсе ӑмӑртусене хутшӑнма тытӑнсан Шульц Клименковпа, унтан Галлинпа туслашрӗ. Вӗсем Генрихшӑн – ырӑ туссем; ӑмӑртура яланах пӗрле юлташла кӗрешеççӗ. «Клименков Владимир – мой хороший друг, – тет Шульц вырӑсла чиперех. – Вӑл халь – тренер. Эсӗ ун вырӑнне утаканни ӗнтӗ. «Виктор» латинла «Çӗнтерӳ» тенине пӗлтерет пулсан сан пуласлӑх малашне-ха», – сӑмах хушать кӑштахран нимӗç Ураваша. Викторсен ашшӗ, тен, шӑпах çавсен хулине фашистсенчен хӑтарнӑ чух аманнӑ пуль, вӑрçӑ суранӗсене пулах Ураваш Кӗркурийӗ вӑхӑтсӑр çӗре кӗчӗ. Пӗр Çӗн Çӑкасартанах миçе çын фронтран таврӑнайман тата? Çак Шульцсене те фашизм пусмӑрӗнчен хӑтармалла пулнӑ, «вилӗме хирӗç вилӗм», – тесе Тӑван çӗр-шыв ирӗклӗхӗшӗн хаяр çапӑçӑва тухнӑ пирӗн халӑх ывӑл-хӗрӗ.

– Сирӗн çӗр-шывра çӳревçӗсем чӑнласах йышлӑ. Аван çӳреççӗ вӗсем. Пироне господин утларӑша пӑрахӑçласшӑн. Ӑçтан пӗтерччӗр ӑна? Пӗр кунтах, ав, СССРта та, ГДРта та туслӑ ӑмӑртусем пулса иртеççӗ! – тет Шульц, Олимп идейишӗн, утларӑша Олимп программинче хӑварассишӗн кӗрешекенскер. Çак ырӑ ӗмӗтпех вӑл хӑйсем патӗнче ӑмӑрту пулнӑ вӑхӑтрах кунта килнӗ. ГДРти ӑмӑртура Авилов çӗнтернӗ, тӗнче рекордне çӗнетнӗ, Жаров, Юлдымаа, тепӗр икӗ нимӗç атлечӗ те 20 çухрӑма сехет те 28 минутра утса тухнӑ; Уравашпа Шульц вӑхӑчӗ вара – сехет те 34 минут çеç. Çанталкӗ Сочире шӑрӑх тӑрать-ха ӗнтӗ, Германире утма самай чух уçӑ пулнӑ пуль. Авилов рекорд вӑхӑчӗпе утса тухнине Шульц та радиопа илтнӗ. Çапах вӑл пӗр вӗчӗрхенмесӗр: «Авилов Галлин пекех маттур», – тет. Виктора хӑйсен вӑхӑчӗ япӑхраххи шухӑшлаттарать: ара, вӑл нихӑçан та çирӗм çухрӑма сехет те 30 минутран

вăрахрах вĕçлемен-çке. Шульц сехет те 28–29 минутсенче пĕрре мар утса тухнă-ха; тен, çавăнпах вăл ытлашши хыпăнса ӳкнĕ пекех мар. Викторăн çĕр-шывра мала тухассишĕн пулакан ăмăртура виççĕмĕш пулассишĕн те хытах шутлама лекет-ха: Авилов, Галлин, Жаров, Юлдымаа унран вăйлăрах-ха; кĕркуннеччен, тен, теприсем те унран иртĕç.

– Мускав Олимп вăййине хăй патне йыхравлать терĕç. Иккĕленместĕп: çитес вăхăтсенче Мускав Олимп хули пулатех, – калаçать Генрих Шульц.

– Темле-çке, хăшĕсене, тен, пирĕн чĕнӳ килĕшмĕ, – тет Ураваш.

Спортсменсемпе тренерсем Мускава тахçанах пысăк хак параççĕ. Çак пирĕн çамрăк йышран Мускаври Олимпиадăн чемпионĕ пулĕ, тен.

– Олимп вăййине ăçта ирттерессине МОК хăйĕн сессийĕнче татса парать. Ултă çул малтан палăртать. Унччен-ха... пайтах çил вĕрĕ, шыв юхĕ.

– Тăнăç пурнăçри вăхăт хĕрӳ кĕрешӳре иртет. Курăпăр ак, Мускав хăçан та пулсан Олимп хули пулатех, – çирĕплетет Генрих.

– Ну, çитĕ, тарларăмăр, тухса уçăлăпăр, – терĕ те Виктор, вĕсем лапка çинчен анчĕç, унтан, сивĕ шывпа тăрăх ярăннă хыççăн, тухса сивĕнчĕç; кăштахран вара çапăнма кĕчĕç. Виктор ик аллипе икĕ юман милĕкĕ тытнă та урине, пĕççине, кăкăрне туй çемми пек кĕвĕллĕн ăшалать, ытла вĕрирен ах! тесе илсе питне сив шывпа йĕпетет, милĕке ислетсе каллех ĕнсе çинче ташлата пуçлать, сарлака çулçă сулмаклăн хаплатать. «Генрих, ан хăра! Хăпар», – чĕнет вăл аялта тĕлĕнсе пăхса тăракан нимĕçе. Шульц кăшт шикленерех çӳле улăхать те, Виктор ăна: «Ну, çаврăн-ха, сана чăвашсем пек ислетем», – тесе икĕ милĕкпе çапма тытăнать. «Унпа мар, ак кунпа», – тет сулăмлă милĕкрен шикленсе Генрих. «Юман милĕкĕ сарлака çулçипе лайăх лекет те, ӳт çемçелет. Пирĕн ялта ĕмĕр çавăнпа çапăнаççĕ», – кулать Виктор тăпăлкка мăшăр милĕке çыннăн çурăмĕ çинче

туй ачи пек ташлаттарса. Унтан вӗрипе ырнӑ, халран кайнӑ Ураваш, тек чӑтса тӑраймасӑр, аялта кулса пӑхса тӑракан Веньӑна милӗксем тыттарса хӑварать те тазри шыва пуҫ тӑрӑх ярса уҫӑлма тухать. Веня пӗр аллипе эвкалипт, тепӗр аллипе юман милӗк тытса хӑнана ыр кӑтартма тытӑнать. Генрих ӑна: «Ҫиетет, хам ҫапса ярам», – тесе юман милӗке илет.

Лайӑх кӑна ҫапӑннӑскерсем уҫӑлмалли пӳлӗмре халран кайнӑн пӑсланса ларсҫҫӗ. «Юман милӗк, чӑнах та, вилӗрех илет-мӗн», – тет Шульц аран сывласа.

Спортсменшӑн мунча – тренировка шутӗнчех, ӑмӑртура хытнӑ, карӑннӑ ӳт-пӳ шӑпах мунчара ҫемҫелет, кун хыҫҫӑн вара, талӑк иртсен, ҫӗнӗрен тренировка тумашкӑн вӑранма юрать. Йывӑр атлетсем – боксерсемпе штангистсем – кӗлетке йывӑрӑшне хухтарма ҫапӑнаҫҫӗ-тарлаҫҫӗ пулсан, тепӗр ушкӑн спортсмен шӑм-шака кантарма, умри тренировкӑччен ҫан-ҫурӑма канлӗх пама ҫапӑнать; мунча хыҫҫӑн шӑм-шак лӗпсӗр ӗшенсе каять пулин те, тепӗртакран вӑй кӗрет, ҫавӑнпа спортсмен, сухаҫӑ ҫур аки хыҫҫӑн милӗк тытса лапка ҫине улӑхнӑ пекех, кашни ӑмӑрту хыҫҫӑн та кашни эрнесерен мунча кӗрет.

Уҫӑлса, вӑй илсе ҫӑвӑнсан Шульцсемпе Уравашсем мунчаран пӗр вӑхӑтрах тухрӗҫ. «Атя-ха, эп сире сӑн ӳкерсе илем», – терӗ вырӑсла начартарах калаҫакан ҫамрӑк нимӗҫӗ, вара ӑмӑртура мала тухнӑ ҫак икӗ атлет аллейӑра тренировкӑра вӑркӑнса пынӑ пек ӳкерӗнчӗҫ те, пленкӑна вӗсем «Сирӗн ырлӑхшӑн» текен фотоательене парса сӑнне кӑларттарчӗҫ, пуйӑс ҫине лариччен вӑл хатӗр пулчӗ те. Викторпа Шульц футболка вӗҫҫӗн те брюкипе ҫеҫ, ӑмӑртура чухнехи пек вӑшкӑртса килнӗн туйӑнать; мунчаран тин кӑна тухнӑскерсен сӑнпит кашни путӑк палӑрмалла яр уҫӑ та кӑшт тӗксӗмрех курӑнать, куҫсем ҫивӗч – паха тухнӑ сӑн ӳкерчӗк. Генрих Шульц хӑй алӑ пусса Виктора пачӗ ҫав сӑна, тепӗрне Виктора алӑ пустарчӗ, пӗр-пӗриншӗн асра юлмалӑх терӗҫ.

Çак ӳкерчӗк пирки каларӗ ёнтӗ Земфирӑна Виктор, анчах асӑнмалӑх япалана – хӑй çӗнтернӗ атлетпа, Олимп медалӗ илнӗскерпе, ӳкерӗннӗ сӑна – çынна пама шел-çке. Земфира ӑна ку ӳкерчӗкне пӑсмасӑрах каялла тавӑрса пама пулчӗ. «Юрӗ», – килӗшрӗ вара Виктор кӑмӑллӑн.

– Тавтапуç, эсӗ мана пулӑшасса эп шаннӑ, – тавӑрчӗ ырӑ та уçӑ сасӑ.

Редакци çынни çавӑнтах хӑйсен фотографӗпе калаçса çитес номерти хаçата мӗн кирлине пӗлтерчӗ.

– Акап аппа, ӗнер эсӗр Дрездентан килнӗ эстрада концертне курма кайнӑччӗ. Концерчӗ паян та пулатьши? – нимӗçле ыйтрӗ кӑмӑлӗ уçӑлнӑ Земфира. Агафья Антиповна ун çине тӗлӗнерех пӑхса:

– Ӗнер кунӗпех акӑлчанла калаçма пикеннӗ пирӗн сотрудница пымарӗ те, паян куракансем ыйтнипе тепре кӑтартаççӗ, – тет шӳтлӗн нимӗçлех.

Виктор чӗнес пулсан театра каяс шухӑшӗ пур Земфира кулса ячӗ.

– Икӗ чӗлхе вӗренетӗн апла? – йӗплерех ыйтать Акап унран.

– Ют чӗлхене вӗренме ачарах чух тытӑнман, хальччен темиçе чӗлхепе ирӗклӗн калаçма пултарнӑ.

– Комсомол обкомӗнче ют çӗр-шыва каймалли путевкӑсем çурла уйӑхӗнче пулать терӗç. Унччен вӗренӗн, – йӗкӗлтет Агафья Антиповна.

– Çурлара эпӗ кану илсен путевкӑсемпе курса çӳрейместӗп, – акӑлчанла калать халь Земфира. –Ун чух манӑн, палӑртнӑ тӑрӑх, çиччӗмӗш пӗлӗте сиксе хӑпармалла. Ӳстерсе каламастӑп, 150 сантиметр çӳллӗшне 50 хут вирхӗнсен те, уйӑхне икӗ километр пухӑнать – ку вӑл çителӗксӗр те.

– Пӑрах, Земфира, шӑм-шакна ан çӗмӗр, хӗрхен хӑвна, – чун-чӗререн шеллесе калать Вутлановӑна пӗрле ӗçлекен сотрудница.

– Этем вӗт вӑл, Акап аппа, этем вӑл тума май çуккине тӑвашӑн! Тӑвать те. Хӑвна хӗрхенсе тӑрсан ӑçтан пултӑр?

## Вăтăр пиллĕкмĕш сыпăк

Пĕр çĕр-шывпа тепĕр çĕр-шыв атлечĕсем пĕрле ăмăртни çинчен тĕрлĕ хаçатсемпе бюллетеньсенче «Олимп старчĕсем умĕн» ярăмпа темиçе йĕркепе те пулин çийĕнчех хыпарлаççĕ. ГДРта тата Сочире пулса иртнĕ çӳревçĕсен кăтартăвĕсем çинчен Пироне господин Англире кашни эрнересерен тухса тăракан бюллетеньре вуласа пĕлчĕ. «Клименковпа Пахомов, Шульцпа ун юлташĕсен тимлĕхĕ ĕнтĕ ку, – тесе тутине пăрчĕ те вăл, – çитес Олимпидăра утларăша программăрах хăварнă çав, вăй-хал çивĕчĕшне туптаччăр эппин, анчах малашненхи вăйăсенче утларăш пулассипе пулас марри пирки татах калаçу пулĕ-ха», – тесе ытлашши вĕчĕрхенмесĕрех лăпланчĕ. Çак кунсенчех МОКăн ĕç тăвакан комитечĕн членĕсене президент штаб-хваттере пухрĕ те Олимп юхăмĕ епле аталанса пынине тата спорта юратакансем Олимп хартийĕн 26-мĕш параграфне пурнăçланипе пурнăçламаннине тĕпчесе пĕлме кашнинех пĕр-ик çĕршыва çитсе килмешкĕн хушрĕ; тепĕр Вăййа хăйсем патĕнче ирттермешкĕн йыхравланă хуласем шутĕнче çĕнĕ ят Мускав пурри çинчен те пĕлчĕ вăл. Олимп кăшăлне çавăрма шутланă хуласен йăли-йĕркине те тĕпчемелле пулас сессиччен. Апла пулсан Пироне господинăн мĕншĕн çитсе килмелле мар Мускав еннелле? Пахомовпа Клименов хăйсен çĕр-шывĕнчи спорта самаях мухтаççĕ. Унта кайса пăхсан çитменлĕхсене те пайтах курĕ-ха Пироне. СССР спортсменĕсем, чăнхах та ĕнтĕ, пысăк кĕрешӳре ытларах та ытларах медаль çĕнсе илеççĕ; эппин, спортсменĕсен, каланă пек, тĕп ĕçĕ спорт шутланмасть-и, профессионалсем пулса тăман-и вĕсем? Олимп хартийĕнчи 26-мĕш параграфĕ шăпах спорта юратакансен мĕнле те пулсан урăх ĕçре ĕçлемелли çинчен калать, ăмăртнăшăн пысăк парне илемлле маррипе спортра мул пухас çуккине çирĕплетет. Çăкăр тупас тĕллевпе мар, вăй-хал киленĕвĕшĕн миллионшар çын спорта явăçать текен çĕр-шывра чăннипех ĕç-пуç

мĕнлине Пироне господинăн хăй куçĕпех курмалла; çула май вăл тепĕр çĕр-шыва – юлашки Вăйăра чылай медаль илнĕ Польшăна – кĕрсе тухма пултарать. Шухăшланă май МОКăн çак активлă членĕ кхм-кхм! ӳсĕрсе илет те кăпăк пек çемçе аллипе тачка янаххинчи кăшт тапса тăракан шăртне сăтăрса кăштăртаттарать; вăл çул çӳреве тухасшăн пулнине президент ал хапăлах ырларĕ.

Пĕр-пĕрин патне çитсе курасси халăхсем хушшинче ĕлĕкренех йăлана кĕнĕ. Олимп вăййи ку е вăл çĕр-шывра епле аталаннине те «çӳл турăсен» пĕлмеллех ĕнтĕ, апла телейлĕ çул пултăр сире, Пироне господин.

* * *

Çуллахи Олимп вăййине хутшăнас текенсен халь самай хĕрӳ тапхăр. Вĕсем епле вăхăт тупнă, епле май килнĕ çавăн пек тăрăшса вăй-хал ĕçне кӳлĕнеççĕ. Атлесем, акă, шоссе айккинчи çерем лаптăкĕнче 400 метрлă хушă виçсе илнĕ те хăвăрт утма хăнăхаççĕ, кĕпе-тумне вĕсем вăрман тавра тытнă карта çине хывса çакнă; ушкăнра çамрăксем те, вăй питти ассем те пур – Уравашпа Пайăрка, Шертановпа Веня Савельев хăйсем пĕр чăмăр пулнă, ытти çӳревçĕсем тепĕр йыша пухăннă.

– Кăкăрпа кăкăр, кăкăрпа кăкăр тан пырăр, – вĕрентет Герман Савельч тĕп ушкăнрисене. Сочири ăмăрту хыççăнхи канашлура кун çине тимлĕн пăхма каларĕç: ют çĕр-шыва каяс пулсан пĕччен ĕçленипе ним тăваймастăн, кĕрешӳре пĕр-пĕрне пулăшса пыма пĕлмелле.

Кашни спортсменăн хăйĕн уйрăмлăхĕ пур çав: Шертанов ялан ума чавтарса тухма хăнăхнă, Виктор та вăхăтăн-вăхăтăн пит хăвăрт каять. Пайăрка 50 çухрăма хатĕрленет те лешсемпе тан утмасть, çын хыççăн тытăнса пыма тăрăшать. Пĕр çамрăкĕ – Ваня Краснов – вăйлисем умĕнче курнăçланасшăн, вĕсене «сăмса шăлса ярасшăн» кĕтмен-туман çĕртен пуçа сиксе тухать, Веня

Савельевĕ Виктортан вĕренпе çыхăннă пек пырасшăн; Герман Савельч пĕр енлĕ тăрăха чавтарса çитнĕ хыçăн минут майлă кантарать те каллех тапратса ярать.

– Коля, Виктор, Веня! Сирĕн пĕр-пĕринпе тăпăтан пымалла, Çеркейăн вĕсен хыçне юлма та юрать, – хушать тапраннă чух ачасене тренер.

Утавçăсем хăвăрт утăпа илтерсе пыраççĕ. Викторăн пĕр енче лутра Шертанов вичкĕнет, чавсипе вăл кӳршинех лектерет, тепĕр енчи Красновăн чавси лекмест-ха та, хăй тикĕс пымасть, е кăшт юлать, е маларах тухать; Веня ун ура кĕлине пусас пек утаслать. Çеркей – хыçра. Ку йышпа пыма майлах мар пулин те, Викторăн тренер хушнипе килĕшме лекет: пысăк ăмăртусенче çумра Шертановпа Веня Савельев мар пулаççĕ, унта чутласа кăларнăн пĕр пек утăмлисем асфальта «касаççĕ». Паллă пулма çулçăллă турат чикнĕ телефон юпи тĕлне çитсен Виктор аллине çӳлелле çĕклет кăна – хыçра тăрса юлнă тренер секундомера пусса йĕппине чарать, вара çийĕнчех вăхăтне блокнота çырса хурать. Минут та вунă çеккунтран вăл аллине çĕклесе паллă парать те, тарпа йĕп-йĕпе пулнă ачасем сывлăш çавăрма ĕлкĕрсе каллех виçе тĕлне ретпе тăраççĕ; тренер аллине çĕрелле сулсан тапранаççĕ: сутанана пăрса урисене малалла вăрăммăн пусаççĕ, çапла пит вирлĕн утса каяççĕ. Сывлама йывăр, пăчă, çапах кăкăрпа кăкăр пĕр тан илтерсе пыраççĕ вĕсем – кунтан ытла васкарах кайма та çук темелле, хĕлĕхе мĕн май килнĕ таран туртса карăнтарнах çав, тата тепĕртак карăнтарсан татăлса та кайĕ темелле.

Çӳревçĕсем хăй тĕлĕнчен иртнĕ чух Савельев секундомер тӳмине пусать, ачасем сулăмпа татах малалла каяççĕ те чарăнаççĕ, унтан пĕшкĕнсе чĕр куççисене аллипе тытаççĕ, тӳрленсе утаççĕ, каллех пĕшкĕнеççĕ, хашхаш сывласа лăпланаççĕ... Çаврăнаççĕ те куçпа тренер еннелле ыйтуллăн пăхаççĕ. Лешĕ васкамасăр:

– Лерелле минут та 38,2 секкунтра, кунталла минут та 38,8 çеккунтра тухăр, – тесе пĕлтерет. – Тепре çак

вăхăтпах кайса килĕр. Ан манăр: утăмпа утă тан пырăр!

– Ну, эп юлам ĕнтĕ, – тет Çеркей.

– Сана кăштах юлни тем мар. Сан аллă километра хатĕрленмелле. Эс ыран шоссе çинче вăрăм дистанцире малта ертсе пыратăн, вăтăр çичĕ çухрăм пуçра пыма сана хушатпăр.

Тепĕр кунне ирпе Савельев спорт комитетне çитет те председательпе ун заместительне тренировкăсем irттерме лайăхрах май туса памашкăн тапăнать.

– Ĕç хыççăн çеç тухнипе малалла каяймастпăр. Ку çителĕксĕр, шăм-шак тренировка хыççăн канса та илеймест, канма та вăхăт кирлĕ – сбор туса парăр! Пайăрка, учительсен семинарне килнĕскер, пĕрле пулчĕ. Йышпа чух ăнăçлă çӳреме пулать. Сбор кирлĕ.

– Эпир кун пек хатĕрленӳ ирттерме палăртман, обществăсем хускалччăр, – тет Абрамычĕ. Сыромятин та унпа килĕшет.

– Ну, Виктора ĕçрен пушатăр ĕнтĕ.

– Ăна ĕнер те пилĕк сехетченех ятăмăр, – уншăн тăрăшнă пек кăтартать Абрамыч. – Апла эсир профессиоала тухса кайăр тата!

– Мĕн вăл профессионал? – тарăхнипе чĕтремех ерет ку сăмаха илтсен Герман Савельч. – Виктор, пирĕн мĕн пур спортсмен ăмăртусене хатĕрленнĕшĕн, ăмăртнăшăн нимле тупăш та илмест – ăçта уншăн спорт профессийĕ пултăр?! Олимп хартийĕн 26-мĕш параграфĕнче спортсмен ăмăртусене хатĕрленнĕ вăхăтра тренировка ирттерме ĕçрен пушанма пултарнине, уншăн ăна çав ĕç вырăнĕнчи шалăва тӳллемеллине çирĕплетсе каланă. Эсир тата...

– Пĕлетпĕр ăна. Эс таçта шала кĕрсе ан кай, – лăплантарать çынна Сыромятин.

– Тренировкăна комитет йĕркелени кирлĕ, апат çиме талон пама пуçлăр хăть. Кун пек пулсан эпир эрнерен тăсăлса ӳкетпĕр, урана тăсса хуратпăр. Тăват-пилĕк çын СССР чемпионатне хатĕрленет – Олимп вăййине суйласа илмелли чемпионата! – тилмĕрет Герман Савельч Савельев. – Эсир май туса памастăр.

– Обществӑсене сырӑнӑр, – тет комитет председателӗ. – Хӑйсен членӗсемшӗн вӗсен тӑрӑшма тивӗҫ.

– Комитет хускаласшӑн мар-и вара? Кам та пулсан Олимп пьедесталӗ ҫине улӑхсан мухтавне-чапне хӑвӑра илетӗр-ха эсир. «Эпир те эпир», – тетӗр анчах. Хӑвӑр кирлӗ пек пулӑшу параймастӑр спортсменсене. Ҫула хуплатӑр!

– Кама хуплано̆? Кама чарса тӑнӑ?! Эсир тата...

Каять вара хӗрӳ тавлашӑвах.

– Утакана ик тенкӗлӗх талон ҫитмест те вӑл, – хирӗҫлет вӗсене Савельев.

– Ку вӑл пирӗнтен илмест. Финанс органӗсем пур, – тавӑрать Сыромятин.

– 50 километра хатӗрленекенсене хушса ҫитермелле. Ҫав вӑрӑм ҫула республикӑшӑн камӑн та пулсан утма лекетех-ҫке.

– Халӗ ӑмӑртӑва кайма чӗнсе янӑ хут та килмен-ха, – хӑйӗннех перет комитет председателӗ.

Кӗрешет, кӗрешет Савельев – спортсменсем валли мӗн те пулин тупатех. Тӳррипе, вӑл штатри тренер та мар, вӑл пӗр техникумӑн физика тата физкультура вӗрентекен преподавателӗ ҫеҫ. Ҫавӑн пек тӑрӑшуллӑ ҫынсем пуррипе вӑйлӑ пирӗн ҫӗр-шыври спорт!

Атлечӗсем пӗр тытӑннӑ та, тем кермен ҫавӑрса лартас пек, хӑйсен идейишӗн, хӑйсен тӗллевӗшӗн ниме пӑхмасӑр малаллах талпӑнаҫҫӗ. Вӑрӑм ҫула васавлӑн утса тухас тенӗ чух, ак, ҫанталӑк пӑсӑлчӗ; каҫ ҫумӑр шарлаттарса иртнӗ хыҫҫӑн янкӑр уяртнӑ тӳпе пӗлӗтпе туртӑнчӗ те, ним сассӑр ҫумӑр йӑскама тытӑнчӗ. Вӑл пӗрре вӑрахланать те пачах чарӑннӑ пек пулать, унтан тепре шапӑртатма пуҫласа хытах тӑкать; сукмаксемпе урапа ҫулӗ кӗсел пек исленнӗ ӗнтӗ, ҫапах кустӑрмана пылчӑк сырӑнмасть-ха – хытӑ ҫул ҫӑрӑлмах тытӑнайман; асфальт тӑрӑх вара йӑр-йӑрласа шыв юхать, тусанран пылчӑк пулнӑ та, пуссассӑн ҫат-ҫатах шӗвек лапра сирпӗнет.

Пайӑрка Ҫеркейӗ, учительсен ҫуллахи виҫ эрнелӗх

курсне килнĕскер, лекцисем итленĕ хыççăн столовăйра апатланнă та Етĕрне çулĕнчен инçе те мар Студентсен хулинчи пĕр шкул-интернат общежитийĕнче канса выртать. Тренировкăна кайма ун патĕнче пухăнма килĕшнĕ вĕсем, те килĕç ĕнтĕ ачасем; килсен – килеççĕ, килмесен – килмеççĕ, Сергей Петрович тренировкăна каяссине пăрăхăçлама шутламасть-ха. Канса çитет ĕнтĕ, пуçтарăнма та вăхăт тенĕ самантра карзармăри пек нумай койка лартнă пӳлĕме Виктор çитсе кĕчĕ. Тренировка костюмĕ çийĕн çумăр яман плащ тăхăннăскер, вăл йăлтăр-йăлтăр курăнать. «Хытах çăвать-и?» – ыйтрĕ Пайăрка çын йĕпеннĕрен. «Çумăрĕ иртнĕ ĕнтĕ, кăшт çеç лĕпĕстетет», – терĕ Ураваш юлташĕ хăраса ӳкесрен шикленнĕ пек. Ачи, Пайăрка, спортри чăрсăрлăха нумай çул хушши чунра упраканскер, хăрас пирки тĕлленмен те. Виктор та столовăйăра апатлансах тухнине пĕлсен Çеркей вăрăм çула кумма иккĕшĕ те пĕр пекех хатĕрришĕн хĕпĕртерĕ. Вĕсем аялтан майкăпа трусси, çелтен çӳхе кăна спорт брюкипе куртнкине тăхăнчĕç, тавăрăнсан типĕ япалапа ылмаштарма ыттине пӳрте хăварчĕç. Çумăр, чăнах та, кăшт чарăннă, вăл йывăç тĕмĕ айккинчи ӳпре пуххине те хăратаймасăр хуллен çеç йăсăртатать. Пирĕн атлетсем асфальт шоссе çине тухрĕç; виççĕ пуснă хыççăнах урана шыв витрĕ-ха, чăлха та халь ӳт умне çăт çыпçăнса ларнăн туйăнать. Нăчăлтатса та сирпĕтсе иртекен автобус-троллейбус чăрмантарнине пăхмасăрах вĕсем хула тулашне çитрĕç. ГАИ будкине хыçа хăварсан машинăсем кăштах сайралчăç те, килекен транспорта хирĕç çулăн сулахай енĕпе çанталăк мыскарине çĕнтернĕн туйса вăйлăн ыткăнса пыма тытăнчĕ икĕ атлет. Малтанхи çухрăм юписем черетленсе хыça тăрса юлнă майăн шăм-шак хĕрсе кайрĕ те, ӳте нӳрелнĕ тум мунчари пек вĕри туйăна пуçларĕ. Çумăрĕ, лĕп шыв пек ăшăскер, хĕрпе каччă çума-çум ларса калаçнăн хитре кăна шакăлтатать. Икĕпӳрт тĕлĕнчен иртсе Виçĕпӳрт тĕлне çитерехпе хĕрпе каччă сăмахне пине çитернĕ пек,

çумăрĕ те шăпланчĕ; Хыркассине çывхарсан хайхи, театрта ларакан мăшăрсем шапăртаттрса алă çупма тытăнă пек, шалкăммăн тăкса ячĕ самантрах; унтан, вăрман çук уçлăхра, таçтан çил тухрĕ те, каш! каш! сапа пуçларĕ тахăшĕ хăяр шăвармалли витреренех. Шултра пĕрчĕсем асфальт çине тăрăнаççĕ те, кашни шăрçи, чулпа çапăннă кĕмĕшке пек, темиçе пай пулса сирпĕнет – хĕм кăларса ташланăн туйăнать халь умри çул. Брюки вĕçĕпе çанă вĕçĕсем тăсăлса вăрăмланчĕç ёнтĕ, вĕриленнĕ пит-куçпа пĕçерекен алă тăрăх, душ айĕнче тăнă пек, шыв йăрлаттарса юхать; çанталăк сивĕ мар, çумăрĕ те (хăть кăвас хур!) ăшă; шăм-шак, пĕтĕм хул-çурăм çак йывăр спортра нихçанхинчен халтăр туять. Машинăпа иртекенсем йăрласа çăвăнакан кантăк витĕр тата унта е кунта выльăх хăвалама е автобус кĕтме тухнă, плащ тăхăнă е клеенка пĕркеннĕ çынсем çак икĕ ухмах çине (урăхла мĕнле каламалла-ши тата этеммисен тĕллевне пĕлмесен?) тĕлĕнсе те куçĕсене чарса пăхаççĕ. Таçта, каймалли çĕре, каймалла пуль, тем тупăшса тавлашнă пуль вĕсем, ахальтен мар ёнтĕ тесе шутлама пултарнăн ахăртнех. Икĕ атлет ăна-кăна пăхмасăр, утмашкăн уçă та ыррине туйса, васкавлăн ыткăнать çеç; лерелле вун сакăр çухрăм пулсан таврăнас тĕлте таврăнчĕç те, пĕр машина, кăвак тĕслĕ «Волга», вĕсене хирĕç килекенскер, тепре юри чăрмантарас тенĕн каялла çаврăнчĕ. Ыр хăямат! Хĕрпе каччă ярăнма тухнă-ши, пĕрре мар, икĕ хутчен сирпĕтсе хăварас терĕç пуль? Асту тата: таптама пултарĕç тесе Çеркей машина номерне пăхрĕ – МОЁ 36-55 пулчĕ ун номерĕ. Серийĕ пирĕн чăвашăн мар-ха, Шупашкарти завода тахăш хуларан юсаттарма илсе килнĕскер пуль; халь, тӳрлетнĕ хыççăн, шоферĕ такама лартса ярăнма тухнă ёнтĕ тесе шутларĕ Çеркей. «Номерĕ интереслĕ: малти хисепĕ эпир 36 çухрăма утмашкăн тухнине, тепри вара кашни вунă çухрăмне 55 минутсенче иртнине пĕлтерет», – тет вăл çавăнтах.

Çумăр кăшт çума чарăннă вăхăтрах, шăм-шак вĕриленнине пула, çири йĕпе тум пăсланма тытăнать;

пĕр-пĕринпе пĕр-ик сăмах хушса илет те ним калаçмасăр шывлă çĕрте шыва чалт! пусса, пылчăклă вырăнта пылчăка сирпĕтсе хĕпĕртӳллĕн чавтарать икĕ атлет. Ара, хĕпĕртемесĕр! Çанталăк хăратмасть вĕсене – вĕсем этем! Çанталăкĕ утмашкăн май туса парать çеç – шăрăхра пулсан ай-ай ырмалла, халĕ çирĕм çухрăм ытла хыçа юлнă хыççăн та ал-ура çăмăллăнах хускалать. Хыркасси тĕлĕче, тинтерех хута янă столовăй умĕнче, хайхи МОЁ 36-55 ларса юлчĕ. Апат çиме е пĕрер черкке ӳпĕнтерме кĕнĕ-ши çав юри ярăнма тухнă мăшăр? Çыннисем камне пăхманччĕ-ха Виктор та, Çеркей та – хула еннелле таврăнаççĕ пулсан сенкер «Волга» тепре те иртсе кайма кирлĕ вĕсене, ун чух асăрхаса юлма пулĕ пассаржирĕсене те.

Хыркасси хыççăн вăрман хĕрринчи пĕччен пӳрт юлчĕ, исленсе пылчăкланнă брюки вĕçĕ халь пĕççе çĕклеме памасăр аялалла туртать; шӳсе кайнă çанăпа йывăрланнă пĕтĕм кипке хул пуççие тем пысăкăш тулли катка хăпартса хунăн туйăнтаракан пулчĕ, апла пулин те Викторпа Çеркей пĕр тамалмасăр утаççĕ; урисем çав-çавах вăрăммăн ярса пусăнаççĕ; алăсем, машина шатунĕ пек, каллĕ-кайллĕ харсăррăн вылянаççĕ. Çеркей леш МОЁ 36-55 такси темлескер пулнине пĕлесех тенĕскер, кашни çăмăл машина хыçран çитсе иртмессеренех çулăн сылтăм еннелле пăхса илет. Хыçа юлнă сенкер «Волга» тепре курăнмарĕ-ха. Акă, пирĕн атлетсем Виçпӳрт, унтан Икпӳрт тĕлнелле таврăнса хуланалла çывхарса пыраççĕ. Лапамри пĕччен юман юлсан çул кукринче вĕсен тĕлне вăрмантан куçне-пуçне улма пек чарса пăрахнă, кĕпи-тумĕ исленнĕ çеç мар, пылчăклансах пĕтнĕ, йĕпе çӳçне арпарштарнă хĕрарăм, пĕр çирĕм пилĕк-çирĕм сакăр çулхискер, те вăрманта ӳсĕр выртса тин çывăрса вăраннăскер ĕнтĕ, те такам мăшкăлĕ пулнăскер, çула май машина килет-и тенĕн, чăрсăррăн пăхса сиксе тухрĕ. «Ку тата мĕнле мыскара?» – сăмах хушмасăр чăтаймарĕ Виктор. «Темле этем те пулĕ тĕнчере!» – терĕ те Çеркей, чипер пынă çĕртех

ăш ан пăтрантăр тесе, куçне вăл енчен хăвăрт илчĕ. Ку вăхăтра, сисмен те, вĕсемпе юнашарах сенкер такси танлашса çын утти евĕр вăрахланчĕ; пĕр арçын, тулли те кӳпшек питлĕскер, темрен хĕпĕртесе кулнăн туйăнакан сăнлăскер, машинăн кайри алăкне уçсах вырăсла начар çавăрттарса:

– Калăр-ха, капла утнăшăн мĕн чул укçа тӳлеççĕ сире? – тесе ыйтрĕ.

«Ку ăçти çук спорт мĕнне чăнласах пĕлмест-ши?!» – тесе шутларĕ те Çеркей, пурне те пур-пĕрех ăнлантарса çитереймĕн тенĕн, нимĕн те шарламарĕ. Виктор тӳсеймесĕр:

– Хăв çулупа каях! – терĕ хыттăн.

– Чăрсăр иккен эсĕ. Спортсмен лăпкă пулаканччĕçке, – хирĕç сăмах хушрĕ пĕр пăшăрханмасăрах хăтлă машинăри арçын. – Хушаматăр мĕнле-ши, пĕлесчĕ сирĕнне?

– Ураваш! – терĕ пушшех тарăхнă Виктор. – Хăвăрпа хыттăн калаçнăшăн спорт комитетне кĕрсе евитлеме пултаратăр.

Арçын, илтнĕ ята ăша хывас пек, темĕн шухăшлаcа лăпланчĕ.

Кусем калаçнă вăхăтра леш чăх пек йĕп-йĕпе исленнĕ хĕрарăм хăйне лартса кайма йăлăна пуçларĕ. «Ăçти авăртан тухнă вутăш ами пултăн вара эсĕ? – кулarах ыйтать шофер, хулăн саслă вырăс çынни. – Ав, хыçра автобус килет – унпа ларса кайăн. Хĕрарăмĕ каллех куçне-пуçне улма пек çутăлтарса хыçалалла пăхать. Сăмах хускатнă машинăн номерĕ МОЁ 36-55 иккен. Сенкер «Волга», çӳревçĕсене куçлакан судьясене лартнă евĕр, пĕр хушă вăраххăн пычĕ те, çул вĕçĕ умĕн финиша тапнă пек хыттăн кайрĕ, шоферĕ çӳревçĕсене тем вăлтнăн аллипе сĕлтсе хăварчĕ.

Çӳревçĕсем интересленсех калаçакан кӳпшекрех сăнлă çын Пироне господин пулнине, МОК членĕ пырасси çинчен пĕлтерекен телеграмма спорт комитетĕнче выртни çинчех Виктор та, Çеркей та тавçăраймарĕç-

ха. Пироне те, Ураваш хушамата Англире тухакан бюллетеньре тӗл пулнӑ ҫинчех, ун чух тӗрӗс мар пусӑмпа вуланӑскер, «Ураваш» тенине чӑвашсен темле ятлаҫмалли сӑмахӗ пулчӗ пулӗ?» – терӗ.

Пирӗн атлетсем ҫула чип-чиперех вӗҫлерӗҫ ӗнтӗ. Пироне те, Мускавран хӑш-пӗр хуласене курма тухнӑскер, хӑна ҫуртне пырса вырнаҫрӗ.

* * *

Земфирӑн командировкӑна ҫитсе килмелли пур. Ҫула пуҫтарӑннӑччӗ ӗнтӗ вӑл. Ӑна ҫак вӑҫхӑтра: «Сире комсомол обкомне чӗнеҫҫӗ», – терӗҫ. Мӗн пирки-ши, мӗн ҫӑмӑлпа? Кӑшт ҫӳҫенерех те ним пӗлмесӗрех пулчӗ ҫав. МОК членне хулара кӑтартса ҫӳреме спорта тата акӑлчанла (ҫав хушӑрах чӑвашла та!) лайӑх пӗлекен ҫын кирлӗ иккен! Акӑ гид пулса тӑчӗ те пирӗн Вутланова. МОК членӗ, Олимп вӑййи СССРта епле аталаннине пӗлесшӗнскер, вӗсем ӑҫта-ӑҫта ҫитмеллине палӑртрӗҫ. «Ку ачин шӑл пур», – тесе кулать вашават калаҫма пӗлекен хӑна сӗтел хушшинче ҫырса ларакан Виктор пирки. Машина шоферӗ, Уравашран пӗр-ик ҫул аслӑ та ун пекех тӗреклӗ те ҫӳллӗскер, кӑна илтсен кӑмӑллӑн кулать; унӑн хӑйӗн те пиншакӗ ҫинче «СССР спорт мастерӗ» значок йӑлтӑртатать – вичкӗн ҫӑмӑл атлет хамӑрӑн тӗп спорт комитетӗнче шоферта ӗҫлет иккен, ӑна халь ҫак хаклӑ хӑнана илсе ҫӳреме хушнӑ. Сыромятин МОК членӗ килесси пирки маларах пӗлнӗ ҫинчех юхӑннӑ стадиона кӑтартмалла пулать, йӗркелеме ӗлкӗреймерӗмӗр тесе чӑнласах пӑлханса ӳкрӗ, обкомран ӑна пӗр-ик завод коллективне илсе кайма сӗнеҫҫӗ. Анчах МОК членӗн хӑйӗн кӑмӑлӗ иккен.

– Стадион – спорт ҫӗр-шывӗн вӑта чикки, – терӗ вӑл.

Завод стадионне ҫитсен Сыромятин та, Вутланова та хӑнана ытларах сӑмахпа килентерме пуҫларӗҫ. Комитет председателӗ, хитре калаҫма пултараканскер, волейбол секторӗнче пӗр тӑтӑш ӑмӑртусем пынине, футбол

турнирĕн таблицине кăтартрĕ, тĕл пулусем йĕркеллĕ иртнине вырăсла шыв юххи пек шăнкăрттарса калать. Господин ăнланмастăп тесессĕн йăлттам пӳллĕ Земфира, чĕлхине вĕрнĕ пек тытса, акăлчанла тăкăлтатать.

– Лакрей вăрманĕ пирĕн – чăн-чăн кану паркĕ, – терĕ Сыромятин стадионри уйрăм секторсем япăххи çын куçĕ умне ан курăнтăр, хăнана кунтан васкавлăн илсе тухас шутпа. Калама каларĕ те, кайран ӳкĕнчĕ: çак паркра завод стадионринчен те ытларах çитменлĕх асăрхарĕ МОК членĕ: волейболла тата баскетболла вылямалли площадкăсем çын пăхса тăман пек япăхнă. Çакăншăн Пироне мăнаçлăн кулнине сиссе чипер чĕлхеллĕ Земфира:

– Эсир лайăххине те асăрхама пĕлĕр. Ку пирĕн – ытларах кросс вырăнĕ, – тесе ăнлантарчĕ, кросс чупмалли сукмаксене, номерленĕ маршрута кăтартрĕ. – Кунта хĕлле йĕлтĕрпе, çулла çуран чупса ыр куратпăр, – шеп калаçать акăлчанла чăваш хĕрĕ.

Икĕ кинемей, магазина кайма тухнăскерсем пулас, çырма енчен хăпараççĕ. Пироне вĕсемпе сăмах хушса калаçасшăн пулчĕ.

– Тем кирлĕччĕ ĕнтĕ? – терĕç кусем тĕп чăвашла.

– Çакăнта ăмăртусем иртине курнă пуль ĕнтĕ эсир. Мала тухнисене мĕнле парнесем паратчĕç, асăрхаман-и? – ыйтать Пироне акăлчанла.

Земфира ун ыйтăвне чăвашла куçарать, унтан хĕрарăмсен сăмахне акăлчанла калать.

– Грамотăсемпе значоксем илеççĕ мала тухнисем. Хăю çакса янине курнă тата, – теççĕ чăваш карчăкĕсем. – Мĕнле çын пулчĕ, ара, ку? – пĕлесшĕн вĕсем ют чĕлхепе калаçаканĕ камне. Земфирăн ăнлантарма лекет.

Спорт керменне çитсен Пироне хăй те:

– Кун пысăкăш хăтлă çурт чылай çĕр-шывсенчи пысăк хуласенчех çук, – тесе килĕшрĕ. Сыромятин халь хăнана çĕнĕ стадион ăçта пулмаллине, манежа кĕçех туса пĕтермеллине ăнлантарать.

– Спорта аталантарма стадионĕ те, манежĕ те, керменĕ те кирлĕ, – хăй шухăшне пĕлтерет пĕр хушă чĕнмесĕр тăнă Земфира. – Анчах халăхăн пысăк пайĕ ĕç хыççăн уçă вырăна – вăрмансемпе парксене, шоссесемпе сукмаксем çине – туртăнать. Заводпа хула шавĕ хыççăн çынна лăпкăлăх кирлĕ. Çавăнпах ĕнтĕ пирĕн кроссменсем, çўревçĕсем, марафонецсем йышлă. Вĕсем хăйсен ал-ура хусканăвĕн киленĕвне ирĕклĕрех вырăнсенче тупаççĕ.

– Утларăша ўлĕмрен Олимп программинчех хăвармалла, ăна çăмăл атлетикăн ытти номерĕсемпе пĕрлех аталантармалла тесшĕн-и эсир? – чеен ыйтать Пироне.

– Эсир вара утларăшпа марафон пирки урăхла шутланă-и? – майĕпен çавăрттарса хурать Земфира та вăлтса.

Харпăр хăй иленнĕ спорт çул-йĕрĕшĕн çирĕп тăни – лайăх ен сирĕн, – хĕре мухтама лекрĕ Пиронен.

– Эсир хăвăр, каçарăр-ха мана, çамрăк чух мĕн енĕпе айхашнă? – ыйтма хăйрĕ Сыромятин.

– Сирĕн хулара унашкал спорт пачах та çук. Халăх кăмăлĕн чылай енне маннă вĕт эсир? – спорт комитечĕн председательне куçран пăхрĕ господин.

– Пăрахăçа тухнине те çĕнетесшĕн тимлетпĕр, çĕннине те алла илесшĕн вăй хуратпăр. Ача-пăча лапталла чунтанах киленсе вылать, çамрăксене курăк çинче хоккейла выляма вĕретесшĕн, – сăмахне ваклать Сыромятин.

– Олимп вăйăйинче эпĕ стенд çине тĕл пересsипе хутшăннă, унччен ухă пересsипе иленнĕ, – пĕлтерчĕ господин хăй пири. – Халĕ спортăн çав енĕ те тивĕçлипех Олимп программинче.

– Пирĕн чăвашсем мĕн авалтан ухă пеме ăста пулнă.

– Астумастăп. Курман та, илтмен те.

– Халлĕхе ку енĕпе чăвашран никам та пысăк кĕрешўсенех çитеймен-ха. Малашне хамăр хушăмăртан та пĕри çĕр-шыв командине кĕрессе, Олимпиадăна

хутшăнасса шанатпăр. Шăтса тухать вăл спорт пирĕн, аталанать, – сăмахран ӳксе юлмасть Сыромятин.

Пир-авăр комбинатĕнчĕн стадионĕнче чăнласах ухăран сăнă перессипе тăрмашанакансене курсан Пироне сăнĕ, ахаль те хавслă пекскер, пушшех çуталса кайрĕ.

– Спорт тĕнчиех-ха сирĕн патăрта, – килĕшрĕ вăл халь. – Ну, мана, старика, пĕр сăннипе пертерсе пăхтармăр-ши?

– Хĕр ачи! – чĕнчĕ Вутланова. – Мĕнле-ха сирĕн ятăр? Лена Николаева-и? Ăçта ĕçлетĕр? Ткачиха-и? Вăт, Лена, çак господин ухăран персе пăхасшăн. Хирĕçместĕр-и?

– Тархасшăн, – тăсать аллинчи уххине хĕр. Хăй çавăнтах тренер еннелле пăхса илет.

– Юрать, юрать. Акă виçĕ сăнă, – килĕшет тренерĕ. – Фабрикăна иккĕмĕш сменăна кĕрччен вăхăт пур-ха пирĕн. Хăнăхма ĕлкĕрĕпĕр.

Майне пĕлсех уxха тытать Пироне, чип-чипрех карăнтарса илет те сăннине кăларса ярать...

– Паха. Тавтапуç сире, – тав турĕ ирĕк панăшăн господин. – Ăсталанăр. Сире ку енпе те ăнăçлăх сунатăп.

Комбинат стадионĕнчен тухнă чух Пироне господин шухăша путать, ăна совет çыннисем спорта чунтан юратни, вĕсен патриотизмĕ пысăкки тĕлĕнтерет. Спорта аталантарса халăх сывлăхне лайăхлатма патшалăх укçа-тенкĕ уйăрса пани çеç мар, çыннисен шухăшкăмăлĕ мал ĕмĕтлĕ пулнинчен, мул тытăмĕнчен тухнă ирĕклĕ халăх хăйне пур енлĕн аталантарса пынинчен килет те-çке атлечĕсем Олимп медалĕсене ытларах илесси! Чăвашран та, ав, СССР команди Олип вăййине хутшăнма пуçланăранпах кам та пулин пысăк стартсене çитет, хăшĕ те пулсан медаль илсе таврăнать... Çакă вăл спорт епле шайрине ĕнентерсе калакан çирĕп сăмах. Пироне хăй куçĕпе хăй курчĕ, ав, икĕ çӳревĕç çумăра-мĕне пăхмасăр асфальта утаспа виçнине, кунта сменăна кĕрес умĕн такачиха ухă тытнине, Мускав та, Шупашкарпа ытти хуласем те СССРта спорт вăй илнине кăтартаççĕ.

– Çĕнĕ стадион тума пуçăнни миçе çул сирĕн? – пач кĕтмен çĕртен ыйтрĕ господин.

– Икĕ çул, – çухалса каймарĕ Сыромятин.

– Миçе çултан вăл çĕкленсе ларĕ те хута кайĕ?

– Çак пиллĕк çуллăхра.

– Пире спорт комплексĕсене мĕн вăхăтра туса лартма пултарни кăсăклантарать.

– Ун пек пысăк ĕçе тытнсан халăх воскресника тухать пирĕн. Пир-авăр ĕçченĕсем те çак стадиона кĕске вăхăтрах туса лартрĕç.

– Спорт комплексĕсем пурри, ăна тума пултарни Олимпиадăна чĕнес текен хулашăн – чи кирлĕ услови.

– Вăл çаплах. Пурте пĕлетпĕр ăна.

– Мускавра Олимп вăййине ирттерме килĕшсен эпир хамăр сăмаха пăсмастпăр. Ĕç çыннин кăмăлĕшĕн аталанакан тĕнчери спорт пĕрлĕхĕ те çирĕп сăмаха юратать, – татăклăн каласа хучĕ Пироне.

## Вăтăр улттăмĕш сыпăк

Ют çĕр-шывран килнĕ хăнана ăсатнă хыççăн Земфира каллех хăй ĕçне кӳлĕнчĕ. Акă, унăн сĕтелĕ çинче пĕр пек япала çичен калакан икĕ çыру выртать. Республикăри çурхи кроса хутшăнайман пирки ялти çамрăксем пăшăрханса çыраççĕ. Земфирăн çыру килнĕ района – Асамата çитмелле. Паллă спортсменсем – Пайăркапа Капарков – пур çинчех мĕншĕн çав район, чăнах та, республикăри ăмăртăва команда ярайман?

Çитрĕ Земфира Асамата. Районти спорт комитечĕн председателĕ шыв пулли пек вăрт-варт хусканакан ача-мĕн-ха. Тăрăшни сисĕнет темелле, анчах ĕçне пĕлсех çитейменни те пĕрре пăхсах курăнчĕ. «Чылай районта ĕçтăвкома кĕрсен «Ĕçри паттăрсем» Хисеп хăмипе пĕрлех спорт стендне те курма пулать, сирĕнне асăрхамарăм-çке», – терĕ те Земфира, «Çук, пирĕн

ун пекки ним те çук! Пирĕн районта спорт витрини тĕсне кураймастăн!» – çатăлтатса калаçрĕ кунти спорт пуçлăхĕ. Ун сăмахĕнче çав япалана такам килсе туса паманшăн ӳпкелешни уççăнах сисĕнет, анчах кама тыттарса тутарасшăн вăл – паллă мар.

– Спорт стенчĕ йĕркелесси сан ĕç-ха вăл, – лăпкăн кăна пӳлчĕ ăна журналистка. – Çурхи кроса мĕншĕн хутшăнмарăр?

– Пайăркана роно иккĕ ыйтсан та ямарĕ. «Вăл Нальчикра та пулнă, çитет ăна», теççĕ, – правур ăнлантарать районти спорт ĕçне ертсе пыракан çын, айăпĕ пачах та хăйĕнче мар тенĕ пек.

– Пайăрка кроссмен мар-ха, унсăрăн команда йĕркелеймерĕр-и? – тĕпчет журналистка.

– Райпоран пĕрне ĕçрен илсе тухрăм, тата колхозран Валя Иванова килчĕ – икĕ çынпах ĕç тухмасть çав. Командăра çурри вун ултă-вун çичĕ çулхисем пулмалла тенĕ. Ăçта пуль тетĕр çав çулхи яшсемпе хĕрсем? Шкулта вĕренеççĕ вĕсем. Пуçлăхсем урлă сикейместĕн: «Министерствăран приказ пулать – яратăп», – тет роно заведующийĕ.

– Ăмăртăвĕ канмалли кун иртет-çке? – хирĕçлет ăна Вутланова.

– Шăмат кун чылай учреждени ĕçлет, – тĕрĕснех калать ку ачи те. – Ăмăртусене халь вырсарни кун мар, шăмат кун ирттерме пуçларĕç. Çитменни çине тата палăртнă вăхăтне те темиçе хут улăштарчĕç. Командипе кăпăр-капăр тухса кайма пулать-и пирĕн патран? Ĕçтăвкомра кашни пайăн çăмăл машина пур – маншăн команда илсе кайма пĕри çук. Автобус килмерĕ е хăв кăшт ĕлкĕреймерĕн пулсан çӳре кайран чупса. Çыннине унтан-кунтан пухма та çăмăл мар.

– Çыру авторĕ Иванова патне кайса килĕпĕр, – сĕнет облаçран килнĕ корреспондентка.

– Кайăпăр. Машина парĕç-и эсир ыйтсан? – вăлтса хурать районти спорта ертсе пыракан.

Райком секретарĕ, хĕрĕх çулсенчен иртнĕ пирчем

çын, журналистка мĕн çăмăлпа килнине пĕлсен унпа кăмăллăн калаçрĕ, яла çитмешкĕн çиййĕнчех машина та пулчĕ.

Ферма вăрман хĕрринче ларать. Дояркăсен канмалли çурчĕ клуб пекех. Ёне сăвакансем каçхи сăвăм тĕлне выльăх валли апат хатĕрлеççĕ иккен. Çыру авторĕ Иванова кăкшăм пек пысăк кăшмана витререн илет те хĕç пек çуталса кайнă çĕçĕпе чăрт-чăрт-чăрт касса турать. Алли епле çав териех хăвăрт вылянать-ши унăн? Пĕр минут пек хушăрах витрери кăшмана вакласа валашкана тултарчĕ, унтан витре илме ыткăнчĕ. «Çакă чи малтан ĕлкĕрет-çке пирĕн, – тет ун пирки ферма заведующийĕ, – ик тӳпе çитерес тейĕ, анчах нормăран ирттерме юрамасть. Çитет кунпа сана, утă хурса паратăн». – «Уттине хатĕрлесе панă эп!» – кулать маттур хĕр.

Çыннăн ал çавăрăнăшне ытараймасăр Земфира кăшмана хăй тураса пăхасшăн Вальăран çĕçĕ илчĕ те тепĕр дояркăна пулăшма пычĕ. Хăнăхман алă пĕрре пуснипех касса кăлараймасть иккен кăшмана. «Капла манран сĕт суса илесси пулас çук», – тет Земфира. «Хăнăхсан – вĕренетĕр», – кулать те Иванова çĕççе епле тытмаллине кăтартать.

Ĕçе вĕçлесен уйри ĕнесем киличченхи пушă самантра Земфира дояркăсемпе калаçу пуçарчĕ.

– Эпĕ хам вырăна ĕне сума аннене хушса хăвартăм, района вун икĕ çухрăм пылчăк çăрса çитрĕм – юлашкинчен каймастпăр терĕç мана, – пăшăрханса пĕлтерет колхозри ĕçчен хĕр. – Пушă вăхăтра кросс чупса хатĕрленни ахалех çухалчĕ, хам вăя ыттисем хушшинче тĕрĕслеймерĕм.

Земфира ăна тренировка тума пăрахмалла марри çинчен ăнлантарать.

– Кĕçех ялти çамрăксен вăйĕи çитмелле, – тет вăл, – хатĕрленĕр. Ăмăртăва чĕнтерме хам çине тăрăп.

Хăйĕн йăмăкĕ пек туйăнакан çак хĕре, май килсен, вăй-хала туптамашкăн пĕрле ертсе çӳресси килет Земфирăн.

– Ĕç паттăрĕсен Хисеп хăминче тутăрпа ларакан хĕр пур сирĕн. Çак Иванова вĕт-ха вăл? – ыйтрĕ пăртакран комитет председателĕнчен Вутланова.

– Çавă. Ĕне сăвакансен иртнĕ канашлăвĕнче ăна президиума суйларĕç, – пĕлтерет спорт çынни.

– Йывăр ĕç хушшинчех вăл вăхăт тупса тренировкаирттерет – ăна ăмăртăва илсе каяйман эсир, – ӳпкелет çак пуçлăха журналистка.

– Пурте манран килмест çав, – айăпне хăй çинчен сиресшĕн ку çамрăк.

– Пĕр çынран та нумай килет. Команда хатĕрленĕ чух санăн райкомпа та калаçсан пăсмасть. Ял ĕçченĕсем хăйсем вăйлине спортра та кăтартса пама пултарччăр, – тет каллех Земфира.

Асамат районĕнче пулнă хыççăн Вутланова республикăри спорт комитетĕнче протоколсемпе ăмăрту календарьне тишкерчĕ. Чылай район çулталăк хушшинче республикăра мала тухассишĕн иккĕрен ытла хутшăнман та иккен, виç район пĕрре те команда тăратман. Отчетра кăтартнинче ĕненмелле маррисем те пур.

Кун хыççăн хаçатра «Олимп çулĕ – олимпиецсемшĕн çеç мар» статья пичетленсе тухрĕ. Ячĕ айне «çак дефиса пурнăçлама мĕн чăрмантарать?» – тесе палăртса çырнă. Сăмаха ним пытармасăр уççăн калани республикăри спорт комитечĕнче ларакансемшĕн уяр кунра тип аçа çапнă пекех пулчĕ. Аслати кĕмсĕртетнĕ хыççăн тăвăл лăскать-çке – акă, хаçатра çырнине ятарласах спорт комитет ларăвĕнче пăхса тухма лекрĕ.

– Ку эрнере районсенче ĕçпе юрă уявĕсем пулаççĕ, ака туй тейĕпĕр ăна. Унта ăмăртусем ăнăçлă иртчĕр тесен президиум членĕсемпе инструкторсен районсене кайсан пăсмасть. Республикăри ăмăртăва хутшăнма чылай коллектива шăпах команда йĕркелеме пулăшни пулĕччĕ ку, – сĕнет Земфира Андреевна Вутланова.

– Вăт-вăт, ку лайăх. Статья авторĕ те пăрăнса юлма-

сан пахаччĕ, – чеен пăхса сăмах хушшине кĕрет Борис Абрамыч.

– Каятăп, эпĕ те каятăп, – терĕ хĕрӳленнĕ журналистка.

Çак шухăша чылайăшĕ ырларĕ, хирĕçлекен никам та тупăнмарĕ.

– Çĕр-шывра мала тухма хатĕрленекенсене те ку ĕçе явăçтарăпăр – вĕсем унта кун çухатчăр, – çапма пĕлмен пушши хăйне пырса тивнĕ пек пултăр тенĕн каларĕ Абрамыч. – Ураваша тăван районне çырăр.

– Вутланова Асаматрах пултăр.

* * *

...Ирхи сулхăн çӳçентерет. Йывăç-курăк çумăр хыççăнхи пек нӳрĕ, такам шăлса кайнăн туйăнакан çап-çутă асфальтпа йăрт-йăрт-йăрт пусса лăпкăн пырать спорт тумĕ тăхăннă виçĕ çамрăк. Урана малалла илсе пуснă чух сутана çавăрăнать те, шăлавар хыçĕнчи пĕртен-пĕр кĕсье, япала чикнипе мăкăрлнăскер, мăкăльт-мăкăльт вылянать. Çапла, юха çавăрттарнă пек, тусан çĕклесе пĕр машина иртрĕ, унтан тепри вăнлатрĕ. Виççĕн çаплах ниме пăхмасăр йăлт-йăлт-йăлт утаççĕ. Хуларан тухнă чух çӳçеннĕ шăм-шак ăшăрханă ĕнтĕ. Йывăççен вăрăм мĕлки тăрринчен татăлса çул урлă пăрăнчĕ; ăна сирсе хушшăн-хушшăн хĕвел тăрăхĕ выртать. Виççĕн тикĕс утăпах, пусма-пир сарнă пек, асфальтпа анаталла анса тăвалла хăпарчĕç; автобус харсăррăн кĕрлесе иртрĕ – çулри çынсем çаплах ниме пăхмасăр тăп-тăп-тăп утăмлаççĕ.

Хĕвел çĕкленнĕçемĕн йывăç мĕлки кĕскелсех пычĕ, хирĕç килекен е майлă иртекен автомашинăсем йышланчĕç.

– Вун пилĕк çухрăма мĕн вăхатра тухрăмăр? – ыйтать пĕри юлташĕнчен.

– Сехет те хĕрĕх минутра.

– Нумай, – тавăрать тепри.

– Васкама кирлĕ мар – умра тата çитмĕл çухрăм, вăя перекетлĕрех пырас пулать, – ăнлантарать асли.

Кун шăрăхлана пуçларĕ, тута хĕрри çилĕмленчĕ. Кĕсьере кашнин глюкоза ампулĕ пур, ĕçес килнĕ пек пулчĕ пулин те, пĕри те ăша шĕвек ярас тесе шарламасть-ха: умра, çирĕм пилĕк çухрăмри çул çинчи столовăйра, апатланма калаçса татăлнă вĕсем малтанах. Кашни километра, планпа палăртнă пек,ултă минутран кăшт нумайрах вăхăтпа иртсе пырать виçĕ çамрăк. «Каплах васкаса ăçта каятăр?» – ыйтаççĕ тĕлĕннипе çынсем. Чĕнмен çынна чăваш юратмасть, мăн кăмăллă тет. Çулри çак çамрăксем ăна-кăна уямаççĕ, сăмах чĕнекенсене курман пекех пыраççĕ. «Инçе каятпăр-ха», – тесе те пулин каламаншăн ятлăпăр-и вĕсене? Çав икĕ сăмаха шарлассишĕн миçе хутчен çăвар уçма лекет вара вĕсен сакăр вун пилĕк çухрăма утса тухиччен?! Çынна сăмах хушма та вăй кирлĕ. Вăя çаксен утас çĕре ямалла. Çул вĕçнелле чĕптĕм хал та ай-ай! хаклă пулĕ.

Тинĕсри крейсер пек юхăмпа тӳррĕн вашлаттарса пырать виçĕ атлет. Çирĕм пилĕк çухрăм килсен вĕсем кăштах вăрахланчĕç те столовăя апата кĕчĕç, кунта нумай тытăнса тăмарĕç васкакансем, икшер пĕчĕк кукăль çирĕç те, сахăрлăрах тутарса чей ĕçрĕç кăна, вара шăмшак çемçелсе ыйăннине туйма пуçличчен малалла уттарчĕç.

Умри ялсенчи çынсем халь спорт костюмĕсене хывса пилĕке çыхнă, майкăпа трусси вĕççĕн çеç пыракан, пуçа шăрăхран сыхланмалли шурă кепкăсем тăхăннă çамрăксене тĕлĕнсе пăха-пăха юлаççĕ. Çӳревçĕсен хĕвелпе пиçсе хĕрелнĕ çара хулĕсене хулен-хуллен шурă тăвар та пуса пуçларĕ.

– Çак çырмара шыв пулĕ, ĕçесчĕ, – тет Веня Савельев.

– Çăвăнаттăм халь, – пăхать çырма еннелле Иван Краснов.

– Унта анса вăхăт ирттермĕпĕр: чĕр шыв хавшатать, пĕрре çăвăнсан тăтăш çăвăнас килекен пулать – час ыратпăр, – чарать кусене Виктор Ураваш.

Пĕрер ампула глюкоза ĕçеççĕ те ниçта пăрăнмасăр, кăшт та чарăнса тăмасăр утаççĕ инçери яла çуран кайма тухнă спортсменсем. Пĕр салара магазин пулчĕ те, унта çимелли илчĕç. Çӳлтен çӳле хăпаракан хĕвел çунтарса ярасла хĕртет. Сывлама йывăр. Тута хĕрринче сурчăк çилĕмленсе ларчĕ, сурсан та çĕре ӳкмесĕр тăсăлать вăл. Кашни çухрăма çĕнсе илмешкĕн çичĕ минута яхăн иртекен пулчĕ вăхăт, çапах йывăрлăха çĕнес тесех пыраççĕ çулри атлетсем. Ĕнсерен хĕртекен хĕвел пуç урлă каçса ума ӳкрĕ; питрен хирĕç пăхса хĕрӳ кăвар çатмари кăвăрча ташлатнă пек ăшалать халь вăл çулри çынсене.

Машинăсем иртнĕ чух пушшех пăчă, тусанпа бензин шăрши сывлама йыăрлатать. Веня Савельевăн урараn ура иртми пулчĕ ĕнтĕ, Виктор та малтанхи пек çăмăл пыраймасть, тута хĕррисем хулăмланнă унăн, куçĕ пысăкланнă; Ваня Краснов такам хĕненĕ хыççăн пăрăнса утнă пек халсăррăн пырать.

– Часах çул кукрине тухатпăр, унта столовăй пур, – тет Виктор хăйне те, юлташĕсене те хавхалантарса. – Ун хыççăн киле çитме вун икĕ çухрăм çеç юлать.

Каяс тесен çак юлашки инçĕше автобуспа е машинăпа ларса кайма та юрать. Çук, ку шухăш пуçа та пырса кĕмест. Вĕсем сакăр вун пилĕк çухрăма спорт мелĕпех утса тухма палăртнă та, çавна пурнăçлатпăрах тесе, чун хавалне çĕклесе пыраççĕ.

Юрать, тавтапуçах, çул çӳремелли вырăнсенче хушшăн-хушшăн столовăй пур, яшкапа котлет, ик стакан кисел илсе çинĕ-ĕçнĕ хыççăн «мотор» калллех малалла туртрĕ.

Çĕнĕ Çăкасара вĕсем кăнтăрла иртсен виççĕре çитрĕç.

– Район ака туйне килтĕмĕр, унта ăмăртусем ирттермелле пулать,– терĕ амăшне Виктор.

Ăшă шывпа çăвăнса апатланнă хыççăн çулра ĕшеннĕ çынсем выртса канасшăнччĕ, анчах выртсан выртас килмест, пĕр вырăнта лараймастăн-тăраймастăн та иккен, ирĕксĕрех хуллен уткалас, хускалас пулать. Кĕтӳ янă вăхăталла çеç шăм-шак кăштах лăпланчĕ. Пит ĕшеннĕскерсем кайран вара туймиех çывăрса кайрĕç.

Ирпе тăххăр тĕлне виçĕ ача район центрнелле лĕпĕс-лĕпĕс чупрĕ. Пĕçĕ çĕкленесшĕн мар, ура пакăчакĕнчен пăт пуканĕ çакса янăн туйăнать – çапах та чупупах пыраççĕ çамрăксем. Райĕçтăвком тĕлĕнче тавар турттармалли машина ларать, кузова ик-виçĕ çын плакатсемпе тĕрлĕ япала хурать: ака туй ирттермелли çывăхри вăрмана кайма пуçтарăнаççĕ иккен. Кунти спорткомитет председателĕ хăй те, тата ăмăртусене хутшăнакан пĕр йăрă çамрăк çакăнтах вăшкăртса çӳрет. Ака туйĕнче икĕ волейбол площатки тума, унсăр пуçне çӳле улăхмалли шерте лартма палăртнă.

– Чупассипе, унтан тăршшĕне сикессипе ăмăрттарма май çук-и? – ыйтать Виктор.

– Пулать, паллах. Пĕтĕмпех ĕлкĕрейместпĕр терĕмĕр, – хыпарлать районти спорта ертсе пыракан хастар çамрăк.

– Йĕркелесен çын тупăнать, эпир пулăшатпăр, – сĕнет Виктор.

Комсомолпа спорт активĕ вăрманти уçланкăра çур кун тĕрмешрĕ. Кайран Веня Савельев хăйсен ялне кайрĕ, Иван Красновпа Виктор Çĕн Çăкасара таврăнчĕç. Кусем çитнĕ çĕре вĕсен пӳрчĕ умĕнче тин килсе тăкнă вутă купаланса выртать.

– Машинăпа сутма килнĕ те: «Хаклă тесе ан шутла, кинеми», – терĕç. Вутти лайăх пек туйăнчĕ – хурăн та, йĕлме те хутăш пур, ăвăсĕ те çирĕп,– хĕпртесе калать Улюн аппа, Виктор амăшĕ. – Çакăнта карта çумне купалас.

– Тем купаласа тăриччен тататпăр, – сăмах хушрĕ Краснов.

– Вăрăм çулра ывăннă хыççăн шăм-шак хытса ларасран хускану пултăр эппин, – терĕ те Виктор апатланса кăшт кансанах сарайĕнчен пăчкă илсе тухрĕ. Ашшĕн, Кĕркури пиччен, килти ĕç хатĕрĕ яланах тăнтăн пулнă, пăчкă халĕ те çивĕчех, вут татмалли стан та чăнкă-чăнкă. Урлă пăчкă часах вшик-вшик шăхăрса кĕрпе сирпĕте пуçларĕ.

* * *

Земфира Андреевна Вутланова та çак кунхине Асамат районĕнче пулчĕ те ака туй ирттерме хатĕрсем çитернĕ хыççăн тăван килне çитме шутларĕ. Райком секретарĕ, иртнĕ командировкăрах паллашнăскер, хăйсене пулăшакан çынна çула кайма машина та пачĕ, шоферне ирпе пырса илме те хушрĕ.

Пӳрт умĕпе яланах тĕрлĕ тренспорт иртнине пула, урамра «Газик» çитсе чарăннине те, алăк шалтлаттарса уçăлса кӳминчен çын тухнине те килтисем асăрхамарĕç, илтмерĕç-тумарĕç. Земфира вара пӳрте (час-часах çакăн пек пулать унăн) вăрманти кайăк йăва патне пынă пек шăпăрт та сисĕнчĕксĕр кĕрсе тăчĕ. Йăмăкĕ кил хушши кантăкĕ еннелли пĕчĕк сĕтел хушшинче хутла вĕренес ĕçе тытăннă – тем хулăнăш кĕнеке купаланать хăйĕн умĕнче; амăшĕ тĕпелте аппаланать. Кăвакрах кĕпи умне шурă саппун çакнă вăл, çӳçне те шурă тутрăпа каялла пуçтарса çыхнă, сак çинчи хутаçран лутукпа çăнăх ăсса илет те йывăç чĕресе ярать – килте çăкăр пачах пĕçерменрен уявсем умĕн кăвас катки вырăнне тыткалать вăл çав пĕр витре ытларах кĕрекен çăка чĕресе.

– Сывлăх сунатăп! Вилсе пĕтнĕ-и тетĕп, сас туса кĕнине те сисмеççĕ, – терĕ ăшă кулăпа урай варине иртнĕ Земфира.

Çын сасси хăлхана кĕрсенех камне пĕлнĕ амăшĕ каялла çаврăнчĕ те лутукне хунă хыççăн çăнăхлă аллине шăлкаланăçемĕн халь çине чылай пулать килсе çӳремен хĕрне пуç тӳпинчен тапратса ура тупанне çити сăнарĕ.

– Уява килетех пуль терĕм çав, паян ашшĕпе те калаçса илтĕмĕр, – терĕ вăл кĕлетке-çурăмран та, сăнран та ним чул улшăнман, хĕвелпе пиçĕхнĕрен кĕре сăнлă курăнакан хĕрне. Земфира та амăшне, кăштах ватăлса хыткаланнăскерне, ытарайми пăхать. Ку вăхăтра Рита, кĕçĕн хĕрĕ, ыткăнса пырса аппăшне ыталаса илчĕ ĕнтĕ.

– Мĕнпе çитрĕн: автобуспа-и, самалетпа-и? Эпĕ, паян килмесен, ыран ирхи самолетпа çитет-и тетĕп, – шăкăлатрĕ вăл, ниçта кайса кĕрейми хĕпĕртесе

ӳкнӗскер. Хӑй, вуннӑмӗш класс хӗр ачи, ҫавӑнтах экзаменсене «пиллӗксемпе» тытнине, аттестат иличчен тата икӗ тӗрӗслев кӑна юлнине хыпарлама та ӗлкӗрчӗ.

– Куратӑп: пусма ларнӑ чӑх евӗр туйӑнатӑн. Хам та ҫавӑн пекчӗ, – мухтать ӑна аппӑшӗ.

– Мӗнле пурӑнатӑн, хӗрӗм? Ҫыру та ҫырмарӑн та, пӑшӑрханатпӑр. Хамӑр, пахчари ҫурхи ӗҫсене пула, пырса килме ерҫеймерӗмӗр. Халь эпӗ отпуска тухрӑм ӗнтӗ, аҫу паян та экзаменра. Тепре те тыттармалла унӑн, – калаҫрӗ амӑшӗ, вӑтам шкул учительници Серафима Матвеевна. Унтан вӑл аслӑ ачи Олег, Свердловскра пурӑнакан офицер, нумай пулмасть ҫыру янине те, вӑл кӗҫех академие кӗме экзамена каймаллине те хыпарларӗ, Шупашкарти йӑмӑкӗ ҫырать-и, ҫырмасть-и тесе те ыйтнине те калать.

Земфира кунти ака туйӗнче пулаймассине, кӳршӗ районтинче ӑмӑртусем ирттерме пулӑшмаллине каласан, ялти кирек хӑш хӗрарӑм пекех, ачисемшӗн тӑрӑшакан амӑшӗн каллех чӗри вӑркарӗ.

– Ирпе эс кайиччен кукӑль пӗҫерме чуста йӳҫӗтсе ӗлкӗресчӗ апла, – тет вӑл, мӗн хыҫҫӑн мӗн тӑвассине маланах тӗплӗн палӑртма хӑнӑхнӑскер. – Ӗҫӗ те санӑн часчас ҫул ҫӳремелли пулчӗ те, пӗр вырӑнта ларaймастӑн та пуль.

Амӑшӗ, ывӑлӗ-хӗрӗ шӑпишӗн ырми-канми шухӑшлаканскер, тахҫантанпах ыйтса пӗлес тенине те сӑмах ҫитерсе ыйтать.

– Мӗн, килте пурӑнмастӑн та, пӗлместпӗр. Каччӑ тавраш пуррине сисмен санне. Аннӳнтен пытарма кирлӗ мар, – тет вӑл. Земфира ӑна каччӑ ҫинчен шутлама мар, ним тума та вӑхӑт ҫитменнине, спорт та самаях кун вӑрланине пӗр пытармасӑр пӗлтерет.

– Ташӑсемпе ҫамрӑксен каҫӗсене ҫӳремен эпӗ, – тет вӑл тӳррине тӳррӗн. Анчах калаҫура сасӑ кӑшт улшӑнинченех сисӗмлӗ амӑшӗ хӗрӗ чуна пӗтӗмпех уҫса паманнине те туять.

– Спорта иленнӗшӗн савӑнатпӑр-ха, аҫу та кӑмӑллӑ,

– шăкăлтататать амăшĕ тепĕртакран. – Эсĕ хамăр район-ти Çĕн Çăкасар ачи çинчен хаçатра çырса кăларнăччĕ те, «Ăшă сăмахсем шеллемен уншăн пирĕн хĕр», – терĕ аçу. «Кĕрӳ пуласси спортсменсен йышĕнчен-ши?» – тесе шутларăм эпĕ те хам ăшра.

– Виктор Ураваш та-ха вăл. Çынни каччах та мар, юлташла калаçнă эпир унпа, – пытармасть хĕрĕ. – Халь вăл хамăр район ака туйне килнĕ.

Ку сăмахсем хыççăн Серефима Матвеевна хĕрĕн чĕринче мĕн пуррине сиссе илет те татах ыйтма пуçлать.

Мĕн çинчен, мĕнлерех каламалла-ши урăх Земфирăн? Виктор пирки епле пулмаллине вăл хăй те пĕлмест-ха, ун çинчен хитре очерк çырма шутласа хунăччĕ те, халь çав юлташла туйăм амаланса пычĕ. Ачи тата пуçласа чĕрене вăркатнăскерех пулчĕ.

Пурнăçра каччăсем Земфира еннелле çаврăнса пăхман мар-ха, унпа çӳрес текенсем халĕ те тупăнĕç, анчах журналисткăн канăçсăр ĕçĕпе спорт юхăмне лекнĕрен пуçра пысăк ĕмĕтсем капланаççĕ те, хăй шăпи пирки шутлама хĕр ерçеймест. Кĕçех, ак, Олимп вăййи çитет, унта кайма Земфирăн та тивĕçлĕ пуласчĕ, спортăн пысăк форумĕнче ăмăртасчĕ. Виктор улăхĕ-ши тата Олимпăн пысăк тӳпине?

Пӳртре ĕçленĕ те калаçнă хушăра ашшĕ шкултан çитрĕ. Кун каçа экзаменра ларнăскер, вăл сăнран тем халран ӳкнĕ пек туйăнать; ывăннă тĕслĕ сăн-пичĕ халь хĕрне курсан çуталса кайрĕ.

– Земфира килнĕ-çке! Çухалман тем-ха, çынни çĕр çинче пуррине те хаçатри статйисене вуласа çеç пĕлетпĕр те, – сăмахларĕ Андрей Ефимович хаваслăн. – Спортсменсемпе час-часах паллаштарать вăл. Виктор Ураваш çинчен çырнă статьяна районти хаçатра та пичетлерĕç. Сăн ӳкерчĕкре ачи чиперех пек туйăнать. Мĕнлескер-ши? Йĕркеллĕскерех-и?

«Виктора ытларах савса çыртăм-ши? Хам ун пек пулать тесе шутламанччĕ-çке!» – кăшт ӳкĕнчĕ Земфира. Амăшĕпе пĕр пытармасăр калаçнăскер, халь вăл яланах

ырă кăмăллă курăнакан ашшĕнчен те Викторпа вĕсен хушшинче юлташла туслăх пуррине пытарса тăмарĕ, Уравашăн çемйи К. хулинче пурăннине те пĕлтерчĕ.

– Ята ямалла ан пултăр. «Кам?» – теççĕ, «Çав», – теççĕ. Чыса упрама хушаççĕ, – пĕр ятлаçмасăр вĕрентсе калать Андрей Ефимч.

Амăшĕ ку самантра газ чĕртсе яшка лартса яма ĕлкĕрчĕ.

– Анкартинче пултран ӳсекенччĕ. Курăк пусса илмен-и? – ыйтать Земфира, хăй те хывăнма ĕлкĕрсе çĕр улми шуратма тытăннăскер. Çакна илтсен Рита пĕр сăмахсăрах тухса каять те саппун чĕрçипе сарлака çулçăллă кăштăр-кăштăр курăк таса кĕрет. Амăшĕ стаканпа çĕпре çĕнетме ларнă ĕнтĕ.

– Ирпе Земфира кайиччен кукăль пĕçерме ĕлкĕресчĕ, – калаçать вăл ĕçленĕ май. – Пĕркун газ кăмакинче симĕс суханпа çăмарта хурса хупланă кукăль хитре кăна пиçнĕччĕ.

– Хам та пулăшăп-çке, – хавхаланать Земфира.

Шултра çеçкеллĕ пултрана вăл шывпа чӳхесе турать те сиксе вĕрекен яшкана ярать. «Виктор, сан çинчен шутлама пăрахмалла мар-ши?» – палăртать ăшĕнче, анчах хăйне çав ят, çав сăнар темле хăват парса тăтăн туйăнать те, ăна ырăпах аса илет.

* * *

Çуллахи кун вăрăм. Çĕн Çăкасарта вăй питти икĕ çын ывăннă шăм-шакпах пĕр машина вутта хĕвел аниччен татса пĕтерчĕ.

– Куна ыран ака туйĕнчен таврăнсан çуратпăр, – терĕ хул-çурăм самаях сăлтăрканнине туйнă Виктор. – Земфира Асаматра епле çĕмĕрттерет-ши пирĕн?

Ирхине вĕсем колхоз машинипе кайрĕç те юрă-ташă пуçланиччен спорт ăмăртăвĕсем irттерме тытăнчĕç.

Кĕрешессипе те, кире пуканĕ çĕклессипе те тупăшрĕç ял атлечĕсем. «Акă, çитес ăмăртăва Шупашкара камсене

ямалла», – тет Виктор ырӑпа палӑрнӑ ҫамрӑксем пирки. Ӑна хӑйсен ял ачисем вӑйпах волейболла вылянӑ ҫӗре илсе кайрӗҫ: финалти вӑййа тӗрӗс хаклакан ҫын кирлӗ иккен – Викторӑн кунта тӳре шӑхличне тытмалла.

Каҫхине киле таврӑнсан амӑшӗ ҫемйи пирки сӑмах хускатрӗ.

– Надя уйрӑлас тесе суда чӗнчӗ. Ун чух каяймарӑм, халь чӗнӳ-тӑву ҫук-ха, – пӗлтерет ывӑлӗ.

– Кампа шуралнӑ, ҫавӑнпа хуралма каланӑ. Темиҫе авланакана ӗлкӗреннпех килӗштермен. Йӗппи ӑҫта, ҫиппи ҫавӑнта теҫҫӗ, илсе килсен хӗрарӑм килет вӑл, – вӗрентет ывӑлне Улюн аппа.

– Халӗ нимӗн те татса калаймастӑп, анне. Умра пысӑк ӑмӑрту манӑн. Ун хыҫҫӑн куҫ курать, – пурнӑҫ ҫынни пек лӑпкӑн хуравлать ывӑлӗ.

## Вӑтӑр ҫиччӗмӗш сыпӑк

Шупашкара таврӑнсан ака туйра пулнисем хӑйсем мӗн курнине кала-кала кӑтарта пуҫларӗҫ.

– Эп нихҫан хӑпараяс ҫук, хӑпарман та, вун икӗ метр ҫӳллӗш шерте тӑррине – арҫын ача тетӗр-и? Хӗр ача улӑхрӗ, шӑлтӑрмапа хӑпартнӑ тутӑра илсе анчӗ, – каласа парать Сыромятин. – Талант ялтан тухнӑ вӑл, ялтан! – тет вӑл ҫавӑнтах.

– Пӗр яш кӗрӗм халӑх умнӗнче Октябрь Революцийӗн орденӗ илчӗ, кайран кире пуканӗ ҫӗкленӗ ҫӗре пычӗ те – икӗ пӑт пуканне утмӑл тӑватӑ хут йӑтрӗ, – пӗлтерет Вутланова Асамат паттӑрӗ пирки. – «Ӑмӑртусене хутшӑнмалла сан, чемпион пулмалла», – тетӗп те ӑна, куракансем: «Вӑл ахалех чемпион, тыр-пул чепионӗ», – теҫҫӗ.

– Ҫавсем ҫинчен ҫыр эс, – тет ӑна Борис Абрамыч.

– Ҫавсем ҫинчен ҫырнӑ та, ҫыратӑп та, – тавӑрать Земфира.

* * *

Эх, спорт! Терчĕпе пĕрех мĕн чухлĕ хаваслăх, мĕн чухлĕ ĕмĕт, мĕн чухлĕ савăнăç кӳрет вăл. Эсĕ, спортсмен, таçти кĕтесе те çитсе çын хальччен çĕнменнине çĕнсе пурнăç илемне, этем вăйĕн чикки çуккине куратăн та кермен çаврăнă пекех хĕпĕретĕн; вара санăн шухăш анлăшĕ хĕвел çути пек сарăлать; кăштах пăшăрханмалла пулни каç ĕнтрĕкĕ ирхи шурăм пуçĕпе шуралнă пек шĕвелет.

Акă, трасса (Шупашкартан Етĕрнене каякан çулпа тетĕр-и? Пачах урăхла!) парк витĕр тухса йывăç сулхăнĕ ӳкнĕ урам кварталĕпе выртать. Пĕр çаврăмĕ виçĕ çухрăм майлă та, çавна пурĕ çиччĕ ункăламалла. Малта акăлчан, румын тата ГДР спортсменĕ илтерсе пыраççĕ, вĕсенчен юлмасăр совет атлечĕсем Авиловпа Жаров ыткăнаççĕ. Лешсем тарасшăн, кусем вĕсене кĕпе аркинчен ярса тытнă пек вĕçертмеççĕ. Тренер çаксене: «Çĕнтерекенĕ Авилов пулмалла, малтан Жаровăн вăй кăларса кумра ертсе пымалла та, виçĕ çухрăм юлсан (юлашки çаврăмĕнче) Авиловăн вирхĕнсе мала тухмалла», – тенĕ. Ураваш тамалнă, ак, тренер ун çине кăмăлсăррăн пăхать. Виктор пыракан ушкăнран такам вирхĕнсе тухрĕ те, совет спортсменĕ çавăн хыçĕнчен çакланчĕ. Çавăнтах малтисенчен тахăшĕ юлчĕ, тахăшĕ парăнасшăн мар юлашки вăйĕпе тапăçать. Авиловпа Жаров тӳсеççĕ-ха, Ураваш та вĕсене çывхарса пырать ĕнтĕ, майĕпен çитет-çитетех. Тренер каллех ун çине кăмăлсăррăн пăхать. Йĕри-таврах халăх кĕрленĕ шав тăрать. Спортсменсем стадионалла пăраннă. Малта Авилов ыткăнать, ун хыççăн халь Ураваш илтерет. Юлашки метрсенче чăваш ачи таçта упраннă вăйне пухса мĕн килет те мĕн пулать тенĕн вирхĕнет те финиш йĕрĕнчен кăшт маларах Авиловран иртсе каять.

Çук, апла мар! Çĕнтерме Жарова хушнă. Авилов командăна та кĕреймен! Çĕр-шыв командин иккĕмĕш номерĕ – Ураваш, унăн Жарова çĕнтерме пулăшмалла. Çурма дистанцире вĕсем ыттисене пăрахса тарчĕç;

Жаров çумра пырать пулин те аран сывлать, чăтатьха. Стадионалла кĕрес самантра халăх шавлать, кĕрлет, вăй пĕтнине пăхмасăр кĕрешӳ çулăмĕпе чунне хăпартлантарать Ураваш; вăл, тăвăнса çитнĕскер, утăма хăвăрт-хăвăрт илтерет. Жаров кăшт юлчĕ, ăна стадион тĕлне çитерсе Виктор хăйне хушнине пурнăçларĕ ĕнтĕ, халĕ финишра камăн вăй пур – çав мала кайтăр. Виктор юлашки халпа ума вирхĕнет те... çула урлă карнă шурă çипе унăн кăкăрĕ çитсе перĕнет.

Çук, капла та мар. Вĕсене çапла пыма хушнă: виççĕшĕн те пĕр çын пек ĕçлемелле. Финиш умĕн Жаров тарчĕ, Виктор ун хыççăн...

«Сан иккĕмĕш вырăну никама та кирлĕ мар!» Чур, Олимп стартĕччен малтан çĕр-шыв чемионатĕнче виççĕмĕш пул-ха эсĕ, спортсмен!

Фантази тени Уравашăн çеç мар, Пайăрка Çеркейăн та пуçра йăва çавăрать. Шухăшпа вăл та Олимп стартне çитнĕ ав. 50 километра ăмăртма тухнă совет спортсменĕсене тренерсем çапла хушаççĕ: ылтăн медаль, ылтăн медаль илмелле! Командăна ылтăн кирлĕ. Çеркей малтан калаçса татăлнă пек пыраймарĕ, тимлеме вăл 33-мĕш çухрăм хыççăн тин пуçĕнчĕ, унччен вăл, мĕлке пек, умрисем хыççăн çеç туртăнса пычĕ. Кайран, ак, пĕрне, тепĕрне, пĕрне, тепĕрне ирте пуçларĕ, вăтăр саккăрмĕш çухрăм тĕлнелле вара чылайăшне шĕкĕлчесе те тухрĕ. Хĕрĕх çухрăм хыççăн умра иккĕн çеç юлчĕç: СССРăн пĕрремĕш номерĕ тата акăлчан; нимĕç – Пайăрка хыçĕнче. Çеркей СССРăн пĕрремĕш номерне çитет; пĕр командăри юлташ ăшша пиçнĕ те, тути-çăварĕ çилĕмлĕ сурчăкпа шуралса ларнă, куçĕпе хăй малтинех вĕчĕрхенӳллĕн пăхать. Леш тарать, ним те тăваймастăн, ыткăнать çеç. «Ан тарт çавна, тыт», – сĕнет юлташĕ Çеркея. 45-мĕш çухрăм тĕлĕнче ятарласа лартнă чашăкри шывпа пит çăваççĕ вĕсем. «Ан юл», – тесе чĕнет те Çеркей юлташне умри акăлчана хăвалать. Стадион патнелле пынă чух вăл ăна çывхарать. Пĕрремĕш пулмасан та... çук! «Сан иккĕмĕш вырăну Олимп вăййинче никама та кирлĕ мар!»

Шухăшу лайăх та, Олимп вăййине лекмешкĕн çĕр-шыв ăмăртăвĕнче кăтарт-ха малтан хăвна эсĕ, Çеркей!

Шертанов-и? Шертанов та шухăш-ĕмĕтпе Олимп вăййин пьедесталĕн чи çӳллĕ картлашкинче тăрать. Лутраскер, вăл хĕвел пек çиçсе пăхать; акăлчан, иккĕмĕш пусмара пулин те, унран çӳллĕ курăнать ав, ылтăн медале леш Пироне господин Шертанов мăйĕнчен çакса ярать. Николая акăлчан та, виççĕмĕш пусмари Шульц та ăмсанса пăхаççĕ. Жаровсем – трибуна çинче, вĕсем тăваттăмĕш, улттăмĕш вырăнсемпех çырлахнă. Шертанов çĕнтернĕ ятпа параппан çапаççĕ, Тăван çĕр-шывăн ялавĕ çĕкленет, Совет Союзĕн гимне янраттараççĕ...

Чим-ха, уявне, черетлĕ Олимп вăййине, уçнă вăхăта таврăнар-ха малтан. Земфира – çитмĕл те çичĕ халăх пурăнакан хамăр çĕр-шывăн командинче! Шăпах вĕсем çинчен çакăн пек хыпарлать те ĕнтĕ пуриншĕн те паллă спорт комментаторĕ радиопа тата телекуравпа паракан репортажĕнче: «Акă, Совет Союзĕн делегацийĕ пырать. Миллионшар çын спортпа кăсăкланать пирĕн. Пурте рекордсменсем те чемпионсем пулаймаççĕ паллах; вĕсен кашнин хăйĕн шăпи, хăйĕн пурнăçĕ. Спорта чунтан парăнни çывăхлантарать кусене, спортпа çав тери туслă вĕсем». Çак асăннă пысăк йышран пĕрин çинчен, Змфирăпа юнашар пыракан, шăп та шай хăйне евĕр пурнăçĕпе шăпи килсе тухнă атлет çинчен кăшт каярах очерк çырса кăларĕ журналистка, çук! поэма шăрантарса хурĕ – ан тив, хĕрӳ ĕç çире сивĕ çăл куçĕнчен чăп тулли курка шыв ĕçнĕ пек техĕмлĕн туйтăр-и вулакан хăйне пĕр хушă.

Генерал пулма ĕмĕтленмен салтак – япăх салтак тени спортсмена пырса тивет пуль çав. Шухăш-ĕмĕт пылакĕпех шăм-шака çĕмĕрсе тренировкăсенче тертленет-çке вăл.

Хамăр республика ăмăртăвĕ пирĕн çӳревçĕсемшĕн СССР чемпионатĕчченхи кĕрешӳ пулчĕ. Герман Са-

вельч тăрăшнипе кунта старта кӳршӗ облаçсемпе Мускав ачисене те чӗнчӗç. Спортсменсемпе пӗрле тренерӗ-судйисем те килчӗç. Вара шоссе çинчи хӗрӳ кӗрешӳ хыççăн канашлăва Герман Савельч хваттернех пухăнчӗç. Сăмах пăявне сӳтме сăлтавӗ татах та пур: Савельева лайăх ӗçленӗшӗн «Хисеп Палли» орденпа наградăланă-çке!

Кавалера саламланă хыççăн ăмăртăва тишкерме тытăнчӗç. Пухăннă спортсменсем, Маскаловпа Клименкова куçран пăхса, хăйсем пирки мӗн каласса кӗтнӗн шăп итлесе лараççӗ. Владимир Федорович Клименков кашнин сăлайӗпе тактики еплине пысăк тренер ăсӗпе хаклать. «Эсӗ хăв уттупа пымарăн, – тет вăл Гена Савельева, Мускав студентне, кунта ăмăртăва килнӗскерне. – Уравашпа Шалимова хăв пек кăна хатӗрленнӗ пуль терӗн-и? Вӗсем çӗмрен пек пычӗç, çапах вăйӗсем татах пур пек туйăнса тăрать. Эсӗ çавсене çӗнтересшӗн пултăн курăнать те, хăвату дистанцие утса тухичченех пӗтрӗ». Вăталăх Савельев, финишчен икӗ çухрăм маларах çул айккине пăрăнса тăнăскер, хăй айăпне туйса, мӗн вӗрентине ăша хывасшăн шăпăрт ларать. «Ак, Шертанова илӗпӗр, вăл та малтисем хыççăн чылай тытăнса пычӗ, çапах хăйӗн вăйне тӗрӗс хаклама та пуларчӗ: кăштах тамалчӗ те дистанцие вӗçлерӗ-вӗçлерех», – ăнлантарать Клименков. Шертановӗ, çӗнтерӳçӗ мар пулин те, хăйне мухтанăшăн кăкăрне каçăртарах сумлăн пăхкалать. Иван Краснов сăн-питӗнче хӗвел шевли вылянине куратăн – вăл паян СССР спорт мастерӗн нормине пурнăçланă-çке! Çав хисеплӗ ята илме паян тивӗç илнисенчен Веня Савельев та пур. Унăн сăнӗнче те хаваслăх хӗлхемӗ палăрать. Анчах кӗçӗн Савельев хăйӗн хӗпӗртӗвне ытлашши палăртмах пикенмест, кăшт именет те темелле: ара, çул вӗçнелле вăл «уксакларӗ-çке!» Герман Савельч, тăван пиччӗшӗ, ăна тӳрех дистанцирен кăларма аслă судьяна, Клмиенкова, хут çырса панă; юрать, Маскалов çамрăк çынна урăхла хакласа (тӳррипе илсен, Веньăн ура тупанӗ хăпарса тухнă!) кăларса

пăрахма тăхтаттарнă. Халь çавăнпа Веня çак виçĕ судья, виçĕ тренер çине кăшт айăплараххăн пăхать.

– Виктор Ураваш чи ăста спортсмен пек ăмăртрĕ. Галлина аса илтерчĕ вăл мана, стартранах пуринчен те вĕçерĕнсе тарчĕ, кайран ыттисене çывхартмасăр çав утта пĕр пек тытса пычĕ. Ним те калаймăн – çирĕп атлет! – палăртаь Владимир Федорович.

– Эп ăна вăрăм çул хыççăн канса илеймест пуль тесе шикленсе ӳкрĕм. Нумай пулмасть яла çуран кайнă-çке вĕсем, – пĕлтерет Савельев.

– Халĕ санăн, Виктор, тĕп старта чипер çывхарма пĕлмелле çеç, – ăнлантарать çĕр-шыври паллă тренер.

– План туса панине пурнăçлатăп, – лăпкăн тавăрать Ураваш.

Кун хыççăн калаçу ятлă-шывлă çӳревçĕсем çинчен пулчĕ, тренировка системипе пултарулăх пирки те сăмах вакланчĕ. Гена Савельев çĕр-шыври пĕр паллă спорт мастерне питĕ тăрăшуллă тесе ырăпа асăнчĕ.

– Ачи лайăх вăл, анчах утти, утти килĕшмест унăн мана. Йĕнер çинчи юлан утçă пек пырать вăл, – тет Маскалов. Клименков та унпа килĕшсе пуçне сĕлтет:

– Кăлтăкĕ пур çав унăн, – тет.

– Çĕр-шыв командине яланах очко кӳнĕ вăл, – хăй пĕлĕшне мухтать Гена Савельев кусене парăнасшăн мар.

– Ăçта?! – куçне чарăлтарать Маскалов.

– Олимп вăййине иккĕ кайнă, кашнинчех тăваттăмĕш вырăн йышăннă, – палăртать Гена.

– Тăваттăмĕш вырăн?! – тĕлĕнсе пăхать Маскалов. – Тăваттăмĕш мар, санăн иккĕмĕш вырăну та никама кирлĕ мар унта! Сана иккĕмĕш вырăнпа палламаççĕ те унта – Олимп вăййинче!

Çак сăмахсене тĕнчери атлетсен чи пысăк форумĕнче 50 километра утса иккĕмĕш вырăн йышăннă çын калать. Ку сăмах олимпиец пулас шутлă çамрăксен ăшне вирхĕнсе кĕрсе ларчĕ те ĕнтĕ. Çакăн хыççăн вара хăйсен шухăшĕ-ĕмĕчĕпе çӳл тӳпене улăхрĕç паян утса тухнă

спортсменсем, тата вёсен ӳсĕмĕшĕн савăнакан журналистка.

Маскалов пĕрремĕш вырăн йышăнма шанăç тытнăмĕн, пĕрремĕш пулнисем наци геройĕсем шутланаççĕ; ак мĕн каласа парать пысăк стартра тӳссе курнă çын.

– Олимпиадăна çитрĕмĕр. Вырнаçрăмăр яла. Сисмен те, тем хушăра мана сунас ерчĕ. Старта тухма вăйлă хатĕрленнĕ шăм-шак урăх климатăн сулхăнĕпе кĕрешеймерĕ курăнать, пĕçертсе пăрахрĕ – чирленĕ пек пултăм. Врач мана ăмăрттарма шутламасть. Ну, ан ăмăрттатăр! Пурăнатăп лăпкăн. Ирпе тренер мана врач патне илсе каять. «Мĕн тума килтĕн-ха кунта эс?» – ыйтать врач. «Ăмăртма», – тетĕп. «Апла пулсан – ăмăрт», – ирĕк парать хайхи.

– Финиша епле çитнине эпĕ йĕркеллĕ астумастăп, акăлчан манран хăш вăхăтра иртсе кайнине чухлаймастăп, стадион та, халăх та тĕтре ăшĕнчи пек курăнать. Финиш хыççăн мана хывăнса тăхăнмалли пӳлĕме хамăр ачасем ертсе кайрĕç. Эп шăлавар хам тăхăнаймастăп, шăлавар мана ачасем тăхăнтартса ячĕç.

Çапла, Тăван çĕр-шыв ячĕпе çич ютра ăмăртнă чух пуçна пĕр самант хăвна хĕрхенес шухăш пырса кĕчĕ пулсан эсĕ – спортсмен мар, сан килтен тухмлла та пулман!

Маскалова Тăван çĕр-шыв чыс тунă, ăна Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕ панă, вăл – СССР спорчĕн тава тивĕçлĕ мастерĕ. Çапах та çак паттăр: «Сан иккĕмĕш вырăну Олимп вăййинче никама та кирлĕ мар, сана палламаççĕ те унта», – тесе ӳпкелешет.

Олимп туррисем ылтăн медаль илнисене кăна хăйсен чăн паттăрĕ вырăнне шутлаççĕ çав.

Клименков çитес вăйăра эпир мĕнле-мĕнле медаль илме пултарасси çинчен калать. «Кĕрешӳ нихçанхинчен çивĕч пулать, çапах тытăçма май пур. Евгений Ивановичран нумай вĕренмелле сирĕн», – тет вăл, Маскалова тахçантанпах пĕлекенскер. Унăн хăйĕн те çамрăксене

каласа памалли нумай. Ун шучĕпе, кăçалхи лидер – ГДРта тĕнче рекорчĕ лартнă Авилов. Хăйĕн тренировка планне çав атлет, Клименковпа пĕрле тĕплĕн шутланă хыççăн, ФРГпа Англи спортсменĕсен ĕçне кура йĕркеленĕ. Паллă тренер Ураваша хатĕрленӳ йĕркин çĕнĕлĕхне палăртса ăнлантарать.

– Соломонов Юлдымаана хатĕрленĕ. Çав латыш та командăна кĕме пултарать, – тет Клименков.

– Юлдымаа çинчен пĕрре çеç мар илтнĕ, анчах хăйне курман, – пĕлтерет Ураваш.

– Çĕр-шывра мала тухас ăмăртура пĕр-пĕрне курман вăйлă атлетсем сахал мар пулĕç-ха, кĕрешӳ çăмăл килмест, – тет Клименков.

Вĕрентсе каланине Виктор ним чĕнмесĕр шăп итлесе ларать. Герман Савельч хăйĕн йĕкĕреш хĕрĕсене алăк патĕнче тем хĕрсех çуйхашнăран: «Эсир унта!» – тесе хăтăрать те, Виктора ӳлĕмрен хăй вырăнне утмашкăн ывăл пурри аса килет. Владимир Федорович та: «Ачана пĕчĕкренех вĕрентме пуçламалла», – тет. Чăнах, Надьăпа Гришука Шупашкара илсе килмелле мар-ши Викторăн? Спорта парăннă Вутланова та хĕвел ăшши пекех-çке Çĕн Çăкасар ачишĕн! Тиркенĕ пек туйăнмасть ăна çав маттур хĕр. Тепĕр тесен, ал сулмалла мар-и çак тертлĕ спорт çине? Çук-ха, пăрăнма иртерех. Кĕçех, ак, СССР чемпионачĕ çитет – миçемĕш пулĕ-ши унта Виктор? Епле хаклĕ-ши çĕр-шыври пысăк ăмăрту Ураваша? Олимп храмне кĕмешкĕн тивĕç илĕ-ши вăл?

Çыннăн чун-чĕрине хăват параканни ĕнтĕ вăл Олимп хĕлхемĕ.

Атлетсем каллех, ак, çирĕп план тăрăх, савăнăçĕпе ырлăхне те, хурлăхĕпе тертне те çыхăнтарса, тренировкăна кӳлĕнчĕç.

## Вăтăр саккăрмĕш сыпăк

Çĕр каçа лăпкăн тĕлĕрнĕ çӳл хӳме пек вăрман хыçĕнчен авăн уйăхĕнчи сарă хĕвел кармашать. Ак, вăл пĕр тан ӳснĕ йывăçсем тăрринче ларкăч тупрĕ, анчах кун каçмалăх килнĕ хăна, именчĕк савни евĕр, алăк умĕнчех тăмарĕ – кил-çурт ăш чиккине пĕтĕмпех курасшăн никамран ыйтмасăр хăех васкамасăр хăвăрттăнах тӳпенелле улăхрĕ. Юманпа çăка, кавăрçпа вĕрене, шĕшкĕпе палан ӳсекен ĕшне варринче тĕл-тĕл кукăр-макăр, тĕл-тĕл çавра та тикĕс çыранлă çут кӳлĕ пур та, ун çиййĕпе тĕтре шăвать, шыв çиййĕ чӳхенсе кăтраланать; ун умне питне-куçне çума симĕс уçланкă ӳпĕнет. Хĕвел питĕнчен тăкăнакан йăлтăрти хĕм çутă пĕр çулçă çинчен тепĕр çулçă çине сикет, унтан çав хĕм кӳлĕ хĕрринчен инçех те мар ик хутлă чул çуртăн чӳречисене çитсе тăрăнать.

Алăк чĕриклетни илтĕнчĕ те, такам лăпкăн пусса ирĕке тухрĕ, ирхи сывлăша кăкăра карăнтарса сывланă май кăвак тӳпене вăрман хĕрринчи лапама тинкерчĕ: хĕрлĕ хĕвел шĕвек тĕтре йăсăрланчăкĕ витĕр пĕр пĕлĕт татки çук уçлăхран пĕччен пăхать, çĕр çиййĕ пăсланнă пек туйăнать. Сулхăн çӳçентерет. Кăнтăрла пуласчĕ уçă çанталăк! Çук çав, кăнтăрла шăрăх, самаях шăрăх пулать. Çуртран каллех такам тухрĕ. Иккĕн хуллен, вăрансах çитеймен çын пек пĕр-ик сăмах хушса, пӳрт умĕнчи çерем лаптăкне пычĕç. Ку йыша тепри тухса пĕрлешрĕ те, кăштахран çерем лаптăкĕнче кăвак тĕтĕм хăю пек явкалана пуçларĕ.

Пӳлĕмре пĕри:

– Тус-тăванăм, сирĕннисем тăрса тухнă. Жаровпа Галлин, ав, чăх шӳрпи пĕçереççĕ, – тесе пĕлтерчĕ.

Виктор вăхăт пăхрĕ – улттă çурă-мĕн. Тулта, чăнах та, кăвайт çунать. Юплĕ ик туя лартса урлă кашта хунă та хăлăплă кастрюль çакнă, çыннисем вучах патĕнчех хускалаççĕ; çĕçĕпе чăх какайне вакласа яраканни, хĕрлĕ хăмăр спорт костюмĕ тăхăнни Галлин. Жаровĕ «герку-

лес» пачкине уçать, Авилов хăрăк турат йăтса килчĕ те вут умне пĕшкĕнчĕ. Кăшт аяккарахра – тепĕр вучах, унта урăххисем аппаланаççĕ. Ир-ирех пулин те çак пысăк мар йышра кино ӳкерекен те пур, пĕри объективне спортсмен еннелле тытса аппарата вăхăт-вăхăт чăрлаттарать.

– Эсĕ те тухса ермеш, – терĕ пӳлĕмри юлташ Виктора.

– Эпĕ столовăйрах апатланатăп, – хуравларĕ Виктор.

Тухса кĕнĕ хыççăн вăл çăвănса тумланчĕ те иккĕмĕш хута хăпарчĕ. Унти пӳлĕмре юп куракан Герман Савельчпа Сергей Пайăрка та вăраннă. 50 çухрăма кăшт каярах ăмăрттараççĕ те, çавăнпа Пайăрка: «Эп тепĕр сехетрен çеç пыратăп», – терĕ.

Мускав çывăхĕнчи пĕр хулана спортсменсем ĕнер килсе тулчĕç. Кунта 20, 50 километрсене утассипе тата марафон чупассипе СССР чемпионачĕ пулать. Хула пысăк мар, çĕнĕ. Вăл вăрман ăшĕнчех ларать. Хула варринче «Олимпико» ятлă клуб пур. Унтах – Хĕрлĕ лапам, стартпа финиш вырăнĕ çавăнта. Апатланмалли çурт хулипе те пĕрре çеç – «Шуçăм» ресторан. Спортсменсене унта апатлантараççĕ. Пурăнма вĕсене кӳлĕ хĕрринчи пионерсен лагерьне хваттере ячĕç. Лагерĕ пĕрле вĕçнĕ икĕ космонавт ячĕпе хисепленет, космонавтсен «Çăлтăр» хули те кунтан инçе мар теççĕ. Хурăн ĕшни ăшĕнче кану çурчĕ пур.

Спортсменсене хулана çитсе килме икĕ автобус уйăрса панă, леш хайхи МОЁ 36-55 номерлĕ «Волга» та кунтах, шоферĕ Виктора палласа: «Ну, тăрăш», – тет.

Атлетсем машина пуласса кĕтсе тăмасăр виç çухрăм хушша çуранах утрĕç; ку инçĕш вăл шăм-шака çăмăллатмалăх çеç.

Каярах çитнĕ чăваш ачисем пĕр пӳлĕмре пулаймарĕç. Виктор Россия командинчи ачасемпех – Воронежпа Тула марафонецĕсемпе – пĕр пӳлĕме лекрĕ; Пайăркапа Савельев – урăх хула çыннисемпе.

Сан çине тиеннӗ пысӑк ӗç вӑл пуçӑниччен нумай шухӑшлаттарать, çавӑн пекех ӑмӑрту та мӗн чухлӗ пысӑкрах, яваплӑрах, çавӑн чухлӗ ытларах канӑçсӑрлантарать: кӗрешӳ епле вӗçленесси мала тухма ӗмӗтлисмшӗн паллӑ мар-çке! Специалистсемшӗн, тен, вӑл паллӑ та, спортсменшӑн – иккӗллӗ. Мӗн пур ӑмӑртусенчи кӑтартусене сӑнаса пынӑ çын хӑшӗ малта пулассине тавçӑрӗ; Авилов, Жаров, Галлин ячӗсене спортсменсем те час-часах асӑнаççӗ; Ураваш ячӗ, Сочире çӗнтернӗ пулин те, палӑрмать-ха. Лешсем, çав виçӗ ас, пысӑк ӑмӑртӑва хатӗрленсе унта кӗрешме пӗлеççӗ. Вӗсем хыççӑн Уравашран маларах Юлдымаа хушаматлӑ латыш, Ставрополь ачипе литовец, Жуковский удмуртӑн ячӗсем тӑраççӗ.

«Стартра çывӑрса ан юл, малтисем çумне çыпçӑнса ларма тӑрӑш, – канаш пачӗ Виктора Герман Савельч ӗнерех. – Пӗр вун çичӗ çухрӑма çити Авиловпа е Галлинпа юнашар пыма пултарсан финиш умӗн вӗсене нумай та тартмӑн». «Хутӑра» пӑтрatakансем пулма пултараççӗ; Шалимовпа литовец, е украинецпа Жуковский çурма çулта вирлӗрех кайма тытӑнӗç те пурне те шӗкӗлчесе тухӗç», – асӑрхаттарчӗ Çеркей. Юлташӗсем каланине Виктор ӑша хыврӗ те хӑйӗн тактикине палӑртрӗ: малтанхи çур çулта унӑн тӗп ассемпе юнашар пымалла, кайран ума кам чашкӑртса тухать, çавӑн çумне çыпçӑналла, анчах пуçа çухатсах вирхӗнмелле мар, юлашки çухрӑмри тытӑçу валли вӑй перекетлесе хӑвармалла.

Палӑртни кирлех-ха та, анчах спорт кӗрешӗвӗ нихçан та малтан çырса хунӑ сценари тӑрӑх килместçке. Кӗрешӳ епле пулма пултарассине кашни спортсмен темиçе тӗрлӗ курать, ӗç-пуç епле çаврӑнса тухассине ӑмӑрту умӗнхи каç тӗплӗн ӑнкарма тӑрӑшать. Ӑмӑрту умӗн çав «ӳкерчӗк» пуçа кӗмест-ха, ун чух ӗç нумай та, кашни минут шутра: апат çиетӗн, кӑшт канатӑн, хуллен чупса та авкаланса шӑм-шака çӑмӑллататӑн, унтан кӗрешмелле тумланатӑн... Шухӑшпа пуçа мин-

ретме вăхăт çук ун чух, малтан палăртине йĕркипе туса пыратăн çеç. Старт умĕнхи каç вара пит нумай шухăшланипе пуç ыратаканах пулать.

Ыран çӳревçĕсем çĕр-шывра мала тухассишĕн ăмăртса утаççĕ. Ыран Виктор ашшĕ çĕре кĕнĕ кун. Икĕ çул иртрĕ ашшĕне пытарнăранпа.

Виктор çывăриччен майка çине номер çĕлет, пӳлĕмри ытти виçĕ юлташ – Воронежпа Тула марафонецĕсем – ăмăрту умĕнхи пăлханăва лăплантарас тĕллевпех шӳтлесе калçма пуçларĕç. Шӳт хушшине сисмесĕрех ĕçлĕ калаçу та кĕрсе каять: ыран тупăшакансенчен хăшĕ епле хатĕрленни çинчен пĕлесшĕн пĕр-пĕринчен ыйтаççĕ. Миçе атлет килнине те палăртрĕç: марафонецсем çĕр аллă çын ытла пухăннă-мĕн, çӳревçĕсем, ик дистанцпе пĕрле илсен, çĕр çын ытла.

– Ыран тӳпелешӳ пулать вара сирĕн, – терĕ марафонецсене Ураваш вĕсен йышĕ пысăк пирки.

– Кам мĕншĕн кĕрешет: хăшне малти виççĕмĕш вырăн çеç кирлĕ, хăшне малти улттăмĕш вырăн çырлахтарма пултарать, тепри ку е вăл рекорда çĕнетесшĕн пулĕ, тĕнче класĕнчи мастер вăхăтне кăтартас текен те йышлă.

– Тăвайкки пур-ха, ытла хăвăрт утса та, чупса та тухаймăн, – сăмах хушса хурать тепри.

– Епле çивĕч тухсан та, малти виçĕ вырăна йышăнайманнисен Олимп вăйăйине каяс ĕмĕте тепĕр тăватă çула хăварма лекет, – кулать çулпа аслăраххи.

– Кĕçĕр пурте ыр ĕмĕтлĕ, – тавăрать тепри.

– Ун пеккисем марафонецсенчен ытларах ĕнтĕ, сирĕн йышран хальччен ниçта палăрманни те çĕнтерни пулнă, – терĕ Виктор.

– Çӳревçĕсем те ĕмĕтрен ӳксе юлмаççĕ пуль-ха, сиĕн унта тепĕр чух ятлă-сумлисенех ăмăртуран кăларса пăрахаççĕ.

– Жаровпа Галлин çав инкекре пулĕç теейĕмĕн, вĕсен уттине ют çĕр-шыв судйисем ырланă.

– Ăмăрту – ăмăрту вăл, – тет çулпа аслăрах

марафонецӗ. – Олимп вӑййине каймалли пӗр путевкине, тен, эсӗ ярса илӗн. Чемпионатра хальччен ниҫта палӑрманнисем те палӑраҫҫӗ. Пурте пирӗн пек этемсемех.

Ачасем калаҫкаласа лӑпкӑн ҫывӑрса кайнӑччӗ кӑна, шан! шан! сасӑ янӑрарӗ. Ним те ӑнланма пулмарӗ. Унтан каллех – шан-шан-шан! сас. Ют ҫӗр-шыва ӑмӑртма кайсан юри ҫывӑрма кансӗрленисем пулкаланӑ. Ак, кун пекки siksе тухрӗ-ши? Ҫурт умӗнче ӳсӗрсем ҫӑмӑл машинӑпа ҫитнӗ-мӗн те, пӗр ухмаххи кӳме алӑкне тем уҫса хупать. Пӳлӗмре картах siksе тӑчӗҫ, чӳрече уҫрӗҫ те:

– Халех лӑпланӑр! Унсӑрӑн эпир сирӗн машинӑр кустӑрмисенчи сывлӑша кӑларса яратпӑр! – терӗҫ ҫирӗппӗн.

– Ӳсӗр шикленчӗ-ши, «кикирикне» каҫӑртмарӗ, аяккалла кайрӗ те лӑпланчӗ.

Ҫӗрле вӑранни чӑрмантарчӗ пулин те ачасем начарах мар ҫывӑрнӑ. Викторӑн шӑм-шак ҫӑмӑл, пуҫ уҫӑ. «Тус-тӑванӑм, сирӗннисем тӑрса тухнӑ. Жаровпа Галлин, ав, апат пӗҫереҫҫӗ», – тени ӑна кӑсӑклантармарӗ.

Янкӑр тӳпере сап-сарӑ хӗвел пӑхать. Симӗс курӑкпа чӗлтӗрти чечексем ҫине сывлӑм ӳкнӗ, йывӑҫ тӑррисем лӑпкӑ, ҫил ҫук. Вӑрман ӑшнеллерех кӗрсе каякан кӳлӗ ҫийӗн пӑрҫа лавӗ пысӑкӑш кӑвак тӗтре йӑваланса тухать. Шывӗ хӗррипе хула еннелле ҫын иртет: спортсменсем пӗчченшерӗн е икшерӗн апата каяҫҫӗ.

СССР чемпионатӗнчен Олимп вӑййипе Европа чемпионачӗ кӑна пысӑкрах: старта хӑватлӑ спорт державин чи вӑйлӑ атлечӗсем тухаҫҫӗ. Ҫак ӑмӑртӑва хӑйсене хушнӑ ҫынсем паха та илемлӗн ирттерме пӗлеҫҫӗ, кунта ҫивӗч ӑслӑ та хӑйсен ӗҫне пӗлекен ӑста судьясем пухӑнаҫҫӗ.

Спортсменсене ырӑ сунакан плакат ҫапнӑ «Олимпико» спортклуб патне халӑх йышлӑн пухӑннӑ. Хӑйсем патӗнче пысӑк ӑмӑрту ирттернине хула тивӗҫлипех хаклать. Чечек ҫыххи тытнӑ пионерсем парад пуласса

кĕтеççĕ, кану çуртĕнче ыр куракансем те хурăн ращинчен кунта тапса тухнă. Атлетсем шăм-шака çăмăллатмалăх спортклуб айккинче чупкаларĕç, шăп палăртнă вăхăтра вĕсене пухăнма чĕнчĕç. Парадне вăраха тăсмарĕç – старта тухас çынсене вăрăм калаçу кирлĕ мар, пĕр вырăнта тапăртатса тăни пăлханнă кăмăла лăплантараймасть-çке – атлетсен хăвăртрах кĕрешĕве кĕмелле.

Аслисем, иккĕн, ырă сунса сăмах каларĕç: икшер минут! Унтан космонавт сламларĕ. Ăна спортсменсем хăйсем хушшинче ăмăртакан пек сума суса тăнларĕç. Кĕçех пионерсем атлетсене чечек çыххисем тыттарчĕç; иртнĕ çулхи чемпионсем ăмăрту ялавне çĕклерĕç, унтан гимн янăрарĕ.

Спортсменсем тум улăштарса тăхăнчĕç те шăп палăртнă вăхăтра старт йĕрне тăчĕç. 20 километра ăмăртакансем 43 çын. Вĕсем пурте Олимп нормативне пурнăçланă – урăхла каласан хăйсен вăй-халĕпе кашниех Олимп вăййине кайма хатĕр темелле.

Утмалли трасса ансат: пĕр кавартал тавра çавăрăнмалла çеç. Çаврăмĕ çухрăм ытларах пулать, ăна пурĕ 18 хут ункăламалла. Çапла, халь пĕтĕмпех: хатĕрленӳ, тӳсни, тертленни, мĕн пур тренировка – хыçра, халь пĕтĕмпех: спортăн çӳл пусмине улăхасси, çĕр-шыв командине кĕресси, Олимп алăкне уçасси – умра. Спортсменăн хăй кам иккенне калама вăхăт çитнĕ.

Старт парсанах Виктор, хыçа хĕсĕнсе юлас мар тенипе, хăй те сисмерĕ – ума вирхĕнсе тухрĕ. Кур халĕ: чăваш ачи пурне те пăрахса хăварать! Çĕр-шыв çӳревçисен пĕтĕм элитине вăл ертсе пырать-çке! Çавăнтах куçа Клименков курăнса кайрĕ те, мăнаçланас шухăш таçта çухалчĕ. «Ача-им эс, Ураваш, «кикирике» кун пек каçăртма? Чĕпсене кĕркунне шутлаççĕ!» Кăшт тамалчĕ çеç, Виктора çиччĕн-саккăрăн иртсе те кайрĕç. Тата кăшт вăрахлансан ăна пурте ирсе каймалла-тăр – пĕр чăмăрпа пырать старт илнĕ хĕрĕх ытла çын. Виктор ушкăн варрине хĕсĕнчĕ. Мала пĕри, унтан тепри

ылмашӑнса тухать. Ҫапла виҫ ҫаврӑм ӑнтӑлнӑ хыҫҫӑн ҫӳревҫӗсен ушкӑнӗ хӑйсене ҫул пуҫӗнче ертсе пыма Жаров, Авилов, Галлин корифейсене ирӗк пачӗ. Ҫук ҫав, ку тивӗҫе тӗп ассем хӑйсем кӑ-ӑштах вӑйлӑрах пулнипе ярса илчӗҫ; тепре ҫаврӑнса ҫитнӗ ҫӗре пысӑк чӑрха пек пыракан ушкӑн вӑрӑм сӑнчӑр евӗрлӗн вӗҫе-вӗҫ тӑсӑлчӗ. Викторӑн ӑш пӳлӗннӗ пек пулчӗ, сывлама йӑвӑрланчӗ.

* * *

...Улюн аппа ир кӳлӗм вут хутса кӑларчӗ. Кӗрхи пахча ҫимӗҫпе тунӑ кукӑль шӑрши кӑмака ӑшшипех тапса тухрӗ. Сӑра тин йӳҫет-ха. Инке ӑна ӗҫрен килсен сӗрӗп тесе тӗкӗнмерӗ, каткине ҫӳлтен тӗплӗнреххӗн витсе ҫирӗпреххӗн ҫыхрӗ ҫеҫ.

Сӗтел тулли апат ҫимӗҫе вӑл никама та ларса ҫи тесе калаймасть. Хӗрӗпе кӗрӳшӗ каҫ пулттипе килмелле, Викторӗ ...Ӑмӑрту шухӑшӗ кӗрсе ларчӗ те ӗнтӗ ун пуҫне... ҫемйине чӑмӑртасан лайӑхчӗ. Мӗн темиҫе тӗрлӗн пурӑнмалли пур, пӗр йӑвара тӗркӗшнине ӑҫтан ҫиттӗр?! Ашшӗ ҫирӗплетсе хӑварнӑ кил-ҫурт халлӗхе тӗреклехха, Улюн аппа хӑй те ӗҫе пӑрахман, пенси илет пулин те, вӑй питтисем тунинех тӑвать-ха. Виҫсе панӑ кантӑра кӑнтӑрлаччен татса пӗтерет Ураваш Кӗркури арӑмӗ – халӑхран юлмасть ват ҫын. Пӗрре утмӑлалла ҫывхарсан ҫул малалла мар, каялла каять те, вӑй питтисенчен юлакан пулӗ, ҫурт-йӗрӗ те юхӑнма-тайӑнма тытӑнӗ. Ывӑлӗ пӑхмасӑр кам пӑхтӑр кил-ҫурта? Вӑхӑт сисӗнмест вӑл, иртет. Улюн аппа ӗнер кӑна стариккипе пӗрле ӗҫленӗ пекчӗ, паян Кӗркури вилни икӗ ҫул ҫитрӗ ав.

Пӗччен пурнӑҫ ҫынпа пурӑннӑ пек мар; пӗр хырӑм темле те ҫырлахать тесе вут та ялан чӗртместӗн. Апат ҫакас пулсан та хурана пӗр-ик курка кӑна шыв яратӑн. Вӑл та пӗтмесӗр йӳҫӗхет; юрать-ха, выльӑх усрать – юлнине выльӑха паратӑн. Халь пӗҫернӗ апата ларса ҫимелле ӗнтӗ. Ҫук ҫав, Улюн аппа вӗри кукӑле тутӑрпа чӗркесе тытрӗ те пӳрте питӗрсе тухрӗ.

Кантăр анинчен инçе мар, вар пуçĕнче, арçынсем ферма çурчĕ тăваççĕ. Унта Викторăн тантăшĕсем те пур. Таçти хуласенче çӳриччен ялта ятлă çын пулмалла та Улюн аппан ывăлĕн. Кĕперсемпе пысăк çуртсем тунă çĕрте ĕçленĕ çын алли кунта та пушă пулас çук. Çӳрен каска якалнă теççĕ, киле килсех мăкланмалла та ывăлăн. Улюн аппа паян, тен, кин ачине пăхатчĕ. Ульки ачи чупса килет пуль-ха, Виктор куккăшĕ çинчен ыйтса хуплать ĕнтĕ пĕчĕкскер. «Кукку инçете тяп-тяп утассипе ăмăртма кайнă. Те мала тухаять ĕнтĕ?» – калаçаççĕ ачапа кукамăшĕ. «Ашшĕн чунĕ пулăшса тĕрĕс-тĕкел çӳретĕрех Виктора».

Ват çын хăй ывăлне ыр сунса çапла каланине тиркештермĕпĕр – амăшĕн пехилĕ ытлашши пулмасть.

* * *

...Çула тухсан водитель мотор ĕçленĕ сасса тăнласах машинине тĕрĕсленĕ пек, Виктор хăйĕн шăм-шакĕ еплине пĕлме тăрăшрĕ. Хăвăртлăха хăнăхрĕ иккен вăл, ăш пӳлĕнни иртрĕ, кăшт хытăрах кайма та май пур пекха, анчах юрамасть – тепĕр хут пӳлĕнсе ларăн, чикен те чикме пултарĕ, тата халлĕхе вăл начар мар, саккăрмĕш çын пырать-çке-ха, чи малти те çывăхрах! Паçăр ка-криш килнĕ пекчĕ, тепĕр çаврăм тĕлне апат çини шăп вырнаçнăн туйăнчĕ, сывлвама çăмăлах мар та, ăш пӳлĕнмест халь. Пилĕкпе сутанана вăльтăрт-вăльтăрт çавăрса пырать Виктор. Ура туни çумĕнчи çупкам пек ӳт – надкостница, çӳревçĕсене самай туйтараканскер, хĕрсе çемçелчĕ пулас та ыратмасть; ĕçес килни çук-ха, сывлăш та уçă пекех.

Малта улттăн пыраççĕ: Авилов, Галлин, Жаров, Шалимов, тепĕр иккĕшне Виктор палламасть, хаçатсенче ячĕсене тĕл пулнă пуль-ха, пĕрле ăмăртман. Жаровпа е Галлинпа юнашар пуласшăнччĕ Виктор – май килмерĕ: тăват-пилĕк метрлă хушша та кĕскетме çук! Жаровĕ мала тухнине асăрхаса илме пулмарĕ, халĕ темле

тертленсен те уйӑрӑлнӑ хушӑ пысӑклансах пырать ав: хыҫрисем юлаҫҫӗ, умрисем тараҫҫӗ. Виктор хӑйпе пӗр пусӑмпа, пӗр хӑвӑртлӑхпа таплаттаракан юнашар ача ҫине пӑхрӗ: ку Рига спортсменӗ, юлашки ҫулсенче Соломонов вӗрентнӗ Юлдымаа иккен. Латыш, тӗнче класӗнчи спорт мастерӗ, апрелӗн 30-мӗшӗнче ГДРта ӑмӑртнӑскер, кӗлеткерен Викторта кӑштах ҫӳллӗрех, утас сӑлайӗ Викторӑнни пек; ытлашши хашлатмасӑр тикӗс сывлать вӑл, ӑмӑрт кайӑкӑнни пек куҫӗпе умрисене кӑна пӑхать. Виктор унпа юнашар пакапар пырать: ҫак ҫумри ҫынран утӑм юлсан утӑм ҫитме пулмӗ, утӑм иртес тесен утӑм иртме ҫук. Юлдымаа хӑвӑртлӑхне чӑтмаллах унӑн! Ҫӑмӑлли ҫинчен шутлама-и халь?! Йывӑрлӑхран ҫӑлӑнас пур ҫакӑнта килмелле пулман. Пурӑнма та лӑпкрах пурӑнмалла пулнӑ. Ку ӑмӑрту – Викторӑн пурнӑҫӗ. Хыҫра, ура ҫине пусас пекех, иккӗн хашкаҫҫӗ. Сочире виҫҫӗмӗш пулнӑ литовецпа украинец вӗсем. Виктор, кусемпе талаштарсан, тикӗсрех сывлать-ха. Тепӗр тӑват-пилӗк утӑм каярах, сехетӗн ҫеккунт йӗппи пек, пӗр тикӗс пусса пыракансем те пур – ҫаксем те умрисене халь-халь «хыпаса ҫӑтма» хатӗр пек туйӑнаҫҫӗ.

Умра Галлин, Жаров, Авилов, Шалимов тата ҫавсем пекех вӑйлӑ икӗ ас пӗр тӗвве ҫыхӑнса салтӑнмасӑрсӳтӗлмесӗр пӗр евӗр хӑвӑртлӑхпа чавса тӗлӗнчен хуҫлатнӑ аллисене каллӗ-маллӗ ыткӑнтарса вирлӗн утаслаҫҫӗ. Кунтан хӑвӑртрах утма та, кунтан хулленрен пыма та май ҫук тейӗн ҫав. Вӗсене тинкерсе пынине пула Виктор самантлӑха пӗтӗм япала ҫинчен манса кайрӗ, хӑй ӑмӑртура пулнине те туймарӗ вӑл, ҫав вӑхӑтрах палланӑ сасса илтрӗ: «Ян!» Мӗнле сасӑ пулчӗ ку? Кам кама кӑшкӑрать? «Ан тамал! Ёҫле!» Кӑшкӑраканни палланӑ ҫын мар-мӗн, ахаль ҫавӑн пек туйӑнчӗ ҫеҫ. Кӑшкӑраканни Ян Юлдымаана ӑс парать. Ҫак вӑхӑтрах ҫул урлӑ чечеклӗ кӗпе тӑхӑннӑ хӗр ача чупса каҫрӗ. Ҫулҫӑллӑ йӑмра картине, ҫереме, йӑлтӑр пӗвене, шывалла утакан кӑвакал чӗппisене курас ӗмӗтлӗн пӑхрӗ

ун еннелле Виктор. Кунта хула иккен, кунта ял мар. Хĕр ачине ярмăрккăра курма ĕмĕтленнĕччĕ купăс калакан çамрăк. Килне кăшт тунсăхлăнрах таврăнчĕ яш çын. Кайран профтехучилищĕне вĕренме каятăп тесессĕн ашшĕ кăмăлсăррăн калаçнăччĕ. Ашшĕ халь çук. Вăл çĕре кĕни паян икĕ çул çитрĕ. «Ывăлăм телейне курасчĕ», – тенĕ Одер урлă каçнă чух Григоий Ураваш. Пĕчĕк Григорий Ураваш ача садĕнче чупса çӳретши çак вăхăтра? Вăл та телейлĕ пулĕ-ха; тен, спортах иленĕ.

Виктор малтанхи стартра асăрханă хĕр ача халĕ хăй те спортсменка. Вăл та – Олимп каçалăкĕнче: Олимп вăййине каймалли путевкăна илессишĕн урăх хулара кĕрешет, çавă, вăхăтра туслашайман хĕр – Земфира.

Виктор, кĕрешӳ çинчен самант маннăскер, кăвар кусĕпе умалла пăхрĕ: умри тĕвĕ сӳтĕлнĕ-мĕн, Галлинпа Жаровран ыттисем татăлса юлнă та пĕчченшерĕн талпăнаççĕ. Юлдымаапа Ураваш вĕсене пĕрин хыççăн теприне шĕкĕлчесе ирте пуçларĕç. Çул пуçĕнчи тĕвĕре халь çапла пыраççĕ: Жаров, ун çумĕнче – Галлин, хыçра, пĕр утăм пек кайра – Авилов. Ыттисем – Юлдымаапа Ураваш куç хыçĕнче ĕнтĕ халь. Çак икĕ ача та курăнман çиппе Жаровран çыхăннăн туйăнать: ӳсмест те, кĕскелмест те хушă.

Судьясен ушкăнĕнче тăракан Герман Савельев чĕнмест. Соломонов хăйне валли вырăн тупайман пек канăçсăррăн уткалать. Ытти судьясем те Юлдымаапа Ураваша пит тимлĕн сăнаса ирттереççĕ. Кăлтăк тупрĕçши? Начар пулсан Савельев астутармалла, анчах вăл ни апла, ни капла çăвар уçмасть. Соломоновĕ те шыв сыпнă. Вăл хăй ăмăртнă чухнехинчен ытларах пăлханнă пек. Клименков тахăш кĕтесе пăраннă – курăнмасть. Куç умĕнчи Савельев халлĕхе Ураваша вĕрентсе калама та шикленет çав: «Хăвăртлăх пит пысăк та, кунтан хытăрах кайсан сăлай та пăсăлĕ, çаплах пыр тени те ăплантарса йăнăш тутарĕ», – шутлать вăл. Чăнах та, дистанцире епле пымаллине спортсменăн хăйĕн

тавçăрмалла; çын вĕрентни çителкĕсĕр, хăвăн ăс-тăн пулмалла.

Çаврăм вĕçнерехри кукăрта, ак, Клименков тăрать, Виктор вара ун çине ыйтуллăн пăхрĕ. Çарта чухнехи тренер спортсмена ăнланчĕ те пуçне сĕлтсе: «Ан хăра, ĕçле!» – терĕ. Маскалов умрисен пултарулăхне пĕлесшĕн пек тинкерет. Çыннине те, уттине те урăхла хаклать пуль Олимп кĕрекинче ларнă паттăр. Виктора куçран пăхать вăл, Герман пекех, чĕнмест. Çак хушăрах хыçран такам çитрĕ те чăшт-чăшт тутарса иртсе кайрĕ. Сочире финиш умĕн кĕрешнĕ литовец пулчĕ ку, вăл малалла тарса-тарсах пырать. Ун хыççăн Шалимовпа Жуковский вирхĕнсе тухрĕç. Çапла, Жаров – Галлин – Авилов «тĕвĕпе» Юлдымаа – Ураваш хушшине виçĕ спортсмен кĕрсе кайрĕ. Информатор судйи умра камсем пынине ăнлантарать, вĕсем хăш хуларан, хăш спорт обществинчен иккенне калать. «Ураваш Виктор. Шупашкартан», – тесе темиçе хутчен пĕлтерчĕ ĕнтĕ. Йышлă халăх пĕрне е тепĕрне кăшкăрса хавхалантарать. Чăвашла калани те илтĕнчĕ. «Атя, хамăр ял, хăвăртрах!», – тет темле арçын.

Пĕр-пĕрне пулăшса пынине ăнкарнă латышпа чăваш хире-хирĕç пăхрĕç. «Мĕн тумалла? Эс мĕн шутлан? Çаплах пымалла-и? Тепĕртак вăй хушмалла-и?» – терĕç ĕнтĕ вĕсен куçĕсем. Калаçсан сывлăш пӳлĕнет – ӳпке вĕркĕч малалла каяссишĕн кăна ĕçлетĕр!

Пĕрле пыраканăн питĕнче йăрăмăн шуралса типнĕ тăвар çеç мар, ытларах чăтма хатĕр эп тенĕ ăнтăлу та курăнчĕ. Сурсан сурчăк тухмасть, сурчăк çилĕм пек тăсăлать халь. Юлдымаа алла-хула тилхепене турнă пек хăвăрт-хăвăрт сулкалама, урана кĕскерех те йăлттинрех илтерсе пусма пуçларĕ. Аякра Герман Савельев сасси илтĕнчĕ:

– Кăкăрпа кăкăр!..

Юлдымаапа юнашар унăн уттинех тăвать, ун пекех васкавлăн та тикĕссĕн сывлать, кăкăрпа кăкăр тан пырать Виктор.

Площадь айккинчи кукăрта Соломоновпа тепĕр виç-тăватă тӳре пĕр çĕре пухăнчĕç те тем калаçса илчĕç. Вара чи асли, хура сăнлă москвич, аллине хĕрлĕ ялав тытса утакансен çулĕ айккине пырса тăчĕ. «Мана-ши?» – çиçĕм пек вĕçсе иртрĕ пуçра шухăш Викторăн.

* * *

...Çак кун, çак вăхăтрах çĕр-шывăн тепĕр хулинче, Минскра, ытти çăмăл атлетсен чемпионачĕ пырать. Çӳллĕшне сикмелли секторта хĕрарăмсем ăмăртаççĕ. 15 çын штурмлать-ха самаях çӳлти карăнтăка, ыттисем тăрăлса юлнă. Малалла кĕрешекенсен йышĕнче чăваш спортсменки Земфира Вутланова та пур. Каштана тепĕр виçĕ сантиметр улăхтарчĕç. Земфирăн университетра пĕрле вĕреннĕ тантăшĕ Вера Горчакова пит çăмăл сикет, сăлайĕ унăн çав тери илемлĕ, тепĕр çӳллĕшне те вăл ытлашши вăй хумасăр тенĕ пекех каçрĕ. Земфирăн ку çӳллĕше пĕрремĕш сикнĕ чух каштана кăштах кĕлетке сĕртĕнчĕ, вара кашта чĕтренчĕ-чĕтренчĕ те çĕре патлатрĕ, иккĕмĕш хутĕнче ура кĕли çаппăнчĕ. Ак, халь вăл çав шая сиксе каçмашкăн виççĕмĕш хут хатĕрленет.

Умра резинăпа сăмала хутăштарса сарнă çул, умра, утмăл ура лаппи хушă чухлĕ маларах – ик шерте çине хунă карлăк, ун леш енче – сывлăш тултарнă çемçе минтерсем. Земфира ним те курмасть, карлăк умĕнчи сылтăм урапа тапса яма палăртнă вырăна кăна пăхать – меллĕрех, хытăрах тапса ярсан карлăк леш енне пĕр сĕртĕнмесĕр сиксе каçĕ... Ак, вăл чупса кайрĕ, çавăнтах чарăнса каялла таврăнчĕ те уткаласа çӳрерĕ, унтан тăп тӳрленсе кĕлеткене кăшт умалла ӳпĕнтерчĕ, вара пĕтĕм кӳлепе: хĕвелпе хĕрелнĕ йăрăс ура-пĕçĕ мышцисем, кăкăр-çурăмĕ, сенкер хăюпа пуçтарса çыхнă çӳç – скульптура пек пĕр пĕтĕмлĕн курăнчĕ. Хĕр тараннăн сывласа илчĕ те урине çĕклесерех вĕттĕн-вĕттĕн чупса кайрĕ, унтан хăрах урапа вирлĕн тапса ярса карăнтăка

тăрăх каранчĕ те айăккăн ӳпĕнчĕ – тап-таса виксе каçрĕ. Чăвашра çак самантра тепĕр спорт мастерĕ çуралчĕ. Ку çӳллĕше саккăрăн илчĕç; ыттисем ĕç пĕтерсе пăрăнса утрĕç. Судьясем урлашкана татах хăпартрĕç; çак çӳллĕше Земфира тренировкăра та парăнтарайман-ха. Акă, шакăлчана сакăр хĕр пĕрин хыççăн тепри ӳкерет. Земфирăн тем пекех виксе каçасси килетчĕ çав шая, анчах виççĕ тытăнса пăхсан та, кашнинчех чунсăр кашта çемçе минтер çине унран маларах анса выртрĕ.

Земфира айăплăн кулкаласа аяккалла пăрăнса утрĕ те хывса хунă тумне илсе сак çине ларчĕ; халь çеç тарласа кайнă питне шăлса типĕтрĕ вăл, вара малтан шăлаварне, унтан курткине тăхăнчĕ.

Пилĕк хĕр, вăл шутра Земфирăн тусĕ Вера Горчакова та, малалла кĕрешет. Земфира ăмăртуран тухса ӳкнĕ ытти хĕрсем пек пăрăнса каймарĕ; çак кĕрешӳре вăл хăшĕ çĕнтерессе кĕтет.

* * *

...Мускав çывăхĕнчи пысăк мар хулара çӳревçĕсен çирĕм километрти тытăçăвĕн чи хĕрӳ саманчĕ халь. Куракансене ăшах та мар пулмалла, çӳхе тăхăннисем сахал, утакансемшĕн вара вĕри, çав тери вĕри, кашниех типĕтнĕ пулă пек тăварланса ларнă. Çул айккине хĕрлĕ флажок йăтса аслă судья тухрĕ. Кама «куç ӳкрĕ-ши?» Уравашпа Юлдымаана вăл чĕнмесĕрех ирттерсе ячĕ иккен-ха. Тепĕр çаврăмĕнче çак вырăтах ума вирхĕнсе тухнă литовецпа Шалимов пуçĕсене пĕксе аяккалла пăрăнчĕç – судьян хаяр сăмахĕ çаксене пулчĕ-мĕн. Ку вăхăтра умри тĕвĕ татăлчĕ те виççĕрен пĕри, хыçалти, вĕçерĕнсе юлчĕ: Авиловăн ури кĕскелнĕ. Ыăннипе малтисенчен кăшт юлсан вара çын юлса-юлсах каять. Авилов хăй тусĕсенчен утăм-ик утăм кăна юлнăччĕ, халĕ, ак, ăна Юлдымаапа Ураваш хăваласа та çитрĕç. Авилов, çуркунне тĕнче рекордне лартнăскер, халь тем пулнипе юлать те пит тарăхнă сăнлă, хăй тăрăшсах ĕçлет;

Олимп путевкине ун аллинчен ҫак ик ҫынран пĕри туртса илессине унăн ĕненсех пĕтес килмест-ха.

Ҫул ҫаврăмĕнче Виктор хыҫалалла пăхрĕ: спортсменсем тăсăлса кайнă иккен, ытларах пĕчченшерĕн пыраҫҫĕ... Юлдымаа ҫумĕнче пыракан Ҫĕн Ҫăкасар ачи пĕр хушă хăйне кăштах ҫăмăл туйрĕ. «Пăрахса тармалла-и Рига ачине?» – вĕҫсе иртрĕ пуҫра шухăш. Умра икĕ спортсмен ҫеҫ, ҫумрине хăварсан, урăх никама та ирттермесен вăл виҫҫĕмĕш пулĕ! Ак, Ураваш алла хăвăртрах сулкалама, васкарах сывалма тытăнчĕ. Ҫак вăхăтрах ҫул айккинче Пайăрка курăнчĕ, унпа юнашар Жуковский тăрать – удмурт ачи тухса ӳкнĕ. Ҫеркей чăвашла калать:

– Пĕрлех пыр – кăкăрпа кăкăр!..

Герман Савельч хальхинче те пĕр сăмах чĕнмесĕр ирттерчĕ. Кун пек хĕрӳ кĕрешӳре Ураваш ҫапла хаяр пынине унăн ĕненесси те килмест. Йывăррăн, тăвăнса ах! та ах! сывлаҫҫĕ латышпа чăваш. Ыттисем те ҫавăн пекех тертленеҫҫĕ.

Юлашки ҫаврăмсем – чăтма ҫук йывăррисем. Пурĕ те иккĕ ҫеҫ ункăламалла халь. Кам вăя перекелтелсе хăварнă, ҫав кунта кăшт ҫивĕчрех пырĕ. Олимп путевки лекме пултарасси Юлдымаана та куҫа курăнса илĕртет: вĕсем халь Уравашпа виҫҫĕмĕш-тăваттăмĕш пыраҫҫĕ-ҫке. Хыҫран урăх кам та пулин чашкăртса ҫитмесен, хăв ҫак йывăрлăха чăтса ҫитерсен Юлдымаапа Уравашран пĕри виҫҫĕмĕш пулатех. Тăваттăмĕш вырăн кунта кирлех мар. Тăваттăмĕш вырăн резерв тенине пĕлтерет – тăр-ха яланах резервра! Юлдымаа хăвăрт та хăвăрт тарăннăн сывлать, урине кĕскенрех пусса васкать. Енчен те Соломонов судья Ураваша хĕстерес тесе шутласан? Герман Савельчпа Клименков тата Маскалов Ураваша хӳтĕлеймĕҫ-ши? Сывлăш ҫавăрса илнĕ пек вăрахланнă хушăра Виктор Янран ҫур утăм пек хыҫарах юлчĕ-мĕн. Урăх тартмарĕ-ха латыша, пыра татса кăларас пек ах! та ах! сывласа ĕҫлерĕ. Акă, кăшт маларах тухнă ҫынпа вăл каллех танлашрĕ;

Виктор умра халь Жаровпа Галлин çурăмне пит хитрен курать – хушă пĕр 40–50 метр таран кĕскелнĕ. Виктор татах хăвăртрах сывлама пуçларĕ, ах! та ах! тертленсе юлашки вăйне кăларса ĕçлет вăл. Юлдымаа юлмасть, Юлдымаа çумрах. Тата хытăрах кайма пулать-ши? Кайма кирлĕ. Йывăрланнă пулин те хăвăрттăн-хăвăрттăн илĕнет ик ура. Шăрăх, чăтма çук шăрăх. Хăть çил те çук-çке. Хĕвел хĕртет. Майка типнĕ. Тарлă майкăна çеç мар, ӳте те типĕтет хĕвел. Галлинпе Жаров – умра пĕр çирĕм-çирĕм пилĕк метртра. Çул хĕррине аслă судья тухса тăчĕ; вăл ула-чăла ялавне кăтартрĕ те: «395-мĕн номер, асăрхаттаратăп!» – тесе юнарĕ. Виктора вăл! Ураваша!

Юрать-ха, асăрхаттару çеç... Тамалмалла-ши? Кайран, финиш умĕнче, Юлдымааран иртме пулĕ-ши? Çак вăхăтра çул айккинче тăракан Герман Савельч ăна:

– Çаплах пыр! Ан вăрахлан – олимпиец пулан! – терĕ хыттăн. Чун вăркаса илчĕ. Мĕншĕн-ши финиш халех мар? Тепĕр çаврăм пур, юлашки çаврăм. Пĕр çухрăмран кăшт ытларах çак хушă чуна кăларать-çке.

Виктор ĕçлет. Ик ура пит йывăр, чукмар пек... Ак мĕн ку? Малтисем карт-карт туртăнчĕç: Галлинпа Жаров ылтăн медальшĕн кĕрешеççĕ иккен. Ак мĕн ку: Галлин Жарова пăрахса тарчĕ. Вĕçерĕнсе юлчех Жаров Галлинран. Юлать вăл. Викторпа Ян ăна хĕстереççĕ.

– Чăтса çитер! Кăшт та ан тамал! Хăвна ан хĕрхен! – кăшкăрать Çеркей. Вăл юлташĕ Олимп путевкине илнине курать, тепĕр вун-вун ик минутран хăйĕн те 50 километртри путевкăсемшĕн тертленме тухмалла, халь вăл юлташне çĕнтерттересшĕн.

– Ян! Ян!.. – хăйсен чĕлхипе тем калаççĕ 50 çухрăма ăмăртма хатĕрленнĕ латыш ачисем.

– Ну, тăвансем, юлашки вăйпа! – илтĕнет Клименковăн хуллен каланă сассиех. Маскалов кăмăллăн тинкерсе пăхать, унăн çутă куçĕнче атлетсене мухтани сисĕнет.

Финишченхи юлашки 300–200 метрсем. Хӳме пек тӑракан халӑх кӑшкӑрать, шавлать, кинохроника, телекурав операторӗсем аппарачӗсене чӑрлаттараççӗ. Малта пӗчченех Геннадий Галлин ӑнтӑлать. Ăçтан тухать унӑн, пӗрре Олимп чемпионӗ пулнӑ çыннӑн, вӑй-хӑват?! Галлинран пӗр çирӗм-çирӗм пилӗк метрсем чухлӗ Николай Жаров юлнӑ. Унӑн ури çине, ак, Юлдымаапа Ураваш пусаççӗ. «Ян!» «Николай» «Виктор!»

«Николай!» «Ян!» «Виктор!» – кӗрлет лапам.

Юлдымаана кӑшт та хӑварма çук-ши? Николай Жаровне çитесчӗ. Çитесчӗ, çул вӗçне çитесчӗ.

«Паян е нихçан та! Паян е нихӑçан та!» Ах та ах, ах та ах сывласа ӗçлеççӗ виççӗн юнашар пекех. Жаров ик утӑм малта, Ураваш Юлдымааран çур утӑм умарах тухнӑ.

Финиш йӗрӗнчен çӗр метрта халӑх хушшинчен Çеркей чышкине кӑтартать:

– Ан хӗрхен хӑвна! Хӑвна ан хӗрхен! Чӑтса çитер!

Ниме пӑхмасӑр таçтан вӗçерӗнсе кайнӑ пек ӑнтӑлать Виктор. Ун умӗнче никам та çук – Галлин финиш йӗрне татнӑ. Хронометрпа тӑракан судьясен тӗлне çитме тата 20–15 метрсем пур-ха. Ахлатса, тӑвӑнса, епле те пулин чӑтас тесе талпӑнать Ураваш. Юлашки вӑйпа туртӑнчӗ те, хронометрист хӑйпе юнашар тӑракан тепӗр судйине вӑхӑт каларӗ. Сулӑмпа ик-виç утӑм чупса кайсан Виктор хыçалалла тинкерчӗ: финиш йӗрне виççӗмӗш çын Юлдымаа татать, Жаров уран кӑштах юлнӑ.

Латыш финиш йӗрӗнчен иртсенех сывлӑш çавӑрма ӗлкӗреймен Ураваш çине аллипе уртӑнчӗ, тӳрленчӗ те сывланӑ май аран каларӗ:

– Тавтапуç... тавтапуç...

Унтан вӗсем алӑ парса пӗр-пӗрне саламларӗç. Жаров та вӗсне алӑ пачӗ.

Çеркейпа Герман Савельчран маларах Виктор патне тӗксӗм хура костюм тӑхӑннӑ çӑра куç харшиллӗ арçын утса пычӗ. «Савӑнтартӑн, ентешӗм, чун хӗпӗрерӗ», – тет çак çын чӑвашла. Ку вӑл Флор Флорыч пулчӗ иккен!

Строительсен бригадирӗ кунта кану ҫуртӗнче отпускне ирттерет-мӗн. Шупашкар ятне ырӑпа асӑнтарнӑ чӑваша халь вӑл ашшӗ пек ҫупӑрлать.

Ҫавӑн пекех Владимир Федорович Клименковран маларах Ураваша Соломонов пырса алӑ тытрӗ. «Ну, Олимп вӑййине кайӑр эппин. Юлдымаапа паянхи пек утса медаль илӗр», – терӗ вӑл ҫӗкленӳллӗ кӑмӑлӗпе.

Иккӗмӗш вырӑн йышӑннӑ ҫынна Маскалов пӗр сӑмах-юмахсӑр, ырӑ кӑмӑллӑн хул пуҫҫирен тӗрте-тӗрте илчӗ те аллине ҫирӗппӗн чӑмӑртарӗ. «Сан ҫине пӑхса эп хама куратӑп», – тенӗн ҫиҫет унӑн мӑшӑр куҫӗ.

* * *

...Минск стадионӗнче ҫӳллӗшне сикессипе кӗрешӳ тӑрланса пынӑ вӑхӑтра трибунӑри сак ҫинче ларакан хӗр атлет патне пӗр арҫын, кӑвакарнӑ ҫӳҫлӗ те патварскер, пычӗ те акӑлчанла:

– Питӗ кулянатӑр-им малта пулайманшӑн, Земфира Андреевна? – тесе ыйтрӗ. Сӑмах хушнӑ ҫынна хӗр тинкерсе пӑхать, унтан ку ют ҫӗр-шывран килнӗ корреспондент пулӗ тесе шутларӗ те акӑлчанлах:

– Ӑмӑртура вӑйлисем ҫӗнтереҫҫӗ, – терӗ сӑпайлӑн.

– Ылтӑн медаль кама лекет пек, сирӗн шутпа?

– Ӑна кӗҫех пӗлӗпӗр ак, – хуравларӗ хӗр акӑлчанлах.

Арҫын ун ҫине куларах пӑхрӗ те урӑх чӗлхепе, хальхинче нимӗҫле ыйтрӗ:

– Ӑмӑртура румынка пулнӑ пулсан кашта тата кӑштах хӑпаратчӗ-и?

Земфира каллех арҫынна тӗлӗнерех пӑхса нимӗҫлех тавӑрчӗ:

– Хӑй ҫӗр-шывӗн ӑмӑртӑвӗнче румынка кунтан пӗр сантиметр ҫеҫ ҫӳлерех сиксе каҫнӑ.

Ҫакӑн хыҫҫӑн ҫын тап-таса вырӑсла:

– Эпӗ – Пахомов, спорт хаҫачӗн редакторӗ. Сирӗн статйӑрсене астӑватӑп. Олимп вӑййине питех каяс килет-и? – терӗ.

– Ёмĕтленнĕ, – пăхать Земфира ун çине.

– Сире журналистсен делегацине кĕртме палăртатпăр, – лăпкăн каларĕ спорт çинчен çыракансене ертсе ыракан çак кăмăллă çын.

Земфира чĕри кăрт-кăртах турĕ, мĕн каланине ĕненес те килмест-ха унăн.

– Хăвăр редакци хирĕçлемесен хамăр хаçат шучĕпе яратпăр сире. Кăмăлăр пулсан документсене хатĕрлеме тытăнас пулать, – ăнлантарчĕ Пахомов.

– Хапăлласах кайнă пулăттăм, – терĕ Вутланова çирĕппĕн.

–Итлĕр-ха тата, – кăшт куларах пăхать ун еннелле халь Пахомов. – Пироне господина манман пуль? Сире хăйсен бюллетенĕнче асăннă вăл. Совет Союзĕнче пур кĕтесре те спортпа хĕмленекенсене куратăн тет. Мускава та Олимп хули пулмашкăн тивĕç тесе палăрать. Утларăша халăх хушшинче анлăн сарăлнă спорт тенĕ. Вулăн-ха, ак, çав статьяна. Унта Уравашпа хăвăр ятăра курăр.

Земфира куçа чăртлаттарса итлет.

Спорт журналисчĕсен пуçлăхĕ ăна çак ăмăрту вăхăтĕнчех Олимпиадăна каяс ыйтупа пресс-бюро пӳлĕмне кĕме сĕнчĕ.

Хавхаланнă Земфира ылтăн медаль çĕнсе илнĕ Вера Горчакова патне ыткăнса пырса тантăшне саламларĕ, ăна хĕр ачалла ыталаса чуп турĕ.

Çак вăхăтрах Мускав çывăхĕнчи хулара Виктор Ураваша СССР чемпионачĕн кĕмĕл медальне пачĕç. Хаклă япалана аллине тытсан Викторăн чунĕ çӳçенчĕ, вăл шикленчĕ те. Ăна Маскалов калани аса килет: «Сан иккĕмĕш вырăну Олимп вăййинче никама та кирлĕ мар. Сана иккĕмĕш вырăнпа палламаççĕ те унта!». Хăлхарах илтĕнсе тăрать Олимп вăййинче иккĕмĕш пулнă çын сăмахĕ.

Çĕр-шывăмăртан мĕнле хушу илсе еплерех пурнăçлĕ-ши килти чемпионатра иккĕмĕш пулнă çын?

Виктор çĕр-шыв ячĕпе Олимп вăййине кайма путевка илнине Земфира Вутланова çав каçах телеэкранра курчĕ.

Тĕтре шунă пекех вăхăт иртет – ак, черетлĕ Олимп вăййи те иртĕ, унтан тепĕр Вăйă килĕ...

Эсĕ, Виктор, Земфира Вутлановашăн кам пулса юлăн-ши?

Ларионов Никита Ларионович

**ОЛИМПИЙСКИЙ БАЛЛ**

Роман

*На чувашском языке*

Издаётся в авторской редакции

*В оформлении обложки использованы фотографии Ивановой А.П.*

Компьютерный набор *Ларионова Н.Л.*
Компьютерная верстка *Шутеевой Н.П.*
Дизайн обложки *Михайловой И.О.*

Подписано в печать 24.03.2014. Формат 60х84/16.
Бумага офсетная. Печать оперативная.
Гарнитура Schoolbook. Физ.печ.л. 21.
Тираж 100 экз. Заказ № К-19.

Отпечатано в типографии ИП Сорокина А.В. «Новое Время».
428034, Чебоксары, ул. Мичмана Павлова, 50/1.
Тел.: (8352) 32-33-53, 46-43-46.
E-mail: newtime1@mail.ru.